К С(Чув)
А 23

шкул библиотеки

34019-ЧУВ

Леонид
АГАКОВ

# ЮМАНЛĂХРА ÇАПЛА ПУЛНĂ



Национальная библиотека ЧР
4-034019

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

*шкул библиотеки*

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1993



Леонид Яковлевич Агаков (1910—1977) Чӑваш Республикинче Етӗрне районӗнчи Çуткассинче çуралнӑ. Вӑл утмӑл ытла кӗнеке çырса пичетлесе кӑларнӑ. Л. Я. Агаков — чӑвашсен паллӑ прозаикӗ, драматургӗ, публицисчӗ. Писатель ачасем валли те пайтах произведени çырнӑ. Л. Я. Агаков — чӑваш халӑх писателӗ.

К КС (чув) Д23

*шкул библиотеки*

Леонид
АГАКОВ

# ЮМАНЛĂХРА ÇАПЛА ПУЛНĂ

**Повесть**

С (чув)



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1993

К 84.06 - 4

ББК 84 Чув 7-4
А 23

ПРОВЕРЕНО
20 10 1 0 ОКТ-2017

А $\frac{4803710201 - 06}{М\ 136(03) - 93}$ 34 — 93

ISBN 5-7670-0585-0

340191чув

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1993 ç.

БИБЛ
им. М. Горького

## 1

195... çулхи сентябрь пуçламăшĕнче, пĕр ирхине ирех, Мăнкасри вăтам шкулăн саккăрмĕш класне вĕренме каякан Сережа Аванов, ним çинчен шухăшламасăр, ĕнер каç курнă кинори хитре кĕвве тулли кăмăлпа шăхăркаласа пыраканскер, Вăкăр варĕ патне çитсен, сасартăк кĕпер айĕнче такам йывăррăн йынăшнине илтрĕ.

— Ой... ах... Виле-еп... ой! Пулăшă-ăр...

Сережа тăпах чарăнчĕ. Çавăн пек вăхăтра, çакнашкал ырă çанталăкра, кĕпер айĕнче çын йынăшни ăна çав тери тĕлĕнтерсе пăрахрĕ. Мĕне пĕлтерет ку? Кам йынăшать? Мĕнле майпа лекнĕ унта вăл? Çĕрле таçтан таврăннă чухне ӳсĕрпе ӳкнĕ пулинех? Ӳкнĕ те аллиурине хуçнă-и? Тен, ăна... камсем те пулин хĕненĕ те унтан, вилтĕр тесе, кĕпер айне пăрахнă? Пĕлтĕр Хыркасси таврашĕнче çавăн пек пулни çинчен илтнĕччĕ...

Çак шухăшсем вун ултă çулхи ача пуçĕнче çиçĕмрен те хăвăртрах çаврăнса илчĕç. Хăй вара пĕр самант та тытăнса тăмарĕ — çыр хупаххисемпе хупланнă çыран тăрăх шуçа-шуçа çырмана чупса анчĕ те хăрасах кайрĕ, унăн сывлăшĕ те пӳлĕнсе ларчĕ...

Кĕпер айĕнче, икĕ юпа хушшинче, Сережăсен ялĕнчи — Юманлăхри лавкка хуралçи, ватă Улатимĕр мучи, выртать иккен. Унăн кĕлетки — пылчăклă лупашкара, пуçĕ — кăшт çӳлерехре, лутăрканса-вараланса пĕтнĕ хăмăш çинче. Çамкипе икĕ питçăмарти те темиçе çĕртен шăйрăлнă, унта та кунта юн хытса ларнă, сайрарах кăвак сухалĕ çумне курăк пĕрчисем çыпçăнса тулнă.

«Ой, тем тесен те, ку мучи хăй килсе лекмен кунта...» — терĕ Сережа хăй ăшĕнче.

Хăяккăн выртакан старик, кĕпер айне çын кĕрсе тăнине курсанах, пуçне аран-аран çĕклерĕ те хурлăхлăн йынăшса ячĕ:

— Ах, ырă çын... Çăлсамччĕ! Çур çĕртенпех асапла-

натăп, чун тухса каять пулĕ терĕм... Ку тарана çити пурăнасса шанман... Кил-ха, ачам, пулăш...

Сережа иккĕ сиксех ун патне çитсе кукленсе ларчĕ.

— Мĕн пулчĕ капла, Улатимĕр мучи? Кам вара сана кун пекех?..

— Хурахсем, ывăлăм...— йынăшрĕ старик.— Эп лавкка умĕнче чĕлĕм турткаласа чип-чиперех лараттăм, сасартăк кĕтес хыçĕнчен пĕрскер тухрĕ те тӳрех вульверпе сăмсаран тĕллесе: «Шăп! Пĕрре сас кăларсанах вилсе выртатăн!» — терĕ. Унччен те пулмарĕ — куçсене хам мулаххайпах хупларĕç, çăвара пăкăларĕç те алăсене каялла çыхса хучĕç, унтан, лавкка хыçĕнчи çырмана сĕтĕрсе анса, машина çине йăтса пăрахрĕç... Урăх нимĕн те астумастăп. Пуçран çапса анратнă пулмалла. Çакăнта тин тăна кĕнĕ... Салтса яр-ха часрах, алăсем хуçăлсах ӳкеççĕ, пĕтĕм çанçурăм сурать, ыратман вырăн та çук...

Чăнах та, старик аллисене çурăм хыçнелле пăрса темле вăрăм та хулăн кантрапа туртса çыхнă иккен, урисене те тăлласа лартнă, çитменнине, кантрин пĕр вĕçне юпаран çыхса хунă, çавăнпа та старик кĕпер айĕнчен тухма мар, вырăнтан хускалма та пултарайман.

Сережа васкасах шăлавар кĕсйинчен хуçлатмалли пĕчĕк çĕççине кăларчĕ те старике яваласа пĕтернĕ кантрана татма пикенчĕ. Питĕ кансĕр ĕç пулчĕ ку — сӳс кантра питĕ хытса ларнăскер иккен, çавăнпа та пĕчĕк çĕçĕ ăна ниепле те час татаймарĕ. Старик çав хушăра йывăррăн хашкаса, йынăша-йынăша, хуллен калаçса выртрĕ.

— Лавккине тап-тасах çаратрĕç пуль ĕнтĕ... Машинпах пынăскерсем, пĕр хаклă япала та хăвармарĕç пуль, эсреметсем! Ялта мĕн калаççĕ, илтмерĕн-и, ачам? Хальччен пурте пĕлчĕç пулĕ-çке...

— Эп нимĕн те илтмен,— терĕ Сережа,— уроксем пирĕн саккăртах пуçланаççĕ те, тата эпĕ паян дежурнăй та, килтен иртерех тухрăм...

— Тур çырлахтăрах, тем пулать ĕнтĕ халь! — хыпăнчĕ старик.— Хама та хупса хураççĕ пуль... Тупрăм ватлăхра хам валли!

— Эс айăплă мар-çке унта, Улатимĕр мучи, эс çаратман, сана хăвна та чут çеç вĕлермен те...

— Темле-çке, темле! Ăна-кăна пăхса тăмĕç, эсĕ ху вăрăсемпе пĕр каварлă пулнă, çавăнпа çаратма чарман тейĕç. Хам эпĕ çитмĕле çитсе те çынăнне ыйтмасăр пĕр улăм пĕрчи те тытман. Ĕмĕр-ĕмĕр хам ĕçленипе тăранса пурăннă...

Старикӗн хӗсӗкрех куҫӗсенчен куҫҫулӗ пӑчӑртанса тухрӗ. Сережа ӑна ҫав тери шеллерӗ. Вӑл, тата ытларах васкаса, кантрана юлашки ҫӗртен татрӗ те ӑна аяккалла ывӑтса ячӗ.

— Тӑр ӗнтӗ халь, Улатимӗр мучи, атя, часрах киле каяр... Тен, хальччен милицисене те пӗлтерчӗҫ пуль унта, санӑн вӗсене хурахсем хӑвна мӗнле тапӑнни ҫинчен каласа парас пулать...

— Калас пулать ҫав, пӗтӗмпех каламалла, анчах ӗненмесрен питӗ хӑратӑп,— терӗ те старик, ача хулӗнчен тытса, ура ҫине тӑма пикенчӗ, анчах сылтӑм ури ҫине пуссанах хытӑ йынӑшса ярса лаках ларчӗ те аллипе чӗркуҫҫинчен ҫавӑрса тытрӗ.

— Хуҫӑлнӑ пулмалла ман ура... е мӑкӑлтаннӑ-и... пусаймастӑп! Антихрис япали, мӗн тӑвас-ха капла?

— Епле те пулсан ҫырана тухасах пулать, мучи,— терӗ Сережа, хӑй те ним тума пӗлмесӗр.— Унтан вара ҫынсене курӑпӑр-и, лаша кӳлсе килӗпӗр-и... Атя-ха, манран ик аллупа лайӑхрах уртӑн...

Вӑл ҫурӑмӗпе старик еннелле ҫаврӑнса кукленсе ларчӗ, лешӗ ӑна мӑйӗнчен ыталаса илчӗ, унтан Сережа, юпаран тытса, ура ҫине тӑркаларӗ те ерипен утса кайрӗ. Вӑйӗ пур ҫав унӑн, ахальтен мар вӑл шкулти чи лайӑх физкультурниксенчен пӗри! Сӑрт патне Сережа чиперех ҫитрӗ, анчах ҫӳлелле хӑпарма пултараймарӗ. Старик ӑна хӑеx сисрӗ те, аллисене унӑн мӑйӗнчен вӗҫертсе, ҫӗре шуса анчӗ.

— Эсӗ мана аларан турт, ачам... Эпӗ сан хыҫҫӑн майӗпен упаленӗп... Кана-кана хӑпаркалӑпӑр-и, тен...

Ҫапла турӗҫ те вӗсем. Сережа ҫӳлерех улӑхса, хӑй аялалла шуса анасран пушмак кӗлисемпе хыттӑн пусса, Улатимӗр мучие ик аллинчен туртрӗ, лешӗ вӑйӗ ҫитнӗ таран упаленчӗ. Ҫапла майпа кӑшт шӑваҫҫӗ те канаҫҫӗ, унтан татах ҫӳлелле чаваланаҫҫӗ. Пӗр вунпилӗк-ҫирӗм минутран вара Сережа аманса пӗтнӗ халсӑр старике ҫул хӗррине илсе тухрӗ-тухрех.

— Халь эс, тархасшӑн, яла чуп, ачам, мӗнпе те пулин килсе илсе кайччӑр мана кунтан...— терӗ Улатимӗр мучи, аран сывлӑш ҫаврӑнса.— Часрах киле ҫитесчӗ, лавккинче мӗн пулнине пӗлесчӗ... Хама кайран хуть те мӗн туччӑр, анчах та манӑн тӗрӗссине каласа памаллах. Хуралӗнче эпӗ чип-чиперех ларнӑ, ни ӳсӗр пулман, ни ҫывӑрман, ни аяккалла пӑрӑнман.

— Юрӗ, Улатимӗр мучи, эсӗ, эппин, кунта кӗтсе

вырт, эпĕ пĕр наччасра кайса килетĕп! — терĕ Сережа.— Лаша кӳлĕпĕр-и унта, машин пулать-и...

— Эс тӳрех правленине кай,— хушрĕ старик,— мана ăçта тупнине каласа пар. Çула май ман карчăка та кĕрсе кала... Хуйхăрса тăнран кайрĕ пуль хальччен...

Старике итлесе пĕтернĕ хыççăн Сережа ялалла чупма хатĕрленнĕччĕ кăна — çырма леш енче, Мăнкас сăртĕнчен кукăрăлса анакан ансăр çул çинче, хурарах кăвак тĕслĕ çăмăл машина курăнчĕ. Питĕ хăвăрт çывхарса килчĕ вăл, ун хыçĕнчен çăра тусан пĕлĕт пек йăсăрланса юлчĕ. Чăнкă сăртран машинăсем çакăн пек хытă аннине Сережа нихçан та курман,— ахăртнех, унта ларса пыраканнисен ытла та пит васкамалла пулнă пулĕ...

«Чим-ха, ара, Улатимĕр мучие çак машина илсе каймĕ-ши? — шухăшларĕ Сережа.— Пирĕн ял еннеллех каять вăл, урăх çул çук кунта...»

Тек ним шарламасăрах, вăл çул çине чупса тухса сылтăм аллине çĕклерĕ. Темиçе самантранах кĕпер урлă каçнă машина тормозĕсене тăрук чĕриклеттерсе тăпах чарăнчĕ те пĕр вырăнта каллĕ-маллĕ сулăнса илчĕ. Çавăнтах кабина алăкĕ уçăлчĕ, шалтан çамрăк кăна милиции лейтенанчĕн пуçĕ курăнса кайрĕ.

— Мĕн кирлĕ сана? — хăвăрт ыйтрĕ вăл Сережăран.

— Ак çак мучие...— курăк çинче выртакан старик çине тĕллесе кăтартрĕ Сережа,— яла çитиччен илсе каймалла та...

Лейтенант йăпăр-япăр машинăран сиксе тухрĕ.

— Мĕн пулнă ăна? Чирленĕ-и?

Унтан Улатимĕр мучин пичĕ-куçĕ тăрмаланса пĕтнине асăрхарĕ пулас та, Сережа çине шăтарас пек пăхса:

— Такам хĕненĕ-им ăна? — тесе ыйтрĕ.— Хăçан? Ăçта?

Лейтенант питĕ хăвăрт калаçакан, калаçнă чух çынна куçран сăхнă пек чăрр! пăхакан çын иккен. Ун пек çынпа калаçма та темле именмелле. Сережа та именчĕ пулмалла, ытла тӳрех ответ параймарĕ. Анчах ун вырăнне Улатимĕр мучи хăй каласа пама тытăнчĕ.

— Хурахсем çавăн пек туса хăварчĕç мана, ывăлăм,— терĕ вăл вăйсăр сасăпа, кăштах чавси çине çĕкленсе.

— Мĕн, мĕн? — ăнланаймарĕ лейтенант. Хăй çав вăхăтрах пат! пат! утса старик патнех пырса тăчĕ.

— Хурахсем тетĕп-çке...— ăнлантарма тытăнчĕ Улатимĕр мучи.— Лавкка çаратрĕç кĕçĕр пирĕнне... Эпĕ лавкка патĕнче хуралçă пулсаттăм... Мана пуçран çапса

тӑнсӑр турӗҫ те, кайран ҫакӑнта илсе килсе кӗпер айне чикнӗ...

Лейтенантӑн ҫивӗч куҫӗсем ҫак самантрах ҫутӑлса илчӗҫ. Вӑл старик умне кукленсе ларчӗ.

— Эсӗ пулнӑ-и-ха вӑл? Сана ҫухалнӑ тесе пӗлтерчӗҫ...

— Ҫухатрӗҫ те пуль ҫав, ҫухатрӗҫ те пуль. Ҫур ҫӗр-тенпех вӗт... Юрать-ха ак ҫак ача килсе тупрӗ... Нихҫан та шутламан кун пек пуласса... Темле вилсе кайман-ҫке!

— Машинӑпа илсе килчӗҫ-и? — ыйтрӗ лейтенант.

— Машинӑпа ҫав... Хама машина ҫине йӑтса ыватт-нине кӑштах астӑватӑп, тӗлӗкри пек...

— Машини кайран ӑҫталла кайнине асӑрхамарӑн ӗнтӗ?

— Курман ҫав эпӗ нимӗн те, калатӑп-иҫ, тӑнсӑр пулнӑ.

Лейтенант, хӑвӑрт кӑна хӑйсен машини еннелле ҫав-рӑнса, аллипе сулчӗ:

— Кил-ха кунта, Паньков!

Кӗҫех кабинӑран шофер тухрӗ. Вӑл та милициех ик-кен, анчах унӑн погонӗсем ҫутӑ мар, хӗрлӗ, ун урлӑ сарлака хӑю ҫыпӑҫтарнӑ.

«Аслӑ сержант»,— терӗ хӑй ӑшӗнче Сережа, ҫар ҫын-нисен погонӗсем ҫинчи паллӑсене лайӑх чухлаканскер.

Милици ҫыннисем хӑйсем хушшинче тем ҫинчен пӑ-шӑлтатса калаҫса илчӗҫ. Унтан лейтенанчӗ Сережа ен-нелле ҫаврӑнчӗ те:

— Хӑш тӗлтен илсе хӑпартӑн эс ӑна? — тесе ыйтрӗ.— Кӑтарт-ха.

Сережа унпа пӗрле ҫыран хӗррине пычӗ.

— Ак ҫакӑнтан. Куран — курӑк лутӑрканнӑ.

Лейтенант Сережӑпа старик сӑрталла хӑпарнӑ чух пулнӑ йӗр ҫине пӑхрӗ.

— Малтан ӑҫта выртатчӗ?

— Кӗпер айӗнче, леш енчи юпасем патӗнче...

— Апла-ха, эппин...

Лейтенант пӗр хушӑ шухӑшласа тӑчӗ.

— Пире понятойсем кирлӗ пулаҫҫӗ,— терӗ унтан, хӑйпе юнашар пырса тӑнӑ аслӑ сержанта хулпуҫҫинчен тӗртсе илсе.— Кӗпер айне понятойсемсӗр анмастпӑр. Ҫа-вӑнпа та санӑн яла кайса пӗр-икӗ ҫын лартса килес пу-лать. Вӗҫтер халех!

— Мӗн вӗҫтермелли пур,— терӗ ӑна хирӗҫ аслӑ сер-жант, хӑйсем халь ҫеҫ анса килнӗ сӑрт еннелле кӑтарт-са.— Ав, ик хӗрарӑм килеҫҫӗ...

— Ку пит аван пулчĕ-çке! — хĕпĕртесех кайрĕ лейтенант.

Пĕр пилĕк минутран Мăнкас енчен килекен икĕ хĕрарăм — иккĕшĕ те Сережăсен ялĕсем, Мăнкасри фермăра ĕçлекенскерсем — кĕпер урлă каçсанах, лейтенант вĕсене чарса тăратрĕ те, кунта мĕн пулса иртни çинчен хăвăрт кăна ăнлантарса, эсир понятойсем пулатăр терĕ.

Лешсем турткаланса тăмарĕç, килĕшрĕç.

Вара пилĕк çын — лейтенант, аслă сержант тата Сережăпа çак икĕ хĕрарăм — кĕперпе каялла каçса, сылтăм енчи çырана тухрĕç. Унталла-кунталла пăхса илнĕ хыççăн лейтенант çырма енче йĕрсем пуррине асăрхарĕ те вĕсен çуммипе анма тытăнчĕ. Хăй çав йĕрсем çине питĕ тимлĕ пăхса пычĕ. Ыттисем те ун хыççăн анчĕç. Çырма тĕпне, çĕр нӳрĕрех вырăна анса çитсен, лейтенант тӳрех кукленсе ларчĕ. Унпа пĕрле аслă сержант та кукленчĕ. Кунта темиçе çĕрте пысăк атă йĕрĕсем лайăх палăраççĕ. Пĕр йĕрĕсем пысăкрах, теприсем кăшт пĕчĕкрех.

— Ӳкер,— терĕ лейтенант аслă сержанта.

— Слушаюсь! — пуçĕпе сулса илчĕ лешĕ.

Унăн аллинче фотоаппарат пур-мĕн. Вăл çавăнтах çĕр çинчи ура йĕрĕсене темиçе хут та ӳкерсе илчĕ.

— Кĕперне те ӳкер,— хушрĕ лейтенант.

Сержант аллинчи аппарат тата ик-виçĕ хут чаклатрĕ.

— Старикĕ хăш тĕлте выртатчĕ? — Сережăран ыйтрĕ лейтенант.

— Ав çавăнта...

Вĕсем паçăр Улатимĕр мучи выртнă тĕле пырса тăчĕç те, лейтенантпа сержант кунта та ура йĕрĕсем асăрхаса ӳкерсе илчĕç. Пĕр тарăнрах йĕре курсан, лейтенант ун патне кукленсе чылайччен пăхрĕ, унтан хăйĕн помощникне:

— Чăматан илсе кил, слепок тăватпăр,— терĕ.

Ку мĕне пĕлтернине Сережа малтанах ăнланаймарĕ, аслă сержант пысăках мар чăматан илсе пырса ĕçлеме тытăнсан вара çав тери тĕлĕнсе тăчĕ. Аслă сержант малтан чăматанран котелок кăларса лупашкаран кăштах шыв ăсрĕ, пакетран ун ăшне шурă çăнăх евĕрлĕ порошок тултарчĕ, унтан ăна чылайччен пăтратрĕ те, юлашкинчен ура йĕрĕ тăрăх та, урлă та çинçе патаксем хурса, котелокри шĕвеке атă йĕрĕ çине ярса тултарчĕ.

— Старикне юпа çумне çыхса хунă терĕн-и-ха эсĕ? Мĕнпе çыхнăччĕ ăна? — ыйтрĕ лейтенант.

— Вăрăм кантрапа. Эпĕ ăна çĕçĕпе татса ывăтрăм. Ав выртать...

Лейтенант кантрана хăмăш ăшĕнчен пуçтарса илчĕ те хăй çумĕнчи сумкăна чиксе хучĕ. Унтан татах йĕритавралла пăхкаларĕ.

— Кунта урăх нимех те çук пулас,— терĕ юлашкинчен.— Ну, пулчĕ-и санăн? — аслă сержант еннелле çаврăнчĕ вăл.

— Халех! — терĕ лешĕ.

Сережа ун çине пăхрĕ те ура йĕрĕ ăшне янă шĕвек хытса ларнине, аслă сержант халĕ ăна ерипен хăйпăтса кăларнине курчĕ.

— Мĕн вара ку сирĕн? — ыйтмасăр тӳсеймерĕ вăл.

— Çакна ăна гипс теççĕ, шăллăм. Куран, епле хитре атă путушĕ пулса тухрĕ, хуть те пасара кайса сут! — терĕ ăна аслă сержант, кăмăллăн кулса. Хăй çав хытнă гипса лупашкари шывпа çуса тасатрĕ, шăлса типĕтрĕ те, хутпа чĕркесе, чăматана хучĕ.

«Епле ăста тăваççĕ! — шухăшларĕ Сережа.— Вăрă урин йĕрĕ пулса тăчĕ!..»

Тепĕр минутран вĕсем каялла çырана хăпарчĕç те, çул çине пăхса пырса, Юманлăх еннелле утрĕç. Кунта Сережа тӳрех ăнланчĕ: вĕсем çул çинче машина йĕрĕ шыранă. Йĕрĕ чăнах та пур-мĕн, пĕр çĕрте, тусан хулăнрах пулнă вырăнта, вăл уйрăмах уçăмлă палăрнă. Лейтенант хушнипе Паньков тени, чăматанĕнчен рулетка кăларса, икĕ шинăран пулса юлнă йĕрсем хушшине виçсе илчĕ.

— Грузовик, ГАЗ,— терĕ вăл.

Унтан вĕсем, çав йĕр çине пăхса, тата маларах утрĕç. Сережа та вĕсенчен юлмарĕ.

— Кайри сылтăм кустăрми çинче мăкăль пур,— терĕ лейтенант, тата тепĕр çирĕм-вăтăр метр утса кайсан,— нумаях пулмасть вулканизаци тунă курăнать. Ӳкерсе ил.

Паньков, кукленсе ларса, аппаратне чаклаттарчĕ.

— Ну, халь кайрăмăр та пуль! — терĕ лейтенант.

Вĕсем машина патне таврăнчĕç.

— Мучие илсе каятăр-и ĕнтĕ? — хăюсăртараххăн ыйтрĕ Сережа.

— Ан пăшăрхан, санăн мучуна хăварас çук-ха эпир,— терĕ ăна хирĕç лейтенант,— анчах санăн хăвăн та пирĕнпе пĕрлех пымалла пулать.

— Манăн шкула васкамалла-çке, эпĕ дежурнăй паян...

— Ним тума та çук, шăллăм. Йĕрки çапла. Эсĕ ку мучие никамран малтан курнă, çавăнпа та санран тĕплĕрех ыйтса протокол çырас пулать. Ку пире питĕ кирлĕ.

Шкултан мĕншĕн юлмалла пулни çинчен эпĕ сирĕн директор патне хут çырса парса ярăп, паян шкула пырайманшăн сана айăпламĕç.

— Юрĕ эппин...

Çапла калаçса илнĕ хыççăн вĕсем çул хĕрринчи курăк çинче выртакан Улатимĕр мучие йăтса машинăна кĕртсе лартрĕç, шофер çавăнтах стартер çине пусрĕ те — газик Юманлăх еннелле ыткăнчĕ.

## 2

Лейтенант Василий Квасов çак районта çĕнĕ çын пулнă-ха, вăл кунта ĕçлеме тытăннăранпа çулталăк та çитмен.

Милици шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн вăл пĕр хушă министерство аппаратĕнче, паспорт уйрăмĕнче, ĕçленĕ, унта унăн пурнăçĕ пур енчен те лайăх пулнă, анчах та ку ĕç уншăн ытлашши ансат та «лăпкă» пек туйăннă. Лейтенантăн çамрăк чунĕ, хĕрӳллĕ кăмăлĕ «вĕри ĕç» ыйтнă, вăл ăçта та пулин хăй тĕллĕн ĕçлесси çинчен ĕмĕтленнĕ, унăн чи пăтравлă ĕçсене йĕрлесе вĕçне тухасси, пысăк преступниксене тытасси килнĕ. Вăл, хăйне оперативлă ĕçе яма ыйтса, темиçе хутчен те рапортсем çырса панă, юлашкинчен вара ăна çак самаях инçетри районти аслă оперуполномоченнăй тунă.

Унтанпа вăхăт чылай иртнĕ, анчах Василий Квасов аллине нимĕнле пысăк ĕç те лекмен-ха. Лăпкă пулнă ку тăрăхра, пурнăç пĕр пек тикĕс пынă. Хăш чухне ханша юхтарса сутакан инкесене кайса тытнă, чиркӳ прачникĕсем вăхăтĕнче хăшĕсем ĕçсе ӳсĕрĕлсе пĕр-пĕринпе çапăçса кайсан — вĕсене ответ тыттарнă, сайра хутра тата вĕт-шак вăрăсем леккеленĕ...

Пĕтĕм ĕçĕ те çав кăна. Ăçтан-ха унта хăвăн профессилле ăсталăхна, пултарулăхна кăтартатăн? Самаях кичем пулнă Квасова хăш чухне... Шупашкартан куçса килнĕшĕн те ӳкĕнкеленĕ вăл. Анчах паян ирхине акă Юманлăхри ялпо лавккине темле вăрăсем çаратса кайни, унта кăçхи хуралçи те çухални çинчен пĕлтерчĕç. Квасов кĕçĕр шăпах милици уйрăмĕнче дежурнăйччĕ. Юманлăхри колхоз председателĕ ялта мĕн пулни çинчен телефонпа каласа пĕлтерсенех, Квасов ăна çирĕп приказ пачĕ:

— Лавкка çывăхне никама та ан ярăр, шала та никама та ан кĕртĕр, пурте мĕнле пулнă — эпир пыриччен

çаплипех пултăр, пĕр çӳпĕ те вырăнтан ан хускалтăр! Хурал тăратăр...

Кун пек чухне преступлени пулса иртнĕ çĕре районти милици начальникĕ, аслă оперуполномоченнăй, вĕсемпе пĕрле районти прокуратура следователĕ каймалла. Анчах хальхинче, юри тенĕ пекех, районта никамах та пулмарĕ. Начальнике темле ĕçпе икĕ кун каялла министерствăна чĕнсе илнĕ, прокуратура следователĕ отпуск илсе канмалли çурта тухса кайнă.

Ĕçне пĕр минут та вăраха яма юраман, çавăнпа та лейтенант Квасов часрах участковăй милиционера, Паньвова, чĕнсе илчĕ те: хатĕрлен, халех Юманлăха каятпăр терĕ, унтан хăйсен районĕнче магазин çаратни çинчен Шупашкара министерствăна шăнкăравласа пĕлтерчĕ, оперативлă работникпе йĕр йĕрлекен йытă ярса пама, май пулсан хăйĕн начальникне тупса пĕлтерме ыйтрĕ. Унтан хăй вырăнне юлакан дежурнăя çапла хушрĕ:

— Халех райпотребсоюз пуçлăхне шыраса тупса калăр: ревизи комиссин председателĕпе иккĕшĕ те Юманлăха пыччăр! — Вара преступлени пулса иртнĕ çĕрте тĕрĕсленĕ чух яланах кирлĕ пулма пултаракан «оперативлă чăматан» тенине илчĕ те Паньковпа пĕрле Юманлăха тухса вĕçтерчĕ.

Уйсем, çырма-çатра урлă ыткăнса пынă чухнех вăл вырăна çитсен мĕн-мĕн тумалла пуласси çинчен шухăшлама тытăнчĕ. Кун пек пысăк ĕç ăна пĕрремĕш хут лекнĕ вĕт-ха: никам пĕлмен çынсем кĕçĕр магазин çаратнă, ăна сыхлакан хуралçи те çухалнă! Тен, нимĕнле свидетель те ан юлтăр тесе ăна хăйне те вĕлерне? Вĕлернĕ те, виллине таçта аяккалла илсе кайса, никам тупмалла мар çĕре пăрахнă?

Анчах вырăна çитичченех Квасов хăй пĕртте кĕтмен япала пулса тухрĕ: Мăнкаспа Юманлăх хушшинчи çырмара лавкка хуралçи тупăнчĕ! Ку питĕ аван-ха, анчах старик хуралçă нимĕн те курман, никама та палласа юлайман, хăйне илсе пынă вăрăсен машини ăçталла кайнине те пĕлмест. Çул çинчи йĕрсем машина кĕпер урлă каçса Шупашкар еннелле кайнине палăртаççĕ, апла пулин те, халĕ Квасовăн çав йĕрсем тăрăх кайма май килмест, мĕншĕн тесен чăн малтан преступлени пулса иртнĕ çĕре çитсе курмалла, унта тĕрĕслемелле, çынсемпе калаçмалла...

Кĕпер патĕнчен тапранса кайсан тăват-пилĕк минутранах хĕрлĕ пиçиххиллĕ хура кăвак газик, Юманлăхăн тури вĕçне тухса самаях пысăк çĕнĕ лавкка çурчĕ умне

çитсе чарăнчĕ. Кабина чӳречи витĕрех лейтенант Квасов лавкка патĕнче халăх нумай пухăнса тăнине асăрхарĕ,— кĕçĕр ăна çаратни çинчен ялта пурте пĕлнĕ ĕнтĕ,— ун пек усал хыпар пит час сарăлать.

Милици машинине ял çыннисем пур енчен те сырса илчĕç — арçынсем, хĕрарăмсем, ватти-вĕтти мĕнĕнех. Машинăран тухсанах Квасов аллине çĕклесе вĕсене пурне те кăмăллăн саламларĕ, çав самантрах ун патне ял Совечĕпе колхоз председателĕсем—Кумковпа Яраткин— пĕри çӳллĕ те самăртарах, сулахай аласăр, çӳçĕ кăвакарма пуçланă çын, тепри лутра та типшĕм, чикан сăнлă, кăкри çине темиçе орден планки çакнăскер, алă пырса пачĕç.

— Тахçанах кĕтетпĕр сире...

Квасов вĕсене иккĕшне те лайăх паллать. Вĕсенчен вăл тӳрех:

— Лавккин хуçи пур-и? Ăçта вăл, хăшĕ? — тесе ыйтрĕ.

— Хуçи çук-ха çав, ĕнер каçах арăмĕпе иккĕшĕ Ильинкăри тăванĕсем патне сăра ĕçме кайнă,— терĕ Кумков.— Анчах эпир ăна чĕнме ятăмăр ĕнтĕ, ывăлĕ паçăрах велосипедпа вĕçтерчĕ. Кĕçех çитет те пулĕ... Ытти енчен эсир мĕн хушнине пĕтĕмпех турăмăр: çынсене лавккана кĕртмен, çывăха та яман...

— Хуралçи те çук вĕт-ха, ниçта та тупаймастпăр, йĕп пекех çухалнă,— калаçăва хутшăнчĕ Яраткин,—ун çинчен эп сана паçăр телефонпах каларăм...

— Хуралçи пирки ан хыпăнăр,— терĕ Квасов,— авă, вăл пирĕн машинăра ларать. Анчах урисем сусăрланнă пулмалла-ха унăн.

Ку хыпар ялти пуçлăхсене те, çывăхрах тăракан ытти çынсене те тĕлĕнтерсе ячĕ, вĕсем, пĕр-пĕрне пӳлсех ватă Улатимĕре ăçта, епле тупни çинчен ыйтма пикенчĕç, анчах Квасов вĕсене хирĕç аллипе сулчĕ кăна:

— Кайран, ун çинчен кайран калаçăпăр! Вилмен сирĕн мучи, хăех пит лайăх каласа пама пултарать...— Вăл хăйпе юнашар пырса тăнă Панькова пуçĕпе сулчĕ.— Старике çавăтса кăлар, малтан унтан ыйтса пĕлес пулать...

Паньковпа колхоз председателĕ Улатимĕр мучие машинăран тухма пулăшрĕç. Йĕри-таврах çынсем пухăнса тăнине курсан, кĕçĕр темтепĕр тӳснĕ старик пĕчĕк ачаллах хурланса макăрса ячĕ:

— Халăх!.. Тăвансем! Туршăн-хĕвелшĕн те айăплă мар эпĕ! Хуть те çакăнта çапса пăрахăр...

— Сана никам та айăпламасть, мучи,— терĕ Квасов.— Эсĕ пире ху ăçта ларнине кăтартса пар, тата вăррисем хăш енчен пычĕç сан патна?

— Ак çакăнта ларсаттăм эпĕ...

Старик лавкка крыльцин сылтăм енчи пĕчĕк сак çине кăтартрĕ.

— Акă, манăн туйи те кунтах выртать-ха, эпĕ ун çине тайăнсаттăм пулмалла...

— Хурала эсĕ миçе сехетре тухрăн?

— Лавкка хупăнсанах пĕр сакăр-тăхăр сехетре пулĕ...

— Миçеччен лартăн вара?

— Автансем авăтиччен...

— Вăррисем сан патна хăш енчен пынине сиссе юлтăн-и?

— Ăна лайăххах астăватăп. Пĕри çак кĕтес хыçĕнчен тухса кĕске пăшалпа тĕллерĕ. Сас кăларсанах вĕлеретĕп терĕ. Теприсем хыçалтан пычĕç пулмалла — куçа хупларĕç, çăвара пăкăларĕç, урăх ним те пĕлместĕп... Вăкăр варĕнчи кĕпер айĕнче тин тăна кĕнĕ...

— Унччен малтан нимĕнле сасăсем те илтмерĕн-и? Машина сасси е тата мĕн те пулин пулмарĕ-и?

— Ав çав енче машина кĕрлесе илни пулчĕ, анчах эпĕ хамăр шоферсенчен хăшĕ те пулин таçтан таврăнчĕ пуль терĕм...

— Сана хăш еннелле сĕтĕрсе кайрĕç вĕсем?

— Çырманалла антарнине туйрăм.

— Машини хăш вырăнта тăнине пĕлместĕн-и?

— Ара, ман куçсене хупларĕç-çке!

Старик текех нимĕнле усăллă хыпар та каласа пама пултарас çуккине чухласа, Квасов ăна халех ялти фельдшер пунктне илсе кайма хушрĕ.

— Суранĕсене эмеллеччĕр, çыхчăр, выртса кантăр, унпа эпир кайран та тĕл пулăпăр-ха!

Çакăн хыççăн вĕсем Паньковпа иккĕшĕ лавкка йĕритавра пăхса çӳреме тытăнчĕç, анчах куçа курăнма пултаракан нимĕнле йĕр тавраш те тупăнмарĕ. Унтан каялла лавкка алăкĕ патне пычĕç. Çăраççине лумпа хирсе çĕмĕрнĕ иккен, ăна уçма тăрăшса алăк хăмине те шăйăрса пĕтернĕ. Çав пур паллăсене те вĕсем фотоаппаратпа ӳкерсе илчĕç, алăк çинчи шăйрăксене, пластилин çыпăçтарса, слепок турĕç. Çăраççине вĕçертсе илсе хутпа чĕркесе чикрĕç.

Çынсем вĕсем ĕçлени çине питĕ тĕлĕнсе пăхса тăчĕç...

— Ну, халь ĕнтĕ шала кĕрсе курас пулать,— терĕ

Квасов ял Совечĕпе колхоз председателĕсене.— Понятойсем пулатăр. Сирĕнсĕр пуçне тата колхозниксенчен кама та пулин илес пулать. Унсăр юрамасть.

— Тен, Зайкин хăй киличчен тăхтăпăр? — иккĕленнĕ пек пулчĕ колхоз председателĕ.— Хуçи вăл-çке-ха, ответне те чăн малтан унăн тытмалла...

Çак калаçăва илтнĕ пекех, халăх хушшинчен тахăшĕ хыттăн кăшкăрчĕ:

— Килет, хăй килет!..

— Пăхăр-ха, ав епле вĕçтерет! — терĕ тепри те.

Чăнах та, уй тӳпинчи армансем енчен, тин çеç шăтнă сип-симĕс калча хушшипе авкаланакан сукмак тăрăх, ял патнелле велосипедист ыткăнса килет иккен. Вăл çара пуçăн, пиншакне йӳле янă та, унăн аркисем çунатсем пек саркаланса пыраççĕ, сукмакĕ лупашкаллă та тумхахлă пирки çын пĕрмай сиккеленет, анчах хăй çапах та питĕ хăвăрт çывхарать. Тепĕр темиçе минутранах вăл халăх хушшине вăркăнса пырса кĕчĕ...

Лавкка заведующийĕ Прокопий Зайкин — кӳпшекрех пит-куçлă, йăваш, никампа нихçан харкашман, питĕ тӳрĕ кăмăллă, аллă çулсене çитнĕ çын, çавăнпа ăна ялта пурте хисеплеççĕ, ватти-вĕттипех Прокопи Васильч тесе чĕнеççĕ, çавăн пиркиех ялти лавккара вăл вун пилĕк çула яхăн пĕр улшăнмасăр ĕçлет те ĕнтĕ. Тирпейлĕ, ялан урă пуçпа ĕçленĕрен унăн пĕр ревизире те укçа-тенкĕ çитменни пулман. Лавккаран мĕн те пулин çухални çинчен те нихçан та сăмах-юмах тухман.

Анчах кĕçĕр акă...

Кĕçĕр ытла та хăрушă, кĕтмен ĕç пулнă.

Велосипед çинчен сиксе ансанах, ăна аяккалла пăрахса, Зайкин лавкка крыльци çине чупса хăпарчĕ те антăхса каяс пек, кĕç макăрса ярасла, çав тери ӳпкевлĕн калаçма тытăнчĕ:

— Кам шуйттанĕ килсе кĕнĕ-ши?.. Вун тăватă çул хушшинче пĕр шăрпăк та çухалманччĕ!.. Юриех турĕç ĕнтĕ, курайманнипех, хамăр ялсемех тĕллеттерчĕç пуль... А-ах, тытăттăм эп вăл эсреле!..

— Кĕрер, Зайкин,— терĕ Квасов.

Лавккана чăн малтан Квасовпа Паньков, вĕсем хыççăн Зайкин, унтан Кумковпа Яраткин тата тепĕр понятой кĕрсе тăчĕç. Чӳречесене шал енчен сĕтел пек сарлака хăмасемпе картланă пирки лавккара çĕрлехи пекех тĕттĕм. Зайкин кĕрсенех электричество çутса ячĕ, анчах Квасов ăна чӳречесем çинчи хăмасене вĕçертсе илме хушрĕ.

— Пире кун çути кирлӗ,— терӗ вӑл.— Тата эсӗ урайне ытлашши йӗр туса ан çӳре, малтан пирӗн пӗтӗмпех пӑхса тухас пулать...

Виçӗ сарлака чӳречерен йӑваш хӗвел çути шуса кӗрсен, çынсен куçӗ умне питех те хӑрушӑ картина тухса тӑчӗ.

Чӑн малтан вӗсем урайӗнче унта та кунта московски эрех кӳлленсе тӑнине курчӗç. Ку чӑнах та шыв мар, эрех иккенӗ урайӗнче икӗ ванчӑк кӗленче йӑваланса выртнинчен паллӑ пулчӗ. Кунсӑр пуçне, йӗпе урай талккишпех махорка сапаланса выртать. Зайкина та, понятойсене те ку питӗ тӗлӗнтерчӗ: мӗн мурӗшӗн кун пекех хӑтланнӑ-ха вӗсем? Ӑнсӑртран тӑкнӑ-ши çак эрехпе махоркӑна е бандитсем куна юри, ашкӑнса, ятарласа мӑшкӑллас шутпа туса хӑварнӑ?..

Анчах аслӑ оперуполномоченнӑй Василий Квасов ку мӗне пӗлтернине тӳрех ӑнланса илчӗ: куна вӑрӑсем йӗр йӗрлекен йытӑсенчен сыхланса тунӑ. Преступлени пулса иртнӗ вырӑна эрех, табак, пӑрӑç е дуст сапсан, нимӗнле йытӑ та «йӗр илеймест»...

«Опытлӑ вӑрӑсем ӗçленӗ,— шухӑшларӗ Квасов.—Кусене йӑпӑр-япӑрах тытаяс çук, чылай тӑрмашмалла пулать...»

Урайӗнчех, эрехпе, махоркӑпа хутӑш, йӳнӗ йышши пусма-тавар, çитсӑ тӗркисем, «бумажнӑй» костюмсем урлӑ та пирлӗ йӑваланса выртаççӗ. Паллах ӗнтӗ, вӑрӑсем хаклӑрах япаласем шыранӑ, йӳнӗ япаласем кирлӗ пулман вӗсене.

— Лайӑхрах тӗрӗсле ӗнтӗ халь, мӗн-мӗн илсе кайнӑ санӑнне? — терӗ Квасов ӑнран тухса кайнӑ пек тӑракан лавкка заведующине. Хӑй çав хушӑрах урайӗнче сапаланса выртакан таварсене фотоаппаратпа ик-виçӗ хут ӳкерсе илчӗ, унтан, лавкка урайӗнчи махоркӑна пӗр чӗптӗм пухса илсе, ӑна хутпа тирпейлӗн чӗркерӗ те сумкине хучӗ, ванчӑк эрех кӗленчисенчен пӗрне илсе чикрӗ. Аслӑ сержант Паньков пур кӗтессене, прилавоксен хыçӗсене васкамасӑр, кашни утӑмрах чарӑнса сӑнаса çӳрерӗ.

— Сехетсем! — сасартӑк кӑшкӑрса ячӗ Зайкин сулахайри витрина патӗнчен.— Пӗр сехет те хӑварман!

— Миçе пулнӑ вӗсем санӑн? — ыйтрӗ урайӗнчен тӑнӑ Квасов.

— Кӗсъене чикмеллисем пиллӗкчӗ, алла çыхмаллисем — улттӑ, вӗсенчен виççӗшӗ — ылтӑн! Кӗмӗл кашӑк-



Чӑваш... Респ... библ...
34019чв

сем... çĕрĕсем çук! Сахалтан та пилĕк пинлĕх пулать вăл!*

Квасов сехетсем выртнă витрина кантăкĕ çине шурă порошок сапса сăтăркаларĕ те, унта пӳрне йĕрĕсем паларса тухсан, икĕ хутчен ӳкерчĕк туса илчĕ.

Зайкин лавкка тăрăх пĕр çĕртен тепĕр çĕре ыткăнма пуçларĕ. Вăл прилавоксем çумĕнчи ещĕксене турта-турта кăларчĕ, вĕсен айне кĕрсе пăхрĕ, тавар хунă çӳлĕксем çине хăпарса кайрĕ. Лавккара халь пĕр унăн сасси çеç илтĕнчĕ:

— Фотоаппаратсене те илсе кайнă! Виççĕ пулнăччĕ вĕсем... Ак кунта манăн пуçламан пурçăн тĕркисем иккĕччĕ, кунта крепдешин, штапель... Драп та çук, кăвак драп, пальто валли... О-о, пĕтерчĕç, пуçа çирĕç манăнне!

— Тата мĕн çухалнă, лайăххăн, тĕплĕрех тĕрĕсле, протокол çине пурне те кĕртес пулать,— терĕ Квасов.— Пĕтĕмпех аса илме тăрăш!

— Пурне те тӳрех ăçтан аса илем-ха эпĕ? Тем те пулнă ман лавккара, ахальтен мар таварçаврăнăш енĕпе пилĕк çул хушши пĕтĕм районĕпе пĕрремĕш вырăнта тăнă! Халь ĕнтĕ çавăншăн тĕрмене кайса ларатăп...

Вăл прилавок çинчен сиксе анчĕ те, урайĕнче йăваланса выртакан хулăн пустав тĕрки çине лак! ларса, пуçне икĕ аллипе пăчăртаса тытрĕ.

— Турăçăм, мĕн пулать ĕнтĕ халь мана? Пĕтрĕм вĕт! Пĕтрĕм! Пуç кайрĕ!..

Çав вăхăтра тепĕр енчи прилавок хыçĕнчен аслă сержант Паньков сăмса тутри çине хунă çутă япала йатса тухрĕ те Квасов патне пычĕ.

— Кур-ха, лейтенант, мĕн тупрăм эпĕ...— терĕ вăл шăппăн.

— Мĕн?

— Акă — хуçмалли çĕçĕ. Унăн-ши вăл? — пуçĕпе Зайкин еннелле сулса илчĕ Паньков.

Квасов хăйĕн помощникĕн аллинчи çĕççе тутăр çинчен илмесĕрех çаврăркаласа пăхма тытăнчĕ. Ана кивĕ çаваран тунă пулмалла, аври çутă алюминирен, унăн пĕр енне, темле шĕвĕр япалапа тире-тире, виçĕ саспалли çырнă: «И. И. И.» Вĕсем тавра чечек евĕрлĕ эрешсем тунă.

— Хитре япала... Хăш тĕлте тупрăн?— ыйтрĕ Квасов.

— Ав çавăнта, пир-авăр выртнă тĕлте, урайĕнче. Ак

---

* Кунта кивĕ укçа хисепĕпе каланă.

ку та çавăнтах выртать. «Прибой» пирусăн мундштукĕ. Туртса та пĕтермен...

Квасов урайĕнче ларакан Зайкин еннелле çаврăнчĕ.

— Итле-ха, хуçи, эсĕ чĕлĕм туртатăн-и?

— Ĕмĕрне те çăвара шăршлантарман,— терĕ заведующи.

— Тата... ак çак çĕçĕ санăн хăвăн-и?

— Мĕнле çĕçĕ? Ман лавккара çĕçĕсем тем тĕрли те пур,— ăнланаймасăр пăхрĕ ун çине заведующи.

— Çук, лавккарисем мар, ак çакă, килте тунăскер...

Вăл çутă авăрлă çĕççе Зайкина илсе пырса кăтартрĕ. Лешĕ ун çине пĕрре пăхсанах куçĕсене мăч-мăч-мăч тутарса илчĕ, унтан темле шухăша кайнă пек пулчĕ. Пĕр çур минут хушши нимĕн те чĕнмерĕ, унтан Квасов çинелле тĕлĕннĕрех пăхрĕ те хуллен кăна:

— Çĕççи ман мар ку, анчах эп ăна таçта курнă пек туйăнать,— терĕ.

— Ăçта курнă, аса ил-ха.

— Чим-чим...— Зайкин çĕçĕ аври çинчи сăспаллисене вуларĕ.— «И. И. И.»

— Кам пулма пултарать вăл «И. И. И.»? Шухăшласа пăх-ха лайăххах,— терĕ Паньков.

— Тăхта, тăхта,— куçĕсемпе каллех çĕçĕ çине тăрăнчĕ Зайкин.— Анваскăр, тăнран кăларса ан ярăр мана...

Квасовпа Паньков чĕнмесĕр тăчĕç. Çур минут иртрĕ, пĕр минут...

— Эпĕ ку çĕççе... темиçе кун каялла çакăнтах, хамăн лавккарах, курнă! — терĕ унтан Зайкин сасартăк.—Курнă çеç те мар, хам алăпах тытса пăхнă. Питĕ лайăх астăватăп!

Зайкин япшт! сиксе тăчĕ.

— Ăçта тупăнчĕ вăл? — Унăн сасси тăруках темле çирĕпленсе, хаярланса кайрĕ, куçĕсем те пĕртте малтанхи пек мар, хăюллăн çуталса илчĕç.

— Çакăнтах, ара, лавккарах,— терĕ Паньков.

— Вăрă çĕççи вăл! — кăшкăрчĕ Зайкин.

— Мĕнле вăрă? Эсĕ ку çĕçĕ хуçине паллатăн-им?

— Хамăр ялсене епле палламастăн-ха? Акă кунта «И. И. И.» тесе çырнă, вăл Илья Ильич Ивуков тени пулать, ялта ăна Илюк теççĕ. Çамрăк кăна каччă. Нумай пулмасть тĕрмерен тухса килчĕ, тĕрминче вăл хулари шпанасемпе пĕрле магазин çаратнăшăн ларчĕ. Халь ĕнтĕ пĕтĕмпех паллă, юлташ милиционерсем, ним шухăшласа тăмалли те çуккă, çак тискер ĕçе урăх никам та мар,

çав эсрелĕ тутарнă! — Зайкин, хĕрӳленсе пырса, хытă-ран хытă калаçма пуçларĕ.— Итлĕр акă: ытларикун-и, юнкун-и,— вăл ман лавккана килсе кĕчĕ те пĕр çур сехет пуль шăршласа çӳрерĕ, анчах хăй пĕтĕмпе те икçĕр грамм премĕк виçтерчĕ те пĕр пачка «Прибой» кăна илчĕ, халь-хи пекех астăватăп... Лавккара ун чух ик çын пурччĕ, таçтисем, вĕсене палламастăп, иртен-çӳренсем пулмалла, вĕсем пĕр чĕрĕк илчĕç те закускăлăх «кильки» консервă туянчĕç, нимпе уçма çуккипе манран çĕçĕ ыйтрĕç, эпĕ çĕçĕ çук терĕм, вара çав Илюк тени вĕсене хăйĕн çак çĕç-çине кăларса пачĕ. Çĕççи самаях хитре пек туйăнчĕ те, эп ăна кайран хам ыйтсах тытса пăхрăм. Ăçтан туянтăн кун пек япала тесе ыйтсан, вăл мана хам турăм терĕ. Эсир мана хуть те тем калăр, анчах çав çĕççех вăл! Ça-ратнă чух васканипе кăларса ӳкернĕ ĕнтĕ, йытă...

— Илья Ильич Ивуков тетĕн-и? — сумкинчен блок-нот кăларса çырма хатĕрленчĕ Квасов.— Çак ялсемех? Халь ăçта-ши вăл? Килтех-ши? Пĕлместĕн-и?

— Ăна пĕлме пултараймастăп,— пуçне пăркаласа илчĕ Зайкин.— Кам пĕлет, тен, ытти вăррисемпе пĕрле килтен тухса вĕçнĕ-и? Пĕччен пулман ĕнтĕ вăл кунта. Пĕччен çын епле-ха çакăн чухлĕ тавар çаратса тухса кайма пултартăр?

— Пĕччен пулманни паллă-ха.

— Амăшĕ килтех пуль. Ачи çук пулсан, унтан ыйт-са пĕлĕр... Тупас пулать ăна епле пулсан та! Çавăнтан пуçлас пулать йĕр йĕрлеме. Тытса лайăхрах пăркăчлас пулать те, калатех вара хăй кампа пулнине, ман тавар-сене ăçта кайса чикнине...

Зайкин пĕтĕм кĕлеткипе чĕтрерĕ.

Квасовпа Паньков лавкка заведующийĕ каланисене ним чĕнмесĕр итлесе тăчĕç. Вĕсене те ĕнтĕ паянхи çара-ту çав Илья Ильич Ивуковсăр пулман пек туйăнма пуç-ларĕ. Пур енчен илсен те çавăн пек пулса тухать,— вăл нумай та пулмасть тĕрмерен таврăннă, тĕрмине ăна ма-газин çаратнăшăн лартнă, темиçе кун каялла лавккана хăй килсе пăхнă, лавккари тупăннă çĕçĕ те унăннах, çак лавккарах вăл «Прибой» пирус илнĕ...

— Чăн малтан çак йĕкĕте тупас пулать эппин! —терĕ Квасов.

Çак вăхăтра тулта машина моторĕ кĕрлени илтĕнчĕ. Квасов чӳрече витĕр пăхрĕ те алăк умне хĕрлĕ «пиçих-хиллĕ» кăвак «Победа» çитсе тăнине, ун ăшĕнчен пĕрин хыççăн тепри Шупашкарти милици офицерĕсем тухнине, вĕсем хушшинче хăйĕн начальникĕ Светлов майор та

пулнине курчĕ. Самантранах машина çумне мотоцикл çитсе тăчĕ, унăн сăпкинче кашкăр пек тĕреклĕ йытă ларать.

— Амура илсе килнĕ-çке,— палласа илчĕ ăна Квасов.— Ку питĕ аван вара! Амуртан пытанаймăн!

Йĕр йĕрлекен йытăсем хушшинче Амур чăнах та чи пултарулли, чи ăсли пулнă...

## 3

Юманлăхри лавккана çаратиччен пĕр-икĕ эрне малтантарах Атăл тăрăх Шупашкаралла хăпаракан «Комсомолец» пăрахутăн тăваттăмĕш класĕнче, пĕр кĕтесри саксем çинче, виççĕн выртса килчĕç. Иккĕшĕ пĕр майлăрах тумланнă — йĕлтĕрпе çӳремелли кивĕрех костюмсемпе, резина тĕплĕ хулăн пушмаксемпе, пуçĕсенче — çĕнех мар кепкăсем. Тепри вĕсенчен тасарах, тирпейлĕрех тăхăннă. Çанталăкĕ шăрăх пулин те, вĕсен кашниннех пуç айĕнче — ваткăллă фуфайкăсем. Иккĕшĕ 30—35 çулсене çитнĕ, пĕри — шатра питлĕ, хĕсĕкрех куçлă, лутрарахскер, унăн янах шăммисем уйрăмах палăрса тăраççĕ; тепри вара самаях çӳллĕ, хыткантарах, пăтранчăк кăвак куçлă, анчах унăн пĕр куçĕ тăтăшах хупăнса тăнă пек курăнать, мĕншĕн тесен çамкин сылтăм енне пысăк çĕвĕ касса анса куç хупаххи патнех çитнĕ. Виççĕмĕшĕ вара вĕсенчен нумай çамрăк, вунулттă-вунçиччĕсенче çеç, сăнран илемлĕскер: çаврака питлĕ, тутисем хĕрĕнни пек тирпейлĕ, калаçнă-кулнă чух тикĕс шăлĕсем шап-шуррăн курăнаççĕ.

Пăрахут çине вĕсем Хусантан чылай тăварахра, пĕр пысăках мар пристаньре, каç пулсан тин кĕчĕç те тӳрех буфет патĕнче чарăнса тăчĕç. Шатра питли, халăх хушшине черетсĕрех кĕрсе кайса, çур литр эрехпе йӳнĕрех пулă, пируспа спичка илчĕ, унтан вĕсем пурте пăрахут хӳри еннелле утрĕç.

Тăваттăмĕш класра вăл вăхăтра пĕр пушă вырăн та çукчĕ, çынсем саксем çинче кăна мар, пичкесем, тимĕр куписем, хут рулонĕсем, тем тĕрлĕ ещĕксем çинче те выртса-ларса пыратчĕç. Анчах çак виçĕ çын часах вырнаçрĕç. Шатра питли кĕтесри саксем патне пычĕ те чипер çывăракан çынсенех унтан-кунтан тĕккелесе вăратма тытăнчĕ.

— Извиняйте, мадама, пардон, мучи! Пăрахут çинче пурин те правасем пĕрешкел, çавăнпа та пĕрисен авалхи графсем пек саркаланса пыма, теприсен вĕсен

умĕнче чĕрне вĕççĕн тăрса пыма саккун çук... Эпир те сирĕнтен кая мар ываннă çынсем, инçетрен килетпĕр, тата унтан та инçерех кайма ĕмĕтленетпĕр, çавăнпа та сирĕн кăштах сикес, пирĕн ларса канас пулать. Эхер те сирĕн хăвăрăн тăма вăй çук пулсан — эпир мăн кăмăллă çынсем мар, хамăрах çĕклесе тăратма, кирлех пулсан, аяккарах кайса хума та пултаратпăр!

Çапла пакăлтатнă хушăрах хăй чӳрече умĕнчи сĕтел патне пырса ларчĕ те юлташĕсене:

— Вырнаçăр, тăвансем, хăвăрах вырнаçăр, атту вĕт куратăр, пире валли пушă вырăн хăварма никамăн та ăс çитмен,— терĕ.

Çывăракан çынсем йăшалана-йăшаланах, кăмăлсăр мăкăртатса тăра-тăра ларчĕç, аяккарах сикрĕç. Кĕтмен çĕртен пырса кĕнисенчен пĕри сĕтел çине кружка кăларса лартрĕ, пулă хучĕ те хутпа чĕркенĕ çур литр кĕленчине тĕпĕнчен пĕрре çапсах уçрĕ. Малтан вăл хăй тултарса ĕçрĕ, унтан çĕвĕк çамкаллине ярса пачĕ, юлашкинчен çамрăккине те ĕçме сĕнчĕ.

— Ĕçес килмест манăн,— пуçне пăркаларĕ лешĕ.

— Ан ухмахланса лар! — терĕ шатра питли.— Мĕн эс... Пĕрре те чуптуса курман хĕр пек пуласшăн-и? Ача садĕнчен таврăнмастăн вĕт, арçын пулмалăх вăхăт пулнă санăн!

— Ĕçсе парсам! — терĕ тепри, çĕвĕклĕ çамкалли те, çамрăккине чавсапа аякĕнчен тĕртсе.— Тӳсме пултараймастăп çакăн пек чăхăмлакансене!

— Калатăп-çке, манăн пĕртте ĕçес килмест, эсир хăвăрах ĕçĕр! — тытăнса тăчĕ йĕкĕт.

— Тен, эсĕ çак черккешĕн хăвăнтан укçа илесрен хăратăн? — йĕкĕлтесе илчĕ шатра питли.— Ан хăра, юлташсене эпир ахалех хăна тăватпăр! Тыт тавай! Ну! Кама калатăп эпĕ?!

— Çамрăк ачана ма ун пек пусмăрласа ĕçтересшĕн вара эсир? — терĕ çав вăхăтра çӳлти сак çинчен пăхса ларакан ватă хĕрарăм.— Çынна пăсни кăна-иç вăл!

— Мĕнле турамăш сасси тата ку? — çӳлелле пăхрĕ шатра питли.

— Турамăш мар эпĕ, ырă çыннăм, анчах та хам пурнăçра пилĕк ывăл пăхса çитĕнтертĕм, вĕсенчен пĕри те пьянчук пулмарĕç-ха, тав турра. Эсир пур — çамрăк йĕкĕте халех усала вĕрентесшĕн...

— Тĕрĕс мар калатăн, кинемей, —терĕ карчăка хирĕç шатра питли,— усала та вĕрентместпĕр эпир ăна, пăсма та шутламастпăр, унтан çын тăвас тетпĕр кăна. Паттăр-

лантăр пăртак, санăн ывăлусем пек йĕпе сăмсаллă арçын ан пултăр. Анлантăн-и?

— Тьфу, сана куншăн! — çилленсе кайрĕ карчăк.— Чĕлхӳ çине ӳпне çăпан тухтăрах ман ывăлсем çинчен çапла каланăшăн! Манăн ывăлсенчен виççĕшĕ вăрçăран таврăнмарĕç, иккĕшĕ халĕ ятлă çын — пĕри шкул директорĕ, тепри колхоз председателĕ! Шăпана пуль эсĕ, çынсем çинчен ним пĕлмесĕр çакăн пек палкатăн пулсан, чисти лапра çăвар!

— Хуллентерех, хуллентерех, кинемей, асту, çӳлтен парашютсăр вĕçсе анмалла ан пултăр,— асăрхаттарнă пек турĕ ăна çĕвĕк çамкалли, ĕçнĕ-ĕçмен хĕрме пуçланăскер.

— Ан чар, янратăр-иç! — аллипе сулчĕ шатра питли.— Старикĕпе ятлаçманни нумай пулать пулĕ, чĕлхи кĕçтет унăн...

— Эп хамăн старикпе хĕрĕх пилĕк çул пурăнса та ятлаçса курман-ха! Эсĕ вăт хăвăн арăмупа мĕнле пурăнатăн-ши? Кашни ĕçмессеренех тӳнккетĕн пулĕ-ха, намăссăр! — парăнмарĕ карчăк.

— Хусах-ха çав эпĕ, кинемей, ниепле те хама юрăхлă мăшăр тупаймастăп мар-и? Виççĕшĕ мана хăйсем пăрахса кайрĕç, иккĕшне хам хăваласа ятăм. Халь акă каллех авланас пулать. Санăн хăвăн ман валли запас хĕр çук-и? Тавай, тăванлашатпăр!

Шатра питли тăрук ахăлтатса, темле ухмахларах, йĕрĕнмелле кулса ячĕ. Карчăк ун çине çилĕпе пăхса:

— Тьфу, чăнах та этем мар иккен эсĕ! — терĕ те стена еннелле çаврăнса выртрĕ.

Унтан шатра питли кружкăри эрехе каллех çамрăккине сĕнчĕ:

— Ĕç тата, анчăк çури! Сана аслисем хисеп тăваççĕ, а эсĕ... асту! — Вăл хăйĕн хĕсĕк куçĕсене тата ытларах хĕссе лартрĕ. Ку ĕнтĕ вăл çилленме пуçланине пĕлтерчĕ.— Ну? Тата нумай кĕттеретĕн-и?

Çамрăкки ĕçме пикенчĕ, анчах кăшт сыпсанах чыхăнса кайрĕ те, ӳсĕрнĕ май кружкăна аллинчен ӳкерсе, эрехне тăкса ячĕ.

— Упăте! — тăрук кăшкăрчĕ вара çĕвĕк çамкалли.— Шăршлă кăмпа, арçын мар!

— Эп куншăн сан чунна кăларса илетĕп,— чашкăрса чышкисене чăмăртарĕ шатра питли те.— Халех илсе пар уншăн... пĕр литр!

— Илĕр, ара, укçи шел мар мана...— чăнласах хăраса кайрĕ те çамрăкки таçтан хĕвĕнчен аллă тенкĕлĕх

хут укҫа кăларса тыттарчĕ.— Анчах та, тархасшăн, хама ан ĕҫтерĕр. Пултараймастăп эпĕ!

— Ну, мĕнех, ара? Кама хăрататăн эсĕ унпа! Пире хамăра ытларах лекет!

Тепĕр пилĕк минутранах шатра питли татах эрех йăтса пычĕ те, ҫĕвĕк ҫамкаллипе иккĕшĕ каллех ĕҫме тытăнчĕҫ. Часах вĕсем самаях ӳсĕрĕлсе кайрĕҫ, юнашар ларакан ҫынсемпе тем ҫинчен те лăпăртатма тытăнчĕҫ. Ҫавна пула, урăх ҫĕрте пушă вырăнсем пулман пулин те, ик-виҫĕ хĕрарăм хăйсен вырăнĕсенчен тăрса кайрĕҫ. Унтан ҫак ытла та хавасланса кайнă туссем пĕтĕм вăйран кăшкăрса юрлама тытăнчĕҫ:

> Эх!.. Здравствуй, моя Любка, Любка дорогая,
> Здравствуй моя Любка — и прощай...
> Ты зашухарила всю нашу малину,
> А теперь за это получай!

Ҫамрăкки нимĕн чĕнмесĕр, пуҫĕпе стена ҫумне тайăнса, пĕрмай чӳрече витĕр тулалла пăхса пычĕ. Тулта пĕтĕм ҫутҫанталăка хуп-хура сăрпа сăрласа лартнă пекех тĕттĕм, сайра хутра ҫеҫ чӳрече тĕлĕпе шурă, хĕрлĕ бакен ҫутисем шуса иртеҫҫĕ те, хушшăн-хушшăн туран килекен пăрахутсем, кĕскен-кĕскен кăшкăртса, юмахри вут-хĕмлĕ кайăксем пек ялкăшса анса каяҫҫĕ.

Ҫамрăк йĕкĕтĕн шухăшĕсем ҫак вăхăтра пĕртте кунта мар, таҫта инҫетре пулчĕҫ пулмалла. Хăйпе пĕрле пыракан аслăрах юлташĕсем мĕн хăтланнисене вăл ҫаврăнса та пăхмарĕ. Лешсем ытлашши шăй-шай калаҫма тытăнсан тин пуҫне вĕсем еннелле ҫавăрчĕ.

— Сана мĕн ĕҫ?! Кам вара эс пире вĕрентме? Мĕнле начальник? — кăшкăрчĕ шатра питли кăвак костюм тăхăннă шлепкеллĕ ҫын ҫине, ăна кĕҫ-вĕҫ кăкринчен ҫавăрса тытас пек тăрса.

— Эп нимĕнле начальник те мар кунта, ахаль совет гражданинĕ ҫеҫ, анчах та сире йĕркеллĕ пулма ыйтатăп,— терĕ лешĕ.— Халь ҫĕрле, ҫынсем ҫывăраҫҫĕ, кунта хĕрарăмсемпе ачасем нумай, эсир пур — ирсĕр юрăсем юрлатăр. Епле намăс мар сире? Ĕҫрĕр пулсан — выртăр та ҫывăрăр.

— Санăн укҫупа ĕҫмен, санăн ĕҫ те ҫук пирĕнпе!

Ҫак вăхăтра кĕтмен ҫĕртен вĕсем патне пăрахут капитанĕн помощникĕ пырса тăчĕ.

— Мĕн пирки шавлатăр? — ыйтрĕ вăл ҫирĕп сасăпа.

— Ак ҫак юлташсем ҫынсене канăҫ памаҫҫĕ, хулиганла юрăсем юрлаҫҫĕ,— терĕ шлепкеллĕ ҫын.— Эпир

вёсене лăпланма ыйтрăмăр, анчах вёсем тата ытларах...

— Суятăн, малтан эсё ху çыпăçрăн пирён çума! Шлепке тăхăннă та хăвна патша вырăннех хуратăн пулас! Сахал мар курнă эпир сан пеккисене! — кăшкăрчё шатра питли.

— Тёрёс мар, тёрёс мар! — кăшкăрчёç вара çынсем пур енчен те.— Ку гражданин нимён те каламарё вёсене, лăпланма çеç ыйтрё!

— Фулюгансем!

— Антарса хăвармалла çеç вёсене!

— Эсир ўсёр, сирён выртса канас пулать,— терё капитан помощникё.— Лăпланмасан, эпир сире çитес пристаньрех антарса хăваратпăр. Унтан та ытларах пулма пултарать — милици аллине паратпăр.

— Ним чухлё те ўсёр мар эпир! — итлемерё ăна шатра питли.— Ёçнё пулсан та, апат анмалăх çеç ёçнё. Тепёр тесен, эпир кунта заключеннăйсем мар вёт, ирёклё çынсем, гражданин начальник!

— Ну-ка, кăтартăр-ха хăвăрăн документăрсене, пур-и вёсем сирён? — ыйтрё вара капитан помощникё, хăйне лешсем «юлташ» вырăнне «гражданин» тесен.

— Тархасшăн, ара, тарха-асшăн! — сăмахёсене тăсса кăшкăрчё каллех шатра питли.— Документсем мировой пирён, алă та пуснă, пичет те пур! Пирён пек документсемпе тёнче хёррине те çитме пулать...

Капитан помощникё вёсем кăларса панă хутсене тытса хăвăрт кăна вуласа тухрё. Унта çак çынсем, Уголовнăй кодексăн çав-çав статйисемпе айăпланса, пилёкшер çул колонире ларни, халё, срок тухнă майпа, вёсене ирёке кăларни çинчен çырнă иккен...

— Ну, мёнле, гражданин начальник, фальшивăй мар-и пирён документсем?

— Мар,— терё капитан помощникё, хутсене каялла парса.— Анчах çапах та эсир йёркеллё пулăр, хăвăра хăвăр тытма пёлёр!

Вăл урăх нимён те каламарё, тўрех çаврăнчё те виççёмёш класс еннелле утса кайрё.

Ўсёрсем çакăн хыççăн лăпланнă пек пулса хăйсен вырăнёсене тăсăлса выртрёç. Вёсем çывăрса кайсан, çамрăкки ерипен кăна палуба çине уçă сывлăша тухса тăчё. Пёччен çёрте никам кансёрлемен чух иртни çинчен те, пуласси çинчен те шухăшлама çав тери лайăх...

## 4

Çапла çав, вĕсем колонирен таврăннă...

Аслăраххисем, халь çеç хытă шавласа илнисем, иккĕшĕ те вăрă-рецидивистсем пулнă. Колонире вĕсене ятпа та, хушаматпа та чĕнмен, пĕрне «Шатри», теприне «Чалăшши» тенĕ. Хăйсен пурнăçĕнче сахал мар магазин, хваттер çаратнă вĕсем, уйрăм çынсене тапăнса, тепĕр чух хĕçпăшалпа хăратса, тумтирĕсене, укçи-тенкине, хаклă япалисене турта-турта илнĕ. «Шатрипе» «Чалăшшин» пĕтĕм пурнăçĕ тĕрмесемпе колонисенче иртнĕ темелле, мĕншĕн тесен вĕсем тӳрленме, тĕрĕс пурнăçпа пурăнма шутламан. Ларса тухнă та каллех вăрлама тытăннă, унтан каллех лекнĕ, темиçе çултан ирĕке тухсан татах «çăмăл пурнăç» илĕртнĕ вĕсене... Акă халĕ те, колонире пилĕк çул ларса иртгернĕ пулин те, ытти пĕтĕм халăх пек ĕçлесе тӳрĕ кăмăлпа пурăнас шут пурри палăрмасть вĕсен. Ана çамрăкки вĕсем çул çинче мĕнлерех калаçса килнинченех пит лайăх чухларĕ.

— Ман ĕмĕре çынсем ĕçлесе туни те çитет! — терĕ пĕррехинче Шатри, киле таврăнсан мĕнле пурăнасси çинчен сăмах хускатсан.— Колонире ĕçлесе те мăй таранах тăраннă...

— А эпĕ пĕр-пĕр пуянтарах хусах матка çунатти айне пытанма шутлатăп! Ун ĕнине те сăвататăп вара, хăйне те! — ахăрса илчĕ Чалăшши.

Анчах çамрăкки малашнехи пурнăç çинчен пĕртте вĕсем пек шухăшламан, унăн пуçĕнче пачах урăхла ĕмĕтсем пулнă. Тин çеç вунçиччĕ çине пуснăскер, вăл лешсем пек пăсăк ăслă пулман.

«Анне патне çитсен кăштах канатăп та çĕрĕн-кунĕн, ырми-канми ĕçлеме тытăнатăп... Хамăн намăса ĕçпе тасататăп... Никам та мана вăрă теме пултараймĕ. Текех эп нихçан та вăрă пулас çук!» — терĕ вăл хăй ăшĕнче пĕрмаях.

...Кунта ĕнтĕ çак çамрăк йĕкĕт Илья Ивуков колоние мĕнле лекни çинчен каласа памалла пулĕ.

Тăвата çул хушши пынă хăрушă вăрçă нумай ачана тăлăха хăварчĕ. Илюкăн ашшĕ те, Тăван çĕршыва хӳтĕлесе, вăрçăра пуçне хунă. Ана Илюк астумасть — вăл вăрçă пуçланиччен виçĕ уйăх малтарахран çеç çуралнă. 1943 çулта, кĕр енне, унăн ашшĕ пирки вилнĕ хут килнĕ,— вăл хут халь те усранать-ха амăшĕн чăланти арчинче,— унта «Сержант Илья Иванович Ивуков погиб смертью храбрых при форсировании Днепра под городом

Лоевом» тесе çырнă. Нумай макăрчĕ ун чух амăшĕ, вăл ĕсĕклесе выртнипе Илюк çĕр варринче те пĕрре кăна мар вăрана-вăрана кайнă. Пĕчĕк пуçĕпех лăплантарма тăрăшатчĕ вăл амăшне:

— Ан макăй, анне! Ан макăй!

Амăшĕ ĕсĕклеме чарăнмасан, Илюк чăнах та унпа пĕрле йĕме тытăнатчĕ...

Пурăна киле амăшĕ лăпланнă пек пулчĕ, сайра хутра çеç, хăй пекех тăлăха юлнă хĕрарăмсем пырса ларса упăшкисем çинчен сăмах тапратсан, куçĕсем шывланатчĕç унăн, унтан вара кун каçипех салху çӳретчĕ. Ăна пăлхатса ярас мар тесе, Илюк та чĕнместчĕ вара.

Колхозра халăх хушшинче Илюк амăшĕ яланах ырă ятлăччĕ. Ĕçре вăл хăй пек хĕрарăмсенчен кăна мар, арçынсенчен те юлмастчĕ çав — уй-хирте те, вăрманта та; чăх-чĕп фермине ун аллине парсан та, унти ĕçсем ик-виçĕ уйăх хушшинчех лайăхланчĕç. Колхоз правленине те темиçе хутчен суйларĕç ăна, унта та ыттисенчен кая мар ĕçлерĕ.

Çул хыççăн çул иртрĕ. Илюк пысăклансах пычĕ, шкулта вĕренме пуçларĕ, класран класа çăмăллăнах куçрĕ, пĕвĕпе те çамрăклах тăсăлса кайрĕ, вуникке çитсен, амăшĕпе танлашрĕ, ĕçре те ăна мăн çын пекех пулăшакан пулчĕ.

— Маттур каччă ӳсет сан, Анюк, хăвна пулăшакан та, хӳтĕлекен те пулать, тин нимĕншĕн те пăшăрханмалли çук,— тетчĕç кӳршĕ арăмĕсем.

— Ӳсет-ха, ӳсет, ашшĕ пекех ĕçчен те сăпайлă çын пулать пулмалла-ха,— хавасланса каятчĕ Илюк амăшĕ ун пек чух.

Ывăлĕ çине пăхса савăнмалли пулнах çав амăшĕн! Ку тарана çитсе те вăл хăйĕн ачи çинчен кӳршĕ-пускилсенчен кӳренмелли сăмах илтмен. Теприсен ачасем, авă, урам тăрăх «йытă хăваласа» чупаççĕ, ашкăнаççĕ, сăмсисем катăличченех çапăçаççĕ, çын пахчисене кĕрсе сăтăр тăваççĕ, ун пеккисем шкулта та япăх вĕренеççĕ. Хăшĕсен ачисем чарусăр пулнă пирки пĕр-пĕринпе куçран ӳкмелле те пулкалать...

Илюк пĕрре те ун пек ача пулман. Вăл шкулта та аван вĕреннĕ — яланах «тăваттă» та «пиллĕк» пулнă унăн. Учительсем каçса кайсах мухтанă ăна. Тăваттăмĕш класа похвальнăй грамотăпа пĕтернĕ, пиллĕкмĕшне куçсан, çамрăк натуралистсен кружокне ертсе пыма тытăннă. Пуринчен ытла сад ĕçне юратнă вăл... Колхоз садовочĕ, сӳс пек çемçе те шап-шур сухаллă Пушмак Миха-

ли, Илюк пӗрмай хӑй патне кӗрсе ӑна пулӑшнӑшӑн, улма-ҫырла йывӑҫҫисене епле майпа лайӑхрах пӑхса ӳстермеллине пӗлме тӑрӑшнӑшӑн, ӑна «манӑн мичуринец», «манӑн заместитель» тесе шӳтленӗ. Илюк пуҫарса янипе ҫамрӑк натуралистсем колхоз сачӗн пӗр кӗтессинче нумай йывӑҫ лартса ӳстерме тытӑннӑ. Ырӑ ӗҫ мар-и вӑл?!

Тата Илюк ӳкерчӗксем тума юратнӑ, пит хитре ӳкернӗ, ҫавӑн пирки ӑна пӗрмай шкулти стена хаҫачӗн редколлегине суйланӑ. Пысӑк уявсем умӗн шкул валли плакатсем ҫырнӑ, класс пӳлӗмӗсене илемлетнӗ. Килте, малти стена ҫинче, Илюк хӑйӗн ашшӗн салтакран ярса панӑ пӗчӗк сӑнӳкерчӗкне пысӑклатса, сӑрсемпе хитрелетсе тунӑ портречӗ ҫакӑнса тӑрать. Унӑн рамкине те хӑех тунӑ, ӑна та илемлӗ сӑрпа сӑрласа хунӑ, кантӑкне те хӑех касса кӗртсе лартнӑ.

— Пирӗн художник,— тенӗ ӑна учительсем,— ҫиччӗмӗш класс хыҫҫӑн унӑн епле пулсан та художество училищине каяс пулать!

Хорта та юрланӑ Илюк, спектакльсенче те вылянӑ, спорт вӑййисенче те никамран та юлман.

Амӑшӗпе епле кӑмӑллӑ пулни ҫинчен каламалли те ҫук. Нихҫан та кӳрентерсе курман вӑл амӑшне. Час-часах ашшӗ ҫинчен каласа пама ыйтнӑ, унӑн вӑрҫӑран янӑ ҫырӑвӗсене кӑлара-кӑлара вуланӑ.

Питӗ хитре пурӑннӑ вӗсем амӑшӗпе иккӗшӗ,— лӑпкӑн, шӑкӑл-шӑкӑл, килӗштерсе,— пурне те кӑмӑла кайнӑ вӗсен пурнӑҫӗ.

Амӑшӗ тепӗр хут качча кайма пултарасси ҫинчен Илюк нихӑҫан та шухӑшламан. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче тӑлӑха юлнӑ хӗрарӑмсенчен хӑшпӗрисем тахҫанах хӑйсем валлӑ мӑшӑрсем тупрӗҫ, ҫӗнӗрен ачаллӑ-пӑчаллӑ пулчӗҫ, анчах та Илюкпа амӑшӗ иккӗшех пурӑнчӗҫ, вӗсем патне нихҫан та пӗр арҫын та пырса кӗмерӗ. Чӑнах та, пӗрре, ҫулла, ирхине ирех, лупас айӗнчи чатӑр айӗнче ҫывӑраканскер, Илюк хӑйсемпе юнашар пурӑнакан Праски инке унпа калаҫнине илтрӗ.

— Арҫын тупмаллах санӑн, Анюк, ахаль те миҫе ҫул ӗнтӗ хӑраххӑн пурӑнатӑн... Нивушлӗ вара ӗмӗре ҫакӑн пек пӗр-пӗчченех ирттерес тетӗн? Ватӑ мар вӗт-ха эсӗ...— пакӑлтатрӗ ҫав Праски инке.

— Ҫук ӗнтӗ, халь тин пулмасть пуль. Илюк та пысӑкланчӗ, пурӑнатпӑр майӗпе... Тата пӗлме ҫук-ҫке, темле ҫын лекет! Киле кӗрекенсем вӗсем ырах пулакан мар...— терӗ ӑна хирӗҫ амӑшӗ.

Илюк тӑрса тухнине курсан, вӗсем калаҫма чарӑн-

чĕç. Çавăнтан вара Илюк нимĕн те илтменччĕ. Анчах вăл çиччĕмĕш класра вĕренме тытăнсан, кĕркунне, Октябрь уявĕ ячĕпе тунă вечертан таврăнсан, тĕлĕнсех кайрĕ: вĕсем патĕнче, малти кĕтесри сĕтел хушшинче, темле ют çынсем лараççĕ — виçĕ арçын, икĕ хĕрарăм. Сĕтел çинче эрех кĕленчисем, çимеллисем, шуç витрепе сăра ăсса лартнă. Çыннисем пурте самаях хĕрнĕ, Илюк амăшĕн питçăмартисем те хĕрелнĕ. Темшĕн-çке вăл ытти чухнехи пек мар капăр тумланнă, хитре саппун çакнă, çĕнĕ тутăр çыхнă...

Мĕне пĕлтерет ку?.. Илюк çакна тӳрех ăнланса илеймерĕ. Вăл алăкран кĕрсе тăрсанах, сĕтел хушшинчи ют хĕрарăмсенчен пĕри, кĕрхи анис пек хĕрелсе кайнăскер, Илюк амăшĕнчен:

— Çакă-и-ха санăн ерой? — тесе ыйтрĕ.

— Çакă çав, манăн урăх çук вĕт! — терĕ амăшĕ.

— Пăх-халĕ, епле маттур вăл! Ытармалла мар-иç! Кил-ха кунталла, ачам, лар пирĕнпе сĕтел хушшине...— сăмахне юрланă пек тăсса, Илюка хирĕç тухрĕ çав хĕрарăм.

Ана алăран тытсах кĕрекене темле тачка сăмсаллă, кăштах кукшаланма пуçланă сарăрах çын çумне кĕртсе лартрĕç.

— Ачуна ярса пар ĕнтĕ, Анюк! — терĕ йăпăлти саслă ют хĕрарăм.— Праçник вĕт паян!

— Ĕçмест вăл манăн,— терĕ Илюк амăшĕ.

— Епле ĕçмест пулать? Чĕчĕ ачи мар-çке ĕнтĕ, авлантармалли каччă пекех ӳссе кайнă-иç! Пĕр черккешĕн ним те пулмасть ăна!

Илюка хупăрласа илсех пĕр çур стакан эрех ĕçтерчĕç. Унăн ăшчикки вутпа çунтарнă пекех пĕçерсе илчĕ, сывлăшĕ те пӳлĕнсе ларнă пек пулчĕ.

— Çырт часрах, акă, кукăль çи!

Ун умне харăсах ик-виçĕ касăк кукăль илсе хучĕç. Йăпăлти саслă хĕрарăм çав вăхăтрах сĕтел хушшинчен тухрĕ те хăлхана çуракан çинçе сасăпа вырăсла юрласа ячĕ, мăйĕнчи шӳлкемине чăнкăртаттарса, урисемпе тăпăртаттарса илчĕ:

Икрай, гармонь,
Весели, кармонь!
Улица широкая,
Кармонист веселая...

Ют çынсен купăс та пур иккен. Кил хушши енчи чӳрече патĕнче ларакан хурарах çын, çӳçне çамки çи-

нелле тураса антарнăскер, ăна сак айĕнчен туртса кăларчĕ те ташă кĕвви янратма пуçларĕ. Ыттисем алă çупма тытăнчĕç... Малтан ют хĕрарăмсемпе пĕр арçын ташларĕç, унтан вĕсем Илюк амăшне те туртса кăларчĕç.

Эй, ну, яра пар,
Юлашкине пире пар!..

Чылай хушă ташласан, хашкама ернĕ ют хĕрарăмсем, иккĕн ик енчен пырса, Илюкпа юнашар ларакан хайхи кукшарах пуçлă арçынна сĕтĕрме тытăнчĕç:

— Ташла, Матви! Эс ташламасан, камăн ташлас паян?!

Ку турткаланса тăмарĕ, мăн сăмсипе нăш-наш туса илсе, урай варрине тухрĕ те, аллисемпе пилĕкĕнчен тытса, пуçне каçăртса, урисене ява-явах ташлама тытăнчĕ. Пĕрре Илюк амăшĕ умнелле тĕпĕртетсе пырать, тепре каялла чакса каять, хулпуççисене вылятать, кукленсе илет, аллисемпе атă кунчисене çапать.

Пляши, Матвей,
Не шалей лаптей,
То супоты тошивём,
Новы лапти нашивём! —

çухăрчĕ те çинçе саслă хĕрарăм, каллех ташлама сиксе тухса, хулпуççине чĕтретсе, тенкисене чăнкăртаттарма тапратрĕ. Ун пек сикекенни те пулмарĕ вара, иртĕнсех кайрĕ вăл, аллисемпе хăлаçланчĕ, хуçкаланчĕ...

Часах Илюкăн пуçĕ кашлама пуçларĕ, ăшчикки пăтранма тапратрĕ. Урай варринче тĕпĕртетекен çынсем çине вăл ним ăнланмасăр пăхса ларчĕ. Мĕнле çынсем кусем? Илюк вĕсене ĕмĕрне те курман-çке! Мĕн тума килнĕ вĕсем Илюксем патне? Мĕн сăлтавпа ĕçеççĕ? Кун пекки вĕсем патĕнче нихçан та пулман...

Ташлама чарăннă амăшĕ ун çумне пырса ларчĕ те:

— Ма пит кичем эс паян, ачам? — тесе ыйтрĕ йăвашшăн.— Çывăрас килет-им? Хăпарса вырт, эппин, сентре çине...

— Ку çынсем камсем? — пуçĕпе ташлакансем еннелле сулчĕ Илюк.

— Вĕсем-и? — Амăшĕ самантлăха тытăнса тăчĕ.— Лайăх çынсем вĕсем...— Унтан ывăлне тăрук ыталаса илчĕ те çамкинчен чуптурĕ.— Эх, Илюк, тăлăхсем вĕт эпир санпа, никам та çук пирĕн...

Илюк хăйĕн амăшĕн хĕрелнĕ куçĕсем шывланнине

асăрхарĕ. Ку та тĕлĕнтерчĕ ăна: тин çеç ташлатчĕ хăй, халь тата макăрасшăн та пулас... Мĕншĕн ун пек пулнă вăл?

Тепрер çур сехет пек ларсан, ĕнтĕркенĕ Илюк сентре çине хăпарса выртрĕ. Аялта çаплах тĕпĕртетрĕç, юрларĕç, пĕр-пĕрне пӳлсе калаçрĕç. Ытти сасăсем хушшинче Илюк уйрăмах леш вырăсла такмаклама юратакан шӳлкемеллĕ вĕçкĕнрех хĕрарăм сассине илтрĕ:

— Эх, Анюк, чунăм, ĕмĕр-ĕмĕр тав тăвас пулать сан мана! Телей çук çĕртен телей тупса патăм вĕт! Ку чухне кашнинех лекмест кун пек телей, çу-ук!..

Мĕнле телей çинчен каларĕ çак хĕрарăм — ăна Илюк чухлаймарĕ: «Пĕр-пĕр лайăх япала туянтарнă пулинех...» — шухăшларĕ вăл.

Ирхине вăрансан вара пӳртре тахăшĕ харлаттарса çывăрнине илтрĕ. Сентре çинчен аялалла пăхрĕ те тĕлĕнсех кайрĕ :хайхи тачка сăмсаллă çын унăн амăшĕн вырăнĕ çинче месерле выртать, аллисене ик еннелле сарса пăрахнă, хăрах ури çĕрелле усăнса аннă, харлаттарнипе хулăн тутисем илемсĕр сиккелеççĕ. Темшĕн Илюка вăл месерле çавăрса пăрахнă вил шапа пек туйăнса кайрĕ.

Амăшĕ пӳртре çукчĕ, кил хушшине выльăхсем патне тухнă пулмалла. Илюк, сентре çинчен анса, питне çурĕ, шкула кайма хатĕрленчĕ. Амăшĕ тин çеç сунă сĕте витрепе чăлана йăтса кĕрсен, Илюк тӳсеймерĕ, ыйтрĕ:

— Ку çын ма пирĕн патра çывăрать?

— Вăл... каçхине ӳсĕртерех пулчĕ те ыттисемпе пĕрле тухса каяймарĕ,— терĕ амăшĕ, Илюк çине пăхмасăр.

— Кам вăл?

— Аçун тусĕ пулнăскер... Кантăрварĕсем, промартельте агентра ĕçлет, çынсене чăпта çаптарать. Аçу пур чухне час-часах килкелетчĕ пирĕн пата...

— Мĕн ĕçки пулчĕ çĕркаç пирĕн патра?

— Ара, çаксем килсе кĕчĕç те... Пĕрисем тем сутаççĕ пулмалла, теприсем илеççĕ. Мăкриччи турĕç.

Илюк амăшне ĕненчĕ. Çикелерĕ те, сумкине çакса, шкула тухса кайрĕ. Анчах каçалапа, киле таврăннă чух, унăн кĕтмен çĕртенех çав тери тĕлĕнмелле хыпар илтмелле пулчĕ...

Кукăр урам вĕçĕнчи çăл кутĕнче пĕр хĕрарăм, ял тăрăх сăмах вĕçтерме юратакан Хура Хветле, шыв ăсса тăратчĕ. Илюк ун тĕлне çитсен, вăл аллинчи тулли витрине çĕре лартрĕ те, темшĕн тутине пĕр еннелле пăрапăра, йăл та йăл кулса ыйтрĕ:

— Мĕнле пурăнатăр, Илюк?

— Чиперех-ха,— терӗ ку, ним ҫинчен те шухӑшламасӑр.

— Епле, ҫӗнӗ аҫу кӑмӑла каять-и, юратмалла пек-и?

— Мӗнле «аҫу»? — ӑнланаймарӗ Илюк.— Мӗн кирлӗ мара калаҫатӑн эс, пирӗн никам та ҫук!

— Епле ҫук пулать вара? — сайра шӑлӗсене йӗрчӗ Хветле.— Ма тунатӑн? Ай ҫынсенчен вӑрттӑн усрас тетӗр-и? Ҫу-ук, ун пек япала ял ҫинче пытанаймасть ҫав вӑл, ытла пысӑк...

— Мӗн лӗпӗртететӗн эс? — тарӑхма пуҫларӗ Илюк.

— Ара, сирӗн патра каҫхине туй пулнӑ-иҫ! Аннӳ хӑй валли упӑшка туяннӑ, вӑл санӑн ҫӗнӗ аҫу пулать ӗнтӗ! Ай сана нимӗн те каламарӗҫ-и? Систермерӗҫ те-и?

Илюка такам вӗри шывпа сапнӑ пек туйӑнса кайрӗ, унӑн пӗтӗм ҫанҫурӑмӗ темле йӗпленсе илчӗ.

«Авӑ мӗн иккен! Ав мӗншӗн ӗҫкӗ пулчӗ...»

Ним тума, ним калама пӗлменнипе вӑл Хветле ҫине хаяррӑн, ҫисе ярас пек пӑхса илчӗ те:

— Лӗпӗрти эсӗ, сӗм-ухмах! — тесе хӑварчӗ.

Анчах хӑйӗн чӗри кӑкӑртан сиксе тухас пекех тапма тытӑнчӗ. Килелле вӑл чупсах кайрӗ.

«Епле-ха капла? Анне нимӗн те каламарӗ-ҫке мана? Нивушлӗ... нивушлӗ тӗрӗсех ку? Ҫав ҫын... паҫӑр анне ырӑнӗ ҫинче ҫывӑраканни... пирӗн патра пурӑнать-ши вара? Атте?! Ҫук, ҫук, нихҫан та, ним тусан та ун пек калас ҫук эп ӑна!.. Мӗнле килӗшме пултарнӑ-ха вӑл аннене? Тата мӗн тума кирлӗ вӑл пире? Хамӑрах лайӑх пурӑнаттӑмӑр-ҫке!..»

Илюк ҫенӗк алӑкне хӑнт-хант уҫса-хупса пӳрте кӗрсе тӑчӗ те сумкине йӑпӑр-япӑр хывса ҫакрӗ, йывӑррӑн сывласа, чӳрече умӗнче тем ҫӗлесе ларакан амӑшӗ ҫине куҫӗсемпе тӑрӑнчӗ.

— Анне!

— Мӗн, ывӑлӑм? — ун ҫине йӑвашшӑн, темле хӑранӑ пекрех пӑхрӗ амӑшӗ. Илюк ҫав тери пӑлханса кайнине тӳрех асӑрханӑ пулас вӑл.

— Анне, мана халь Хура Хветли пӗр сӑмах каларӗ...

— Вӑл тем те лӑпӑртатӗ. Курайманнипе калаҫать, пӗлтӗр эп ӑна фермӑран колхоз чӑххисене вӑрланӑ чух тытрӑм та, ҫавӑнтанпах ҫилленсе пурӑнать...

Анчах Илюк ӑна итлесе тӑмарӗ, ун ҫывӑхнерех пычӗ те:

— Эсӗ... эсӗ ҫав ҫынна качча кайрӑн-и? Кала мана тӗрӗссипе! — терӗ.

Амӑшӗ тӑруках нимӗн те калаймарӗ, хӗрелсе кайрӗ.

Унтан, ывӑлӗ ҫине хӑранӑ пекрех пӑхса, чӗтреме пуҫланӑ сасӑпа хуравларӗ:

— Илюк... Мӗн тӑвас-ха ӗнтӗ? Тӗрӗссинех калатӑп сана... Эсӗ халь пӗчӗк ача мар ӗнтӗ, ӑнланма пултаратӑн. Кансӗр-ҫке пире тӑлӑххӑн пурӑнма... Пӳрчӗ те кивелчӗ, никӗсӗсем пӗтӗмпех ҫӗрнӗ, хапхи те чалӑшса кайрӗ ав, сарайне те хӑҫантанпах витмен... Мӗнле пурӑнас? Вӑй ҫитерейместпӗр-ҫке иксӗмӗр... Килте арҫынсӑр ниепле те май килмест....

— Ҫак ҫын вара пире пурне те туса парать-им? Унӑн хӑйӗн те килӗ пур пулӗ, хӑйӗн ачисем те пур пуль?

— Лайӑх ҫын терӗҫ ӑна... Ӗҫри ҫын, промартельти агенттӑ, шалу та илет, ҫемйи те ҫук халь унӑн. Кил-ҫурта пӗтӗмпех ҫӗнететӗп, йывӑҫ хуть те мӗн чухлӗ кӳрсе килме пултаратӑп терӗ... Ҫавӑн пирки ҫеҫ килӗшрӗм эпӗ. Кӑмӑлсӑр ан пул, ывӑлӑм, хамшӑн мар, саншӑн тӑрӑшатӑп...

Амӑшӗн тутисем сиккелеме тытӑнчӗҫ, путӑкрах питҫӑмартисем тӑрӑх куҫҫуль юхса анчӗ.

— Каҫар, сана тӑруках калама халӑм ҫитмерӗ...

— Вӑл мана пӗртте килӗшмест, темле... сӑнсӑр ҫын,— терӗ Илюк, ҫӗрелле пӑхса.— Атте теме пултараймастӑп эпӗ ӑна... нихҫан та!

— Ун пек ан кала, ара, Матви пичче, те...

— Пичче тесе те чӗнес килмест. Юратмастӑп! Ан пурӑнтӑр вӑл пирӗн патра!

— Ах, Илюк, ӑшчикке ан ҫунтар-ха... Тин ӗнтӗ мӗн тӑвас-ха. Эпир унпа хут та уйӑрттартӑмӑр та... Пурӑнсан, тен, килӗштерӗн...

...Ҫук, килӗштереймерӗ Илюк хӑйсем патне кӗтмен ҫӗртен пырса кӗнӗ ҫынна. Чун туртмарӗ ун патне. Малтанах «Матви пичче», Илюк кӑмӑлне хӑй еннелле ҫавӑрас тесе пулас, унпа йӑпӑлтатнӑ пек те турӗ, пӗр-ик эрнеренех ӑна шкул ачисем тӑхӑнакан форма — карттус, костюм, ҫутӑ пряжкӑллӑ сарлака чӗн пиҫиххи, пушмак илсе пачӗ.

— Тӑхӑн, сынок, халь эсӗ тӑлӑх-турат мар ӗнтӗ, санӑн халӗ аҫу пур! — терӗ вӑл, самаях хӗрӗнкӗскер, ҫак япаласене амӑшӗ умӗнчех Илюка тыттарса.

«Сынок» тени Илюка ҫав тери кӑмӑла каймарӗ, чӗререн чӗпӗтсе илнӗ пекех туйӑнчӗ. Ҫапах та, амӑшӗ те ҫине тӑнӑ пирки, хӑйне панӑ формӑна тӑхӑнчӗ.

— Енерал, маршал! — кӑшкӑрса ячӗ Матви пичче.— Урӑх кам пур ӗнтӗ ялта сан пекки! Тӑхта акӑ, ку кӑна мар пулӗ... Велосипед илсе паратӑп ак сана! Тен, мото-

циклнех туянăпăр! Пĕтĕмпех хăвăнтан килет... эс мана хисеплеме пĕлнинчен...

Анчах ун вырăнне Матви пичче Илюк ашшĕн пур япалисемпе те усă курма тытăнчĕ. Унăн костюмне те тăхăнчĕ, атти-пушмакне те ураран пăрахмарĕ, хура пустав пальтине те, сăран тăраллă çĕлĕкне те пĕрмай сĕтĕрчĕ. Амăшĕ вĕсене пурне те «Илюк валли пулать» тесе кĕлетри мăн арчара усратчĕ. Халь акă пĕтĕмпех хăйĕн çĕнĕ упăшкине кăларса панă!

Çынни тата питĕ ĕçекенскер-мĕн. Хăйĕн промартель ĕçĕсемпе ялсем тăрăх çӳрет-çӳрет те кашнинчех ӳсĕр таврăнать. Çитменнине, пĕччен те мар тата, хăйĕн юлташĕсене, хăй пекех темле шанмалла мар сăнлă çынсене, илсе пырать. Çĕрĕпех шавлаççĕ вара, юрлаççĕ, ураран ӳкичченех тĕпĕртетеççĕ, унтан ирхине тăрса мухмăр уçаççĕ те каллех тухса каяççĕ. Хĕл иртсе кайрĕ, анчах Матви пичче кил таврашĕнче пĕр турпас та тытса пăхмарĕ, пĕр пуленке вутă та çурмарĕ, пĕр кĕреçе юр та хырса пăрахмарĕ. Килет, ĕçет, çиет, лаша тулхăрнă пек харлаттарса çĕр каçать те каллех темиçе кунлăха çухалать, тепĕр чух эрнипе те киле пымасть. Пӳрте çĕнетесси, ытти çурт-йĕрсене юсасси çинчен çăвар уçни те пулмарĕ, вăл кил пирки калаçнине Илюк пĕрре те илтмерĕ. Ку шухăш Матви пичче пуçне пырса та кĕмен пулмалла çав. Вăл пĕр хăйĕн ырлăхĕшĕн кăна пурăннă.

Амăшĕ сăнран улшăнса, шуралса, начарланса, час та часах ассăн сывлакан пулса кайрĕ. Куçĕсем çумĕнче, янах çинче пĕркеленчĕксем йышланчĕç, пысăк кăвак куçĕсем путса анчĕç. Хăй ăшĕнче вăл хытă хуйхăрчĕ курăнать, анчах ăна Илюка пĕртте систересшĕн пулмарĕ.

Çуркуннехи каникул вăхăтĕнче Илюк куккăшĕсем патне — хăйсен ялĕнчен улт-çич çухрăма кайса пĕр пилĕк кун пурăнчĕ. Матви пичче тенине кашни кун курас килменнипех кайрĕ вăл унта. Киле таврăнсан амăшĕ çине пăхсан хăрасах ӳкрĕ — унăн сулахай куçĕ шыçса кăвакарса ларнă, питçăмарти çинчи ӳчĕ ик-виç çĕртен шăйрăлса кайнă...

— Мĕн пулчĕ капла, анне? — чĕтрекен сасăпа ыйтрĕ Илюк.— Сана лешĕ çапмарĕ пулĕ те?

— Çук, çук,— пуçне пăркаласа илчĕ амăшĕ.— Хам çапăнтăм, çĕрле чăлана тухсаттăм та...

Илюкăн ăна ĕненес килмерĕ.

«Çав шуйттанах çапнă ăна, урăх нимрен те пулма пултарайман ку кăвак»,— шухăшларĕ вăл, анчах амăшне кӳрентерес мар тесе, урăх нимĕн те шарламарĕ. Çав

кунран пуçласа Матви пиччене тата ытларах, пĕтĕм чĕререн курайми пулчĕ.

«Ну, тăхта эп сана, хăçан та пулин таварăтăпах куншăн...»

...Пĕррехинче, шкулта çурхи экзаменсем пуçланас умĕн, Илюк ирхине ирех вăранса кайрĕ те амăшĕпе Матви пичче çав тери пăлханса пăшăлтатнине илтрĕ.

МАТВИ. Пĕлместĕп çав, пĕлместĕп, темле пулса тухнă, таçта кайса кĕнĕ вăл укçа, тахăш тĕлте улталаннă эпĕ,— миçе хут каларăм ĕнтĕ сана ун çинчен!

АМĂШĔ. Тĕрĕссипе, миçе пин тухмасть вара санăн?

МАТВИ. Пĕр пилĕк пине яхăн çитмест пулмалла. Хам çапла шутлатăп. Тен, ытларах та-и. Ревизи пуçланиччен манăн çав укçана — хуть те пуçхĕрлĕ тăр та — тупса парасах пулать, унсăрăн мана рас-рас тытаççĕ те шăнкăрт! питĕрсе лартаççĕ. Ăнлантăн-и эс çавна?

АМĂШĔ. Ăна ăнланатăп-ха. Авă пĕлтĕр Кураккассинчи артель агенттине икĕ пиншĕнех виç çул панă терĕç. Анчах ун чухлĕ укçа халь ăçтан тупăпăр-ха эпир? Пилĕк пин вĕт-ха, пилĕкçĕр те мар.

МАТВИ. Васкасах мĕн те пулин сутас пулать, урăх ăçта тупатăн!

АМĂШĔ. Мĕн сутас? Пирĕн сутмалли нимĕн те çук. Ахаль те çара çерçисем пек пурăнатпăр...

МАТВИ. Шырасан тупăнать!

АМĂШĔ. Ну, мĕн, мĕн сутатăн?

МАТВИ. Баян сутатпăр.

АМĂШĔ. Уй, баян пирки çăвар уçмалли те çук! Ăна ашшĕ ятарласа Илюк валли илнĕ, Илюкĕ ун çинчен хăй те пит лайăх пĕлет. Баяна сутсан макăрсах вилет вара вăл, мана хама та ĕмĕрне те каçарас çук уншăн!

МАТВИ. Мĕн вара, ачаранах хăраса тăмалла-и пирĕн? Кайран илсе паратпăр теме юрамасть-им ăна?

АМĂШĔ. Çук, Матви, баян пирки шарлас мар...

МАТВИ. Ан йăсла кирлĕ мара! Анчах баян укçи те çитмест-ха мана. Уншăн парсан парĕç пин çурă. Пахчари кĕлете сутма тивет. Вăл пĕр-ик пин тăратех. Ĕнине те хĕрхенсе тăмалла пулмасть.

АМĂШĔ. Апла ытла та нимсĕр тăрса юлатпăр-çке!

МАТВИ. Нимех те мар, кайран пĕтĕмпех туянатпăр, ан хăра! Халлĕхе пирĕн тĕрмерен епле хăтăлса юласси çинчен çеç шухăшлас пулать. Е санăн мана хŷптăрас килет-и? Хуптар, эппин, хуптар, çак кивĕ кармуньпе çĕрĕк кĕлетне хĕрхенетĕн пулсан!

АМĂШĔ. Ах, Матви, ун пек ан калаç-ха, тархасшăн!

Пирĕн вĕт... хăвах пĕлетĕн... пĕрле пуранса, хамăрăн пулас ачана çитĕнтермелле...

МАТВИ. Мĕн нĕшкесе выртатăн эппин? Тăр та апат пĕçер, манăн паян васкасах хамăн ĕçсемпе унта-кунта кайса килес пулать!

Çак калаçăва Илюк кăвар çинче выртнă пек выртса итлерĕ. Унăн пĕтĕм çанçурăмĕ тарласа кайрĕ. Пĕтĕмпех ăнланчĕ вăл, пĕтĕмпех!.. Амăшĕн çĕнĕ упăшки, çак путсĕртен те путсĕр Матви, хăй ĕçлекен промартельте пысăк растрата тунă иккен, пилĕк пин тенкĕ ытла халăх укçине салатнă. Урăхла каласан — вăрланă! Ĕçсе янă ĕнтĕ хăйĕн тусĕсемпе пĕрле — ахальтен кашнинчех ӳсĕр таврăнатчĕ-им? Киле вăл хăй нихçан та пĕр пус илсе килмен. Анне аллинче аттешĕн килекен пенси çеç пулнă... Анчах халĕ, тĕрмене ларас мар тесе, пирĕн пурлăха сутасшăн! Баян, кĕлет, ĕне... Ирсĕр, ылханлă çын! Çук, çук, темле пулсан та памастăп ун пек тума! Колхоз правленине, ял Советне кайса калатăп... Баянне халех кам патне те пулин кайса пытаратăп, мĕншĕн тесен вăл манăн, манăн, атте ăна ман ятпа илнĕ! Никама та памастăп ăна!

Илюк сентре çинче сиксех чĕтресе выртрĕ, анчах пĕр сас та памарĕ. Амăшĕпе Матви пичче тăрсан чылайран тин çĕре анчĕ те, васкамасăр тумланса, кĕнекесене кăлара-кăлара уçкалама тытăнчĕ. Хăй çав хушăрах куç харшисем айĕн Матви пичче çине пăха-пăха илчĕ. Мĕн тери кураймарĕ ăна вăл çав вăхăтра!..

Акă Илюк амăшĕ ăна апат антарса пачĕ те, вăл сысна пек чаплаттарса çиме тытăнчĕ, малти шăлĕсемпе чăмланă май (кайрисем çук унăн) сарлака сăмсин çунаттисем çав тери нĕрсĕррĕн сиккелесе илеççĕ. Çинĕ вăхăтрах пуçне сĕтелтен кăшт кăна пăрчĕ те сăмсине шăнкартса пăрахрĕ. Чăн та, сыснах ĕнтĕ, урăх нимĕн те калаймăн!

— Эп кайрăм, каççăр килместĕп,— терĕ вăл, çисе тăрансанах тумланма тытăнса.

«Нихçан килмесен тата авантарахчĕ! — ун çине çилĕпе пăхса шухăшларĕ Илюк.— Вăрă! Халăх укçине çаратакан!»

Матви пичче калинккерен тухса кайсан вара Илюк кĕнекисене пуçтарса чикрĕ те чăланта тăрмашакан амăшĕ патне пырса тăчĕ.

— Анне...

— Мĕн, ывăлăм?

— Эпĕ паян эсир мĕн калаçнине пĕтĕмпех илтрĕм!
Амăшĕ картах сиксе илчĕ те ун çине чарăлса кайнă куçĕсемпе пăхрĕ, анчах нимĕн те калаймарĕ. Ывăлĕ çавăн пек пĕлтерни уншăн ытла та кĕтмен япала пулчĕ пулмалла çав.
— Мĕншĕн эсĕ çав эсреле çăлма хамăрăн пурлăха сутма килĕшетĕн? — çирĕп сасăпа ыйтрĕ Илюк.
— Ара, вăл халь хамăр çын-çке...
— Нимĕнле хамăр çын та мар! Шулĕк вăл, халăх укçине пилĕк пин вăрланăскер! — кăшкăрнă пекех каларĕ Илюк. Унăн куçĕсем хаяррăн ялкăшса илчĕç.— Ăна çăлма мар, часрах хуптарас пулать! Вăрăсене яланах хупаççĕ!..
— Ах, Илюк, тăхта-ха...
— Тăхтамастăп! Нимĕн те суттармастăп! Пирĕн килте пĕтĕмпех атте тунă пурлăх, çав кукша шуйттанăн кунта нимĕн те çук, нимĕн те! Тухса кайтăр вăл кунтан, кураймастăп эп ăна!..
Илюк сасартăк çав тери хурланса, кăшкăрса макăрса ячĕ. Ăна кура амăшĕн те куççуль шăпăртатса анчĕ.
— Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ, ывăлăм?..
— Эс те ун майлă! Эсир иксĕр те пĕрешкел! — куççульпе чыхăнса кăшкăрчĕ Илюк.— Памастăп сире нимĕн те! Пирĕн килте пĕтĕмпех манăн, ăна çынсем те çаплах калаççĕ!..
Амăшĕ тепре çăвар уçиччен Илюк тата хытăрах макăрса ячĕ, пӳртрен сиксе тухрĕ, чăланти арчара тăракан баяна йăпăр-япăр туртса кăларса хул хушшине хĕстерчĕ те анкартисем хыçĕпе анаталла чупрĕ. Амăшĕ ăна сиссе те юлаймарĕ...
Çур сехетрен Илюк, киле таврăнса, сумки ăшне кĕнекесемпе пĕрле кукăль сăмси чикрĕ те шкула тухса кайрĕ. Шкулта вăл кун каçипех никампа та калаçмарĕ, переменăсем вăхăтĕнче те ачасенчен уйрăм çӳрерĕ, вылямарĕ, чупмарĕ. Ытти чухне яланах хаваслă ача паян çав тери салху ларнине асăрхаса, класс руководителĕ Нина Васильевна, урок вăхăтĕнчех ун патне пырса, йăвашшăн ыйтрĕ:
— Мĕн пулнă сана паян, Ивуков? Чирлемерĕн пулĕ-çке?
— Нимĕн те пулман,— терĕ Илюк, ун çине пăхма хăяймасăр. Анчах хăй кăшт çеç макăрса ямарĕ. Нина Васильевна çакна питĕ лайăх сисрĕ, урок хыççăн ачана учительсен пӳлĕмне илсе кайса, хăйпе юнашар диван çине лартсах ыйтса пĕлме тăрăшрĕ, анчах Илюк ăна

пурпӗрех нимӗн те каламарӗ. Ҫирӗп кӑмӑллӑ ача пулнӑ ҫав вӑл!

Уроксем пӗтсен те Илюкӑн киле каяс килмерӗ. Пӗр енчен, унӑн «лешне» курас кӑмӑл пулмарӗ (кам пӗлет, тен, вӑл таврӑннӑ та-и?), тепӗр енчен, ирхине амӑшне тӑрук кӳрентерсе тӑкнӑшӑн та аван мар пулчӗ. Чӑнах та, мӗнрен айӑплӑ-ха амӑшӗ? Илюка юратать вӑл, уншӑн пӗтӗм чунне парса пурӑнать, ытти ачасен амӑшӗсем пек ӑна нихҫан та ҫапман, хӗнемен, ялан ачашланӑ ҫеҫ. Ҫак кӗтмен ҫӗртен пырса кӗнӗ сар шуйттана пула кӑна пурнӑҫ пӑсӑлма пуҫларӗ, пӗтӗмпех ҫав кукша эсрел айӑплӑ! Эх, ҫав пулман пулсанах...

Ниҫта кайма, ним тума аптранӑ енне Илюк колхоз садне анчӗ. Кунта икӗ ҫул каялла ытти шкул ачисемпе, натуралистсемпе пӗрле ӗҫленӗ чух Илюк хӑй аллипе лартнӑ вуникӗ чие йывӑҫҫи ӳсет. Вӗсене вӑл кӑҫал, ҫуркуннене тухнӑранпа, темиҫе хут та киле-киле пӑхнӑ, анчах халӗ татах пырса пӑхас кӑмӑл пулчӗ унӑн. Пурте пит лайӑх ешереҫҫӗ иккен, ҫав тери илемлӗ... Савӑнсах пӑхса тӑчӗ Илюк вӗсем ҫине. Мӗн тери ырӑ ӗҫ иккен вӑл ҫырла йывӑҫҫисем лартса ӳстересси! Акӑ, халь ҫак чиесем пӗчӗккӗ-ха, анчах виҫ-тӑватӑ ҫултанах пысӑкланса каяҫҫӗ, кашни ҫуркунне шап-шурӑ чечексемпе витӗнеҫҫӗ, унтан, пӗр-ик уйӑхран, чечексем выраӑнне хӗп-хӗрлӗ, сӗткенлӗ, тутлӑ ҫырласем пулаҫҫӗ. Улма-ҫырла этемшӗн питӗ усӑллӑ, вӗсенче витамин нумай тет Нина Васильевна.

Илюк хӑй лартнӑ кашни йывӑҫа пӑхса тухрӗ.

— Ӳсӗр, ҫитӗнӗр часрах! — тесе калас килчӗ унӑн вӗсене.

Ҫак вӑхӑтра, сасартӑк хыҫалта темле хӗрарӑмӑн тӑкӑскӑ сасси илтӗнчӗ:

— Ай-уй, Илюк, мӗн туса ҫӳретӗн эс кунта?

Илюк каялла ҫаврӑнса пӑхрӗ те йывӑҫсем хушшинчен тухса тӑнӑ Хура Хветлене курах кайрӗ. Ку хӗрарӑма вӑл питӗ юратмасть. Хӑйӗн амӑшӗ ют ҫынна киле кӗртни ҫинчен пӗлтӗр чӑн малтан никам та мар, ҫак нӗрсӗр хӗрарӑм пӗлтернӗччӗ. Ҫитменнине, питӗ тӑрӑхлаcа, юри мӑшкӑлламалла каларӗ вӑл ун ҫинчен. Ҫавӑнтанпа ӑна Илюк курайми пулчӗ. Халь те, ӑна курсанах, унӑн чӗри, тӑруках пӑчӑртанса илсе, темле хыттӑн тапма тытӑнчӗ. Анчах хӑй ӑна кӑшт та палӑртмарӗ.

— Ним те тумастӑп, ахаль килтӗм! — терӗ Илюк.

— Сумкипех тата! — шӑлне йӗрчӗ хӗрарӑм.— Килте тем пулман пулӗ-ҫке? Шкултан тухсан, ачасем киле каяканччӗ...

— Пулман! — халĕ ĕнтĕ Илюк Хветле ҫине пăхмарĕ, ун еннелле ҫурăмĕпе ҫаврăнса ларчĕ.

— Те тĕрĕс, те суя, ăна-кăна пĕлместĕп, анчах сан аҫуна суда параҫҫĕ темест-и ҫав?

— Сана мĕн ĕҫ, парĕҫин! — «аҫуна» тенĕшĕн ҫав тери тарăхса сиксе тăчĕ Илюк.— Сана хăш тĕлтен ыраттарать вăл?..

— Ара, сирĕн аннӳпе иксĕрĕн каллех тăлăха юлмалла пулать тесе шеллетĕп-ҫке...— юрласа илчĕ Хветле.

— Ан ҫыпăҫ ман ҫума! — тата ытларах тарăхса кайрĕ Илюк.

— Ай-уй, ытла та хаяр-ҫке эсĕ... Аҫунтан вĕрентĕн-и куна? Вăл сирĕн час-часах аннӳне ислетет теҫҫĕ.

Илюк унпа тек калаҫса тăмарĕ, чие йывăҫҫисем патĕнчен варт! пăрăнса, тӳрех сад хапхи патнелле утрĕ.

Анчах халĕ те киле каяс килмерĕ-ха унăн. Ҫырмаран хăпарсан, колхоз правленийĕн ҫуртĕнче вырнаҫнă хĕрлĕ кĕтесе кĕрсе, тулта тĕттĕмленичченех кивĕ журналсем курса ларчĕ, унтан пĕр хушă шашкăлла ҫапăҫакансем ҫине пăхса тăчĕ. Татах та тăхтатчĕ пуль те вăл, анчах хырăмĕ питĕ выҫрĕ, ҫавăнпа та ирĕксĕрех киле кайма тиврĕ.

Хăйсем патне ҫитесси пĕр ҫĕр метр пек юлсан, ăна кӳршĕ хĕрачи, Илюкпа пĕр класра вĕренекен, унпа яланах питĕ килĕштерсе пурăнакан Натали, тĕл пулчĕ.

— Итле-ха, Илюк,— терĕ вăл васкаса, пăлханнă сасăпа,— сирĕн килте темскер ытла хытă шавлаҫҫĕ, ним майсăр тĕпĕртетеҫҫĕ.

— Каллех ĕҫкĕ пуҫласа янă пуль ĕнтĕ леш эсрелĕ,— терĕ ăна хирĕҫ Илюк.— Тахҫан шăпи тулĕ...

— Ҫук, ҫук,— пуҫне пăркаласа илчĕ Натали,— ĕҫкĕ пек туйăнмарĕ-ха мана, эпĕ сан аннӳ темиҫе хут та шариех кăшкăрса янине илтрĕм. Кĕрсе пăхасшăнччĕ те — хăрарăм... Хĕнемест-ши леш ăна? Эс кай-ха часрах!

Натали ҫапла каларĕ кăна — Илюк тӳрех тăвалла вăркăнчĕ. Те чупрĕ вăл, те вĕҫрĕ — ăна хăй те астумасть. Хăйсен килĕ тĕлне ҫитсен, амăшĕ шари! кăшкăрнă сасă хăлхана кĕрсе кайни ҫеҫ кăштах асра юлчĕ унăн. Малтан калинккене, унтан ҫенĕк алăкне, унтан пӳрт алăкне шăлт-шалт уҫса пӳрте сиксе кĕчĕ те юпа пек хытса тăчĕ.

...Матви пичче тени унăн амăшĕн ҫивĕтне сулахай аллипе яваласа илнĕ те пуҫне каҫăртса лартнă, ҫĕҫĕ тытнă сылтăм аллине унăн чĕри тĕлнех илсе пынă, хăйĕн сăнĕ-пичĕ картинкăсем ҫинчи кашкăрсенни пек —ҫăварне карнă, шăлĕсене йĕрнĕ.

Илюк тăруках чĕлхесĕр пулса ларчĕ, вырăнтан та хускалма пултараймарĕ, унăн алли-урине такам сасартăк çыхса лартрĕ тейĕн.

— Юлашки хут ыйтатăп! Кала, сучка, баяна ăçта пытарса хутăн, ăçта-а?! — кăшкăрчĕ Матви.— Тупса памасан халех пусатăп! Чикетĕп! Çакăнтах вилсе выртатăн!

Çак хăрушă сăмахсем Илюка тăрук тăна кĕртрĕç.

— А-а-а! — вăрăммăн кăшкăрса ячĕ те вăл, самантранах Матвин çĕçĕ тытнă аллинчен уртăнса, ăна витĕр шăтарас пекех çыртса лартрĕ. Вара лешин çĕççи шăкăртах урайне ӳкрĕ, алли ыратнипе вăл Илюк амăшĕн çивĕтне те вĕçертсе ячĕ.

— Аха-а, эс те кунта-и, йытă çури?! Эппин, аннӳпе пĕрле сана та çапса пăрахатăп, иксĕр те пĕрле вилĕр! — мĕкĕрсе илчĕ те Матви Илюк çинелле ыткăнчĕ. Илюк вăрт кăна сĕтел хушшинелле тарса кĕчĕ. Матви ун патнелле кармашрĕ, анчах хăй ытлашши ӳсĕр пулнипе ăна çулса илме ĕлкĕреймерĕ — Илюк çав самантрах сĕтелĕн тепĕр пуçĕпе пăрăнса тухса тарчĕ. Ачана тытайманшăн тарăхнă Матви ăна мĕнпе те пулин пеме шут тытрĕ курăнать, анчах ал айĕнче нимĕн те пулмарĕ, вара вăл стена çинче çакăнса тăракан Илюк ашшĕн портретне пĕррех туртса антарчĕ те — Илюка печĕ. Илюк пăрăнса илме ĕлкĕрчĕ, портречĕ, алăка пырса çапăнса, чăнкăрр! турĕ...

Илюкшăн ку темрен те ытларах кӳренмелли, тарăхмалли япала пулчĕ. Епле тарăхас мар-ха!.. Темле çапкаланчăк, çичĕ ютран килсе кĕнĕ эсремет ăна, Илюка, унăн ашшĕн портречĕпе, Илюк хăй аллипе тăрăшса ӳкернĕ портретпа персе, ним юлми, пăрккин аркатрĕ! Кам касарма пултартăр ĕнтĕ çакăншăн?!

Ăстăнне çухатас патне çитнĕ Илюк, куçĕсене чарса пăрахса, Матви еннелле ыткăнчĕ.

— Йытă! Тискер кайăк! Мĕн туса хутăн эсĕ, майракаллă шуйттан?! — кăшкăрса ячĕ вăл.— Мĕншĕн илсе петĕн эс фронтовик портретне, шулĕк, растратчик, тĕрмере çĕрмелли çын!

— А-а, тата çитмерĕ-и? Çиччас хушса парăп эп сана, навус муклашки! — Илюка хирĕç çухăрчĕ лешĕ, сĕтел хушшинчен тайкаланса тухса. Вăл Илюка çӳçĕнчен ярса илесшĕн пулчĕ, анчах çав самантрах Илюк, пĕтĕм шăнăрсене хытарса, пур вăйне пухса, ăна ик чышкипе пĕр харăсах хырăмĕнчен чышрĕ...

Ӳсĕр Матви талт! талт! чакса кайрĕ те, кĕмсĕрт! ка-

ялла кайса ӳксе, пуҫӗпе кӑмака кӗтессине ҫав тери хытӑ ҫапӑнчӗ.

— Ы-ых! — терӗ кӑна вӑл, унтан ҫавӑнтах тӑнсӑр пулса выртрӗ. Унӑн пуҫӗнчен ҫӑра юн палкаса тухса урайне сарӑлма тытӑнчӗ...

— Мӗн турӑн эс, шуйттан ачи! Ҫынна вӗлертӗн вӗт! — кӑшкӑрчӗ тахӑшӗ, Илюка хулпуҫҫинчен ярса тытса.

Илюк картах сикрӗ: пӳртре тата тепӗр ҫын пулнӑ иккен, ӑна вӑл ку таранччен асӑрхаман та! Кам пӗлет, ӑҫтан килсе лекнӗ вӑл кунта? Хӑш вӑхӑтра? Кам вӑл? Ахӑртнех, Матвипе пӗрле килнӗ пулӗ...

Илюк пӗр хушӑ ним чухласа илеймерӗ. Унӑн куҫӗсем чарӑлса кайрӗҫ, сӑнӗ-пичӗ кӗл тӗслӗ пулса тӑчӗ. Унран кая мар хӑраса ӳкнӗ амӑшӗ, Матви халь кӑна хӑйне чиксе пӑрахма тӑни ҫинчен манса кайсах, леш палламан ҫынпа пӗрле, урайӗнче ним хускалмасӑр выртакан кӗлетке патне кукленсе, унӑн пуҫне алшӑллипе яваласа ҫыхма тытӑнчӗ, анчах Матвин юн юхма чарӑнмарӗ, пуҫне темиҫе хут чӗркесен те, алшӑлли хӗрелсех пычӗ.

— Тур ҫырлахтӑрах! Мӗн пулса тухрӗ капла, мӗн туса хутӑмӑр? — ниҫта кайса кӗме пӗлмесӗр ӑшталанчӗ амӑшӗ, сурана ҫыхма тепӗр алшӑлли тупса.

— Хвершӑл тавраш пур-и сирӗн ялта? Ҫавна кайса чӗнес пулать часрах! — терӗ ют ҫын.— Унсӑр ним те тӑваймастпӑр эпир!

— Пурччӗ те-ха, хӑй чирленӗ-ҫке, больницӑра...

— Ну, апла пулсан — вилет сан упӑшку, алшӑллипе чӗркенипех ҫӑлаймастӑн эс ӑна. Кунта лекарцӑ кирлӗ, уколпа тирмелле. Унсӑрӑн пурпӗрех капут пулать! — аллипе сулчӗ ют ҫын.

— Ах, ан хӑрат-ха, хӑта, тен, чиперех пулӗ! — ун ҫине ҫав тери шиклӗн пӑхса илчӗ Илюк амӑшӗ.

— Иртсе кайсан ырлӑхчӗ-ха, иртсе каймасан, мӗн тӑвас? — чарӑнмарӗ лешӗ.— Тӗрме вӗт. Лартаҫҫӗ санӑн маттур ывӑлна пӗр сакӑр ҫуллӑха е унтан та ытларах пама пултараҫҫӗ. Вӑл вӗлерчӗ, хам куҫпа хам курса тӑтӑм.— Ют ҫын пӑтранчӑк куҫӗсемпе Илюк ҫине тӑрӑнчӗ те тӑрук кӑшкӑрса ячӗ: — Ҫын вӗлертӗн-иҫ эсӗ, потлецӑ! Хупаҫҫӗ халь сана, хош-нехош кирпӗч шутлаттараҫҫӗ!

Илюкӑн урисем авӑнса анчӗҫ...

Паллах, ют ҫын тӗрӗс калать. Ҫын вӗлернӗшӗн суд тӑваҫҫӗ те хупаҫҫӗ — ӑна вӑл хӑй те лайӑх пӗлет. Ой, епле хӑрушӑ ку, епле хӑрушӑ! Тӗрме... Анчах та мӗн тумалла-ха ӗнтӗ? Нивушлӗ ниепле те хӑтӑлма пулмасть-ши?

«Тарас... Тухас та тарас! Хуть те ăçталла! Малтан Шупашкара, унтан — инçерехе... никам тупмалла мар çĕре! Кĕнекесенче çыраççĕ-çке çавăн пек килтен тухса тарнă ачасем çинчен... Ăçта та пулин çитсе ĕçе вырнаçас, пурăнас вара никама паллаттармасăр...»

Çак шухăшсем Илюка çӳçентерсех илчĕç.

«Ирхине мана пурпĕр тытса каяççĕ... Çук, çук, унччен тăхтаса тăма юрамасть! Халех, çак самантрах тухса шăвăнас пулать!..»

Илюк тăруках вырăнтан хускалчĕ те, алăк патнелле пат! пат! утса пырса, пăтара çакăнса тăракан ваткăллă пиншакĕпе карттусне илсе тăхăнчĕ. Халĕ те Матви кĕлетки умĕнче кукленсе тăракан амăшĕ ăна асăрхарĕ:

— Эс ăçта каятăн тата капла?

— Ниçта та каймастăп, хвершăл патне çитсе килес тетĕп, тен, вăл таврăннă? — терĕ Илюк, пĕр самантлăха та çухалса каймасăр.

— Чăнах та, кайса пăх-ха эппин, хвершăлĕ пур пулсан, ăна часрах илсе кил! — терĕ амăшĕ.

Илюк крыльца çине сиксе тухса кăшт тăрсан, уçă сывлăшра унăн пуçĕнчи хăвăрт сикекен шухăшсем кăштах йĕркене кĕнĕ пек пулчĕç.

«Епле-ха капла... Каясси — каятăп, анчах мĕнле пурăнăп-ха эпĕ? Малтанлăха, ăçта та пулин вырнаçиччен, мĕн çийĕп? Укçасăр кам мĕн парать мана ют çĕрте?..»

Амăшĕ хăйĕн укçине Матви ĕçсе ярасран ăçта пытарса усранине лайăх пĕлнĕ вăл — унăн укçи кĕлетре, сылтăм енчи пӳлме вĕçĕнче, ыраш ăшĕнче. Илюк çавăнтах, кил хушши урлă чупса каçса, кĕлете уçса кĕчĕ те, аллине ыраш ăшне чавса таран пĕр-иккĕ чиксе ярсанах, амăшĕ укçа чĕркесе хунă тутăра туртса кăларчĕ. Тĕттĕмре нимĕн те курăнмарĕ — темле йышши укçасем пулнă унта. Илюк, пĕчĕкçеç укçа тĕркине хыпашласа, васкасах виçĕ хутне уйăрса илчĕ, ыттисене каялла чиксе хучĕ. Амăшĕн пĕтĕм укçине илсе тухса кайма пултарайман ĕнтĕ вăл. Унтан кĕлет алăкне мĕнле шăппăн уçнă, çавăн пекех ним сассăр хупрĕ те урама тухрĕ...

Пӳртрен çав вăхăтра нимĕнле сасă та илтĕнмерĕ. Кам пĕлет, тен, Матви пичче хальччен вилсе те кайнă? Тен, унăн ирсĕр кĕлетки хытма та пуçланă?

Э, пурĕпĕр мар-и ĕнтĕ халь тин!..

Илюк юлашки хут тăван килĕ çине пăхса илчĕ те тĕттĕм урам тăрăх мăн çын пек пысăк утăмсемпе аналла утса кайрĕ.

— Тĕл пулас марччĕ хуть никама та...

Унӑн чӗри siксе тухас пек тапрӗ. Чӗри мӗн тери хытӑ тапни ӑна хӑйне те илтӗннӗн туйӑнчӗ.

Ҫав каҫхине вара Илюк хӑйӗн пурнӑҫӗнче нимӗнпе тӳрлетмелле мар пысӑк йӑнӑш туса хучӗ. Ҫав каҫхине никампа калаҫмасӑр, никама систермесӗр, хӑй ӑссӗнех килтен тухса кайнӑ пирки унӑн кайран темӗн те пӗр курса пӗтмелле пулчӗ...

5

Уйра пӑч-тӗттӗм пулин те, ял ҫумӗнчи тарӑн ҫырма урлӑ каҫса лаша ҫулӗ ҫине тухсан, Илюк ним хӑрамасӑр утрӗ. Мӗнрен хӑрас? Кашкӑрсем ҫинчен ку тӑрӑхра пачах асӑнмаҫҫӗ, ҫын-мӗн тӗл пулсан — ӑна тивес ҫук. Чи хӑрушши уншӑн кайра, хӑйсен ялӗнче, тӑван килӗнче.

«Ҫын вӗлертӗн вӗт эсӗ! Хупаҫҫӗ халь сана, хош-нехош кирпӗч шутлаттараҫҫӗ!..»

Матви пиччепе пынӑ ӳсӗртерех ҫын пӑтранчӑк куҫӗсемпе Илюк ҫине пӑхса хаяррӑн кӑшкӑрни хӑлхаран тухма пӗлмерӗ, янрасах тӑчӗ.

«Пӗр сакӑр ҫул е унтан та ытларах пама пултараҫҫӗ...»

Анчах кунта, тӗттӗм уйра, Илюка никам та тытса хупас ҫук. Вӑл ирӗкре. Хыҫран та хӑваламаҫҫӗ-ха, мӗншӗн тесен кӗҫӗр Илюксем патӗнче мӗнле хӑрушӑ ӗҫ пулса иртнине, вӗсен урайӗнче леш йӗксӗк Матвин сывламан кӗлетки выртнине халлӗхе пӗлмеҫҫӗ. Пӗлсен вара...

Ку шухӑш Илюка ҫӳҫентерсех илет. Часрах, хӑвӑртрах утас, аяккарах каяс пулать! Никам та ан куртӑр, никам та ан пӗлтӗр.

Ҫур ҫӗр тӗлӗнче йӗп-йӗпе тарланӑ Илюк шоссе хӗррине ҫитсе тухрӗ. Таврара халӗ паҫӑрхинчен те тӗттӗмрех пек туйӑнчӗ. Хӑрушла шӑп тата. Ниҫта та пӗр сасӑ та ҫук. Пӗтӗм халӑх, пур чӗрчун лӑпкӑн ҫывӑрнӑ вӑхӑт ӗнтӗ ку. Асфальт сарнӑ сарлака ҫул ҫинче тӑракан Илюка ҫак самантра вӑл пӗтӗм тӗнчере пӗр-пӗччен юлнӑн туйӑнать. Эх, халь пӗр-пӗр машина Шупашкар еннелле каясчӗ! Илюк аллине тӑратӗччӗ те, вара...

Ҫук ҫав, ҫул ҫинче нимӗнле ҫутӑ та курӑнмасть. Паллах, ку вӑхӑтра шоферсем те ҫывӑраҫҫӗ. Тул ҫутӑлмасӑр пӗр машина та пулмасть пулӗ. Мӗнле кӗтсе илес вӑл вӑхӑта? Тата... ирччен ун хыҫҫӑн йӗрлесе килсен, мӗн тӑвас? Матвие вӗлерсе пӑрахни ҫинчен пӗлӗҫ (ун ҫинчен Илюксем патӗнче юлнӑ унӑн юлташех кайса калама пул-

тарать), Илюк килте çуккине курĕç те — лашасем çине утлансах тĕпĕртеттерсе килĕç. «Э-э, тарса хăтălма шут тытрăн-и, çын вĕлерекен?!»

...Шăпăртатса çумăр çума пуçларĕ. Илюк шоссе урлă каçрĕ те темле сарай çумне йăпшăнчĕ,— шоссе ку тĕлте ял пуçĕпех иртсе каять. Кăштах тăрсан ăна ыйхă пусма пуçларĕ, вăл малтан кукленсе, унтан урисене тăссах çĕре ларчĕ.

«Тен, тăрса утас? Шоссе çинче çухалса каяс çук, ун тăрăх таçта та çитме пулать... Ирччен чылай кайма пултаратăп. Машинăсем çӳреме пуçласан ларса каяс вара...» — шухăшларĕ Илюк, анчах та хăй вырăнтан хускалаймарĕ, çапла шухăшланă çĕртех çывăрса кайрĕ. Ăна тӳрех хăрушă тĕлĕксем курăнма пуçларĕç. Матви хăйне çĕçĕпе хăвалать пек, «эс мана вĕлертĕн, халь ĕнтĕ эп сана хăвна вĕлеретĕп!» тесе кăшкăрать, Илюк унран тарса ӳкесшĕн, анчах ун умне Хура Хветле сиксе тухать те унăн çулне пӳлет, хăй каçса кайса кулать...

Акă вăл ăна хулпуççинчен тытса силлеме тапратрĕ:

«Лекрĕн-и, усал ача?! Санăн аннӳ мана чăх вăрланăшăнах чут суда партаратчĕ, халĕ ак хăвăр пĕтетĕр! Сакăр çул параççĕ сана е унтан та ытларах! Çав кирлĕ, çавă чух сире!..»

Илюк хăйĕн куçĕсенчен çутă çапнипе вăранса кайрĕ те тăпăл-тапăл сиксе тăчĕ. Ун çумĕнче икĕ каччă тăраççĕ, пĕри кĕсъере чиксе çӳремелли электричество хунарĕпе çутатать.

«Пĕтрĕм! Килсе тытрĕç!» — чĕри яштах турĕ Илюкăн.

— Мĕнле ача эсĕ, ма кунта çывăратăн? — ыйтрĕ пĕри. Анчах хăйĕн сасси пĕртте хаяр пек туйăнмарĕ.

— Эпĕ-и? Эпĕ мĕн...— ним калама та пĕлмерĕ çав тери хăраса ӳкнĕ Илюк.

— Эсĕ çав, кам тата?

— Эпĕ мĕн... Хулана кайма тухсаттăм та, каçхине машинсем пулмарĕç те, канма лартăм...

— Ăçтисем эсĕ?

— Эпĕ-и? Эпĕ мĕн... Кураккассисем! — суйрĕ Илюк, ку çынсем чăнах та хăйне тытма килнĕ пуль тесе.

— Хулана кам патне каятăн?

— Унта пирĕн тăвансем пур... Кукка...— каллех суйрĕ Илюк.

— Ăçта ĕçлет?

— Вăл-и? Вăл мĕн...— Илюк тăруках нимĕн те шухăшласа кăлараймарĕ.— Мĕнлеччĕ-ха çав, мантăм...— Унтан тăрук персе ячĕ: — Хаçат çапнă çĕрте ĕçлет!

— Типографинче-и?

— Ийя! ийя! Типографинче. Мана та вырнаҫтаратăп терĕ те...

— Аван ĕҫ ĕнтĕ вăл,— терĕ хунарли.

— Э, тусăм, эсĕ шăнса хытнă иккен, сиксех чĕтретĕн! — терĕ тепри.— Атя пирĕнпе, правление кĕрсе ăшăн, кунта юнашарах пирĕн правлени.

— Ҫук, ҫук, пĕртте шăнман эпĕ! — пуҫне пăркаласа илчĕ Илюк.

— Мĕншĕн чĕтретĕн эппин?

— Ахаль вăл, ҫывăрнăран... Хам эп ним чухлĕ те шăнман. Каяс мар-ха ниҫта та, часах машинсем чупма пуҫлаççĕ пуль ĕнтĕ...

— Ну, хăвăн ирĕк. Чипер ларса кай!

Ку каччăсем каҫхи хуралҫăсем пулнă иккен. Ял вĕҫне тухсан, вĕсем сарай ҫумĕнче такам харлаттарсах ҫывăрнине илтнĕ те юриех пырса пăхнă. Анчах Илюк, вĕсене хăй хыççăн йĕрлесе килнĕ ҫынсем вырăнне хурса, чĕлхи ҫыхланса ларичченех хăраса ӳкрĕ. Каччăсем хăйĕнчен уйрăлса кайсан вара кунта тек пĕр минут та тăхтаса тăмарĕ, шоссе ҫине тухрĕ те васкасах Шупашкар еннелле утрĕ.

«Пĕрисем тупрĕҫ пулсан, теприсем те наччасах килсе тупма пултараççĕ... Юрать-ха кусем хама хăвалакансем пулман! — савăнсах шухăшларĕ Илюк.— Тул ҫутăличчен аяккарах каяс...»

Ҫав вăхăтра хыҫа юлнă ялта автан авăтса ячĕ. Унтан тепри, тата тепри... Таҫта йытă вĕрни илтĕнчĕ — ахăртнех, автансен сассипе ыйхăран вăранчĕ пулĕ. Шупашкар енчи пĕлĕт хĕрри те ҫуталма пуҫларĕ.

Илюк тарăн ҫырма урлă каҫса сăрт ҫине хăпарсан чарăнса тăчĕ те каялла пăхрĕ. Инҫетре, темиҫе ҫĕрте, питĕ хăвăрт шăвакан ҫутăсем курăнчĕҫ.

— Ак хайхи, ман валли машинсем те килеççĕ...

## 6

Шупашкарта шофер Илюка почта тĕлĕнче антарса хăварчĕ. Хăйне лартса килнĕшĕн тӳлес тесе, Илюк шалти кĕсйинчен укҫа кăларма тăчĕ, анчах шоферĕ аллипе сулчĕ кăна:

— Кирлĕ мар! Премĕк илсе ҫи луччă!

Хăй ăшĕнче Илюк ҫак ырă кăмăллă ҫынна тем пекех тав турĕ. Унăн укҫи ахаль те питĕ сахал: вуннăлăх хутсем иккĕ те, пĕрре пиллĕклĕх. Тĕттĕм ҫĕрте хăйĕн алли-

не мĕнле укçасем леκнине курман çав вăл. Мĕн тумалăх пур ку укçа?..

Машина тапранса кайсанах, Илюк, урам урлă каçса, почта çурчĕ çинчи сехете пăхса илчĕ. Çиччĕ те çитмен иккен-ха. Ним шухăшламасăрах, вăл пасар еннелле утрĕ. Пасар умĕнче тухтăрсем пек шурă халатлă, шурă калпаклă хитре хĕр вĕри кукăльсемпе тăпăрч икерчисем сутса тăнине курсан, унăн çав тери çиес килсе кайрĕ те çавăнтах виçĕ пĕчĕк кукăльпе икĕ икерчĕ илсе çирĕ. Унтан, пасаралла кĕрсе кайса, ним тĕлсĕр çӳреме тытăнчĕ. Йывăç уралла ватăрах фотограф хӳме çине кăларса çакнă ӳкерчĕксем умĕнче чарăнса тăчĕ, кĕнеке киоскĕн кантăкĕ витĕр чылайччен пăхрĕ, сĕт-çу сутакан павильона кĕрсе кайрĕ. Унтан тухнă чух алăкра сасартăк икĕ милиционера курчĕ те картах сикрĕ. Чĕри те тапма чарăнчĕ пулас унăн...

«Мана шырамаççĕ-ши кусем?.. Çук, манăн вĕсене курăнса çӳрес пулмасть... Тытаççĕ!»

Вăл вара, васкасах пасарăн хыçалти хапхипе тухса, Атăл еннелле кайрĕ. Унччен малтан вăл Шупашкарта ачасемпе пĕрле ик-виç хутчен те экскурсинче пулнă та хăш урам ăçталла кайнине самаях чухлать.

Ĕнтĕ вăхăт чылай иртрĕ, хĕвел те хĕртме тытăнчĕ, хула урамĕсенче вĕçĕ-хĕррисĕр çынсем каллĕ-маллĕ кумма пуçларĕç. Атăл хĕрринче те халăх тем чухлех утать. Таçта каяççĕ, таçта васкаççĕ... Çыран хĕрринчи эрешлĕ чул карлăк çине чавсаланса, Илюк Атăл çине пăхма тытăнчĕ. Илемлĕ иккен кунта! Шывĕ таçта çитиех, тинĕс пекех сарăлнă, леш енчи вĕт вăрмансем те, улăхсем те шыва путнă... Анатран тем пысăкăш пăрахут хăпарать, моторлă кимĕсем лăпкă шыва урлă та пирлĕ çурса ишеççĕ, Атăл варрипе пысăк сулă анать, унăн тăршшĕ çур çухрăм та пулĕ, ăна туртакан сарă буксир пĕр вырăнта тăнă пекех туйăнать... Эх, çавăн çине ларасчĕ те инçетеинçете, Каспи тинĕсне çитиех, каясчĕ! Унта ĕçе вырнаçасчĕ... Вара Илюка никам та нихçан та тупайман пулĕччĕ...

Çурăмран хĕвел ăшши çапса тănипе Илюкăн çывăрасси килсе кайрĕ, куçĕсем хупăнмах пуçларĕç. Вăл, чул карлăк патĕнчен пăрăнса, Константин Иванов палăкĕ тăракан сквера кĕчĕ. Кунти хыçлă саксем çинче шав çынсем лараççĕ иккен — пĕрисем хаçатсем пăхкалаççĕ, теприсем кĕнеке вулаççĕ, виççĕмĕшĕсем ахаль калаçса лараççĕ. Поэт палăкĕ умне пионерсем пухăннă, пĕр вăтăр-хĕрĕх çын та пулĕ: вĕсене кăвак плащпа кивĕрех

шлепке тăхăннă куçлăхлă арçын йĕркелесе тăратать — пысăкраххисене каярах, пĕчĕкреххисене маларах, хăйĕн аллинче фотоаппарат. Ахăртнех, кусем пĕр-пĕр ялти шкултан экскурсие килнĕскерсем пулмалла, ятарласа «Нарспи» авторĕ умĕнче ӳкерĕнесшĕн...

Чылай шавлакаланă хыççăн ачасем йĕркеленсе çитрĕç те, куçлăхлă çын вĕсене аппарачĕпе тĕллесе темиçе хутчен чаклаттарса илчĕ. Илюкăн çав тери çак ачасемпе тăрас килчĕ: асăнмалăх мĕн тери лайăх пулнă пулĕччĕ чаплă поэт умĕнче ӳкерни! Ун пек ӳкерчĕк ялта никамăн та çук вĕт-ха. Анчах ют ачасем çумне мĕнле пырса çулăхатăн?

— Халь ăçта каятпăр, Николай Фомич?

— Музее кĕретпĕр-и?

— Типографие хăçан кайса куратпăр? — шавласа кайрĕç ачасем, хăйсен учительне сырса илсе.

— Малтан музее, унтан картинăсен галерейине, кăнтăрла иртсен типографине,— терĕ лешĕ.

«Таçта та çитесшĕн-çке кусем...—шухăшларĕ Илюк.— Манăн та вĕсемпе пĕрле каяс мар-ши? Ахалĕн мĕн туса çӳрес хула тăрăх? Капла хуть темĕн те пĕр куратăп, усси пулать...»

Çапла турĕ те вара, кунĕпех çав палламан ачасенчен уйрăлмарĕ, вĕсем ăçта каяççĕ — вăл та хыççăнах утрĕ. Анчах лешсем ăна асăрхамарĕç те, мĕншĕн тесен таçта пырсан та курмаллисем, каласа панисене итлемеллисем питĕ нумай пулчĕç.

Хаçат-журнал, кĕнеке мĕнле пичетленине курса тухсан, куçлăхлă учитель хăйĕн ачисене пĕр столовăя апат çитерме кĕртсе лартрĕ те хăй касса умне талонсем çаптарма кайса тăчĕ. Вĕсемпе пĕрле кĕнĕ Илюк та касса патне пычĕ, унăн та хырăмĕ паçăрах выçнăччĕ ĕнтĕ.

«Кусем кĕçĕрех каймаççĕ пулас-ха, тен, çĕр каçма та вĕсемпе пĕрлех вырнаçăп-и»,— шухăшларĕ Илюк çав хушăрах.

Касса умĕнчи черет майĕпен кĕскелсех пычĕ, кĕçех акă Илюкăн, хăй мĕн илессине каласа, укçа тӳлемелле пулать. Вăл ĕнтĕ укçине те кăларса янтăларĕ, анчах çав самантра пачах та кĕтмен япала пулчĕ: урамалла тухмалли алăк яриех уçăлчĕ те, столовăя пĕр тĕреклĕ, пысăк уссиллĕ милиционер кĕрсе тăчĕ. Пиçиххийĕ çинче пистолет, аллинче пĕчĕк сăран сумка. Ку тата нимех те марччĕ-ха,— Шупашкарта милиционер сахал-и? — анчах ун хыççăнах алăкран Илюксен колхозĕн председателĕ Василь Васильч Яраткин кĕчĕ! Вĕсем алăкран ик-

виçĕ утăм маларах иртрĕç те унăн-кунăн пăхкалама тытăнчĕç.

Илюкăн малтан чĕри йĕппе чикнĕ пек ыратса илчĕ, унтан тăруках сывлăшĕ пӳлĕнсе ларчĕ... Паллах ĕнтĕ, милиционерпа колхоз председателĕ ăна, Илюка, шыраççĕ, урăх никама та мар! Кун пирки нимĕн иккĕленмелли те çук, вĕсем Илюка тытасшăн!.. Эппин, леш Матви пиччe тени чăнах та вилсе кайнă, ун çинчен правление те, ял Советне те пĕлтернĕ, çийĕнчех Илюксем патне çынсем пырса тулнă, унтан Илюк килтен тухса тарнине пĕлнĕ те ăна шырама тытăннă... Колхоз председательне ятарласа Шупашкара янă, вăл кунта милцине çитсе каланă, халĕ, ав, милиционерпа пĕрле Илюка шыраса çӳрет... Самантранах акă Яраткин ăна асăрхать те, ун патне чупса пырса, хулĕнчен ярса тытать:

«Аха-а, лекрĕн-и, таркăн?! — кăшкăрса ярать вăл.— Милиционер юлташ, çакă ĕнтĕ вăл пирĕн ялта çын вĕлерекенни! Илсе кайăр ăна! Тытса хупăр!..»

Илюкăн пĕтĕм çанçурăмĕ сӳ! туса илчĕ. Яраткина епле те пулин курăнас мар тесе, вăл пичĕпе тепĕр еннелле çаврăнса тăчĕ те хытнă пек пулчĕ.

— Каласам тата мĕн илес тенине! Çынсене чарса тăратăн вĕт! — терĕ çав вăхăтра черетри çынсенчен пĕри. Анчах Илюк хăй валли апат ыйтас вырăнне, тăрук касса патĕнчен пăрăнса, тӳрех алăк еннелле тапса сикрĕ те, ăна шăлт-шалт уçса хупса, урама чупса тухрĕ.

— Мĕн пулчĕ ку ачана?

— Астăвăр-ха, камăнне те пулин укçа кăларса илмерĕ-и вăл? — тĕлĕнерех калаçса илчĕç черетрисем.

— Ма тытмаççĕ пуль çав шпанасене!

Илюк çав вăхăтра урам тăрăх анаталла ыткăнса пычĕ, каялла та çаврăнса пăхмарĕ. Пĕр тăкăрлăкалла пăрăнса çырмана чупса анчĕ, унта ансăр кĕпер урлă каçса хăпарсан тин чупма чарăнчĕ вăл. Хăй антăхса каясла хашкарĕ.

— Лекеттĕм вĕт, чутах лекеттĕм! Юрать-ха Яраткинĕ курмарĕ...

Вăл пĕр хӳме çумĕнчи сак çине ларчĕ.

«Мĕн тăвас пулать-ха ĕнтĕ? Тем тесен те, урамра курăнса çӳреме юрамасть. Ятарласа мана шырама килнĕскер, Яраткин Шупашкартан ытла тăруках тухса каяс çук, ăна вăл ăнсăртран та пулин каллех тĕл пулма пултарать. Вара... пĕтрĕм! Пытанас пулать ăçта та пулин е пăрахут çине ларса каяс...»

Юлашки шухăшĕ ăна пуринчен те тĕрĕсрех пек ту-

йӑнчӗ те, васкасах Атӑл хӗрринелле утрӗ. Пристань ҫумӗнче шӑпах пӑрахут тӑрать-мӗн. Ӑна курсан, Илюк вӑрӑм пусма тӑрӑх чупса анчӗ, анчах ӗлкӗреймерӗ — пӑрахут юлашки хут ши! ши! шӑхӑртса илчӗ те пристаньрен уйрӑлса та кайрӗ. Илюкӑн вара ирӗксӗрех каялла ҫырана тухмалла пулчӗ.

Кунта, ҫыранра, ҫимеллисем нумай сутаҫҫӗ иккен. Ҫӳллӗ те вӑрӑм саксем ҫинче тем те пур: кукӑлӗ, икерчи, сӗчӗ, ҫӑвӗ, пӗҫернӗ ҫӑмарти, какайӗ... Паҫӑр столовӑйӗнчен ҫимесӗрех тухса тармалла пулнӑ пирки Илюк халӗ ик-виҫ икерчӗ илсе ҫиме шут турӗ, анчах, вӗсемшӗн тӳлеме тӑрсан, унӑн шалти кӗсйинче укҫа тупӑнмарӗ. Ку ӑна тӑруках хӑратса пӑрахрӗ: ӑҫта кайса кӗме пултарнӑ унӑн укҫи? Васкасах шырама тытӑнчӗ — тулти кӗсйине, йӗм кӗсйине, хӗвне ухтарчӗ, анчах усси пулмарӗ. Укҫи ҫухалнӑ унӑн! Те такам кӑларса илнӗ-ха, те паҫӑр урампа хытӑ чупнӑ чух ӑнсӑртран кӑларса ӳкерсе хӑварнӑ — кам пӗлет! Мӗн пулса тухрӗ-ха капла? Мӗн тумалла ӗнтӗ халь? Килтен тухса тарнӑ-тарман выҫса вилес пулать-иҫ? Кунта, Шупашкарта, ӑна никам та пӗлмест, палламасть, ҫавӑнпа никам та пӗр чӗлӗ ҫӑкӑр парас ҫук...

Ачан алли-ури те чӗтреме тытӑнчӗ, вӑл кӗҫ-вӗҫ макӑрса ярас пек тӑчӗ.

— Мӗн пулчӗ, ачам? Ҫаратрӗҫ-им? — хӗрхеннӗ пекрех ыйтрӗ унран кукӑль сутса ларакан хурарах хӗрарӑм, хӑлхисенчен темле пысӑк ҫутӑ алкасем ҫакса янӑскер, ҫӑварӗнчи пирусне ӗме-ӗме.

— Укҫа ҫухалнӑ манӑн...— куҫӗсене час-час мӑчлаттарса хуравларӗ Илюк, ун ҫине хурлӑхлӑн пӑхса.

— Йӑкӑртнӑ кам та пулин, кунта шӑпанасем сахал мар ҫӳреҫҫӗ, асӑрхансах тӑрас пулать.

— Ак ҫакӑнтах, шалах чиксеттӗм...

— И-и, ачам, вӗсем таҫтан та кӑларса илӗҫ!

Илюк шалт ӑнран кайнӑ пек пулчӗ. Чӑнах та, мӗн тумалла-ха унӑн халь? Ҫиес килет-ҫке-ха... Ҫири пиншака сутас пулать-и? Халӗ ҫанталӑкӗ ытла сивех мар, шӑнсах вилес ҫук...

— Инке! Ҫак пиншака илмӗн-ши эсӗ? — терӗ вара вӑл ытла нумай шутласа тӑмасӑрах.

— Ху мӗнпе юлатӑн-ха тата? — тӗлӗннӗ пек пулчӗ алкаллӑ хӗрарӑм, пирусне ҫӑварӗнчен сурса пӑрахса.

— Эпӗ мӗн... эп аптрамастӑп, манӑн кӗпе хулӑн,— мӑкӑртатса илчӗ Илюк.

— Мӗн чухлӗ илес тетӗн вара?

— Пĕлместĕп. Иртнĕ кĕркунне анне ăна ҫитмĕл тенкĕ парса илнĕччĕ. Нумай та тăхăнман, ҫĕннипех-ха вăл... Пĕр аллă тенкĕ паратăн пуль?

— Ха! — сарăхнă шултра шăлĕсене кăтартса кулса илчĕ алкаллă хĕрарăм.— Ачи ухмах мар иккен эсĕ! Аллă тенкĕ! Лавккара халь ун пек пăрахлосем вĕр-ҫĕннисем те вăтăр тенкĕ ҫеҫ тăраççĕ, хуть те вакунĕпе тие!

— Ху мĕн чухлĕ парас тетĕн эппин? — ыйтрĕ Илюк, ҫак хĕрарăм ун пиншакне вуҫех те илмесрен хăраса.

— Ме ак вунпилĕк тенкĕ!

— Ой, инке, ытла та йӳнĕ-ҫке...

— Айван ача, унтан ытла никам та памасть сана ҫак кивĕ пăрахлошăн! — Хĕрарăм ҫавăнтах хĕвĕнчен пилĕк тенкĕлĕх виҫĕ укҫа кăларчĕ.— Ывăннă хыççăн касхине чĕрĕк илсе ĕҫес тесеттĕм те, юрĕ ĕнтĕ, сана хĕрхеннипех кирлĕ мар расхута кĕретĕп. Ме, тыт!

Илюк хĕрарăма хирĕç нимĕн те калаймарĕ, ун аллинчи укҫана илчĕ те пиншакне хывса тыттарчĕ. Лешĕ ăна йăпăр-япăр хутлатса хăй айне персе чикрĕ, унтан, хурлăха лекнĕ ачана ҫав тери ăста улталанăшăн савăннипе пулас, кăмăлне ҫемҫетнĕ пек турĕ:

— Ме сана ҫиелтен икĕ кукăль, ҫи! Эпĕ хытă ҫын мар...

Илюк вăл панă кукăльсене илчĕ те, чылай аякка кайса, ҫыранри пĕр пысăк чул ҫине ларса ҫирĕ. Ҫав хушăра каç та пулма пуҫларĕ, Атăл леш енчен ҫумăр чашлаттарса килчĕ. Шыв хĕрринчи ҫынсенчен пĕрисем часах тăвалла, хуланалла, утрĕҫ, теприсем пристань ҫинелле туртăнчĕҫ. Ҫумăрпа пĕрле ҫил вĕрме пуҫларĕ, тăруках сивĕ пулса кайрĕ, вара Илюк та, пристань ҫине пырса, халăхпа пĕрле ҫӳлти хута, ҫынсем пăрахут килессе кĕтсе ларакан пысăк пӳлĕме, кĕчĕ. Урăх ăҫта кайма пултарнă-ха вăл?

Кĕтмелли пӳлĕм пысăк пулин те, кунти саксене пурне те йышăнса пĕтернĕ иккен, чылайăшĕ урайĕнчех лараççĕ, хăшĕсем харлаттарсах ҫывăраççĕ. Илюк пĕр кĕтесе, такамăн миххисем ҫумне, йăпшăнчĕ. Ҫумăр ҫаплах чарăнмарĕ, пӳлĕме ҫĕнĕрен ҫĕнĕ ҫынсем пырса кĕчĕҫ, шавлăн калаҫрĕҫ, унтан майĕпен вырнаҫрĕҫ те шăпланчĕҫ. Халĕ ĕнтĕ урайĕнче те вырăн юлмарĕ, сывлама та йывăр, пăчă пулчĕ.

Леш каç та ҫывăрманнипе, паян кун каҫа нумай ҫӳренипе, темиҫе хут та ҫав тери хăраса, пăлханса пĕтнипе ывăнса ҫитнĕскер, Илюк хытă ҫывăрса кайрĕ. Анчах ыйхи лăпкă пулмарĕ унăн — каллех темĕн тĕрлĕ хăрушă

тӗлӗксем аташтарчӗç ӑна. Матви пичче милици тумне тӑхӑннӑ та, тем кӑшкӑрса, ӑна тытасшӑн чупать, амӑшӗ çав вӑхӑтрах баян каласа юрлать, унччен те пулмасть — Илюк тин çеç сутнӑ пиншак пирки макӑра-макӑра вӑрçма тытӑнать: «Çын вӗлерни çитмест сана, халӗ япаласем сутма тытӑнтӑн-и, эсрелӗ çури?! Чӑнах та тӗрмене хупмалла сана, каттӑршнӑя!»

Унтан Илюк таçтан татӑлса анать те пуçӗпе хытӑ çӗре пырса çапӑнать. Ыратнипе вӑл вӑрансах каять...

Тахӑшӗ ун айӗнчи миххе туртса кӑларнӑ иккен, çавӑн пирки пуçӗ урайне ӳксе çапӑннӑ. Кӗтмелли пӳлӗмре халӗ çынсем сахалланса юлнӑ, çӗрле пӑрахутсем çине лара-лара кайнӑ пулмалла ӗнтӗ, хӑшӗсем халӗ те япалисене йӑтса тухаççӗ. Пристань çумӗнче пӑрахут тӑратьмӗн, вӗсем ун çине ларма васкаççӗ.

«Манӑн та ларса каяс мар-ши? — шухӑш вӗçрӗ Илюк пуçӗнче.— Аçталла каять-ши ку пӑрахут? Анчах билетсӑр кӗртӗç-ши мана? Тытмӗç-ши? Çук-ха, ыранччен тӑхтас. Кӑнтӑрла авантарах пулӗ... Халӗ çывӑрасчӗ тепӗр ыйхӑ...»

Анчах та çывӑрасси пулмарӗ. Пӑрахут кайсан, пӳлӗм пушансах юлчӗ те, унта вӑрӑм авӑрлӑ, канат çипписелчен тунӑ милӗк йӑтнӑ ватӑрах матрос пырса кӗчӗ.

— А ну, халех пурте тухса кайӑр кунтан! Урай çӑвас пулать! — кӑшкӑрчӗ вӑл, малалла иртсе.— Хӑвӑртрах тасалӑр, кунта сире валли гостиница мар!

Илюк çырана никамран малтан тухрӗ. Нӳрӗ те сивӗрех сывлӑш ӑна тӳрех çӳçентерсе илчӗ. Йӗри-тавра пӑч-тӗттӗм, пристань умӗнчи икӗ çӳллӗ юпа çинчи лампочкӑсем çеç çырана тухмалли сарлака пусмапа — траппа ун çывӑхӗнчи темле тавар куписене хӑюсӑр çутатаççӗ. Аçта каяс? Çывӑрас та килет, анчах çӗр çине выртса усӑ çӗрте çывӑраймастӑн ӗнтӗ... Çак япаласене витнӗ брезент айне кӗрсе выртсан мӗнле-ши? Ытла сивех пулмасть пуль унта?

Нумай шухӑшласа тӑмарӗ Илюк: çав тавар купи патне тепӗр енчен пычӗ те, ун çине йӑпӑр-япӑр хӑпарса, брезент хӗррине уçса кӗрсе выртрӗ. Ку вӑл утӑ тӗркисен купи пулнӑ-мӗн,— çемçе, ырӑ шӑршлӑ, ӑшӑ! Вунӑ минут та иртмерӗ пуль, ача çывӑрса та кайрӗ.

Анчах тул çутӑлнӑ-çутӑлманах вӑл çав тери шӑнса хытнипе вӑранчӗ. Брезент айӗнче ун пек те, кун пек те çаврӑнкаларӗ, мӗн май килнӗ таран хутланчӗ, кӗпе тӳмисене вӗçертсе хӗвнелле сывларӗ, анчах ку та пулӑшмарӗ. Илюк çав-çавах чӗтреме чарӑнаймарӗ.

«Капла эпĕ чирлесе ӳкме те пултаратăп, вара — пĕтрĕм!» — хăраса шухăшларĕ вăл.

Тахăш енчен пăрахут килчĕ пулмалла — ирхи уçă сывлăша çурса вăрăммăн, хăватлăн кăшкăртса ячĕ, çав вăхăтрах пристань тавраш енче çынсем шавлăн калаçни, унталла-кунталла уткалани илтĕнчĕ. Текех пурĕпĕр çывăраяс çуккине ăнланса, Илюк хăйĕн «лупас айĕнчен» тухса каллех пристань патне пычĕ. Пăрахут çинчен çынсем тухма та пуçланă-мĕн. Чăматансемпе, çыхăсемпе, карçинккасемпе, хăшĕсем ачисене çĕкленĕ. «Ăçта каятьши кун чухлĕ халăх?» — тĕлĕнчĕ Илюк.

Акă трап хĕррипе, карлăк çумнех хĕсĕнсе, сенкер пальтоллă илемлĕ майра тухать. Хулпуççийĕ урлă вăл икĕ çыхă çакса янă, хăрах аллипе пĕр виç çулхи сап-сар çӳçлĕ хĕрачине çĕкленĕ, тепĕр аллинче — ытла пысăках мар чăматан. Ачи антăхса каяслах макăрать, те хăранă вăл, те тата темскер пулнă ăна. Çак майра çырана тухрĕ те, кăшт аяккарах пăрăнса, чăматанне лартрĕ, ачине çĕре антарчĕ, унтан хулпуççи çинчен çыххисене илсе пăрахрĕ те, ачи умне кукленсе, ăна йăпатма пикенчĕ. Чăматанĕ унăн çурăмĕ хыçнерех тăрса юлчĕ. Темшĕн-çке Илюк ăна тимлесех сăнаса тăчĕ. Анчах минут та иртмерĕ пуль — Илюк выртса çĕр каçнă утă купи хыçĕнчен ун пекех вунвиç-вунтăват çулхи кăвак кĕпеллĕ арçын ача йăпшăнса тухрĕ те, унталла-кунталла вăш-ваш пăхкаласа илсе, пĕррех çав майра чăматанне йăтса каялла, утă купи хыçнелле, тапса сикрĕ. Ăнланчĕ Илюк: çав ача чăматана вăрласа тарчĕ, кун çутинчех çаратрĕ çынна!

— Чăматан! Вăрларĕç! — кăшкăрса ячĕ Илюк, иккĕ сиксех майра патне çитсе тăрса.

Лешĕ каялла çаврăнса пăхрĕ те, чăматанĕ çуккине курса, ăнран тухса кайнă пек çухăрса ячĕ:

— Милици! Милици! Çаратрĕç!..— Унтан Илюка çаннинчен çулса тытрĕ: — Эс куртăн-и? Куртăн-и? Кам вăрларĕ? Ăçталла тарчĕ?..

— Пĕр ача, çавăнталла тарчĕ...— тĕллесе кăтартрĕ Илюк.

— Чуп эппин, часрах ун хыççăн! Гражданасем, пулăшăр! Унта манăн пĕтĕм документсем, укçа... А-ах, çаратрĕ-ĕç!..

Майра патне харăсах темиçе арçынпа хĕрарăм чупса пычĕç, анчах Илюк вĕсем çине пăхмарĕ те — вăрă тарнă еннелле ыткăнчĕ. Ăна вăл утă куписем хыçĕнчен сиксе тухсанах асăрхарĕ,— кăвак кĕпеллĕ ача шыв хĕррипе малта курăнакан пĕрене куписем патнелле чăматан йы-

вăрăшне пула пĕр еннелле тайăлса чупса пырать...

— Сто-ой!.. Тытă-ăр... Вăрă-ă! — мĕн вăй çитнĕ таран кăшкăрчĕ Илюк, аллипе малалла сула-сула.

Вăл кăшкăрнине Атăл хĕррине ир-ирех кĕпе чӳхеме килнĕ икĕ хĕрарăм, илтсе, мĕн пулнине тӳрех тавçăрса илчĕç пулмалла, аллисенчи йĕпе кĕписене пăрахсах, çав ача çулне пӳлмелле чупрĕç. Ачи çавна тӳрех асăрхарĕ, вара, чăматанне вĕтĕ чул çине пăрахса, сылтăмалла тапса сикрĕ те пĕрене куписем хушшинче çухалчĕ.

— Камăн чăматанĕ ку? Санăн-и? Мĕнле вăрлаттартăн-ха эс ăна? — пĕр-пĕрне пӳлсех тĕпчеме тытăнчĕç хĕрарăмсем, Илюк вĕсем патне хашкаса чупса çитсен.

Илюк ĕç мĕнле пулса иртнине каласа пама тытăнсан, хыçалтан тата ик-виç арçын чупса çитрĕç.

— Хăй тарчĕ-и? Тытаймарăр-и?

— Тарчĕ çав...

— Шел! Пĕрре лайăх кăна пĕçертмеллеччĕ те милицие кайса памаллаччĕ эсрел çурине!

— Эп кăштах паллатăп вăл ачана,— терĕ хĕрарăмсенчен пĕри, аслăрах куранаканни.— Хăрах куçлăскер вăл, ачасем ăна темшĕн Хачă теççĕ. Пĕр-икĕ çул çапкаланса çӳрет ĕнтĕ çакăн пек. Милицире çирĕм хут та пулнă пуль.

— Ашшĕ-амăшĕ çук-им унăн?

— Пурри пур та... çук пекех çав. Ашшĕ тăван мар, питĕ ĕçет, ĕçсен урсах каять теççĕ, амăшĕ те ĕçес енпе юлашки вăхăтра унтан юлсах каймасть пулас, ачи çине вăл пĕчĕккĕ чухнех çаврăнса пăхман... Ку вара пăсăлсах пынă, темле аван мар çынсемпе çыхланнă, шкултан та кăларса янă ăна, халь авă вăрлама та тытăннă куранать. Шел те ĕнтĕ, мĕн тăвăн? Никам та мар, амăшĕ айăплă...

Çак калаçăва итлесе тăнă чух Илюк тарласах кайрĕ, унăн чĕри хыттăн-хыттăн тапма тытăнчĕ.

«Ман çинчен каланă пекех... Ашшĕ тăван мар, ĕçет, килтен тухса тарнă...»

Унтан Илюк чăматана çĕклесе каялла, пристань патнелле, утрĕ. Халь çеç илтнĕ калаçу унăн хăлхинче янăраса тăчĕ, пĕтĕм чĕрине пăлхатрĕ.

«Çук, çук...— терĕ вăл çав вăхăтрах хăйне хăй.— Килтен тухса тарнă пулин те, эпĕ ун пек пулмастăп. Эпĕ тӳрĕ пурнăçпа пурăнатăп, вăрă та, хулиган та пулмастăп, нихçан та!.. Леш Матви вилсе кайнă пулсан та, эп айăплă мар уншăн, эп юри туман ăна, вăл хăй мана çапса пăрахма тапăнчĕ... Атте портретне персе аркатрĕ... Аннене пусма тăчĕ... Суд тăвас пулсан çаплах калатăп...»

Çав вăхăтра утă куписем хыçĕнчен хайхи майра тухрĕ — паçăрхи пекех ачине йăтнă, çыххисене хулпуççи урлă çакнă, хăй унталла та кунталла пăхать, çав тери васкать. Ăна курсан, Илюк ун патнелле чупсах кайрĕ вара.

— Ах, тавтапуçах сана, ачам! Тавтапуçах! — терĕ майра ниçта кайса кĕрейми, вĕсем пĕр-пĕрин патне çывхарсан.— Эс асăрхаман пулсан, паспортсăр, пĕр укçасăр тăрса юлаттăм вĕт! Пин хут спаççипă сана!

— Мĕнех пур вара тав тумалли...— именчĕ Илюк.

— Епле-ха тата? Ара, эс пулман пулсан...— Хĕрарăм чăматанне уçса пĕчĕк хĕрлĕ сумкăран вунă тенкĕлĕх укçа кăларчĕ.

— Акă, тыт-ха çакна... мана ыр тунăшăн! Тыт, канфет те пулин илсе çи хуть!

— Çук, çук, мĕн эс... Кирлĕ мар! — пуçне пăркаласа аллипе сулчĕ Илюк.— Эп укçашăн мар вĕт... Вăрă çын япалисене вăрланине курсан — кам ăна тытмасăр тӳссе тăтăр?..

Майра хăй кăларнă укçине Илюк кĕсйине вăйпах чиксе хума тăчĕ, анчах Илюк ăна пурпĕр илмерĕ. Унтан вăл хĕрарăмăн чăматанне çĕклерĕ те ăна Атăл хĕррине тухакан Кадыков урамне çитиех ăсатса ячĕ,— майра çавăнта пурăнать-мĕн. Килне çитсен вара çав хĕрарăм Илюка тутлă кукăльпе чей ĕçтермесĕр ниепле те кăларса ямарĕ, вăйпах лартрĕ сĕтел хушшине.

— Эсĕ ӳлĕмрен те пирĕн пата кĕрсе тух, манăн санпа пĕр çулсенчи шăллăм пур, унпа туслашăр, çулла пулла кайăр, шыва кĕрĕр,— терĕ юлашкинчен çамрăк хĕрарăм.— Эс килнĕшĕн эпир яланах хавас пулăпăр!

«Мĕн тери лайăх çынсем пур иккен тĕнчере!..— шухăшларĕ Илюк ун патĕнчен тухса урампа утнă чух.— Анчах эпĕ кам-ха халь?.. Таркăн... Манăн пытанса пурăнас пулать... Çак ырă хĕрарăма та суйма тӳр килчĕ: ялтан пиччене курма килнĕ имĕш эпĕ... Мĕн пулать-ха малашне? Нимĕн те паллă мар, ним шухăшласа тупма та çук...»

## 7

Кун каçипех Илюк Шупашкар урамĕсем тăрăх ним тĕлсĕр çӳрерĕ. Çитменнине, пĕрмай асăрханса, унталла-кунталла пăхкаласа: хăйсен колхоз председателĕпе лешщ мăн уссиллĕ милиционер тĕл пулмаççĕ-и? Вĕсем ăна шырама пăрахман пулĕ-ха...

Каçалла сулăнсан, темшĕн унăн пуçĕ кашлама пуçларĕ, шăмшакĕ йывăрланса кайрĕ, ал-ура сыпписем туртма тытăнчĕç, выртас килекен пулчĕ. Хĕвел йăлăмри вăрмансем çине анма пуçласан, вăл каллех Атăл хĕррине пырса тухрĕ. Пуçĕнче унăн пĕрмай пĕр шухăш пулчĕ: «Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ, ăçта каяс? Пăрахут çине ларса таçта инçете кайма та хăрамалла...»

Çыран хĕрринчи эрешлĕ карлăк çине тайăнса пĕр хушă Атăл леш еннелле пăхса тăнă хыççăн вăл ĕнерхи пекех пристань патне анчĕ. Кунта вара çимеллисем сутса лараканскен тĕлĕпе иртнĕ чух вăл каллех ĕнер унăн пиншакне çав тери йӳнĕ хакпа илнĕ алкаллă хĕрарăма тĕл пулчĕ. Лешĕ хăй те палласа илчĕ ăна:

— Э, ывăл ача! Эс халĕ те кунтах çӳретĕн тем? Эп сана ĕнерех ларса кайнă тесе...

— Каяймарăм-ха çав,— терĕ Илюк, ун умĕнче чарăнса тăрса.

— Укçуна каллех çухатмарăн пулĕ те?

— Укçи пур-ха...

— Тен, сан каймалли тĕлĕ-вырăнĕ çук? Хăш чух ун пек те пулкалать теприсен...— Алкаллă хĕрарăм тăруках темшĕн шăппăн калаçма пуçларĕ.— Шупашкартах пурăнатăн-и эсĕ, ачам?

— Çук, ялтан килтĕм,— тĕрĕссине каларĕ Илюк.

— Тăвансем, палланă çынсем пур-и санăн кунта?

— Çук, эпĕ ăçта та пулин ĕçе вырнаçасшăнччĕ... Шырарăм та — тупаймарăм-ха...

— Иртнĕ каç ăçта вырталарăн вара?

— Ак çакăнтах, пристаньрех. Анчах çур çĕр иртсен хăваласа кăларчĕç,— тунмарĕ Илюк.

— Ак япала! — тĕлĕннĕ пек пулса, пĕççине шартах çапса илчĕ хĕрарăм.— Ĕнерех ма каламарăн эс мана ун çинчен?! Ара, хам пата илсе каяттăм сана!

— Эп пĕлмен те...

— Ыйтас пулатчĕ! Кĕçĕр те çакăнтах çывăрас тетĕн-и ĕнтĕ?

— Ăçта каяс-ха манăн?..— хурланнă сасăпа хуравларĕ Илюк.

— Э-э, ачам, юрамасть ун пек, кашни каç пристаньре выртса пурăннине асăрхасан, милицисем те тытса кайма пултараççĕ,— пӳрнипе юнанă пек туса илчĕ хĕрарăм.— Анчах милици тенисем вĕсем — çыпçанкăсемпе пĕрех, тытсан алăран часах вĕçертмеççĕ! Сыхланас пулать вĕсенчен. Куна эп сана хăвна хĕрхеннипе калатăп.

Ку сăмахсем Илюкшăн хăйне пыртан тытса чăмăртанă пекех пулчĕç. Вăл халь нимрен те ытларах милици аллине лексрен хăрать вĕт-ха! Вĕсем, тытсан, ăна тӳрех допрос тăваççĕ, телефонпа яла шăнкăравласа ун çинчен пĕтĕмпех пĕлеççĕ те, вара хăтăласси çинчен ан та шухăшла!..

— Эппин, хăв патна илсе кай эс мана, инке,— терĕ Илюк.

Çак кукăльпе икерчĕ сутакан хĕрарăм ăна чăнласах хĕрхеннĕ пек туйăнчĕ, çавăнпа та Илюк ăна халĕ хăй çинчен пĕтĕмпех каласа пама та хатĕр пулчĕ.

— Юрĕ, илсе кайăп, сана вырăн нумаях кирлĕ мар,— килĕшсе пуçĕпе сулчĕ лешĕ, темшĕн унталла-кунталла пăхса илсе.— Анчах эсĕ тепĕр сехет пек уçăлкаласа çӳре, эп çак икерчĕсене сутса пĕтерем, нумай юлмарĕ ĕнтĕ ман тавар...

Илюк, ун патĕнчен пăрăнса, шыв хĕррипе кăштах тăвалла кайрĕ те Атăл тăрăх моторлă сенкер кимĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртнă пек каллĕ-маллĕ ыткăнса çӳренине сăнаса тăчĕ. Калама çук хытă вăркăнаççĕ-çке лешсем, тĕлĕнсе каймалла! Шыва çав тери хăватлăн çурса пырса, темĕн çӳллĕш хумсем тăваççĕ, вăхăчĕ-вăхăчĕпе çав хумсем хушшинче хăйсем те курăнми пулаççĕ.

«Эх, çавăн пек кимĕпе ярăнса курасчĕ пĕрре!» — ăмсанса илчĕ Илюк хăй ăшĕнче.

Шыв çинче кайăксем пек ыткăнса çӳресен-çӳресен, кимĕсем пĕрин хыççăн тепри çыран хĕррине таврăнчĕç. Вĕсем çинчен мăн çынсем мар, Илюк пекех шкул ачисем сике-сике анчĕç, — кимĕсемпе çав тери хăвăрт çӳрени пуринне те кăмăлĕсене çĕклентерсе янă курăнать,— хавассăн, савăнăçлăн калаçаççĕ, ахăлтатса кулаççĕ...

«Епле телейлĕ вĕсем, мĕн тери телейлĕ! Нимĕнле хуйхă-суйхă та çук вĕсен!..» — ассăн сывласа илчĕ те Илюк кукăль сутакан хĕрарăм патне таврăнчĕ. Лешĕ хăйĕн хатĕр-хĕтĕрĕсене пуçтарса тăрать-мĕн. Илюка курсан, вăл кăмăллăн кулса илнĕ пек турĕ.

— Эп сана килмест те пуль тесеттĕм... Ме-ха, çакна йăтса пыр эсĕ,— Илюка пуш карçинкка тыттарчĕ вăл.

Шыв хĕррипе тăвалла кайса, вĕсем больница тĕлĕнчи вăрăм пусма тăрăх хăпарчĕç, унтан, сылтăмалла пăрăнса, кукăр-макăр çырмана анчĕç, ик-виçĕ хутчен питĕ ансăр тăкăрлăксене пăрăнчĕç, унтан татах тепĕр тарăн çырмана анса тăвалла утрĕç. Кунти нумай çуртсем ялтинчен те пĕчĕкрех иккен, хăшĕсене хăмасенчен çеç çапкаласа тунă. Самаях тĕттĕмленнĕ пулин те, Илюк çурт

çамкисем, хапха юписем çине «Трубный овраг» тесе çырса çапнисене вулама пултарчĕ.

«Кунта пурăнма та хăрамалла пуль...» — шухăшларĕ вăл, хĕрарăм хыççăн ансăр тротуар тăрăх утса.

Кайсан-кайсан, вĕсем пĕчĕкçеç калинккерен кĕрсе тăчĕç. Кил хушшинче лутра кăна вăрăмрах пӳрт, унăн малти пайĕ чӳречисем таранах çĕр ăшне путса ларнă, çине витнĕ хăмисем те шалалла авăнса кĕнĕ. Чăн та, кун пек япăх çурт Илюксен ялĕнче те çук çав! Мĕнле пурăнаççĕ пуль кунта?

Хĕрарăм çенĕк алăкĕ çинчи çăрине уçрĕ те, пуçне пĕксе, шалалла кĕрсе кайрĕ, Илюк та унтан юлмарĕ. Пӳртре пĕртен-пĕр пĕчĕк лампочка çунать, вăл та шăнасем ларнипе вараланса пĕтнĕ те, унăн çути краççын лампинчен те вăйсăртарах.

— Çитрĕмĕр,— терĕ те хĕрарăм, аллинчи япалисене алăк хыçне пăрахса, малалла утрĕ.

— Эс пĕчченех пурăнатăн-им? Сан никам та çук-и?— ыйтрĕ Илюк.

— Ытла пĕчченех темелле мар. Йăмăк пур. Фабрикăра ĕçлет, анчах халĕ курортра-ха вăл, канать, унсăр пуçне тата хваттирантсем пулкалаççĕ хăш чух,— терĕ ăна хирĕç хĕрарăм.— Килсем кунталла, мĕн эсĕ алăк хăлăпĕнчен кăкарнă пек тăратăн?

— Манăн пĕр курка шыв ĕçесчĕ,— пырне хыпашласа илчĕ Илюк, сĕтел пуçĕнчи хыççăр пукан çине ларса.

— Çиессӳ килмест-и?

— Çук, ĕçес килет кăна, темшĕн ăш çунать-ха, пыр та типсе ларчĕ. Пуç та ыратнă пек...

— Ансăртран чирлесе каймарăн-и эсĕ?

— Эп нихçан та чирлемен, уншăн хăрамастăп,— терĕ Илюк, анчах çав вăхăтрах хăйĕн аллисем чĕтренине, çурăмĕ çӳçенсе илнине туйрĕ.

Хĕрарăм витререн сăра кружкипе ăсса панă шыва вăл пĕр сывламасăр ĕçсе ячĕ те татах ыйтрĕ. Хĕрарăм шыв татах ăсса пачĕ.

— Ĕшеннĕ курăнать эсĕ,— терĕ хĕрарăм, ун çине хĕрхеннĕ пекрех пăхса.— Ав, кăмака хыçĕнче вырăн пур, кĕрсе вырт çавăнта, кирлĕ пулсан — витĕнмелли те патĕнчех. Манăн йăпăртлăха кӳршĕсем патне кайса килмелли пур-ха. Эп сана тул енчен питĕрсех хăварăп...

— Спаççипă сана, инке...

Илюк хăйне кăтартса панă çĕре кĕрсе выртрĕ те, ун пĕтĕм кĕлетки лĕнчĕрех кайрĕ. Пĕр вăй та юлман иккен. Сывлама та йывăр. Тăнлавсем тĕлĕнчи юн тымарĕ-

сем талт та талт сикеççĕ. Чĕри те питĕ хытă тапать. Çамки çине тар тухрĕ...

«Мĕне пĕлтерет-ши ку? Нивушлĕ чăнах та чирлетĕп пуль эпĕ? — куçĕсене хупса шухăшлама тытăнчĕ Илюк. — Çук, çук, чирлеме юрамасть манăн. Чирлесен пĕтрĕм вара эпĕ. Юрать-ха кĕçĕр çак хĕрарăм хăй патне илсе килчĕ, тавтапуçах ăна... Унсăрăн ăçта каяттăм-ха эпĕ? Пурах иккен çĕр çинче ырă чунлă çынсем. Уншăн эпĕ нихçан курман-палламан çын вĕт-ха. Хĕрхеннипе хăй чĕнсе илсе килчĕ мана...»

...Анчах Илюкăн çак шухăшĕсем пĕртте тĕрĕс пулман. Ырă кăмăлпа, нушана лекнĕ пĕччен ачана пулăшас тесе илсе пыман ăна Атăл хĕрринче сутă туса ларакан алкаллă хĕрарăм. Пачах урăхла, çав тери тискер шухăшсем пулнă унăн Илюк пирки.

Нумаях та выртмарĕ Илюк — унăн каллех ĕçесси килчĕ, вĕри чĕлхи çăвар маччи çумне çыпăçса ларма пуçларĕ. Вăл ерипен тăчĕ те витререн тата тепĕр курка шыв ăсса лăнкăртаттарчĕ. Вырăн çине каялла пынă чух вара унăн чĕркуççисем чутах авăнса анатчĕç, пуçĕ çаврăнса кайнă пек пулчĕ, ăшĕ пăтранчĕ, куçĕсем хуралсах килчĕç.

Çурăм çине выртса куçĕсене хупсанах, ăна хăйĕн амăшĕ, çĕр çинчи пур çынсенчен те ытларах юратнă амăшĕ, аса килчĕ...

«Мĕн тăвать-ши вăл çак самантра? Эп сасартăк çухалнăшăн хуйхăрсах вилет пуль ĕнтĕ... Леш сар шуйттанĕн чунĕ тухрех пулсан, уншăн айăплама тытăнчĕç пуль-ха ăна... Анчах айăпли анне мар-çке, айăпли — эпĕ, эпĕ! Матви ман атте портретне персе аркатсан, эпĕ пырса хырăмĕнчен чышрăм ăна, çавăн пирки кăмака хысакне пырса çапăнчĕ вăл...

Ах, анне, анне! Ăçтан йăтăнса анчĕ ку хурлăх пирĕн пуç çине?.. Питĕ лайăх пурăнаттăмăр-çке эпир санпа, эс колхозра чип-чипер ĕçлеттĕн, эпĕ те шкулта начарах вĕренместĕм, сана та пулăшаттăм, ĕçме-çиме те пурччĕ пирĕн... Кăçал çичĕ класс пĕтереттĕм, унтан тракториста е комбайнера вĕренме каяс ĕмĕт пурччĕ, вара тата лайăхланатчĕ пирĕн пурнăç... Пĕтĕмпех çав кукша эсрел пырса кĕни пĕтерчĕ, çав пулман пулсанах, нимĕнле хурлăх та курмастăмăр...»

Çавăн пек пăлхануллăн шухăшласа выртнă çĕртех Илюк темле тĕпсĕр те тĕттĕм çырмана анса кайнă пек пулчĕ...

Унтан ача аташма тытăнчĕ. Чирлĕскер, вăл ытла та

хăрушă тĕлĕксем курчĕ пулмалла çав. Йĕп-йĕпе тара ÿксе хашкаса выртаканскер, Илюк вăхăтран вăхăта карт! сиксе кăшкăра-кăшкăра ячĕ. Таçта çÿренĕ хыççăн çур çĕр çитеспе тин темле пуклак кĕлеткеллĕ çамрăк хĕрарăмпа тавăрăннă кил хуçи — Илюка хĕрхеннĕ пек пулса хăй патне илсе килни — вăл аташнă чух кăшкăрнă уйрăм сăмахсене пит лайăх астуса юлчĕ.

«Анне! Анне! Пытан часрах, ав, милици килет! Асту, асту, вăл сана çĕçĕпе!..— аташрĕ Илюк.— Мĕншĕн киле кĕртрĕн эс ăна? Хура Хветле каларĕ... Ан тивĕр мана, эп вĕлермен!.. Ахх, анне... Ан макăр-ха, ан макăр тетĕп! Тармасан хупаççĕ-çке мана, сакăр çул параççĕ, тĕрмерех çĕртеççĕ... Ман ирĕкре пурăнас килет! Эс... эс ху та тухса тар, ан пурăн çав шуйттанпа, пусать вăл сана... Ав, каллех çĕçĕ тытрĕ... Ахх...»

Кил хуçипе ют хĕрарăм ача çавăн пек аташса выртнине шăппăн, ним чĕнмесĕр итлесе тăчĕç-тăчĕç те пĕрпĕрин çине тĕлĕнерех пăхса илчĕç. Унтан кил хуçи, хăрах куçне хĕссе, пуçĕпе ача еннелле сулчĕ.

— Ăнлантăн-и?

Ют хĕрарăм та пуçĕпе сулса илчĕ.

— Килĕнче темскер пулнă вĕсен... Амăшĕпе иккĕшĕ такама тирпейлесе хунă пулмалла. Ку вара хăйне тытасран тухса тарнă курăнать, çавăнпа хулара ним тĕллипаллисĕр çапкаланса çÿрет. Выçса çитнипе ĕнер çийĕнчи пиншакне те мана сутрĕ. Ку питĕ лайăх пулчĕ-ха.

— Мĕн лайăх пулчĕ? — ăнланаймарĕ кил хуçин юлташĕ.

— Ара, ун çинчен кăштах та пулин пĕлни! Халь эпир ăна, милицие тытса парассипе хăратсах, хамăр майлă çавăрма пултаратпăр. Халь вăл пĕтĕмпех пирĕн алăра.

Кил хуçи аллине чышкăласа кăтартрĕ.

— Ак çакăнта вăл халь пирĕн! Мĕн хушатпăр — çавна тăвакан пулать. Ним турткаланмасăр, пире хирĕç пĕр сăмах чĕнеймесĕр! — хĕрарăм куçĕсем сиввĕн çуталса илчĕç.

— Анчах та ăна тÿрех «ĕçе» яма çук вĕт-ха, малтан хăнăхтарас пулать,— терĕ пĕчĕк хĕрарăмĕ.

— Артист наччасрах вĕрентет, ан кулян! Ун аллине упа лексен, ăна та ик кунтанах ташлаттарĕ вăл. Çамрăксене вĕрентес енчен Матрос та унтан юлсах каймасть... Амăрткайăксем мар-и!

— Халь ăçта вĕсем, пĕлместĕн-и?

— Тахăш районта ĕçлеççĕ пулас-ха.— Кил хуçи кал-

лех хăрах куçне хĕссе илчĕ.— Тен, кĕçĕрсем килсе çитеç-çĕ-и. Çавăнпа хатĕрлерĕм-ха мĕн кирлине. Сана та çавăнпах чĕнтĕм. Манька та килет. Хĕрарăмсăр ĕçкĕ-çикĕ веççолăй пулмасть вăл, хăвах пĕлетĕн...

Кил хуçи пасара çӳремелли сăран сумкăран сĕтел çине çур литр кăларса лартрĕ те çыртмаллисем кăларса хучĕ.

— Халлĕхе пĕрер лампадка хурар-ха, Катюк, ывăнтăм эп паян...

Енчен те Илюк çак калаçăва илтнĕ пулсан, Атăл хĕрринче тĕл пулнă пирус туртакан хĕрарăм малашне Илюка вăрă тăвас ĕмĕтпе илсе килнине пĕлнĕ пулсан, вăл ун патĕнчен тăвата уран упаленсе те пулин тухса тарнă пулĕччĕ, çав хĕрарăм ăна тытса чарма тăрас пулсан — унпа пĕр тумлам вăй юлмиччен çапăçĕччĕ, шăлпа кăшлĕччĕ, çапах та хăйне хăрушлăхран хăтарнă пулĕччĕ! Анчах Илюк нимĕн те илтмерĕ, нимĕн те пĕлмерĕ çав, пĕçертсе пăрахнипе лачкам шыв пулса, йывăррăн сывласа, типсе кайнă тутисене çула-çула, хăрушă тĕлĕксем курса аташса выртрĕ...

Икшер-виçшер черкке ĕçнĕ хыççăн самаях хĕрсен, кил хуçипе унăн юлташĕ, Илюк çаплах аташма чарăнманнине илтсе, татах ун патне пычĕç.

— Аптранă ку, Малани, мĕн те пулин тăвас пулать пуль,— терĕ Катюк.— Вилсе кайсан, хăвнах кансĕр пулма пултарать, такам шуйттан ачишĕнех айăпласа тăкĕç тата. Эсĕ вăл камне те пĕлместĕн вĕт-ха...

— Халех эп ăна лекарццă ĕçтеретĕп,— терĕ вара Малани,— çуркунне хама çавăн пек пĕçертсе пăрахсан илни пурччĕ-ха манăн... Нишашто вĕлерместпĕр, мĕншĕн тесн вăл пире питĕ кирлĕ пулать! «Ĕçлет-ха» вăл пирĕншĕн!

Ӳсĕрĕлме пуçланă икĕ хĕрарăм ним пĕлмесĕр выртакан ачана тăратса лартрĕç те темле порошоксене стаканри шывпа хутăштарса çăварĕнчен ячĕç, унтан пуçĕ çине йĕпе алшăлли хучĕç. Тепĕр вунă минутран Илюк самаях лăпланса çывăрса кайрĕ, анчах ир енне ăна каллех хăрушă тĕлĕксем курăнма пуçларĕç. Вĕсен килĕнче туй шавлать, чарăнма пĕлмесĕр купăс нăйкăшать, ӳсĕр халăх тĕпĕртетет... Акă амăшĕ, урай варрине тухса тăрса, вырăсла такмаксем юрласа ташлама тапратрĕ...

— Анне, мĕн хăтланатăн эсĕ?! — кăшкăрса ячĕ те Илюк вăранса тăна кĕнĕ пек пулчĕ. Мĕн ку? Тĕлĕкре-и е тĕлĕкре мар? Пӳртре чăнах та купăс калаççĕ, темле хĕрарăм хăлхана çурса ямалла çухăрса юрлать, такам-

сем ташлаççĕ... Ăна-кăна ним чухламасăрах, Илюк вырăн çинчен сиксе тăчĕ те кăмака хыçĕнчен тухрĕ. Кĕрхи тĕтре пек çăра чĕлĕм тĕтĕмĕ витĕр ăна сĕтел хушшинче хăйне илсе килнĕ алкаллă хĕрарăм курăнса кайрĕ, унпа юнашар темĕнле палламан арçынсем, хĕрарăмсем... Сĕтел çинче темиçе эрех кĕленчи, стакансем, турилккесем... Кĕске çанăллă кăвак кĕпине йӳле янă, вăрăм сарă çӳçĕсем сапаланса кайнă йĕкĕт урине тапса купăс калать, тепĕр çамрăк арçынпа темле пуклак хĕрарăм каçса кайсах ташлаççĕ, тахăшĕсем алă çупаççĕ...

Илюк, йывăррăн сывласа, кăмака хысакĕнчен тытса пăхса тăчĕ. Мĕнле çынсем кусем? Туй тăваççĕ-и? Акă, пуклак хĕрарăм ун умĕпе тĕпĕртетсе иртрĕ, ун хыççăн матроссен йăрăм-йăрăм кĕпине тăхăннă хура арçын куклене-куклене ташласа пычĕ. Унччен те пулмарĕ, сĕтел хушшинчен кил хуçи сиксе тухса çăварĕнчи пирусне пăрахмасăрах ташлама тытăнчĕ...

Илюка никам та асăрхамарĕ пулас. Е юриех ун çине çаврăнса та пăхас темерĕç? Темиçе минут хушши пăхса тăчĕ вăл çак ӳсĕр çынсем акăш-макăш тĕпĕртетнине. Унтан сасартăк унăн пуçĕ çаврăнса кайрĕ, вăйĕ пĕтсе килчĕ те, хăй сисмесĕрех урайне тăсăлса ӳкрĕ. Тинех асăрхарĕç вара ăна. Кил хуçипе пуклак хĕрарăм — пĕри хул айĕнчен, тепри урисенчен йăтрĕç те кăмака хыçĕнчи вырăн çине кĕртсе пăрахрĕç.

Никам та хĕрхенмерĕ ăна, никам та пырса пăхмарĕ ун çине. Самантран каллех пӳртре купăс çухăрма тытăнчĕ, ӳсĕр çынсем тăваттăн-пиллĕкĕн пĕр харăс сикнипе кантăксем чĕтресе тăчĕç.

Анчах çаксене Илюк халь нимĕн чухлĕ те туймарĕ...

## 8

Пĕрремĕш хут тăна кĕрсе куçĕсене уçсан, вăл хăй шап-шур пӳлĕмре выртнине курчĕ. Пĕтĕмпех шурă: маччи те, стенисем те, пуç айĕнчи минтерĕ те, мăйĕ таранах туртса витнĕ кăпăр-кăпăр простынĕ те.

«Ăçта лекнĕ эп капла?» — хăрарах шухăшласа илчĕ Илюк.

Унтан вăл хуллен кăна чавса çине çĕкленчĕ те йĕри-тавралла пăхкаласа илчĕ. Шап-шур çутă пӳлĕмре тата виçĕ койка иккен, вĕсем çинче те çынсем выртаççĕ. Нихăшĕ те чĕнмест, пурте çывăраççĕ пулмалла, пĕри кăна вăхăтран вăхăта йынăша-йынăша илет.

«Больница ку...— тавçӑрса илчӗ Илюк.— Анчах та мӗнле лекнӗ эп кунта, кам илсе килнӗ мана?..»

Вӑл юлашки кунсенче мӗн-мӗн пулнине йӗркипе аса илме тӑрӑшрӗ. Килтен тарса килнӗ хыççӑн хула тӑрӑх çӳренӗ, хӑйне тытасран столовӑйӗнчен тухса вӑркӑннӑ... Атӑл хӗрри... кукӑль сутакан хӗрарӑм... Çӗрле пристань çинчен хӑваласа кӑлараççӗ, вӑл утӑ купи çинче, брезент айӗнче, çывӑрать... Унтан ачаллӑ çамрӑк хӗрарӑмӑн чӑматанне вӑрласа таракан арçын ача хыççӑн чупать... Каç пуласпа алкаллӑ хӗрарӑмпа пӗрле ун патне каять, ӑна кӑмака хыçне вырттараççӗ... Такам купӑс калать, ӳсӗр çынсем ташлаççӗ... Кайран мӗн пулнӑ? Çук, Илюк урӑх нимӗн те пачах та астумасть, хуть те вӗлер!..

Чылай выртрӗ вӑл тата мӗн те пулин аса илме тӑрӑшса, анчах та ку кӑлӑхах пулчӗ. Пуçа урӑх нимӗн те пырса кӗмерӗ. Унтан унӑн шухӑшӗсем кил çине, амӑшӗ çине куçрӗç. Мӗн пулса иртнӗ-ши ӗнтӗ унта вӑл тухса тарнӑ хыççӑн? Амӑшӗ еплерех асапланать пуль! Тен, ӑна тытса та хупнӑ-и?..

Çав вӑхӑтра хуллен кӑна чӗриклетсе алӑк уçӑлчӗ те, палатӑна шурӑ халатлӑ ватӑрах хӗрарӑм кӗчӗ. Çемçе пушмакӗпе ним сассӑр утса, вӑл чирлисем çине пӑха-пӑха илчӗ, унтан Илюк умне пырса чарӑнчӗ. Илюк ун çине тӗлӗннӗ пек пӑхса выртрӗ.

— Э, чунӑм, тинех çут тӗнче çине пӑхакан пултӑн-и? — терӗ хӗрарӑм йӑвашшӑн.— Ай-ай, хытӑ хӑратрӑн эс пире...

— Епле хӑратрӑм? — ӑнланаймасӑр ыйтрӗ Илюк.

— Ара, сана ним пӗлми илсе килчӗç вӗт! Тӑватӑ кун ытла тӑна кӗмерӗн, кунӗн-çӗрӗн лартӑмӑр сан пуç вӗçӗнче...

— Мӗн пулнӑ вара мана?

— Ӳпкӳ ик енчен те шыçма пуçланӑ-çке санӑн. Воспалени легких пулнӑ эппин. Таçта хытӑ шӑннӑ эсӗ.

— Шӑннӑ та пуль çав,— терӗ Илюк, хӑй Атӑл хӗрринче кӗпе вӗççӗн çывӑрнине аса илсе.

Хӗрарӑм аллинчи шурӑ кипкепе Илюк кравачӗ çумӗнчи тумбочкӑна шӑлкаласа илчӗ те хыççӑр пукан çине ларчӗ. Унӑн майӗпе сывалма пуçланӑ ача патӗнчен тухса каяс килмерӗ пулмалла.

— Аннӳ икӗ хутчен те килсе кайрӗ санӑн, анчах эсӗ ним пӗлми выртнӑ пирки эпир ӑна сан пата кӗртмерӗмӗр, юрамасть,— терӗ вӑл унтан.

— Анне?! Мӗнле анне? — вӑйӗ çук пулсан та тӑрукках чавсисем çине çӗкленчӗ Илюк. Вӑл çав самантрах

кăвакарса кайрĕ, чĕри мăлатукпа шакканă пек тапма пуçларĕ.

— Мĕнле аннӳ пултăр, хăвăн ĕнтĕ! — ача пăлханса кайнине сисмесĕрех малалла каларĕ хĕрарăм.— Акă, çимеллисем те хăварчĕ сан валли...— Вăл тумбочка алăкне уçса пăхрĕ.— Пĕчĕк кукăльсем илсе килнĕ, икерчĕсем, сĕт... Типсе те кайрĕç пуль ĕнтĕ халиччен, сĕчĕ те йӳçрĕ пуль...

— Епле шыраса тупнă-ха вăл мана? — куçĕсене часчас мăчлаттарса, ытларах та ытларах пăлханса ыйтрĕ Илюк.— Килтен хăçан килнĕ вăл? Халь вара мана курмасăрах таврăнса кайрĕ-ши? Ах, кайман пултăрччĕ-çке! Курасчĕ ăна!..

— Больницăра çынна тупма йывăр мар-ха, çыннăн ячĕпе хушаматне çеç каламалла,— малтанхи пекех лăпкăн калаçса ларчĕ ватă санитарка.— Пĕрре килнĕскер, курмасăрах каймасть пулĕ-ха, уншăн ан пăшăрхан. Тен, паянах та килсе пăхĕ, атту-тăк ыран ирсенче çитĕ...

Ватă хĕрарăм тухса кайсан, Илюк нумайччен лăпланаймарĕ. Амăшĕ килнĕ вĕт-ха ун патне, пĕртен-пĕр юратнă амăшĕ!.. Мĕн чухлĕ хуйхăрнă пуль вăл ун пирки çак юлашки кунсенче, мăнтарăн! Çĕр çывăрмасăр шухăшларĕ пуль, куççулĕ тăкман кун та пулмарĕ ĕнтĕ Илюк çухалнă хыççăн... Çапах та килсе шыраса тупнă-ха вăл ăна, больницăна икĕ хут килчĕ, тет. Камран пĕлнĕ-ши эп кунта выртнине? Тен, Илюк чирли çинчен больницăран çырса пĕлтернĕ? Тепĕр тесен, çырса яма... адрес та пулман-çке унăн? Питĕ тĕлĕнмелле! Ах, пĕрне-пĕри тĕл пулса калаçмасăр киле таврăннă ан пултăрах!..

Кун каçа сестрасем, темиçе хут та Илюк патне пырса, ăна уколсем турĕç, тĕрлĕ эмел ĕçтерчĕç. Кашнинчех Илюк вĕсенчен:

— Ман пата никам та килмен-и? Пĕлместĕр-и? — тесе ыйтрĕ.

— Курăнмасть, илтĕнмест,— терĕç лешсем.

Çав тери пăлханса кайнăскер, Илюк çĕрле çывăрнă чух та пĕрмай амăшне курчĕ. Вăл паçăр санитарка ларнă пукан çинче ларать пек. Хуйхăрнипе хăй начарланса, шуралса кайнă. Илюк çине пăхса шăппăн макăрать... Анчах хăй нимĕн те калаçмасть: пĕр сăмах та чĕнмест. Пĕрмай макăрать...

Темиçе хут та шарт! сиксе вăрана-вăрана кайрĕ Илюк. Кашнинчех тахçанччен çывăрса каяймасăр выртрĕ. Çавна сиссе, çĕрлехи сестра ăна юрпех çывăрататакан эмел пырса ĕçтерчĕ.

Тепĕр ирхине вара Илюк хăйĕн амăшĕ пырса кĕрессе ниçта кайса кĕрейми кĕтрĕ.

— Ман анне халь те килмен-и унта? Тен, кĕтсе ларать, пăхăр-ха! — ыйтрĕ палатăна пыракан санитаркăсенчен.

— Çук-ха, ачам, çук... Килет пулĕ-ха, кĕт пăртак! — лăплантарчĕç ăна ялан.

Ирхи апат хыççăн обход пулчĕ — икĕ тухтăрпа сестрасем кашни чирлĕ çынна пăхса, тĕрĕслесе тухрĕç. Çиччĕмĕш палатăра вĕсем пуринчен ытла Илюк патĕнче чарăнса тăчĕç. Ăна тухтăрсем иккĕшĕ те тĕплĕн итлерĕç, хăйне хăй мĕнлерех туйни çинчен ыйтса пĕлчĕç.

— Нимех те ыратмасть, вăй кăна çук,— терĕ Илюк.

— Маттур эсĕ, часах сывалса киле каятăн акă,— пуçĕнчен ачашласа илчĕ ăна хĕрарăм тухтăр.

Илюка ку савăнтарчĕ, анчах тухтăрсем тухса кайсанах, амăшĕ çинчен аса илсе, вăл калех пăшăрханма тытăнчĕ. Килет-ши, килмест-ши ĕнтĕ? Кăнтăрлахи апат та иртсе кайрĕ, чирлисене лăпланса выртса çывăрма хушрĕç. Паллах, ку вăхăтра больницăна никама та кĕртмеççĕ. Илюк çывăрмарĕ, кĕтрĕ...

Пилĕк сехетре, коридор тăрăх çынсем утни илтĕнме пуçласан, палатăна ĕнерхи ватă санитарка пырса кĕчĕ.

— Ну, ывăлăм, савăн! — терĕ вăл Илюка кăмăллăн.— Килчĕ сан аннŭ. Халех ăна халат тупса параççĕ те — кĕрет...

Çапла каларĕ те хăй, койкăсем хушшинче хăвăрт шăлкаласа, каялла тухса кайрĕ. Илюк тўсеймесĕр тăрса ларчĕ, ларма меллĕрех пултăр тесе, чĕркуççисене ыталаса тытрĕ.

Ак ĕнтĕ, халех алăк уçăлать те...

Чăнах та, ик минут та иртмерĕ пуль, алăк уçăлчĕ те — палатăна хура пиншак çинчен шурă халат тăхăннă, пĕр аллине пысăках мар сумка тытнă хĕрарăм кĕрсе тăчĕ, анчах вăл пĕртте Илюк амăшĕ пулмарĕ...

Пĕтĕм чунтан пăлханса пĕр талăк ытла кĕтнĕ амăшĕ вырăнне Илюк хайхи пристаньре кукăльпе сутă тăвакан алкаллă хĕрарăма курчĕ. Лешне, Илюк чирлесе ўкес умĕн ăна хăйĕн хваттерне илсе кайнине, çĕрле ўсĕр çынсемпе пĕрле çăварне пирус хыпсах ташлаканнине!

Илюка тăруках йĕксў ернĕ пек пулчĕ, унăн пырне темле чăмăркка пырса ларчĕ... «Мĕн тума килнĕ ку хĕрарăм? Мĕн ĕç пур унăн манпа? Кам вăл маншăн? Пĕр каçлăх хваттере пырса кĕни ниме те пĕлтермест вĕт-ха, уншăн çавах укçа тўлемелле?..»

Анчах Илюк çапла шухăшласа илнĕ вăхăтра алкаллă хĕрарăм, хăвăрт кăна малалла иртсе, пукан çине ларчĕ те, ачана ик хулпуççинчен тытса, кăмăллăн пăчăртанçи турĕ.

— Ах, мошельник! Чун кĕчĕ пулать? Сăпаççипах çӳлти турра...— Вăл, хурланнă пек пулса, типĕ куçĕсене тутăр вĕçĕпе шăлкаласа илчĕ.— Мĕн чухлĕ хуйхăртăм пуль, мĕн чухлĕ тăрăшрăм пуль саншăн, шучĕ те çук çав! Эс чирлесе ӳксенех, «скорый помоща» звонить турăм, вĕсен машини çĕмĕрĕлсе кайнă терĕç, вара çĕр хутах такси тытас тесе чупрăм, усси пулмарĕ, унтан, аптраса çитнипе, пĕр палланă шохвера вырăн çинченех тăратса тухрăм... Тархасшăн, шăллăм вилет тетĕп. Çур литрлăх памалла пулчĕ мура! Ыйтнă пулсан, литрĕпех параттăм! Мĕн тăвас тетĕн, шалккă пулчĕ сана, вилмех тапратрăн та, ара...

— Эппин, больницăна мана эсĕ леçнĕ?— ыйтрĕ Илюк.

— Эпĕ çав, эпĕ, кам пултăр-ха тата?

— Спаççипă сана, инке...

— Вăл тарам-ха! — Малани вăшт кăна палатăри койкăсем çине пăхса илчĕ. Алăк патĕнчи койка çинче хутран-ситрен йынăшса илекен çынсăр пуçне урăх никам та пулман пулин те, вăл, Илюк çывăхнерех куçса ларса, питĕ вăрттăн пăшăлтатма тытăнчĕ: — Илсе килесси чиперех илсе килтĕм сана, анчах хам çав тери хăрарăм...

— Мĕншĕн? — ăнланаймарĕ Илюк.

— Ара, пĕлетĕп-çке-ха...— Хĕрарăм тата шăппăнтарах калаçма пуçларĕ.— Эс ялтан мĕншĕн тарса килнине те, сана милицисем шыранине те пĕлетĕп! Вĕсем больницăра та тупма пултараççĕ... Çавăнпа та сана кунта хамăн хушаматпа Хведоров тесе çыртартăм. Халь уш вĕсем сана виçĕ çул шырасан та тупаймаççĕ, шанчăклă пытартăм!

— Эс... эс ман çинчен ăçтан пĕлетĕн вара? — тӳрех тарласа кайса, чĕтрекен сасăпа ыйтрĕ Илюк. Çак вырăсла-чăвашла хĕрарăм хăй пирки пĕлнисем çинчен каласан, Илюкăн пĕр вăхăтлăха чĕри те тапма чарăнчĕ пулас. Чăнах та, ăçтан, епле майпа пĕлме пултарнă-ха вăл Илюк çинчен?!

— Пĕлетĕп çав, пĕтĕмпех пĕлетĕп, ачам...— кулнă пек туса пуçĕпе сулчĕ хĕрарăм. Унтан çавăнтах Илюка хулпуççинчен лăпкаса илчĕ.— Анчах эсĕ ан хăра, эп сана ĕмĕрне те сутассăм çук, ун йышши çын мар эпĕ, сăмах тытма пĕлетĕп. Хам та пурнăçра чылай курка-

ланă... Эсĕ халь ман ача пекех ĕнтĕ, кунтисем те сана ман ывăл тесе шутлаççĕ. Ку питĕ аван-ха вăл, шутлаччăрах. Больницăран тухсан сана каллех хам пата илсе каятăп-ха. Пурăн пĕр хуша, кайран-малтан мĕн тăвасси курăнĕ унта...

Хĕрарăм хăйĕн сумкинчен çимеллисем кăларма тытăнчĕ, хăй çаплах пăшăлтатрĕ, пăшăлтатрĕ... Анчах вăл калаçнисем халĕ ача хăлхине кĕмерĕç те темелле. Илюк хăйĕн амăшне курма ĕмĕтленнĕччĕ-çке, ăна хăй çинчен пĕтĕмпех каласа парасшăнччĕ, килти ĕçсем çинчен ыйтса пĕлесшĕнччĕ — ун вырăнне çак çичĕ ют хĕрарăм килсе кĕчĕ! Тӳрех хăратса пăрахрĕ тата: «Эп сан çинчен пĕтĕмпех пĕлетĕп, килтен мĕншĕн тухса тарнине те, милицисем шыранине те...» Тин ĕнтĕ Илюк пĕр самантлăха та лăпкă пулма пултарас çук, мĕншĕн тесен ун çинчен пĕлеççĕ, тыттарса та ярĕç, тен... Кам пĕлет, темле çын-ха вăл, çак хĕрарăм. Тен, ăна юриех Илюка тĕрĕслесе тăма янă?..

...Чăнах та, кам, мĕнле çын пулнă-ха çак Малани тенĕскер? Питĕ путсĕр, вăрăсемпе çыхланса кайнăскер пулнă вăл. Темиçе çул каялла спекуляципе хăтланнăшăн тĕрмере ларнă, унтан таврăнсан, пĕр-пĕр фабрикăна, завода е стройкăна ĕçе вырнаçса йĕркеллĕ пурăнас вырăнне пасарта çынсем сутма паракан кивĕ ăпăр-тапăрсене сутса тăнă, çав вăхăтрах пирĕн хулана таçтан урăх çĕртен килсе тухнă икĕ вăрă-рецидивистпа паллашнă та вĕсем унта-кунта вăрланă япаласене вăрттăн «вырнаçтарма» тытăннă. Анчах ытла ним ĕçлемесĕр, сăвăсла пурăнакан çын пек курăнасран (ун пеккисене халь хулара усрамаççĕ-çке...) вăл хулари пĕр столовăйĕнче ĕçленçи тунă — унта пĕçерекен вĕри кукăль-икерчĕсене урама илсе тухса сутнă. Çуллахи вăхăтра вăл яланах Атăл хĕрринче тăнă. Çакăн пек «лоточницăра» ĕçлени уншăн хăйне майлă вăрттăнлăх пулнă. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе чире персе, вăл ĕçе тухман, хăй çав хушăра вăрăсем хушнипе аякри вырăнсене «командировкăсене» кайса килнĕ...

...Унăн ĕçĕ кунпа пĕтмен-ха. Пурăна киле Матроспа Артист хушнипе (унăн тусĕсене вăрăсен «тĕнчинче» çавăн пек чĕннĕ) Малани вĕсене пулăшакансем тупса пама тытăннă. Çав «помощниксем» яланах çамрăксем, киревсĕр сăлтавсене пула пăсăлма пуçланăскерсем, пулнă. Çамрăксене вăрăсем тĕрлĕ майпа илĕртсе, эрех ĕçтерсе, укça парса хăйсем майлă çавăрнă та кайран вара хăрата-хăрата «ĕçлеттернĕ», урăхла каласан — çаратма илсе кайнă. Лавкка, киоск е хваттер çаратмалла пулсан,

Матроспа Артист хăйсем шала кĕмен, уçса панă çеç, шала хăйсен помощникĕсене кĕртсе янă, кĕтмен çĕртен хăрушлăх сиксе тухсан вара хăйсем пăрахса тарнă, лекекенĕсем — çамрăксем пулнă.

Икĕ çул хушшинче çапла майпа вĕсем темиçе çамрăка пĕтерсе хунă. Маланин хăйĕн йăмăкĕ те вĕсем пиркиех тĕрмере ларнă. Следствинче, судра çамрăксем Матроспа Артист çинчен нимĕн те каламан, ма тесессĕн лешсем вĕсене малтанах çав тери хытă юнаса асăрхаттарнă:

— Лекес-тăвас пулсассăн, айăпне пĕтĕмпех хăвăр çине илетĕр. Никама та курман эсир, никама та палламастăр! Пĕрре те пулин пирĕн ята асăнсан — малтанах пĕлсе тăрăр — вĕлеретпĕр, ниçта та тарса хăтăлаймастăр! Пирĕн хуть те ăçта хамăрăн çынсем пур — ирĕкре те, тĕрмере те. Çĕр айĕнчен чаваласа кăларатпăр та — пурпĕр амба тăватпăр!..

Халĕ ĕнтĕ Илюка та çавăн пек шăпа кĕтнĕ. Малани ăна вăрăсен аллине парас тесех илсе кайнă хăй патне. Больницăна та çавăнпах çÿренĕ, сывалсан вĕçертсе ярас мар тенĕ. Чирленипе аташса выртнă чух Илюк хăй çинчен каласа пани пушшех аван пулнă уншăн: Илюк туртăнкаласа тăрас пулсан, Маланипе унăн тусĕсем халĕ ĕнтĕ тем тĕрлĕ хăратсах итлеттерме пултарнă! Анчах Илюк кун çинчен халлĕхе нимĕн те пĕлмен-ха, пĕлме те пултарайман. Малани хăйпе ытла та «кăмăллă» пулни çеç тĕлĕнтернĕ ăна. Тата ун çинчен «пĕтĕмпех пĕлетĕп» тени шиклентернĕ...

Виçĕ кунтан Малани Илюк патне каллех пычĕ. Илюк ун чухне сывалма пуçланăччĕ ĕнтĕ. Хĕрарăм, иртниччи пекех, çимеллисем кăларса хучĕ, питĕ йăвашшăн калаçрĕ.

— Нумаях выртмастăн пулĕ-ха, часах тухатăн пуль... Вăй кĕртме эп сана кашни кун автан тукмакки çитерĕп. Ятарласах пасартан илĕк пуç илсе ятăм...

— Больницăран тухсан эпĕ тÿрех киле каятăп,— терĕ Илюк, ун çине сиввĕнтерех пăхса.

— Киле-е?! — тĕлĕннĕ пек пулчĕ Малани.— Эй, ача-ам, ухмаха ертĕн-им эс? Ара, унта сана тÿрех хупаççĕ-иç!

— Пулин. Пурпĕрех суд умне тăрас пулать хăçан та пулин... Тÿррипе, ним пытармасăр каласа парсан, хытах айăпламĕç-ха, тен. Манăн айăпĕ те пысăках мар, малтан вăл хăй мана вĕлерме тăчĕ...

— Кам? Кам — вăл? — Илюк патнерех сиксе ларчĕ Малани.

— Пĕр çын. Пирĕн пата киле пырса кĕнĕскер...

5*

— Вара эс ӑна хӑйне вӗлерсе пӑрахрӑн-и? Мӗнпе? Мӗнле майпа?

— Эп вӗлерес темен...

Хӑй сисмесӗрех, тӑван килӗнче мӗн пулса иртни ҫинчен Малание пӗтӗмпех каласа пачӗ. Питӗ чеен, Илюк чӗрине ҫӗлен пек шуса кӗрсе ыйтса пӗлчӗ ҫав вӑрӑсен тусӗ Малани. Илюк хӑш ялсем пулнине те, вӗсем патне мӗнле каймаллине те пӗлмесӗр юлмарӗ. Юлашкинчен Илюка ҫав тери хӗрхеннӗ пек пулса ассӑн сывласа илчӗ те:

— Ҫук, ачам, кил ҫинчен санӑн халь шухӑшламалли те ҫук,— терӗ.— Ку вӑл пуҫа тӗрмене кайса чикни ҫеҫ пулать.— Малани пӗр хушӑ шухӑша кайса ларнӑ пек пулчӗ.— Эпир луччӑ санпа ҫапла тӑвӑпӑр,— терӗ вӑл унтан,— манӑн сирӗн енче питӗ лайӑх палланӑ хӗрарӑм пур... Вӑтӑр-хӗрӗх тенкӗ укҫама шеллемесӗрех эп ҫавӑн патне каям-ха, пӗлсе килем, мӗн пулса пӗтнӗ сирӗн патра эс тухса тарнӑ хыҫҫӑн... Чӑнах!

Малани ҫапла каланине таса чӗреллӗ Илюк тӳрех ӗненсе лартрӗ.

— Ой, тем пекех лайӑх пулӗччӗ-ҫке ку! Анчах вӑхӑт тупӑнӗ-ши санӑн унта ҫити кайма?.. Аннене милицисем тивмен пулсан, ӑна та хӑвпа пӗрлех илсе килесчӗ!

— Тупас пулать ӗнтӗ вӑхӑтне, мӗн тӑвассу пур... Сана хӗрхеннипех кайса килӗп.

— Хӑҫан кайма пултаратӑн эс?

— Ыранах каятӑп. Пӗр-икӗ кун хушшинче ҫаврӑнса та килетӗп пулӗ. Эс унччен чипер лӑпланса вырт, часрах сывалма тӑрӑш, панӑ эмелсене пурне те ӗҫ, тухтӑрсене итле. Аслӑ ача вӗт эсӗ!

Малани Илюка хуллен кӑна ҫурӑмӗнчен лӑпкаса илчӗ те палатӑран кушак пек шӑппӑн тухса кайрӗ.

...Питӗ хытӑ кӗтрӗ ӑна Илюк. Анчах Малани час пымарӗ. Икӗ кун иртрӗ, виҫҫӗ, тӑваттӑ. Илюк ӗнтӗ Малани ун патне тепӗр хут пырасса шанма та пӑрахрӗ, улталарӗ ку мана терӗ, анчах пиллӗкмӗш кунӗнче ҫапах та Малани пырса ҫитрӗ.

— Ну, епле? Мӗнле унта? Пултӑн-и? Куртӑн-и? — хӗрарӑм ун патне ҫывхаричченех тӑрса ларса ыйтса пӗлме пикенчӗ Илюк.

— Пултӑм, ачам, пултӑм, мӗн пӗлмеллине пӗтӗмпех пӗлсе килтӗм,— терӗ Малани, питӗ ывӑннӑ пек хаш! сывласа ярса.

— Ну, кала, кала ӗнтӗ часрах!

— Япӑх...

— Мĕн япăх?

— Леш çынни — вилнĕ, аннӳ — тĕрмере, сана хăвна шыраççĕ...

Илюк тăруках чĕлхесĕр пулса ларчĕ, унăн куçĕсем хуралса килчĕç.

— Санăн киле таврăнасси çинчен шухăшлама та юрамасть,— каллех ассăн сывласа илчĕ Малани.

— Ăçта каяс-ха вара манăн? — Илюк тутисем чĕтреме тытăнчĕç, куçĕсем шывланчĕç.

— Пĕркунах каларăм-çке сана, малтанлăха ман патра пурăнатăн, унтан куç курать... Эпĕ ĕнтĕ тухтăрпа калаçрăм, ыран-виçминесем сана больницăран кăларма пултаратăп терĕ...

Илюк çĕрелле пăхса ларса шухăша кайрĕ.

Акă епле çаврăнса тухрĕ иккен унăн пурнăçĕ!..

Матви пичче тени вилнĕ. Ăна вĕлерекенни вăл, Илюк. Амăшне тĕрмене хупнă. Вăл ĕнтĕ уншăн ларать, уншăн асап курать. Хăйĕн, Илюкăн, халĕ килне кайма мар, çынсен куçĕ умне те курăнма юрамасть, ăна шыраççĕ, ма тесессĕн вăл — çын вĕлернĕ! Анчах та, тен... ыран больницăран тухас та ним иккĕленмесĕрех милицие кайса калас:

— Ман анне айăплă мар, кăларса ярăр ăна, ун вырăнне мана хупăр, мĕншĕн тесен айăпли — эпĕ, Илья Ивуков!

Ах, пĕлмен çав Илюк нимĕн те!..

Малани ăна ним намăса пĕлмесĕр улталанине те, вăл Илюксен ялне кайса килме мар — çак кунсенче хуларан тухманнине те пĕлмен! Илюк пирки вăл хăйĕн тусĕсемпе, Матрос тата Артист тенĕ вăрăсемпе, канашласа илнĕ те, ачана аларан вĕçертес мар тесе, ăна хăрушла суйса панă...

Çав вăхăтра хăйсен килĕнче мĕн пулса иртнине те пĕлмен Илюк. Килти пурнăç пĕртте Малани лăпăртатса панă пек пулман ун чух.

Анчах мĕн тăвас пулнă-ха ĕнтĕ халь Илюкăн?..

Тепĕр кунне, кăнтăрла иртсен, Малани каллех больницăна пычĕ те ăна хăй патне илсе кайрĕ, Илюк пĕр сăмахсăрах килĕшрĕ. Çакă вара унăн пурнăçĕнчи иккĕмĕш йăнăш пулчĕ, çав тери пысăк, хăрушă йăнăш...

Малтанхи кунсенче вĕсем питĕ лăпкăн пурăнчĕç. Кăнтăрла Малани Атăл хĕррине кукăль сутма кайса килчĕ, Илюк килте ларчĕ. Тухса çӳреме унăн вăйĕ те çукрахчĕ-ха. Анчах пурăна киле Илюк çав тери тĕлĕнмелле япаласем кура пуçларĕ...

Пĕр каçхине, вĕсем çывăрса кайнăччĕ ĕнтĕ,— Мала ни кравать çинче, Илюк кăмака хыçĕнче,— сасартăк çенĕк алăкне такам самаях хыттăн шаккарĕ. Малани çутă çутса çенĕке тухнă вăхăтра Илюк та тăрса ларса алăк çине пăхма тытăнчĕ: кам килме пултарать кун пек вăхăтра? Кил хуçи никама кĕтни çинчен те каламарĕ-çке?

Унччен те пулмарĕ, Малани хыççăн пӳрте виçĕ çын кĕрсе тăчĕç. Виççĕшĕ те çара пуçăн, çӳçĕсем вăрăм, хыçалалла тирпейсĕр çавăрса хунă, пиншакĕсем пурин те пĕр майлăрах, анчах тĕсĕсем расна — пĕрин кĕрентерех, теприн симĕс, виççĕмĕшĕн шашка хăми пек тăваткăл-тăваткăл, йĕмĕсем вара пурин те çип-çинçе те кĕп-кĕске, ура пакăлчакĕ патне те çитеймеççĕ. Сăнран пăхсан — пурте çамрăк, 17—18 çултан аслă мар, анчах иккĕшин те сăмсисем айĕнче хăрăмпа хуратса илнĕ пек курăнакан пĕчĕкçеç уссисем палăрса тăраççĕ.

— Салам-аликкĕм, мадам Малашка! — алăкран кĕнĕкĕмен Малание икĕ хул калакки хушшинчен ывăç тупанĕпе шаплаттарса илчĕ çав йĕкĕтсенчен пĕри, сип-симĕс пиншакли.— Курманни нумай пулать сана, ăнсăртран вилсе выртман-и тесе тĕрĕслесе пăхас терĕмĕр. Йышăнатăн-и?

— Килĕрех, иртĕр, иртĕр! — терĕ те Малани аялти кĕпи çийĕнчен ула-чăла халат тăхăнса ячĕ.— Чăнах та, нумайранпа килмерĕр ман пата, манса кайрăр...

Вăл темле йĕкĕлтенсе, сассине юри вылянтарса калаçрĕ, милĕк пек арпашса кайнă çӳçне тӳрлеткелесе илчĕ.

— Мĕнле пурăнатăн ку тĕнчере? — ыйтрĕ уссиллĕ тепĕр йĕкĕчĕ.

— Чиперех-ха, хăвăр мĕнле?

— Йӳçĕ кваспа хура сухари çисе пурăнатпăр. Нухрат çукки кастарать, Малаша!

— Епле вара ун пекех? — тĕлĕннĕ пек пулчĕ Малани.— Сирĕн пек маттурсен те укçа çук пулсан, пирĕн мĕнле пурăнас?

— Канмалли çуртра пултăмăр-çке,— терĕ симĕс пиншакли.

— Э, курортсем тăрăх çӳретĕр эппин! Крым, пески, туманны горы теççĕ-и-ха çав? — ихиклетсе илчĕ Малани.— Паллах ĕнтĕ, унта укçа лавĕпех кирлĕ...

— Питĕ лайăх курорт пулчĕ. Виçĕ талăк пĕр пус тӳлемесĕр хысна çăкрине кавлесе пурăнтăмăр.

— Ай тур-тур! — çак йĕкĕтсем тĕрмере ларса тух-

нине ăнланса, аллисене хире-хиреç шартах çапса илчĕ Малани.— Мĕншĕн-ши тата?

— Тупăнчĕ. Пăрахутпа ларса, уçăлмалла Сĕнтĕрвăррине çити кайсаттăмăр та унта клуба ташлама кĕтĕмĕр. Кăштах хĕрнĕччĕ хамăр. Хĕрсем пирĕнпе ташласшăн пулмарĕç. Эпир çине тăма пуçларăмăр. Пĕрне тытса çавăратпăр, теприне. Ну, çав вăхăтра хулĕсене хĕрлĕ кипке таткисем çыхнă деятельсем пырса тухрĕç. Лешсем, ара, бригадмилсем*. Тытăçса илме тиврĕ. Сĕтĕрсе кайрĕç вара милицине. Пирĕн пĕр документ та çук. Эпир камне тĕрĕслесе пĕличчен вара виçĕ талăк тытрĕç. Хамăрăн ӳкĕннĕ пек, каçару ыйтнă пек тумалла пулчĕ. Атту-тăк чип-чиперех 74-мĕшпе** çатлаттарса хуратчĕç. Пĕтеттĕмĕрччĕ.

— Ай-ай, ытла та... асăрханмастăр-çке! — пуçне пăркаласа илчĕ Малани. Анчах симĕс пиншакли ун сăмахĕсене илтмен пек пулчĕ.

— Кĕçĕр çеç таврăнтăмăр. Чăмлас та, пыра чӳхес те килет. Пулăш! Санăн яланах пулаканччĕ.

— Çак самантра нимех те çук çав...

— Эс ан хăра, Малаша-Параша,— сăмах хушрĕ кĕрентерех пиншакли, ку таранччен шарламасăр ларнăскер.— Ахаль тумастпăр ĕнтĕ сана, ют çынсем мар! Акă, çаксем валли хуçа туп ыран...

Кăмакапа чăлан хушшинчи çурăк витĕр пăхса тăнă Илюк тĕлĕнсе хытсах кайрĕ: çав йĕкĕт, кăкри умĕнчи шалти кĕсйинчен пĕр ывăç пĕчĕк сехет кăларса, Малани умне шăкăрт! хучĕ.

— Кашнине çĕршер тенкĕпе ярăнтарсан та тăватçĕр тенкĕ пулать,— терĕ уссисĕрри, сехечĕсене сĕтел çине сарарах хурса.— Пурте на холном ходу!

— Ах, тем тумалла ĕнтĕ сирĕнпе... Пĕрре-пĕрре пуç ярапăр та-ха эсир манăнне! — иккĕленсе тăнă пек турĕ Малани, анчах хăйĕн куçĕсем çăткăннăн çуталма тытăнчĕç. Ун умĕнче пуянлăх-çке-ха, сехетсене сутсан, вăл хăй валли пысăк тупăш илме пултарать!

— Ну, мĕнле? — ыйтрĕ симĕс пиншакли.— Пур-и санăн пире валли мĕн те пулин? Çук пулсан, укça пар пăртак, пристаньри буфета каятпăр, мĕн пулать-килет!

— Тупасах пулать ĕнтĕ, мĕн тăвас тетĕн сирĕнпе! —

---

* Бригадмил — милицие пулăшакан бригада. Ун пек бригадăсем халăх дружинисем тăвиччен пулнă. Бригада членĕсене бригадмилец тенĕ.

** Уголовнăй кодекс статьи. Вăл статьяпа ун чух чарусăр хулигансене ĕçлесе юсанмалли колонисене 5 çуллăха яма пултарнă.

Малани сётел çинчи сехетсене пуçтарса илчĕ.— Анчах кусене ытла тăруках ăсатаймастăп. Палланă маçтăр сирĕн пекех курорта кайнă, анчах унăн срокĕ вăрăмрах. Пилĕк çул. Вырнаçтармалли урăх шăтăк шырас пулать, çавăнпа та укçишĕн тӳрех пыртан ярса ан илĕр...

Унтан вăл çенĕке тухрĕ.

Тепĕр çур сехетрен çăмламас пуçлă та ансăр йĕмлĕ йĕкĕтсем ӳсĕрĕлсе те кайрĕç, хăйсем виçĕ талăка мĕнле ларса ирттернине аса илсе ахăлтатрĕç. Малание карт туптарса, çирĕм пĕррелле выляма тытăнчĕç.

Вĕсем хăçанччен аташса ларнине Илюк пĕлеймерĕ, çывăрчĕ. Ирхине вăрансан, вĕсем пĕри те çукчĕ ĕнтĕ, тухса кайнăччĕ.

— Мĕнле йĕкĕтсем пулчĕç сан патра каçхине? — пĕлес килнипе тӳсеймесĕр ыйтрĕ вăл Маланирен.

— Пит лайăх ачасем,— терĕ лешĕ.

— Ашшĕ-амăшĕсем пур-и вĕсен?

— Пулмасăр! Пĕрин амăшĕ — прохвессор, тет.

— Профессор? — тĕлĕнсе кайрĕ Илюк.— Хăшин?

— Симĕс пиншаклин.

— Вĕренеççĕ-и вара вĕсем, ĕçлеççĕ-и?

— Çавна пĕлсех çитейместĕп вара.— Малани ун çине сиввĕнрех пăхса илчĕ.— Мĕн тума ун пек çине тăрсах ыйтатăн эс вĕсем çинчен, мĕне кирлĕ вăл сана?

— Ахалех ара... Виçшер талăк ларса тухрăмăр теççĕ те...

— Вăл ниме те пĕлтермест,— тутине мăкăртса, ал сулчĕ Малани.— Унта кашниех лекме пултарать!

Илюка ку тата ытларах тĕлĕнтерчĕ: мĕнле-ха «ниме те пĕлтермест» вара? Виçĕ талăк нумай мар пулсан та, çапах та тĕрме вĕт-ха вăл! Çитменнине, ашшĕ-амăшĕсем те пур иккен, пĕрин, ав, профессор, тет, мĕн тума кирлĕ вĕсене çавăн пек çапкаланса çӳрени? Эх, эп хам вĕсен вырăнĕнче пулнă пулсан... мĕн тери йĕркеллĕ пурăннă пулăттăм-ши!

Кăшт тăрсан, вăл татах ыйтрĕ:

— Ун чухлĕ сехет ăçтан тупнă-ха вĕсем?

— Эп ăçтан пĕлем? — терĕ Малани.— Хăйсеннех пуль. Тен, пăрахутпа килнĕ чух картла выляса илнĕ, картла пит маçтăр вĕсем...

«Картла...—шухăшларĕ Илюк.—Пит усал вăйă вĕт-ха вăл, çынна пуçĕпех пĕтерсе хума пултарать... Çук, ку йĕкĕтсем тĕрĕс пурăнмаççĕ. Мĕншĕн-ши?»

Çакăн пек шухăшсем ăна вăрахчен çывăрса кайма памарĕç...

## 10

Малани Илюка хальхинче те улталарӗ. Ҫав капхине ҫамрӑк «хӑнасем» сутма парса хӑварнӑ сехетсем пӗртте хӑйсен мар, вӑрланӑскерсем пулнине питӗ лайӑх пӗлнӗ вӑл, мӗншӗн тесен ҫак «капӑр йӗкӗтсем» ӑна нумай хутчен тӗрлӗ йышши сехетсем, ылтӑн ҫӗрӗсем, тепӗр чух тӑхӑнмалли япаласем те пыра-пыра панӑ. Малани ҫав япаласене сутса тунӑ укҫапа вара вӗсем ресторансенче хаклӑ эрехсем ӗҫнӗ, хӑйсем пекех ним ӗҫсӗр, «пурнӑҫа ҫунтарса» пурӑнакан, пӗветнӗ туталлӑ, куҫ харшисене пӗкӗ пек авса хунӑ хӗрсене таксисемпе катаччи ярӑнтарнӑ, вӗсемпе вӑрмана кайса пикниксем тунӑ, пӑрахутпа Атӑл тӑрӑх ҫӳренӗ. Виҫҫӗшӗ те пысӑк укҫа илекен ҫынсен ачисем пулнине пӗлсе, милицире ӗҫлекенсем вӗсем пирки питех иккӗленмен — ашшӗ-амӑшӗн укҫипе иртӗхеҫҫӗ тесе шутланӑ.

Маланипе «капӑр каччӑсем» пӗлтӗр ҫуркунне Атӑл хӗрринче паллашнӑ. Ун чух вӗсем, вӑтам шкултан аранаран вӗренкелесе тухнӑскерсем, «ирӗклӗ пурнӑҫпа» пурӑнма пуҫласшӑн пулнӑ. Пӗр вырсарникун ҫаксем, хӗрсемпе Атӑл леш енне кайса, «хӗм пама» — ӗҫме-ашкӑнма хатӗрленнӗ-мӗн, анчах ун валли хӑйсен укҫи сахалтарах пулнӑ. Вара хӗрарӑм профессор ывӑлӗ Жора, ним шухӑшласа тӑмасӑрах, амӑшӗ нумай та пулмасть илсе панӑ тӑватҫӗр тенкӗ тӑракан сехете аллинчен вӗҫертнӗ те пристань патӗнче ҫимеллисем сутса ларакан хӗрарӑмсене сӗнме тытӑннӑ:

— Туянӑр, йӳнех сутатӑп! Магазинра тӑватҫӗр тӑрать — эпӗ икҫӗрпех паратӑп...

Пӗр юлташӗ, Сержик тени, ӑна чарма тӑнӑ:

— Сутса ярсан, аннӳне мӗн калатӑн?

Ана хирӗҫ ку шӑл хушшипе чӑрт! сурса илнӗ ҫеҫ:

— Вӑрманта ҫӳренӗ чух сехет ӑнсӑртран вӗҫерӗнсе ӳкме пултараймасть-и-мӗн?

Унӑн сехетне никамах та илесшӗн пулман, анчах Малани тӗлне ҫитсе тӑрсан — вӑл Жорӑпа чылай хушӑ кӗлешнӗ, йӗкӗт укҫашӑн ҫуннине кура юри питӗ йӳнӗ панӑ, вуншар тенкӗн хушса пынӑ, юлашкинчен вара тарӑхса ҫитнӗ профессор ывӑлӗ чӗрӗк хакпах сутса янӑ...

Ик-виҫ кунтан вӗсем тепӗр юлташӗн сехетне те ун патнех илсе пырса сӗннӗ.

— Ҫумра укҫа ҫук ҫав халь, сутасах тетӗр пулсан— капхине киле илсе пырӑр,— тенӗ те хальхинче Малани хӑйӗн адресне панӑ.

Пĕр вунă сехетре Жорăпа Сержик — халĕ кĕрентерех пиншакпа çӳрекенни — чăнах та ун патне пырса тухнă. Вăл вăхăтра Малани патĕнче Матроспа Артист пулнă. Вĕсем майĕпе паллашнă, вăрăсем хăйсене аякран килнĕ «оргнабор уполномоченнăйĕсем» тенĕ, калаçкаласа ларсан-ларсан, çамрăксене эрех ĕçтернĕ, унтан, вĕсемпе картла выляма пуçласа, пĕтĕм укçине наччасра выляса илнĕ, анчах кайран, хăйсене ырă кăмăллă, çынсене хĕрхенекен этемсем пек кăтартса, пĕр пусне те илмен, пĕтĕмпех каялла панă, хăйсене татах пырса ларма чĕннĕ:

— Ан манăр пирĕн адреса...

Çак «çемçе кăмăллă çынсем» Жорăпа Сержика килĕшнĕ, тепринче вара вĕсем патне тепĕр юлташне — хăйне Макçăм вырăнне Макс тесе чĕнтерекен тăсланкă йĕкĕте — илсе кайнă. Ун чух вăрăсем патĕнче хĕрсем те пулнă...

Çапла пуçланнă вĕсен «туслăхĕ».

Темиçе хут «какăриччен» хăналаннă хыççăн татах пырсан, «оргнабор уполномоченнăйĕсем» йĕкĕтсене кăшт йĕкĕлтемелĕх ĕçтернĕ те:

— Пирĕн укçа пĕтрĕ, халь ĕнтĕ сирĕнтен тухать,— тенĕ.

Кусен кĕсйисенче пĕтĕмпе те çичĕ тенкĕ çеç тупăннă. Вара «уполномоченнăйсенчен» пĕри, Артист тени, вĕсене тӳрех, ним тытăнса тăмасăрах çапла канаш панă:

— Тĕттĕмрех урама кайăр та камран та пулин кивçен ыйтăр. Укçи çук пулсан, сехетне парса янипе те çырлахма пулать.— Хăй çавăнтах кĕсйинчен хитре кăна çĕçĕ кăларса кăтартнă.— Ун пек чух çакăн йышши вылямалли тетте питĕ пулăшать...

Тутисем çинче амăш сĕчĕ типмен йĕкĕтсем пĕр-пĕрин çине тăн-тан пăхкаласа илнĕ.

— Хăратăр пулать? Чĕркуççисем чĕтреççĕ? Çын укçипе кăна ĕçме маçтăр, эппин, эсир? Эх, виçĕ пуслăх паттăрсем, çуламан пăрусем! — мăшкăлласа илнĕ вăрă. Унăн тепĕр юлташĕ те, унпа пĕрле Малани те ахăлтатсах кулса янă.

— Ним те хăрамастпăр! — тăрук персе янă ăна хирĕç Жора, мĕн пĕчĕкренпех хăйне ыттисенчен мăнна хума хăнăхнă пирки хăйĕнчен кулнине тӳсме пултарайманскер. Çавăнтах юлташĕсем çине хаяррăн пăхса, команда панă пекех кăшкăрнă: — Кайрăмăр!

Вăл вăрă аллинчи çĕççе кĕсйине чикнĕ те алăк патнелле утнă. Юлташĕсем те унран юлман...

Тепĕр икĕ сехетрен вĕсем каялла таврăннă. Сăнĕсем

хăйсен кăвакарса кайнă, куçĕсем унăн-кунăн сиккелесе йăлтăртатнă, питĕ хăранă пулмалла ĕнтĕ, анчах Жора, юриех паттăр пек курăнма тăрăшса, сĕтел патне пынă та Артистпа Матрос умне алла çыхмалли икĕ сехет кăларса хунă:

— Мейĕр!

— О-о, тухăçлă пулнă-çке сирĕн экспедици! Маттур! Маттур! — мухтаса илнĕ вăрăсем.— Кун пек эсир часах аслă çул çине тухма пултаратăр, тупата! Каласа парăрха, ĕçе мĕнлерех майлаштартăр? Камран кивçен илтĕр ку сехетсене, э? Калаçма пырсем типсе ларчĕç пулсан чӳхесе илĕр...

— Чылай çӳремелле пулчĕ,— терĕ Жора, пĕр черкке ĕçнĕ хыççăн пирус пашлаттарса,— хăш çĕрте халăх нумай, тепĕр çĕрте тата никам та çук, пуш-пушах. Çĕн урама тухсан, ик хĕрарăма чарса тăратрăмăр — вĕсен нимĕн те пулмарĕ; ни сехет, ни укçи... Унтан Етĕрне çулĕпе тăвалла хăпартăмăр. Пăхатпăр: пĕр хӳме патĕнче хĕрпе каччă тăраççĕ. Вĕсем патне çитсенех, эпĕ каччине:

— А ну-ка, фраер, халех сехетне салтса пар та укçуна кăлар! Комплект валли маруххунне те салтса ил. Хăвăртрах, атту кĕçех айăкунтан «перо»* туянатăн! — терĕм. Хам çавăнтах çĕççе ун сăмси патне илсе пытăм.— Кĕçĕр киле чĕррĕн таврăнас килет пулсан — васка! — терĕм.

Çĕççе курсанах, хĕрĕ, каччи çумне йăпшăнса, ăна ыталаса илчĕ, анчах кăшкăрмарĕ, чĕлхесĕр пулсах ларчĕ пулмалла, каччи ун ытамĕнчен вĕçерĕнчĕ те ура çине тăчĕ.

— Ну? — терĕм эпĕ, алăри çĕççе вылятса илсе.— Эпир кунта сирĕнпе юрату çинчен калаçма килмен!

— Çук пирĕн нимĕн те,— терĕ хайхискер аран-аран.

— Ухтарăр! — команда патăм Сержикпа Макса.

Кусем каччă аллисене пĕррех каялла пăрса хучĕç. Укçи чăнах та виçĕ тенкĕ кăна пулнă мĕскĕнĕн, анчах аллинче сехет тупăнчĕ. Ăна салтса илсен, хĕрне тĕрĕслерĕмĕр. Унăн та сехет пур иккен... Унтан каччине ррас! çупса ятăм та, çавăнтах кăкринчен тытса, питĕ хытă асăрхаттартăм:

— Енчен те эсир пĕр çур сехет хушши çăвара шыв сыпнă пек лармасан — халех таврăнатпăр та иксĕре те аслаçăрсем патне леш тĕнчене ăсататпăр! Пĕлсех тăрăр

---

* Çĕçĕ.

çавна!..— Вĕсем, паллах, нимĕн те чĕнмерĕç. Эпир вара унăн-кунăн çавăнса каялла килтĕмĕр. Пире никам та курмарĕ... Пĕр йытă та!

Кăштах хĕрме пуçланăскер, Жора хăйсем темле питĕ паттăр та чаплă ĕç тунă пекех тулли кăмăлпа каласа кăтартнă. Жорăпа унăн тусĕсене ытларах хавхалантарма вăрăсем юриех мухтанă:

— Эпир сире «йĕпе çерçисем» кăна пуль тенĕччĕ, анчах эсир ăмăрткайăк чĕпписемех иккен! Çын пулать сирĕнтен, пулать!..

Çав вăхăтра калаçăва Малани хутшăннă.

— Чим-ха, Жорка, сан сулахай куçу шыçса тухнă мар-и çав? Янахху та самаях шăйрăлнă тем? — тесе ыйтнă вăл.

— Э, пустуй кăна, тĕттĕмре ăнсăртран хўме кĕтессине пырса тăрăнтăм! — ал сулнă Жора.— Ак, ачасем те курчĕç...

— Çапла, çапла,— тенĕ Макспа Сержик.— Сире нумай кĕттерес мар тесе чупсах килтĕмĕр те...

— Ну-ка, манса кайиччен эс мана çĕççе каялла тавăрса пар-ха, эппин, урăх кирлĕ мар вăл сана,— тенĕ Артист.

Жора кĕсйисене ухтарма тытăннă, анчах çĕçĕ тупăнман.

— Пĕрре ўкрĕм эпĕ... Çавăн чух çухалса юлнă пулмалла, каçарăр...— айăпа кĕнĕ йытă хăйĕн хуçи çине пăхнă пек пăхса илнĕ Жора.

— Апла-тăк сирĕн пĕр сехечĕ — манăн,— татса хунă Артист.

— Тархасшăн, ара, шел-им вăл маншăн...

Унтан вăрăсем вĕсене виççĕшне те каллех ĕçтерсе ўсĕртнĕ.

...Анчах та, тĕрĕссипе, Жора каласа пани пĕтĕмпех суя пулнă. Вĕсен çак каçхи «похочĕ» пĕртте ун пек пулса иртмен. Чăн та, вĕсем хула хĕрринчи пĕр тĕттĕм урамра хĕрпе каччăна çаратма тăнă. Паттăрсем пекех пынă вĕсем патне. Анчах хăйне ыттисенчен хастарлăрах тесе шутлакан Жора çак каччăпа хĕре çĕçĕ кăтартса сехетсемпе укçа кăларса пама хушсанах, каччи сак çинчен тăрса: «Халех паратăп»,— тенĕ те пĕрре куç хупса илнĕ хушăрах Жорăн çĕçĕллĕ аллине тăрук тытса пăрса лартнă, тепĕр аллипе çав самантрах ăна икĕ куç хушшинчен питĕ хытă тыттарса янă. Пĕррех каялла вăркăнса кайнă профессор ывăлĕ, ун аллинчи çĕççи тухса ўкнĕ. Çав хушăрах Сержикпа Макс каччăна пĕр ха-

răсах çапма пикеннĕ, анчах каччи пуçне пĕксе илме ĕлкĕрнĕ, пĕшкĕннĕ хушăра вăл Жора çĕре ӳкернĕ çĕççе ярса тытнă.

— Килĕр, эппин, çывăхарах, камăн вилес килет! — кăшкăрса янă вăл, çĕççине çӳлелле çĕклесе. Унтан, малалла пĕр утăм туса, Сержика хырăмĕнчен тапса ӳкернĕ, Максне хăлха чиккинчен тăхăнтарса янă... Тен, çав каччă вĕсене сӳсленичченех хĕнесе тăкнă пулĕччĕ, анчах калама çук хăраса ӳкнĕ хĕрĕ ун хулĕнчен уртăннă:

— Коля, Коля, тетĕп, чарăн, тархасшăн, темрен тем пулĕ! Ан çыхлан вĕсемпе, хăвна вĕлерсе пăрахĕç, тарар часрах кунтан!..

— Халех пурсăра та вĕлеретĕп! — хаяррăн кăшкăрнă Коля тени, çаплах-ха малалла туртăнса. Хурахсен çĕççи хăй аллинче пулнипе вĕсенчен вăл нимĕн чухлĕ те хăраман. Халĕ лешсем ытларах хăраса ӳкнĕ, вĕсен епле те пулсан тарса хăтăлмалла пулнă. Ой, хытă тарнă та вĕсем!.. Хăйсене никам та хăваламаннине туйсан тин пĕр улах кĕтесре чарăнса тăнă та малалла мĕн тăвасси çинчен канашласа илнĕ.

— Çапах та пирĕн хамăрăн туссем патне пуш алăпа таврăнма юрамасть,— тенĕ Жора, ыратакан çамкине сăтăркаласа.— Çĕççине те парса хăвартăмăр ак... Кун пек вĕсем пире малашне çын вырăнне те шутламаççĕ... Атьăр, тупатпăр мĕн те пулин!

Урамсем тăрăх чылайччен сулланса çӳренĕ хыççăн вĕсем ăнсăртран икĕ ватăрах хĕрарăма тĕл пулнă та, хăйсене çакăнтах вĕлерессипе хăратса, сехечĕсене тăпăлтарса илнĕ. Малани патне таврăнсан, ырă ятлă пулас тесе, пит хитре суйса кăтартнă...

Çакăнтан вара Жорăпа унăн тусĕсем — ĕççĕр аптранă виçĕ çамрăк аçа хурт, çак таранччен никама та пĕр пуслăх усă кӳмен тата кӳме те шухăшламан, сăвăс пек пурăнакан виçĕ çăмăлттай, шăна эрешмен картине лекнĕ пек, вăрăсен танатине пуçĕпех лекнĕ. Лешсем вĕсене тӳрех çапла каланă:

— Пирĕн хушша кĕме çăмăл, анчах пирĕнтен уйрălса каймалли çул çук. Эпир кашкăр саккунĕсемпе пурăнатпăр: кам пире хăçан та пулин пăрахса кайма тăрать — вăл пĕтет, амба! Тата çакна та астăвăр, шăллăмăрсем: пирĕн хушăра пĕр-пĕрне сутакан çук, ун пеккисем тупăнсан — вĕсем çавăнтах аслашшĕсен аслашшĕсем патне ăсанаççĕ!..

Чунĕсем мулкачăннинчен те хăравçăрах пулнипе «капăр йĕкĕтсем» хăйсен çĕнĕ «тусĕсем» мĕн хушнине

пĕр сăмах хирĕç каламасăрах туса пыма тытăннă вара. Кунран-кун ытларах пăсăлнă вĕсем, кунран-кун хăйсен пурнăçĕн çулне ытларах вараласа, картласа пынă.

...«Туслашнă» хыççăн пĕр-икĕ уйăхран, пĕррехинче, вĕсем Атăл леш енчи илемлĕ уçланкăра, ешĕл йывăççен ĕмĕлĕнче пĕтĕм ушкăнĕпех сăра-эрех сыпкаласа выртнă чух, Артист, кахаллăн карăнса илсе, Жора еннелле çаврăнчĕ те ăна чылайччен куçĕсенчен тилмĕрсе пăхрĕ.

— Итле-ха, учонăй... (Профессор ывăлĕ пулнипе Жорăна вăрăсем хăйсем хушшинче халь «учонăй» тенĕ.)

— Мĕн? — сас пачĕ Жора.

— Сволочь эсĕ. Чăн-чăн подлец, паразит, пĕлетĕн-и çавна?

— Мĕншĕн? — тăруках шикленчĕ Жора. Мухмăрлă чухне Артист пушшех усал, ним сăлтавсăрах тута урлă çиçтерсе яма та пултарать.

— Акă мĕншĕн. Сирĕн çуртра çав тери пуян халăх пурăнать. Профессорсем, тĕрлĕ доцентсем, темсем... Укçана вĕсем кĕреçепе хырса илеççĕ. Вĕсен, паллах, пурин те хаклă япаласем: ылтăн-кĕмĕл, каракуль те черно-бурка — лавĕ-лавĕпе. Э? Тĕрĕс калатăп-и эпĕ е йăнăшатăп?

— Япалисем пурин те пур ĕнтĕ,— килĕшрĕ Жора.

— А мĕншĕн-ха, эппин, эсĕ пире пĕрре те вĕсем патне хăнана илсе каймастăн, э? Нивушлĕ вара эпĕр профессорсем мĕнле пурăннине кĕрсе курма тивĕççĕр? Унти пĕр лайăххрах хваттере «илсенех» çулталăк шăхăрса пурăнма пулать темелле, анчах эпир тепĕр чух кашта çине çуса çакнă çĕтĕк йĕмсемпе аппаланатпăр! Мĕнле йĕрке ку, кала-ха эс мана! Э?

Жора ăна хирĕç пĕр вăхăт ним калама аптраса ларчĕ.

— Ман глобус çапла шутлать,— çамкине шаклатса илчĕ Артист.— Хальхи вăхăтра профессор таврашĕсен— каникул, вĕсем курортсенче çӳреççĕ, ăçта та пулин Хура тинĕсре чăпăл кĕреççĕ. Килĕсенче вĕсен вилме маннă карчăксем е тĕрлĕ Дашкă-Машкăсем, хуçисем çук чух Атăл хĕрринче хĕвелçаврăнăш шĕкĕлчесе ларакан нянькăсем çеç юлнă. Ку йышши тăшмансем пирĕншĕн хăрушах мар... Ăнлантăн-и эс мана мĕн чухлĕ те пулин, учонăй?

— Ăнланма пуçларăм,— терĕ Жора, анчах хăйĕн тутисем кăвакарса чĕтреме тытăнчĕç.

— Апла-тăк сан котелокунта кăштах тăн пур иккен-ха, çын пулма пултаратăн! — тутине пăрса илчĕ Артист каланисене месерле выртса итленĕ Матрос.

— Халь малалла тăнла,— терĕ Артист, тăрса ларса.— Ак сана задача: çитес ик-виç кун хушшинчех эсĕ питĕ тĕплĕ разведка тăватăн — кам килте унта сирĕн, кам çук, кам кайма хатĕрленет... Анчах та пĕтĕмпех тĕп-тĕрĕс пултăр, аптекăри пек! Килте çĕрсе ларма кам юлать? Йытă çук-и тата, профессор майрисем йытăсене питĕ юратаççĕ. Алăксене мĕнле майпа питĕреççĕ?

Жора чĕнмерĕ.

Ыттисем те шарламарĕç.

— Ну? Ма ним те шарламастăн? Е тӳрех сивчир тытрĕ-им? — йĕрĕннĕ пек пăхрĕ ун çине Артист.

— Кун çинчен амăшĕ пĕлсен, хăйне чĕчĕ пама пăрахасран хăрать вăл,— тăрăхларĕ Матрос, хырăмĕ çине çаврăнса выртса.

— Асту, учонăй, çак ĕçе тумасан, пирĕн санпа урăхла калаçмалла пулать. Эпир ача вăййи вылякан çынсем мар, ăна ху пĕлетĕн. Кунсăр пуçне, санăн кĕсйӳ те пушпушах вĕт-ха, укçа ăçтан тупас тетĕн? Э?

— Укçа тума вăл вербовкăпа Курил утравĕсем çине каятăп тет-ха, унта укçана сĕрекепе сĕреççĕ,— каллех тăрăхласа илчĕ Матрос.

— Ниçти утрав çине те каймастăп эпĕ! — сасартăк хыттăн каласа хучĕ вĕсене хирĕç чылайччен чĕнмен Жора. Унтан сиксе тăчĕ те Матрос умĕнчи кĕленче тĕпне юлнă эрехе, хăех стакан çине тултарса, пĕр сывламасăр ĕçсе ячĕ.

...Тепĕр эрнерен хулара пурне те тĕлĕнтерекен хыпар сарăлчĕ: темле бандитсем Разумовский профессор хваттерне çаратнă, пĕр хаклă япала та хăварман, алăкне уççи юраттарса кĕнĕ, кил пăхма юлнă карчăкне, ал-уринчен çыхса, кивĕ тумтирсем айне пăрахса хăварнă. Хваттерте вăрăсем пулнине çынсем виççĕмĕш кунĕнче тин пĕлнĕ, мĕншĕн тесен карчăкĕ сас парайман, вăл пĕрре те тухса çӳременнине кура, кӳршĕсем пăшăрханса ӳкнипе пырса уçсан тин пĕтĕмпех паллă пулнă вара.

Вăррисен йĕрĕ тупăнман. Жора тĕллеттернипе, вăл пулăшнипе профессор хваттерне тасатса тухнă хыççăн Артистпа Матрос хулара нумайччен курăнмарĕç, шăвшав лăпланиччен аяккарах кайса пурăнас терĕç пулмалла. Амăшĕн ĕçри юлташĕн, хăйĕн çемйин çывăх тусĕ пулнă хисеплĕ ученăйăн пĕтĕм пурлăхне çараттарнăшăн Жорăна хăйне нимĕн те — пĕр пус укçа та, пĕр тумлам эрех те лекмерĕ, ăна вăрăсем ахалех тăрăлтарса хăварчĕç. Çакăншăн Жора хытă тарăхрĕ, çапах та мĕн тăватăн-ха Матроспа Артиста? Таçта вĕсем?

Кĕр енне амăшĕ Жорăна, Горькинчи пĕр института кĕртес тесе, экзамен тытма ячĕ, анчах шкулта та начар вĕреннĕ тата мĕн вĕреннине те çу каçа пĕтĕмпех манса пĕтнĕ йĕкĕтĕн пирвайхи предметпах «провал» пулчĕ. Апла пулин те, амăшĕнчен икĕ хутчен телеграфпа укçа ыйтса илсе, вăл Горькинче пĕр уйăха яхăн çапкаланса пурăнчĕ. Юлашкинчен вара килне таврăнчĕ те амăшне ним хĕрелмесĕрех суйма пултарчĕ: «Пур предметсемпе те чиперех тытрăм, анчах икĕ балл çитмен пирки илмерĕç...»

Унăн юлташĕсем те — Сержикпа Макс — çавăн пекех унта-кунта кайса килнĕ, анчах вĕсен те вĕренме кĕресси пулман. Уншăн вара хăйсем мăн хуласенчи магазинсенче малтанхинчен те «капăртарах» тумланнă — кĕписем куçа йăмăхтарса ямалла ула-чăла, йĕмĕсем тата кĕскерех те ансăртарах, пушмакĕсен тĕпĕсем икĕ пӳрне хулăнăш...

Виçĕ тус — ĕçсĕр аптранă виçĕ услап — каллех пĕрле çӳреме тытăнчĕç. Кинора, ташăра, Атăл хĕрринче — пур çĕрте те, пур чух та. Çитменнине, яланах кăшт хĕрĕнкĕ,— час-часах ресторанта пулаççĕ, халăх хушшинче хăйсене тивĕçсĕр тыткалаççĕ, хĕрсене кӳрентереççĕ, çынсемпе хăр-хар калаçаççĕ, хирĕç чĕнсен юнаса хăратма та пăхаççĕ.

Анчах пирĕн тӳрĕ кăмăллă çынсем çакăн пек ĕçсĕр çапкаланса çӳрекен вĕçкĕнсене юратмаççĕ, тӳсме пултараймаççĕ вĕсене! Çавăнпа та часах çак «капăр каччăсем» пирки милицие темиçен алă пуснă хут пынă: паразитла пурăнаççĕ, ытлашши иртĕнеççĕ, хăйсем пур чухне те укçаллă, тĕрĕслесе пăхмалла мар-ши вĕсене? Çакăн хыççăн «капăр каччăсене» сăнама тытăннă, анчах вĕсене халлĕхе тӳррĕн айăплама, закон тăрăх ответ тыттарма ытла уçăмлă сăлтавах пулман-ха çав. Матроспа Артист вĕрентнĕ пек, вĕсем питĕ асăрханса «ĕçленĕ», нихçан та пĕр вырăнта икĕ преступлени туман,— кĕçĕр пĕр çĕрте, пĕр вунă кунтан тепĕр çĕрте çаратнă, яланах тата улах вырăнта, милици посчĕсенчен аяккарах, тĕттĕм кĕтессенче. Камăнне — сехет, камăнне — укçа, хăшĕсенне ылтăн çĕрĕ тăпăлтарса илнĕ, пиншак, жакет е кофта лайăхрах пулсан, вĕсене те тиркесе тăман. Маланисĕр пуçне, вăрланă япаласене «йышăнаканнисем» вĕсен татах та пулнă...

Ик-виçĕ хут вĕсем чут çеç лекмен, вĕсене хытă хăваланă, анчах, çамрăк та патварскерсем, хăйсене хăвалакансенчен вĕсем ним те мар тарса ӳкме пултарнă. Хăй-

сем пек каласан, çакнашкал «кроссем» хыççăн вара пĕр хушă лăпланса пуrăннă пек пулнă.

Анчах, хăй каларăш, вăрă тем пек ăста вăрласа пурăнсан та, унăн шăпи тулать çав, лекетех вăл...

## 11

«Капăр каччăсем» çĕрле пырса тĕпĕртетнĕ хыççăн, пĕр эрне пек иртсен, Малани таçта кайма хатĕрленчĕ. Каç пулсанах вăл çенĕкрен икĕ пысăк чăматан йатса кĕртрĕ, ăнсăртран уçăлса каясран вĕсене чĕнсемпе хĕреслесе çыхрĕ. Тепĕр кунне вара, хĕвел тин çеç хĕрелсе тухма пуçланă вăхăтра, ирхи тутлă ыйхăпа çывăракан Илюка хулпуççинчен силлесе вăратрĕ:

— Мана пристане çитиччен ăсатса яр-ха...

— Эс ăçта каятăн? — йăпăр-япăр тăрса ларчĕ Илюк.

— Атăл тăрăх анаталла кайса килмелли пур-ха. Мăнаппа чирленĕ тет, çавăн патне çитмелле. Нумайлăха мар, ик-виç кунлăха кăна.

— Эп пĕчченех юлатăп-и?

— А мĕн, эс пĕчĕк ача мар вĕт! Çимеллисем пур сан валли. Сĕтелте ик пуханка çăкăр, селедка, чей ĕçме «подушки». Асту, килтех лар, ниçта та ан кай, кĕтмен çĕртенех хăвна шыракансен куçĕ тĕлне пулăн тата. Вара пропал эсĕ! — асăрхаттарчĕ Малани.— Киле никама та ан кĕрт, хуçи çук, кĕртме хушман тесе кала та — ĕçĕ пĕтрĕ... Анчах пĕрре-пĕрре икĕ каччă килсе шаккама пултараççĕ, вĕсене кĕртесех пулать.

— Мĕнле уйăрса илес-ха манăн? Те кĕртме юранпсем шаккаççĕ, те кĕртме юраманнисем? — тĕлĕнерех ыйтрĕ Илюк.

— Эсĕ вĕсенчен: «Кам унта?» — тесе ыйт, вĕсем сана хирĕç: «Вербовщиксем»,— тесе калĕç. Çитменнине, вăл каччăсем алăкран мар, ак çак малти чӳречерен шаккамалла.— Малани Илюк çине пăхса кăмăллăн кулса илнĕ пек турĕ.— Чеелĕх вăл пирĕн, кирлĕ-кирлĕ мар çынсем тăрук килсе кĕресрен эпир юри çавăн пек калаçса татăлнă.

— Çыннисем — камсем вара вĕсем?

— Питĕ шанчăклăскерсем. Вербовкăпа ĕçлеме яма районсем тăрăх рабочисем пухса çӳреççĕ те хулана таврăнсан яланах ман пата кĕреççĕ. Укçине лайăх тӳлеççĕ...

Илюк унăн сăмахĕсене пĕтĕмпех ĕненчĕ.

Часах вĕсем пĕрер чăматан çĕклерĕç те, çенĕк алăкне питĕрсе тухса, ансăр пралуксем тăрăх Атăл еннелле

утрӗҫ. Ҳаль ҫеҫ вырӑн ҫинчен тӑрса тухнӑ Йлюка малтан ирхи сулхӑн ҫӳҫентерсех илчӗ, анчах кивӗ больница тӗлнелле ҫитнӗ ҫӗре унӑн ҫамки ҫине шултра тар тапса тухрӗ, ҫурӑмӗ те нӳрленчӗ: чӑматанӗ питӗ йывӑр иккен. Мӗн чикнӗ-ши унта Малани? Илюк ӑна пӗлмест. Анчах чӑматана вӑрланӑ япаласем чыхса тултарнине, халӗ Малани вӗсене «вырнаҫтарма» кайнине пӗлнӗ пулсан, Илюк пӗр утӑм та туман пулӗччӗ ҫав...

Вӗсем, пристане ҫитсе билет сутакан касса патне пырсан, унта сасартӑк пачах кӗтмен ҫӗртен хайхи «капӑр каччӑсене» тӗл пулчӗҫ. Пӗри, симӗс пиншакли, темшӗн сылтӑм куҫне марльӑпа ҫыхнӑ, унӑн питҫӑмартине те ик-виҫ ҫӗртен хытах чавса илнӗ.

— Ай-уй, Жорка, татах мӗн пулчӗ капла? — тӗлӗнсе ыйтрӗ Малани.

— Каҫхине пӗрисемпе кӑштах кӗрешсе илме тиврӗ-ха! — терӗ каччӑ.

— Кунта мӗн тума килтӗр тата ирех? Таҫта кайма шут тытрӑр-им?

— Шут пур-ха ҫав. Кӑштах уҫӑлса ҫӳрес килет.

— Анаталла-и, тӑвалла-и?

— Пурӗпӗр. Аҫталла пӑрахут малтантарах пулать... Эсӗ ху хӑш еннелле ярӑнтаратӑн тата?

— Мӑнаппана курманни нумай пулать-ха,— терӗ те Малани йӑл кулса илчӗ.— Кӑштах кучченеҫ кайса парас тетӗп....

— Ӑнланатӑп! — куҫне хӗссе илчӗ Жора.

Ҫав вӑхӑтра дебаркадерӑн кайри пайӗнчен виҫҫӗн — лайӑх костюмсемпе шлепкесем тӑхӑннӑ икӗ ҫамрӑк арҫынпа пӗр илемлӗ, сап-сар ҫӳҫлӗ, кӗрен плащ тӑхӑннӑ хӗр утса тухрӗҫ. Вӗсем касса патӗнче калаҫса тӑракан «капӑр каччӑсемпе» Малани тӗлне ҫитсен чарӑнчӗҫ те, арҫынсенчен пӗри хуллен кӑна:

— Чӑрмантарнӑшӑн каҫарӑр, анчах та сирӗн, ҫамрӑк ҫынсем, халех пирӗнпе пӗрле пымалла пулать,— терӗ.

Хӑй ҫавӑнтах шалти кӗсйинчен хӗрлӗ хуплашкаллӑ пӗчӗк кӗнеке кӑларса кӑтартрӗ. Вӑл унӑн службӑри документчӗ имӗш.

— Мӗн тума? — шлепкеллӗ ҫын ҫине куҫ харшисем айӗн пӑхса ыйтрӗ Жора.

— Ӗҫ пур,— терӗ лешӗ малтанхи пекех лӑпкӑн.

— Мӗнле ӗҫ?

— Ӑна вырӑна ҫитсен пӗлме пултаратӑр.

Жора шуралса кайрӗ. Макспа Сержик сӑнӗсем те

улшӑнчӗҫ. Тавҫӑрса илчеҫ енте вӗсем хӑйсене ытахальтен чӗнменнине...

Малани те кунта ырӑ пулас ҫуккине ӑнланчӗ пулас. Вӑл, чӑматанне хӑвӑрт кӑна стена ҫумнерех сиктерсе, ӑна урисемпе картласа тӑчӗ.

«Уголовнӑй розыск агенчӗсем кусем, урӑх никам та мар...— шухӑшларӗ вӑл.— Хама та ҫаклатса каймасан юрать-ха... Вара — пӗтрӗ пуҫ! Тӗрмерен хӑтӑласси пулас ҫук...»

Ҫав самантрах вӗсем патне тата икӗ милиционер пырса тӑчӗҫ.

— Ну, кайрӑмӑр,— терӗ шлепкелли, пуҫӗпе ҫыран еннелле сулса илсе.

«Капӑр качча́сен» ним тумалли те юлмарӗ. Виҫҫӗшӗ те, сиксе чӗтреме тытӑннӑскерсем, милици ҫыннисемпе пӗрле пристань ҫинчен ҫыраналла утрӗҫ.

— Тур ҫырлах, тур ҫырлах, мӗн пулчӗ капла, мӗншӗн тытса кайрӗҫ ку ачасене? — пӑшӑлтатса илчӗ Малани.— Каҫхине пӗрисемпе тытӑҫса илтӗмӗр терӗҫ, ҫавӑншӑн пулинех... Ай-ай, шалккӑ-ҫке! Мӗн тери лайӑх ачасемччӗ!..

Илюк Малани ҫине пӑхрӗ те ҫав тери тӗлӗнчӗ: унӑн та ҫын сӑнӗ юлман, ахаль чух анис пек хӗп-хӗрлӗ питҫӑмартисем кӗл тӗслӗ пулса кайнӑ, тутисем те кӑн-кӑвак, чӗтреҫҫӗ, куҫӗсем кӗҫ-вӗҫ ҫамки ҫине сиксе тухас пек чарӑлнӑ.

— Эсрелсем мар-и, ара, вӗсем...— терӗ Малани хуллен, милицисем качча́сене хӑвӑрт кӑна машина ҫине лартса илсе кайнине пӑхса.

— Камсем? — ыйтрӗ Илюк.

— Камсем пултӑр, милицисем! Вӗсем ҫынна, ним сӑлтавсӑрах тытса хупса, тӗрмере ҫӗртме пултараҫҫӗ! Куҫӑм нихҫан та ан куртӑрччӗ вӗсене!

— Тен, ку ачисем чӑнах та айӑпа кӗнӗ? — иккӗленнӗ пекрех ыйтрӗ Илюк.

— Ан лӑпӑртат кирлӗ мара! — ун ҫине хаяррӑн пӑхса илчӗ Малани.— Мӗнле айӑп пулма пултартӑр ҫакӑн пек культурнӑй ачасен?

— Пӗри куҫне ҫыхса лартнӑ...

— Вӑл ниме те пӗлтермест! Пӗр-пӗр юлташӗпе хӗр пирки тӳпелешсе илнӗ пуль-ха. Ун пекки сахал пулать-и каччӑсем хушшинче? Ҫамрӑк-ха эсӗ, ӑнланаймастӑн ӑна!

Илюк текех чӗнмерӗ. Кам пӗлет, тен, Малани чӑнах та тӗрӗссине калать?

Анчах Малани хăй те çав «культурнăй» ачасене милицисем ним сăлтавсăр тытса кайманнине питĕ лайăх ăнланнă, ăна пĕтĕм чун-чĕрипе туйнă. Темскер тунах çав каччăсем кĕçĕр, ахальтен ма-ха Жорăн куçне çыхмалла пулнă? Мĕншĕн унăн пичĕ тăрмаланса пĕтнĕ? Мĕн пирки виççĕшĕ те хĕвел тухнă-тухманах пристане персе çитнĕ? Ăçталла пăрахут маларах пулать, çавăнта каятпăр терĕç? Эппин, вĕсем хуларан часрах тухса шăвăнма ĕмĕтленнĕ!

Темиçе çул хушши вăрăсемпе çыхланса пурăннă Малани йăнăшман: иртнĕ каçхине «капăр каччăсем» пĕр тĕттĕм урамра виçĕ хĕре хурахла тапăнса çаратнă. Вĕсем хăйсен тискер ĕçне мĕнле тунине никам та курман, илтмен, анчах...

...Çур çĕр иртсен пĕр сехет те вăтăр минутра милици уйрăмне сап-сарă çӳçлĕ, илемлĕ кĕлеткеллĕ хĕр чупса пырса кĕнĕ. Унăн хитре кăвак кофти икĕ çĕртен çурăлса аннă, сулахай аллин пуç пӳрнинчен юн сăрхăннă, çара мăйĕ çинче те хĕрлĕ йĕр палăрнă. Хăй инçетрен чупса килнĕ пулмалла — антăхса каяс пек хашканă, ăна сывлăш çавăрса илме те йывăр пулнă. Вăл ура çинче те аран тăнă.

Милици уйрăмĕнчи дежурнăй, хурарах сăнлă, яштака пӳллĕ çамрăк лейтенант, çакна курса часрах сĕтел хушшинчен сиксе тухнă та, сар çӳçлĕ хĕре диван çине лартса, графинран шыв ярса панă. Хĕр ăна лăнкăртаттарсах ĕçсе янă.

— Мĕн пулнă сире, юлташ? — ыйтнă унтан лейтенант.

— Çаратрĕç!..— йывăррăн сывласа илнĕ хĕр.

— Хăçан? Ăçта? Камсем?

— Вунпилĕк-çирĕм минут каялла Нагорнăй урам пуçламăшĕнче,— васкаса каласа пама тытăннă хĕр,— виççĕн тапăнчĕç... Эпир те виççĕнччĕ, виçĕ хĕр-тантăш. Малтан кинора, кайран ташă площадкинче пултăмăр, унтан, перекет касси патĕнчен пăрăнса тухса, Нагорнăй урамĕ тăрăх хамăр хваттер еннелле утрăмăр...

Хĕр калаçма пуçласанах, тахăш пӳлĕмрен тата икĕ милици çынни тухса ăна итлеме тытăннă.

— Эпир васкамасăр, хуллен кăна юрласа пытăмăр, мĕншĕн тесен ыран,— ну, халь паян пулать ĕнтĕ,— пурин те канмалли кун...

— Хăвăр ăçта ĕçлетĕр эсир?

— Эпир ĕçлеместпĕр-ха, Шупашкара Хусанти мед-

институтран уйăх çурăлăха практикăна килтĕмĕр, ик эрне çеç пурăнатпăр-ха кунта.

— Унтан мĕн пулчĕ? — васкатнă дежурнăй.

— Хамăр пурăнакан урампа кăшт кайсассăнах, пĕр пĕчĕк пралукран пирĕн ума сасартăк виççĕн тухса тăчĕç. Виççĕшĕ те маскăсем тăхăннă, сăмсисемпе тутисем çеç палăраççĕ, авалхи романсенчи хурахсем пекех! «Стоп, хитре пикесем!» — терĕ пĕри. Ирĕксĕрех чарăнтăмăр. Ман хĕр-тантăшсем çамрăкрах та, тӳрех ман çурăм хыçне чакса тăчĕç. Хам та хăрарăм, тунмалли çук. Çапах та çаксенчен: «Мĕн кирлĕ сире, ма пӳлетĕр пирĕн çула?» — тесе ыйтрăм. «Ан хăрăр, сире чуптума шутламастпăр, ун пек нахалсем мар эпир, анчах сехетĕрсене вĕçертсе парăр, вĕсем пирĕн!» — терĕ бандитсенчен пĕри. «Мĕншĕн, мĕн сăлтавпа? Епле намăс мар сире хĕрсене çаратма, эсир каччăсем вĕт-ха!» — кăшкăртăм эпĕ. Анчах бандит ман çывăхарах пычĕ те çĕçĕ кăларса кăтартрĕ. Хăйĕнчен эрех шăрши кĕрсе кайрĕ... «Мораль вуласа ан тăр, барышня, хыв часрах сехетне, унсăрăн сунас ерме пултарать! Кăшкăрашма ан шутлăр тата, вара пушшех сывлăх пăсăлать!» — терĕ темле хăрăлтатакан сасăпа. Çавăнтах мана сулахай ал тунинчен çатăр! ярса тытрĕ. Унăн тусĕсем ман юлташсене çавăрса тытрĕç. Лешсем хирĕçсе тăмарĕç те пулас, кĕрешни-мĕн пулмарĕ вĕсен, анчах эпĕ тăруках парăнмарăм. «Ирсĕр, выльăх!» — терĕм те, бандит ман сулахай алла пăрма пуçласанах, эп ăна сылтăм алăпа питĕ хытă çутăлтарса ятăм. Вара вăл, киревсĕр сăмахсем каласа, мана чышса ӳкерчĕ те хăй ман çине ӳксе пăвма пикенчĕ. Ман алăсем ирĕклĕччĕ, çав тери тарăхса, бандита питĕнчен çапма, тăрмалама тытăнтăм, маскине çурса антартăм, ман пӳрне ун куçнех кĕрсе кайрĕ пулмалла, анчах унччен те пулмарĕ — юлташĕсем чупса пычĕç те — алăри ылтăн сехете тăпăлтарса илчĕç, унтан вара пĕр çеккунт та тытăнса тăмарĕç, тĕттĕм пралукалла тапса сиксе, куçран çухалчĕç...

Эп, çĕртен тăрса, хĕр-тантăшсем патне чупса пытăм, вĕсем ни вилĕ, ни чĕрĕччĕ... «Часрах милицие пĕлтерес, атьăр телефонпа шăнкăравлатпăр!» — терĕм вĕсене, анчах çывăхра ăçта телефон пуррине пĕлмерĕмĕр, çавăнпа та эп сирĕн пата чупрăм...

Хĕр калама чарăннă та, хальхинче сĕтел çинчи графинран хăех шыв ярса ĕçсе, çав тери кӳреннĕ сасăпа хушса хунă:

— Ытла та тарăхмалла-çке, юлташсем! Ман атте

Совет Çарĕн командирĕ, кадровăй офицер пулнă, Мускав патĕнче çапăçса пуçне хунă. Ылтăн сехете вăл вăрçă пуçланас умĕн, эп çуралсан, ятарласа илнĕ, ун çине ман ята çыртарнă, вăрçа кайнă чух та аннене асăрхаттарса хăварнă: пурнăçра темле йывăр килес пулсан та, Светлана сехетне ан сут, вăл ӳсичченех усра тенĕ... Анне чăнах та упраса усранă ăна. Анчах халь акă...— Хĕр сасартăк пĕчĕк ача пек хурланса макăрса янă.— Такам шуйттанĕ... хура юнлă бандит... ман пурнăçри чи хаклă япалана, аттерен юлнă пĕртен-пĕр парнене... сутса ĕçсе ярать...

— Лăпланăр, юлташ... Светлана, ытлашши пăлханма кирлĕ мар,— тенĕ ăна дежурнăй, ун çине кăмăллăн пăхса.

— Епле пăлханас мар-ха...

— Тупăнать сирĕн сехет, тавăрса паратпăр эпир ăна сире.

— Ой, мĕн тери тав тунă пулăттăм эпĕ сире уншăн, лейтенант юлташ!..

Дежурнăй, сĕтел ещĕкĕнчен хут кăларса, Светлана халь çеç каланисене çырма тытăннă.

— Итлĕр-ха, юлташ... Эсир хăвăра çаратакансем еплерех тумланнине, вĕсен сăнĕсене астуса юлаймарăр-и?— ыйтнă вăл çырнă май.

— Пурне те мар, анчах хампа çапăçаканнине питĕ лайăх астуса юлтăм,— тенĕ хĕр,— эп ăна çĕр çын хушшинче те тӳрех палласа илме пултаратăп пулĕ! Унăн тăрăхла пичĕ те, курпунтарах сăмси те, хулăн тутисем те куç умĕнчех. Ун пек нĕрсĕр каччă ĕмĕрне те курман эпĕ...

— Вăл мĕнлерех тумланнине те астăватăр-и?

— Астăватăп.

— Ку питĕ аван...— Офицер пĕр хушă темле шухăша кайнă пек пулса ларнă, унтан каллех ыйтнă:

— Эсир ирхине пирĕн пата килме пултаратăр-и?

— Пултаратăп. Кирлĕ пулсан...

— Кирлĕ пулать çав. Халь эсир киле кайса кăштах канăр, ирхине вара, ну, пĕр пиллĕк çурă-ултă сехетсенче эпир сире кунта кĕтетпĕр. Юрать-и?

— Тархасшăн!

— Эппин, калаçса татăлтăмăр?

— Тĕп-тĕрĕс... Халлĕхе сывă пулăр эппин.

— Сывă пулăр!

Хĕр тухса кайсанах дежурнăй милици уйрăмĕн начальникĕ патне телефонпа шăнкăравласа, кĕçĕр хулара

мĕн пулса иртни çинчен каласа кăтартнă. Хăй каласа пĕтерсен, чылайччен итлесе тăнă, вăхăтран вăхăта çеç: «Ăнланатăп... çапла, çапла...» — текелесе илнĕ. Начальник ăна кăтартусем панă ĕнтĕ.

...Ирхине ирех, Атăлăн анат енчи кăваккăн курăнакан вăрмансем хыçĕнчен хĕвел тин çеç тухма пуçланă вăхăтра, Роза Люксембург урамĕпе виççĕн утса пынă: лайăх костюмсем, шлепкесем тăхăннă, хитре галстуксем çыхнă икĕ çамрăк арçын тата кĕрен плащ тăхăннă сапсарă çӳçлĕ те пысăк сенкер куçлă хĕр. Арçынĕсем ăна ик енчен хулĕсенчен тытнă, хăйсем пĕрмай хавассăн калаçнă, кула-кула илнĕ.

Атăл хĕррине çитсен, вĕсем йăпăртлăха чарăнса пĕрре аналалла, тепре тăвалла пăхса илнĕ, унтан пристань патнелле анса кайнă. Кунта вĕсем пĕр-икĕ хутчен дебаркадер тавра çаврăннă, унтан çӳлти хута хăпарса уткаласа çӳреме тытăннă.

Çак çамрăк çынсем — иккĕшĕ те милици лейтенанчĕсем, хĕрĕ — кĕçĕр ылтăн сехетсĕр тăрса юлнă Хусан студентки пулнă. Аякран пăхсан, ку арçынсем çак сар çӳçлĕ хĕре юратса пăрахнă «кавалерсем» пек курăннă, вĕсене никам та милицире ĕçлекенсем тесе шутлама пултарайман.

Палуба тăрăх ик-виç минут пек çӳрекелесен, вĕсем, аялти мостки тĕлĕнче чарăнса тăрса, çыран çинчен пĕр самантлăх та куç илмен. Лейтенантсемпе пĕрле сар çӳçлĕ студентка та, пристань çинелле пыракан кашни çынна сăнаса, çĕрле хăйне çаратакана шыранă...

Часах хĕвел тухса Атăл çине ылтăн тĕс ӳкнĕ, пристань таврашĕнче халăх йышланса каллĕ-маллĕ кумма тытăннă, халăх хушшинче уйрăм çынсене палламашкăн кансĕр пулнă, çавăнпа та лейтенантсем студенткăна çырана тухма чĕннĕ, кунта вара вĕсем, мостки вĕçне пырса, карлăк çине тайăнса тăнă. Нумай çын иртнĕ вĕсен тĕлĕпе, мĕншĕн тесен кĕçех туран та, анатран та пăрахутсем килмелле пулнă, анчах милицисене «кирлĕ çынсем» курăнман. Паллах ĕнтĕ, çав «кирлĕ çынсем» пристань çине пымасан та пултарнă — çĕрле çаратнă хыççăн вăрă тем шухăш тытать, тем тăвать, таçта каять — ăçтан пĕлетĕн ăна? Милици çыннисем кĕçĕр студенткăсене çаратнă хурахсене ăнсăртран тĕл пуласса шанса çеç килнĕ кунта, мĕншĕн тесен çавнашкал «телейлĕ тĕлпулусем» пĕрре кăна мар пулнă.

...Сасартӑк студентка хӑйӗнчен сылтӑм енче тӑракан лейтенанта хулӗнчен тытса хытӑ пӑчӑртанӑ.

— Пӑхӑр! — пӑшӑлтатса илнӗ вӑл.

Вӗсен тӗлӗпе пӗр куҫне марльӑпа ҫыхнӑ симӗс пиншаклӑ лутрарах йӗкӗт иртсе пынӑ. Вӑл ҫара пуҫӑн пулнӑ, аллисене пиншак кӗсйисене чикнӗ, шӑнса кайнӑ ҫын пек, курпунне кӑларнӑ, хӑй ҫӗрелле пӑхнӑ.

— Йӑнӑшмастӑр-и? — шӑппӑн ыйтнӑ лейтенант.

— Ҫук, йӑнӑшмастӑп! — тенӗ студентка ҫирӗппӗн.— Ҫавах вӑл, ҫавах!

Вӗсем вара куҫне ҫыхнӑ йӗкӗт хыҫҫӑн утнӑ. Лешӗ тӳрех дебаркадерӑн иккӗмӗш хутне хӑпарнӑ, буфет патне пырса, пӗр стакан хӗрлӗ эрех ӗҫнӗ, унтан, Атӑл енчи палуба ҫине тухса, унталла-кунталла пӑхнӑ — ӑҫтан та пулин пӑрахут килессе сӑнанӑ пулмалла. Пӗр-ик минут пек тӑркаласан, вӑл аяла анса пристанӗн кайри вӗҫне тухнӑ. Кунта ӑна хӑй пекех ҫӑмламас пуҫлӑ икӗ ҫамрӑк кӗтсе тӑнӑ. Вӗсем пӗр-пӗринпе темскер мӑкӑртатса илнӗ те билет сутакан касса еннелле утнӑ.

Унтан мӗн пулнине вулакан пӗлет ӗнтӗ...

## 12

...Ҫичӗ сехет тӗлӗнче туран питӗ илемлӗ пӑрахут анни курӑнса кайрӗ. Илюк ун ҫине куҫ илмесӗр пӑхса тӑчӗ — Атӑл тӑрӑх пӑрахут мар, темӗн пысӑкӑш ҫурт ярӑнса килнӗн туйӑнчӗ ӑна. Кун пеккине вӑл халиччен курманччӗ-ха,— пӑрахучӗ виҫӗ хутлӑ пулнӑ. Кашни хутӗнчех вӗҫӗмсӗр чӳрече, шутласа та кӑларас ҫук.

«Сахалтан та пин ҫын вырнаҫать пуль ун ҫине...— шухӑшларӗ арҫын ача.— Ытла та чаплӑ-ҫке вӑл!»

Темиҫе минутран пӑрахут, хӑватлӑн кӑшкӑрса ярса, Атӑл варринчен Шупашкар еннелле ҫаврӑнчӗ те кӗҫех пристань ҫумне мӑнаҫлӑн пырса тӑчӗ.

Анчах ҫав вӑхӑтра Илюка ҫурӑмӗнчен тӗртрӗҫ. Вӑл каялла ҫаврӑнса пӑхрӗ те Маланин хӑрушла чарӑлса кайнӑ, темле сиккелекен куҫӗсене курчӗ.

— Ҫӑварна карса ан тӑр, чӑматанна йӑт та — шу малалла, васкарах кӗрес пулать, унсӑрӑн эпӗ вырӑнсӑр юлатӑп унта,— шӑл витӗр пӑшӑлтатса илчӗ хӗрарӑм.

Вара вӗсем пӑрахут ҫинчен халӑх тухса пӗтнӗ-пӗтменех трап тӑрӑх хӗсӗнкелесе иртрӗҫ те, пӑрахут хӳри еннелле кайса, чӑматанӗсене темле пысӑк ещӗксем хыҫне лартрӗҫ.

— Ухх! — тарӑннӑн сывласа ячӗ Малани, тарланӑ

питне-куҫне тутӑр вӗҫӗпе шӑлса.— Кӗриччен кӗрессӗн туйӑнмарӗ...

— Ма? — тӗлӗнерех пӑхрӗ ун ҫине Илюк.— Ара, эс билет илтӗн-иҫ, билетлисене пурне те лартаҫҫӗ пулӗ?

— Халӑхӗ ытла нумай та... Хӗстерсе вӗлерӗҫ-и, мосткине ҫинчен шыва тӗксе ӳкерӗҫ-и... Тем те пулма пултарать кун пек ҫӗрте, хӑрарӑм.

Каллех суйрӗ Малани Илюка. Уншӑн мар хӑранӑ вӑл. Унӑн чӑматанӗсенче йӑлтах вӑрланӑ япаласем пулнӑ-ҫке-ха, ҫавӑнпа та леш «капӑр каччӑсене» милици ҫыннисем илсе кайнӑ чух Маланин кӗҫ-вӗҫ хӑйне ярса тытасран чунӗ юлман. Ҫавӑнпа питӗ васканӑ вӑл, ҫавӑнпа пӗрмай — вӑрӑсен яланхи йӑлипе — унӑн-кунӑн пӑхнӑ, таврара мӗн пулса иртнине пӗтӗмпех курнӑ. Ҫав вӑхӑтра хӑйшӗн хӑрушлӑх пуррине кӑшт сиснӗ пулсассӑнах, вӑл, чӑматансем патӗнче Илюка пӗр-пӗчченех тӑратса хӑварса, хӑй аяккалла тапса сикнӗ пулӗччӗ, вӑрланӑ япаласемпе лекнӗ Илюка кайран хӑть те мӗн туччӑр, мӗн хӗрхенмелли пур-ха Атӑл хӗрринче тӗл пулнӑ ют ачана?

Анчах ун пек-кун пекки нимӗн те пулмарӗ. Малание никам та тытмарӗ, Илюк пулӑшнипе пӑрахут ҫине чиперех кӗрсе вырнаҫрӗ вӑл. Часах акӑ пӑрахут пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ шӑхӑрать те тапранса каять, вара ним хӑрамалли те пулмасть унӑн...

Вӑл чӑматан ҫине ларса хӑвӑрт кӑна пирус чӗртсе ячӗ, унтан, кӑшт лӑпланнӑ пек пулсан, хӑй умӗнче тӑракан Илюка ӑс пама тытӑнчӗ:

— Асту ӗнтӗ, ачам, килтех лар, ниҫта та ан тух. Хӑвах куртӑн вӗт — епле тыта-тыта каяҫҫӗ. Эсӗ те ҫав ачасем пекех лекме пултаратӑн. Хӑвна милицисем шыранине ан ман,— ҫын вӗлернӗшӗн нихҫан та каҫармаҫҫӗ, пӗлсех тӑр ҫавна. Анчах манӑн сан пурнӑҫна ҫамрӑклах пӗтерсе хурас килмест, хамӑн ача пекех хӗрхенетӗп сана, хам патра та ҫавӑн пиркиех усратӑп...

Ҫак самантра пӑрахут хӑлхана ҫурса ямалла кӑшкӑртса ячӗ.

— Ну, халь кай ӗнтӗ,— терӗ Малани, ура ҫине тӑрса.— Хулана ан тух, кунтан шыв хӗррипе кайса леш вӑрӑм пусма тӑрӑх хӑпар. Усал куҫ тӗлне пуласран тур хӑтартӑрах сана. Эп каланӑ вербовщиксемсӗр пуҫне киле никама та ан кӗрт, вӗсем ӑҫтан пырса шаккассине астӑватӑн пуль?

— Астӑватӑп...

— Кай эппин. Тӳрех киле чуп!

— Эсӗ ху хӑҫан таврӑнатӑн?
— Каларӑм-ҫке, нумай тӑмастӑп, ик-виҫ кунтан ытла иртмӗ...
Пӑрахут тата тепӗр хут кӑшкӑртрӗ. Каяканссне ӑсатма пынӑ ытти ҫынсемпе пӗрле Илюк васкасах ҫырана тухрӗ те, Малани хушнӑ пек, ниҫталла пӑрӑнмасӑрах ун килнелле утрӗ. Киле ҫитсен вара калинккене шал енчен тӗкӗлерӗ, ҫенӗк алӑкне урлуҫҫипе питӗрчӗ те тӳрех кӑмака ҫумӗнчи ҫӗтӗк диван пекки ҫине месерле выртрӗ. Темшӗн-ҫке хӑй ҫав тери ывӑннӑ пек туйӑнчӗ ӑна.
Пӗр сехет каялла пристань ҫинче «капӑр каччӑсене» милицисем тытнине курни унӑн пӗтӗм чун-чӗрине хускатрӗ, калама ҫук пӑлхатса ячӗ.
Тем тесен те, ҫав йӗкӗтсене милици ахальтен арестлемен ӗнтӗ, темскер тунах вӗсем, пысӑк айӑпа кӗнӗ! Малани вӗсене хӳтӗлесе калаҫрӗ пулин те, Илюк унӑн сӑмахӗсене ӗненсех каймарӗ... Каллех ӑна ҫав йӗкӗтсем пӗр каҫхине Малани патне шавлӑн пырса кӗни, хӑйсем Сӗнтӗрвӑрринче виҫӗ талӑк ларса тухни ҫинчен темле килӗшӳсӗр вӗҫкӗнленсе калаҫни, Малание пӗр ывӑҫ тӗрлӗ сехетсем кӑтартни, унтан эрех ӗҫсе картла выляма тытӑнни аса килчӗ. Ун чухнех килӗшмерӗҫ вӗсем Илюка. Паян ав епле пулса тухрӗ тата...
Чӑнах та, мӗскер тунӑ-ши-ха вӑл ҫамрӑксем, мӗншӗн илсе кайрӗҫ вӗсене? Унтан сисмесӗрех вӑл хӑй ҫинчен шухӑшлама тытӑнчӗ... Хӑҫанччен тӑсӑлӗ ун ҫакӑн пек вӑрттӑн пурнӑҫ? Тӗрӗссипе, вӑл халь тӗрмере ларнӑ пекех пурӑнать, пӑшаллӑ хурал кӑна ҫук ун таврашӗнче. Ниҫта ан тух, никама ан курӑн... Кил хуҫи Малани паян та хытарсах хӑварчӗ: «Хӑвна милицисем шыранине ан ман... ҫын вӗлернӗшӗн нихҫан та каҫармаҫҫӗ...» Епле пурӑнмалла капла? Юрать-ха халлӗхе ӑна ҫак Малани усрать, ҫитерет-ӗҫтерет, анчах та ялан ун патӗнче пурӑнаймастӑн вӗт-ха, Илюкшӑн пулсан Малани никам та мар, ют ҫын кӑна! Мӗн шутпа усратӑр вӑл? Мӗн усси ӑна Илюкран? Ҫук, ҫук... Мӗн те пулин шухӑшласа тупасах пулать. Юрамасть кун пек пурӑнса... Юрамасть!..
Илюк пуҫне каллех (миҫемӗш хут ӗнтӗ!) милицие кайса хӑйне мӗн-мӗн пулни ҫинчен пӗтӗмпех каласа парас шухӑш пырса кӗчӗ. Ак халех тӑрса тухас, Малани пӳртне-ҫуртне питӗрес те, урамра тӗл пулнӑ пӗр-пӗр милиционер патне хӑюллӑн пырса, ӑна тӳрех калас:
— Милиционер юлташ, эпӗ — пысӑк айӑпа кӗнӗ ҫын, илсе кайӑр мана хӑвӑр начальниксем патне...
Илюк куҫӗсене хупса вӑрахчен ним хускалмасӑр выр-

тать, тĕлĕрсе кайнă пек пулать, анчах хăй уççăнах курать: акă вăл урам варринче тăракан милиционера çаппа каласа пачĕ, лешĕ малтан ун çине тĕлĕнерех пăхрĕ, унтан, хăй умĕнче преступник тăнине тавçăрса илсе, йăпăр-япăр кабурĕнчен пистолет кăларчĕ те: «Ут ман хыççăн!» — терĕ хаяррăн... Вĕсем урам варрипе пыраççĕ, Илюк — малта, милиционер ун хыççăн, хăй пистолечĕпе Илюка çурăмĕнчен тĕлленĕ. Урамри пĕтĕм халăх вĕсем çине тĕлĕнсе пăхса юлать... Мĕнле преступлени тунă-ши ку ача? Ах, путсĕр, çамрăклах милици аллине лекнĕ вĕт-ха!..

Сасартăк халăх хушшинчен хăйсен ялĕнчи Хура Хветле сиксе тухрĕ, чышкипе юнаса кăшкăрма тытăнчĕ:

— Аха-а, каттăршни, тинех лекрĕн-и?.. Питĕ лайăхха ку, шутсăр лайăх! Аннӳ те тахçанах тĕрмере пăнтăхать, халь ак сана та çаклатнă! Çав кирлĕ сире, çавă чух! Тинех сире ман ылхан пырса çитрĕ! Турă курать вăл, кура-ать!..

Милицие çитсен, ăна тӳрех тĕттĕм пӳлĕме тĕртсе кĕртрĕç те алăкне тул енчен шăнкăр-шанкăр питĕрсе илчĕç.

— Сакăр çул ларатăн çакăнта, хош-нехош сакăр çул хушши стенасенчи кирпĕчсене шутлатăн! — терĕ пĕри, сасси çĕтсе ларнăскер.

— Чим-ха, кам сасси ку? Питĕ палланă сасă-çке! Э, ара, ку Матви пиччене вĕлерне кач Илюксем патне унпа пĕрле пынă çын сасси вĕт! Ун чухне те çавăн пекех каларĕ вăл: «Хупаççĕ сана, хош-нехош шур çуртра кирпĕч шутлаттараççĕ...» Анчах кунта ăçтан килсе лекнĕ-ха çав ирсĕр çын? Илюка тытса килессе кĕтсе пурăннă-ши? Ун чухне Илюк Матви пиччене мĕнле тĕксе янине, лешĕ ӳксе пуçĕнчен юн юхтарса выртнине вăл курса тăчĕ вĕт-ха, свидетель пулатăп терĕ. Вăл ĕнтĕ, Илюка пуçĕпех пĕтерсе хурасшăнскер, пулманнине те пулнă тесе калама пултарать...

Илюк хăранипе тăрук вăранса кайрĕ те вашт! тăрса ларчĕ. Çамки йĕп-йĕпе, чĕри сиксе тухас пек тапать, сывлама йывăр.

— Вăт, мур тĕлĕкĕ! Курăнать те çав пур кирлĕ-кирлĕ мар...

Унтан вăл чылай хушă çĕрелле пăхса ларчĕ. Пуçĕнче унăн малтанхи шухăшсемех. Милицие кайсан лайăх пулать-ши е каймасан авантарах?.. Паллах, ăна унта тӳрех хупаççĕ, кайран суд тăваççĕ... «Çын вĕлернĕшĕн нихçан та каçармаççĕ!..» — каллех Малани сăмахĕ аса

килчĕ ăна. Капла пурăнса та ыррине кĕтсе илме çук. Тĕрминче те ларас килмест, пуçĕпех пĕтес пулать унта...

Ниçта та каймарĕ Илюк. Малани хушса хăварнă пек, вăл таврăниччен килтех ларма шут турĕ. Çакă вара унăн пурнăçĕнче тата тепĕр йăнăш пулчĕ, мĕншĕн тесен...

Анчах мĕншĕнне каярахпа калăпăр.

## 13

Виçĕ талăка яхăн Илюк пĕр-пĕччен читлĕхе хупса хунă кайăк пек пурăнчĕ. Малтанхи кунĕнче вăл ним тума, ниçта кайса кĕме пĕлмерĕ. Юрать-ха иккĕмĕш кунĕнче ăнсăртран çенĕкри тусанлă ещĕкре темиçе кивĕ кĕнеке тупăнчĕ. Вĕсенчен пĕри саккăрмĕш класс валли кăларнă вырăсла «Тăван литература» имĕш. Чăн та, кĕнекен малтанхи страницисем те, кайрисем те çук (вĕсене Малани Атăл хĕрринче кукăль сутнă чух чĕркесе пама çура-çура илнĕ ĕнтĕ), анчах çапах та вăл кĕнеке Илюка икĕ кун вулама çитрĕ.

Кĕнекесене питĕ юратаканскер, пĕр вулама тытăнсан, вăл хăйĕн пĕтĕм хуйхи-суйхи çинчен манса кайрĕ, ун куçĕ умĕнче хăй вуланă Фонвизин, Пушкин, Лермонтов, Гоголь произведенийĕсен геройĕсем çеç пулчĕç. Вĕсемпе пĕрле савăнчĕ вăл, вĕсемпе пĕрлех хурланчĕ, вырăнĕ-вырăнĕпе чунтанах кулчĕ. Çавна пула хăй уйрăм пӳртре упа пек пĕччен пурăнни питех сисĕнсе каймарĕ.

Виççĕмĕш каçхине, çур çĕр иртни икĕ сехет çитеспе, малти чӳречерен шăкăр-шăкăр-шăкăр тутарчĕç. Яланах сисĕмлĕ çывăракан Илюк çакна çийĕнчех илтрĕ.

«Ак хайхисем çитрĕç»,— терĕ вăл хăй ăшĕнче, Малани каласа хăварнисене астуса. Çапах та тӳрех алăк уçма каймарĕ, чӳрече патне пырса ыйтрĕ:

— Кам унта?

— Уç, эпир — вербовщиксем,— илтĕнчĕ ăна хирĕç хуллен калани.

— Халех...

Пӳрте икĕ арçын кĕрсе тăчĕç. Пĕри тӳрех çутă çутса ячĕ. Килнĕ çынсем иккĕшĕ те хăйсен сухалĕсене чылайранпах хырман пулмалла, пичĕ-куçĕсем темле хаяррăн курăнаççĕ. Кивĕрех кепкисене çамкисем çинех пусса лартнă, пĕри кăвак плащпа, тепри фуфайкăпа. Пĕри лутрарах, хулăн туталлă, сарлака питлĕ, самăр, тепри çӳллĕрех те лаша евĕрлĕрех — пичĕ ансăр та тăрăхла.

— Эс пĕчченех-им? Малаша ăçта? — ыйтрĕ пĕри, лутрараххи.

— Пĕчченех. Кил хуҫи хăйĕн мăнаппăшĕ патне кайса килетĕп терĕ. Тăватăмкун эп ăна пăрахут ҫине хамах лартса ятăм.
— Час таврăнать-и?
— Нумай тăмастăп терĕ...
Арҫынсем, таван килне килсе кĕнĕ пекех, аллисенчи чăматанĕсене урайне лартрĕҫ, хывăнчĕҫ, пĕри, ҫӳллĕреххи, ҫавăнтах ҫаннисене тавăрса, ҫенĕке тухрĕ — пит ҫума шут тытрĕ пулмалла. Анчах самантрах унăн кăмăлсăр сасси илтĕнсе кайрĕ:
— Эй, упăте ҫури, эсĕ, мĕн, шыв ĕҫмесĕрех пурăнатăн-им? Ниҫта пĕр тумлам шыв ҫук санăн!
— Кил хуҫи мана ниҫта та тухма хушман та...— терĕ Илюк.
— Халех колонкăна чуп, сиккипе!
«Колонкăна» тенĕ сăмаха Илюк ăнланаймарĕ, ҫавăнпа та пĕр хушă ним тума пĕлмесĕр, унăн-кунăн пăхкаласа тăчĕ.
— Мĕн, эс тăнран тухнă сурăх пек пуҫна пăркаласа тăратăн тата? Чуп часрах! — терĕ лутри, алăк ҫинелле кăтартса.
— Ăҫта чупмалла? — хăрама пуҫларĕ Илюк.
— Ăҫта пултăр? Шыв патне! Ай, хăвна кашкăрсем тытса ҫиесрен хăратăн-и?
— Ҫу-ук, хăрамастăп...
Илюк йăпăр-япăр витре йăтрĕ те урама сиксе тухрĕ. Ҫырма тĕпĕпе тăсăлакан урамра, ҫăра ҫулҫăллă мăн йывăҫсем айĕнче питĕ тĕттĕм иккен, ҫутă ҫĕртен тухнă хыҫҫăн пушшех нимĕн те курăнмасть. Чăнах та хăрамалла...
Куҫсем тĕттĕме кăштах хăнăхчăр тесе, вăл хапха юпи ҫумне сĕвенсе тăчĕ. Халь ҫеҫ килсе кĕнĕ ҫынсем хăйпе тӳрех хăр-хар калаҫма тытăнни ăна ҫав тери килĕшмерĕ, пăлхатсах ячĕ. Пĕри тӳрех упăте ҫури терĕ, тепри тăнран тухнă сурăхпа танлаштарчĕ... Мĕншĕн? Кил хуҫи Малани те ҫывăх ҫын мар, анчах вăл Илюка пĕрре те ун пек-кун пек каласа кӳрентермен-ха... Мĕнле усал ҫынсем вара вĕсем? Малани каланă тăрăх, хăйсем тĕрлĕ вырăнсене ĕҫлеме яма ҫынсем пухса ҫӳреҫҫĕ. Ҫав ҫынсемпе те ҫавăн пекех ним йĕркесĕр калаҫаҫҫĕ-ши вĕсем?
Илюк ассăн сывласа илчĕ те ҫĕтĕк тротуар тăрăх тăвалла, водопровод колонки патнелле, утрĕ. Анчах шыв ăсса таврăнсан та лешсем унпа кăмăллăн калаҫмарĕҫ.
— Ну, ачамккă, мĕшĕлти иккен эсĕ, сана вилĕм шы-

рама çеç ярас пулать! Сан аннӳ те ялти чи кахал хĕрарăм пуль ĕнтĕ, ахаллĕн эсĕ вăрт-вартах çаврăнкаланă пулăттăн! — терĕ лутри.— Е вăл сана ытла сахал хĕненĕ-и?

Хăйĕн амăшне çавăн пек тиркени Илюк чĕринех пырса тиврĕ, унăн çавăнтах: «Усалпа ан асăннă пултăр ман аннене, вăл ун пек мар, колхозра чи хастар çынсенчен пĕри!» — тесе каласси килчĕ, анчах нимĕн те шарламарĕ, тӳссе ирттерчĕ, тутине пăчăртарĕ те кăмака хыçне кĕрсе выртрĕ.

Халь ăна хăй çак çынсене кăштах паллантă пек, вĕсене таçта курнă пек туйăнма пуçларĕ. Анчах ăçта курнă-ши, хăçан?..

Илюк çине тăрсах аса илме тăрăшрĕ. Ялта чухне курма пултарайман вĕсене, ку — паллă, хулана килсен çеç курнă ĕнтĕ... Вăрахчен шухăшласа выртнă хыççăн ун умне темле тĕтре витĕр курăнакан картина тухса тăма пуçларĕ: çак пӳртре пĕрремĕш хут килсе кĕнĕ каç темле çынсем вăйлă ĕçкĕ турĕç, хăрушла юрларĕç, сикрĕç...

Çапла, çапла, çавăн чухне асăрхаса юлнă Илюк ку çынсене. Унтанпа курман. Питĕ килĕшӳсĕр çынсем иккен вĕсем!

Ирхине çак çĕрлехи хăнасем нумай çывăрчĕç, ĕнер питĕ ывăнса килнĕ пулмалла. Вĕсем тăриччен Илюк электроплитка çинче чей ăшăтрĕ те хытса кайнă çăкăра стакан ăшĕнче йĕпеткелесе, «подушкипе» çыртса çирĕ, унтан, ĕнерхи пекех, кĕнеке тытса, каллех чӳрече умне ларчĕ.

«Пĕрех хут Малани часрах таврăнтăрччĕ...» — шухăшларĕ вăл, кил хуçи вырăнĕ çинче çывăракан çынсем çине пăхса. Лутраххи, месерле выртнăскер, питĕ хытă харлаттарать, çакă вара Илюка тăруках Матви пиччĕшне аса илтерчĕ,— лешĕ те шăп çавăн пек лакăртаттарса çывăратчĕ...

Вунă сехет çитеспе ют çынсем иккĕшĕ те пĕр харăсах вăранчĕç. Лутри тӳрех Илюка чĕнсе илчĕ.

— Итле-ха, ачамккă, чăмламалли мĕн пур санăн?

— Мĕн? — ăнланаймарĕ Илюк.

— Çимелли мĕн пур тетĕп! Çавна та чухлаймастăн пулать? Каçхине эпир выçах выртрăмăр.

— Çимелли... нимех те çук çав. Кил хуçи мана ик çăкăр парса хăварчĕ те, вăл пĕтнĕпе пĕрех ĕнтĕ,— тĕрĕссине каларĕ Илюк.

— Апла пулсан, халех магазина чуп! — Лутра арçын, çăмлă урисене кравать çинчен усса, пукан хыçĕн-

чен çакса янă пиншак кĕсйинчен пер ывăç çер тенкĕлĕх укçасем туртса кăларчĕ.— Нимрен малтан эсĕ пире валли пĕр виçĕ батон илсе килетĕн. Батон мĕнне пĕлетĕн-и? Ак çакăн пек тăрăхла шурă булкăсем вĕсем...

— Хури те кирлĕ,— терĕ ун юлташĕ, вырăн çинче тутлăн карăнса илсе.

— Тĕрĕс, пĕр хура çăкăр илетĕн... Унтан илетĕн пĕр кило кăлпасси, икĕ банка консервă — пулă консерви, судак пулать-и унта, сазан-и, лосось-и, пурĕпĕр.

— Çур литр,— хушса каларĕ çӳлли.

— Ăна та илетĕн, анчах асту, московски тенине туп.

— Пасара кĕрсе çĕнĕ хăяр илсе тух пĕр кило. Çырла пулсан, ăна та ил. Вара çитет те пулĕ.

Илюк нимĕн те чĕнмерĕ... Çак çынсем ăна çимелли-ĕçмеллисем илме ярасси çинчен çăвар уçсанах, вăл хăраса ӳкрĕ те ним калама аптраса тăчĕ. Унăн ниçта та тухса çӳреме юраман вĕт-ха, вăл хăйне милицисем тытасран пытанса пурăннă, ун пирки ăна кил хуçи Малани те хытарсах каласа хăварчĕ, анчах кусем акă ăна темтепĕр илме кăларса ярассĕ, унăн магазинсене те, пасара та çитес пулать... Такам та курма пултарать ăна çавăн пек çӳренĕ чухне! Кураççĕ те — алăран кап! ярса тытаççĕ:

— Аха-а, тинех тупрăмăр-и сана!..

Мĕн каласа, мĕнле сăлтав тупса хăтăлас ку хурлăхран? Аçтан мурĕнчен килсе тухрĕç пуль ку çынсем, вĕсемшĕнех пĕтме тӳр килет ĕнтĕ халь!..

Çакăн пек хăвăрт-хăвăрт шухăшласа тăчĕ те Илюк лешĕ, сарă лутра çынни, «заказсем» панă вăхăтра хăйĕн чут çеç куççулĕ пĕрхĕнсе каятчĕ.

— Ну, ăнлантăн-и? — тепĕр хут сассине хытарса ыйтрĕ лутри, Илюк çине шăтарасла пăхса.— Манмастăн-и мĕн-мĕн илмеллине? Е манасран çамку çине çырса каятăн?

Илюк каллех чĕнмерĕ. Ку вара леш çынна тарăхтармах пуçларĕ.

— Мĕн тунката пек тăратăн тата? Чĕлхӳне йĕкехӳресем кăшласа кайман пулĕ-çке кĕçĕр?

— Эп... каймастăп,— терĕ Илюк вăрахчен чĕнмесĕр тăнă хыççăн.

— Мĕншĕн каймастăн? — сиксе тăрса ларчĕ çӳлли.— Хăвна та çитеретпĕр, ухмах!

— Мана кил хуçи ниçта та тухма хушман...

— Тата тепĕр хут ухмах! Вăл сана килте нихăçан та çук чух тухма хушман, килне çаратасран хăранă пуль-ха,

анчах эпир кунта чухне мĕн хăрамалли пур-ха санăн?

— Пурпĕрех... Хăварах кайса килĕр хăшĕ те пулин.

— Ан лăпăртат! Эпир шутсăр ывăннă, ĕнер аллă çухрăм ытла çуран утнипе пирĕн урасем шыçса тухнă, пĕлетĕн-и? Акă, пăх-ха эсĕ! — Çӳлли сылтăм урине çĕклерĕ те Илюк пичĕ патнех илсе пычĕ. Чăнах та, унăн виçĕ пӳрни хăмпăлансах ларнă иккен.— Куртăн-и? Эп халь атă та тăхăнаймастăп!

— Çитĕ, çитĕ, кутăнланса ан тăр, вĕçтер часрах,— терĕ лутри, Илюка çĕр тенкĕлĕх икĕ хут тăсса парса. Халĕ вăл малтанхи пек хăр-хар калаçмарĕ, кăмăллăрах пулчĕ.

Илюкăн вĕсене хирĕç ним каламалли те юлмарĕ. Хăй хула тăрăх мĕншĕн çӳреме пултарайманни çинчен вĕсене вăл тĕп-тĕрĕссипе каласа пама пултарайман-çке! Лутра çынни çав вăхăтра вырăн çинчен сиксе анчĕ, çенĕкре темле кивĕ карçинкка тупрĕ, ун тĕпне хаçат сарчĕ те Илюка тыттарчĕ:

— Мĕн илнисене пĕтĕмпех çакăнта тултаратăн...— Хăй тата Илюка çурăмĕнчен лăпкаса илнĕ пек турĕ.— Выçтарса ан вĕлер ĕнтĕ пире, шăнкăрч, кайса кил часрах... Астуса юлтăн-и мĕн-мĕн илмеллине?

— Астурăм,— терĕ Илюк.

— Ну, хăвăртрах, эппин! Ачи маттур курăнать-ха эсĕ, наччас çаврăнса килетĕн пуль тетĕп...

Анчах Илюк тухса кайсан, вăл сурсах вăрçма тытăнчĕ:

— Тьфу, шуйттан чĕппи, итлесшĕн те мар-ха! Тата кăшт кутăнланса тăнă пулсанах çутăлтарса яраттăмччĕ, тупата!

— Тивес мар,— терĕ ăна хирĕç çӳлли,— кирлĕ кунта кирлĕ пулать-ха вăл. Малашка ăна мĕншĕн усранине пĕлетĕн пуль?

— Пĕтĕмпех пĕлетĕп. Ăна мĕнле улталаса пурăннине те пĕлетĕп.

— Çавăнпа та вăл шĕпĕне пирĕн хамăртан ютшăнтармалла мар, хамăра ытларах хăнăхтарса пымалла.

Вулакансем тавçăрса илчĕç те пуль: çак çынсем вĕсем Маланипе туслă пурăннă вăрă-рецидивистсем, леш «капăр каччăсене» хурахла пурнăçпа пурăнма вĕрентнĕскерсем пулнă. Лутрараххи — Матрос, çӳллĕреххи — Артист. Юлашки эрнесенче вĕсем таçта урăх вырăнсенче çӳренĕ те халь Малани патне «канма» таврăннă. Вăрă хуть хăçан та шикленсе, яланах тискер кайăк пек асăрханса пурăнать, вăл çынсен куçĕ умĕнче сахалтарах пул-

ма тăрăшать, çавăн пиркиех ĕнтĕ çав икĕ вăрă халь хăйсем валли çимелли-ĕçмелли илме те каймарĕç, ирĕксĕрлесех Илюка кăларса ячĕç...

## 14

Илюк питĕ васкаса çӳрерĕ. Леш çынсене юрасшăн, вĕсен кăмăлне тултарасшăн мар тăрăшрĕ вăл, киле епле те пулин часрах таврăнас килчĕ унăн. Юрать-ха ку вăхăтра халăх магазинсенче нумаях пулмарĕ, çавна май ачана черетсенче тăрса пиçме тӳр килмерĕ, хăйне илме хушса янисене вăл пĕр сехет хушшинчех илсе çитерчĕ. Унтан пасара чупрĕ, пахчаçимĕç сутакан ретре малтан хăяр туянчĕ, унтан тепĕр павильона çырла илме кайрĕ.

Çырлине виç-тăват çĕрте кăна сутаççĕ-мĕн, çавăнпа та вĕсем патне çынсем нумай чыхăннă. Илюк пĕр черет вĕçне тăчĕ. Пуç пӳрнерен те шултрарах, хĕп-хĕрлĕ те сĕткенлĕ çĕр çырлинчен çав тери тутлă шăршă кĕрет, ăна çиес килнипе Илюкăн çăвар ăшчикки те шывланчĕ.

«Килте пулсан, кашни кунах тăраниччен çиеттĕм ĕнтĕ, пирĕн хамăрăн та тăват йăран...— шухăшласа илчĕ вăл.

Ерипен пулсан та, черет малаллах шуса пычĕ. Илюк умĕнче пурĕ те çич-сакăр çын анчах юлчĕ ĕнтĕ. Хыçалтисем ăна малалла тĕртрĕç. Анчах çав вăхăтра çырла сутакан хĕрсем çине тинкеререх пăхрĕ те — тăрук юпа пек хытса тăчĕ. Çырлине... Илюксен ялĕсем сутаççĕ! Пĕр хĕрĕ — Илюкпа пĕрле пĕр класра вĕреннĕ Натали. Килтен тухса тарма тивнĕ хăрушă каçхине Матви пичче тени Илюк амăшне хĕнеме тытăнни çинчен ăна шăпах çав хĕрача каласа панăччĕ. Вăл пĕлтернипе чупрĕ те ĕнтĕ Илюк амăшне çăлма... Тепри — колхоз председателĕн хĕрĕ Антони, вăл пĕлтĕр вунă класс пĕтерчĕ те халь колхоз садĕнче ĕçлет...

Илюк ниçта кайса кĕме пĕлмерĕ. Ак халех çав хĕрсем ăна палласа илеççĕ, кунта никама систерме ĕлкĕреймесен те, киле таврăнсанах, Илюка хулари пасарта курни çинчен председателе каласа параççĕ, лешĕ милицие пĕлтерет, вара ăна тата хытăрах шырама тытăнаççĕ...

Малтан ăнран тухса каяс пек тĕлĕннĕ, унтан калама çук хăраса кайнă Илюк часрах черетрен хĕсĕнсе тухрĕ те пасарта тек пĕр самант та тытăнса тăмарĕ, часрах Малани килĕ еннелле вĕçтерчĕ.

— Мĕн эсĕ çичĕ йытăран тарнă пекех хашкатăн, ачамккă? — ыйтрĕ Матрос вăл алăкран кĕрсе тăнă-тăман.

— Васкарăм... Эсир кĕтсе ывăнтăр пуль терĕм...
— Маттур! Мĕн каланисене пурне те илтĕн-и?
— Илтĕм, анчах çырла тупаймарăм...
— Юрĕ-çке, çырли ытла кирлех те мар.

Матроспа Артист ĕçме-çиме хатĕрлеме тытăнчĕç. Илюк, çавăнтах тула тухса, пӳрт хыçĕнчи йывăççем айне, пĕр çĕрĕк тунката çине, кайса ларчĕ. Хăйсен ялĕнчи хĕрачасене ăнсăртран тĕл пулни ăна тӳсме çук пăлхатса ячĕ, вăл ниепле те лăпланаймарĕ... Пур-ха çав çĕр çинче телейлĕ çынсем! Ним хуйхи-суйхисĕр, савăнса кăна пурăнаççĕ... Кӳршĕ хĕрĕ Натали çиччĕмĕш класс пĕтерсе саккăрмĕшне куçнă ĕнтĕ,— вăл яланах маттур вĕренетчĕ,— халĕ, çулла, колхозра ĕçлет, пушă вăхăтра кĕнекесем вулать, тантăшĕсемпе пĕрле час-часах кино курать пулĕ... Паллах, Илюк тухса тарнă хыççăн вĕсен килĕнче мĕн-мĕн пулса иртнине Натали пит лайăх пĕлет, вăл ăна тĕпĕ-йĕрĕпех каласа панă пулĕччĕ, анчах... юрамасть-çке, пĕр паллана çынна та курăнма юрамасть!

Илюкăн кăмăлĕ пăтранса килчĕ, пуçĕ çаврăнма тытăнчĕ, куçĕсем шывланчĕç, унтан вăл пĕр-пĕччен ларнă çĕртех, чунĕ кӳтсе çитнĕскер, çав тери хурланса макăрма тытăнчĕ.

«Пĕтрĕ, пуçĕпех пĕтрĕ ман пурăнăç...» — пĕртен-пĕр шухăш çеç явăнчĕ унăн пуçĕнче.

Вăрахчен ларчĕ вăл йывăççем айĕнче. Тахăш енчен тăрук капланса килнĕ çăра пĕлĕтсем çут хĕвеле хупласа лартнине те, çиçĕм çиçсе аслати кĕмсĕртетнине те сисмерĕ, шултра çумăр çитсе çапсан тин ыйхăран вăраннă пек пулса сиксе тăчĕ те пӳрте кĕчĕ.

Матроспа Артист çисе-ĕçсе тăраннă та пирус туртса выртаççĕ, пĕри Малани вырăнĕ çинче, тепри кăмака çумĕнчи çĕтĕк диван çинче.

— Хырăму выçă пулсан çи,— сĕтел çинчи апат юлашкисем çине кăтартрĕ Матрос.

— Çиес килмест,— терĕ Илюк.

— Ай каллех кутăнланатăн?

— Пĕртте кутăнланмастăп...

Ăшчикки вăрканипе чăнах та çиесси килмерĕ Илюкăн. Вăл, пахчаналла тухакан чӳрече умне пырса, тулта çумăр епле чашлаттарса çунине пăхса, паçăрхи пекех салхуллăн, ним чĕнмесĕр ларчĕ. Пасарта курнă Натали сăнĕ пĕр самантлăха та ун куçĕ умĕнчен кайма пĕлмерĕ, çав хушăрах вăл тăван килĕ çинчен, хăйĕн юратнă амăшĕ çинчен шухăшларĕ...

— Итле-ха, ачамккă,— терĕ сасартăк Матрос, Илюк

еннелле çаврăнса,— пурнăçу мĕнлерех пырать халь санăн?

— Чиперех,— терĕ Илюк хуллен.

— Сана милицисем шыраççĕ темест-и çав? Эсĕ вĕсенчен пытанса çÿретĕн теççĕ, чăнах-и вăл?

Çак сăмахсене илтсен, Илюк, хăйне тăрук пуçран çапнă пекех сиксе илсе, ун еннелле çаврăнса ларчĕ.

— Кам каларĕ? Суя вăл!

— Илтрĕмĕр-ха эпир. Эсĕ аннÿн еркĕнне çапса пăрахса килтен мĕнлерех тухса тарнине те пĕлетпĕр.

Илюкăн чĕлхи çыхланса ларчĕ, сăнĕ-пичĕ кĕл тĕслĕ пулса кайрĕ, алли-ури чĕтреме тытăнчĕ.

— Эпир çак командировкăра çÿренĕ чух сирĕн яла пырса лекрĕмĕр,— терĕ Матрос малалла.— Сирĕн ял Юманлăх ятлă вĕт-ха? Колхоз председателĕ патĕнче çĕр выртрăмăр та, çав каласа пачĕ — Илюк ятлă арçын ача тăван мар ашшĕне вĕлерсе тухса тарчĕ, халь ăна хытă шыраççĕ, анчах ниепле те тупаймаççĕ, тупсанах питĕ лайăх лекет-ха терĕ... Эпир тÿрех сăмах сан çинчен пынине тавçăрса илтĕмĕр, мĕншĕн тесен Малашка больницăна леçиччен эпир сана кунта пĕрре курнă-çке-ха.

— Вара... вара эпĕ кунтине каласа патăр-и? — тутисене аран хускатса ыйтрĕ Илюк.

— Мĕн тума? Эсĕ, мĕн, пире çав териех ухмах тесе шутлатăн-и? — тĕлĕннĕ пек турĕ Матрос.— Чипер ачана мĕншĕн пĕтерес? Эс пирĕн тăшман мар пуль? Пĕтерме мар, эпир сана пулăшас тетпĕр-ха. Эп хам та тăлăххăн ÿснĕ çын, çавăнпа та тăлăхсене питĕ шеллетĕп...

Матрос, тăрса ларса, каллех пирус чĕртсе ячĕ.

— Ырă çын яланах тăлăхсене пулăшма тивĕç!

— Мĕнле пулăшма пултаратăр-ха эсир мана? — кăштах лăпланнă пек пулса ыйтрĕ Илюк.

— Акă хамăрăн кунти служба ĕçĕсене туса çитеретпĕр те сана хамăрпа пĕрле илсе каятпăр. Эпир камне пĕлетĕн-и эсĕ?

— Пĕлетĕп, вербовщиксем, мана кил хуçи каларĕ...

— Тĕрĕс каланă. Çавăнпа та эпир сана илсе кайса наччасрах ĕçе вырнаçтарма пултаратпăр. Çапла вĕт? — Артист еннелле пăхса илчĕ Матрос.

— Так точно,— терĕ лешĕ, тутлăн карăнса.— Пирĕншĕн ку ниме те тăмасть.

Çакăн пек калаçнă хыççăн Илюк кăмăлĕ майĕпе вĕсен еннелле çаврăнма пуçларĕ. Уншăн хальхи вăхăтра кашни ăшă сăмах хаклă çав! Ку таранччен никама та улталаман, çынна суя сăмах каласа курманскер, вăл

ытти çынсене те пĕтĕм чĕреренех ĕненнĕ. Анчах ытла пур чух та ĕненме кирлĕ мар-мĕн... Ак халĕ те ăна пĕр сăмах та тĕрĕссине каламарĕç, ним намăса пĕлмесĕр улталарĕç. Матроспа Артист — çак икĕ путсĕр çын, икĕ вăрă-хурах — Илюксен ялĕнче нихçан та пулман, ун пирки нимĕнле колхоз председателĕпе те калаçман, Илюк çинчен вĕсем хăйсен тусĕ Малани каласа панă тăрăххăн çеç пĕлнĕ, халĕ вара, Илюка хăйсен майлă çавăрас шутпа, пĕр енчен хăратрĕç, тепĕр енчен йăпатанçи турĕç. Ана вĕсем нимĕн чухлĕ те хĕрхенмен, нимĕнле ĕçе те вырнаçтарма шутламан, вĕсем Илюка хăйсемпе пĕрле вăрра ертесшĕн, унпа усă курасшăн çеç пулнă. Паян, авă, вĕсене çимеллисем илсе килсе пачĕ, каярахпа урăхла та пулăшма пуçлĕ-ха!

...Каçалапа Малани таврăнчĕ. Вăл ахаль те хĕрĕнкĕрех-мĕн, анчах хăйпе пĕрле татах эрех илсе пынă иккен. Вĕсем виççĕшĕ — Матроспа Артист тата Малани — сĕтел хушшине ларсанах, Илюк килкартине тухрĕ. Тӳсме пултарайман вăл çынсем ĕçсе супса темтепĕр пакăлтатса ларнине.

Чăн малтан Малани вăрăсем умĕнче хăй пăрахутпа питĕ ăнăçлă кайса килнипе мухтанса илчĕ.

— Мăнаппа эп илсе пынă парнесене питĕ мухтарĕ,— терĕ вăл тулли кăмăлпа.

— Киккириксене тĕл пулмарăн-и çул çинче? — куларах ыйтрĕ Артист.

— Çу-ук,— ал сулчĕ Малани,— кам çулăхтăр ман çума? Ухмахах мар-ха эпĕ, çул çӳресе куркаланă!

— Ку тĕрĕс ĕнтĕ, сана хывăх сапса панипех улталас çук.

Пĕр-пĕр çын аякран итлесе тăрас пулсан, вĕсем мĕн çинчен калаçнине вуçех те ăнланас çук çав: «мăнаппа» тени вăл — вăрланă япаласене сутса параканни пулнă, «киккириксем» тесе вĕсем милици çыннисене каланă, мĕншĕн тесен милицире ĕçлекенсен карттусĕсем хĕрлĕ кăшăллă.

Унтан Малани тăвата кун каялла леш «капăр каччăсем» Жорăпа унăн тусĕсем, сасартăк лекни çинчен каласа пачĕ.

— Пристань çинченех кăптăр-каптăр пуçтарса кайрĕç ачасене, çав тери хĕрхенсе юлтăм!..

— Тăм çамкасем! Сар тутасем, çуламан пăрусем!— сура-сура вăрçса илчĕ Артист.— Шеллеме те кирлĕ мар ун пеккисене! Ĕçне тунă-туман пристань çине пырса тăраннă,— кам тункати çавăн пек хăтланать? Выртасчĕ

килĕсенче мороженăй ĕмсе! Курччăр, эппин, халь мĕн курмаллине, тен, кайран ăслăланĕç!

— Вăл апли апла та-ха, допросра ытлашши йĕпетсе тăкмĕç-ши вĕсем, çавăнтан хăратăп эпĕ,— терĕ Малани.

— Мĕн — ытлашши?

— Ара, сирĕн çинчен, ман çинчен... Леш прохвессăр хваттерне камсем шăлса тухнине, вĕсем хăйсем тупса килнĕ япалисене хăш чух эп вырнаçтарнинe каласа парсан...

— Ну, ун пирки шикленмеллиех çук пулĕ,— терĕ Матрос.— Ку енчен эп вĕсене хытă вĕрентнĕ: иртнине нихçан та ан асăн, хăвнах йывăр килет, ĕçри тусусене сутсан — пуç касăлать тенĕ.

— Чорт пĕлет вĕсене,— иккĕленсе илчĕ Артист,— интеллигенцă чĕпписем вĕт, пиçмен чуста! Учонăйĕ çирĕп-ха ĕнтĕ, уншăн хăрамастăп, пурăна киле унтан маттур «урккă»* пулма пултарать, анчах лешсем, иккĕшĕ, хытăрах хĕссен катăлса кайса тумлатма та пултараççĕ!

Пĕр хушă вĕсем чĕнмесĕр ларчĕç. «Капăр каччăсем» сасартăк милици аллине лекни вăрăсен кăмăлне самаях хуçрĕ курăнать. Паллах ĕнтĕ, çав «сар тутасем» допроссенче хăйсене хăйсем «тытма пĕлмесен», Артистпа Матроса та, Малание те кансĕр пулма пултарать.

— Тепĕр кĕленче илес пулать,— терĕ Малание Артист, вăрахчен шухăша кайса ларсан.— Ăçта çав шĕпĕн, кала, чупса кайса килтĕр.

Малани Илюка тултан чĕнсе кĕртсе укçа пачĕ.

— Ан хăра, каçхине сана никам та паллас çук!

Илюк хальхинче хирĕçсе тăмарĕ. Вăл тухса кайсанах, Малани, алăк еннелле пуçĕпе сулса, куçне хĕссе илчĕ:

— Хăнăхтарма пуçлас пулать куна, атьсемĕр, çитет кун чухлĕ çăкăр çитерсе пурăннипе. Усси пултăр!

— Вăл пирĕн алăра-ха,— терĕ Матрос.

## 15

Пуçларĕç вара вĕсем Илюка «ĕçе хăнăхтарма»...

— Пĕрмай килте ларса йӳçсе кайма пултаратăн, атя манпа, уçăлса çӳре пăртак,— терĕ ăна пĕр каçхине Артист, тĕкĕр умĕнче сухалне хырса пĕтернĕ хыççăн одеколонпа сапăнса.

Илюк Малани çине пăхрĕ.

---

* Вăрă-хурах.

«Урать-ши?» — тесе ыйтрĕ ĕнтĕ вăл.

— Кай, кай, каçхине никам та курмасть, хăрамалли çук,— терĕ лешĕ.

Вĕсем Артистпа иккĕш урама тухрĕç те (Матросĕ пĕр сехет пек маларах тухса кайнăччĕ) çырма тăрăх малалла утрĕç, унтан, вăрăм пусма тăрăх хăпарса, спирт завочĕ патнелле пычĕç. Кунта эрех-сăра сутакан киоск пур-мĕн, Артист унта сăра илчĕ те унталла-кунталла пăхкаласа васкамасăр ĕçсе тăчĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ, сасартăк, çĕр тĕпĕнчен сиксе тухнă пекех, киоск патне Матрос пырса тăчĕ.

— Ха, ĕçке яраççĕ! — шӳтленĕ пек турĕ те вăл çавăнтах хăй те пĕр стакан хĕрлĕ эрех илсе ĕçрĕ, унтан Артистпа пĕрле пирус чĕртсе ячĕ, вара вĕсем виççĕшĕ те майĕпе тăвалла утрĕç. Кăшт кайсан, Артистпа Матрос хăйсем хушшинче хуллен мăкăртатса калаçма тытăнчĕç — Илюк нимĕн те ăнланмарĕ. Промтоварсем сутакан магазин тĕлне çитсен, унăн сарлака чӳречисем умĕнче чарăнса тăчĕç,— витрина çинче хитре те хаклă япаласем нумай. Пĕр виçĕ минут пек иртсен, магазин çумĕнчи калинккерен аллă çулсенчи самăртарах хĕрарăм тухрĕ те япаласене пăхса тăракансем патнелле хуллен кăна утса пычĕ. Артист ун çине хулпуççи урлă пăхса:

— Эс хуралçă-им-ха кунта, инке? — тесе ыйтрĕ.

— Хуралçă çав,— терĕ лешĕ ăна хирĕç.

— Сыхлатăн эппин?

— Сыхлатăп.

— Хăвна вăрласа каясран хăрамастăн-и? Пĕрре-пĕрре бандитсем магазинти япаласемпе пĕрле хăвна та хурса кайма пултараççĕ вĕт?..

— Э,— ал сулчĕ хĕрарăм,— кама кирлĕ эпĕ, ват çын, мĕн усси манран?

— Супăнь тума пулать, вăл та усă,— терĕ те Матрос хăй ахăлтатсах кулса илчĕ.

Хĕрарăмран çакăн пек мăшкăллани Илюка питĕ килĕшмерĕ. Ма кӳрентерес-ха ăна? Вăл хăйĕн ĕçне тăвать, халăх пурлăхне сыхлать... Анчах хĕрарăм хăй темшĕн пĕртте çилленмерĕ.

— Çав анчах ĕнтĕ,— килĕшрĕ вăл.

— Йытă та пулин пур-и хуть санăн? — ыйтрĕ Артист.

— Çук, йытă памаççĕ пире. Усрама хаклă теççĕ пулас,— ним пытармасăр каласа хучĕ хуралçă.

— Çĕрле пĕр-пĕчченех ларатăн-и вара?

— Пĕчченех.

— Кам та пулин чӑнах килсе тапӑнсан, мӗн тӑватӑн-ха? Вӗлереççӗ вӗт!

— Çын пур çӗрех кам килсе кӗтӗр? Тата ним айӑпсӑр çын çине кам алли çӗклентӗр?

— Ним чухлӗ те хӑрамастӑн эппин?

— Çук.

— Питӗ паттӑр кинемей иккен эсӗ! — ӑна чӑнласах мухтанӑ пек турӗ Артист.— Чисти салтак!

— А эп чӑнах та салтакра пулнӑ,— хавасланчӗ хӗрарӑм, ун пек каласан.— Китлӗрсем хӗрӗх тӑваттӑмӗш çулта упӑшкана вӗлерсен, хам ирӗкпех фронта кайрӑм. Шоферччӗ эп ун чух, ачам-пӑчам пулман... Вара вӗсен Перлинне те çитсе куртӑм, вӑрçӑ пӗтсен тин таврӑнтӑм.

— О-о! — чӗлхине чаклаттарса илчӗ Матрос.— Апла пулсан, санпа калаçма та хӑрамалла! Тытӑн та — шаккаса хурӑн... Кайрӑмӑр, атьсемӗр.

Вӗсем татах тӑвалла утрӗç. Хӗвеланӑç енчен пӗлӗтсем капланса килнипе халь пачах тӗттӗмленсе ларчӗ, çил тухнӑ май çанталӑк сулхӑнланчӗ. Урамсем пуш-пушах, ниçта та пӗр çын та курӑнмасть.

Кайсан-кайсан, кӑшт маларахра утакан Матрос сулахайри пӗр ансӑр урамалла кӗчӗ, Артистпа Илюк та ун хыççӑн утрӗç.

— Ха-ха! Салтак! — кулса илчӗ сасартӑк Матрос. Вӑл халӗ те магазин хуралçине аса илнӗ пулмалла.— Салтак мар, аш тултарнӑ чӑпта вӑл! Вунӑ утӑм чупсанах, пӑс кӑларса хашкакан пулать ӗнтӗ... Маттур пирӗн суту-илӳре ӗçлекенсем, çав тери лайӑх хуралçӑсем тупаççӗ хӑйсем валли. Мухтатӑп!

— Ан та кала,— килӗшрӗ унпа Артист.

Урам тӑрук çырманалла пӑрӑнчӗ, унтан пусма пуçланчӗ. Матрос малта утса пычӗ. Юлашки картлашка çинчен сиксе ансан, вӑл темшӗн тап! чарӑнса тӑчӗ те çавӑнтах кукленсе ларчӗ.

— Ах, Иван Иванч, Иван Иванч! Çитеймерӗн пулать хӑвӑн савнӑ арӑму патне! — илтӗнчӗ ун сасси.

Пусма вӗçӗнче ӳсӗр çын йӑваланса выртать-мӗн. Ним пӗлми, ним туйми, каска пек. Артистпа Илюк та ун патне пырса тӑрсан, Матрос вӗсене:

— Çӑлатпӑр пуль ку Иван Иванча, шалккӑ вӗт çынна, э?— терӗ.— Пӗтет, нимсӗр тӑрса юлать!

— Паллах, çӑлас пулать,— терӗ Артист.

Вӗсем çавӑнтах ӳсӗр çын аллинчи сехетне вӗçертсе илчӗç, унтан кӗсйисене ухтарма тытӑнчӗç, анчах кӗсйисенче вак укçасем анчах иккен.

— Эккей, Иван Иванч, пĕтĕмпех ĕçсе янă иккен эсĕ, пире валли вуçех хăварман... Аван мар ун пек, аван мар-ар, юлташсем çинчен те шухăшламаллаччĕ санăн! — хуллен пакăлтатрĕ Матрос, кӳреннĕ пек пулса. Унтан хăварт кăна спичка çутса пăхрĕ. Ӳсĕр çыннăн костюмĕ пĕртте хурламалла мар — хура кăвак коверкот.

— Костюмне те çăлас, атту хывса кайма пултараççĕ... Пушмакне те шел... Ах, Иван Иванч, çакăн пекех персе лартма юрать-и вара!

Пĕр-икĕ минут хушшинчех Матроспа Артист çав çынна çап-çара туса хăварчĕç,— ун çинче майкăпа трусси çеç юлчĕ.

Илюк ним ăнланмасăр пăхса тăчĕ. Мĕн хăтланаççĕ вĕсем? Çаратаççĕ вĕт! Хăйсем «пулăшатпăр» теççĕ... Анчах та, тен, вĕсем ку çынна чăнах та паллаççĕ? Паллаççех пуль çав, ахальтен ма-ха ăна пĕрмай «Иван Иванч» тесе калаччăр?

Матрос ӳсĕр çын япалисене вăр-вар пĕр çĕре чĕркерĕ, чĕн пиçиххипе туртса çыхрĕ те Илюка тыттарчĕ.

— Вĕçтер киле, Малашкăна пар, пуçтарса хутăр. Пирĕн пĕр çĕре кĕрсе тухмалли пур-ха.

— Ку çынни хăйĕн япалисене кам илсе кайнине ăçтан пĕлет-ха вара? — хăрарах ыйтрĕ Илюк.

— Иван Иванч-и? Ирхине эпир ăна хамăрах кайса паратпăр. Вăл ăçта ĕçленине пĕлетпĕр эпир, хваттерĕ тĕлне кăна пĕлместпĕр, пĕлнĕ пулсан хăйне те халех леçсе хăвараттăмăр... Ну, чуп! Ку урам пирĕн хваттер тĕлнех тухать.

Каллех ĕненчĕ Илюк, каллех улталанчĕ. Ана-кăна ним чухламасăрах, вăл халь вăрланă япаласене çĕклесе кайса Малание тыттарчĕ те васкасах ĕç мĕнле пулни çинчен каласа кăтартрĕ. Малани питĕ кăмăллăн итлесе ларчĕ, темиçе хутчен те Илюк сисмелле мар кула-кула илчĕ.

— Э-эх, ĕçме пĕлменниех пĕтерет çав хăшпĕр арçынсене,— ассăн сывласа илнĕ пек турĕ хăй,— виçине пĕлмесĕр хыпса лартаççĕ те урамрах тирĕнсе каяççĕ... Мĕн чухлĕ хурлăх вăл ĕçкĕ пирки!

— Япалисене ыранах тавăрса парас пулать ĕнтĕ,— терĕ Илюк.— Тен, вăл çыннăн урăх тăхăнмалли те çук?

— Паллах, ара, паллах, тавăрса паратпăр, мĕн тума кирлĕ пире çын япали!— тутисене пăрчĕ Малани.

...Çапла хăй сисмесĕрех Илюк, вăрă-хурахсен шайккин ирсĕр, хăрушă танатине лексе, вĕсене пулăшаканни пулса тăчĕ.

Малтанхи ҫарату хыҫҫӑн тепӗр виҫӗ кунтанах вӑрасем ӑна хула хыҫӗнчи мӑн вӑрмана илсе кайрӗҫ,— вӑл кун унта юрӑ праҫникӗ ирттернӗ те, пӗтӗм республикӑран пин-пин ҫын пырса тулнӑ. Хаваслӑ, ҫав тери савӑнӑҫлӑ уяв пулнӑ вӑл! Ешӗл йывӑҫсем айне пилӗк-ултӑ ҫӗре пысӑк эстрадӑсем туса лартнӑ, кашни ҫинчех пӗрин хыҫҫӑн тепри художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗсем, уйрӑм-уйрӑм ӑстасем туха-туха юрлаҫҫӗ, ташлаҫҫӗ, пур ҫӗрте те кӑмӑла ҫӗклекен музыка янӑрать, вӑрман хӗрринче карусельсем ҫавраҫил пек ҫаврӑнаҫҫӗ, йӗркипе лартса кайнӑ пӗчӗк лавккасенче темӗн тӗрлӗ таварсемпе сутӑ тӑваҫҫӗ. Пур ҫӗрте те халӑх, вӗҫӗ-хӗррисӗр халӑх... Илюкӑн кунта питӗ курса ҫӳрес килчӗ, мӗншӗн тесен вӑл кун пек ҫӗрте нихҫан та пулманччӗ-ха, анчах Матроспа Артист ӑна хӑйсенчен пӗр утӑм та уйӑрмарӗҫ.

Хваттертен тухас умӗнех вӗсем Илюка, Маланин пасара ҫӳремелли сарӑ пысӑк сумкине тыттарса, ҫапла каларӗҫ:

— Уявра лавккасем нумай, унта хамӑра кирлӗ лайӑх япаласем пулма пултараҫҫӗ, вӗсене илсен хума вырӑн кирлӗ!

Кӑнтӑрлапа уява ҫитсен, Матроспа Артист эстрада ҫинче юрлакан-ташлакансемпе пӗртте интересленмерӗҫ, вӗсем тӳрех сӑра-кӑвас, тӗрлӗрен шывсем сутнӑ ҫӗрелле ҫул тытрӗҫ. Кунта ӑшша пиҫнӗ халӑх кӗпӗрленет, кашниех мӗн те пулин илсе ӗҫмеваскать.

Вӗсем пӗр ҫӗре пырса тӑчӗҫ, тепӗр ҫӗре... Унтан йӗркипе ларса кайнӑ лавккасем патнелле пӑрӑнчӗҫ. Илюк та вӗсенчен юлмарӗ. Пӗр ҫирӗм минутран пачах та кӗтмен ҫӗртен Матрос ӑна хулари хӗрарӑмсем яланах ҫӗклесе ҫӳрекен пӗчӗк сумка — «ридикюль» тенине тыттарчӗ:

— Чиксе хур часрах!

Илюк Матрос ҫине ҫав тери тӗлӗнсе пӑхрӗ, анчах хӑй нимӗн те калаймарӗ, ридикюле сумка ӑшне чиксе хучӗ...

Лавккасем умӗнче тӗркӗшекен халӑх хушшинче тата пӑртак хӗсӗнкелесе ҫӳресен, Артист та Илюка вӑшт кӑна тепӗр ридикюль пачӗ:

— Пытар!

Халӗ вара Илюк ҫак вербовщиксем уяври хӗрарӑмсене ҫаратма тытӑннине ӑнланса илчӗ те вилесле хӑраса кайрӗ. Алли чӗтреме тытӑннипе ридикюль кӗҫех вӗҫерӗнсе ҫӗре ӳкетчӗ.

— Йытар теççĕ! — куçĕсене çуталтарса, Илюка çурăмĕнчен чышса илчĕ Артист.— Мĕн çаварна карса тăратăн?

Тăруках калаçайми пулнă Илюк вара иккĕмĕш ридикюле те сумкине вырнаçтарчĕ... Çав самантрах Артист ăна хулĕнчен хыттăн пăчăртаса малалла туртрĕ:

— Ут хăвăртрах! Ан юл!

Вĕсем, икĕ пĕчĕк лавкка хушшипе тухса, васкасах вăрманалла кĕрсе кайрĕç. Халь ĕнтĕ, хăй аллинчи сумкăра вăрланă япаласем выртнине пĕлсе, Илюк Матроспа Артистран юлма та хăрарĕ. Тытсассăн, хăйĕннех пĕтмелле пулать вĕт-ха!..

Халăх вăрманта та пит нумай иккен. Кашни йывăç, кашни тĕмĕ айĕнче тенĕ пекех ушкăн-ушкăн çын ларать, хăшĕсем çемйисемпех пынă курăнать. Пурте хăйсен умне тутăрсем е хаçатсем сарнă та вĕсем çине çимелли-ĕçмеллисем вырнаçтарнă. Хăшĕсем хĕрме те ĕлкĕрнĕ, шавлăн калаçаççĕ, унта-кунта юрланисем те илтĕнеççĕ... Пурте хăйсен тăванĕсемпе, тусĕсемпе пĕрле тулли кăмăлпа канса, савăнса ларнă май Илюксем çине çаврăнса пăхакан никам та пулмарĕ.

Лавккасенчен чылай инçете кайсан, малта пыракан Матроспа Артист пĕр лапсăркка шĕшкĕ тĕми айне ларчĕç те Илюка та ларма хушрĕç. Артист çавăнтах пиншак кĕсйинчен çур литр эрехпе пĕр банка консервă туртса кăларчĕ.

«Кусене те вăрланă пуль ĕнтĕ, укçа парсах илмен пуль...» — шухăшларĕ Илюк, Матроспа Артист çине чарăлса кайнă куçĕсемпе пăхса. Лешсем эрехпе консервăна васкамасăр, тирпейлĕн уçрĕç, черкке таврашĕ çуккипе эрехне кĕленче пырĕнченех черетлĕн ĕçрĕç, консервине çĕçĕ вĕçĕпе иле-иле çырткаларĕç. Çав хушăра иккĕшĕ те пĕр сăмах та чĕнмерĕç. Эрехĕ сыпăсем тăрăх кайма тытăнсан тин Артист пирус чĕртсе ярса хăяккăн выртрĕ те, Илюк çине куç харшисем айĕн пăхса, сăмах пуçларĕ:

— Эсĕ мĕн, ачамккă, кирлĕ чух вăр-вар çаврăнкаламастăн? Э?

Вăл мĕн çинчен каланине Илюк ăнланаймарĕ те хирĕç чĕнмерĕ. Ача ăнланайманнине туйса, Артист тепĕр хут каларĕ:

— Эп сана тыттарнă япалана сумкăна мĕншĕн час хумарăн тетĕп! Сан аллусене йывăçран туман пулĕ вĕт? Э?

— Эп... эп хăрарăм...— тутисене аран хускатса илчĕ Илюк.

— Мĕнрен хăрарăн? Мĕн, эпир вăл майра сумкисене вăрларăмăр тесе шутларăн-и?
— Мана çавăн пек туйăнчĕ те...
— Ха-ха! — кулам пекки турĕ те Артист пĕççине шарт! çапса илчĕ.— Туйăнчĕ пулать сана! Анчах эсĕ ху мĕн те пулин куртăн-и, сисрĕн-и? Э?
— Курман...
— Ма-ха, эппин, ун пек шутларăн?
— Туйăнчĕ те...
— Каллех туйăнчĕ! Ухмах ача эсĕ, акă мĕн! Тăм çамка. Эпир вăл майра сумкисене çĕртен тупрăмăр, пĕлетĕн-и? Темле сӳтĕксем кăларса ӳкернĕ те — эпир тупрăмăр. Çавăн чухлĕ халăх хушшинче япала çухатакан тăмсайсем сахал тетĕн-и эсĕ? Пĕри ӳсĕрпе çухатать, тепри ула курак пек çăварне карса çӳренипе... Ăнлантăн-и халь?
Илюк тăруках нимĕн те каламарĕ, шухăшласа ларнă пек пулчĕ, унтан çĕрелле пăхса, шăппăнтараххăн:
— Тупнă япаласене хуçине каялла тавăрса параççĕ,— тесе хучĕ.
— О-о, ачи питĕ ăслăскер иккен эсĕ, анчах та шутсăр айван! — калаçăва тăрук хутшăнчĕ Матрос.— Ăна эпир хамăр та пĕлетпĕр. Анчах çак каткă пек йăшăлтатакан халăх хушшинче вăл япаласен хуçисене мĕнле тупатăн-ха эсĕ?
— Милицие кайса памалла эппин...
— Ну, шăллăм, милицишĕн эпир тарçăсем мар,— ал сулчĕ Артист.— Хăйсем тупчăр та хăйсем тавăрса паччăр. Вĕсене уншăн шалу тӳлеççĕ.
— Кунсăр пуçне, ачамккă... мĕнле калас... санăн милицисем çинчен сахалтарах асăнас пулать,— каллех хутшăнчĕ Матрос.— Пĕлетĕн пуль вĕт, вĕсем çухалнă япаласене çеç мар, çухалнă çынсене те шыраççĕ, сăмахран каласан — сан пеккисене... Мантăн-им ху мĕнлерех çын пулнине?
Илюк чĕри яштах турĕ те, вăл урăх нимĕн калама та пултараймарĕ.
— Çапла, Илюк шăллăм, хăвăн kaçану лапăрчăк чухне çынсем таса марри çинчен калаçни килĕшмест вăл,— тутине чалăштарса кулса илчĕ Матрос.
— Ирĕкре пурăнассу килет пулсан, санăн малашне эпир мĕн хушнисене тĕп-тĕрĕс туса пымалла çеç,— хушса хучĕ Артист.— Ăна санăн хăвăнах чухламалла, ытла пĕчĕк ачах мар. Пире итлесе пырсан, эпир те сана пăрахмăпăр, санран чăнах та çын тăвăпăр!

Вăрăсем кĕленчери юлашки эрехе ĕçсе ячĕç, унтан кăшт ларкаланă хыççăн Матрос ура çине тăчĕ те йĕри-тавралла пăхса илчĕ.

— Ну, халь атьăр-ха, вăрманта уçăлса çӳрер пăртак,— терĕ вăл.— Çынсене курар, хамăра кăтартар. Э-эх, çав тери юрататăп вăрманта çӳреме! Кайăксем юрлаççĕ, кашкăрсем ӳлеççĕ...

, Вĕсем васкамасăр, енчен еннелле пăхкаласа утрĕç — кама та пулин çаратма çук-ши? Кăмăлне эрехпе çĕклентернĕ хыççăн Матрос, темле фокстрот кĕввине шăхăркаласа, маларахра пычĕ, час та часах çамрăк йывăç тураттисене хуçа-хуçа илсе пăрахрĕ. Пĕр тĕмĕ айĕнче канса ларакан виçĕ хĕре асăрхасан, тӳрех вĕсем патне пычĕ те питĕ ирсĕр сăмах каларĕ пулмалла,— мĕн каланине Илюк илтеймерĕ, анчах хĕрсем, пĕр харăсах сиксе тăрса, уяв кĕрленĕ çĕрелле тарнинчен Матрос вĕсене кӳрентернине лайăх ăнланчĕ.

Тепĕртак кайсан, Матрос чарăнса тăчĕ те, каярах утакан Артистпа Илюк еннелле çаврăнса, тем çинчен асăрхаттарнă пек, аллине çĕклерĕ, çав вăхăтра пуçĕпе хăй умĕнчи пысăк ешĕл тĕмĕ çинелле сулса илчĕ.

Çав тĕмĕ айĕнче пĕр вăтăр çулсенчи хурарах сăнлă арçын месерле выртнă та, алли-урисене сарса пăрахса, харлаттарсах çывăрать иккен. Виçĕ кун каялла тĕттĕм çырмара çаратнă çын пекех, вăл ним пĕлми, ним туйми выртать. Хăй самаях лайăх тумланнă, анчах костюмĕ тусанланса, çӳпĕленсе пĕтнĕ, хăрах пушмакĕ — вĕр-çĕнĕ сар пушмак — уринчен хывăнса ӳкнĕ, сулахай алли çинче сехет пур, тӳмисем вĕçерĕнсе кайнă пиншакăн шалти кĕсйинчен кĕрентерех сăран бумажник кĕтесĕ курăнать. Ытла та илĕртекен «объект» выртать-мĕн вăрăсем умĕнче, ун тĕлĕпе вĕсем ниепле те ахаль иртсе кайма пултарас çук. Ку çынна тĕрĕс-тĕкел хăварсан, вĕсем кайран тахçанччен ӳкĕнсе пурăннă пулĕччĕç!..

Матроспа Артист пĕр-пĕрне куçран пăхсах ăнланчĕç: çаратас! Çывăхра никамах та курăнмарĕ, хăрушлăх палăрмарĕ. Вара вĕсем йăпăр-япăр çав çывăракан çын çумне йăпшăнса выртрĕç — пĕри пĕр енчен, тепри тепĕр енчен. Илюка хăйсен ури вĕçне лартрĕç те йĕри-тавралла пăхса сăнама хушрĕç. Питĕ чее турĕç кăна вĕсем: кам та пулин курас-тăвас пулсан, хăйсене çак çын юлташĕсем пек кăтартаççĕ... Кĕç, чăнах та, çавăн пек пулчĕ: вĕсен тĕлĕпе икĕ каччăпа икĕ хĕр хавассăн калаçса, кулса, хĕвелçаврăнăш шĕкĕлчесе утса иртрĕç. Çав çамрăк-

сем ҫывхарнине асăрхасанах, Матрос ним майсăр ĕҫсе супнă ҫын пек ҫухăрса ячĕ:

**Быва-али дни весе-елые...**

Анчах лешсем иртсе кайсанах, вăл хăвăрт кăна тăрса ларчĕ те ӳсĕр ҫыннăн бумажникне кăларса илсе хăй ҫумне чикрĕ. Артист ҫав вăхăтрах сехетне вĕҫертсе илчĕ.

«Мĕн хăтланаҫҫĕ кусем, мĕн хăтланаҫҫĕ!.. Кăнтăр кунĕнчех, ҫынсем иртсе ҫӳренĕ ҫĕртех ҫаратаҫҫĕ!..» — хăраса шухăшларĕ Илюк.

Вăл тӳссе лараймарĕ, сиксе тăчĕ, йывăррăн, ывăннă лаша пек хашкаса сывларĕ...

Анчах та чи хăрушши каярахпа пулчĕ-ха. Артистпа Матрос ӳсĕр ҫын ҫумĕнчен тăрса унăн-кунăн пăхкаласа илсен, Матросĕ сасартăк ҫав ҫыннăн хывăнса ӳкнĕ пушмакне асăрхарĕ.

— Илсе чик! Теприне те хывса ил! — шăппăн команда пачĕ вăл Илюка.— Часрах!

Илюк тăнран тухса кайнă пек пулчĕ, вырăнтан та хускалаймарĕ, вăрă ҫине ҫав тери хурлăхлăн пăхрĕ, унăн кĕҫ-вĕҫ куҫҫулĕ тухса каятчĕ. «Ах, тархасшăн, хăтарăр мана ку тискер ĕҫрен, ҫынна ҫаратма пултараймастăп эпĕ!» — терĕҫ унăн шывланнă куҫĕсем...

— Ну? Кама калаҫҫĕ? — шăлĕсене шатăрт! тутарчĕ Матрос.— Халех чиксе пăрахатăп! Хыв!

Хăй чăнах та Илюка ҫĕҫĕ кăтартрĕ. Ун хыҫҫăнах Артист ăна ĕнсерен чышрĕ. Вара Илюк кукленсе ларчĕ те ҫывăракан ҫын пушмакне чĕтрекен аллисемпе хывса илчĕ...

## 16

Хулана темле таврăннă вара вĕсем — ăна Илюк йĕркеллĕн астумасть. Унăн ăсĕ-пуҫĕ пĕтĕмпех пăтранса, арпашса кайрĕ. Куҫĕсем умĕнче пĕрмай ҫутă кăвак тĕтре мăкăрланса тăчĕ, пуҫĕ кашларĕ, хăлхисем илтмерĕҫ, шăмми-шаккинче пĕр вăй та юлмарĕ...

Епле пултăр-ха тата! Паллă вĕт-ха, пĕтĕмпех паллă — халĕ вăл, Илюк, ку таранччен никама та улталаман, нимĕнле киревсĕр ĕҫ те туман, шкулта та, халăх хушшинче те йĕркеллĕ, сăпайлă пулнă ача, пионер, кĕтмен ҫĕртенех вăрă пулса тăчĕ! Темиҫе кун каялла, ҫĕрле, Матроспа Артист ун куҫĕ умĕнчех ӳсĕр ҫынна ҫаратрĕҫ те япалисене Илюка йăттарса ячĕҫ. Илюк ҫав вăрлана

япаласене хваттер хуҫине пырса пачӗ. Ан тив, ун чухне Илюк тӗрӗссине пӗлмен, улталаннӑ пултӑр, анчах пурпӗр вӑрӑсене пулӑшнӑ-ҫке-ха вӑл! Паян юрӑ праҫникӗнче, пӗтӗм халӑх саванӑ ҫӗрте, вӑл Артистпа Матрос вӑрланӑ япаласене вӗсенчен иле-иле сумкӑна пуҫтарса чикрӗ, кайран ҫӗклесе ҫӳрерӗ,— эппин, каллех вӑрӑсене пулӑшрӗ. Юлашкинчен вара...— кун ҫинчен аса илме те хӑрушӑ!..— юлашкинчен, вӑрманта ҫывӑракан ҫын уринчи пушмака хӑй аллипе хывса илсе сумкӑна чикрӗ, сумкине те, хӑех ҫӗклесе килсе, Матрос хушнипе Малание тыттарчӗ. Вӑрӑ мар-и ӗнтӗ вӑл ҫавӑн хыҫҫӑн?

Вӑрӑ!..

Епле хӑрушӑ, тискер, ирсӗр сӑмах!

Вӑрӑ хӑй нихҫан та ӗҫлемест, вӑл ҫын ӗҫленипе пурӑнать, час-часах урӑх ҫынсене нимӗнсӗр тӑратса хӑварать, никама та: ваттисене те, вӗт-шак ачасене те — хӗрхенсе тӑмасть, хӑйне кирлех пулсан, вӑл ҫынна вӗлерме те пултарать. Вӑрӑ уйрӑм ҫынсене ҫеҫ мар, патшалӑх пурлӑхне те ҫаратать, пӗтӗм халӑха сиен кӳрет. Вӑрӑ — тӑшман, халӑхӑн вӑрттӑн тӑшманӗ!

Ҫаксене Илюк питӗ лайӑх пӗлнӗ, вӑл хӑй те, тӳрӗ чунлӑ ытти пур ҫынсем пекех, вӑрӑсене курайман. «Вӑрӑ» тенӗ сӑмахӗ те уншӑн темле хӑрушӑ пулнӑ. Анчах халӗ акӑ вӑл вӑрӑ пулса тӑчӗ. Чӑн-чӑн вӑрӑ!

Ҫакна пӗлни, ҫакна пӗтӗм чун-чӗрипе ӑнланни канӑҫ памарӗ те халь Илюка. Юрӑ праҫникӗнчен таврӑннӑ хыҫҫӑн вӑл ниҫта кайса кӗме пӗлмерӗ. Унӑн ӑшчикки епле вӑрканине, вӑл мӗн тери асапланнине каласа пама йывӑр!

Матроспа Артистшӑн пулсан — нимӗн те мар, ҫынна ҫаратни вӗсемшӗн пӗрре шӑл витӗр сурнӑ пекех ҫӑмӑл япала иккен. Халӗ те ак... Вӗсем вӑрманти уявран таврӑннӑ ҫӗре Малани эрех илсе лартнӑ-мӗн те, виҫҫӗшӗ сӗтел хушшине ларса чип-чиперех ӗҫрӗҫ, унтан Матросӗ, Маланин ҫурӑк балалайкине тӑнкӑртаттарса, вӑрӑ-хурах такмакӗсене юрлама тытӑнчӗ. Кӑмака умӗнче керогазпа тӑрмашма тытӑннӑ Малани те унпа пӗрле ӗнерчӗ. Артист кӑна диван ҫинче ним чӗнмесӗр пирус пашлаттарса выртрӗ, вӑл ҫитес кунсенче тата кама ҫаратасси ҫинчен шухӑшларӗ пуль ӗнтӗ...

Ой, мӗн тери курайманрӗ вӗсене Илюк ҫак самантра! Вӗсем пурте, виҫҫӗшӗ те, уншӑн халь чи усал тӑшмансем вӗт-ха, чи хӑрушӑ тӑшмансем!..

Илюк вӗсен ултавне, ирсӗрлӗхне пӗтӗмпех пӗлсе ҫитрӗ ӗнтӗ, текех вӗсен ҫур сӑмахне те ӗненес ҫук, кун чух-

лĕ улталанса пурăннипе те тăраннă! Халĕ епле пулсан та вĕсенчен часрах уйрăлса каяс, вĕсенчен аяккарах тарас пулать,— хуть те ăçталла пултăр, хуть те çĕр тĕпне, шыв айне, шуйттан шăтăкне,— анчах çак вăрăсемпе пĕрле пулас марччĕ, вĕсене курас марччĕ! Тухса тармасан, вĕсем ăна ирĕксĕрлесех тата темĕн тĕрлĕ тискер ĕççене хутшăнтарма пултараççĕ, вара... мĕн каламалли пур ĕнтĕ, вара чăнах та ĕмĕрлĕхех, яланлăхах пĕтес пулать. Анчах унăн пĕтес килмест-ха, унăн тĕрĕс пурнăçпа пурăнакан çын пулас килет!..

Çавăн пек йывăр шухăшсемпе асапланса выртрĕ Илюк кăмака хыçĕнчи хытă вырăн çинче. Тутине çыртса, пуçне ик аллипе ик енчен пăчăртаса, хушшăн-хушшăн хашхаш сывласа, хăй валли çăлăнăç çулĕ шырарĕ вăл...

Малани, апат антарсан, ăна сĕтел патне чĕнчĕ:

— Илюша, кил, ларса çи ушкăнпа пĕрле!

— Çиес килмест манăн,— терĕ Илюк кăмăлсăр сасăпа,— тутă эпĕ.

— Мĕн çисе тултарнă вара эсĕ ун пекех тутă пулма?

Илюк чĕнмерĕ.

— Тух, тух хăвăн йăвунтан, ларса çи, цисаркă яшки пĕçертĕм сире валли, магазинта сехет ытла черетре тăтăм, апачĕ калама çук тутлă пулчĕ, кун пеккине эс ĕмĕрне те çисе курман-ха. Цисаркă вĕт, ялти ухмах автан мар! — пакăлтатса илчĕ Малани.

— Каларăм-çке, çиес килмест манăн...— хуллен ответ пачĕ Илюк.

Çак калаçăва илтсе ларнă Матрос тăрук ывăç тупанĕпе сĕтеле çапса илчĕ:

— Çитĕ сана ухмаха персе выртма! Тух теççĕ пулсан — итлес пулать! Йăлăнтарса кама хăратас шуту пур?..

Вăл паçăрах Илюк «епресе» кайнине асăрханă та çавăншăн самаях тарăхнă, анчах хăйне ун çинчен халлĕхе нимĕн те каламан. Илюк мĕншĕн çав тери пăлханнине, унăн кăмăлĕ мĕн сăлтавпа хуçăлнине опытлă вăрă лайăх ăнланнă,— паян ача хăйĕн пурнăçĕнче пĕрремĕш хут вăрланă вĕт-ха! Анчах Матросăн ăна çирĕпрех тăвас килнĕ, ма тесессĕн çемçешке кăмăллă йĕкĕт «ĕçре» начар помощник пулать.

«Пĕрре лайăхрах тăн кĕртес пулать-ха, кампа çыхланнине ăнлантăр та ĕмĕрне те ан мантăр»,— шухăшларĕ Матрос.

Халь вара ăна çав «тăн кĕртмелли» самант çитсе килнĕн туйăнчĕ.

— Кил кунта! — тепĕр хут кăшкăрчĕ вăл.

— Манăн пуç ыратать,— каллех хуллен сас пачĕ Илюк кăмака хыçĕнчен. Тĕрĕссипе каласан, унăн халь çак вăрăсемпе пĕр сĕтел хушшинче ларма мар, вĕсен сăнĕсене те курас килмерĕ, çавăнпа тухмарĕ те вăл хăйĕн «йăвинчен».

— Кама калаççĕ кил тесе? — тата ытларах тарăхса кăшкăрчĕ те Матрос, пат, пат утса кайса, Илюка кăмака хыçĕнчен пĕррех туртса кăларчĕ.— Лар! Çи!

Илюк хыççăр пукан çине ларчĕ. Хăй нимĕн те чĕнмерĕ, йывăррăн сывласа çĕрелле пăхрĕ кăна.

— Çи, Илюша, çи! — терĕ Малани те, тулли турилккене ун умнерех сиктерсе.

— Хырăм выçă мар манăн,— терĕ Илюк, çаплах çĕрелле пăхса.

— Чирлемерĕн пулĕ-çке каллех?

— Пуç ыратать.

— Ну, пуç ыратни вăл тем ыратниех мар-ха, шăллăм, эпир ăна наччас юсатпăр,— калаçăва хутшăнчĕ ку таранччен чĕнмен Артист. Хăй çав самантрах сĕтел айнелле пĕшкĕнсе çур литр кăларчĕ те, ăна тĕпĕнчен çапса уçса, тăватă стакана ячĕ.— Тытăр пурте! «Ĕç хыççăн — ĕç!» — тетчĕ манăн пĕр лайăх тус. Эпир паян ĕçленĕ, çавăнпа ĕçме те пултаратпăр.— Вăл хăй стаканне çăварĕ патне илсе пычĕ.— Ну, янклаттарар!

Матроспа Малани те стакансене çĕклерĕç, анчах Илюк хăй умĕнчи стакана аяккалла шутарса лартрĕ.

— Эп ĕçме пултараймастăп...

— Сыпса пар ĕнтĕ пăртак, апат умĕн вăл пит лайăх пулать,— терĕ те Малани тутине пăчăртаса илчĕ. Унăн куçĕсем çав тери чеен кулса тăчĕç...

— Ĕçместĕп,— терĕ Илюк каллех, пуçне пăркаласа.

— Çук, ĕçетĕн! — стаканне лартса, хаяррăн çутăлма пуçланă куçĕсемпе ун çине шăтарасла пăхрĕ Матрос.

— Эпир хушатпăр пулсан — ĕçетĕнех! — терĕ Артист та.

— Мĕншĕн ун пекех ĕçтересшĕн эсир мана? — вĕсем çине çилĕпе пăхса илчĕ Илюк.

— Мĕншĕн тесен санăн паян — менелник,— шӳтленĕ пек, чĕлхине кăтартрĕ ăна Артист.— Çавна та пĕлместĕн-и?

— Мĕнле менелник пултăр? — чăнласах тĕлĕнчĕ Илюк.— Эп декабрь уйăхĕнче çуралнă...

— Эс хăçан çурални ниме те пĕлтермест вăл, шăллăм,— терĕ ăна хирĕç Артист.— Паян эпир сана хамăр

кампанине йышăнтăмăр, мĕншĕн тесен эсĕ паян пит маттур ача пултăн... Çак кунтан пуçласа эсĕ ĕнтĕ яланлăхах пирĕн çын, пирĕн хӳтлĕхре пурăнатăн, сана никам та кӳрентерме пултараймĕ... Чухлатăн-и? Э?

Илюк сасартăк пĕтĕмпех тавçăрса илчĕ: вĕсем Илюк паян хăй аллипе çын япалине вăрлама пултарни çинчен калаççĕ! Хăй вăрă пулса тăнăшăн ĕçмелле иккен!

Унăн пĕтĕм пичĕ-куçĕ пĕçерсе кайрĕ, сывлăшĕ те пӳлĕнчĕ. Унтан вăл вăрăсем çине çав тери кураймасăр, куçĕсемпе çунтарса ярас пек пăхрĕ те ура çине сиксе тăчĕ.

— Мана... мана... Мана нимĕнле кампани те кирлĕ мар! — хашка-хашка кăшкăрчĕ вăл.— Эп никампа та çыхланмастăп, хам тĕллĕнех пит лайăх пурăнма пултаратăп!.. Эп халех...

— Хуллентерех, ачам, хуллентерех,— аллине çĕклесе пӳлчĕ ăна Матрос. Унăн куçĕсем хĕсĕнчĕç, тути хĕрри сиккелесе илчĕ.— Пурнăçра лăпкă пулнине нимĕн те çитмест, ĕнен ман сăмаха... Эс хăвăн стаканна ĕçсе пар-ха малтан, вара калаçма та çăмăлтарах пулĕ!

— Ак çапла! — Артист Илюка сулахай аллипе хăвăрт кăна мăйĕнчен ыталаса илсе хăй çумне лартрĕ, тепĕр аллипе эрехлĕ стакана тытса ун тути патне илсе пычĕ.

— Ĕç теççĕ, анчăк çури!..

Илюк, ун аллинчен вĕçерĕнесшĕн пулса, апла та капла пăркаланма тытăнчĕ, тем кăшкăрма çăварне уçрĕ, çав вăхăтра Артист стакан хĕррине ун шăлĕсем хушшине чикрĕ те эрехе ача çăварнелле юхтарчĕ. Илюк вара ирĕксĕрех, чыхăна-чыхăна, стаканра мĕн пулнине çăтса ячĕ...

Эрех ун ăшчиккине вутпа çунтарнă пек пĕçертсе илчĕ, çав самантра куçĕсенчен хĕрлĕ кăвак хĕм пĕрхĕннĕн туйăнчĕ.

— Ну, мĕнле пек? Лайăх вĕт? — тăрăхламалла ыйтрĕ Артист, тăнран тухса кайнă пек ларакан ача çине куç харшисем айĕн пăхса.

— Акă ĕнтĕ, тĕне кĕтĕн те эсĕ! — хушса хучĕ Матрос. Сĕтелĕн тепĕр пуçĕнче тăракан Малани тутисене пăчăрта-пăчăрта кулчĕ...

Калаçайми пулнă Илюк хаш! хаш! сывласа илчĕ те, унăн куçĕсенчен çут шăрçа пек куççулĕсем сирпĕнсе тухрĕç. Вара вăл тӳсейменнипе каллех сиксе тăчĕ те, хăйне асаплантаракансем çине калама та çук хаяррăн пăхса, сывлăшне аран çавăрса илсе кăшкăрса ячĕ:

— Ҫынсем мар эсир! Тискер кайӑксем эсир!..

Урӑх нимӗн те калаймарӗ, тата хытӑрах, ӳлесех макӑрса ярса, алӑк патнелле ыткӑнчӗ, малтан ҫенӗке, унтан кил хушшине сиксе тухса, калинкке еннелле чупрӗ...

— Тарать вӗт шуйттан ҫури, хуса ҫитсе тытӑр часрах! Тем туса хурӗ, явӑл! — васкаса кӑшкӑрчӗ Малани, чӳречерен пӑхса.

— Тартӑп ак эп ӑна!..— Матрос, сӗтел ҫине чышса илсе, ача хыҫҫӑн ыткӑнчӗ. Унччен те пулмарӗ, тулта Илюк: «Ан тив мана! Кӗместӗп, тем тусан та кӗместӗп!» — тесе ҫухӑрни, калинкке шашулкки ик-виҫ хутчен чанкӑлтатни илтӗнчӗ (Илюк епле пулсан та калинккене уҫса тухса тарасшӑн пулчӗ пулмалла ӗнтӗ), унтан Матрос тапкаланакан Илюка ҫӗклесе кӗрсе урай варрине лач! пӑрахрӗ.

— Вӗрентӗп эп сана тарма! — терӗ те вӑл хаяррӑн ҫӗрте выртакан Илюка темиҫе хутчен тапрӗ.— Ялта ҫын вӗлерсен те тарса хӑтӑлтӑн пулсан, кунтан та хӑтӑлатӑп терӗн пуль. Ҫук, анчӑк ҫури, пирӗн аларанах вӗҫерӗнеймӗн! — Вӑл сулахай аллин пуҫ пӳрнине ӗмсе илчӗ.— Ҫыртать-ха тата, усал!

— Чӑнах ҫыртрӗ-и? Хытах-и? — хыпӑнса ӳкрӗ Малани.

— Юн кӑлармаллах ҫыртрӗ, эсрелӗ!

— Ах, ухмах ача...

— Тепре тыттарса яр, эппин, ӑна уншӑн! — вырӑнтан сиксе тӑчӗ Артист, ҫакна илтсен.— Лайӑхрах астуса юлтӑр, пар тепре!

Анчах Матрос вырӑнне Артист хӑй Илюк патне пычӗ те, ӑна тӑратса лартса, ик енчен икӗ хут ҫутӑлтарса ячӗ, унтан, ҫӳҫӗнчен ҫавӑрса тытса, пуҫне каялла каҫӑртса лартрӗ:

— Тепре ҫакӑн пек хӑтлансан, вӗлеретпӗр! Ӑнлантӑн-и?

— Вӗлерӗр! Пусӑр, касӑр! — куҫҫулӗпе чыхӑнса кӑшкӑрчӗ ӑна хирӗҫ Илюк.— Хуть те тем тӑвӑр, анчах эпӗ пурӗпӗр ҫыхланмастӑп, пурӑнмастӑп сирӗнпе... вӑрӑ-хурахсемпе! Вӑрӑ пулас килмест манӑн!..

— Мӗ-ӗн? Мӗн терӗн эсӗ, тепре кала-ха! — Артистпа Матрос, иккӗш ик хулӗнчен пӗр харӑс карт! туртса, ура ҫине тӑратрӗҫ ӑна.— Кала-ха тепре?

Ах, ытла та хӑрушӑ пулчӗҫ-ҫке вӗсен сӑнӗсем ҫак самантра, куҫӗсем те кашкӑрсенни пекех хӑрушла ялкӑшрӗҫ, Матросӑн ҫӗвӗклӗ тути сиккелеме тытӑнчӗ, вӗсем иккӗшӗ те Илюка халь тесен халь тытса ҫурса тӑкас пек

тăчĕç, çавăнпа та Илюкăн хăй тин çеç каланă сăмаха тепĕр хут калама хал çитмерĕ. Анчах куçĕсемпе вăл питĕ хăюллăн, ним шиксĕр, пăрапа пăраланă пекех пăхрĕ хăйĕн çав тери курайман тăшманĕсем çине...

— Ну, ма каламастăн? Кам вăрă-хурах кунта? Кам? — сăмахĕсене шăл витĕр сăрхăнтарса ыйтрĕ Матрос.

Илюк чĕнмерĕ, вара Матрос ăна тӳрех тути урлă çапрĕ те, ача, ывтăнса кайса, стена çумĕнчи çĕтĕк диван çине пырса ӳкрĕ. Çав самантрах унăн çăварĕ хĕрринчен юн юхса анчĕ.

— Ăнлантăн-и халь тӳрĕ çынсене вăрă-хурах тенĕшĕн мĕн пулма пултарнине? — каллех ун патнелле пычĕ Матрос.— Ăнлансах çитмерĕн пулсан, тепре ăс хушса пама пултаратăп! — Вăл татах аллине çĕклесен хăйне çапасса кĕтсе, Илюк чĕрĕп пек хутланса ларчĕ. Артистпа Малани çав вăхăтра чунсăр юпасем пек ним чĕнмесĕр пăхса тăчĕç. Матрос Илюка вĕлересле хĕнес пулсан та, ăна чармастчĕç пуль çав вĕсем...

Хальхинче Матрос çапмарĕ, Илюк патĕнчен пăрăнса, сĕтел умне пычĕ те эрех тултарса ĕçрĕ.

— Ларса çийĕр ĕнтĕ халь, апачĕ сивĕнсе те кайрĕ пуль,— терĕ Малани, вăрăммăн сывласа ярса. Анчах ним сăлтавсăрах çав тери кӳрентернĕ Илюка хĕрхеннипе пулмарĕ ку, ăна «кăштах ăс панăшăн» хăйĕн кăмăлĕ тулнипе кăна пулчĕ.

Илюк, диван çинчех ларса, çăварĕнчен сăрхăннă юнне кĕпе çаннипе шăла-шăла илчĕ. Сĕтел патне те пымарĕ вăл — çиес шухăш-и ĕнтĕ унăн халь!.. Унпа лешсем те сăмах хушмарĕç, хĕненĕ хыççăн ун çинчен манса кайнă пекех пулчĕç. Вăрахчен чĕнмесĕр ларсан, Илюк хăй калаçма пуçларĕ.

— Кăларса ярăр мана, тархасшăн, ним тума та кирлĕ мар эп сире...

Ăна хирĕç нихăшĕ те чĕнмерĕ, чылайран тин Артист ун еннелле çаврăнса ларчĕ.

— Ăçта каяс шухăшу пур вара санăн? — ыйтрĕ вăл сиввĕн.

— Хуть те ăçта,— терĕ Илюк.

— Пуçна тĕрмене кайса чикес кăмăлу пулсан, пулăшма пултаратпăр ĕнтĕ. Тĕрмене кайма саншăн çул тӳп-тӳрĕ, сăлтавĕсем те нумай, темиçе статья та çыпăçтарса хума пултараççĕ санăн çамку çине...

— Мĕнле статья?— ăнланмасăр хуллен ыйтрĕ Илюк.

— Çĕр çинче Уголовнăй кодекс тенĕ питĕ ăслă кĕ-

неке пур, шăллăм. Унта вĕçĕмсĕр статья, шутласа та кăларас çук. Вĕсем хушшинче сан валли çырнисем те чылай! — Артист пирус тивертрĕ те шăл витĕр сурчĕ.— Ухмах-ха çав эсĕ, нимĕн те ăнланмастăн! Пирĕнтен уйрăлсанах пĕтетĕн, пĕр çутă кун та кураймастăн вĕт, тăм шăхличĕ! Итле акă, мĕншĕн-мĕншĕн айăплаççĕ халь сана тытсан...— Вăл сулахай алли пӳрнисене тăсрĕ те пĕрерĕн-пĕрерĕн хутлатса пыма тытăнчĕ.— Чăн малтан, эсĕ çын вĕлернĕ. Çапла-и? Çапла. Ку вăл, ачам, çывăракан çын пушмакне хывса илнинчен хăрушăрах япала...

— Эп ăна юри мар, вăл хăй...— тӳрре тухма тăнă пек пулчĕ Илюк, анчах Артист ăна аллипе сулса пӳлчĕ:

— Юри-и унта, юри мар-и, суд ăна-кăна пăхса тăмасть. Рас вĕлернĕ — вĕлернех, эппин, калаçу та пĕтнĕ. Кун пек преступленишĕн каçару çук. Уншăн эсĕ сахалтан та вунă çул илмелле. Ку — пĕрре. Малалла тата: эсĕ кунта хăçантанпа документсăр-мĕнсĕр çапкаланса, пытанса пурăнатăн-ха, э?

— Шутласа пăхнă-и эс çавăн çинчен? — ыйтрĕ Матрос та.

— Малани инке мана хăй усрать...— терĕ Илюк.

— Вăл усранăшăн эс ăна спаççипă кала, вăл сана темшĕн мар, хăй ырă чĕреллĕ пулнă пирки хĕрхеннипе усрать-ха, анчах эсĕ нимĕнле документсăр, ниçта çырăнмасăр пурăннăшăн никама та мар, сана хăвнах айăплаççĕ, уншăн та срок параççĕ!

— Мĕнле срок?

— Тĕрмере, колонире ларса тухмалли срок! Урăхла каласан — вăхăт, эппин, çулталăк, иккĕ, виççĕ...— Артист калама чарăнчĕ те ачана куçĕсенчен тĕллесе пăхрĕ. «Мĕнлерех пырса тиveççĕ-ха куна ман сăмахсем?» — тесе сăнарĕ вăл. Ним чĕнмесĕр ларакан Илюк хăранăçемĕн ытларах хăраса пычĕ... Хăйне халь çеç хĕнени çинчен те манчĕ пулмалла вăл, вăрă сăмахĕсене ĕненсех итлерĕ.

Унтан Артист малалла калама тытăнчĕ:

— Çак ĕнтĕ сана тĕрмене хупмалли иккĕмĕш сăлтав пулать тейĕпĕр... Анчах ку çеç те мар-ха, сăлтавсем татах та пур. Паçăр эсĕ, шăршлă сысна çури, пире вăрăсем терĕн. Юрĕ, эпир уншăн ытлашшиех кӳренмĕпĕр, каçарăпăр сана. Анчах эсĕ ху кам-ха халь, çавăн çинчен шухăшласа пăх-ха хăвăн айван пуçупа, э? Чăн-чăн вăрă халь эсĕ, ачамккă! Ăна эп сана тĕп-тĕрĕс кăтартса пама пултаратăп... Итле акă: тăватăмкун каç ӳсĕр çын япалисене кам йăтса чупрĕ? Эс мар-и? Паян вăрманта çывăра-

кан çын пушмакне кам хывса илчĕ? Каллех эс мар пуль? Е ун пек япала пулман та-и? Э?

— Эсир... эсир мана хăвăр хушрăр-иç...— мăкăртатса илчĕ Илюк.— Ма-ха халь ман çине яратăр...

— А вăл ниме те пĕлтермест, шăллăм! Эс хывса илтĕн пулсан — айăпĕ те пĕр санра çеç. Эпир свидетельсем кăна, суд умĕнче те çапла калама пултаратпăр!

Артист каллех Илюк çине чĕрчунсене пăвакан çĕлен пек пăхрĕ.

— Куншăн та срок параççĕ,— терĕ вăл, кăшт тăхтасан.— Çапла вара, пĕтĕмĕшпе илсен... санăн сроксем пи-итĕ нумай пухăнаççĕ, вышка патнеллех пыраççĕ. «Вышка» мĕнне пĕлетĕн-и эсĕ? Паллах, пĕлместĕн. Высшая мера тени пулать ку.— Артист хăйĕн çамкинчен шаклаттарса илчĕ.— Пĕр пуля...

Вăл сӳннĕ пирусне чĕртрĕ те çăварĕнчен пĕлĕт пек çăра тĕтĕм кăларса ячĕ.

— Çапла, шăллăм! Ăсу нумаях мар пулин те, эп каланисене лайăххрах ăнланса илме тăрăш. Эпир сана хӳтĕленине те асра тыт. Анчах, енчен, пирĕнпе килĕштерес марах тетĕн пулсан, сăмах-юмах урăхла пулать вара. Эпир сана, анчăк çурине, ыранах, çук, ыран мар, паянах, çак сехетрех муталаса хума пултаратпăр,— милицисене тыттарнă та янă! Ку пирĕншĕн пулсан пĕр пирус туртса янинчен те çăмăлтарах... Хамăршăн пирĕн нимĕнле хăрушлăх та çук, пирĕн документсем йĕркеллĕ, çап-çутă та тап-таса темелле, паспорчĕсем те, справкăсем те саккунлă, командировкăсем çине министр алă пуснă, вот епле! Пирĕн çума никам та çулăхма пултараймасть, милици тавраш умĕнче эпир — чи шанчăклă çынсем, пĕлетĕн-и? А эсĕ кам? Эсĕ — уголовнăй розыск вĕшлисем шыракан преступник! Мĕн калăн ĕнтĕ халь? Санăн пире хирĕç пымалла пек-и е, пирĕн майлă пулса, пирĕнпе килĕштерсе пурăнмалла? Э?

Илюк чĕнмерĕ. Унăн куç хупаххисем çинче каллех шултра çутă куççуль палăрчĕ. Артист каланисем ăна малтанхинчен те хытăрах пăлхатса ячĕç, унăн ăс-пуçĕ каллех пăтранма пуçларĕ. Халь тин уншăн чăнах та çăлăнăç пулма пултарас çук пек туйăнчĕ...

Пӳртре пĕр хушă шăп пулчĕ.

— Эс тата çакна асту, тăм писмен,— калаçăва сасартăк хутшăнчĕ Матрос,— сана халь Атăла кутăн чăмтарсан та ним тĕлли-палли те пулмасть, мĕншĕн тесен пирĕнсĕр пуçне сан çинчен никам та нимĕн те пĕлмест. Те пур эсĕ çут тĕнчере, те çук — вăл санăн тăван аннӳ-

шӗн те паллă мар... Çавна шута илсен, санпа мӗн пуласси пӗтӗмпех пирӗн кăмăлтан килет!

Матрос Илюк çине каллех çисе ярасла пăхса илчӗ. Ним хӳтлӗхсӗр мӗскӗн ача çине çакăн пек тискеррӗн пăхма, ачана юри çакнашкал хăрушă сăмахсем каласа ăнран тухса кайиччен хăратма кашкăр чӗриллӗ çын çеç пултарнă çав...

Пӳртре каллех шăп пулчӗ. Малани сӗтел çинчен пуçтарчӗ, Артистпа Матрос, тӗрлӗ еннелле пăхса, чӗлӗм туртса ларчӗç. Диван çумне пăталанă пек ним хускалмасăр çӗрелле пăхса ларакан Илюк питçăмартисем тăрăх вăхăтран вăхăта куççуль юхса анчӗ...

— Çитӗ! Çитӗ сана епресе ларма! — терӗ унтан Артист хыттăн, вырăнтан тăрса.— Санпа халлӗхе ним те пулман вӗт-ха? Пулман! Малашне те нимӗн те пулмасть, уншăн та ан хăра! Мӗн кирлӗ тата сана, мӗн сăмсуна юхтаратăн? Тепрер эрнерен пăрахут çине ларатпăр та акă — саншăн пачах çӗнӗ пурнăç пуçланать. Çулу çитмен пулсан та, паспорт илсе паратпăр, сана урăх нимӗн те кирлӗ мар вара, ӗçе вырнаçма та çăмăл пулать, ӗçне хамăрах тупăпăр...

— Анчах тепре паянхи пек кутăнлансан — тӳрех Атăла чăматăн, çавна та ан ман,— Илюк çине пăхмасăрах хушса хучӗ Матрос.

— Ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм...— шăппăн çеç ответ пачӗ Илюк.

— Çавăн пек вӗрентнӗ хыççăн та ăнланмасан вара...— илтӗнчӗ Малани сасси чăлантан.— Эй, ай-ай!.. Çынсем сана ыр сунаççӗ, хурлăхран хăтарасшăн тăрăшаççӗ, çавна кăштах чухлас пулать ӗнтӗ санăн, Илюш, мӗн каланине итлес пулать...

— Хăйӗн ирӗк, Малаша, хăйӗн ирӗ-ӗк, эпир ăна нимӗн чухлӗ те пусмăрламастпă-ăр,— терӗ Артист, сăмахӗсене юрланă пек тăсса.— Çак тӗнчере ирӗклӗ çын пулса пурăнасси килет пулсан, хăйӗннех ăнланмалла: пирӗнсӗр жива-два пӗтет вăл, кушак çăварне лекнӗ шăши пекех пӗтет. Каларăм вӗт-ха, халь лексен ăна «вышка» та пама пултараççӗ!

Тулта майӗпе тӗттӗмлене пуçларӗ. Илюк шухăшӗ-кăмăлӗ те ытларах тӗксӗмленчӗ...

## 17

...Çак каçхине ăна каллех темӗн тӗрлӗ хăрушă тӗлӗксем курăнса асаплантарчӗç, çӗр каçа вăл темиçе хутчен

шарт та шарт иксе вăранчĕ те ун хыççăн вăрахчен çывăрса каяймасăр выртрĕ.

Ирхине вара чылай çывăрчĕ — вăл вăраннă чух стена çинчи тутăхнă сехет йĕппи тăххăр патнех çитнĕ-мĕн. Килте никам та çук, пурте таçта тухса кайнă. Пĕччен юлнă май Илюк пуçне нимрен малтан çак ылханлă пӳртрен тухса тарас шухăш пырса кĕчĕ. Питĕ хăвăрт çуралчĕ те вăл шухăш ачана пĕр вăхăтлăха çĕклентерсех ячĕ. «Халех çак самантрах леш вăрăсемпе Малани килсе кĕриччен сиксе тухас та ăçталла май килнĕ — çавăнталла тапас, кайран-малтан хуть те мĕн пултăр. Пурĕпĕр пĕтмелле, халь тин ырри çапах пулас çук...»

Вăл, пӳрт алăкĕ патне хăвăрт утса пырса, ăна чавсипе тĕртрĕ, анчах алăк... кăшт та хускалмарĕ. Ăна тул енчен питĕ çирĕп тĕкĕлесе лартнă иккен. Унтан тата тепре хытăрах тĕксе пăхрĕ, анчах усси каллех пулмарĕ. Илюк вара тӳрех тавçăрса илчĕ: вăл тухса тарасран ăна юри питĕрсе хăварнă вĕсем!

«Чее хăтланнă шуйттансем! — терĕ Илюк, хăй ăшĕнче тарăхса кайса.— Мĕн тума пулать-ха халь?..»

Аптранипе вăл чӳречесем çине пăхса илчĕ: сикме пулмасть-ши? Анчах чӳречисем пурте икĕ хутлă иккен, вĕсене йăпăр-япăрах уçаяс çук, рамисене çĕмĕрес пулать, вара каллех тем те курмалла пулĕ. «Тепре кутăнлансанах Атăла чăмтаратпăр»,— терĕç вĕт-ха вĕсем ĕнер.

Такам систернипе шухăшланă пекех пулчĕ ку: çав самантрах тулта тимĕр чăнкăртатрĕ,— тахăшĕ çенĕк алăкне питĕрнĕ çăраççине уçрĕ ĕнтĕ,— унтан ура сассисем илтĕнчĕç... Ним палли те ан пултăр тесе, Илюк каллех кăмака хыçне кĕрсе выртма шутларĕ, анчах ĕлкĕреймерĕ, пӳрт алăкĕ уçăлчĕ те, малтан Малани кĕчĕ, ун хыççăн пӳрте çӳллĕ те патвар кĕлеткеллĕ, пысăк хура уссиллĕ милиционер кĕрсе тăчĕ. Пиçиххийĕ çинче пистолет, аллинче пĕчĕк сăран сумка.

«Ак хайхи... тыттарса яраççĕ, эппин, мана... Малани ку милиционера ятарласа ман пирки чĕнсе килнĕ... Пулчĕ, пĕтрĕм!..»— йăн-ян туса кайрĕ Илюк пуçĕ.

Милиционерне вăл тӳрех палласа илчĕ. Епле-ха палламастăн? Ялтан тарса çитнĕ кун, Шупашкара экскурсие килнĕ таçти шкул ачисемпе чылай çӳренĕ хыççăн пĕр столовăйра касса патне черете тăрсан, çак мăн уссиллĕ милиционер çав столовăя Илюксен колхоз председателĕпе, Яраткинпа, пĕрле пырса кĕчĕ. Паллах, ун чухне вĕсем Илюка шыранă, анчах Илюк хăй вĕсене малтарахран асăрхаса тухса тарма ĕлкĕрчĕ те — хăтăлчĕ.

Халь акӑ тытса каятех, тин ҫалӑнасси пўлас ҫўк...

«Ну, мĕнех ĕнтĕ... Хупчăрах... Ҫав кирлĕ те мана...— кăмака ҫумне тайăнса ывăнчăклăн шухăшларĕ Илюк.— Персех вĕлермесен, хăҫан та пулин кăларĕҫ, тен...»

— Иртсем малалла, Кури Яккăлч, иртсе ларсам! Ак ҫакăнта, сĕтел патнерех... Пӳртне те тасатаймарăм-ха ку кунсенче, сысна йăви пекех пулса кайрĕ, никак та ерҫейместĕп. Пĕччен хĕрарăмăн пурнăҫĕ ҫавăн пек-ҫке вăл, пурне те хăвăн тумалла та...— пакăлтатма тапранса кайрĕ ҫав вăхăтра Малани, унта-кунта выртакан япаласене пуҫтаркаласа. Илюк тĕлĕпе иртнĕ чух вăл ăна темшĕн хулĕнчен икĕ хутчен самаях хытă чĕпĕтсе илчĕ. Теме пĕлтерчĕ ку, Илюк ăна пĕртте ăнланаймарĕ...

— Ку ачи манăн Муркаша качча кайнă аппа ывăлĕ-ха,— Илюк ҫине кăтартса ҫатăлтатма тытăнчĕ Малани,— каникул вăхăтĕнче хула курма килчĕ, килни ик кун анчах-ха... Ашшĕне вăрҫăра вĕлерчĕҫ те, тăлăххăн ӳсрĕ, мăнтарăн, выҫлăн-тутлăн тенĕ пек. Питĕ хĕрхенетĕп, ҫавăнпа та пĕр хушă хам патăмра усрас терĕм-ха. Кантăр пăртак, ӳт хуштăр... Тăвансене пулăшмаллах ĕнтĕ, мĕн тăвас тетĕн!

«Мĕн тума лăпăртатать ку? Мĕн тума суять? — ҫилĕпе пăхрĕ Илюк кил хуҫи ҫине.— Вăхăта мĕншĕн тăсать пустуй? Е мана юри ытларах асаплантарасшăн-и? Милицие чĕнсе килтĕн пулсан, тыттар та яр тата часрах!..»

Малани хывăх пек сăмах вĕҫтернине милиционер малтанах ним чĕнмесĕр итлесе ларчĕ, унтан хĕрарăм калаҫма чарăнманнине кура тӳсеймерĕ, пӳлчĕ:

— Вăл-ку юрĕ-ха, Федорова, эс мана кил кĕнекине кăтарт...

— Ай-уй, Кури Яккăлч, ҫав териех ан васка-ха ĕнтĕ! — тĕлĕннĕ пек пулса ун ҫине пăхрĕ Малани.— Темиҫе уйăхра пĕрре килсе кĕретĕн пулать те...

— Васкамалла.

— Пĕр черкке ҫырла шывĕ ĕҫтерем хуть сана...

— Служба вăхăтĕнче ун пеккипе аппаланмастпăр. Кăтарт кĕнекине. Ман ăна тĕрĕслесе паллă туса хăварас пулать.

— Эй, ая-яй! — хуйхăрнă пек туса илчĕ Малани.— Ҫапла ҫав ватăлма пуҫланă тăлăх арăмăн шăпи, никам та ҫын вырăнне хумасть ăна, килсе те ҫӳремест ун патне, ăнсăртран килсе кĕрсен те часрах тухса шума васкать... Пурăна-атăн вара пĕр-пĕччен, уй тăмани хăраххи!

Вăл сĕтел ещĕкне уҫрĕ те чылайччен ухтарнă хыҫҫăн

темле кивӗ хутсем хушшинчен лучӑрканса пӗтнӗ тӑрӑх-ла тетрадь пекки тупса кӑларчӗ.

— Пӗлтӗр мӗнле пулнӑ, ҫаплипех, никама та киле кӗртмен, никама та ҫырман...

Милиционер нимӗн те чӗнмерӗ, тетраде сӗтел ҫине хучӗ те страница хыҫҫӑн страница уҫса тӗрӗслесе пычӗ. Илюк ун ҫине куҫ харшисем айӗн пӑхса тӑчӗ... Ак халех вӑл тетраде пӑхса пӗтерет те хыттӑн, пат татса калать ӗнтӗ: «Ну, ачам, кайрӑмӑр! Ҫитӗ сана кун чухлӗ пытанса пурӑннипе! Эпир сана тахҫантанпах шыратпӑр, тинех пирӗн алла лекрӗн. Ут!»

Вӑхӑт питӗ вӑраххӑн шурӗ. Темшӗн милиционерӗ Илюка тытса тухса кайма васкамарӗ, ӗмӗрне ним курман пекех, тетрадьре мӗн-мӗн ҫырнине пӗтӗмпех вуларӗ пулмалла. Малани ҫенӗкe тухса тем кӑштӑртатрӗ, унтан сӗтел ҫине пӗр пӗчӗк графин хӗрлӗ эрех, кӑлпасси, шур булка пырса лартрӗ. Унӑн епле пулсан та милиционера хӑналасси килчӗ пулмалла, анчах лешӗ Малани тӑрӑшнине пӗртте асӑрхаман пек ларчӗ. Чылайран тин вӑл пуҫне ҫӗклерӗ те, Малани ҫине пӑхса:

— Йӑмӑку колонирен таврӑнман-и-ха? — тесе ыйтрӗ.

— Килеймерӗ-ха ҫав,— терӗ те ӑна хирӗҫ Малани, итлесе ларакан Илюкран хӑранӑ пек, йӑпӑрт кӑна ун ҫине пӑхса илчӗ.

— Тата нумай лармалла-и унӑн?

— Ҫӗнӗ ҫула ҫитет пуль тетӗп-ха...— Малани ҫавӑнтах графинри эрехне стакан ҫине шӑкӑр-шӑкӑр тултарчӗ.— Ҫакна тутанса пӑх-ха, Кури Яккӑлч...

— Тавтапуҫ, Федорова, эп службӑра,— терӗ те милиционер аллинчи тетраде сӗтел ҫине хучӗ.

— Ай-уй, ара, ан тирке-ха ӗнтӗ! Шӑпирт тавраш ҫук унта, хам тунӑ ҫырла шывӗ ҫеҫ вӑл! — тулли стакана милиционера тыттарма пикенчӗ Малани.

— Ҫук, Федорова, ан чӑрман,— стакана хӑй умӗнчен сирчӗ милиционер.— Кил кӗнеки йӗркеллех санӑн...

— Йӗркеллӗ пулмасӑр тата, йӗркеллӗ пулмасӑр!

— Анчах та, тен, эсӗ кама та пулин прописксӑр усратӑн? Вӑрттӑн, э? — уссисене кулӑшла хускатса кӑмӑллӑн кулса илчӗ милиционер.

— Уй, тасаранах ҫылӑха ан кӗрт-ха, Кури Яккӑлч!— пӗҫҫисене шарт! ҫапса илчӗ Малани.— Ун пек ҫын марҫке эпӗ, саккуна нихҫан та пӑсман, пӑсассӑм та ҫук, тур хӑтартӑрах ун пеккинчен!

— Асту, сиссессӗн хӗрхенсе тӑмастӑп, ҫийӗнчех штраф шартлаттаратӑп, малтанах калатӑп сана!

— Килсе сыхла, ара, Кури Яккӑлч, тӗрӗсле! Ӗмӗрне те никам та пулмасть ман патӑмра, турра асӑнса калатӑп! — пӑт-пат сӑхсӑхса илсе каллех пакӑлтатма тытӑнчӗ Малани.— Пӗр каҫ выртма килсе ыйтакансем пулсан та кӗртессӗм ҫук, мӗн тума кирлӗ вӑл мана? Кам пӗлет, темле шухӑшлӑ ҫынсем ҫӳреҫҫӗ ку чухне, юлашки кӗпене ҫаклатса тухса кайӗҫ! Ҫук, ҫук, ырӑ ҫыннӑм, яланах тӑр-пӗччен пурӑнатӑп эпӗ... Ку ачи те темиҫе кунтан килне каять акӑ...

— Ну, юрӗ.— Милиционер пукан ҫинчен тӑчӗ те алӑк патнелле утрӗ.— Сывӑ пулса юл!

— Чипер кай эппин, Кури Яккӑлч! Тата кил, часчасах кӗрсе ҫӳре...

Малани милиционера калинкке патне ҫитиех ӑсатрӗ, унтан ҫенӗк алӑкне шӑкӑр-шакӑр питӗрсе лартрӗ те пӳрте кӗнӗ-кӗмен лач! сурчӗ.

— Тьфу, вилме маннӑскер! Мӗн кирлӗ-ши, мӗн шӑршласа ҫӳрет-ши? Эккей, йӳтӗм тупнӑ: унӑн кил кӗнекине тӗрӗслемелле! Ылтӑн купаласа хунӑ ун валли ҫав ҫӗтӗк кӗнекере!..

— Вӑл... вӑл хӑех килсе кӗчӗ-и? — хуллен ыйтрӗ кӑшт лӑпланма пуҫланӑ Илюк.

— А эс, мӗн, эп ӑна хам чӗнсе килнӗ тесе шутларӑним? Мӗн йытӑ пуҫӗ тума кирлӗ вӑл мана, саттана? Куҫпа курмӑттӑм вӑл милици таврашне, ҫӗр ҫӑттӑрах вӗсене!

Малани пасара кайса килнӗ-мӗн, вӑл сумкинчен сӗтел ҫине ҫимеллисем кӑларса хума тытӑнчӗ, ҫав вӑхӑтра Илюк еннелле ҫаврӑнчӗ те кулнӑ пек туса ыйтрӗ:

— А эсӗ... хытах хӑрарӑн курӑнать?

— Хӑрарӑм ҫав,— тунмарӗ Илюк.— Вӑл ятарласа мана тытма килнӗн туйӑнчӗ те...

— Эп сана мӗншӗн пырса чӗпӗтнине ӑнлантӑн-и?

— Ҫук...

— Милицие курсанах, эсӗ хут пек шурса кайрӑн... Ҫавӑнпа та сана: лӑпкӑ лар, саншӑн хӑрушши нимӗн те ҫук тесе систерес килчӗ. Ара, хӑрамалли чӑнах та нимӗн те пулмарӗ вӗт-ха?

Малани сарӑхнӑ шӑлӗсене йӗрсе лӑх-лӑх-лӑх кулса илчӗ.

— Э-эй, ачам, хам пурнӑҫра сахал мар улталанӑ эп вӗсене! Хӑрамастӑп! Эс те ан хӑра, пирӗнпе пурӑннӑ чух вӗсем сана нимӗн те тӑваймаҫҫӗ.

Анчах Илюк пурнӑҫӗнче хӑрамаллисем питӗ нумай пулнӑ-ха, ҫав тери нумай...

## 18

Виç-тăват кун хушши Матроспа Артист таçта çухалса пурăнчĕç. Вĕсем ăçта кайни çинчен Малани нимĕн те шарламарĕ, Илюк хăй те ыйтса пĕлме шутламарĕ. Уншăн пулсан, вăрăсем урăх нихçан пырса курăнмасан авантарах пулатчĕ ĕнтĕ, вара ăна хăй кĕтмен çĕртен килсе çакланнă танатаран хăтăлса тухма та май пулатчĕ-и, тен. Анчах лешсем пуçĕпех çухалмарĕç çав. Пĕр ирхине вăрансан, Илюк хăйĕн тăшманĕсем каллех кил хуçи арăмĕ вырăнĕ çинче çывăрнине курчĕ.

«Çаврăнса çитнĕ...— тӳрех хуçăлчĕ Илюк кăмăлĕ.— Тата ăçта çаратса çӳрерĕç-ши, эсрелсем!..»

Вăл кун иртенпех пĕтĕм тӳпене çăра пĕлĕтсем хупласа илчĕç. Кĕç чашлаттарса çумăр çуса иртет, унтан пĕр хушă уяртнă пек пулать те, кăшт тăрсан каллех вĕтĕ ала витĕр шыв юхтарнă пек сапма тытăнать. Çанталăкĕ ăшă пулман пулсан, кĕркунне пуçланнă пекех туйăнмалла.

Темшĕн-çке Малани кунĕпех килте пулмарĕ, каçалла сулăнсан тин хăйĕн юлташĕпе, хайхи Катюк ятлă пуклак хĕрарăмпа, таврăнчĕ те, вĕсем Матроспа тата Артистпа пĕрле çенĕкре чылай хушă пăшăлтатса ларчĕç. Сăмах мĕн çинчен пынине илтмен пулин те, Илюк чĕрипех туйрĕ: каллех темле хăрушă ĕç тума шутлаççĕ кусем...

Унтан Маланипе Катюк васкасах тухса кайрĕç.

Илюк чĕри тĕрĕссинех сиснĕ-мĕн. Матроспа Артист кĕçĕр хулари пĕр паллă артистка хваттерне çаратса тухма хатĕрленнĕ. Тĕллеттерекенни, малтан кайса «разведка» тăваканни, Малани тусĕ Катюк пулнă. Вăл çав артисткăран пĕр-икĕ кил урлă кăна пурăннă та çак кунсенче артистка çуллахи гастроле тухса кайнине, унăн килĕнче ватă амăшĕпе вуник-вунвиç çулхи хĕрачи çеç юлнине пĕлнĕ. Вăрăсене Катюк малтанах илсе кайса паллаштарнă: артистка хваттерĕ — икĕ хутлă йывăç çуртăн çӳлти хутĕнче, аялта пурăнакан старикпе карчăк яла кайнă, çурчĕ патне Атăл хĕрринелле тухакан пахча витĕр пымалла, пахча енче икĕ чӳрече пур, пĕр чӳречин форточки яланах уçă, ун витĕр алă чиксе ярсан, чӳречине уçма питĕ çăмăл иккен. Иртнĕ хĕлле, çав артистка чирленĕ чух, Катюк ик-виçĕ хутчен те ăна кĕпесем çуса панă та унăн япалисем ăçта упраннине лайăх астуса юлнă. Паян вăл Маланипе пĕрле артистка хваттерĕ таврашĕнче каллех чылайччен сăнаса çӳренĕ те унта ни-

мĕнле хăрушлăх та çукки çинчен Матроспа Артиста пырса пĕлтернĕ.

— Шанчăклă, питĕ шанчăклă....

— Йăпăрт çеç кĕрсе тухмалла!

Хĕрарăмсем хăпăл-хапăлах таçта тухса кайсан, Матроспа Артист вăрахчен ним чĕнмесĕр чĕлĕм мăкăрлантарса выртрĕç, унтан, тулта тĕттĕмленсе çитсен, пĕр вунпĕр сехетсем çитеспе, Матрос тăрук сиксе тăчĕ те, кăмака хыçнелле пырса, Илюк уринчен тĕртсе илчĕ:

— Эй, эсĕ çывăрса та кайрăн-и?

— Çук-ха, — терĕ Илюк.— Мĕн вара?

— Тăр тавай. Кайса килмелли пур.

— Ăçта? — тем ырă мар япала пуласса сиснĕ пекех, арçын ача чĕри пăлхануллăн тапма пуçларĕ.

— Ухутана каятпăр.

— Мĕнле ухутана? Халь çĕрле-иç?

— Ана санăн халех пĕлме те кирлĕ мар. Тăр часрах, ан йăраланса вырт!

«Пĕтрĕ пуç, татах вăрра илсе каясшăн пулмалла кусем мана... Апла пулсан, тĕттĕмрех çĕрте аяккалла тапса сикетĕп, ним тусан та хутшăнмастăп!..» — шухăш вĕçсе илчĕ Илюк пуçĕнче.

Вăл кăмака хыçĕнчен тухрĕ те Артист сĕтел умĕнче пистолет обоймине патронсем тултарса тăнине курчĕ. Вĕсен пăшал та пуррине ку таранччен Илюк пĕлменччĕха. Эппин, ку вăрăсем çын вĕлермелли хатĕр те тытаççĕ, вĕлерме те пултараççĕ!

Ача тепĕр хут çав тери хăраса кайрĕ, унăн чĕри сӳ! турĕ.

«Ăçта, мĕн çаратма шутлаççĕ-ши? Ах, каяс марччĕçке вĕсемпе пĕрле, çыхăнас марччĕ!..»

Анчах пĕр сăмах та калаймарĕ, хирĕçсе тăма та пултараймарĕ.

— Ну, кайрăмăр! — приказ панă пекех каларĕ Матрос, ача çине сиввĕн пăхса илсе.— Кĕçĕр санăн хăюллă пулас пулать, асту, сăмсуна юхтарнă ан пултăр!

— Мĕн тумалла вара манăн? — аран ыйтрĕ Илюк.

— Манпа пĕрле пĕр хваттере кĕретĕн. Хуçисен япалисем ытлашши нумайланса кайнă, çавсене кăштах йăкăртас пулать. Ăнлантăн-и?

— Каллех вăр... вăрламалла-и? — сасси тӳрех пӳлĕнсе ларчĕ Илюкăн.

— Вăрламалла мар, илсе тухмалла кăна! Ут!

Вĕсем Малани килĕнчен тухрĕç. Тӳпене тăхлан пек пĕлĕтсем хупласа илнипе урамра тĕпсакайĕнчи пекех

тёттём иккен, ик-виç утăмри те курăнмасть. Кун пек çанталăк вăрăсемшĕн пулсан ырлăх ĕнтĕ!

Тепĕр пилĕк минутран виçĕ мĕлке, Атăл хĕрринчи бульвара тухса, анаталла кайрĕç, унтан, перевоз тĕлĕпе иртсе, Чебоксарка шывĕ урлă каçрĕç те ансăр тăкăрлăкалла пăрăнчĕç. Вĕсене пĕр чĕрчун та тĕл пулмарĕ. Хула пурнăçĕ шăпланнă ĕнтĕ, Хĕрлĕ площадьри паркран кăна радио юрлани илтĕнет...

Хӳме çумнелле йăпшăнса, малта Матрос утса пычĕ, ун хыççăн Илюк, чăн юлашкинчен — Артист. Акă, пĕр вата йăмра тĕлне çитсен, Матрос чарăнса тăчĕ, унăн-кунăн пăхса илчĕ те:

— Çакăнтан каçса кĕрес пулать,— терĕ шăппăн. Çав самантрах хăй чус карта урлă сикрĕ. Илюк тытăнса тăчĕ, анчах ăна Артист хыçалтан тĕртрĕ:

— Каç часрах!

Вĕсем пахчаçимĕç йăранĕсем хушшипе утрĕç. Мĕн пулать-ши халь, мĕн пулса тухать?! Ытла та хăрамалла вĕт-ха!..

Часах темле сарай хыçне пырса тухрĕç. Ун çумне чылай вăрăм пусма тайăнтарса хунă. Вăрăсем ăна та малтанах асăрхаса юлнă иккен! Матрос çав пусмана пĕр вĕçĕнчен, Артист тепĕр вĕçĕнчен йăтрĕç те малалла утрĕç. Илюк вырăнтах тăрса юлчĕ. Акă ĕнтĕ тинех меллĕ самант çитрĕ пулас! Пĕррех аяккалла тапса сикмелле те, вара...

Анчах вăл нимĕн те тăваймарĕ. Ача хыçалта тăрса юлнине Артист тӳрех асăрхарĕ те, аллинчи пусма вĕçне пăрахса, пĕррех каялла, Илюк патнелле, сикрĕ.

— Эсĕ мĕн хăтланатăн? Вĕлеретĕп! — чашкăрса илчĕ те вăл ачана хулĕнчен хыпкăчпа хĕстернĕ пек пăчăртаса лартрĕ.— Тарас шуту пур-и-мĕн? Асту, çакăнтах вилсе выртатăн!

— Çук... манăн тула каяс килчĕ,— суйрĕ Илюк.

— Ут малалла!

Пулаймарĕ Илюкăн хăтăласси...

Артистпа Матрос пусмана икĕ хутлă йывăç çурт чӳречи тĕлне питĕ шăппăн илсе пырса тăратрĕç. Илюк ним тума пĕлмесĕр, юпа пек хытса тăчĕ, унăн шăлĕсем шаккама тытăнчĕç.

— Малтан эп хам хăпарса чӳречине уçатăп, ман хыççăн эсĕ улăхатăн,— васкавлăн пăшăлтатса калама тытăнчĕ Матрос Илюка.— Шалта никам та çук унта, ан чĕтре! Ăна-кăна илетпĕр те шăппăн кăна тухса каятпăр. Ăнлантăн-и?

Илюк ăна хирĕç нимĕн те калаймарĕ.

Унччен те пулмарĕ, Матрос пусма тăрăх çӳлелле хăпарса кайрĕ. Темиçе самантранах вăл чӳречене уçса шала кĕчĕ, вара Артист Илюка çурăмĕнчен тĕртсе илчĕ:

— Ну, улăхса кай хăвăртрах!

Анчах ачан вăл хушнине ниепле те тăвас килмерĕ, вара Артист ăна айăкĕнчен ыратмаллах чышрĕ.

— Часрах!

Илюк ирĕксĕрех пусмапа хăпарма тытăнчĕ. Унăн пĕр хушă ăсĕ-тăнĕ пăтранса кайнă пек пулчĕ, анчах хăй пурпĕрех çӳлелле хăпарса пычĕ... Акă вăл чӳрече патне çитрĕ, чӳрече ани урлă ярса пусрĕ... Çав самантрах сасартăк шалта темле хĕрарăм çав тери хыттăн кăшкăрса яни илтĕнчĕ:

— Кам кунта? А-а-а!

Кĕç малти пӳлĕм ăшчикки ялт! çутăлса кайрĕ. Уçă алăк витĕр Илюк диван çинче 12—13 çулхи хĕрача пĕр аялти кĕпепе кăна ларнине, ун умĕнче вăрăм çĕçĕ тытнă Матрос тăнине курчĕ.

— Шăп ларнă пултăр! — терĕ вăл, çĕççине хĕрача пичĕ патнех илсе пырса.— Халех чиксе пăрахатăп!

Матрос ăна чăнах чиксе пăрахасран вилес пек хăраса кайса, Илюк малти пӳлĕме чупса кĕчĕ. Çак самантра вăл ăнран тухса кайнă мĕскĕн хĕрачана хăйĕн кĕлеткипе хӳтĕлеме те хатĕр пулчĕ çав! Ытла та хĕрхенмеллеçке-ха ăна! Анчах пӳлĕмре хĕрача пĕччен мар-мĕн, тепĕр стена çумĕнчи кравать çинче ватă хĕрарăм ларать, унăн та хăранипе куçĕ-пуçĕ чарăлса кайнă, тăруках чĕлхесĕр пулнă пулмалла вăл...

— Пĕрре çăвар уçсанах леш тĕнчене ăсанатăр! — терĕ те Матрос хĕрачапа ватă хĕрарăма тепĕр хут аллинчи çĕççипе юнарĕ, унтан вара алăк патĕнчи тĕкĕрлĕ шкаф алăкне пĕррех туртса уçрĕ. Кунта костюмсем, çуллахи пальтосем, хĕрарăм кĕписем магазинри пекех йĕркипе çакăнса тăраççĕ. Матрос вĕсене пĕрин хыççăн теприне кăлара-кăлара ывăтрĕ те пĕр купа туса утиялпа çыхрĕ.

— Чӳречерен кăларса ывăт! — хушрĕ вăл ни вилĕ, ни чĕрĕ тăракан Илюка.— Часрах! Ну!

Ой, мĕн тери усаллăн çутăлса илчĕç Матрос куçĕсем çав самантра, мĕн тери хăрушă пулчĕ унăн сăнĕ-пичĕ! Çын мар çав ĕнтĕ, чăн-чăн тискер кайăк, урнă кашкăр!..

Илюк ăна пĕр сăмахсăрах итлерĕ, япала çыххине çĕклесе кухньăри чӳрече витĕр аялалла пăрахрĕ. Çав вăхăтра Матрос, пӳлĕмри тепĕр шкафран хĕллехи тумтирсене кăларса тăкса, икĕ çыхă турĕ, вĕсене те Илюка

чӳречерен ывăттарчĕ, хăй çавăнтах ватă хĕрарăм патне сиксе пырса ыйтрĕ:

— Укçа ! Ăçта укçа? Кала хăвăртрах! — Ун аллинче каллех çĕçĕ çуталса илчĕ.

— Комодра... сумкăра...— кăвакарса кайнă тутисене аран хускатса пăшăлтатрĕ хĕрарăм.

Матрос комод ещĕкне уçрĕ, чăн малтан хĕрарăм сумкине ярса тытса унти пур-çук укçана кăларса илчĕ, унтан ещĕкри темле хутсене, вĕт-шак япаласене автан тислĕк купине урисемпе чавса аяккалла сирпĕтнĕ пек ыткăнтарма тытăнчĕ, анчах урăх нимĕнех те тупăнмарĕ пулас бандит валли. Çаратса тăранманнипе вăл пӳлĕм ăшчиккине тата куçĕсемпе ухтарма тытăнчĕ. Комод çинче ылтăн эрешлĕ пысăках мар сехет тăрать иккен. Матрос ăна хăвăрт илсе Илюка тыттарчĕ.

— Асту, ан çĕмĕр.

Çав самантра тултан, кухньăри уçă чӳрече витĕр, хуллен кăна шăхăрни илтĕнчĕ. Ку, паллах, аялта кĕтсе тăракан Артист сигналĕ ĕнтĕ: «Васкас пулать, вăхăт нумая кайрĕ...»

— Тух хăвăртрах,— Илюка тĕртрĕ Матрос, унтан чăн-чăн вилнĕ пек ларакан карчăк патнелле икĕ утăм турĕ те каллех çĕççипе юнаса илчĕ: — Астăвăр, лăпкăн ларнă пултăр! Хăвăра чĕррĕн хăварнăшăн спаççипă калăр мана!

Ватă хĕрарăмăн куçĕсем хупăнчĕç. Вăл, ним пĕлми пулса, минтер çине йăванса кайрĕ...

## 19

Илюкпа Матрос пусма тăрăх Артист патне ансан, вĕсем кунта пĕр самант та тытăнса тăмарĕç, кашни пĕрер çыхă йăтрĕç те, пахчаран хăвăрт кăна тухса, Атăл хĕрринелле чупрĕç. Тĕттĕм, шăтăк-путăклă тăкăрлăкран тухнă хыççăн хальхинче малта пыракан Артист цирк çурчĕ евĕрлĕ çап-çаврака тăвар склачĕ çуммипе пăрăнчĕ те пĕрене куписем хушшине чăмрĕ. Илюк ун хыççăн аран ĕлкĕрсе пычĕ, хăйне çĕклеттернĕ япаласен çыххи йывăр пулнипе часах лачкам шыва ӳкрĕ. Хăй çав вăхăтрах: «Ăçта каяççĕ ĕнтĕ кусем? Вăрланă япалисене йываççем хушшине пытарасшăн-ши?» — тесе шухăшларĕ.

Анчах Матроспа Артистăн ĕмĕчĕ пачах урăхла пулнă. Маланипе Катюк кăнтăрлах пĕр кимĕ хуçипе — Атăл хĕрринче ăна-кăна вăрласа, ĕçсе-супса пурăнакан этемпе — калаçса татăлнă-мĕн. Çуркунне типпе юлнă ки-

вӗ баржа ҫумӗпе иртнӗ хыҫҫӑн, Артист виҫӗ хутчен кӗскен-кӗскен шӑхӑрсанах, вӗсен умне таҫтан хӑяматӗнчен ҫӳллӗ те тӗреклӗ ҫын мӗлки тухса тӑчӗ.

— Иван? — ыйтрӗ унтан Артист шӑппӑн.

— Хӗрӗх ҫул ӗнтӗ Иван пулни,— терӗ лешӗ.

— Карапу ӑҫта?

— Ав кунтах, сире паҫӑрах кӗтет...

Урӑх вӗсем нимӗн те калаҫмарӗҫ, ҫыхӑсене шыв хӗррине ҫӗклесе тухрӗҫ те самаях пысӑк кимӗ ҫине йӑпӑр-япӑр вырнаҫтарса хучӗҫ.

— Хӑвӑртрах, атту ҫутӑлма пултарать,— терӗ Матрос.

— Ёлкӗретпӗр,— аллине сулчӗ кимӗҫӗ,— вырнаҫӑр.

Артист кимӗ хӳрине кайрӗ, Матрос хулран туртнипе Илюк унпа юнашар пырса ларчӗ, кимӗ хуҫи кӗсменсене ярса тытрӗ. Кӗҫех вара кимӗ тикӗт пек хура Атӑл варринелле тухрӗ те анаталла ним сассӑр шума тытӑнчӗ.

«Ӑҫта каятпӑр-ши капла?» — каллех хӑраса шухӑшларӗ Илюк, кимӗри сак ҫумне пӑталанӑ пек ним хускалмасӑр ларса. Ӑна халь хӑй вӑрӑсемпе пӗрле сӗм-ҫӗрле таҫталла кайни те, таврари тӗттӗмлӗх те, шӑплӑх та, хӑш чух инҫетре темле пӑрахутсем кӗскен кӑшкӑртса илни те хӑратрӗ ҫав...

Те пӗр сехет, те иккӗ кайрӗҫ вӗсем, Илюк чухласа илме пултараймарӗ, анчах ӑна хӑйсем питӗ нумай вӑхӑт кайнӑн туйӑнчӗ. Унтан тем вӑхӑтран кимӗ пуҫӗ, ҫырана тӑрӑнса, хӑйӑра чӑшӑлтаттарса илчӗ.

— Ҫитрӗмӗр,— терӗ те кимӗ хуҫи, кӗсменсене пӑрахса, ҫырана сиксе анчӗ. Ун хыҫҫӑн Матроспа Артист кимӗ тӗпӗнче выртакан япала ҫыххисене йӑтса тухрӗҫ, вӗсем хушнипе Илюк та, юлашки ҫыхха ҫӗклесе, кимӗ пуҫӗнчен хӑйӑр ҫине сикрӗ.

Тул халӗ те ҫутӑлмарӗ-ха, тӳпене пӗлӗтсем хупласа илнипе ҫав-ҫавах тӗттӗм пулчӗ, ҫавӑнпа та Илюк, йӗри-тавралла тем пек тинкерсе пӑхсан та, хӑйсем мӗнле ҫӗре килсе тухнине чухласа илме пултараймарӗ. Тӗрӗссипе, вӗсем Атӑл варринчи чылаях пысӑк утрав ҫине ҫитсе тухнӑ-мӗн...

— Ӑҫта-ши пирӗннисем? — шӑппӑн ыйтрӗ Артист Матросран.

— Ҫак таврашрах пулма кирлӗ,— терӗ Матрос.— Тӑхта, халех тупатпӑр.

Вӑл шыв хӗрринчен аяккалла утса кайрӗ те, темиҫе самантран тӗттӗмре шӑхӑрни илтӗнчӗ. Пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ...

«Кама шырать тата ку? — тӗлӗнчӗ Илюк.— Кам пулма пултарать кунта ҫакӑн пек ҫӗрле тӗттӗм ҫӗрте?..»

Анчах икӗ минут та иртмерӗ пулӗ, унӑн тата ытларах тӗлӗнмелле пулчӗ: кимӗ патне Матроспа пӗрле хӑйсен кил хуҫи Маланипе Катюк пырса тӑчӗҫ! Ӑҫтан, хӑҫан килсе лекме пултарнӑ-ха вӗсем кунта?!

— Ну, ӗҫсем мӗнле сирӗн? — ыйтрӗ Артист.

— Паҫӑрах хатӗр, сире кӗтсе шалт хӑшкӑлтӑмӑр, тем пулман-ши тесе пӑшӑрханма та пуҫларӑмӑр,— терӗ Малани.

— Инҫе-и? — ыйтрӗ каллех Артист.

— Пӗр виҫҫӗр утӑмран ытла мар...

Илюк вӗсем мӗн ҫинчен калаҫнине ӑнланмарӗ, анчах тепӗр вунӑ минутран, ҫыхӑсене ҫӗклесе ҫыранран инҫе те мар ӳсекен ҫӑра хӑва тӗмисем хушшипе самаях чылай кайсан, пӗтӗмпех чухласа илчӗ: Маланипе Катюк, кунта малтанах ҫитсе (ахальтен мар вӗсем паян килтен питӗ васкаса тухса кайрӗҫ!), вӑрланӑ япаласене пытарма пысӑк шӑтӑк алтса хатӗрленӗ иккен...

...Вӑрӑсем кӗҫӗр ҫаратса тухнӑ хаклӑ япаласене васкасах хӑйӑр ӑшне пытарнӑ вӑхӑтра, ҫур ҫӗр иртсен икӗ сехетре, Кувшинка тӗлӗнчи утрав патне — йӑлӑм енчен — пӗр-пӗччен ҫын ларнӑ тепӗр кимӗ пырса чарӑнчӗ. Ҫав ҫын, ҫырана тухсан, хӑйӗн ҫӑмӑл киммине ҫурри таранах хӑйӑр ҫине туртса кӑларчӗ те хӑва тӗмисем хушшипе Мӑн Атӑл еннелле тӳрӗрен тӳрӗ утрӗ.

Ку вӑл — кунти пулӑҫсен «Атӑл» ятлӑ колхозӗн членӗ, ӗмӗрне Атӑл ҫинче, малтан матросра, унтан бакенщикра ӗҫлесе иртгернӗ ӑста пулӑҫ Михей мучи пулнӑ. Каҫхине вӑл Мӑн Атӑл хӗррине, тарӑнах мар ҫӗре, пулӑ тытмалли хатӗрсем лартнӑ та, тул ҫутӑлсанах вӗсене тӗрӗслес тесе, ир-ирех тӑрса тухнӑ-мӗн.

Михей мучи васкамасӑр, ним шухӑшламасӑр, ҫуннӑҫунман чӗлӗмне ӗмкелесе утрӗ. Кайсан-кайсан, сасартӑк вӑл хӑйӗнчен сылтӑм енчи тӗмӗсем хушшинче темле ҫынсем кӑштӑртатнине илтех кайрӗ. Мӗне пӗлтерет ку? Кам пулма пултарать кунта ҫак вӑхӑтра? Старик, тӑпах чарӑнса тӑрса, тинкеререх итлеме тытӑнчӗ. Халь ӗнтӗ сасӑсем те илтӗнчӗҫ: мӑкӑр-мӑкӑр, мӑкӑр-мӑкӑр... Ҫын сассисемех, анчах сӑмахӗсене пӗртте уйӑрса илме ҫук...

Старик чӗри кӑрт-кӑрт туса илчӗ. Ырра мар ку! Ырра мар!.. Чипер шухӑшлӑ ҫынсем кун пек вӑхӑтра вӗҫен кайӑксемсӗр пуҫне нимӗнле чӗрчун та пурӑнман улах утрав ҫине мӗн тума килччӗр? Пулӑҫсем, пӗр-пӗр вӑрттӑн

браконьерсем тесен,— вёсем утрав варринче мар, шыв хёрринче çеç пулма пултараççĕ...

Михей мучи, ватă салтак, граждан вăрçин историне пысăк чаппа кĕрсе юлнă «Ваня-коммунист» пăрахут çинче çапăçнă матрос, ĕмĕрне те хăравçă пулман, анчах халĕ çав хуллен мăкăртатакан çынсем патне тӳрех пырса тухма тытăнса тăчĕ.

Кам пĕлет? Темле çынсем унта? Тен — вăрă-хурахсем, бандит таврашĕсем? Тен, колонисенчен тарнисем çын кусне курăнасран пытанаççĕ? Ун пекки те пулкалать тепĕр чух. Пырса тухăн та — пĕррех шаккаса хурĕç. Вырăнĕ ытла та улах, çитменнине, çĕрле...

Çапах та, кăшт тăрсан, таçтан мурĕнчен килсе кĕнĕ вăрттăн çынсем çинчен мĕн чухлĕ те пулин пĕлес шутпа, урисене кушак пек шăппăн илсе пусса, вăл вунăвунпилĕк утăм малалла кайрĕ. Халь вара сăмахсене те уйăрса илме май пулчĕ.

— Лайăхрах, хытăрах таптас...

— Çиййĕнчен туратсем пăрахса ним палăрми тăвас пулать...

Унччен те пулмарĕ, йывăç тураттисене çăтăр та çатăр хуçма тытăнни илтĕнчĕ. Михей мучи сывлама та чарăнчĕ. Мĕн тăваççĕ кусем? Мĕн пытараççĕ? Тем тесен те — вăрăсемех! Вăрланă япаласене пытараççĕ... Ак япала, ак тĕлĕнтермĕш! Мĕн тăвас пулать-ши халь? Часрах киле кайса кӳршĕсене вăратса тухас та облава тăвас-ши? Анчах вăл хушăра ку çыннисем утрав çинчен тухса кайсан?.. Вĕсен ăçта та пулсан кимĕ пурах ĕнтĕ, ахаль лекеймен вĕсем кунта... Ак сана задача, ватă матрос Михей! Шутла, шутласа туп часрах хăвăн мĕн тумаллине!

Анчах нумай шутласа тăмалла пулмарĕ унăн.

— Ну, кайрăмăр, çутăличчен леш енне каçса ĕлкĕрес пулать,— терĕ вăрăсенчен пĕри.

Унтан ура сассисем чăштăртатни илтĕнчĕ. Малтан уçăмлăрах, унтан хуллентерех, инçетерех... Каяççĕ! Кăшт та пулин курса юласчĕ хуть!..

Михей мучи хăва тĕмисен хӳттипе йăпшăнса, пуçне пĕксе малтан мала куçса пычĕ. Акă палламан çынсем — пилĕк мĕлке — йывăçсем хушшинчен тухрĕç те шыв хĕрринелле кайрĕç. Халь ĕнтĕ Михейăн тек малалла кайма юрамасть, ăна лешсем асăрхама пултараççĕ, асăрхасан вара... темрен тем пулса тухĕ!

Мĕлкесем шыв хĕррине çитрĕç, кимĕ çине кĕрсе вырнаçрĕç, унтан кимĕ, ерипен хускалса, Атăл варринелле шуса кайрĕ те часах куçран пачах çухалчĕ...

Çук, пулăсем çинчен пулмарĕ халь Михей мучи шухăшĕ: çава патне кайтăр пуллу-качку! Кимĕ курăнми пулсанах, старик йывăç тĕмисем хушшине чупса кĕчĕ те вăрăсем халь çеç «ĕçленĕ» вырăна шырама тытăнчĕ. Тул çутăлса килнĕ май нумаях шырамалла пулмарĕ,— тин çеç хуçса пăрахнă йывăç тураттисем шăтăк тĕлне лайăх палăртаççĕ. Михей мучи малтанах çав шăтăка чавса унта мĕн пытарнине пĕлме шут тытнăччĕ, анчах çав самантрах астуса илчĕ: кун пек чухне ниме те тĕкĕнме, патне пыма та юрамасть, вăл кайран милицие ĕçе йĕрлесе пĕлнĕ чух кансĕрлеме пултарать. Çавăнпа та вăл шăтăк ăçтараххине лайăххрах астуса юлма унăн-кунăн пăхса илчĕ те васкасах хăйĕн киммн патне чупрĕ...

Килне вăл такамран тарнă пек хашкаса пырса кĕчĕ.

— Ай-уй, Миххи, мĕн пулчĕ сана капла? Кашкăрсене тĕл пулмарăн пулĕ те? — тĕлĕннĕ пекрех, кулнă пекрех ыйтрĕ тин çеç тăрса ларнă карчăкĕ.

— Тĕл пултăм çав! Пилĕк кашкăр пĕр харăс куртăм, анчах пурте икĕ уранлă,— терĕ Михей мучи, çамкине шăлса илсе.

— Ан тĕлĕнтер-ха эсĕ...

— Тĕлĕнмелле çав, шутсăр тĕлĕнмелле! Ĕмĕр курманнине куртăм, тарăхман вырăн юлмарĕ...

— Пуллуна сăптăрса кайнă-им?

— Санăн пулă шухăшĕ! — ал сулчĕ Михей мучи.— Тимуш ăçта?

— Ара, вăл пахчари будкăра çывăрать-иç...

— Вăратса кĕр ăна...

— Мĕн тума? Çывăртăр-иç тăраниччен. Ирхи ыйхă нимрен те тутлă...

— Çывăрмалла мар-ха халь, часрах ĕç тумалла.

— Хĕвел тухнă-тухман ачан мĕн ĕçĕ пултăр?

— Пур çав, пур! Вăратса кĕр теççĕ сана!— сассине хытарчĕ старик.— Унăн халех хулана каяс пулать!

— Мĕн нуштипе? Килни те виç кун çеç-иç?

— Ан тавлашса тăр! Ту мĕн хушнине!

Тимуш, вĕсен юратнă мăнукĕ, Шупашкарти пĕр пысăк заводра ĕçлекен ывăлĕн ачи, çуллахи каникул вăхăтĕнче яланах аслашшĕпе асламăш патĕнче канать, аслашшĕпе пулла çӳрет, кунти шкул ачисемпе шыва кĕрет, хăйăр çинче хĕртĕнет, гербарисем валли тĕрлĕ курăксемпе çулçăсем пухать. Ачи сăпайлă та ăслă пулнипе асламăшĕ ăна питĕ ачашлать, çавăнпа та аслашшĕ халь ăна тем сăлтавпа хĕвел тухнă-тухманах вăраттар-

нăшăн кăмăлсăрланса тухса кайрĕ. Çав хушăра Михей мучи сĕтел ещĕкĕнче хут таткипе кăранташ тупрĕ те васкасах çырма тытăнчĕ.

Кĕçех пӳрте асламăшĕпе мăнукĕ — чикан пекех хура сăнлă, кăтра пуçлă Тимуш пырса кĕчĕç.

— Мĕн тумалла, асатте? Пулла каятпăр-и? — ыйтрĕ ача, çывăрса тăранайманнипе куçĕсене сăтăркаласа.

— Пулă шучĕ мар-ха, ачам,— терĕ аслашшĕ,— пулли вăл пирĕнтен ниçтах та тармĕ. Санăн халех питĕ шутсăр васкаса çак хута Шупашкара çитерсе парас пулать. Милицие.

— Мĕнле милицие? Мĕн ĕç пур санăн милици таврашĕпе? — тĕлĕннипе куçĕсене чарсах пăрахрĕ унăн карчăкĕ.

Михей мучи пĕр хушă ун çине калас-ши, калас мар-ши тенĕ пек пăхрĕ те юлашкинчен каласах терĕ курăнать.

— Утрав çинче эпĕ темле бандитсем вăрланă япаласене пытарнине куртăм. Çакăн çинчен пĕлтерес пулать...

Асламăшĕпе мăнукĕ те калама çук тĕлĕнсе кайрĕç, ку хăрушă ĕç хăш тĕлтерех, мĕнле пулни çинчен ыйтса пĕлме пикенчĕç, анчах Михей мучи аллипе пĕррех сулса пӳлчĕ вĕсене:

— Калаçса тăма вăхăт çук! Акă сана çыру, Тимуш, халех велосипеду çине лар та — кĕрлеттер хулана! Эсĕ — пионер, кун пек чух пионерăн паттăр пулас пулать. Хулари милици тĕлне пĕлетĕн пулĕ?

— Пĕлетĕп...

— Никама та мар, начальникне хăйнех тупса пар. Хăвна ун патне кĕртесшĕн пулмасан, эс вĕсемпе çирĕппреххĕн калаç, манăн ăна питĕ пысăк ĕç çинчен пĕлтермелле те.

— Юрать, асатте!

— Ну, яра пар... Васка, ачам!

## 20

Темле вăрăсем хулари паллă артистка хваттерне тискеррĕн çаратса кайнине милицире ирхине ултă сехетре тин пĕлчĕç,— ун çинчен артистка кӳрши, чăлха фабрикинче ĕçлекен ватăрах хĕрарăм, чупса пырса каларĕ. Çакăн пек кая юлса пĕлтерни акă мĕнрен килнĕ: вăрăсем тухса каяс умĕн юнаса хăратса хăварнипе артистка амăшĕпе хĕрачи алăка уçма та, чӳречерен кăш-

кӑрса çынсене чӗнме те хӑяйман. Ӗнтӗ хӗвел те тухнӑ, урам тӑрӑх çынсем çӳреме те пуçланӑ, халь тин хӑрамалли нимӗн те пулман, анчах вӗсем çаплах хускалма шикленсе тыткӑнри пек ларнӑ...

Ӑнсӑртран килте çӑкӑр пулманнипе ирех ӗçе каймалли кӳршӗ хӗрарӑмӗ вӗсем патне вараччен кивçен çӑкӑр илем-ха тесе пынӑ та алӑкран шакканӑ. Ӑна уçса кӗртекен пулман. Сасӑ та паман. Анчах килте çын пурри паллӑ пулнӑ — алӑка шал енчен çаклатнӑ. Кӳршӗ пӑлханма, пӑшӑрханма тытӑннӑ: мӗн пулнӑ кусене? Нумай-нумай шаккаса, артистка амӑшӗпе хӗрне ятран чӗнсе кӑшкӑрсан тин вӗсем ӑна уçса кӗртнӗ те çак касхине хӑйсем мӗнле хӑрушлӑхра пулни, вӗсем патӗнче мӗн-мӗн пулса иртни çинчен макӑра-макӑра каласа кӑтартнӑ. Çакӑн хыççӑнах вара леш хӗрарӑм милицие тухса чупнӑ...

Милици уйрӑмӗнчи дежурнӑй кун çинчен телефонпа шӑнкӑравласа хӑйсен начальникне, Азаматов подполковнике, пӗлтернӗ. Начальник, темиçе минутранах милици уйрӑмне çитсе, преступлени тунӑ вырӑна оперативлӑ группӑна хӑй ертсе кайрӗ. Преступлени мӗнле пулса иртни пит лайӑх курӑннӑ: вӑрӑсем артистка хваттерне çаратма чӳречерен кӗрсе тухнӑ... Иккӗмӗш хута хӑпарма лартнӑ пусми те патӗнчех тӑрать-ха.

Амур ятлӑ йӗр йӗрлекен йытӑ опергруппӑна Атӑл хӗррине илсе пычӗ. Эппин, хурахсем кимӗпе ларса кайнӑ, вӗсене таçта Атӑл леш енче шырас пулать. Анчах, тепӗр тесен, вӗсем кимӗпе е аналла, е тӑвалла кайса тепӗр хут ку енчи çырана тухма та пултарнӑ...

Артистка амӑшӗ питӗ йывӑр чирлесе кайнӑ, ун патне «васкавлӑ пулӑшу» чӗннӗ, тухтӑр халӗ ӑна нимӗн чухлӗ те пӑлхатма юрамасть тенӗ, çавӑнпа та ӑна допрос тӑвасси çинчен сӑмах та пулма пултарайман. Ун вырӑнне вара милици начальникӗ унӑн хӗр-мӑнукне машина çине лартса илсе пыма хушрӗ.

Милицире унпа вӑл хӑй калаçрӗ. Малтан хӗрача мӗн ятлине, хӑш шкулта, миçемӗш класра вӗреннине ыйтса пӗлчӗ, унтан, тӑрук тем çинчен аса илнӗ пек, сӗтел хушшинчен тӑчӗ те: «Эсӗ пӗр-ик минут хушши çак журнала пӑхкаласа лар-ха, эп халех килетӗп»,— тесе, ӑна сӗтел çинче выртакан «Огонек» тыттарчӗ, хӑй, коридоралла тухса, вӑрахчен тытӑнса тӑчӗ. Таврӑнса килсен вара калаçӑва таçтан аякран пуçарса ячӗ.

— Эсир килте миçен пурӑнатӑр-ха çав? — йӑвашшӑн ыйтрӗ вӑл.

— Виççĕн кăна. Эпĕ, анне те кукамай... Атте вăрçăра вилнĕ,— терĕ хĕрача.

— Сан аннӳне пит лайăх пĕлетĕп эпĕ, вăл сцена çинче выляни мана яланах кăмăла каять... Халь ăçта-ха вăл сирĕн?

— Вăл инçе çав, вĕсен бригади Пушкăрт республикинче çӳрет, нумай пулмасть «Нарспи» авторĕн палăкĕ умне чечексем кайса хуни çинчен çырса ячĕ. Унтан вĕсем малалла тухса кайнă, хамăрăн çакăн пек инкек пулни çинчен ун патне мĕнле адреспа çырса ямаллине те пĕлместĕп...

Начальник вăрăм пӳрнисемпе сĕтел çине тăкăртаттарса илчĕ.

— Ман шутпа, Рита... аннӳне халь ун çинчен пĕлтерсе пăлхатма та кирлĕ мар. Ĕçлекен çынна ма хурлантарас? Унсăрах майлашăпăр, тен. Эсĕ ху вара çăвĕпех килте пурăнатăн-и, легере-мĕне каймастăн та-и?

— Пирĕн кукамай чирлĕ,— ассăн сывласа илчĕ Рита,— анне таврăниччен ăна ниепле те пăрахса хăварма çук...

— Ну, эппин, Атăл леш енне час-часах çӳрес, шыва кĕрес, хĕвел çинче хĕртĕнес пулать. Каникула ăна ачасене лайăххрах кантарма, вăй ытларах пухтарма тăваççĕ пуль, çапла-и?

— Эп ахаль те пĕрмаях çӳретĕп, хамăн тус-тантăшсемпе пĕрле...

— Ку аван вăл, питĕ аван... Усăллă!

Пĕр вăхăтлăха калаçу татăлчĕ.

Хĕрача тĕлĕнме пуçларĕ: мĕншĕн-ха милици начальникĕ унпа хурахсем хăйсем патне мĕнле пырса кĕни, мĕнле çаратни çинчен мар, урăх япаласем çинчен калаçать? Лагере каясси, шыва кĕресси, хĕртĕнесси... Мĕне кирлĕ вăл? Çавăн çинчен калаçма илсе килчĕç-им вара ăна кунта?..

Çав вăхăтра алăка шаккарĕç те, начальник: «Юрать, кĕрĕр!» — тесен, пӳлĕме илемлĕ те яштака сержант кĕрсе тăчĕ.

— Подполковник юлташ,— терĕ вăл,— эсир чĕнтернĕ çынсем килчĕç.

— Кĕртĕр,— пуçĕпе сулса илчĕ начальник.

Сержант алăка уçса кăчăк туртрĕ:

— Тархасшăн, иртĕр, юлташсем...

Самантран хĕрача çав тери тĕлĕнсе кайрĕ: начальник пӳлĕмне вĕсен шкул директорĕ Павел Петровичпа унăн мăшăрĕ, вăл вĕренекен 7-мĕш «Б» класăн руководителĕ

Анна Павловна — ҫӳҫӗ кӑвакарма пуҫланӑ самӑртарах хӗрарӑм кӗрсе тӑчӗҫ. Хӑй вӗрентекен хӗрачана курсанах, вӑл, аллисене малалла тӑсса, ун патнелле чупса пычӗ:

— Ой, Риточка, Ритуша, сывах-и эсӗ? Ой, ылтӑнӑм, чунӑмҫӑм...

Вӑл хӗрачана ҫатӑрах ыталаса илчӗ, ӑна ҫурӑмӗнчен, пуҫӗнчен ачашласа, куҫҫулӗпех макӑрма тытӑнчӗ. Милици начальникӗ, ним тума пӗлмесӗр, пӗр хушӑ ҫухалса кайнӑ пек тӑчӗ. Юрать-ха шкул директорӗ хӑй арӑмне лӑпланса чарӑнма хушрӗ.

— Ҫитӗ сана, ҫитӗ, Анна Павловна, ҫирӗпрех тыткала хӑвна, килте мар кунта...

— Епле тӳсес-ха, Павел Петрович? Ӑна вӗсем вӗлерме те пултарнӑ-ҫке. Мӗнле чӑтса ирттернӗ-ши вӑл, мӗскӗн, ҫавӑнтан тӗлӗнмелле! Ах, Ритуша...

— Ун ҫинчен пире вӑл хӑй каласа парӗ, Анна Павловна,— терӗ подполковник. — Эпӗ сире ҫавӑншӑн чӗнтертӗм. Пирӗн йӗрки ҫапла — шкул ачисенчен следстви йӗркипе мӗн те пулин ыйтса пӗлмелле пулсан, эпир ятарласах ҫав шкулти педагогсене чӗнсе илме тӑрӑшатпӑр. Ҫитменнине, халь тата Ритӑн амӑшӗ те килте ҫук, кукамӑшӗ те чирлӗ.

— Чирлеме мар, вилсе каймалла ун пек пулсан! — куҫӗсене тутрипе шӑлкаласа илчӗ Анна Павловна.

— Ну, Рита, каласа пар эппин, кӗҫӗр сирӗн патӑрта мӗн пулса иртни ҫинчен. Лӑпкӑн, пӑлханмасӑр, ним сиктерсе хӑвармасӑр,— терӗ унтан подполковник, сӗтел ҫине чавсаланса.— Йӗркипе каласа пыр...— Хӑй ҫав вӑхӑтра хӗрача ҫине питӗ ӑшшӑн, ҫав тери кӑмӑллӑн пӑхрӗ.

...Азаматов подполковник ачасене питӗ юрататъ, вӗсене кӳрентернине тӳсме пултараймасть, ӑна вӑл чи путсӗр ӗҫ тесе шутлать. Ачасене юриех йӑнӑш ҫул ҫине тӑратма, вӗсене ятарласах суйма, улталама, вӑрлама хӑнӑхтарма тӑрӑшакансене вара — ҫӗр ҫинчи чи усал тӑшман выранне хурать. Ун пек этемсемшӗн Азаматовран нихҫан та каҫару ҫук.

Унӑн хӑйӗн ачалӑх ҫулӗсем ытла та питӗ йывӑр пулнӑ ҫав. Ашшӗне, ялти учитель-коммуниста, 1918 ҫулхи кӗркунне, комбедсем вӑхӑтӗнче, ҫӗрме пуянсен пурлӑхне туртса илес ӗҫе хӗрӳллӗн ертсе пынӑшӑн курайМасӑр, кулаксем рычаксемпе хӗнесе вӗлернӗ те вакка пӑрахнӑ. Ҫуркунне тин тупӑннӑ ун вилли. Ун чухне Азаматов ултӑ ҫулхи Ванюш ҫеҫ пулнӑ-ха, анчах хӑйӗн ашшӗне епле пысӑк хисеппе пытарнине вӑл паян кун та пит лайӑх астӑвать: хуларан оркестр пычӗ, урамра

вĕçĕмсĕр хурлăхлă музыка янăрарĕ, темле сăран пиншаклă, пăшаллă çынсем ашшĕн тупăкĕ умĕнче пĕрин хыççăн тепри хĕрÿллĕ сăмахсем каларĕç, тупăкне масар шăтăкне антарнă чух вуннăн пĕр харăс çÿлелле пăшал пĕчĕç... Пĕтĕм ял халăхĕ макăрчĕ хăйсен юратнă учителĕпе юлашки хут сывпуллашнă чух. Анчах пĕчĕк Ванюш Азаматов макăрма та пĕлмерĕ — ăна хăйĕн куçĕ умĕнче мĕн-мĕн пулса иртни тĕлĕнтерсе пăрахрĕ çеç...

Кайран яла темле вĕри чир — ăна «испанка» тетчĕç— килсе кĕрсе, çур яла тенĕ пек пуçтарса тухса кайрĕ. Ванюшсем те çемйипех выртрĕç — вăл хăй те, амăшĕ те, Ванюшран ик çул аслăрах Иринка та. Пĕр асламăшĕ кăна ура çинче çÿрерĕ. Ун чухнехине вăл кăшт çеç тĕлĕкри пек астăвать: вĕсен килĕнчен харăсах икĕ тупăк çĕклесе тухса кайрĕç — пĕри пысăкчĕ, тепри пĕчĕккĕ.

Асламăшĕпе иккĕшĕ çеç тăрса юлчĕç вĕсем. Питĕ нушаланса пурăнчĕç. Ванюш час-часах чирлерĕ. Унтан выçлăх пырса çапрĕ... Асламăшĕ вилчĕ, Ванюша ача çуртне леçсе ячĕç, унтан — инçете, Украинăна, илсе кайрĕç. Питĕ нумай вăхăт кайрĕç вĕсем унта, пĕр уйăх ытла, ачасем çул çинчех выçса вилес патне çитрĕç. Ванюшран аслăрах Ленька Штык илĕртнипе вĕсем вакунран тухса тарчĕç те çапкаланса çÿреме тытăнчĕç. Ăçта кăна çитмерĕç, мĕн курмарĕç, мĕн тÿсмерĕç пуль вĕсем! Сивви, выççи... Çав Ленька Штык вĕсене вăрлама вĕрентрĕ — ăçта укçа, ăçта çимелли, хăçан мĕнле май килет. Мĕн чухлĕ патак çирĕç вĕсем çавна пула! Лексессен, хăш чух чĕп-чĕр юн пуличчен хĕнетчĕç çав! Юратьха юлашкинчен вĕсене Ростов станцинче облавăпа тытса колоние илсе кайрĕç. Урăх тарас шут пулмарĕ вара Ванюшăн. Вăл çине тăрсах вĕренчĕ. Вунçиччĕ çине пуссан (ун чухне Ванюш комсомолец пулнă ĕнтĕ), пĕррехинче колонири пур ачасене те пĕр çĕре пухрĕç те малашне камăн мĕнле шкула вĕренме каяс килни çинчен ыйтрĕç.

— Манăн командир пулас килет, эпĕ хама çар шкулне яма ыйтатăп! — терĕ Иван Азаматов.

— Маттур, ырлатăп сан шухăшна! — хулпуççирен лăпкаса илчĕ ăна колони начальникĕ, хăй те нумай фронтсенче çапăçнăскер.— Тăван çĕршыва сыхласси — чи хисеплĕ тивĕç, чи пархатарлă ĕç!..

Ăна пограничниксен шкулне ячĕç. Пилĕк çултан вăл хĕрлĕ командир пулса тăчĕ.

Ĕмĕчĕ тулчĕ унăн!

Нумай çул хушши çĕршыв чиккисене сыхласа пу-

рăнчĕ Азаматов, лейтенантран капитана çитрĕ, унăн ĕнтĕ икĕ ытарайми ача — Вовăпа Надя çитĕнсе пычĕç, шкула каякан пулчĕç. Службăран пушаннă вăхăтра капитан пĕрмай вĕсемпе иртерчĕ. Питĕ юрататчĕ вăл хăйĕн пепкисене! Анчах кайран...

Вăрçă пуçланас умĕн вĕсем Хĕвеланăç чиккинче, Рава-Русска хули хыçĕнче, пурăнсаччĕ. Телейлĕ, савăнăçлă пулчĕ унти пурнăç. Анчах пĕр ирхине, тул çутăлнă-çутăлман, вĕсем пурăннă çĕре бомбăсем шăхăрса анчĕç, çуртсем ишĕлсе çунма тытăнчĕç, ним айăпсăр çынсен юнĕ юхрĕ. Вăрçă, хăрушă, ылханлă вăрçă пуçланчĕ!

Полк командирĕ Азаматов капитана пур офицерсен çемйисене те хăвăртрах машинăсем çине тиесе чугун çул патне çитерме, унтан пурне те пуйăс çине лартса яма хушрĕ.

— Асататăн та çавăнтах таврăнса килетĕн!

— Есть! — терĕ кăна Азаматов.

Пĕр сехет-сехет çурăра пурте пуçтарăнса çитрĕç, военгородокран харăсах вунпилĕк машина хĕвелтухăçнелле тухса кайрĕ. Азаматовăн çемйи — арăмĕ, икĕ ачи — унпа пĕр машина çинче, колонна пуçĕнче, пычĕ. Анчах нумаях та каяймарĕç вĕсем — таçтан мурĕнчен çиçĕм пек сиксе тухнă нимĕç самолечĕсем хĕрарăмсемпе ачасем тиеннĕ машинăсен колоннине хуса çитсе тупăсенчен, пулеметсенчен пере-пере йăлт аркатса тăкрĕç. Ун çинчен аса илсен, Азаматовăн паян кун та куçĕсем хуралса килеççĕ...

Çавăн чух унăн çемйи те пĕтрĕ. Арăмĕ те, икĕ ачи те. Ана хăйне те амантнăччĕ, анчах суранĕ нумаях асаплантармарĕ, тӳрленчĕ...

Ой, мĕн тери хаяррăн çапăçрĕ кайран Азаматов! Хытă тавăрчĕ вăл тăшмана. Пуриншĕн те: тискер тăшман пирĕн таса çĕршыва чыссăрлама ĕмĕтленнĕшĕн те, юратнă арăмĕпе ачисемшĕн те!

Вăрçăн вĕçĕмсĕр вăрăм çулĕсем çинче вăл кайран та фашистсем пирĕн ачасене нимпе виçсе илме çук хĕн-хур кăтартнине, вĕсене выçтарса та, персе те вĕлернисене, пинĕн-пинĕн тăлăха хăварнине курнă та, унăн чĕри ыратса пăчăртаннă, тăшмана тарăхни тата ытларах вăйланнă. Хăйĕн ачисене аса илмен кун та пулман вара унăн.

Вăрçă хыççăн Азаматова милицие ĕçлеме янă. Кунта та вăл ачасемшĕн тимлĕн тăрăшнă. Вăрçа пула нумай ачасем ашшĕсемсĕр ӳснĕ, вĕсене пăсакансем те сахал мар пулнă — çавсене хирĕç кĕрешнĕ Азаматов подпол-

ковник. Милици çумĕнче ачасен пӳлĕмĕ пур — унта час-часах йĕркене пăсакан ачасене илсе пыраççĕ, вĕсене тĕрĕс çул çине тăма пулăшаççĕ. Азаматов çав ачасен пӳлĕмĕ мĕнле ĕçленине пĕртте куçран вĕçертмен, хăй те сехечĕ-сехечĕпе кайса ларнă унта, ачисемпе те, вĕсен ашшĕ-амăшĕсене те чĕнтерсе калаçнă, кирлех пулсан, хăш-хăш ачасене интернатсене, ытти шкулсене вырнаçтарма пулăшнă. Нумайăшĕ тав тунă ăна çавăншăн!

Азаматов пурăнакан мăн çуртри ачасемшĕн вара ун пек хаклă çын та пулман. Тин çеç калаçма тытăннисенчен пуçласа 16—17 çулхисем таранах ăна пурте Ваня тете тесе чĕннĕ, тĕл пулсан кашниех пуç тайса ырлăх-сывлăх суннă. Урăхла пулма та пултарайман çав: шăп та çак ача-пăчасăр, ытлашши сăмах ваклама юратман, çиелтен пăхсан кичемрех пек курăнакан çын тăрăшнипе ĕнтĕ вĕсен пысăк кил хушшинче йывăççем лартса чăн-чăн ешĕл çамрăк парк ӳстернĕ, ун варринче чуччу, çунашкапа ярăнмалли хăма сăрт, волейбол площадки тунă, пĕчĕккисем валли пĕр кĕтес уйăрса, унта сап-сар кăпăш хăйăр турттарса пынă. Выля, савăн!

Пур ачасем те Ваня тетене чунтан юратнă, анчах тепĕр чух унран хăрани те пулнă. Вылянă чухнех ачасенчен хăшĕ те пулин ытлашширех иртĕнме пуçласан, кӳреннисем тӳрех: «Асту, Ваня тетене каласа паратăп, вăл тыткалĕ сана!» — тенĕ.

Çавăн пек пулнă Иван Васильевич Азаматов, ачасен ытарайми тусĕ, вĕсемшĕн тăрăшакан, вĕсене хӳтĕлекен çын.. Ак халĕ те, паллă артистка хĕрĕ Рита иртнĕ каçхине хăйсем патне вăрăсем çĕмĕрсе кĕрсе епле тискеррĕн хăтланни çинчен каласа панă май, Азаматов подполковник ăна хĕрхенсе, ирсĕр этемсене çав тери тарăхса ларчĕ.

...Арçынсем хĕрачан хăрушă калавне ним чĕнмесĕр итлерĕç, Анна Павловна вара пĕрмай: «Ай, хăрушă! Ай, епле хăрушă! Мĕн тери тискер!» — тесе, куçĕсене шăла-шăла илчĕ.

Хĕрача каласа пĕтерсен, темиçе самантран подполковник хуллен кăна ыйтрĕ:

— Эсĕ вĕсен сăнĕсене астуса юлайманăн-и, Рита? Калăпăр, вĕсене ху куçупа курсан палласа илме пултарăн-ши?

— Астăватăп, паллама та пултаратăп пуль,— терĕ хĕрача. — Мăнни сарăрах сăнлă, сарлакарах питлĕ... Çамрăкки хура, шкула çӳремелли гимнастеркăпа, çӳçĕ вăрăм.

— Шкул форминех тăхăннă-и? — картах сиксе илчĕ Анна Павловна.

— Ан тĕлĕнĕр, ун пеккисем те пулкалаççĕ,— терĕ Азаматов.— Питĕ шел, анчах... пурнăçра пулакан япаласене йышăнмах тивет. Хамăр айăплă, ачасене пăсакансемпе вĕсене преступленисем тăвас çул çине туртакансене хирĕç çителĕксĕр кĕрешетпĕр-ха...

Вăл хăйĕн сĕтелĕнчен хура хуплашкаллă пысăк кĕнеке кăларса хĕрача умне хучĕ.

— Ак çак альбома пăхса тух-ха, эппин, Рита, сире çаратакансен сăнĕсем тĕл пулмĕç-ши? А эсир халлĕхе, ак, журналсем пăхса ларăр,— çавăнтах директорпа арăмĕ еннелле çаврăнчĕ начальник.— Йĕрки çапла, преступниксене сăнӳкерчĕкĕ тăрăх палласа илнĕ чух понятойсем кирлĕ...

Хĕрача, альбом листисене уçа-уçа, унти сăнӳкерчĕксене пăхма тытăнчĕ. Çав вăхăтра пӳлĕме каллех паçăрхи сержант кĕрсе тăчĕ.

— Подполковник юлташ,— терĕ вăл,— темле шутсăр çивĕч арçын ача килчĕ те — сире курасшăн, çыру пур тет унăн, анчах сирĕнсĕр пуçне никама та пама хушман тет. Йышăнатăр-и?

— Ăçта вăл?

— Ак унтах, коридортах тăрать.

— Кĕртĕр.

Сержант каялла тухрĕ те самантранах хайхи Кувшинкăри Михей мучи мăнукĕпе, кăтра пуçлă Тимушпа, таврăнса кĕчĕ.

— Сывлăх сунатăп! — терĕ арçын ача хăюллăн.

— Салам, тусăм! — начальник ун çине кăмăллăн пăхрĕ.— Мĕнле ыр хыпарпа килтĕн-ши?

— Ыр хыпарма мар çав, начальник юлташ, усал хыпарпа килтĕм,— терĕ Тимуш.— Акă, вулăр, унта пĕтĕмпех çырнă...— Вăл Азаматова лутăрканса пĕтнĕ хут татки тыттарчĕ.

— Кам парса ячĕ куна?

— Асатте. Вăл Кувшинкăра пурăнать пирĕн. Хăй ерçмен пирки мана ячĕ...

Подполковник çырăва вулама тытăнсанах унăн сăнĕ улшăнчĕ. Çăра куç харшисем пĕрлешрĕç, çамки картланчĕ, тутисем пăчăртанчĕç.

«Хисеплĕ начальник юлташ,— тесе çырнă Михей мучи,— кĕçĕр эпĕ, «Атăл» рыбколхоз членĕ Михей Кудряшов, Кувшинка тĕлĕнчи утрав çинче паллă мар çынсем хăйăр ăшне япаласем чавса пытарнине куртăм. Часрах

хăвăрăн çынсене кунта ярăр, çак çырăва паракан манăн мăнук Тимофей Кудряшов вĕсене ман патăма ертсе килĕ, вара эпĕ япалисем ăçта выртнине кăтартăп...»

Начальник хута хăй умне хучĕ те çавăнтах сержанта приказ пачĕ:

— Халех кунта Урусовпа Тукмакова чĕнсе килĕр!

— Слушаюсь! — сержант тухса кайрĕ.

Унтан начальник хăй умĕнчех таракан Тимуш çине пăхрĕ те:

— Тавтапуç сана, тусăм, эсĕ пирĕншĕн усал хыпар мар, питĕ лайăх хыпар илсе килнĕ! Аслаçуна та тавтапуç, салам кала ăна манран. Халĕ ĕнтĕ коридора тухса кăштах кĕтсе лар та кĕçех пирĕн çынсемпе пĕрле Кувшинкăна таврăнатăн.

— Юрать, начальник юлташ!

Тимуш тухрĕ, Азаматов темскер хăвăрт çырма тытăнчĕ. Пĕр хушă пӳлĕмре шăпах пулчĕ. Стена çинчи сехет шаккать те, начальник аллинчи перо чĕриклетет. Минут иртрĕ, виççĕ, пиллĕк... Унтан альбом пăхса ларакан Рита тăрук пукана кĕмсĕрр! шутарса сиксе тăчĕ те начальник патнелле туртăнчĕ.

— Çакă! Палларăм! Чăн та çакă çаратрĕ пире!..— альбомри пĕр сăнӳкерчĕк çине пӳрнипе тĕллесе кăшкăрсах ячĕ вăл.

Павел Петровичпа Анна Павловна та картах сикрĕç, анчах малалла мĕн пуласса кĕтсе ларăнтах ларчĕç.

Азаматов çав сăнӳкерчĕк çине вăрахчен пăхрĕ...

— Йăнăшмастăн-и, Рита?

— Çук, çук, йăнăшмастăп! Шăп çакă!..— Пăлханса кайнă хĕрача сĕтел çине аллипе темиçе хутчен шаплаттарса илчĕ.

— Юрать эппин..— Начальник кăштах шухăша кайнă пек пулса ларчĕ, унтан альбома хупса аяккалла хучĕ те хĕрачана куçĕнчен пăхрĕ.

— Эппин, халĕ эпир санпа пĕчĕк кăна хут çырăпăр та, киле кай вара, ачам, эсĕ тек кирлĕ мар пире. Кукаму та кĕтсе ывăнчĕ пуль. Кала ăна, лăплантăр вăл, ытлашши ан хуйхăртăр. Сирĕн япаларсене тупатпăрах эпир. Епле пулсан та, тупса тавăрса паратпăр. Вăррисене те тытатпăр.

— Хăçан тупатăр-ши? — ыйтрĕ хĕрача, Азаматов çине çав тери хурлăхлăн пăхса.— Анне гастрольтен таврăниччен тупасчĕ...

— Ăна татăклăн каласа пама пултараймастăп, анчах вăраха ямастпăр пулĕ тетĕп.

Хӗрача вӑрӑ сӑнне палласа илни çинчен хут çырнине пӑхса тӑнӑ директора та алӑ пустарсан, вӗсем пурте пӳлӗмрен тухса кайрӗç.

Тепӗр икӗ минутран начальник патӗнче оперативлӑ канашлу пуçланчӗ. Вӑл нумая пымарӗ, мӗншӗн тесен Михей мучи çырӑвӗ пӗтӗмпех уçса панӑ: вӑрланӑ япаласем — утрав çинче. Тем тесен те, вӗсем артистка япалисемех пулма тивӗç!

Çур сехетрен Атӑл тӑрӑх анаталла, Кувшинка еннелле, кӗмӗл тӗслӗ пысӑках мар катер ыткӑнчӗ. Мотористсӑр пуçне ун çинче уголовнӑй розыскӑн виçӗ сотрудникӗпе Шупашкар пионерӗ Тимофей Кудряшов ларса пычӗç...

Тата тепӗр çур сехетрен Михей мучи вӗсене пурне те утрав çине ертсе кайрӗ те вӑрланӑ япаласем выртнӑ тӗле кӑтартрӗ. Япаласене чавса кӑларса катер çине хурсан, уголовнӑй розыскӑн пӗр сотрудникӗ катерпа Шупашкара таврӑнчӗ, иккӗшӗ Кувшинкӑрах юлчӗç. Çав самантран пуçласа вӗсен çак утрав çинче çӗрӗн-кунӗн засадӑра ларса вӑрӑсене сыхламалла пулнӑ.

— Паян-и, ыран-и вӗсем хӑйсем пытарнӑ япаласене илме пурпӗр пыраççӗ, çавӑнта çаклататпӑр та эпир вӗсене! — терӗ милици начальникӗ Азаматов ирхине пулса иртнӗ канашлура...

## 21

Çак хӑрушӑ ӗç çинчен хулара темиçе кун хушши калаçрӗç. Тем тӗрлӗ сӑмах та пулчӗ, пулни çумне пулманнине те нумай хушрӗç. Чӑнах та ӗнтӗ, ытла та чӑрсӑр çарату-çке вӑл, вӑрӑсем килте çынсем пуррине пӗлсе тӑнӑ çӗртех пырса кӗреççӗ, çыннисене вӗлерессипе хӑратса çӑвар та уçайми тӑваççӗ те пӗтӗм пурлӑха куç умӗнчех илсе тухса каяççӗ. Пӗлтӗр çулла Разумовский профессор хваттерне çавӑн майлах çаратнӑранпа хулара кун пекки пулманччӗ-ха...

Хӑшӗсем, пурнӑçра ӗçленинчен ытларах чӗлхисене хыçма юратаканнисем, куншӑн милицие тиркесе айӑплама та пӑхрӗç:

— Вӑрӑ-хурахсемпе начар кӗрешеççӗ, тытма пӗлмеççӗ, çавӑн пирки иртӗнсе кайрӗç лешсем!

Анчах кун пек пакӑлтатни пӗртте тӗрӗс мар-мӗн. Милици хӑйӗн ӗçне çине тӑрсах туса пынӑ. Йӗрлесе тупман преступниксем пит сайра пулнӑ, преступниксен хисепӗ те палӑрмаллах чакнӑ. Ак халӗ те çав артисткӑна çаратса тухакансене хӑвӑртрах тупса тытас тӗлӗшпе мӗн

тума май пуррине пурне те тунӑ. Утрава засада лартнӑ, артистка хӗрачи сӑнӳкерчӗк ҫинче палласа илнӗ вӑрра хӑвӑрт шырама тытӑннӑ.

Ӑна, ҫав вӑрра, милици тахҫанах пӗлнӗ. Вӑл Тӗрлемес тӑрӑхӗнчи этем пулнӑ, ҫамрӑкрах чухне вӑл пӗр вӑхӑт пӑрахут ҫинче матросра ҫӳренӗ, анчах унта пассажирсен япалисене вӑрланӑшӑн ӑна виҫӗ ҫуллӑха тытса хупнӑ. Тӗрмерен тухсан, вӑхӑт нумай та иртмен — вӑл тепӗр хут вӑрӑпа лекнӗ, ик ҫултан ӑна амнистипе ирӗке кӑларнӑ, ҫавӑнтан вара унта-кунта ӗҫленҫи тунӑ та кайран каллех вӑрӑ-хурах ҫулӗ ҫине тӑнӑ. Унӑн чӑн ячӗпе хушамачӗ Калистрат Чашкин пулнӑ, анчах вӑл хӑйӗн пӗтӗм кӑкрине, хулӗсене хӑрушла татуировка туса пӗтернипе вӑрӑсем хушшинче ӑна Матрос тесе чӗннӗ. Ялта унӑн ватӑ ашшӗпе амӑшӗ пурӑннӑ, анчах вӗсемшӗн вӑл тӑван ывӑл мар, чӑн-чӑн тӑшман, чунилли кӑна пулнӑ ҫав, кашни пымассеренех вӗсене темӗн тӗрлӗ кӳрентернӗ, вӗсен юлашки укҫи-тенкине тӑпӑлтарса илнӗ, памасан — хӗнесе-ҫӗмӗрсе хӑварнӑ.

Ҫавӑн пек путсӗр, пуҫӗпех йӗркерен тухса кайнӑ чӗрчун пулнӑ ҫав Матрос. Милици органӗсем ӑна асӑрхасах пурӑннӑ, анчах юлашки вӑхӑтра вӑл вӗсен куҫне курӑнсах кайман, преступлени тунипе те лекмен. Халь ӗнтӗ ӑна епле пулсан та шыраса тупмаллах. Артистка хваттерне вӑл ҫаратнӑ, ку паллӑ. Япалисене инҫе илсе кайман, утрав ҫине пытарнӑ эппин, вӑл халӗ ҫак таврашрах, ҫывӑхрах, тен, хуларах та-и...

Ҫапла шутланӑ милицирисем.

Вӗсем йӑнӑшман.

...Утрав ҫине япаласем пытарса хӑварнӑ хыҫҫӑн Атӑлӑн сылтӑм енне каҫсан вӑрӑсем Малани килне таврӑнман, Катюк вӗсене «Рыбацкая слобода» тенӗ ҫӗре, сӑрт ҫумне кӑмпа пек ҫыпӑҫса ларнӑ пӗр пӗчӗкҫеҫ пӳрте, илсе кӗртнӗ. Кунта Катюкӑн тусӗ, ун пекех юлашки вӑхӑтра ниҫта та ӗҫлемен, йӗркерен тухнӑ хӗрарӑм, пурӑннӑ. Кӗҫех ӗҫкӗ пуҫланса кайнӑ, вӑл икӗ куна пынӑ. Эрех илме хулари лавккасене чупнӑ Маланипе Катюк вӑрӑсене малтанхи куннех ҫапла хыпар пӗлтерчӗҫ:

— Хула хушшинче тем те палкаҫҫӗ... Пӗтӗм милицие ура ҫине тӑратнӑ имӗш, пур ҫӗрте те ахаль тумтир тӑхӑннӑ акенттӑсем ҫӳреҫҫӗ, хуларан тухакан кашни ҫынна тӗрӗслеҫҫӗ, пур кимӗ хуҫисене те ҫырса тухнӑ, тет...

— Вӗшле йытӑсен ӗҫӗ ҫавӑ,— терӗ Матрос.— Чупчӑрах чӗлхисене кӑларса!

— Çапах та япалисене утрав çинчен илсе тухма тăхтамалла пулĕ...— сĕнчĕ Малани.

— Ăçта васкас? Выртчăр, тип хăйăр айĕнче уйăх выртсан та çĕрсе каяс çук вĕсем,— ал сулчĕ Артист.— Шавлаççĕ-шавлаççĕ те лăпланаççĕ акă, ун чухне пим шиксĕрех кайса тиесе тухма пулать!

Унтан вĕсем ĕççе супрĕç те çывăрса кайрĕç, вăрансан каллех çĕнĕрен пуçланчĕ...

Илюк çав вăхăтра халсăр пулса выртрĕ. Те леш каçхине ытла та хăранă пирки, те шăннипе, унăн пĕрмай пуçĕ ыратрĕ, çанçурăмĕ йывăрланса кайрĕ, сыпăсем туртрĕç, апат анмарĕ. Çакна асăрхаса Маланипе Катюк ăна «эмеллеме» тытăнчĕç — вăйпах, пусмăрланă пекех, пĕр стакан пăрăçланă эрех ĕçтерчĕç те пуç çинченех темле шăршлă чаппанпа витсе хучĕç.

— Эпир сана пĕрре сыватнă, халь те шивă-тва ура çине тăрататпăр, ан хăра,— мухтанса илчĕ ӳсĕр Малани.

Анчах кăшт выртсанах, Илюкăн ăшчикки çав тери пăтранса килчĕ те, вăл, тула аран чупса тухма ĕлкĕрсе, пĕтĕм пыршисем таврăнса тухас пекех асапланса хăсрĕ. Кайран вара унăн пĕтĕм вăйĕ пĕтсе ларчĕ, вăл аран калаçакан пулчĕ...

Тепĕр ирхине каллех эрех патне кайнă Малани питĕ пăлханса таврăнчĕ, пӳрте кĕнĕ-кĕмен сумкине сĕтел çине пăрахрĕ те паталтатма тапранса кайрĕ:

— Ах, атьсемĕр, пĕлесчĕ сирĕн, пĕлесчĕ, мĕн куртăм эп халĕ, мĕн куртăм! Чĕре çурăлса каять пулĕ терĕм...

— Мĕн тата ун пекех? Киккириксем çулăхрĕç-им? — ун çине шыçса тухнă куçĕсемпе пăхса кăмăлсăррăн ыйтрĕ Матрос.

— Ара, лешсене суд тăваççĕ-çке паян!..

— Камсене? — вырăн çинчен йăпăртах сиксе тăрса ларчĕ Артист.

— Леш ачасене! Прохвессăр ывăлĕпе унăн тусĕсене! Шорща, Çерша, Макăса...

— Кам каларĕ?

— Каларĕ мар, хам куртăм, ара! Шăпах эпĕ нарсуд тĕлĕпе иртсе пынă чух унта тĕрме машини пырса тăчĕ те, малтан икĕ милиционер сиксе тухрĕç, унтан çаксене пĕрерĕн-пĕрерĕн кăларчĕç... Виççĕшĕ те начарланса ка-айнă, сухалĕсем çитĕнсе ла-арнă, паллама та çук! Пиншакĕсемпе йĕмĕсенчен кăна уйăрса илтĕм малтан, пристаньрен тытса кайнă чух эп вĕсене юлашки хут курса астуса юлтăм-çке-ха. Вара çывăхрах пырса пăхрăм. Ну, шалккă пулса кайрĕ шереметсене...

— Макăрса ямарăн-и тата хĕрхеннипе? — тăрăхламалла кулса илчĕ Матрос.— Чупса пырса ыталамаллаччĕ сан вĕсене, чуптуса илмеллеччĕ! Вăт, хитре пулатчĕ... Калама та çук!

— Уй, тур çырлахтăрах! — аллипе сула-сула илчĕ Малани.— Каккуй унта патне пымалли, хама палласа сăмах хушасран хăраса тӳрех аяккалла вăркăнтăм. Вĕсемпе çыхлансан тата тем курас пулĕ!

— Мĕн, эппин, çав териех хыпăнса ӳкрĕн вăл сар тутасемшĕн? Мĕн тума кирлĕ вĕсем сана? — ыйтрĕ Артист.

— Суда илсе пычĕç-çке-ха...

— Вара мĕн? Пĕркуннех каларăм вĕт сана: хăйсен ухмахĕпе лекнĕ-тĕк — хăйсемех тӳсчĕр! Ухмахсемшĕн саккун çырман, теççĕ...

— Ара, вĕсем хамăра та сутма пултараççĕ вĕт-ха!

— Сутас пулсан, ку таранччен сутнă ĕнтĕ! — терĕ Матрос, — анчах та эпĕ ун пек пулман пулĕ тетĕп. Эпир вĕсене кун пирки хытă асăрхаттарнă. Тăп-тăр ухмахсемех мар пулсан, ăнланма тивĕç...

Çак калаçăва Илюк малтан пуçласа вĕçне çитиччен илтсе выртрĕ.

«Суд тăваççĕ, эппин, «капăр каччăсене»...— шухăшларĕ вăл.— Суд тăваççĕ те — тĕрмене... Миçе çуллăха хупаççĕ-ши?.. Часах ак мана хама та çавăн пекех хупса лартма пултараççĕ, мĕншĕн тесен ĕнтĕ эпĕ халь чăнчăн вăрă-хурах пулса çитрĕм... Хваттер çаратма та пулăшрăм, япалисене пытарма та кайрăм... Ой, хăрушă-çке ку, çав тери хăрушă!..»

Ăна каллех хăй килтен тухса тарнă каç «Матви пиччен» ӳсĕр тусĕ темиçе хутчен те: «Хупаççĕ сана, хошнехош тĕрмери кирпĕчсене шутлаттараççĕ», тени аса килчĕ. Чунĕ çав тери кӳтсе килнипе вăл чаппан айĕнче выртнă çĕртех капланса килнĕ тăварлă куççульне çăтаçăта макăрчĕ.

«Эх, анне! Ăçта-ши эс халь?.. Пĕлесчĕ санăн эп епле асапланнине, манăн ниçта кайса кĕме çуккине!..»

Тепĕр кунне вăл чылаях самайланнине туйрĕ — унăн пуçĕ те ыратмарĕ, шăмшаккинче те вăй пурри сисĕнчĕ. Илюка Маланипе пĕрле кайма хушрĕç, анчах лешĕ ăна малтан хăйĕн килне мар, хула хĕрринчи пĕр урамри магазина илсе кайрĕ. Патне çитсенех, Илюк астуса илчĕ: ку магазин патĕнче вăл пĕррехинче Матроспа тата Артистпа пулнăччĕ... Ăçтан манатăн-ха ăна? Ун чухне вăрăсем çак магазина хураллакан ватăрах хĕрарăмпа

калаҫса тăчĕҫ, унран тăрăхласа та илчĕҫ, кайран, кăштăварах кайса тĕттĕм ҫырмана ансан, вил-ӳсĕр выртакан ҫынна ҫаратрĕҫ те ун япалисене Илюка ҫĕклеттерсе ячĕҫ...

Магазинра Малани нимех те илмерĕ, анчах кунти таварсене нумайччен пăхса ҫӳрерĕ. Пуринчен ытларах вăл сехетсемпе тĕрлĕ хаклă йышши ҫĕрĕ-алкасем сутнă ҫĕрте чарăнса тăчĕ. Вăл прилавок хыҫĕнчи илемлĕ хĕртен тĕрлĕрен-тĕрлĕ сехетсем — ылтăннисене те, ахаллисене те ыйтса илсе, хăйĕн алли ҫумне тыта-тыта пăхрĕ, пĕрисене ырларĕ, теприсене тиркенҫи пулчĕ. Унтан хĕрарăм платйисем ҫакăнса таракан, хитререн хитре пурҫăн тĕркисем выртакан пайра чылай пăхса ҫӳрерĕ, атă-пушмак сутнă ҫĕрте те темиҫе мăшăр туфли илсе тăхăнчĕ те каялла пачĕ.

«Мĕн ҫынсене пустуй чăрмантарса ҫӳрет-ши! — тарăхрĕ Илюк.— Хăй ним те илес ҫук-ха!»

Вăл нимĕн те пĕлмен ҫав. Малани пĕртте пустуй ҫӳремен ку магазинра, вăл кунта ҫивĕч куҫлă разведчик пекех сăнаса, ăҫта мĕн выртнине лайăхрах астуса юлма тăрăшса ҫӳрерĕ. Иртнĕ каҫхине, Илюк ҫывăрнă вăхăтра, вăрăсем татах тепĕр хăрушă план тунă...

Киле таврăннă чух Малани пĕр ансăр урамри хуҫалăх таварĕсем сутакан пĕчĕк лавккана кĕрсе хĕрĕх метр шап-шур кантра виҫтерсе илчĕ.

— Мĕн тума кирлĕ япала ку? — тĕлĕнерех ыйтрĕ Илюк, халиччен те кун пек хитре те таса кантра курманскер.

— Ара, вăл кĕпе-йĕм ҫусан типĕтме ҫакмалли кантра-иҫ,— ăнлантарчĕ Малани.— Кивви татăлса пĕтрĕ теҫĕннине илме тивет...

Ҫав лавккарах Малани тата икĕ пăрапа икĕ ножовка — пĕр ҫур метр тăршшĕ ал пăчки туянчĕ.

— Кусем мĕн тума кирлĕ тата сана? Эсĕ платник та, столяр та мар вĕт? — каллех ыйтмасăр тӳсеймерĕ Илюк.

— Вĕсене манăн хамăрăн ялти йысна тахҫанах илме хушнăччĕ-ха,— ним тытăнса тăмасăр хуравларĕ Малани.— Ерҫнĕ хушăра сĕтел-пукан тукалать вăл, анчах хатĕр-хĕтĕрĕ пĕтсе ҫитнĕ...

Илюк ҫаксене пĕтĕмпех ĕненчĕ, анчах Малани каланисенче тĕрĕсси пĕр тумлам та пулман. Ҫак лавккара илнĕ япаласем пурте Малание хăйне мар, унăн вăрăтусĕсене, Матроспа Артиста кирлĕ пулнă. Ун ҫинчен тĕрĕссине Илюк кайран тин пĕлчĕ...

## 22

Кашкӑрсен пурнӑҫӗ ҫавӑн пек ӗнтӗ — кун ҫутинче сайра курӑнаҫҫӗ вӗсем, ялан сӗм-тӗттӗмре, никам курман чух ҫӳреҫҫӗ. Матроспа Артист хальхинче те Малани хваттерне ҫӗрле пырса кӗчӗҫ.

— Ну, мӗнле? Экскурсире пултӑр-и? — ыйтрӗ Матрос, пиншакне хывса ҫакнӑ хыҫҫӑн сӗтел хушшине ларса.

— Пултӑмӑр,— терӗ Малани, куҫӗсене вылятса илсе.

— Мӗнле пек?

— Лайӑх. Тем те пур. Пуян пурӑнаҫҫӗ. Ҫак кунсенче тавар пит нумай илсе килнӗ...

— Кил хушшине кӗрсе пӑхрӑн-и?

— Хӳме урлӑ куртӑм. Пусми йӗркеллех, мачча ҫине кӗмелли алӑкне ҫӑраҫҫипе питӗрнӗ, анчах та вӑл калаҫмалӑх та ҫук, унӑн ячӗ кӑна ҫӑраҫҫи. Ҫапах та сирӗн ыран хӑшӗн те пулин кайса курасах пулать пулӗ...

— Кирлӗ мар, эпир унта темиҫе хут та пулнӑ ӗнтӗ. Пӗтӗмпех пӗлетпӗр. Ӗҫне тумалла кӑна.

Ҫак калаҫу шӑппӑн пулса иртрӗ. Кӑмака хыҫӗнче выртакан Илюк ӑна илтмерӗ. Ирхине вара вӑл ҫав тери тӗлӗнчӗ: килтен тухса кайнӑ чух Малани ҫенӗк алӑкне тул енчен шӑкӑр-шакӑр питӗрсе хӑварчӗ.

— Ма ун пек хӑтланать ара вӑл? — ыйтрӗ Илюк диван ҫинче чӗлӗм туртса выртакан Артистран.

— Сана милицисем килсе тытасран хӑрать,— терӗ лешӗ, ача ҫине чалӑшшӑн пӑхса илсе.

— Мӗншӗн мана?

— А мӗншӗн тесен эсӗ пирӗн хушӑра чи хӑрушӑ преступник — ҫын та вӗлернӗ, халь, авӑ, хваттерсем ҫаратма тытӑнтӑн. Ҫапла мар-им?

— Эсир ӑна...

— Мӗн эпир?

— Вӑйпа илсе ҫӳретӗр мана. Пӗччен пулсан, эп нихҫан та...

— Анчах аннӳн еркӗнне эс пӗччен тирпейленӗ-ҫке?

— Вӑл ӑнсӑртран... юри мар...— Ҫакна аса илтерни Илюка каллех чӗринчен пырса тиврӗ те, вӑл, Артист патӗнчен пӑрӑнса кайса, пӗр чӳрече каррине тытса сирчӗ.

— Ан уҫ! — кӑшкӑрчӗ ҫав самантра Матрос, вырӑн ҫинчен тӑрса ларса.— Мӗн курман эс унта?

— Мӗн вара? Хӗвел кӗтӗр-иҫ?

— Юрамасть! Хӗвелсӗр те шӑрӑх!

Анчах сӑлтавӗ хӗвелте пулман. Вӑрӑсем халь ытти чухнехи пек те мар ним палӑрми пытанса ларма шут

тунă, çавăнпа алăка та тул енчен питĕрттернĕ, чӳречесене те пĕтĕмпех карса лартнă. Ансăртран кам та пулин пырса кĕрес пулсан, Малани çуртĕнче пĕр чĕрчун та çук пек туйăнтăр...

Сехетрен-и, иккĕрен-и, Малани чылаях пысăк михĕ çĕклесе таврăнчĕ те пӳрте кĕрсенех ăна кутăн тытса силлерĕ. Урай варрине кĕскен кăна татнă хыр хăмасем тăкăнчĕç.

— Мейĕр, ыр курăр! — терĕ те вăл пукан çине ларса çамкине шăлса илчĕ.— Йывăр çапах та шуйттан япали! Йăтасса та инçерен йăтса килтĕм те ĕнтĕ... Леш вилме маннă старикки тарăхтарса пĕтерчĕ тата — çур литрсăр нишашто памасть! Хальхи хăш-хăш çынсем теприсен çăварĕнчи çăкăр таткине те туртса илме хатĕр çав!

— Вăл енчен эсĕ ху та пултаратăн-ха, санăн ӳпкелешмеллиех çук уншăн,— йĕплесе илчĕ ăна Артист.

— Эпĕ-и? — тĕлĕннĕ пек пулчĕ Малани.

— Эсĕ мар, эппин, сан аçун хĕрĕ...

— Ах, ан калаç-ха кирлĕ мара! Эп ку таранччен те çынна кӳрентерсе курман, анчах мана хама час-часах кӳрентереççĕ. Мана хӳтĕлекен никам та çук вĕт!

«Эх, намăссăр! — шухăшларĕ Илюк хăй ăшĕнче.— Вăрăсене пулăшни, вăрланă япаласене сутса пурăнни çынсене кӳрентерни мар-и-ха вăл?..»

Малани пирус чĕртсе ячĕ те хăма таткисене урипе тапса илчĕ.

— Ну, мĕнле, юрăхлă пулаççĕ-и? Кĕске мар-и?

— Питĕ виçеллĕ, Малаша, аптекăри пекех,— терĕ Матрос.— Халех эпир вĕсенчен юмахри пек чаплă япала туса хуратпăр!

Илюк ним ăнланмасăр пăхса тăчĕ. Мĕн тума, мĕн валли кирлĕ пулма пултараççĕ кун пек хăма таткисем? Карта тытма юрăхсăр вĕсем...

Малани хăйĕн «хвартиранчĕсене» апат çитеркелерĕ те каллех вĕсене тул енчен питĕрсе тухса кайрĕ. Кусем вара тĕлĕнмелле ĕçе тытăнчĕç: Артист, урай варрине ларса, кĕске хăмасене пĕчĕк пуртăпа вĕттĕн-вĕттĕн, пĕр ал туни хулăнăш туса çурчĕ, Илюка çĕçĕ тыттарса çав хăма таткисене кăштах чутласа якатма, вĕсен икĕ вĕçĕнче те пĕр кача пӳрне вырнаçмалăх картсем тума хушрĕ.

— Мĕн пулать вара ку? — пĕлесшĕн пулса ыйтрĕ Илюк.

— Параппан çапмалли патаксем,— чăнласа каланă пекех пăхса илчĕ ун çине Артист.— Пĕр çĕр штук туса

тултаратпăр та сана пасарта суттарса пуятпăр. Тавай, ĕçле, ĕçле!

Артистпа Илюк урайĕнче ĕçлесе ларнă вăхăтра Матрос стена çумне — пĕр-пĕринчен çур метр пек аяккарах — икĕ мăн пăта çапрĕ, унтан Малани ĕнер илсе килнĕ вăрăм шур кантрана çурмаран татрĕ те, çав татăксене пăтасенчен çаклатса вĕрен пекки явма тытăнчĕ. Кăшт явсан, икĕ вĕрен хушшине Артистпа Илюк чутлакан пататаксене кĕртсе лартма тытăнчĕ,— пĕрине вырнаçтарать те татах явса каять, теприне кĕртсе лартать те каллех явать. Çапла майпа Илюк куçĕ умĕнчех пусма пула пуçларĕ. Чăн-чăн пусмах! Илюк пĕррехинче кинора çакăн пек пусма тăрăх çынсем вертолет çине хăпарса аннине курнăччĕ...

— Мĕн тума кирлĕ сире кун пек япала? — ыйтмасăр тӳсеймерĕ вăл.

— Пире çеç мар, тен, хăвна та кирлĕ пулĕ-ха ку асамлă пусма,— терĕ ăна хирĕç Артист.— Çавăнпа та ан ӳркен, чутла!

Пусма вăрăмлансах пычĕ. Ăна туса çитерсен Матрос çенĕке илсе тухрĕ те пĕр вĕçне чылай çӳлти стропил каштинчен çыхса лартрĕ, тепĕр вĕçĕ урайне çитиех усăнса анчĕ.

— Ну-ка, шăрчăк, халь ĕнтĕ хăпарса пăх-ха ун тăрăх,— терĕ Артист Илюка,— тӳсет-и вăл сана, çук-и?

Илюк хирĕçсе тăмарĕ, шиклене-шикленех пусма тăрăх хăпарса анчĕ.

— Тӳсет-и? — ыйтрĕ Матрос.

— Мана мар, сире те чăтать пулĕ вăл,— терĕ Илюк.

— Çавăн пекки кирлĕ те пире! — Матрос, пусмана кашта çумĕнчен салтса, темле кипкепе чĕркесех кравать айне пăрахрĕ. Артист çав вăхăтра тепĕр тĕлĕнтермĕш ĕçе тытăнчĕ: юлнă пĕр хăма таткине тăвата çĕртен пăрапа шăтарчĕ те, пĕр шăтăкĕнчен ножовка пуçне кĕртсе ярса, тăвата кĕтеслĕ шăтăк касса кăларчĕ.

— Ку мĕн валли? — каллех ыйтрĕ вăл ĕçленине пăхса тăнă Илюк.

— Тула тухмалли çĕре хума,— терĕ лешĕ кулса, унтан подпилка илчĕ те ножовкине хăйрама тытăнчĕ. Çине тăрса, тĕплĕн, пăчкăн кашни шăлне пӳрне вĕçĕпе тĕрĕсле-тĕрĕсле хăйрарĕ. Артист ун пекех тăрăшса ĕçлеме пултарать тесе Илюк нихçан та шутламан...

Тăрăшнă çав вăрăсем, хытă тăрăшнă вăл кун, мĕншĕн тесен вĕсем çак каçхине хулари пĕр магазина «тасатса» тухма ĕмĕтленнĕ.

Хӑйсем мӗн шутласа хуни ҫинчен Матроспа Артист Илюка малтанах каламарӗҫ, каҫхине, тулта тӗттӗмленсен, Малани кунӗпех таҫта ҫухалса пурӑннӑ хыҫҫӑн киле таврӑнсан, унпа пӑшӑлтатса илсен тин «тусла» калаҫу пуҫланчӗ...

Питӗ хӑрушӑ калаҫу пулчӗ вӑл!..

— Акӑ мӗн, ачамккӑ,— терӗ Артист, Илюк ҫине шӑтарас пек пӑхса,— кӗҫӗр пирӗн пӗр магазина кӗрсе тӗрӗслес пулать. Унта лайӑх таварсем нумай, пире валли те сахал мар, теҫҫӗ...

— Ана вӑл ӗнер хӑй те курчӗ-ха,— хушса хучӗ Малани, пирус пашлаттарса.

— Хӑрамалли нимӗн те ҫук, пӗтӗмпех шанчӑклӑ,— терӗ Артист малалла.— Мачча витӗр кӗмелле тӑватпӑр та, эсӗ, ҫак хамӑр тунӑ пусмапа анса, пире аялтан япаласем иле-иле тыттаратӑн...

Илюкӑн тӳрех сывлӑшӗ пӳлӗнсе ларчӗ.

Каллех! Каллех вӑрлаттарасшӑн, тата хӑрушӑрах ӗҫ тутарасшӑн ӑна вӗсем! Магазин ҫараттарасшӑн! Эппин, унӑн преступленийӗсем татах нумайланаҫҫӗ, вӑл чӑн-чӑн хурахах пулса каять... Илюк чӗри хыттӑн-хыттӑн тапрӗ, пӳрнисем чӗтреме тытӑнчӗҫ, ҫав вӑхӑтрах, вӑл ҫав тери пӑлханнӑ ҫине пӑхмасӑрах, Артист ӑна хӑйӗн мӗн-мӗн тумалли ҫинчен каларӗ: аяла ансанах, сехетсем выртакан кантӑклӑ ещӗке ҫӗмӗрмелле те унти пур сехетсене пуҫтарса илмелле, вӗсемпе юнашарах фотоаппаратсем выртаҫҫӗ, вӗсене те хӑвармалла мар, унтан пушмаксем патне каймалла, юлашкинчен пусма-таварсене илмелле... Илюка михӗсем параҫҫӗ, япалисене пурне те ҫав михӗсем ӑшне тултарса ҫӳлелле памалла, вара пусма тӑрӑх каялла хӑпармалла та, вӗсем вӑшт кӑна тараҫҫӗ, никам та, пӗр йытӑ та сиссе юлаймасть...

— Ӑнлантӑн-и? — ыйтрӗ Артист юлашкинчен.

Илюк чӗнмерӗ.

— Мӗн анра-сухра пек тӑратӑн? Хирӗҫме шутламастӑн-и тата? Ун пек-кун пек шухӑш пуҫна та пырса ан кӗтӗр, асту! — терӗ Матрос.— Хушнине итлемесен мӗн пулассине сана малтанах каласа хунӑ. Манмарӑн пулӗ вӗт?

Ҫук, Илюк манман ӑна.

«Атӑла кутӑн чӑмтаратпӑр... Никам та пӗлмест ун ҫинчен, мӗншӗн тесен эсӗ тӗнчере пурри-ҫукки те паллӑ мар халь»,— тенӗччӗ ӑна...

— Ку пирӗн юлашки ӗҫ пулать,— лӑплантармаллараx сасӑпа каларӗ Артист.— Унтан вара: «Сывӑ пулах,

Шупашкарě»,— тетпěр çеç. Çамрăк чух эпě çавăн пек пěр сăвă вуланине астăватăп. Эсě те текех вара таркăн йытă çури пек пурăнма пăрахатăн, çын ретне кěртетпěр сана. Ну, ма нимěн те чěнместěн тата?

— Санăн турткаланса тăмалли çук, пурпěрех килěшмелле! — татса хучě Матрос.

— Ачи ăслă-ха вăл, килěшетех...— терě Малани.

— Хăрушă...— аран пăшăлтатса илчě Илюк юлашкинчен.

— Ним хăрушши те çук! — ал сулчě Артист.— Каланă сана — никам та курмасть, никам та сисмест! Таптаса та яп-яка ěç пулать!

...Ача ăс-пуçěнче çав вăхăтра мěн пулса иртнине каласа пама та йывăр. Вăл çав тери хытă хăрарě ěнтě, анчах хирěçсе тăма та пултараймарě, мěншěн тесен, итлемесессěн, вăрăсем ăна чăнах та тем туса хума пултараççě. Вěсемшěн пулсан, çын вěлересси те нимěн те мар вěт-ха!

Çур çěр çитеспе вара вěсем Малани килěнчен тухрěç те, тěттěм пралуксем тăрăх утса, хула хěрринчи урама, Илюк ěнер кăна Маланипе пěрле курса çӳренě магазин патне, пырса тухрěç.

Малтан вěсем урамăн тепěр енчен сăнаса тăчěç. Магазин умěнче пěр мěлке каллě-маллě уткаласа çӳрет — ку, паллах, хуралçă, пěркун килсен вěсемпе калаçнă хěрарăм... Пěр тăваттă-пиллěк хутласан, вăл кăштах чарăнса тăчě, унтан ерипен кăна калинккене уçса кил хушшине кěчě...

— Кайрăмăр! — терě те Матрос шăппăн магазин еннелле ыткăнчě. Артистпа Илюк — ун хыççăн. Темиçе самантран виççěшě те калинкке леш енче пулчěç. Артист ăна шалтан урлуççипе тěкěлесе лартрě. Унталла-кунталла пăхса илсен, вăрăсем магазин стени çуммипе йăпшăнса кайрěç те кěтес патне çитсе чарăнчěç. Илюк та вěсем патнех пырса тăчě.

— Халех каялла çаврăнса килет вăл,— пăшăлтатса илчě Матрос.

Чăнах та нумай кěтсе тăмалла пулмарě. Пěр минут та иртмерě пуль, кěтес хыçěнчен хěрарăм мěлки тухни курăнчě. Вăл стена çумне çыпăçнă пек тăракансене асăрхамарě, калинкке патнелле ерипен утса кайрě. Çав самантрах Матрос ун хыççăн ыткăнчě те ăна пуçěнчен пистолет аврипе çапса ӳкерчě. Хěрарăм «ай!» тесе те илеймерě. Тепěр самантěнче Матроспа Артист хěрарăм çăварне пăкăларěç, алли-урисене çыхрěç те, паранкă

миххине йатнă пек çĕклесе, хыçалти çӳллех мар хӳме урлă ыватса ячĕç. Ку пĕтĕмпех çав тери хăвăрт пулса иртрĕ, Илюк ăна лайăххăн сиссе те юлаймарĕ.

Кĕçех вĕсем çурт çумĕнчи тимĕр пусма тăрăх магазин тăррине хăпарса кайрĕç, мачча çине кĕмелли алăка питĕрнĕ çăраççине Матрос пĕрре хирсех уçрĕ те, виççĕшĕ те пăч-тĕттĕм çĕре кĕрсе тăчĕç.

Артист кĕсъере чиксе çӳремелли хунара çутатса ячĕ, унтан тӳрех пĕр кăмака мăрйи патнелле утрĕ.

— Ак çакăнта касас пулать...— Вăл мачча хăмисем çине сарнă тăпрана урипе хырса сирме тытăнчĕ. Ĕç питĕ хăвăрт кайрĕ вара вĕсен: маччана пăрасемпе шăтарчĕç, унтан икĕ ножовкăпа пĕр харăс касма тытăнчĕç. Илюк вĕсене хунарпа çутатса тăчĕ...

## 23

Кинокартинни питĕ вăрăм пулнă пирки юлашки сеанс çур çĕр иртсе пĕр сехет çине кайсан тин пĕтрĕ.

Кирпĕч заводĕнче ĕçлекен çамрăк йĕкĕт Николай Калаков, кăлкан пек сарă та çемçе çӳçлĕ, кăшт тăрăхларах питлĕ, шĕвĕр янахлă, питĕ чĕррĕн пăхакан куçлă каччă, киноран тухсан хăйпе туслă пурăнакан хĕре унăн хваттерне, Çеçпĕл Мишши урамне, ăсатса ячĕ те васкасах килнелле утрĕ. Часрах çитсе çывăрас пулать ĕнтĕ, ирхине унăн улттăрах ĕçе тухмалла...

Хула хĕррипе тăсăлакан урам пуш-пушах, ниçта та пĕр чун курăнмасть, чӳречесенче те çутăсем çук — çынсем йăлтах çывăрса пĕтнĕ. Атăл енчен самаях сулхăн çил вĕрет, тӳпере йывăр хура пĕлĕтсем шуни палăрать. Тĕттĕм. Салху. Кун пек чух тепри урампа пĕччен пыма та шикленерех памалла, анчах Николай Калаков ун йышши çын мар çав. Вăл пĕлтĕр кăна çартан таврăннă, çарта пограничник пулнă — çурçĕрте, Совет Союзĕпе Финлянди чиккинче тăнă. Унта, сĕм вăрмансенче, каçхине кăна мар — кăнтăрла та питех курăнмасть, унта курнинчен ытла илтме пĕлни кирлĕ. Çавăнпах та пуль Калаковăн хăлхи питĕ çивĕч, хуть те мĕнле сасса та çийĕнчех илтсе уйăрса илет.

Хăрасси çук унăн. Çын хăрать пулсан, мĕнле пограничник пултăр-ха вăл? Акă, пĕррехинче, Калаков çакăн пек сĕм-çĕрле урамра хăй паллана хĕрпе шăкăл-шăкăл калаçса ларнă чух, ăна харăсах виçĕ «стиляга» хупăрласа илчĕç. Пĕри çĕçĕпеччĕ. Вăл сехет салтса пама, укçа кăларса тыттарма хушрĕ. Иккĕшĕ кĕç-вĕç сиксе ларас пек

тăчĕç. Лару-тăру ытла çăмăлах пулмарĕ темелле. Анчах Калаков, çарта вĕрентнĕ мелсене аса илсе, чăрсăр хулиганăн аллине пĕррех пăрса лартса çĕççине пăрахтарчĕ, унтан хăйне çапса ӳкерчĕ, унăн тусĕсем пырса çыхăнма тăрсан — вĕсене те парăнмарĕ, пĕрне тапрĕ те теприне çапрĕ. Çав хушăрах вĕсен çĕççи Калаков аллинче пулчĕ ĕнтĕ. Лешсен вара хăйсеннех тарма тӳр килчĕ! Шел, милицине леçеймерĕ вĕсене Калаков ун чухне. Хĕрĕ хăрарĕ, вăл киле кайма васкарĕ, атту пулсан хăтăлаймастчĕç-ха!

Урамра çавăн пек тытăçса илме тивнĕ хыççăн Калаков участокри милиционерпа ятарласах тĕл пулнă та бригадмилеца çырăннă.

— Çăварлăхлатпăрах эпир çав çĕрле çапкаланса çӳрекенсене, сăмсисене урама кăларса кăтартма та памастпăр малашне! — терĕ вăл ун чух комсомол комитетĕнче. Каçсерен çамрăксене хăй ертсе çӳрерĕ, вара кĕçех ку таврара ашкăнакансем сахалланчĕç, унтан пачах курăнми пулчĕç. Пĕррехинче комсомол хаçатĕнче те çырчĕç ăна мухтаса...

...Тăвалла чылай хăпарса промтоварсем сутакан магазин тĕлне çитсен, каччăн чĕлĕм туртасси килсе кайрĕ. Вăл пирус кăларса хыпрĕ, анчах утнă çĕрте чĕртеймерĕ. Вара чарăнса тăчĕ те тепĕр шăрпăк кăларса сĕрчĕ. Ку та çутăлмарĕ. Шăп та çак вăхăтра магазинран темле тĕлĕнмеллерех сасă илтĕнсе кайрĕ. Чăштик-чăштик... тунă пек. Унтан урайне пăт-пат темскер ӳкрĕ. Каччă, хăй каларăш, хăлхине чăнк тăратсах итлеме тытăнчĕ. Каллех — чăштик-чăштик, пăт-пат!

«Мĕн шуйттанне пĕлтерет ку япала?! Мĕн пулма пултарать унта çĕрле?»

Калаков çав самантрах магазин хуралçи çинчен аса илчĕ. Ана вăл лайăх паллать, ятпах «Анна аппа» тесе чĕнет. Ăçта-ха вăл? Ку вăхăтра, епле пулсан та, постра тăмалла ĕнтĕ унăн...

Пирусне чĕртесси çинчен манса кайсах, каччă калинкке патнелле кайрĕ. Тĕртсе пăхрĕ — ăна шал енчен тĕкĕлесе лартнă иккен.

— Анна аппа! — шăппăнрах чĕнчĕ Калаков.— Анна аппа, ăçта эсĕ?

Хирĕç сас паракан пулмарĕ.

«Мĕн ку, ăçта та пулин хĕсĕнсе ларса çывăрса кайнă-ши? — тĕлĕнерех шухăшларĕ каччă.— Ун пек пулакан марччĕ-çке...»

— Анна аппа! Сассуна парсам!

Каллех шăп... Ырра мар ку!..

Калаков магазин умне таврăнчĕ. Каллех итлерĕ. Çав сасăсемех илтĕнеççĕ: чăштик-чăштик, пăт-пат! Пăчкă сасси! Темскер татаççĕ. Камсем? Паллах, вăрăсем! Хуралçине тем туса хунă та (кам пĕлет, тен, вĕлернĕ те-и?..) çаратма хатĕрленеççĕ...

Çакна Калаков ним иккĕленмесĕр шухăшларĕ. Çук, унăн тек ним чухлĕ те тытăнса тăма юрамасть. Халех, çак самантрах кун çинчен милицие пĕлтерес пулать!..

Каччă, çăварĕнчи çунман пирусне сурса пăрахса, завод кантурĕ еннелле ыткăнчĕ, часах уборщица пурăнакан чӳречинчен шан-шан-шан! тутарчĕ.

— Плаки инке, уç-ха часрах!

— Кам эсĕ? — кăшт тăрсан сас пачĕ уборщица.

— Коля эпĕ, Калаков!

— Мĕн, ара, çĕр хута янраса çӳретĕн?

— Телефон кирлĕ мана!..

Шалти хĕрарăм çутă çутса ячĕ те, кăмăлсăррăн мăкăртатса, алăк патнелле утрĕ. Çур минутран Калаков милицине шăнкăравларĕ:

— Пирĕн урамра магазин çаратаççĕ!

— Кам калаçать? — илтĕнчĕ трубкăра ыйхăллăрах сасă.

— Кирпĕч заводĕнчи бригадмилец Николай Калаков...

— Магазин адресне тĕрĕсрех пĕлтерĕр.

Калаков хăвăрт кăна каласа пачĕ:

— Константин Иванов урамĕнче вăл, заводран кăшт çеç тăвалла хăпармалла. Промтовар магазинĕ...

— Мĕн пулнă вара унта?

— Магазина такамсем кĕрсе кайнă...

— Хуралçи çук-и-мĕн?

— Тупаймарăм çав ăна! Килĕр-ха часрах!

— Халех пыратпăр! Эсир унччен магазин патĕнчех сăнаса тăрăр... Лайăхрах сăнăр!

— Юрать!

Милицире трубкăна шăкăрт! хучĕç. Калаков хăй те аллинчи трубкăна çакрĕ те, кантуртан ухă йĕппи пек вăркăнса тухса, тĕттĕм урам тăрăх анаталла, каллех магазин патнелле, чупрĕ...

«Вăрăсемех унта... вăрăсемех! — шухăшларĕ хăй.— Çаратма кĕрсе кайнă. Анчах мĕнле майпа кĕнĕ-ха вĕсем? Урам енчи алăкĕ чиперех... Ах, тытасчĕ-çке вĕсене. Тытасчĕ!..»

...Çав хушăра вăрăсем мачча хăмисене касса çын кĕмелĕх шăтăк туса çитерчĕç, хăйсен кантра пусмине

сӳтсе пӗр вӗҫне мӑрьерен ҫыхрӗҫ те пуҫне аялалла, магазин ӑшнелле, ячӗҫ.

— Ну, ан тавай! — терӗ Матрос Илюка.

Ача тытӑнса тӑчӗ. Ҫав тери анас килмерӗ-ҫке унӑн, ҫав тери кӗрсе каяс килмерӗ! Анчах ним тума та ҫук... Итлесех пулать. Итлемесен — Матрос паклаттарса хума та пултарать. Ҫакӑн пек улах ҫӗрте унпа тавлашса тӑма пушшех те хӑрушӑ...

Илюк кукленчӗ те, чӗтрекен аллисемпе ик енчи кантрасенчен тытса, урисене ерипен иле-иле пусса, магазиналла анса кайрӗ. Кунта ытла тӗттӗмех мар иккен, мӗншӗн тесен урамри хунартан кӑштах ҫутӑ ӳкет.

Йӗри-тавралла пӑхса илсен, Илюк, Матроспа Артист хӑйне хушнине астуса, чӑн малтан сехетсем выртнӑ ҫӗре пычӗ. Шӑкӑриех вӗсем кантӑк айӗнче... Хӑшӗсен циферблат ҫинчи цифрисем те, йӗппйсем те шурӑ ҫутӑпа ҫуталса тӑраҫҫӗ... Вӑл кантӑка чавсипе чышса чӑнкӑр-р! тутарчӗ. Унтан сехечӗсене пуҫтарса илме тытӑнчӗ. Пӗрне, теприне... Илет те хутаҫа хурать, илет те хурать... Ку ещӗк пушансан, юнашаррин кантӑкне ҫӗмӗрсе фотоаппаратсем кӑларса илме тытӑнчӗ.

Унтан...

Илюк, юлашки аппарата илсе, хутаҫа вырнаҫтарнӑччӗ кӑна, сасартӑк тулта, магазин умӗнче, машина сасси кӗрр! турӗ, унӑн фарисем ялкӑшнипе магазин ӑшчикки ялтӑрах ҫуталса кайрӗ. Ку ытла та тӑрук, кӗтмен ҫӗртен пулнипе Илюк, шартах сиксе, прилавок ҫумне кукленсех ларчӗ.

Урамра ҫын сассисем, ура сассисем илтӗнчӗҫ...

«Ак хайхи, лекрӗм пулас! — хӑрушӑ шухӑш вӗҫсе илчӗ Илюк пуҫӗнче.— Чӑн та лекрӗм!..»

Унтан вӑл сиксе тӑчӗ те, хутаҫ ҫинчен манса кайсах, пусма патнелле чупрӗ, кантрасенчен ҫӑтӑр-ҫатӑр ярса тытрӗ, анчах та пусма патакӗ ҫине пӗрре пуссанах вӑл ҫӗре ӳкрӗ. Те татӑлчӗ вӑл, те ҫӳлтен юри салтса ячӗҫ. Епле пулсан та, унӑн пусмапа хӑпарса тарасси пӗтрӗ.

— А-а-а!..— кӑшкӑрса ячӗ Илюк, хӑй ӗнтӗ пуҫӗпех капкӑна лекнине, кунтан хӑтӑлса тухма май ҫуккине ӑнланса илсе...

Хулари пӗр урамра магазин ҫаратма тытӑнни ҫинчен темле ҫын телефонпа пӗлтерсенех, милици уйрӑмӗнче кӗҫӗр дежурнӑй пулнӑ Мамаев капитан хӑйпе пӗрле виҫӗ ҫын — икӗ рядовой милиционерпа пӗр сержанта илчӗ

те, «линейка» машина çине ларса, магазин еннелле вĕçтерчĕ. Темиçе минутранах машина унта çитсе чарăнчĕ. Никамран малтан сиксе тухса, Мамаев магазин алăкĕ патнелле чупрĕ. Çăраççисем тĕрĕс-тĕкелех иккен. Эппин, вăрăсем ку алăкпа кĕмен? Аçтан кĕнĕ-ха? Кайри алăкне çĕмĕрнĕ-ши?..

Капитан умне çав вăхăтрах шурă кĕпе çухавине хура пиншак çийĕн кăларса янă çара пуçлă каччă пырса тăчĕ.

— Сире эп пĕлтертĕм,— терĕ вăл.— Николай Калаков, бригадмилец...

— Аçта-ха вăррисем?

— Шалтан эпĕ пăчкăпа каснă сасă илтрĕм... Унтан хуралçине шырарăм, тупаймарăм. Ахальтен мар пулĕ терĕм вара...

— Оцепить магазин! — команда пачĕ Мамаев.— Аçта кунта кил хушшине кĕмелли?

— Ав, калинкке...— тĕллесе кăтартрĕ Калаков.

Капитан сылтăмалла чупрĕ, калинкки шалтан питĕрĕнчĕк пирки вăл пĕррех хӳме урлă сиксе каçрĕ, ыттисем те унран юлмарĕç. Урамра, машина патĕнче, пĕр шофер кăна тăрса юлчĕ.

Кил хушшине кĕрсен, капитан чăн малтан ку енчи алăка тупас, ăна тĕрĕслес тесе чупрĕ. Анчах алăк патне çитиччен, çурт кĕтессинчен пăрăнса тухсанах, вăл стена çумĕнчи пусма çинчен икĕ мĕлке сиксе анса хыçалти хӳме еннелле вăркăннине курах кайрĕ...

— Стой. Перетĕп, стой! — кăшкăрса ярса, вĕсем хыççăн чупрĕ капитан. Анчах лешсем каялла çаврăнса та пăхмарĕç, самантранах хӳме леш енче çухалчĕç.

— Стой! Перетĕп!..

Мамаев капитан мĕлкесем хыççăн хӳме урлă сикрĕ те çав хушăрах хайĕн юлташĕсене: «За мной!» — тесе кăшкăрчĕ. Анчах лешсем ĕнтĕ ахаль те унран юлмарĕç — пурте сике-сике каçрĕç. Хӳме патĕнчен пилĕк-ултă метртах унта-кунта йывăççем ӳссе ларнă тарăн çырма пуçланать-мĕн. Вăрăсем вилес-тăвасси çинчен шухăшламасăрах çав çырма тĕпне сикнĕ. Милицисем те вĕсем хыççăн çырманалла çӳлтен пенĕ чулсем пек вăркăнчĕç.

— Сто-ой!

Сасартăк çырма тĕпĕнчен пăшал сасси янраса кайрĕ. Иккĕ, виççĕ... Куна вăрăсем переççĕ ĕнтĕ. Халь милицисен те кĕтсе тăмалли çук. Малта чупакан капитан, мĕлкесем тепĕр енчи сăрт çинелле чаваланнине асăрхаса, йăпăртлăха чарăнса тăчĕ те виçĕ хут умлăн-хыçлăн персе ячĕ. Пĕр мĕлки ӳкрĕ. Çав самантрах тепри, мили-

цисем еннелле çавăнса, тата икĕ хут печĕ те, Мамаевран сылтăмарах чупакан милиционер, аллисемпе хăлаçланса илсе, каялла ласлатрĕ... Мамаев ăна лайăхах курчĕ, анчах чарăнса тăмарĕ. «Афонин! Маклашкина пулăшăр!» — тесе кăшкăрчĕ те малалла чупрĕ. Тепĕр темиçе утăмран вăл хăй персе ӳкернĕ кĕлетке патне çитсе ун умне пĕшкĕнчĕ.

Çынни вилме пуçланă, аран хăрăлтатса выртать...

Мамаев каллех малалла, тепĕр вăрри хыççăн, ыткăнчĕ. Ăна епле пулсан та тытас пулать вĕт-ха! Анчах сăрта маларахран хăпарса çитме ĕлкĕрнĕ бандит курăнми пулчĕ. Тахăш еннелле тапса сикнĕ вăл, кам пĕлет!.. Капитан унталла чупса кайрĕ, кунталла — çук. Çĕр айне путса анса кайрĕ тейĕн... Мамаев хыççăнах чупса çитнĕ сержант та, вĕсемпе пĕрлех килнĕ Калаков та унăн-кунăн чупкаларĕç, анчах усси пулмарĕ.

— Пĕр кашкăрне вĕçертрĕмĕр пулать, ухмахсем! — тарăхнипе вăрçса илчĕ Мамаев.— Ну, ничево, пурĕпĕр лекет вăл пирĕн алла!..

Тек нимĕн тума та çуккипе оперативниксем çырмана каялла анчĕç. Малтан вăрă кĕлетки патне пычĕç — вăл халĕ те хăрлатать-ха. Милиционер ураран аманнă иккен, ăна тепĕр юлташĕ аялти кĕпине çурса илсе çыхса янă та, халь вăл хăйне амантакана ылханса чи хаярсăмахсемпе вăрçса ларать.

Капитан Мамаев хăйĕн юлташĕсене ним пĕлми выртакан вăрра халех çӳле, тикĕс вырăна, çĕклесе хăпартма, унтан «васкавлă пулăшу» чĕнсе илсе ăна та, аманнă милиционера та больницăна ăсатма хушрĕ.

— Вĕсемпе пĕрле эсĕ каятăн,— терĕ вăл сержанта.

— Слушаюсь!

Унтан Мамаев, вăхăта сая ямасăр, Калаковпа пĕрле каялла, магазин патне, васкарĕ. Кунта ĕнтĕ çынсем чылай пухăнма ĕлкĕрнĕ, çĕр варринче пăшал сассисем кĕрĕслетни илтĕнсен, ку çывăхра пурăнакансенчен хăшĕсем аялти кĕпе-йĕмпех сике-сике тухнă. Кĕçех магазин умне тепĕр машина ыткăнса çитрĕ,— унта уголовнăй розыск начальникĕпе — Бурин подполковникпа — пĕрле ахаль тум тăхăннă ик-виçĕ çын ларса килнĕ. Мамаев уголовнăй розыск начальникне кунта ĕçсем мĕнле пулса иртни çинчен кĕскен, хăвăрттăн каласа парсан, вĕсем пĕр машинне часрах магазин директорне илме ячĕç (ку тăрăхри çынсем вăл ăçта пурăннине пĕлеççĕ иккен), хăйсем ушкăнĕпех кил хушшине кĕчĕç.

Вăрăсем хыçалти пусма çинчен сикнине пĕлсе, Ма-

маевпа Бурин çав пусма тăрăх вăшт кăна мачча çине хăпарса кайрĕç. Шала кĕрсе хунарпа çутатса пăхсассăнах вĕсем маччара шăтăк пуррине курчĕç те пĕтĕмпех ăнланчĕç. Шăтăк таврашĕнче, тăпра çинче, ура йĕрĕсем нумай, çывăхрах икĕ пăрапа икĕ ножовка йăваланса выртаççĕ.

— Ӳкерсе илес пулать,— терĕ подполковник.

— Кунта халлĕхе хурал та тăратас пулĕ,— сĕнчĕ Мамаев,— кам пĕлет, тен, шалта çын пур.

— Тĕрĕс, халех хушатпăр.

Унтан вĕсем васкасах каялла анчĕç.

— Хуралçи ăçта-ши, ăна шыраса тупас пулать часрах,— терĕ Бурин.— Ăçта кайса чикме пултарнă ăна вĕсем?..

Анчах хуралçине вĕсемсĕрех шыранă ĕнтĕ, кун пирки Николай Калаков бригадмилец тăрăшнă. Вăл хуралçă хĕрарăм çухални çинчен уголовнăй розыск сотрудникĕсене каласа панă та вĕсемпе пĕрле пур çĕрте те ухтарма тытăннă. Вăхăт нумай та иртмен, «Анна аппа» хӳме хыçĕнчи мăян-вĕлтрен ăшĕнче тупăннă. Вăл ним пĕлмиех выртнă. Унăн çăварĕнчи пăкка кăларса пăраххса, алли-урине салтса ярса ура çине тăраткаласан, вăл нимĕн те калайман, каллех тăнсăр пулса ӳкнĕ. Бандит унăн пуçне шăтармаллах çапнă-мĕн, çавăнпа вăл суранран юн кайнипе аптранă. Ун валли те часрах «васкавлă пулăшу» чĕнсе илме тиврĕ...

Ĕнтĕ тул та çутăлса кайрĕ. Магазин патне çынсем тата ытларах пухăнчĕç; милицисем вĕсене килĕсене кайма хушрĕç пулсан та, лешсем саланасшăн пулмарĕç. Тепĕр çирĕм минутран директора илме янă милици машини каялла çаврăнса çитрĕ. Директорĕ хăй çук иккен, каçхине пулла тухса кайнă та — таврăнман, ун вырăнне магазин çăраççийĕсене илсе директор арăмĕ килнĕ. Халăх хушшинчен темиçе понятой илсе (вĕсем хушшинче Николай Калаков та пулчĕ), милици сотрудникĕсем магазина уçса кĕчĕç. Чăн малтанах вĕсем мачча пысăк шăтăк пуррине, ăна каснă чух урайне тăкăннă штукатурка ванчăкĕсем сапаланса выртнине, çав çӳп-çап патĕнчех кантра-пусма выртнине курчĕç. Пĕр прилавок çинче çурри таран тултарнă хутаç выртать. Бурин ăна уçса пăхрĕ — унта фотоаппаратсем, сехетсем иккен...

— Икĕ ещĕке çеç тасатма ĕлкĕрнĕ,— терĕ Мамаев, ватнă кантăксем çине пăхса.

— Анчах япалисене илсе те каяйман,— хушса хучĕ Бурин подполковник.

Директор арăмĕ, хура сăнлă пĕчĕк хĕрарăм, пăлханнипе, хăранипе ним калаçаймн пулса çитнĕскер, таттисĕр ĕсĕклесе, куçĕсене пĕрмай тутăрпа шăла-шăла илчĕ. Çав вăхăтрах ăна йĕксӳ аптратрĕ. Буринпа Мамаев магазин тăрăх йĕркипе пăхса кайрĕç. Тавар хумалли полкăсем çинче, прилавок çинчи ытти ещĕксенче пĕтĕмпех йĕркеллĕ, нимĕн те тĕкĕнмен пек. Унтан Бурин прилавоксем хыçне кĕрсе кайса, куклене-куклене, вĕсем айне пăхма тытăнчĕ. Унта та нимĕнех те палăрмарĕ.

— Ёлкĕреймен, кансĕрленĕ вĕсене,— терĕ Бурин.

Анчах унтан тепре пĕшкĕнчĕ те сасартăк шăхăрса ячĕ...

— Хоп! Пур пĕри! Ну-кă, тух-ха çут тĕнчене! Тух теççĕ!

Пурте харăсах ун еннелле çаврăнса пăхрĕç. Подполковник прилавок айĕнчен вунтăват-вунпилĕк çулхи ачана хулĕнчен туртса кăларчĕ. Ку — Илюк пулнă. Унăн сăнĕ-питĕнче пĕр юн тумламĕ те юлман, вăл вилнĕ çын пекех кăвакарса, çĕр тĕслĕ пулса кайнă...

## 24

Тăхăр сехетчен Илюк чӳречисене тимĕр решеткепе картланă тĕттĕмрех пӳлĕмре ларчĕ. Ăна милици уйрăмне илсе пырса хупнă чух кунта тата темиçе çын пулнă — ун пекех кĕçĕр мĕнле те пулин преступлени тунăшăн тытса килнĕскерсем ĕнтĕ. Иккĕшĕ-виççĕшĕ сарлака нар çинче, ним пулман пекех, лăпкăн çывăраççĕ, пĕри, темле ула-чăла пиншак тăхăннă пуклак та кӳпшек арçын, шăлĕсем тӳсме çук ыратнă пек, ывçипе хăрах пит-çăмартине тытнă та, куçĕсемпе урайнелле тăранса, ним хускалмасăр ларать. Илюк пырса кĕрсен, вăл ун çине те пăхмарĕ, мĕнле ларнă, çаплипех ларчĕ.

«Акă ĕнтĕ вăл, тĕрме...» — шухăшларĕ те Илюк, йĕри-тавралла хăра-хăра пăхнă май унăн чĕри тӳсме çук пăчăртанса ыратса илчĕ.

Тĕрме çинчен шухăшласа, унран çав тери хăраса пурăннăччĕ Илюк, хăйне хупасран шикленсех никама ним каламасăр тăван килĕнчен тухса тарчĕ вăл, унтан, çав ирсĕр Малани патĕнче пурăнма тытăнсан, темиçе хут хăй ирĕкĕпе милицие кайса хăй çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе, ним пытармасăр каласа пама шутланă çĕртех тĕрмерен хăранипе милицине кайма хăюлăх çитереймерĕ. Çав хушăра ăна вăрăсем хăйсен тискер ĕçне ытларах та ытларах явăçтарса пычĕç...

«Çын тăватпăр санран! Ĕçе кĕртетпĕр! Паспорт туса паратпăр!» — тесе илĕртрĕç вĕсем. Акă халь питĕ лайăх «çын турĕç»... Тĕрмене килсе лекрĕм... Кунта ĕнтĕ ĕç шырас хуйхи те çук, ахалех ĕçлеттереççĕ, паспорт та кирлĕ мар. Анчах хăйсем лекмен вĕсем, тарса хăтăлнă ĕнтĕ! Ахаль мар магазина хăйсенчен пĕри те кĕмерĕ, хĕсĕрлесех мана антарса ячĕç... Кам пĕлет, тен, пусмине те юрнех, мана каялла кăларас мар тесе, татса янă-и? Ых, тискерсем вĕт вĕсем, этемсем мар! Пурте — Малани те, Матроспа Артист та — чĕр шуйттансем!

Мĕн тăваççĕ-ши ĕнтĕ мана халь? Артист пĕркун «вышкăпа» хăратрĕ. «Высшая мера»... Вилĕм?! Анчах та эп çамрăк-çке-ха тата, тĕрĕссипе, айăплă та мар, «Матви пичче» тени малтан аннене чиксе пăрахма тăчĕ, унтан мана хама тапăнчĕ... Çавăн чух ăна хăйне тĕксе ӳкермен пулсан, вăл мана çапсах пăрахатчĕ пуль! Эп айăплă-и-ха ĕнтĕ? Вăрлама та мана вăйпах, вĕлерессипе хăратсах хăнăхтарса пычĕç. Хам пĕччен пулас пулсан, эпĕ никамăнне те пĕр çӳпĕ те тытас çукчĕ...

«Пĕтĕмпех каласа паратăп, ним пытармасăр, тĕп-тĕрĕссипе! — терĕ Илюк хăйне хăй.— Тĕрĕссипе каласа парсан, çăмăлтарах суд тăваççĕ тет. Халь тин манăн мĕн тунса тăмалла ĕнтĕ? Пурĕпĕр лекнĕ, кунтан ахальлĕн хăтăлса тухас çук...»

Анчах çав вăхăтрах Илюк хăйне Матроспа Артист пĕрре кăна мар «вĕрентсе» каланисене аса илчĕ:

«Милици-суд тавраш ĕн аллине лекес пулсан, нихçан та малтан тунă ĕçсене аса илме юрамасть, атту малтанхишĕн те, хальхишĕн те пĕрле «купаласа» параççĕ. Хăваннах мекĕрленсе тӳсес пулать вара. «Ĕçре» пĕрле пулнă юлташусен ячĕсене вуçех манса каяс пулать — курман, илтмен вĕсене, хăвна кăтартма илсе пырсан та, палламалла мар. Паллани — туссене сутни пулать, уншăн пирĕн нихçан та каçармаççĕ, уншăн пурĕпĕр — кайран-и, малтан-и — мăйна тепĕр еннелле пăрса хураççĕ. Ку — закон. Кунсăр пуçне тата, «ĕçре» пĕччен пулнă тесен, çăмăлтараххăн айăплаççĕ...»

«Вĕсем ирĕкре...— шухăшларĕ Илюк.— Тĕрмерен тухсан та, мана ним мар тытма пултараççĕ...»

Çав вăхăтра алăк уçăлчĕ те Илюка тухма хушрĕç. Шукăль тумланнă çамрăк милиционер, ăна иккĕмĕш хута илсе хăпартса, вăрăм коридор вĕçĕнчи пӳлĕме илсе кĕртрĕ. Сĕтел хушшинче хура кăвак китель тăхăннă, кĕмĕл тĕслĕ йăлтăркка пакунлă ватăрах çын ларать. Сухалне яп-яка хырнă, сарлакарах питлĕ, анчах хаяр сăн-

лă мар. Сылтăм енче, стена çуменчи пукан çинче ахаль тум тăхăннă, кĕске шĕвĕр сухаллă, куçлăхлă, пĕр аллăсенчи арçын. Ку вăл çывăхри шкултан чĕнсе илнĕ учитель пулнă — çул çитмен ачасене допрос тунă çĕрте яланах педагог пулмалла, йĕрки çапла.

Илюк алăкран кĕрсе тăрсанах, милици сынни ун çине пысăк кăвак куçĕсемпе пăхрĕ те:

— Ирт кунталла, лар,— тесе пукан çине кăтартрĕ.

Илюк питĕ хăюсăррăн малалла утрĕ, анчах лармарĕ.

— Ура çинче тĕрĕслĕх çук теççĕ, лар, ачам! — терĕ следователь тепĕр хут.

Илюк хăра-хăрах пукан хĕррине ларчĕ.

Следователь пĕр хушă сĕтел çинчи хутсене йĕркелерĕ, унтан, пуçне çĕклесе, Илюка куçĕсемпе витĕр шăтарас пек пăхрĕ.

— Акă мĕн, ачам. Вăрăм калаçу пуçличчен санпа эпир чăн малтанах калаçса татăлăпăр: пĕр сăмах та суймалла мар, пĕтĕмпех тĕп-тĕрĕссине каламалла. Пирĕн патра суйни — усăсăр, эпир пурпĕрех тĕрĕссине пĕлетпĕр. Ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм...— пăшăлтатса илчĕ Илюк. Унăн тăруках пуçĕ пĕçерсе кайрĕ, ывăç тупанĕсем тарласа йăпăлкаланчĕç.

— Суйса калама, пире пăтраштарма тăрăшсан, хăвнах йывăр килет, асту çавна...

Илюк куçĕсене мăч-мăч-мăч тутарса илчĕ. Следователь йĕркипе ыйтма пуçларĕ.

— Яту, аçу ячĕ, хушамату мĕнле-ха санăн?

— Илья Ильич Ивуков...

— Миçе çулта?

— Вунпиллĕк тултаратăп.

— Ăçтисем? Ăçта çуралнă, ăçта пурăнатăн?

— Юманлăхра. Сĕнтĕр районĕ...

Илюк каланисене милици çынни хăвăрт çырса пычĕ.

— Аçу-аннӳ пур-и? Камсем вĕсем, мĕн ĕçпе пурăнаççĕ?

— Атте вăрçăра вилнĕ.

— Аннӳ?

Илюк чĕлхе вĕçне пынă сăмаха çăтса ячĕ. Мĕнле каламалла-ха унăн амăшĕ çинчен? Малани яла кайса пĕлнĕ тăрăх, амăшне тĕрмене хупнă вĕт-ха. Тем пулма пултарнă унпа ку таранччен, кам пĕлет...

— Аннӳ пур-и? — каллех ыйтрĕ следователь.

— Çук,— терĕ Илюк. Çак тăруках каласа янă сăмах ăна хăйне те чĕринчен касса кайрĕ. «Çук... Епле çук?

Пур вĕт-ха, пур, анчах таçта вăл, тем тăвать ĕнтĕ халь.

— Аçта вара аннӳ? Вăл та вилнĕ-и?

— Вăл... качча кайнă.

— Качча кайнăшăн çук пулать-и вара? Эсĕ унпа пурăнмастăн-и-мĕн?

— Пурăнмастăп. Вăл ăçтине те пĕлместĕп.

Çапла, хăй шухăшламан çĕртенех, Илюк следователе тĕрĕс маррине калама тытăнчĕ. Хулана вăл килĕнче никам çуккипе, ăçта та пулин ĕçе вырнаçас тесе килнĕ имĕш, кунта пĕтĕмпех те пĕр эрне кăна пурăнать-ха, каçкаç пристаньре выртса тăрать иккен. Магазин çаратма мĕнле майпа кайса кĕни çинчен ыйтсан, пристаньре мана икĕ çын тĕл пулса, укçа нумай парассипе илĕртсе кайрĕç, вăл çынсене эпĕ унччен пĕрре те курман, палламастăп та терĕ...

Следователь, милицире нумай ĕçлесе хăй пурнăçĕнче тем тĕрлĕ преступниксене те курнă опытлă çын, ăна нимĕн чухлĕ те ĕненмерĕ.

— Пĕтĕмпех суятăн эсĕ, ачам,— терĕ вăл.— Анчах ахалех улталама тăрăшатăн, усси пулмасть, паçăрах асăрхаттартăм вĕт — эпир тĕрĕссине пурĕпĕр пĕлетпĕр!

Çав вăхăтра следователь пӳлĕмне çӳллĕ полковник — милици начальникĕ Азаматовпа хула прокурорĕ Яснов — кукшаланма пуçланă самăртарах çын — пырса кĕчĕç. Иккĕшĕ те малалла иртсе пукансем çине ларчĕç те, милици начальникĕ тӳрех:

— Çакă-и ĕнтĕ кĕçĕрхи «герой»? — тесе ыйтрĕ.

— Çакă,— терĕ следователь.

— Калаçу мĕнлерех пырать? Йĕркеллех-и? — ыйтрĕ прокурор.

— Пăтрашать-ха пăртак, пĕчĕк пуçĕпех пире, ват çынсене, улталама хăтланать.

— Тен, вăл, хăрани-мĕнĕпе, ĕç мĕнле пулса иртнине манса кайнă? Ун пек те пулкалать. Ытлаваскатас мар, майĕпе ыйтса пĕлес, шухăшлама, аса илме май парас,— терĕ прокурор.

Подполковник Илюк çине çав тери тинкерсе пăхрĕ. Унăн çамки çинчи пĕркеленчĕксем пĕр çĕрелле пухăнчĕç. Вăл темскер аса илме тăрăшрĕ пулмалла. Пӳрнисемпе сĕтел çине тăкăртаттарса ларчĕ пĕр хушă... Темиçе кун каялла, хулари паллă артистка хваттерне сĕмсĕррĕн çаратнă хыççăн, унăн хĕрачине чĕнсе калаçнăччĕ вăл. Вăррисене сăнран палласа илме пултаратăн-и тесе ыйтсан, çав хĕрача малтан мăн вăррин сăнĕ-пичĕ еплерех пулни çинчен каларĕ, унтан: «Çамрăкки хура, çӳçĕ вă-

рӑм, шкул формин гимнастеркипе»,— терӗ. Ара, ҫакӑ вӗт вӑл! Чӑнах та хура сӑнлӑ, ҫӳҫне-пуҫне нумайранпа касман, ҫийӗнче — шкул ачисем тӑхӑнакан гимнастерка! Тупата, ним иккӗленмелли те ҫук...

— Тӗрӗслес пулать... Халех!

Подполковник пӗр хушӑ прокурорпа шӑппӑн калаҫрӗ, унтан Илюка камерӑна ӑсаттарма хушрӗ. Дежурнӑй милиционер ачана илсе тухса кайсан, вӑл хӑйӗн шухӑшне следователе те каласа пачӗ. Вара вӗсем виҫҫӗшӗ — начальник, прокурор, следователь — ҫапла калаҫса татӑлчӗҫ: халех районти милицине шӑнкӑравласа ку ача ҫинчен каласа памалла, ашшӗ-амӑшӗ ҫинчен пӗлччӗр, вӗсенчен хӑшӗ те пулин пур пулсан, ыранах Шупашкара килччӗр. Ку — пӗрре; иккӗмӗшӗ — артистка хӗрачине чӗнсе илсе кӑтартас пулать, палласа илмест-и вӑл ҫак Ивукова?

Сасартӑк сӗтел ҫинчи телефон янраса кайрӗ. Следователь трубкӑна тытрӗ.

— Кам кирлӗ?

— Начальник сирӗн патра мар-и? — илтӗнчӗ хулӑн сасӑ.— Ӑна хула больницинчен ыйтаҫҫӗ.

Следователь ҫавӑнтах трубкӑна начальнике пачӗ.

— Итлетӗп,— терӗ подполковник.— Мӗн-мӗн? А-а, ӑнланатӑп... Хӑҫан? Ну, юрӗ... Ним тума та ҫук ӗнтӗ.

Вӑл хӑрах аллипе телефон ҫине пусрӗ те ассӑн сывласа ячӗ.

— Ҫӗрле персе амантнӑ преступник вилнӗ...

— Пӗр ҫип татӑлчӗ эппин,— терӗ следователь.

— Нимех те мар, уншӑн урӑххисем пур. Вӗсне тупатпӑрах!

Начальникпе прокурор тухса кайсанах, следователь, района шӑнкӑравласа, унти милици начальникӗпе Илюк пирки калаҫма тытӑнчӗ: тӗрӗслӗр, чӑнах та ҫав ялтан-и вӑл, ашшӗ-амӑшӗ мӗнле?.. Лерен ытла та тӗлӗнмелле хыпар пӗлтерчӗҫ: ку ачана, унӑн амӑшӗ ыйтнипе, районти милици тахҫанах шырать иккен, анчах ниепле те тупаймасть. Вӑл кӑҫал ҫуркунне шкултан вӗренӳ ҫулӗ пӗтиччен тухса тарнӑ та шыва путнӑ пекех ҫухалнӑ.

— Сирӗн пата пырса лекни аван-ха вӑл,— терӗҫ районтан,— унӑн амӑшне ыран ирех Шупашкара ҫитме хушатпӑр...

— Кун ҫинчен халех ял Советне шӑнкӑравлӑр!

## 25

Илюка çав кун урăх чĕнмерĕç. Пушанса юлнă тĕксĕм камерăра вăл пĕчченех ларчĕ. Мĕн кăна шухăшламарĕ-ши мĕскĕн ача! Пĕрре çеç мар ӳкĕнсе илчĕ — ма пăтраштарма тытăнтăм-ши пĕрех хут? Анне çинчен те каласа памаллаччĕ, тĕрмере ларать темеллеччĕ, хăй хулана мĕншĕн тарса килнине те, кунта кампа тата мĕнле çыхланса кайнине те, вĕсемпе пĕрле мĕн-мĕн тунине те — веçех, пĕтĕмпех! Хăраса тăмалла марччĕ, халь тин хăранинчен мĕн усси ĕнтĕ?

Тулта пăч-тĕттĕм пуличченех çавăн пек шухăшсемпе асапланса ларчĕ вăл, юлашкинчен нар çине тӳнсе çывăрса кайсан та, тĕлĕкре те темтепĕр курса пĕтрĕ. Килтен тухса тарнăранпа тӳссе ирттернисем курăнса канăç памарĕç ăна...

Тепĕр кунне, пĕр вунпĕр сехетсенче тин чĕнсе кайсан, ăна темшĕн допрос тума тытăнмарĕç. Пĕр пӳлĕме кĕртрĕç те ун пекех хура сăнлă, шкул гимнастерки тăхăннă, унпа пĕр çулхи икĕ арçын ачапа юнашар лартрĕç. Илюк вĕсем çине тĕлĕнерех пăхрĕ: «Кусем те ман пекех лекнĕскерсем-ши?..» Анчах вĕсемпе пĕр сăмах та хушмарĕ, мĕн пулассине кĕтсе, пĕр кĕтеселле ним тĕлсĕр пăхса ларчĕ. Леш ачисем çинчен тĕрĕсне калас-тăк, вĕсем преступниксем мар, чипер ачасемех пулнă, вĕсене кунта пачах та урăх сăлтавпа чĕнсе илнĕ, анчах сăлтавĕ Илюкпа çыхăннă...

Чылайранпа тин алăк уçăлчĕ те, пӳлĕме ĕнер Илюка допрос тунă сарлака питлĕ следовательпе пĕр вунтăватă çулсенчи сап-сар çӳçлĕ, хитре чечеклĕ кăвакрах платье тăхăннă хĕрача тата милицисем пек тумланман икĕ арçын кĕчĕç. Милици следователĕпе пĕр арçынĕ тӳрех тепĕр енчи стена çумĕнчи пукансем çине ларчĕç, тепри вара, кăвак костюм тăхăннă самаях çамрăк, хура кăтра арçын — вăл прокуратура следователĕ пулнă — хĕрачана аллинчен çавăтса маларах ирттерчĕ те юнашар ларакан арçын ачасем еннелле çавăрса тăратрĕ.

— Ну, Рита, лайăххрах сăнаса пăх-ха ĕнтĕ...— терĕ вăл йăвашшăн.— Çак ачасенчен хăшне те пулин паллатăн-и эсĕ?

Илюк ку мĕне пĕлтернине пĕртте ăнланмарĕ, анчах хăй çав илемлĕ хĕрача çине тинкеререх пăхрĕ те чутах тăнран каятчĕ. Ун умĕнче хăйсем Матроспа иккĕшĕ чӳречерен кĕрсе çаратса тухнă хваттерти хĕрача тăрать иккен! Çавă, тем тесен те çавă! Ун чух вăл пĕр аялти

кĕпепе кăначчĕ, çӳçĕ-пуçĕ те сапаланнăччĕ, хăранипе куçĕсем сиксе тухас пек чарăлса кайнăччĕ, халь ĕнтĕ вăл пĕртте ун пек мар, хитре чечеклĕ платье тăхăннă, çапах та палламалла. Çавах!..

Хĕрачи хăй те часах палласа илчĕ ăна. Пĕр пекрех виçĕ арçын ача çине пĕр минут пек ним чĕнмесĕр пăхса тăрсанах, вăл Илюк çине тĕллесе кăтартрĕ:

— Çакă...

— Йăнăшмастăн-и? Тен, вăл мар, ак кусем? — ытти ачасем çинелле пуçĕпе сулчĕ следователь.

— Çук, çук, йăнăшмастăп,— пĕтĕм кĕлеткипех пăркаланса илчĕ хĕрача.— Çаках. Мăнни мана çĕçĕпе хăмсарсан, вăл кухньăран чупса тухрĕ. Малтан нимĕн те тумарĕ, унтан япаласене чӳречерен ывăтма тытăнчĕ, юлашкинчен мăн вăрри ăна комод çинчи сехете илсе тыттарчĕ...

Хайсене хурахсем çаратнă чух вилесле хăранă пулин те, пĕтĕмпех астуса юлнă иккен ку хĕрача, пурне те тĕп-тĕрĕссипе, йĕркипе каларĕ, нимĕн те манса хăвармарĕ. Ара, ун пеккине епле манатăн-ха? Виличчен те манаймастăн ăна!

— А эсĕ астăватăн-и çавсене, Ивуков? — Илюк çине тинкерсе ыйтрĕ ахаль тумлă следователь.

Йĕп-йĕпе тара ӳкнĕ Илюк çĕрелле пăхрĕ, нимĕн те чĕнмерĕ. Мĕн калама пултартăр-ха вăл пĕтĕмпех тĕрĕс пулсан?..

...Унтан Илюка урăх пӳлĕме илсе кайрĕç. Следователь сĕтел çинче выртакан хура хуплашкаллă мăн кĕнеке илсе уçкаларĕ те Илюка пĕр сăнӳкерчĕкĕ çине тĕллесе кăтартрĕ:

— Çак çынна хăçан та пулин курнă-и эсĕ?

Илюк Матроса тӳрех палласа илчĕ, анчах шăпах пулчĕ, ыйтнине хирĕç ответ памарĕ, куçĕсене мăчлаттарса илчĕ кăна.

— Ма нимĕн те чĕнместĕн? — Санăн тусу-çке вăл, леш сана палласа илнĕ хĕрачасен хваттерне эсир унпа пĕрле çаратса тухнă, эпир ăна халь питĕ лайăх пĕлетпĕр. Ăна çеç те мар, эсĕ хулана мĕншĕн килни те паллă пирĕншĕн.

— Кам... кам каларĕ? — чĕтрекен тутисене аран хускатса илчĕ Илюк.

— Аннӳ каласа пачĕ.

— Мĕнле анне? — вĕри шывпа сапнă пекех сиксе тăчĕ Илюк.

— Мĕнле анне пултăр? Çыннăн амăшĕ пĕрре кăна ĕнтĕ. Санăн та темиçе мар пуль?

— Суя! Анне мар вăл манăн! Юри калать! — куççульпе чыхăна-чыхăна кăшкăрчĕ Илюк.— Улталать вăл, юри ман анне пек пулса çӳрет! Ан ĕненĕр ăна, вăл путсĕр хĕрарăм, сĕтĕрĕнчĕк, чисти йытă!

Илюка хăйĕн çинчен милицисене Малани килсе каланă пек туйăннă. Туйăннă çеç те мар, вăл чăнах та çаплах шутланă, мĕншĕн тесен Илюк пĕркун больницăра выртнă чух та Малани ун амăшĕ пек пулса пынă-çке, ун пирки кайран темиçе хут та мухтанса илчĕ вăл. Каллех çавă сĕтĕрĕнсе килнĕ ĕнтĕ кунта! Мĕн ĕç пур унăн Илюкпа? Мĕн каласа тултарнă-ши ĕнтĕ ун çинчен? Вăл хăй те вăрă вĕт-ха, вăрăсен тарçи, вĕсен йытти!..

Çавăнпа пĕтĕм чун-чĕререн тарăхса кăшкăрчĕ халь Илюк. Вăл хăйĕн амăшĕ çинчен темĕн тĕрлĕ усал сăмахсем каланинчен следователь малтанах питĕ тĕлĕнчĕ («Нивушлĕ вара ку çав териех пăсăлса кайма ĕлкĕрнĕ, тăван амăшне те çын вырăнне хумасть?..» — тесе шухăшларĕ), унтан тӳсеймерĕ, сĕтел çине шарт! çапрĕ:

— Пăрах палкама! Епле намăс мар хăвăн аннӳ çинчен çавăн пек ирсĕр калаçма?! Вăл сана хăйĕн кăкрине ĕмĕртсе çитĕнтернĕ, вăрçă вăхăтĕнче çĕрĕн-кунĕн ĕçлесе утайми пулса çитсен те хăй çиес юлашки татăка сан çăварна хыптарнă, епле те пулсан ӳстерсе çын тăвасшăн тăрăшнă, анчах эсĕ килтен ним каламасăр тухса тарнă, ăна икĕ уйăх макăртнă... Ку çитмест-ха, тата халь темĕн те пĕр лăпăртататăн!

Илюк шăпах пулчĕ. Пĕлмен çав вăл нимĕн те... Следователь чăнах та унăн тăван амăшĕ çинчен калать. Районти милици хушнипе Илюк амăшĕ паян ирпе ирех хулана çитнĕ, çак следователь патĕнче пулса, унпа сехет ытла калаçнă, хăйĕн йывăр пурнăçĕ çинчен те, ывăлĕ мĕнле тухса тарса çухални, ăна темле шыраса та тупайманни çинчен те макăра-макăра каласа кăтартнă. Анчах Илюк, хăйне леш путсĕр Малани улталанипе, тăван амăшĕ тĕрмере ларать, ăна следователь ниепле те курса калаçма пултарайман тесе шутланă...

— Санăн халь аннӳ умне чĕркуçленсе каçару ыйтас пулать, намăссăр ача! — терĕ юлашкинчен следователь.

Унтан телефон трубкине тытрĕ те:

— Леш хĕрарăма ман пата илсе килĕр,— терĕ.

Тепĕр ик минутранах пӳлĕме Илюк амăшĕ кĕрсе тăчĕ. Начарланса, темле кăвак сăнланса кайнă, куçĕсем шалалла путса аннă, кĕлетки курпунланнă — утмăл çулхи карчăк тейĕн çав! Питĕ нумай хуйхăрнă курăнать вăл ку хушăра, сахал мар макăрнă, мĕскĕн...

Ăна курсан, Илюк калама та çук тĕлĕнсе, тăрук хăраса кайса сиксе тăчĕ. «Мана кăтартма тĕрмерен кăларсах илсе килнĕ пулмалла...» — çиçĕм пек шухăш вĕçсе илчĕ унăн пуçĕнче.

— Кам ĕнтĕ çак? Сан аннӳ мар-им? Е ăна паллас кăмăлу та çук-и? — ыйтрĕ следователь çилĕпе.

Темиçе самант хушши Илюк юпа пек хытса тăчĕ, унтан сасартăк «анне!» тесе шариех кăшкăрса ячĕ те, амăшĕ патне ыткăнса, ăна мăйĕнчен ыталаса илчĕ.

— Анне, аннеçĕм!.. Каçар мана, анне, каçар, тархасшăн...

Амăшĕ ăна хирĕç тăрукех нимĕн те калаймарĕ, чунĕ ытла та кӳтсе килнипе сассăр макăрса, куççульне çăтаçăта, ĕçпе хытнă ырханрах аллисемпе Илюка пуçĕнчен, çурăмĕнчен, хулпуççинчен ачашлама тытăнчĕ. Васкаса, çав самантрах унăн ачине такам туртса илесрен хăранă пек, хăй çумнелле пăчăртарĕ...

— Ывăлăм... Чунăм, юнăм... Мĕн туса хутăн эс капла, мĕн туса хутăн, ача-ам... Пĕтрĕн вĕт... Аçу пире кун пек пурăнма хушса хăварманччĕ-çке, çын шутлах пурăнма хушнăччĕ...

Следователь вĕсем çине чунтан хĕрхенсе пăхса ларчĕ. Паян ирхине Илюк амăшĕпе вăрахчен калаçнă хыççăн уншăн пĕтĕмпех паллă пулчĕ: ку ача хăйĕн килĕнчен сасартăк хăраса ӳкнипе тухса тарнă, анчах вăл хărани йăнăш пулнă, хулара вара ăна вăрăсем темле майпа хăйсен аллине çавăрса илнĕ те хăйсемпе «ĕçлеттерме» тытăннă. Ун пеккисемпе следователь вăрçă хыççăнхи çулсенче пĕрре кăна мар тĕл пулнă... Пур-ха çав, сахал та мар пирĕн обществăра çавăн пек ирсĕрсем,— пĕтĕм халăхпа пĕр кăмăллăн ĕçлесе ырă пурнăçпа пурăнас вырăнне хамăр çынсене, патшалăха çаратаççĕ, çăмăллăн тупнă укçа-тенкĕпе ашкăнса пурăнаççĕ, путсĕр ĕçсем тăваççĕ. Хăйсем пăсăлса кайни çитмест, вĕсем çамрăксене тĕрĕс çул çинчен пăрса яраççĕ, кусем вара, халăхшăн усăллă çынсем пулас вырăнне, хăйсем сисмесĕрех халăхăн чи усал тăшманĕсем пулса каяççĕ. Халь ун умĕнче амăшĕпе пĕрле макăракан çак ача та çавăн пек тӳрленми преступниксен, вăрă-рецидивистсен танатине лекнисенчен пĕри ĕнтĕ.

— Ну, эсир пĕр-пĕринпе тĕплĕрех ларса калаçăр, эп сире кансĕрлемĕп,— терĕ следователь, сĕтел хушшинчен тăрса тухса. Алăк патне çитсен, Илюк амăшне асăрхаттарса хăварчĕ: — Лайăхрах ятла эс ăна, ăнлантăр вăл суйма юраманнине, хăйне вăрра ертсе янă çынсене хĕр-

хенсе ан тăтăр, вĕсем çинчен пĕтĕмпех каласа патăр, нимĕн те ан пытартăр!

— Юрĕ, начальник юлташ,— куççульне тутăр вĕçĕпе шăлса пуçĕпе ик-виç хут сулса илчĕ хĕрарăм.

Пӳлĕмре ывăлĕпе иккĕшĕ çеç юлсан, вăл ун çине пăхнă-пăхман каллех макăрса ячĕ:

— Ах, Илюк!.. Ача-ам!.. Эп ĕнтĕ сана хальччен вилнĕ те пуль тесе пурăнтăм вĕт! Шыва кайса путнă-и, машина айне пулнă-и, такам çапса пăрахнă-и, тем-и... Ма хуть епле те пулсан пĕлтермерĕн хăв çинчен? Пĕр сăмах та пулин?..

— Эп хăраса пурăнтăм, анне...— çĕрелле пăхса тĕрĕссине каларĕ Илюк.— Хăраман пулсанах пĕлтереттĕм...

— Мĕнрен хăрарăн, ачам?

— Ара, леш Матвишĕн тытса хупасран...

— Эсĕ... вăл вилнĕ тесе шутланă-им? Çавăншăн хăранă-и?

— А мĕн, вăл вилмен-и вара? — Илюк картах сиксе илчĕ, унăн куçĕсем тăруках çуталса кайрĕç.— Вĕлермен-и эп ăна?!

— Асту, ун пек вăкăр пĕрре урайне ӳкнĕшĕнех вилет пуль! Пĕррехинче ăна çиччĕн тытса хĕненĕ, ун хыççăн виçĕ кун ним пĕлми выртнă, анчах тăна кĕрсенех пĕр алтăр ханша ĕçнĕ те ним мар тăрса утнă, тет. Вĕлерĕн ăна, эсреле! Ахлатса выртсаларĕ-выртсаларĕ те сысна пекех çывăрса кайрĕ, ирччен те вăранмарĕ, ирхине вара юлташĕпе иккĕшĕ çур литр ĕçрĕç те юрласах тухса кайрĕç.

— Вăл... халь пирĕн патрах пурăнать-и? — хăранă пекрех ыйтрĕ Илюк.

— Çук, çук,— пуçне пăркаласа, аллипе аяккалла сулчĕ амăшĕ.— Эп ăна темиçе кунтанах хăваласа кăларса ятăм...

— Тĕрĕс тунă. Пирĕн япаласене сутаймарĕ пуль те хуть?

— Ним те суттармарăм. Хăваласа ярасси те çавăн пиркиех пулчĕ. Вăл питĕ сутасшăнччĕ, илекеннисене те хăех тупнă, хам фермăра чух кĕлет тăррине илтерсе пăрахнă, пурине те сӳтме тытăннă. Мана кун çинчен çынсем пырса каласанах эпĕ ял Советне чупрăм. Халех хăваласа ярăр çак хураха ман патăмран, вăл мана тĕппипех çаратса ыйткалакан тăвасшăн, эп ăна текех алăк урлă та каçармастăп терĕм...

— Кайрĕ-и вара?

— Тепĕр вунă кунтан ăна, промартельти растратă-

шăн суд туса, пилĕк çуллăха хупрĕç. Ларать халь. Çав кирлĕ шуйттана!

Тинех вара Илюк çав каçхине мĕн тери хăрушă, нимĕнле тӳрлетмелле мар йăнăш тунине ăнланса илчĕ. Енчен те вăл ун чухне ялтан тухса тарман, кам патĕнче те пулин выртса çĕр каçнă пулсан, нимĕн те, нимĕн те пулмастчĕ-мĕн... Паян кун та вăл пĕр хуйхă-суйхăсăр пурăнатчĕ, шкултан та вĕренсе тухатчĕ... Эх! Ма ун пек васканă-ши вăл?.. Халĕ акă... ăçта çитсе çапăнмалла пулчĕ унăн! Тин çăлăнмалли майĕ те çук, тӳсес пулать ĕнтĕ мĕн тӳсмеллине...

— Эс килтен тухса тарни вара мана пĕтĕмпех пĕтерсе хучĕ,— терĕ амăшĕ малалла.— Ăшчикĕм çунсах тухать пуль терĕм. Çиме ларсан апат анмасть, çывăрма выртсан ыйхă килмест. Урaран ура иртми пулса çитрĕ... Малтан эсĕ, çав шуйттан Матвийĕпе пĕрле пулас мар тесе, куккусем патне кайнă пуль терĕм. Паян таврăнать-и ку, ыран килет-и тесе кĕтсе пурăнтăм. Сас-хура пулмарĕ. Вара куккусем патне хам кайса пăхрăм. Эс çук. Курман, илтмен теççĕ... Ăçта шырамалла урăх? Киле таврăнтăм та тӳрех шкула, Нина Васильевна патне, кайрăм. Юрататъ-çке вăл сана. Ман Илюк çухалчĕ тетĕп. Пĕлетĕп-ха, хам та çавăн çинчен шухăшласа пурăнатăп-ха тет. Иксĕмĕр вара ял Советне, Яраткин патне, кайрăмăр. Шыраттарас пулать терĕ вăл. Пирĕн умрах районри милицие шăнкăравларĕ. Лешсем эсĕ миçе çултине, сăну-пуçу мĕнлереххине, мĕн тăхăннине ыйтса пĕлчĕç, тет. Кĕтетпĕр-кĕтетпĕр, нимле хыпар та, ним тĕллипалли те пулмарĕ... Тем тĕрлĕ те шухăшласа пăхрăм. Мана, Матвие тарăхнă вăхăтра таçта шыва кайса сикмен-ши тесе пăхрăм. Ай тур-тур, çара уран кăвар çине пусса тăнă пекех пурăнтăм çав! Çĕрĕ-çĕрĕпе çывăрмасăр итлесе выртатăп: сас пулмасть-ши, хапха уçăлмасть-ши, алăка шаккамасть-ши?.. Çук, нимĕн те çук! Куратăн пуль — вунă çул пурăнасси пĕтрĕ манăн...— Амăшĕ каллех йынăшса макăрса ячĕ.— Малалла тем курмалла ĕнтĕ тата... Кунтан сана ахаль кăларса ярас çук, лавккарах тытнă теççĕ. Ма хăтлантăн-ши ун пекех, ывăлăм, ма асăрханмарăн-ши? Чăн пысăк айăпĕ хамра та-ха, ăна пит лайăх чухлатăп... Мĕн тăвас ĕнтĕ пирĕн, ачам?

— Эп сана хăвна тĕрмене хупнă тенине илтрĕм,— терĕ Илюк, вăл калама чăрăнсан.

— Мана? Мĕншĕн? Кам каларĕ ун пек тискер сăмаха? — тĕлĕнсе кайрĕ амăшĕ.

— Пĕр хĕрарăм, мана хăй патĕнче усраканскер...

вăл ятарласа кайса пĕлтĕм терĕ. Матвийĕ вилнĕ, сана хупнă терĕ. Çав мана тата ытларах хăратса пăрахрĕ...

— Ӳпне çăпан тухтăр вăл çын чĕлхи çине! — тăрук çилленсе, тата ытларах пăлханса кайрĕ амăшĕ.— Шухăшласа кăларнă та вĕт, тур çырлахтăрах! Чăнах та, леш шуйттанĕ, Матвн, пирки мана милицине пĕр-икĕ хутчен чĕнтерчĕç, анчах урăх нимĕн те пулман. Намăсне çухатнă çын, пĕр-пĕр шульăк пулнă вăл хĕрарăм, сана çавăн пек хăрушла элеклесе кăтартаканни, урăх никам та мар!

— Çынни путсĕрскер çав... Эп çакăнта лекнĕшĕн те пуринчен ытла вăл айăплă. Çав шуйттан çыхлантарса ячĕ мана вăрăсемпе, çав хистерĕ вĕсемпе пĕрле çӳреме. Хăйне те тыттаратăп-ха ăна, вăл мĕн хăтланса пурăннине пĕтĕмпех пĕлсе çитрĕм. Веç калатăп!

— Кала, ывăлăм, пĕтĕмпех каласа пар начальниксене, тен, хăвна та çăмăллăх пулĕ... Эх, ача-ам! — Илюка ыталаса илчĕ амăшĕ.

Илюк пĕр хушă çĕрелле пăхса, пĕтĕм чун-чĕрипе вĕчĕхсе ларчĕ. Унтан пуçне çĕклемесĕрех амăшне хăйпе мĕн-мĕн пулни çинчен каласа кăтартма тытăнчĕ...

Кайран следователе те пĕтĕмпех каласа пачĕ. Ним пытармасăр, йĕркипе, малтан пуçласа вĕçне çитиччenex...

## 26

...Магазин çаратма тăнă каç, хăйсем лекме пултарассине вăхăтра сиссе мачча çинчен анса тарсан, Артист тӳрех хӳме урлă сикрĕ. Тем сăлтавпа-çке, Матрос унран чылай кая юлчĕ, çавăнпа та Мамаев капитан ăна пĕрре пенипех лектерчĕ.

Хăйсен пистолечĕ çав каçхине Артист аллинче пулнă. Çырма тăрăх тарма тытăнсанах, Артист милицисене хирĕç виçĕ хут персе ячĕ те малалла ыткăнчĕ. Сăрт çине хăпарса çитеспе вăл каллех самантлăха чарăнса тăрса хăйсене хăвалакансем еннелле ним тĕллемесĕр-тумасăр тата икĕ хут персе пĕр милиционера амантрĕ, хăй вара çырмаран сиксе тухрĕ те умра курăнакан пахча еннелле чупрĕ. Çӳллех мар решетке урлă вăл вăшт кăна ывтăнса каçрĕ, унтан çатрака йывăç тĕмисем ăшне чăмрĕ, каллех темле çырмана йăванса анчĕ, ун тăрăх кăштах чупсан, татах хӳме çине пырса тăрăнчĕ, ун урлă та ним мар сиксе каçрĕ, унтан вăрă çулне каллех тепĕр пахча пӳлчĕ, каллех хӳме, татах сăрт, çырма...

Артист пуçĕнче çак вăхăтра нимĕнле шухăш та пул-

марĕ, ăна пĕртен-пĕр туйăм — милицисен аллине чĕррĕн лекесрен хăрани çеç малалла хăваларĕ. Унăн пиншакĕ-шăлаварĕ çуркаланса-çĕтĕлсе пĕтрĕ, карттусĕ таçта çухалса юлчĕ, туратсем, саваламан хăмасем, пăтасем чĕркеленипе аллисенчен, пичĕ-куçĕнчен юн сăрхăнчĕ, анчах та вăл çаксене ним чухлĕ те туймарĕ, малаллах, малаллах вăркăнчĕ. Кам пĕлет, тен, сунарçăсемпе хаяр йытăсем хупăрласа илме пуçланă кашкăр çавăн пек ним çине пăхмасăр, хăранисĕр пуçне, урăх нимĕн те туймасăр ыткăнать-и! Тискер кайăкăн та пурăнасси килет çав...

Юлашкинчен вăл, çав тери ывăнса, сывлайми пулса çитнĕскер, тӳрем хире чупса тухса, нӳрĕ курăк çине касса янă йывăç пек ластлатса, месерле тăсăлса выртрĕ. Унăн чĕри мăлатук пек шаккарĕ, тăнлавĕсенчен те юн сиксе тăчĕ, алли-ури чарусăр чĕтрерĕ, ăшĕ пиçнипе, тӳсме çук шыв ĕçес килнипе чĕлхи çăвар маччи çумне сыпăça-сыпăça ларчĕ. Таврара шăпах, ниçта пĕр сас та илтĕнмест. Тĕпсĕр тӳпере пин-пин çут çăлтăр йăлтăртатать.

«Хăтăлтăм пулас!.. Тытаймарĕç! — ассăн сывласа ярса шухăшларĕ Артист. Çав самантрах хăйĕн тусĕ çинчен аса илчĕ: — Матрос мĕнле-ши? Ăна çулсах илчĕç-ши вара? Шел... шанчăклă юлташчĕ, ун пеккине часах тупас çук...»

Йăпăртлăха вăл Илюка та аса илчĕ, анчах çав «шĕпĕн» çинчен шухăшлас та килмерĕ унăн. Хăйсене тарса хăтăлма кансĕрлесрен ăна вĕсем юри магазинра хăварчĕç вĕт-ха, урам енчен милици машини пырса тăрсанах, вĕрен пусмана ятарласа татса ячĕç: халь тин вăл мĕн тума кирлĕ вĕсене? Чăрмав кăна! Хăйсен вăрă пурнăçĕнче вĕсем çамрăксене пĕрре кăна мар çавăн пек пăраха-пăраха хăварнă ĕнтĕ, нихçан та шеллесе тăман.

Пĕр çур сехет пек выртсан, çан-çурăмри тар типсен, вăл шăна пуçларĕ, чĕтреме тытăнчĕ. Тĕрессипе, ку шăннă пирки те мар, нервăсем «вылянипе» пулчĕ. Артист, сăрса ларса, йĕри-тавралла, çăлтăрсем пекех пин-пин çутăпа ялкăшакан хула çине пăхса илчĕ те, майĕпе ура çине тăрса, Атăл еннелле утрĕ. Çулсăр-мĕнсĕр, тӳрĕрен тӳрĕ кайрĕ вăл, эшкертен татăлса юлнă пĕччен кашкăр пек.

«Нивушлĕ Матрос лекрех пулĕ? Апла пулсан, пĕр пилĕк-ултă çул кураймастпăр ĕнтĕ пĕрне-пĕри...»

Унăн ытларах та ытларах шыв ĕçесси килчĕ. Çавăнпа та вăл, кирпĕч сарайĕсенчен чылай аякран пăрăнса, чăнкă çыранри йывăç тураттисенчен çăтăр-çатăр тытка-

ласа, Атăл хĕррине анчĕ те, пĕчĕк ача пек кукленсе ларса, шыва йĕкĕр ывçипе ăса-ăса, тем таранччен ĕçрĕ. Пуçĕнче унăн нимĕнле татăклă шухăш та пулмарĕ-ха: хăш еннелле каймалла халь, ăçта çĕр каçмалла, малашне мĕн тумалла?.. Çак самантра Малани патне кайма мар, хулана пырса кĕме те шикленмелле — мур пĕлет, тем пулса тухма пултарать унта! Нимĕн те паллă мар вĕт-ха...

Вăл шыв хĕррипе кăшт кăна аналалла утрĕ те, сасартăк умра пĕр пысăках мар кимĕ тăнине курах кайрĕ.

Ярăнтарас леш енне! Унта — вăрман, пĕр-икĕ кун пурăнас çавăнта, кайран-малтан мĕн тумалли куранĕ.

Сулăмлă чулпа ик-виç хут çапсанах, кимĕпе унăн кĕсменĕсене питĕрнĕ çăраççи ванса кайрĕ, Артист кимме шывалла çăмăллăнах тĕксе антарчĕ. Тепĕр икĕ минутран вăл çыранран чылай аякра пулчĕ.

«Ара, мĕн хăтланатăп-ха эпĕ, ухмах! — хăйне хăй вăрçса илчĕ вăл кăшт тăхтасан.— Тул та çутăлса килет ĕнтĕ, часах йăлтăрах курăнакан пулать, пĕр-пĕччен çын кимĕпе пынине асăрхасан, мана шăкăрт кăна çаклатма пултараççĕ-иç! Вĕсен вĕшлисем мана халь чĕлхисене кăларса ярсах шыраççĕ пуль-ха!»

Шăпах çав вăхăтра лăпкă Атăл варрипе пĕр çур километр тăршшĕ сулă юхса анни курăнчĕ, ăна икĕ пĕчĕк пăрахут — буксирсем — аналалла туртаççĕ. Артист васкасах хăй киммипе çав сулă вĕçне ишсе тухрĕ те ун çумне вырнаçрĕ.

— Капла шанчăклăрах пулать...

Атăл леш енне каяс шухăша та пăрахрĕ вара вăл, сулăпа пĕрле Рыбацкая слобода тĕлне çити юхса анчĕ те унта, сулăран уйрăлса, çырана тухрĕ. Анчах, киммине мĕн çумне те пулин кăкарас вырăнне, вăл ăна каялла тĕртсе ячĕ — юхса кайтăр çава шăтăкне, урăх кирлĕ мар ăна çак çурăк валашка! Хăй, сăрт çумне усал кăмпа пек çыпăçса ларнă пĕчĕкçеç пӳрт патне хăпарса, çĕрпе танах тăракан чӳречинчен хуллен кăна шаккарĕ,— çак лапчăк пӳртре вĕсем артистка хваттерĕнчен вăрласа тухнă япаласене утрав çине пытарса таврăннă хыççăн икĕ кун пурăннăччĕ...

Кил хуçи — çӳçĕ-пуçĕ арпашса кайнă, кантăк пек куçлă, кукăрураллă лăпăр-лапăр хĕрарăм — чӳречерен пĕрре пăхсанах Артиста палласа илчĕ те пĕр сăмахсăрах уçса кĕртрĕ, анчах хăй çапах та çав тери хăраса, пăшăлтатса ыйтрĕ:

— Мĕн пулчĕ капла? Çын сăнĕ те çук-çке санăн...

— Уншăн эсĕ питĕ хитре,— тарăхнă сасăпа мăшкăлласа илчĕ унран Артист.

— Пĕчченех-и? Ăçтан килсе тухрăн?

— Нимĕн те ан ыйт,— ал сулчĕ вăрă, çенĕкрен пӳртелле кĕрсе.— Çăвар чӳхемелли пур-и сан мĕн те пулин?

— Таçта, тĕпĕнче кăштах юлнăччĕ пулас...

— Ярса пар-ха часрах...

Хайсемпе кĕçĕр мĕн-мĕн пулса иртни çинчен Артист çак хĕрарăма пĕр сăмах та каламарĕ, хĕвел тухсан Малание чĕнсе пыма хушрĕ çеç.

— Анчах асту, питĕ сыхланса çӳре. Усал куçсем нумай ку чухне, куçăхтарма пултараççĕ! — асăрхаттарчĕ вăл, хăйне çав тери кăмăла кайман хĕрарăм çине йĕрĕнерех пăхса.

— Чухлатăп, ара, чухлатăп,— пуçне тайрĕ лешĕ.

Унтан Артист çенĕке тухса выртрĕ те çур минутранех вилнĕ пек çывăрса кайрĕ. Хĕвел Атăл леш енчи вăрмантан çӳлерех хăпарсан, алăка тул енчен măн çăрапа питĕрсе, кил хуçи Малани патне тухса йăкăртатрĕ.

Уголовнăй розыскра ĕçлекен Урусовпа Тукмаков, хăйсен пуçлăхĕсем хушнипе, Кувшинка тĕлĕнчи улах утрав çинче виçĕ кун та виçĕ каç пытанса ларчĕç, анчах усси нимĕн чухлĕ те пулмарĕ,— утрав çине никам та пымарĕ. Вата пулăç Михей мучи ирсерен вĕсем валли ĕçмелли-çимеллисем илсе пырсан, кашнинчех пăшăрханса ыйтрĕ:

— Ну, тăванăмсем, сунар мĕнлерех пырать? Кашкăрсем халĕ те килсе тухмарĕç-и-ха?

— Кашкăрсем кăна мар, йытă çури те курăнмарĕ-ха, никам та килмест, сисрĕç пулмалла эпир вĕсене кĕтсе ларнине,— терĕç áна хирĕç Урусовпа Тукмаков, кăмăлсăрланса.— Капла эпир кунта хĕле кĕричченех хĕвел çинче пиçсе выртма пултаратпăр, анчах усси...

Чанах та çав, çынсăр утрав çинчи тĕмĕсем ăшĕнче ним тĕлсĕр ларса пурăнни такама та йăлăхтарма пултарать. Çамрăк çыншăн вăл пушшех йывăр ĕнтĕ. Уголовнăй розыск çыннисенчен пĕри — Тукмаков — шăпах çамрăк, пĕлтĕр кăна çартан таврăннăскер пулнă, хулара ăна çураçнă хĕрĕ кĕтет-мĕн, çавăнпа та вăл иккĕмĕш кунĕнчех ăшталанма тытăнчĕ:

— Ним усси те пулмасть кунта ларса пурăннипе! Систернĕ вĕсене кам та пулин... Начальнике кайса каласа пăхас...

Анчах розыск органĕсенче çирĕм çул ытла ĕçленĕ Урусов ăна хирĕç кула-кула илчĕ çеç:

— Туй ачи эсĕ, шăллăм, шăп та шай туй ачи! Тă-

пăрт-тăпăрт сиксе илнипех ĕç пулать тетĕн пулĕ. Çук, шăллăм, пирĕн ĕçре çав тери пысăк тӳсĕм кирлĕ... Кун пек çеç пулать-и тепĕр чух! Вăтăрмĕш çулта, колхозсем тума тытăнсан, эпир, кулаксен пĕр бандине тытма тăрăшса, Сăр вăрманĕнче вуникĕ кун лартăмăр! Çимелли те, туртмалли те пĕтсе çитрĕ, пырса паракан та çук, чут выçса вилеттĕмĕр, çапах та лартăмăр...

— Тытрăр-и вара хуть?

— Тытмасăр тата! Виççĕшне, чăнах та, персе ӳкермелле пулчĕ, анчах тăваттăшне пурпĕрех чĕррĕн тытса çыхрăмăр. Хаçата та çырса кăларчĕç кайран пирĕн çинчен.

— Камсем пулнă вара вĕсем?

— Каларăм-çке, кулаксен банди! Утаманĕ — çĕрме пуян ывăлĕ, шурă гвардеец пулнăскер, тăванĕсене раскулачить тунăшăн коммунистсемпе комсомолецсене, активистсене вĕлерсе çӳренĕ. Хăйсене кăна мар, вĕсен çемйисене те — ватти-вĕтти мĕнĕпех — тиркемен... Пĕтĕм тавралăх хăракан пулса çитнĕччĕ çак бандăран, ялĕ-ялĕпе колхозран каялла тухма тытăнчĕç, мĕншĕн тесен кусем колхоза кĕрекенсене пурне те çунтарса яратпăр тесе сăмах сарнă. Тытрăмăр вара çавсене, вуникĕ кун сыхларăмăр, çапах та лектертĕмĕр. Питĕ мухтарĕç пиреуншăн...

— Ну, эпир сыхлаканнисем — вĕт-шаксем кăна-ха вĕсем,— терĕ Тукмаков, парăнасшăн мар пулса.— Ун пек çăрттансемех мар...

— Тĕрĕс мар калаçатăн, шăллăм,— ун куçĕнчен кăмăлсăр пăхрĕ Урусов.— Вăрăсем пурте халăхшăн сиенлĕ, çавна ан ман эсĕ. Паян вăл хваттер çаратса тухнă тейĕпĕр, анчах кайран, вăхăтра тытса чармасан, вăл патшалăх банкне те кĕрсе кайма пикенет. Çавăнпа та кашнинех тытас пулать, пĕр преступлени те ахаль, айăплисене тупса ответ тыттармасăр юлмалла мар. Ун çинчен Ленин калани те пур. Çитет акă çавăн пек вăхăт — пирĕн çĕршывра «вăрă» сăмах та пулмасть!

Засадăра ларни тăваттăмĕш талăк çине кайсан, Урусов çапах та ăна начальник патне ячĕ:

— Пĕлсе кил, малашне мĕн тума шутлаççĕ вĕсем? Анчах асту, ниçта та тытăнса ан тăр...

Тукмаков хуларан çав кунах хĕвел аннă тĕле таврăнчĕ.

— Ну, мĕнле? Мĕн калаççĕ пуçлăхсем? — тӳрех ыйтрĕ Урусов.

— Ларăр, кирлĕ пулсан, çулталăкĕпех лартатпăр

терĕç...— Тукмаков ассăн сывласа илчĕ.— Пĕр сăмахпа каласан, эпир санпа халь чăн-чăн Робинзонсемех пулатпăр курăнать. Вулană-и эсĕ çакăн пек кĕнеке?

— Ăна эпĕ эс катăк йĕмпе чупнă чухнех вулană,— терĕ Урусов.

— Ну, вот... Эсĕ Робинзон, эпĕ — Пятница. Килĕшетĕн-и çавăн пек? Сухал ӳстерсе яратпăр, кайăк-кĕшĕк, пулă тытса çиетпĕр. Хăш чух пĕçерсе, хăш чух — чĕрĕллех...

— Çитĕ камитленме, тулкăллă калаç! — çилленме пуçларĕ Урусов.— Сана эпĕ ĕçпе янă пуль?

Тукмаков вара ăна иртнĕ каçхине хулара мĕн пулса иртни çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех каласа пачĕ.

— Пирĕн пуçлăхсен шучĕпе, пур çĕрте те пĕр шайкках пулнă, магазина та леш артистка хваттерне тасатса тухакансемех кĕнĕ,— терĕ вăл юлашкинчен.— Ирĕкре юлнисем утрав çине пыраççех, çавăнпа та ним те ан шарлăр, лăпланса пурăнăр хăвăрăн курортăрта тесе ячĕç...

— Мĕнех вара,— терĕ Урусов килĕшӳллĕн,— пирĕн ĕç — пуçлăхсем мĕн хушнине тавасси. Ларăпăр. Кĕтĕпĕр.

— Анчах мĕн чухлĕ кĕтмелле пулĕ-ши? — ыйтрĕ Тукмаков, хăйĕн çак çынсăр утрав çинче пурăнас килменнине пытармасăрах.

— А хуть те мĕн чухлĕ пултăр. Эрне-тĕк — эрне, уйăх-тăк — уйăх, пирĕншĕн пурĕпĕр мар-им? Служба!

— Сана калама лайăх, эс ват çын...— мăкăртатса илчĕ Тукмаков.— Мана вăт Нина кашни каç кĕтет, эпĕ кун пек пытанса пурăнсан, вăл хăй валли урăххине те тупма пултарать...

— Ан пăлхан, ан пăлхан, шăллăм, юрататех пулсан пăрахмĕ,— кулса илчĕ Урусов.— Тен, сан телее, çак кунсенче таврăнăпăр-и-ха?

— Тем пекчĕ!

— Тӳс, шăллăм, чăт!

Чăнах та, çак калаçу хыççăн вĕсен нумаях та кĕтмелле пулмарĕ...

## 27

Матроса персе ӳкерни, вăл, аманнăскер, милицисен аллине лекни çинчен Артист тин кăна чупса пынă Маланирен пĕлчĕ.

— Ун пирки паян пĕтĕм хула мĕн тул çутăлнăранпах калаçать, пурте калама çук хĕпĕртенĕ,— васкаса

пăшăлтатрĕ Малани.— Ачине магазинта юри, айăпне хăйсем çинчен сирсе яма, хăварнă теççĕ. Тепĕр тесен, Илюкне чăнах та хăвармалла пулман-мĕн сирĕн, ахаль те турткаланса пурăннăскер, йĕпетсе тултарать акă вăл, пурне те сутать!

— Ан хăра, сутмасть, вĕрентнĕ ăна! — терĕ Артист çĕтсе ларнă сасăпа.— Мĕн тухать ăна пире сутнипе? Хăйне йывăртарах килет çеç.

Артистăн ытлашши хăрамаллиех те пулман çав: вăл — ирĕкре, халь тин ăна никам та тытас çук, кĕçĕрех тухать те тарать акă вăл. Вырăссем калашле, шыра вара çиле хирте... Анчах Млаништĕн ку самаях хăрушă пулчĕ, мĕншĕн тесен Илюк ун çинчен ытла та нумай пĕлет-çке! Вăл каласа парсан, Маланин пĕтĕм ирсĕр пурнăçĕпе ĕçĕсем те тăрă шыв çине тухаççĕ: тăтăшах вăрăсемпе çыхăнни те, вĕсене ĕçтерсе-çитерсе пурăнни те, вăрланă япаласене кая-кая сутни те, тем те, тем те! Çавăнпа шикленчĕ те вăл халь, çавăнпа унăн çĕлен чĕри вырăнтан хускалчĕ...

— Епле пулсан та пирĕн халь утрав çинчи япаласене хăвăртрах илсе тухма тăрăшас пулать,— терĕ Артист кичеммĕн.— Малтанлăха ăçта хума пултаратпăр эпир вĕсене? Сан патна йăтма пит инçе, тата халь хи вăхăтра ытла шанчăклах та мар. Леш шуйттан чĕппи хăранипе персе ячĕ-тĕк...

— Илюк-и?

— Çавă çав! Кам пултăр тата?

— Эппин, халлĕхе çак Варвари патне илсе килĕпĕр. Тĕпсакай пекки пур унăн, пытарать. Питĕ шанчăклă вырăн.

— Килĕшет-ши?

— Уй, укçа сĕнсен ма килĕшмест пуль? Тата... эс унран пит ан хăра, вăл хăй те унтан-кунтан çаклатма хирĕç мар этем. Пĕрре ларса та тухрĕ унщăн...

— Апла пулсан, эсĕ халех кимĕ туп. Кĕçĕрех каятпăр. Моторли пулсан авантарахчĕ. Çитсе килме хăвăрт пулать, ăнсăртан такам тĕл пулсан та шанчăклă.

— Ăна тупатăп, тупатăп! Леш Иванах пырать пуль-ха?

— Мĕнле Иван?

— Мăн Иван, ара. Хамăра утрав çине илсе кайни! Виçĕмкун пристаньри буфетра тĕл пултăм — мотор туянтăм терĕ...

— Калаçса татăл эппин. Тӳлесси пирки хытса ан тар!

Тата кăшт ларкаласан, Малани тухса кайрĕ те каç

пуласпа тин çавранса пычĕ. Ун çине пĕрре пăхса илсенех, Артист ĕçсем питех те ырă маррине туйрĕ.

— Мĕн эсĕ... такам хĕнесе янă тĕслĕ? — ыйтрĕ вăл унран.— Тупаймарăн-им кимĕ хуçине?

— Тупасси тупрăм та, усси сахал-ха унран. Кимми тĕпĕнче вил ӳсĕр выртать, шуйттан, паянах çын пулаймасть те пулĕ.— Малани ывăннă лаша пек хашш! сывласа ячĕ.— Анчах вăл нимех те мар-ха...

— Тата мĕн пулнă?

— Халь... мĕн... автобус çинче илтрĕм: Матрос вилсе кайнă, тет.

— Матрос?! Вилнĕ?! — яштах сиксе тăчĕ Артист. Унăн куçĕсем тăрук хаяррăн та хăрушла çуталса илчĕç.— Камран илтрĕн?

— Каларăм-çке, автобус çинче... Хĕрарăмсем калаçса килчĕç. Сăмахĕ больницăри пĕр медсестраран тухнă пек ăнлантăм. Тăна кĕреймесĕрех вилнĕ, тет...

Артист пукан çине ларчĕ те пуçĕпе сулкаласа илчĕ.

— Эхх!.. Дружок-корешок... Пĕтрĕ эппин иксĕмĕр текех тĕнче касса çӳресси!.. Ну, юрĕ... Каçармастăпах куншăн! Пурĕпĕр кам вĕлернине йĕрлесе тупатăп та — тавăратăп. Ы-ых, тавăратăп, мать честная!

Вăл шăлĕсене тăрук шăтăрр! тутарса сĕтеле çапнипе Малани те шартах сиксе илчĕ.

Утрав çине вĕсем çав каçхине каяймарĕç,— путсĕр кимĕçĕ Мăн Иван урăлайман иккен, ирĕксĕрех ырана хăвармалла пулчĕ. Тепĕр кунне вара Малани кимĕçпе малтанах калаçса таталчĕ те, тĕттĕм пулсан Рыбацкая слобода тĕлне моторлă кимĕ пырса чарăнчĕ. Вăрăсемшĕн вăл каçхине çанталăк питĕ лайăх пулчĕ — кăнтăрла иртсенех хĕвеланăç енчен çăра хура кăвак пĕлĕтсем капланса килчĕç, çумăр чашлаттарма тытăнчĕ, каç пулсан та чарăнмарĕ, Атăл çинче ун пек чух ытлашши çын пулмасть, пулăçсем те килĕсенче ларaççĕ, хуть те мĕн ту, никам та курмасть...

Маланипе Артиста та çакнашкал тĕттĕм каç вĕсене никам та курма пултарас çук пек туйăнчĕ, вĕсем утрав çинчи япаласене ним шиксĕр кайса илсе килме ĕмĕтленчĕç. Анчах...

...Шăп çав кун, кăнтăрлапа, милицири следователь пӳлĕмĕнче хăйĕн амăшĕпе тĕл пулса чун-чĕререн уçăмлăн калаçнă хыççăн Илюк пурин çинчен те ним тунмасăр каласа кăтартнă. Вăл пуринчен ытларах Малани çинчен каланă, мĕншĕн тесен унăн Шупашкарти ăнаççăр пурнăçĕ чăн малтан çав ирсĕр хĕрарăмпа çыхăннă-çке-ха.

Шутпа, Илюк следователе Малани ҫинчен каласа панӑ хыҫҫӑн ӑна тӳрех, ҫав сехетрех тытса хупмалла пек ӗнтӗ. Анчах милицирисем кун пек тума васкаман, вӗсем Малание сӑнама тытӑннӑ. Тарса ӳкме ӗлкӗрнӗ Артист ун патне пыратех ӗнтӗ е Малани хӑй ӑна шыраса тупать тесе шухӑшланӑ милицире. Вӗсем пӗр-пӗринпе курнӑҫмасӑр пулмастех, вӗсем епле пулсан та ҫыхӑнаҫҫех! Малание тӑрук хупса лартсан, ҫав «ҫип» татӑлма пултарать: Малани шарт тунса лартать те — нимӗн те тӑваймастӑн вара. Ҫавӑнпа та милици начальникӗ, ҫав самантран пуҫласа, Маланин кашни утӑмне сӑнаса тӑма хушрӗ — кӑнтӑрла та, каҫ та, вӑл килте чух та, хулана тухса унта-кунта ҫӳренӗ вӑхӑтра та.

Малани, паллах, ӑна-кӑна нимӗн те пӗлмерӗ, анчах ахаль тумсем тӑхӑннӑ икӗ вӑйпитти арҫын ӑна пӗрре те куҫран вӗҫертмерӗҫ. Вӗсем Малани кӑнтӑрла иртсен хӑйӗн килӗнчен мӗнле тухса кайнине те, перевоз патӗнчи киоскра ҫур литр эрех илсе тӑвар склачӗ ҫывӑхӗнчи пӗрене куписем хушшинче пӗр тӗреклӗ арҫынпа ӗҫсе ларнине те, унтан Рыбацкая слободари пӗр тайлӑк-тӗйлӗк пӳрте кӗрсе кайнине те курчӗҫ. Чылай вӑхӑт иртсен, ҫав пӳртрен тепӗр лутака, кукӑртарах ураллӑ хӗрарӑм тухрӗ те Кадыков урамӗнчи киоскран икӗ ҫур литр илсе пычӗ. Сӑнакансенчен пӗри хулана ҫак хӗрарӑмпа пӗрлех кайса килчӗ, анчах лешӗ ҫакна вуҫех те сисмерӗ.

— Такама кӗтеҫҫӗ вӗсем, ахальтен мар ӗҫмеллисем хатӗрлеҫҫӗ,— хӑй шухӑшне каласа пачӗ хулана кайса килни.— Лешне, тарнине, мар-ши? Мӗнле шутлатӑн?

— Пулма пултарать,— килӗшрӗ тепри.

— Лайӑхрах сӑнас пулать.

Майӗпен каҫ та пулма пуҫларӗ. Кӑнтӑрла иртсен пӗр виҫӗ сехетре пуҫланнӑ ҫумӑр халӗ те чарӑнмарӗ-ха, кӗркуннехи пекех йӑлӑхтармалла, вӗттӗн-вӗттӗн сапрӗ. Хушшӑн-хушшӑн чарӑннӑ пек пулать, унтан каллех чашлаттарма тытӑнать. Милици ҫыннисем лачкамах пулчӗҫ, анчах сӑрт ҫумӗнчи лапчӑк пӳрте сӑнама пӑрахмарӗҫ. Унта ӗнтӗ электричество та ҫутса ячӗҫ, чӳрече карри витӗр пӗр-икӗ хутчен кил хуҫин лапсӑркка пуҫӗ курӑнчӗ, анчах урӑх ҫын пурри палӑрмарӗ, сас-хура та илтӗнмерӗ.

— Тӗп-тӗрӗс калатӑп сана — лешне кӗтеҫҫӗ! — терӗ каллех милици ҫыннисенчен пӗри, самаях вӑхӑт иртсен.— Хӑйсем тӗллӗн ӗҫес пулсан, вӗсем хальччен юрлама та тытӑнмалла... Тен, кӗрсе пӑхӑпӑр, э?

— Эсӗ мӗн, ухмаха ертӗн-и? — тӗлӗнчӗ тепри.— Мӗн

сăлтавпа кĕретĕн? Эпир камне вĕсем тӳрех тавçăрса илеççĕ! Вара хамăрăн пĕтĕм ĕçе пăсса хуратпăр. Арестлеме пирĕн нимĕнле сăлтав та, права та çук... Хушман та пире ун пек тума!

Вĕсем тата чылай хушă сăнаса тăчĕç. Çумăр çаплах лăпăстатрĕ, таврара пăч-тĕттĕм пулса çитрĕ. Атăл шывĕ хуралса ларчĕ, унта-кунта бакен çутисем çеç вĕлт те вĕлт туса илеççĕ те тура, пристань патĕнче, темле мăн пăрахут шыв çине сарă-хĕрлĕ çутăсем сапать. Лапчăк пӳртре çав-çавах шăп, халь ĕнтĕ кил хуçи çӳрени те курăнма пăрахрĕ.

— Эсĕ отделение кайса кил эппин, мĕн калаççĕ,— терĕ сăнаканнисенчен пĕри теприне.— Часах вунпĕр çитет. Мĕн тумалла? Эп кунта пĕчченех тăркалăп...

Тепри сăмахсăрах килĕшсе йăпăлкаланнă сукмак тăрăх унăн-кунăн шуçкаласа утса кайрĕ. Унтан пилĕк минут иртрĕ, вунна... Ту енче кимĕ моторĕ лăкăртатни илтĕнчĕ. Сăнама юлнă çын ун çине çаврăнса та пăхмарĕ — сахал-и хальхи Атăл çинче моторлă кимĕ? Кашни хăйĕн ĕçĕпе çӳрет.

Анчах çав вăхăтра пачах та кĕтмен япала пулса тăчĕ. Милици çынни тăракан вырăнтан инçетре те мар, пулсан пулĕ пĕр икçĕр метрта, сасартăк темле арçын çав тери хытă кăшкăрса ячĕ...

— А-а-а!.. Краву-ул! Пулăшă-ăр!.. А-а-а...

Ахăртнех, такамсем кама та пулин çаратма тапăннă пулмалла. Те укçине туртса илесшĕн-ха, те тумтирне хывасшăн...

— А-а-а! Пулăшă-ăр! — тепĕр хут янраса кайрĕ тĕттĕмри сасă.

Паллах, пĕччен çын çĕрле хурах кăшкăрнине илтсен, хуть те кам та ăна пулăшма чупать. Епле тӳсетĕн-ха хурлăха лекнĕ çынна хӳтĕлемесĕр? Преступлени пулать вĕт-ха вăл!

Лапчăк пӳрт патĕнче сăнаса тăракан милици çынни, хăйĕнчен инçех те мар такам пулăшу ыйтса кăшкăрнине илтсен, пĕрре леш пӳрт çине, тепре тĕттĕмелле пăхрĕ те, çумĕнчи пистолет кабурне аллипе тытса, сасă илтĕннĕ еннелле ыткăнчĕ. Пĕр çĕр метр пек чупса кайсан, вăл чарăнса тăчĕ: хăш тĕлте кăшкăрчĕç-ха? Тĕттĕмре никам та курăнмасть. Пĕр минут иртрĕ, иккĕ... Унтан хайхи сасă чылай аякра, сылтăмарахра, илтĕнчĕ. Милици çынни унталла тапса сикрĕ... Темиçе самантран вара вăл тĕттĕмре виçĕ мĕлке тăрмашнине асăрхарĕ. Пĕ-

ри текех ӳкет, иккĕшĕ ăна хулĕнчен тытса çĕклеççĕ темалалла сĕтĕреççĕ.

— Хура-ах, пулăшăр!..

— Стой, мĕн хăтланатăр эсир? Перетĕп! — пистолетне туртса кăларма хатĕрленсех чупса пычĕ вĕсем патне милици çынни.

Вăрăсем ун пек чухне хăйсем тапăннă çын патĕнчен пĕррех аяккалла вăркăнаççĕ, анчах кусем, темшĕн, вырăнтан та хускалмарĕç. Хăйсене чарма пынă çынна хирĕç тăрасшăн пулинех? Пĕлме çук...

— Камсем эсир? Мĕн тăватăр ку çынна? — çилĕпе ыйтрĕ милици çынни.

— А сана мĕн ĕç? — терĕ лешсенчен пĕри кăмăлсăр сасăпа.— Эсĕ ху кам, кун пек паттăрскер?

— Эпĕ — хулари милици уйрăмĕн сотрудникĕ! Ăçта сĕтĕретĕр эсир ăна? Мĕн тума? — Вăл халĕ ним сас памасăр, вилнĕ пек выртакан çын çине тĕллесе кăтартрĕ.

— Киле илсе каятпăр...

— Мĕнле киле? Кам патне?

— Хамăр патах. Ав, икĕ чӳречере çутă курăнать... Пирĕн кил вăл. Ĕненместĕн пулсан — пырса пăхма пултаратăн.

— Ак ку кам вара?

— Шăллăм вăл манăн.— Тĕттĕмри çын ывăннă пек, хаштах сывласа илчĕ.— Таçта ĕçсе супнă та паян тăнран тухса кайнă. Киле аран сĕтĕрĕнсе пыни çитмест, аннене татах укçашăн тапăнчĕ. «Эп сана хам ĕç укçине ĕнер пĕтĕмпех килсе патăм, тавай çур литрлăх, мана юлташсем кĕтеççĕ!» — тет. Паллах, анне памарĕ, ку ăна усал сăмахсем каласа кӳрентерме тытăнчĕ, эп вара тӳсеймерĕм, тĕрĕссипех каласан — пĕр-икĕ хутчен тăванла тăхăнтарса ятăм. Ӳсĕрскер, макăрма тытăнчĕ, эсир мана çын вырăнне хумастăр, халех Атăла кайса сикетĕп тесе тухса чупрĕ... Мĕн тăвас тетĕн, ирĕксĕрех хыççăн кайма тиврĕ. Урама тухсан, çак юлташа тĕл пултăм та, ăна та хампа пĕрле пыма чĕнтĕм. Пĕтĕм ĕçĕ те çавă çеç. Киле пырасшăн мар тата, усал, пусма тытăннă сысна çури пек çухăрать! — Каласа кăтартакан çын, тарăхнипе, çĕрте выртаканнине атă пуçĕпе тапса илчĕ.

— Час-часах ĕçет-и вара вăл? Хăй çамрăк пулас-ха? — ыйтрĕ милици сотрудникĕ.

— Çамрăк çав, ФЗО пĕтернĕ хыççăн иккĕмĕш çул кăна ĕçлет-ха. Ку таранччен ĕçни сисĕнсех каймастчĕ, анчах юлашки пĕр-ик уйăх хушшинче тем мурĕ пулчĕ!

Шпаналла юлташсем тупăнчĕç пулмалла! Çавсем илĕртсе пăсаççĕ...

— Юлташсенчен питĕ нумай килет çав,— килĕшрĕ милици çынни.— Часрах уйăрма тăрăшăр эсир ăна ун пеккисенчен, атту-тăк пуçĕпех пăсăлса кайма пултарать.

— Ыранах заводри комсомол комитетне кайса калаçатăп-ха. Комсомолец вĕт вăл. Тыткалаччăр лайăхрах, тăн кĕртчĕр пĕрре...

— Кайăр, кайăр... Çамрăк çынна вăл пăсăлса каясран епле пулсан та вăхăтра хăтарас пулать!

Милици çынни хăйĕн малтанхи вырăнне таврăнма васкарĕ. Шăпах вăл шыв хĕррине çитеспе çыран çумĕнчен моторлă кимĕ тăрук тапранса кайрĕ те темиçе самантранах тĕттĕмре курăнми пулчĕ. Милици çынни лапчăк пӳрт çине пăхрĕ — унăн чӳречинче çутă çук иккен.

— Тухса кайнă! Вĕçертрĕм!..— хыпăнса ӳкрĕ вăл.— Мĕн туса хутăм-ха эп капла? Е мана юри улталарĕç-ши?..

Вăл çереме касса тунă картлашкасем тăрăх çав пӳрт патне чупса хăпарчĕ те пĕчĕк çенĕк алăкĕ çинче самаях сулăмлă çăраççи çакăнса тăнине курчĕ.

— Тарнă! Тăрăлса юлтăм!..

Ним тума пĕлменнипе вăл хуп-хура Атăл çинелле пăхрĕ. Куçа нимĕн те курăнмарĕ, анчах Атăл варринче, чылай инçетре, кимĕ моторĕ антăхса каяс пек лăкăртатни уççăнах илтĕнчĕ.

— Çав кимĕпе тарнă вĕсем! Тем тесен те! Мĕн тăвас пулать-ха ĕнтĕ? — Вăл картлашкасем тăрăх шуçкаласа каялла чупса анчĕ те кĕтмен çĕртенех хăйĕн хулана кайнă юлташĕпе пите-питĕн тĕл пулчĕ. Унпа пĕрле тата икĕ çын килнĕ иккен.

— Ну, мĕнле? — ыйтрĕç вĕсем.— Эпир сире улăштарма килтĕмĕр, халĕ ĕнтĕ киле кайма та пултаратăр...

— Киле каясси тарам-ха вăл... Тартрăм вĕт, пĕр наччасра ухмаха тăрса юлтăм! — терĕ ку, ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр.— Авă, мотор сасси. Çавăнпа ларса вĕçтерчĕç пулмалла...

— Апла пулсан, мĕн туса тăрас кунта, часрах хыççăн хăвалас пулать! — терĕ халь килнисенчен пĕри.

— Мĕнпе? Мĕнпе хăвалатăн?

— Епле мĕнле? Хамăрăн катерпа! Вăл ахаль моторкăсенчен пилĕк хут хăвăртрах каять, ракета пек вĕçет вĕт!..

Вĕсем вара пĕр самант та тытăнса тăмарĕç, тăваттăшĕ те пристань еннелле чупрĕç.

## 28

Паян çумăр çăвасси çинчен пĕлнĕ пекех, утрав çинче кĕтсе пурăнакан Урусовпа Тукмаков ирхи апат хыççăн çăра та лапсăркка тĕмсем хушшинче хăйсем валли çÿçе-хăва хуллисенчен чылай пысăк ÿпле тума тытăнчĕç.

— Кам пĕлет, тахçанччен усраççĕ-ха пире кунта,— терĕ Урусов.— Этем тенин пур çĕрте те этемле пурăнма пĕлес пулать. Фронтра, оборонăра вăрахчен тăмалла пулсан, эпир керменсем пек çĕрпÿртсем тăваттăмăр...

— Тĕрĕс калатăн, Матвей Иванч,— терĕ Тукмаков, ун çине куларах пăхса.— Кăшт тăхтасан, акă ăçтан та пулин пружинлă кравать сĕтĕрсе килĕпĕр, çемçе диван, радиоприемник та тупса лартăпăр... Çапла-и?

— Мĕн тума приемникпе чăрманас, вăл халь ĕнтĕ техникăри кая юлнă япала, луччă тÿрех телевизор туянас.— юлташĕ шÿтленине хирĕç йĕплесе илчĕ Урусов.

— Çак утрав çине килсе кĕрекен шпанасене тÿрех экран çинче курмалла пултăр-и?

— Тата. Питĕ ансат пулать. Эс тĕмĕ айĕнче пирус мăкăрлантарса выртатăн, çав вăхăтрах таврара мĕн пулса иртнине те пĕтĕмпех куратăн... Ырлăх вĕт!

— Эх, ха-хай! — ассăн сывласа илчĕ Тукмаков, кÿреннĕ пек пулса.— Эс калаçнисене итлесен, мана Салтыков-Щедринăн пĕр юмахĕ аса килсе каять.

— Икĕ генерал çинчен-и? Лайăх юмах вăл. Шăп сан пеккисем пирки çырнă ăна.

— Мĕн каламалли пур ĕнтĕ...

Вĕсем çапла кăмăллăн шÿтлесе калаçнă хушăрах, инçетре, Мари республики енче, аслати кĕмсĕртетни илтĕнчĕ.

— Ак хайхи, шăпах ÿпле кирлĕ пулать,— терĕ Урусов, хăйсен пуçĕ çинчи янкăр тÿпе çине пăхса.

Унтан çур сехет те иртмерĕ пуль — сулахай енчи çÿллĕ çыранри тем çÿллĕш яштака хырсем çийĕпе хулăн хура-кăвак пĕлĕтсем шуса тухрĕç, шултра çумăр пĕрчисем типсе çитнĕ хăйăр çине патлатса тусан кăларма тытăнчĕç, тепĕр ик-виçĕ минутран çумăр витререн сапнă пекех шарлаттарчĕ.

Урусовпа Тукмаков вара мĕн каç пуличченех хăйсен ÿплинче хутланса ларчĕç.

— Вăт ытарайми пурнăç çитрĕ хайхи пире валли,— йăшаланчĕ Тукмаков, йĕпенсе çитнĕ плащ-палаткипе меллĕрех пĕркенсе.—Чăн-чăн курорт... Кун пек çанталăкра хăйне çын тесе шутлакан пĕр вăрă та килтен тухмасть

ёнтӗ, эпир кӑна вӗсемшӗн усал кӑмпасем пек шӳсе ларатпӑр!

— Айван-ха эсӗ, сержант,— терӗ ӑна хирӗҫ Урусов,— ҫакӑ вӑл чӑн-чӑн вӑрӑсен ҫанталӑкӗ! Тӑхта акӑ, тен, эпир кӗтнӗ хӑнасем шӑпах кӗҫӗр килсе тухаҫҫӗ?

— Э, ан калаҫ-ха кирлӗ мара, килес пулсан, вӗсем тахҫанах килнӗ ёнтӗ! Курӑн акӑ, ним усси те пулмасть эпир кӗтнинчен.

— Усси пулать-и, пулмасть-и, пирӗн пурӗпӗр хамӑра хушнине тумалла. Ҫавӑнпа та янрама парах. Эпӗ пӗр-ик сехет тӗлӗрсе илем-ха, унтан сана ҫывратӑп...

Урусов плащ-палаткипе пуҫӗ ҫинченех хупланса выртрӗ, Тукмаков, пӗр хушӑ ҫумӑр чарӑннӑ пек пулнипе, ӳплерен тухса тӑчӗ. Ҫав тери кичем пулчӗ ӑна. Инҫетре Шупашкар ҫутисем курӑнаҫҫӗ, унта халь ҫынсем театрсенчен, киносенчен киле таврӑнаҫҫӗ пуль, нумайӑшӗ Атӑл хӗррине уҫӑлма тухнӑ, унӑн пур — ҫак тӗттӗм утрав ҫинче тыткӑна лекнӗ пек тӑрас пулать. Ыттишӗн пулсан татах нимех те марччӗ-ха, анчах хулара ӑна кашни каҫ Нина кӗтет. Тукмаков ёнер хулана кайсан та тӗл пулаймарӗ ӑна, вӑл ӗҫленӗ ҫӗре телефонпа шӑнкӑравласа темиҫе сӑмах ҫеҫ калама ӗлкӗрчӗ: «Командировкӑна яраҫҫӗ, пӗр эрнесӗр таврӑнаймастӑп пулӗ...»

Пит лайӑх командировка, каламалли те ҫук!

Тукмаков, тӗмӗсем хушшипе малалла иртсе, шыв хӗрринелле тухрӗ. Вӑркӑш ҫил вӗрнипе Атӑл пӑртак хумханать пулмалла, шыв хӑйӑр ҫумне пырса ҫапӑнса шӗпӗлтетни илтӗнет. Урӑх нимӗнле сасӑ та ҫук. Хутранситрен ҫеҫ куҫа курӑнман инҫетри пӑрахутсем кӗскен-кӗскен кӑшкӑрткаласа илеҫҫӗ...

Сасартӑк сулахай енче пӗр-пӗччен моторка лӑкӑртатни илтӗнсе кайрӗ.

«Мӗн шыраса ҫӳреҫҫӗ-ши ҫӗр хута? — шухӑшларӗ Тукмаков.— Браконьерсем вӑрттӑн пулӑ тытма тухнӑ пулинех... Вӗсем те вӑрӑсемех вӗт-ха, никам курман чухне халӑх пурлӑхне ҫаратаҫҫӗ! Рыбнадзорсем ыйха туртаҫҫӗ, кусем пӑчӗ-пӑчӗпе пулӑ туртса кӑлараҫҫӗ...»

Моторка сасси ҫывхарсах пычӗ. Малтан вӑл кушак мӑрлатнӑ пек ҫеҫ илтӗнчӗ, унтан хытӑрах та хытӑрах илтӗне пуҫларӗ.

«Кунталлах килеҫҫӗ пулас кусем? Хайхисем мар-и? — терӗ те Тукмаков хӑй ӑшӗнче тӑрук пӑлханса кайрӗ.— Ак хайхи, тинех бандитсемпе тытӑҫма тивет пулас! Ҫӗрле, никам ҫук утрав ҫинче... Миҫен-ши вӗсем? Тен, нумайӑн? Анчах вӗсем Урусовпа иккӗшӗ кӑна. Эппин,

питĕ ăста хăтланас пулать. Сасартăк, кĕтмен çĕртен тапăнса ăнран ямалла пуль...»

Вăл тата тепĕр икĕ минут пек итлесе тăчĕ те, моторка чăнах та утрав патнелле çывхарнине туйса, васкасах ӳпле патне таврăнчĕ.

— Матвей Иванч, пирĕн пата моторлă кимĕ килет! Урусов çывăрман та пулмалла, вăштах тăрса ларчĕ.

— Хăш енчен?

— Леш айккинчен... Мĕн тăватпăр?

— Эпир-и? — Урусов сиксе тăчĕ.— Калаçса татăлтăмăр-çке санпа: вĕсене хăйсем вăрланă япаласене пытарнă çĕре пыма паратпăр. Иксĕмĕр ик енче тăратпăр, пирĕн хушăра виç-тăват метр пулать. Вĕсем чавма тытăнаççĕ, çав вăхăтра иксĕмĕр те, хунарсене çутатса ярса, аллисене çĕклеттеретпĕр...

— Анчах вĕсен хĕçпăшал пулма тивĕç... Магазин патĕнчен тарнă чух пирĕннисенчен пĕрне амантнă вĕт-ха?

— Вăл ниме те пĕлтермест, тусăм. Пăшал таврашне кăларма памалла мар çеç.

Мотор сасси çывăхрах илтĕнчĕ ĕнтĕ. Урусовпа Тукмаков шыв хĕрринелле кайрĕç те юлашки йывăç тĕмисем хушшинче чарăнса тăчĕç. Куçĕсем ыратакан пуличченех тинкерсе пăхрĕç вĕсем тĕттĕмелле. Акă кимĕ хăйĕн сăмсипе хăйăр çине пырса тăрăнчĕ, мотор юлашкинчен темиçе хут пăк-пак, пăк-пак турĕ те чарăнса ларчĕ. Кимĕ çинчен пĕр мĕлке сиксе анчĕ, унтан тепри, тата тепри... Вĕсем виççĕн иккен... Çук, виççĕн мар, тăваттăн — пĕри кимĕ çинчех юлчĕ. Ку ĕнтĕ кимĕ хуçи пуль-ха. Вăл çырана тухмасть пулмалла, ыттисем таврăнса пырсан кимме хăвăрт кăна хускатса яма хатĕр ларать...

Мĕлкесем шыв хĕрринче пĕр çур минут пек çеç тытăнса тăчĕç те тĕмĕсем еннелле утрĕç. Иккĕшин аллисенче — вăрăм патаксем. Çук, патаксем мар, кĕреçесем — пытарнă япаласене хăйăр айĕнчен чавса кăларма кирлĕ вĕсем. Шăппăн, пĕр сассăр килеççĕ. Акă тепĕр темиçе самант иртет те...

Тукмаков кун пек операцире нихçан та пулман-ха, кĕçĕр пĕрремĕш хут пулма тивет, çавăнпа та самаях пăлханать. Анчах хăй вăл нимĕн чухлĕ те хăрамасть. Унăн сулахай аллинче — хунар, кнопкине пуç пӳрнипе кăшт шутарсанах, вăл куçа йăмăхтармалла çуталса каять, сылтămминче — «ТТ» пистолет, ăна предохранительтен вĕçертнĕ, шĕвĕр пӳрнепе пуссанах унăн кĕпçинчен вилĕм сирпĕнет...

Мĕлкесем утаççĕ, Урусовпа Тукмаков çинелле килеç-

çĕ. Вĕсен урисем айĕнче çумăрпа йĕпеннĕ хăйăр нăтăртатни те илтĕнет ĕнтĕ. Пĕр утăм, тепĕр утăм, унтан тата тепре. Урусов Тукмакова чавсипе хуллен тĕртсе илчĕ: «Вырăна кайса тăрар!» Кĕçех вĕсем хайхи япаласем пытарнă тĕле çитсе тĕмĕсем хыçне тăчĕç.

— Çак таврашра пулма кирлĕ...— терĕ арçын сасси.

— Çакăнтах, çакăнтах,— унпа килĕшрĕ хĕрарăм сасси.

Чарăнса тăчĕç. Арçынĕ спичка çутса хут тивертрĕ, унталла-кунталла çутатса пăхрĕ.

— Тĕрĕс, акă эп туратсем хуçса паллă туса хăварсаттăм... Чавăр!

Ун аллинчи хут çунса пĕтрĕ. Тимĕр кĕреçесем нӳрĕ хăйăр ăшне чашлатса кĕрсе кайрĕç. Вăрăсем чавма пуçларĕç...

Ялт! çуталса кайрĕ Урусов хунарĕ.

— Стой! Руки вверх! Перетпĕр!..

Çав самантрах Тукмаков та хăйĕн хунарне çутатса ячĕ.

Тĕттĕмре виçĕ çын хăйсене ик хунарпа пĕр харăс çутатнипе тăруках ним курми пулса тăчĕç, çавăнтах аллисене çӳлелле çĕклеме хушса хаяррăн команда панине илтрĕç, унтан, çутта хăнăхсан, хăйсем çинелле икĕ енчен икĕ пистолетпа тĕлленине курчĕç те, кĕреçисене пăрахса, пурте аллисене тăратрĕç...

Урусовпа Тукмаков вĕсене халь питĕ лайăх курчĕç. Пĕри арçын иккен, иккĕшĕ — хĕрарăм. Хăранипе вĕсен куçĕсем чарăлса кайнă, çăварĕсем те карăлнă — вĕсем тем калама хатĕрленнĕ тейĕн...

— Тăрăр! Ан хускалăр! — калех команда пачĕ те Урусов, сулахай аллипе тытнă хунарне сӳнтермесĕрех кăкăрĕ умне чиксе, пистолечĕпе малтанхи пекех тĕллесе, арçынĕ еннелле икĕ утăм турĕ.

— Аллусене ĕнсӳ çине хур! Ан хускал!

Бандит — ку ентĕ Артист пулнă — Урусов хушнă пек турĕ, лешĕ вара, унăн çурăмĕ хыçне пырса, пĕр аллине тӳрех сылтăм кĕсйине чиксе ячĕ те пистолет туртса кăларчĕ.

— Так, так... Питĕ аван, пи-итĕ лайăх,— терĕ вăл, вăрă пистолетне хăй кĕсйине чиксе.

Артист шăлĕсене шатăртаттарса илчĕ те хашш! сывласа ячĕ. Вăл халĕ нимĕн тума та пултараймарĕ. Тукмаков ăна кăкăрĕнчен тĕллесе тăчĕ, кăшт унталла-кунталла хускалсанах персе ӳкерме пултарчĕ.

— Аллусене хыçалалла тыт!

Каллех итлерĕ Артист. Урусов, кĕсйинчен çирĕп кантра кăларса, ун аллисене йăпăр-япăр çыхса хучĕ.

— Лар! Çĕре лар!

Тепĕр минутран Урусов Артистăн урисене те пĕр-пĕрин çумне хыттăн туртса çыхса хучĕ. Унтан, хĕрарăмсем патнелле пырса, вĕсем çине çав тери хаярrăн пăхса ыйтрĕ:

— Эсир мĕн тума килтĕр кунта?

— Ахалех... Кулять тума! — терĕ Малани.

— Мĕн, ун валли эсир урăх вырăн тупаймарăр-им?

— Кунта улах, ара... Швеши востăх тата...

Малани сассинче вăл уççăнах мăшкăлласа калаçни илтĕнчĕ.

— «Швеши востăх» тĕрмере пит аван пулать акă сире валли!

— Ан хăрăт, начальник, унта мĕнлине пĕлетпĕр эпир. Тĕрмере те çынсемех лараççĕ, сан пек мар чаплисем пур. Тен, санпа та тĕл пулăпăр-и-ха тур пулăшсан... Ы-ых, ыталăп вара эп сана унта!

— Лапăртат, лапăртат тавай май килнĕ чух! Çав анчах юлчĕ ĕнтĕ халь сирĕн! — терĕ Урусов. Унтан Тукмакова хушрĕ: — Лайăхрах сыхла, ăнсăртран тарма шутлĕç тата, вĕсемшĕн ахалех пуля сая яма тивĕ. Эп халех...

Вăл васкасах шыв хĕрринелле, кимĕ тăнă çĕрелле, утрĕ. Çавна курсанах, Малани сасартăк мĕн вăй çитнĕ таран çухăрса ячĕ:

— Ива-ан! Та-ар, тар часрах, тытаççĕ-ĕ!..

Тукмаков ун çăварне пĕррех ывçипе хупласа лартрĕ, Урусов часрах малалла чупрĕ, анчах та хăй хăрушлăха лекнине тавçăрса илнĕ кимĕçĕ, çав вăхăтра кимĕ сăмсине хăйăр çинчен шывалла тĕксе антарса, моторне хута ячĕ. Ак ĕнтĕ халех тарать вăл, хускалса каять те тĕттĕм Атăлта çухалать...

— Сто-ой! Перетĕп!..

Урусов çыраналла епле чупса пынă — çаплипех шывалла шăмпăртатса кĕрсе кайрĕ. Шыв пилĕк таран пулма пуçласан, вăл, хăрах аллипе кимĕ хĕрринчен ярса тытса, кимĕ хуçине пистолетпа тĕллесе кăшкăрчĕ:

— Çакăнтах персе пăрахатăп! Тух çырана!..

Кимĕçи мотора сÿнтерсе лартрĕ, Урусов кимме каялла туртма тытăнчĕ. Çав вăхăтра инçе те мар вăйлă катер ыткăнса килни илтĕнчĕ...

«Ку мĕне пĕлтерет-ши тата? — шикленерех шухăш-

ларĕ Урусов.— Татах кусен шайккисем килеççĕ-ши? Мĕн тăвас пулать вара?..»

Вăл хăйсенчен тарма пиКеннĕ кимме çыран патне туртса çитерне самантрах, шыва ик еннелле вăйлă фонтан пек сирпĕнтерсе, тĕттĕм çĕрте те шуррăн курăнакан катер вăркăнса çитрĕ. Ун çинчен тăваттăн сиксе анчĕç. Урусов тӳрех палласа илчĕ — вĕсем пурте милици çыннисем иккен.

— Ĕçсем мĕнле кунта сирĕн? — ыйтрĕ пĕри.

— Йĕркеллĕ,— терĕ Урусов.

## 29

Следователе пĕтĕмпех — хăй килтен мĕнле тарса килнинчен пуçласа магазин çаратма кĕрсе кайни таранах ним пытармасăр, тĕпĕ-йĕрĕпе каласа кăтартнă хыççăн Илюка темле çăмăлтарах пек туйăнса кайрĕ. Паянччен Илюк çав пĕтĕм лапра-çĕпрене хăй ăшĕнче илсе çӳренĕ, вăл унăн кăмăлне пăтратнă, чĕрине ыраттарнă, пĕр канăç та паман,— халь ĕнтĕ Илюк çав пĕтĕм ирсĕрлĕхе тула кăларса пăрахнă пек, унтан тасалнă пек пулчĕ. Амăшĕ те ăна милицисене тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пама хушрĕ, Илюкăн хăйĕн те çаплах тăвас килчĕ: ним те тунас мар, пĕтĕмпех пĕлччĕр милицисем, айăпланă таран айăплаччăр, суд туччăр, хупчăр, анчах ун çумĕнче нимĕнле суялăх та ан пултăр. Тинех ĕнтĕ вăл вăрă таврашĕсемпе нихçан та, ĕмĕрне те, пĕр самантлăха та çыхланас çук, çавăнпа та унăн тасалмалла, ăшчикре нимĕнле вараланчăк та, пĕр пĕрчĕ çӳп-çап та хăвармалла мар...

Çапла шухăшласа выртрĕ вăл хăйне допрос тунă хыççăн каллех камерăна илсе кайсан.

Ун куçĕ умне пĕрмай амăшĕн сăнарĕ курăнса тăчĕ. Мĕн тери улшăннă вăл, мăнтарăн, ватăлсах кайнă... Питĕ хĕрхенмелле-çке-ха ăна! Амăшĕпе пĕрле тата ун умне тăван килĕ, хăйсен урамĕ, çырмари çап-çут пĕве, колхоз сачĕ, хăй лартнă чие йывăççисем тухса тăчĕç. Ах, каясчĕ халь унта, ялйышсемпе, тантăш-юлташсемпе, кӳршĕ хĕрачи Наталипе, ыттисемпе пĕрле пуласчĕ...

Çук ĕнтĕ, халь тин ку ĕмĕтре кăна пулма пултарать. Хăйĕн ирĕкĕпе тек ниçта та каяймасть вăл, çывăх çыннисене те кураймасть. Ăна вăрăпа тытса хупнă, алăка тул енчен çăрапа питĕрнĕ, чӳрече çинче те тимĕр решетке. Вăл — вăрă!.. Вăрă!..

Илюкăн чунĕ сасартăк тӳсмелле мар кӳтсе килчĕ. Тĕрмере вĕт-ха вăл, тĕрмере, заключеннăй, арестант!

Ӑна, ав, алӑкӑн леш енче пӑшалпах сыхласа тӑраççӗ. Епле хӑрушӑ ку, мӗн тери хӑрушӑ!..

Вӑл чӗркуççисене ыталаса тытрӗ те, пуçне пӗксе, калама та çук хурланса, сассӑр макӑрса ячӗ...

Ирхине ӑна каллех следователь патне илсе кайрӗç.

— Ӗнер эсӗ нимӗн те манса хӑвармарӑн-и? Тен, тата мӗн те пулин аса илтӗн? — ыйтрӗ следователь. Паян вӑл Илюкпа питӗ кӑмӑллӑ, тахçантанпах палласа пурӑннӑ çывӑх çынпа калаçнӑ пекех калаçрӗ. Урӑхла пулма та пултараймасть ӗнтӗ, мӗншӗн тесен çак ача шӑпи мӗнрен çакӑн пек пулса кайнине вӑл халӗ питӗ лайӑх пӗлет.

— Çук, урӑх нимӗн те астумастӑп, ӗнер пӗтӗмпех каласа патӑм эпӗ,— терӗ Илюк.

— Ну, апла пулсан, эпир халь санпа хӑвӑр çаратса çӳренӗ вырӑнсене кайса курӑпӑр...

«Ку мӗне пӗлтерет-ши, мӗн тума кирлӗ-ши тата? — хӑй ӑшӗнче тӗлӗнчӗ Илюк.— Унта халь нимӗнле йӗр те, ним палли те юлман пуль?»

Часах следовательпе иккӗшӗ кил хушшине тухрӗç. Вӗсене çӑмӑл машина кӗтсе тӑрать иккен. Следователь Илюка машинӑн кайри алӑкӗнчен кӗртрӗ,— унта темле самӑртарах тепӗр çын вырнаçнӑ та ӗнтӗ,— хӑй шоферпа юнашар ларчӗ. Малтан вӗсем, пасар тӗлӗпе иртсе, сӑрталла хӑпарчӗç, унтан пӗр тӑкӑрлӑкалла пӑрӑнса кӗчӗç. Кӑшт кайсан, следователь машинӑран тухрӗ те Илюка та тухма хушрӗ.

— Ӳсӗр çынна çаратнӑ каçхине эсир çакӑнтан антӑр-и-ха? — кивӗрех карлӑклӑ пусма çине кӑтартса ыйтрӗ следователь.

Илюк унталла-кунталла пӑхкаласа илчӗ.

— Çакӑнтан пулмалла...

— Хӑш тӗлтерех çаратрӑр?

— Аялта...

— Атя-ха, вырӑннех çитсе пӑхар.

Вӗсем пусма тӑрӑх вӗçне çитиччenех анчӗç. Машинӑра Илюкпа пӗрле ларса килнӗ самӑр çын та вӗсемпе пӗрлех пычӗ.

— Ак çакӑнта выртатчӗ вӑл,— кӑтартрӗ Илюк.— Пуçӗ кунталлаччӗ пулас, урисем — çакӑнталла...

— Тӑр-ха, эппин, пӑх кунталла, ан хускал,— терӗ самӑрри.— Вӑл ик-виç утӑм каялла чакрӗ те, Илюк çине пӗчӗк фотоаппаратпа тӗллесе, икӗ хутчен ӳкерсе илчӗ.

Унтан вӗсем хула хӗрринчи урама кайрӗç. Кунта Илюка хӑйсем çаратма хӑтланнӑ магазин маччи çине

хăпармалли пусма патне тăратса ӳкерчĕç, ун хыççăн пĕтĕм хула урлă каçса, ансăр урамсем тăрăх пырса, артистка хваттерĕ патне çитсе тухрĕç, унта Илюка каллех ик-виçĕ çĕре тăратса ӳкерсе илчĕç.

«Ĕмĕрлĕхех юлаççĕ ĕнтĕ ку ӳкерчĕксем,— салхуллăн шухăшларĕ Илюк.— Эп вăрăсемпе пĕрле ăçта-ăçта пулнине хуть те хăçан та кăларса кăтартма пултараççĕ халь...»

Хула тăрăх çӳресе таврăнсан, ăна пĕр пĕчĕкрех пӳлĕме илсе кĕртсе, хăйне уйрăммăн ӳкерчĕç — пĕрре малтан, тепре айăккăн тăратса, унтан пӳрнисен вĕçне хура сăрпа вараларĕç те шурă хут çине пустарчĕç. Кун пекки çинчен Илюк такамран илтнĕччĕ — кашни преступникĕннех пӳрне йĕрĕсене ӳкерсе юлаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем кашни çыннăн расна, хăйсене майлă пулаççĕ тет...

«Эпĕ те преступник çав ĕнтĕ...— хурлăхлăн шухăшласа ассăн сывласа илчĕ Илюк.— Чăн-чăн преступник... Сучĕ часрах пултăрччĕ хуть!..»

Çакăн хыççăн Илюка виçĕ кун хушши пĕрре те чĕнмерĕç, вăл пурри çинчен мансах кайрĕç тейĕн. Камерăна çĕнĕ çынсене илсе пыра-пыра хупрĕç, допроссене чĕнчĕç, унтан кăларса кайрĕç. Илюк çав-çавах ларчĕ.

Мĕн çинчен кăна шухăшламарĕ-ши вăл, мĕн кăна аса илмерĕ пуль! Унăн чунĕ пĕрмай ирĕкре, килте, амăшĕпе, шкулти тантăш-юлташĕсемпе пĕрле пулчĕ. Ах, лайăх пулнăччĕ-çке вĕсен пурнăçĕ çав кукша Матви пырса кĕриччен, ытармалла мар лайăх!.. Тепĕр хут курма пулĕ-ши вăл пурнăçа хăçан та пулин? Курасчĕ-çке, каллех телейлĕ пулса пурăнасчĕ!..

Тĕлĕкре те вăл килти пурнăçпа аташрĕ. Пĕррехинче кӳршĕ хĕрачи Натали, тĕлĕнмелле ырă та çепĕç кăмăллă Натали, курăнчĕ, Илюка вăл пуç пӳрне пек шултра та сĕткенлĕ çĕр çырлипе хăналарĕ.

— Эп сана хула пасарне колхоз çырлине сутма пырсан куртăм, хăвăрăн килти пурнăç çинчен каласа парас тесеттĕм, анчах эсĕ темшĕн пăрăнса тартăн. Ухмах пултăн эсĕ ун чухне, çавăнпах пĕтрĕн. Шкултан та вĕренсе тухаймарăн, çийĕнчен тата тĕрмене лекрĕн. Анчах эп сана нимĕн чухлĕ те тиркеместĕп, Илюк, эсĕ пурпĕрех лайăх ача, эс айăплă маррине пĕлетĕп эпĕ...

Хĕрача сăмахĕсем ăна хурлантарса ячĕç, вăл ĕсĕклесех макăрма тытăнчĕ те — вăранчĕ. Нимĕнле Натали те çук, пулман та вăл. Камера маччи çумĕнче, пралук решетке ăшĕнче, тусанланса пĕтнĕ пĕчĕкçеç лампочка çунать. Шăп. Çав тери хăраса каймалла шăп. Пĕр сте-

наран тепĕр стена таранах тăсăлакан нарăн леш вĕçĕнче каçхине илсе килсе хупнă икĕ çын йывăррăн сывласа çывăраççĕ. Ахаль те пăчă камерăна ăша лĕклентерекен ирсĕр эрех шăрши тулнă — кĕçĕр тытса килнисем ӳсĕр пулнă пулмалла. Хурланса вăраннă ачан чĕри тата хытăрах ыратса пăчăртанса илчĕ...

Тăваттăмĕш кунĕнче вара ăна каллех следователь патне илсе кайрĕç. Ун пӳлĕмне пырса кĕрсенех, Илюк кăшт çеç ăнран тухса каймарĕ, юпа пек хытса тăчĕ: стена çумĕнчи пукан çинче Малани ларать... Унăн тумтирĕ йăлт лутăрканса пĕтнĕ, чикан майрисен тутри пек мăн чечеклĕ те вăрăм çӳçеллĕ симĕс тутри ĕнси çинелле усăнса аннă, çӳçĕ-пуçĕ мелке пек арпашса пĕтнĕ, куçĕсем путса ларнă, аллинчи пирусне мунштукĕ-мĕнĕпех çăтса ярасла ĕмет. Хăй умне чĕр шуйттан кăларса тăратнă пекех туйăнса кайрĕ Илюка!

Следователь ăна малалла иртсе пукан çине ларма хушрĕ, унтан пуçĕпе Малани еннелле сулса кăтартрĕ:

— Çак хĕрарăма паллатăн-и эсĕ?

— Паллатăп,— терĕ Илюк, ним тытăнса тăмасăрах.

— Кам вăл?

— Малани...

— Аçтан, епле майпа паллатăн эсĕ ăна?

— Эп ун патĕнче икĕ уйăх пурăннă...

Унтан, следователь хушнипе, Илюк Маланипе мĕнле паллашни, вăл ăна хăй килне илсе кайни, чирлесен ун патне больницăна çӳрени, амăшĕ пирки суйса пани, кайран вăрăсемпе çыхăнтарни çинчен тепĕр хут тĕпĕ-йĕрĕпе каласа кăтартрĕ. Малани нимĕн те чĕнмерĕ, Илюка халь тесен халь тытса çурас пек пăхса ларчĕ çеç.

— Ну, Федорова, тĕрĕс калать-и çак ача? — ыйтрĕ следователь, Илюк каласа пĕтерсен.

— Пĕтĕмпех суя,— куçĕсене çутăлтарса илчĕ Малани.— Такампа пăтраштарать вăл мана. Тĕлĕкре тĕлленнине каласа парать. Е юри суять хăй айăпĕсене çын çине ярса çăлăнасшăн. Путсĕр, кĕрт йыттинчен çуралнăскер! Эпĕ ĕмĕрне те нимле ача та усраман. Ĕненместĕрех пулсан, пирĕн участокри милицирен, Курн Яккăлчран, ыйтăр, вăл пире тĕрĕслесех тăрать, кашни килте кам пурăннине пĕлет!

— Эппин, эсĕ ку ачана палламастăн?

— Палламастăп! Курман, илтмен! Кашни çапкаланчăк шăпанана илсе пырса усрама эпĕ çав териех ухмах мар-ха, тата ун пек килсĕр йытăсене тăрантарса пурăнма

манăн панккăра çĕр пин выртмасть! — мăрлатса, тутисене пăчăртаса лартрĕ Малани.

— Анчах тĕрĕссине каласан мĕнле?

— Эп яланах тĕрĕссине калатăп. Сире суйма эпĕ шульăк мар, суйнăшăн мана укçа тухмасть. Тата эпĕ турра ĕненекен çын, çавна шута илĕр эсир. Çылăха кĕресрен шутсăр хăратăп...

Кун пек калани следователе култарсах ячĕ.

— Туррине вара эсĕ хытах ĕненетĕн-и?

— Çӳлти атте-турра епле ĕненместĕн-ха? Пирĕн пĕтĕм пурнăç та унран килет те...— Малани пăт-пат сăхсăхса илчĕ.— Кашни вырсарникунах чиркĕве çӳретĕп, ĕненместĕр пулсан — пачăшкăсенчен кайса ыйтăр...

— Анчах турра ĕненни сана вăрланă япаласене сутса пуранма пĕртте чăрмантармасть пулас? Ай вăл çылăх шутне кĕмест-и?

— Столовăйран паракан вĕри кукăльсемсĕр пуçне, эпĕ урăх нихçан та нимĕн те сутса курман!

— Ав епле!.. Ну, мĕнех вара, халлĕхе калаçса çитертĕмĕр тейĕпĕр эппин. Çапах та эсĕ çак ача хăвăн патăнта пуранннине аса илме тăрăш-ха. Аса илсен, тен, хăвăншăнах усăллă пулĕ, Федорова! — Следователь, сĕтел хушшинчен тăрса, алăк леш енче кĕтсе тăракан милиционера чĕнчĕ те Малание илсе кайма хушрĕ. Çавăнтах тата:

— Баринова илсе килĕр! — терĕ.

Илюк кун пек хушамат нихçан та илтменччĕ. «Баринов... Улпутов, эппин... Ку кам-ши тата? Хăйсем патĕнче ĕçлекенскер-ши?» — шухăшларĕ вăл. Ик-виç минутран вара Малание çакăнта курнă чухнехинчен те ытларах тĕлĕнмелле пулчĕ унăн: следователь пӳлĕмне... Артиста илсе кĕртрĕç. Лекнĕ эппин вăл та! Илюка магазинра пăрахса хăварса тарнă пулсан та лекнĕ — хăтăлайман! Матросĕ мĕнле-ши тата? Ăна та тытнă-ши? Ах, тытнă пултăрах!

— Лар, Баринов! — терĕ следователь, Артиста нумай пулмасть Малани ларнă пукан çине кăтартса.

Авă кам иккен Баринов текенни!..

Артист яланхи пекех çăмăллăн, пуçне каçăртарарах утса пырса, пукан çине ларчĕ те, çавăнтах пĕр урине тепĕр ури çине хурса вылятма тытăнчĕ. Илюк çине вăл çаврăнса та пăхмарĕ — пӳлĕмре вăл пулман пекех.

— Кунта цирк мар, йĕркеллĕ лар! — асăрхаттарчĕ ăна следователь.

— Пардон, гражданин начальник! — пит-куçне ку-

лăшла чалăштарса илсе урисене юнашар лартрĕ Артист, анчах тепĕр самантранах, хăйĕн шăлĕ ыратнă пек, аллипе питçăмартине тытса, пуçне чалăштарчĕ.

— Комеди выляма пăрах, Баринов! — шатăрах пăхса илчĕ ун çине следователь. Тин вара Артист тӳррĕн, аллисене чĕркуççисем çине хурса ларчĕ.

— Кала-ха тĕрĕссипе, Ивуков, çак çынна паллатăн-и эсĕ? — Илюк еннелле çаврăнса ыйтрĕ следователь.

— Паллатăп...

— Вăл мĕн ятлине пĕлетĕн-и?

— Ăна ...Артист теççĕ.

— Мĕнле, ăçта паллашнă эс унпа? Каласа пар.

Паçăрхи пекех, Илюкăн тĕпĕ-йĕрĕпе каласа памалла пулчĕ. Милицире йĕрки çавăн пек иккен: кама та пулин паллаттараççĕ пулсан, ун çинчен мĕн пĕлнине пĕтĕмпех каласа памалла, кайран ху каланисене çирĕплетсе алă пусмалла. Тата каласа панă чух свидетельсем те пулаççĕ — кайран-малтан тунас тесен те тунаймастăн вара.

Артист çинчен Илюк нумай іаларĕ. Вĕсем Матроспа иккĕш те ăна хăйсемпе пĕрле мĕнле илсе çӳрени çинчен те, вăрлама вĕрентни çинчен те, юрă праçникĕнчен таврăннă хыççăн хĕнесе тăкни, унтан хваттер çаратма илсе кайни, утрав çинче пулни, ăна магазина мĕнле вăйпах кĕртсе яни çинчен те...

Анчах следователь Артистран хăйĕнчен ыйтсан, вăл Малани пекех шат та пат тунчĕ: Илюка палламасть иккен вăл, унпа пĕрле пулма мар — ăна нихçан та курман, халĕ çакăнта пуçласа курать.

— Кулăшла пулса тухать, гражданин начальник! — хулпуççисене хутлатса, тутисене мăкăртса илчĕ Артист.— Нивушлĕ вара эсир чăнах та эпĕ çакăн пек манкине шăлайман чĕчĕ ачипе çыхланма пултарнă тесе шутлатăр? Кӳрентеретĕр кăна эсир мана капла! Эсир пĕлетĕр вĕт-ха, эпĕ пысăк специалист, таса ĕççемпе çеç çыхланатăп, çавăнпа та пули-пулми шăкăр-макăрсем çыхлансан, манăн хамăн туссем умĕнче авторитет пĕтет, хамах намăс пулать. Пирĕн те чыс пур.

— Чыс! — Следователь Артист çине çав тери сиввĕн пăхрĕ. — Сирĕн ку сăмаха асăнма та тивĕç çук, Баринов! Хăвăрăн чыса эсир тахçанах çухатнă, обществăна хирĕç ирсĕр ĕççем тунипе пуçĕпех пĕтерсе хунă ăна, эрех ăшĕнче путарнă!

— Мораль вулама кирлĕ мар, гражданин начальник... Эпĕ турра ĕненекен çын мар, пупсене тӳсме пултараймастăп, çавăнпа та проповедьсем итлеме хăнăхман.

Хама вĕрентме тытăнсан, манăн вар ыратакан пулать. Çапла!

— Юрĕ, ытлашши нумай ан калаçăр! Эппин, эсир ку ачана пĕлместĕр, палламастăр?

— Никак нет. Видом не видал, слыхăм не слыхал теççĕ вырăссем.

— Артистка хваттерне çаратнă чух та, магазинра та унпа пĕрле пулман?

— Тĕп-тĕрĕс калатăр. Тĕкĕр çине пăхса тăнă пекех. Пулман.

— Ахалех чăхăмлатăн, Баринов. Ним усси те пулмасть. Эпир пĕтĕмпех пĕлетпĕр.

— Ну, ку вăл — сирĕн ĕç. Тăрăшсан, эпĕ те темтепĕр шухăшласа кăларма пултаратăп.

— Эпир нимĕн те шухăшласа кăлармастпăр, пирĕн алăра — фактсем, вĕсене хирĕç пыма май çук сирĕн.

— Епле калас вĕт!

Артиста каялла илсе тухса кайсан, следователь пирус чĕртсе ячĕ те, Илюк çине пăхса:

— Куртăн-и халь, мĕнлерех çынсем вĕсем? — тесе ыйтрĕ.— Нимĕнле намăс та, чыс та, этем туйăмĕ те çук... Хăйсем этем сăн-сăпатне çухатни çитмест, ыттисене те хăйсем хыççăн тĕпсĕр шăтăка туртаççĕ. Вĕсемшĕн пулсан, çынна пĕтерсе хурасси — шăл витĕр пĕрре сурса илнĕ пекех. Çавă хăрушă! Ăнланатăн-и çавна, ачам!

— Ăнланатăп...— пуçĕпе сулса пăшăлтатса илчĕ Илюк.

Тепĕр кунне ăна каллех çав пӳлĕме илсе хăпартрĕç те Малани патне вăрланă сехетсем сутма çӳренĕ хайхи «капăр каччăсемпе» тĕл пултарчĕç. Вĕсемпе пĕрле следователь патне Малание хăйне те илсе пынă-мĕн, анчах ăна каччăсенчен уйрăм, аяккарах лартнă.

Следователь Илюкран малтанхи кунсенчи пекех ыйтса пĕлме тытăнчĕ.

— Çак йĕкĕтсене паллатăн-и?

— Ытла хытах палламастăп, анчах курнă...

— Ăçта курнă?

— Малтан вĕсем Малани патĕнче темиçе хут та пулнăччĕ, унтан вĕсене пристань çинчен милицисем тытса кайнине куртăм.

Каллех йĕркипе каласа памалла пулчĕ Илюкăн...

Вăл каланă вăхăтра сасартăк сĕтел çинчи телефон янраса кайрĕ. Следователь трубкăна хăвăрт илсе итлерĕ те: «Халех!» — терĕ, унтан хăйĕнчен сылтăмарахра ларакан ахаль тум тăхăннă çынна пуçĕпе сулчĕ те алăк

патнелле утрĕ. Пӳлĕмре юлнисем пĕр хушă шăпах ларчĕç, унтан тăрук Малани Илюка чышкипе юнаса чашкăрма тытăнчĕ:

— Пурне те сутрăн пулать, сучка çури? Хăвна çăлма хăтланса, пурне те путарас терĕн-и? Ы-ых сана! Куна пĕлнĕ пулсан, тахçанах Атăла кутăн чăмтармаллаччĕ кăна! Анчах асту, пире пĕтерсе, ху çăлăнса юлатăп тесе ан шутла, эпир сана пурпĕрех тытатпăр! Вунă çултан та пулин тупатпăр!

Малани питĕ хаяррăн, Илюк çине çав тери кураймасăр пăхса, усал куçĕсене йăлт-ялт çутăлтарса, хулăн туталлă çăварĕнчен сурчăк сирпĕтсех вăрçрĕ, анчах Илюк халĕ унран ним чухлĕ те хăрамарĕ. Следователь каялла пырса кĕрсен, Малани тӳрех шăпланчĕ, çапах та Илюка çав-çавах куçĕсемпе çирĕ. Хăйсене пӳлĕмрен илсе тухса каяс умĕн вара, юриех Илюк патĕнчерехрен иртсе, тепĕр хут юнарĕ:

— Вилетĕн эсĕ, пурпĕрех вилетĕн!

— Маншăн ан хăра, хăвна пĕл эсĕ,— терĕ ăна хирĕç Илюк, тата ытларах хăюланса.

## 30

Кун хыççăн кун иртрĕ, Илюка тек ниçта та чĕнмерĕç. Тĕрĕссипе, урăх ăна допрос тумалла та пулман ĕнтĕ, мĕншĕн тесен вăл пĕтĕмпех каласа панă — хăй çинчен те, ыттисем пирки те. Илюк пĕртте суйманнине, нимĕн те пытарса хăварманнине следователь те лайăх пĕлсе тăнă.

Кунĕсем вĕçĕмсĕр вăрăм пулчĕç, иртен пуçласа каçчен эрне иртет тейĕн. Кунне пĕрре çур сехетлĕхе уçăлма кăлараççĕ — тулта çанталăкĕ тĕлĕнмелле ырă, тӳперен хĕвел пĕçертет, çӳллĕ хӳме урлă юнашар садри улмуççисем тăрринче панулмисем хĕрелсе пиçме тытăнни курăнать, унта чĕвĕл-чĕвĕл кайăксем юрлаççĕ, анчах камерăна таврăнсан, каллех кичем те çав тери салху.

«Сучĕ хăçан пулать-ши хуть? Суд пулнă хыççăн, тен, çакăн пекех хупса усрамĕç, ăçта та пулин ĕçлеме ярĕç...» — шухăшларĕ Илюк аптранă енне.

Анчах та сучĕ ытла хăвăртах пулмарĕ çав. Артист-Баринов питĕ хăрушă преступник пулнă, вăл хăйĕн тусĕпе — Матрос-Чашкинпа пĕрле таçта та çитнĕ, тем те хăтланнă, çавăнпа та ун пирки питĕ нумай тĕрĕслеме тивнĕ. Чăн малтанхи пысăк преступление вăл пĕр вунă çул каяллах куçса çӳрекен театрта ĕçленĕ чух тунă.

(Пӗр хушӑ театрта ӗҫленӗ пирки «Артист» тенӗ ӑна вӑрӑсем хушшинче.) Администратор пулнӑ май билетсем сутса пухӑннӑ укҫа пӗтӗмпех ун аллине кӗнӗ, ҫав укҫана унӑн тӑтӑшах банка куҫарса тӑмалла пулнӑ, анчах та ку, усал шухӑш тытнӑскер, пӗррехинче уйӑх ытла пӗр пус та яман, пӗтӗмпех хӑй ҫумӗнче тытнӑ, унтан вара, вунпилӗк пин тенке яхӑн пухӑнсан, питӗ шутсӑр ирсӗр ӗҫ туса хунӑ. Театрпа пӗр яла пырсан, вӑл хваттере ял Совет секретарӗ патне кӗнӗ. Лешӗн, нумаях та пулмасть ҫартан таврӑннӑ йӗкӗтӗн, мотоцикл пулнӑ.

— Артистсем спектакле хатӗрленсе ҫитиччен санӑн «ӑйӑрупа» кӑштах уялла тухса уҫӑлса кӗме юрамӗ-ши? — ыйтнӑ кил хуҫинчен ҫав Баринов.

— Ҫӳреме пӗлетӗн пулсан, тархасшӑн, кайса кил ара,— килӗшнӗ лешӗ.

— Ӑна пӗлетӗп-ха, кун пек япала килте ман хамӑн та пур! — ӗнентернӗ Баринов.

Мотоциклра бензин пӗтнӗпе пӗрех-мӗн, ҫавӑнпа та уҫӑ кӑмӑллӑ, ҫынсене яланах шанакан секретарь ӑна йӑпӑр-япӑрах бак тулли ярса панӑ.

— Нумай ҫӳреместӗп, пӗр вунпилӗк-ҫирӗм минутранах таврӑнса килетӗп,— ал сулса хӑварнӑ Баринов, мотоцикла урама тӗксе тухса ун ҫине утланса ларсан.

Анчах вунпилӗк минут мар — пӗр сехет те иртнӗ, иккӗ те, виҫҫӗ те, тӗттӗм те пулнӑ, спектакль пуҫланнӑ — администратор ҫав-ҫавах таврӑнман. Ирхине те пыман. Артистсем те, мотоцикл хуҫи те хыпӑнса ӳкнӗ: мӗн пулчӗ-ха капла? Ӑҫта кайса кӗчӗ ку ҫын?..— Ахӑртнех, ӑнсӑртран ӑҫта та пулин ҫапӑнса вилсе выртрӗ-ши? Каҫхине пӗр-пӗр кӗпер айне пырса сикрӗ-ши?..

Администратор сасартӑк ҫухални ҫинчен районти милицие пӗлтернӗ, лешсем пур ял Совечӗсене те шӑнкӑравланӑ — ҫулсем ҫинче ӑҫта те пулин ванса кайнӑ мотоцикл ҫук-и? Аманнӑ е вилнӗ ҫын выртмасть-и?

Ҫук, ун пекки ниҫта та пулман.

Кӑнтӑрла иртсен администраторсӑрах хӑйсен базине, кӳршӗри район центрне, таврӑннӑ. Баринов пирки ку районти милицие те кайса пӗлтернӗ, Шупашкара та шӑнкӑравланӑ. Ӑна пур ҫӗрте те шырама тытӑннӑ. Анчах та ҫав вӑхӑтра Баринов Мускав — Свердловск пуйӑспа Ҫӗпӗрелле вӗҫтерсе пынӑ...

Ял Совет секретарӗн мотоциклӗпе шоссе ҫине вӑркӑнса тухсанах, вӑл Етӗрне еннелле кӗрлеттернӗ, каялла ҫаврӑнса та пӑхман. Машини ҫӗнӗ, шанчӑкласкер пулнӑ, унпа сехетре ҫӗр километр таранах кайма май кил-

нĕ. Тепĕр сехет çурăранах Хĕрлĕ Чутая çитнĕ, анчах тăрук вăйлă çумăр çума тытăннипе çак тăрăхри пĕр ялта чарăнса хваттере кĕрсе выртма тивнĕ. Хваттер хуçин ывăлĕ шăпах тракторист пулнă-мĕн, вăл ĕнтĕ тахçанах мотоцикл туянасси çинчен ĕмĕтленсе пурăннă. Çав тери ăмсанса пăхнă вăл Баринов ларса килнĕ вĕрçĕнĕ те хитре машина çине.

— Ил, сутатăп! — тенĕ ăна Баринов.— Мана хама мотоцикл йăлăхтарчĕ ĕнтĕ, эпĕ «Москвич» туянатăп...

— Укçа çитеймест çав,— пуçне пăркаласа илнĕ лешĕ.

— А эпĕ пăртакках кĕтме те пултаратăп! Халлĕхе эс мана çуррине тупса пар, юлашки укçи пирки килĕшӳ çырса, ял Советĕнче çирĕплететпĕр. Кайран почтăпа ярса паратăн. Ярса памасан, паллах, суд урлă татăлмалла пулать, пошлинине те хăвах тӳлетĕн...— кулам пекки тунă Баринов.— Килĕшетĕн-и çапла? Мана халь шăпах укçа кирлĕ...

— Паспорчĕ пур-и?

— Пулмасăр, анчах та вăл çумра мар-ха, чиксе тухман эп ăна. Эпир çапла тăвăпăр: эпĕ командировкăран таврăнсанах сана машина паспортне ярса паратăп, эсĕ вара юлашки укçине куçаратăн. Çапла калаçса татăлăпăр-и?

— Юрать!

Çакăн пек тунă та вара вĕсем. Иккĕшĕ ларнă та хут çырнă, çав каçах пичет пустарнă, çур укçине — икĕ пин çурă — пĕри панă, тепри илнĕ, унтан лайăх кăна мăкарич тунă. Ирхине вара тракторист хăйне çав тери ăста улталанă Баринова мотоциклпах Çĕмĕрлене çити ăсатса янă.

— Чипер çӳре, асту, сăмсуна катса ан пăрах! — тракториста ал сулса кăшкăрнă та Баринов пуйăс хускалсан ахăлтатсах кулса янă. Вăл мĕншĕн çавăн пек кулнине лешĕ темиçе кунтан пит лайăх тавçăрса илнĕ: ун патне районти милицирен иккĕн пынă та мотоцикла илсе тухса кайнă.

— Ку япалан чăн-чăн хуçи пур. Вăрланăскер вăл...

Çур çултан Баринова Çĕпĕрти пĕр пĕчĕк хулара шыраса тупса тытнă та Шупашкара илсе килсе суд тунă, çичĕ çул панă, анчах вăл пĕр виçĕ çултанах ирĕкре пулнă. Тĕрмерен вăл «Артист» ятпа тухнă.

Çавăн хыççăн Артист пĕрре те тĕрĕс пурнăçпа пурăнса курман. Кăштах юрлама-ташлама, пăртакках купăс калама пĕлнипе вăл малтанах Атăл леш енчи пĕр канмалли çуртра «культурник» пулнă та клубри вĕр-çĕнĕ

баянпа стена ҫинчи мӑн сехете юри вӑрлаттарса янӑ (укҫи ҫурмалла), унтан, складри утиялсемпе простыньсене ӑсатма тӑрсан ӗҫ тухман та, каллех виҫӗ ҫуллӑха лекнӗ. Хальхинче вӑл тӗрмерен Матроспа туслашса тухнӑ. Кӑшт пурӑнсан татах лекнӗ вӑл, анчах, ун телейне, амнисти пулнӑ. Нихҫан та ҫынсем пек тар тухиччен ӗҫлесе курманскер, вӑл ҫакӑн хыҫҫӑн та ӗҫ ҫинчен шухӑшламан, каллех преступлени хыҫҫӑн преступлени тунӑ. Халӗ вара ҫав преступленисем йӗп хыҫҫӑн туртӑнса тухакан ҫип пек тӑсӑлса, пӗрин хыҫҫӑн тепри палӑрса пынӑ. Ҫавӑнпа следстви те вӑрӑма кайнӑ, ҫавӑнпа суд та час пулайман...

* * *

Следователь патӗнче юлашки хут пулнӑ хыҫҫӑн шӑп пӗр эрнерен, ирхине, Илюка камерӑран чӗнсе кӑларчӗҫ те, хальхинче ҫӳлти хута мар, аялти коридор вӗҫӗнчи пӳлӗме илсе кайрӗҫ. Алӑк уҫӑлсанах, Илюк хӑйӗн амӑшне курчӗ. Анчах вӑл пӗччен мар иккен, унпа пӗрле Илюксен класс руководителӗ пулнӑ ватӑрах учительница Нина Васильевна, ҫӳллӗ те типшӗм хӗрарӑм, килнӗ.

Ӑна палласа илсен, Илюк ҫухалсах кайрӗ. Алӑкран кӗрсенех пат! чарӑнса тӑчӗ те ни малалла, ни каялла кайма пӗлмерӗ, каласса та ним те калаймарӗ.

«Мӗн тума... ма килнӗ-ха вӑл? Ах, мӗн тери, тӳсме ҫук намӑс!..» — шухӑш ҫиҫсе илчӗ ун пуҫӗнче.

Нина Васильевна, Илюк шкулта пуринчен те ытларах хисепленӗ учительница, унӑн предмечӗпе — литературӑпа — Илюк яланах лайӑх вӗреннӗ, вӑл хушнисене пур чухне те тӑрӑшса туса пынӑ; Нина Васильевна хӑй те юратнӑ ӑна, уроксене лайӑх хатӗрленнӗшӗн, нумай вуланӑшӑн ырласа, ытти ачасене унран пример илме хушнӑ, анчах халӗ акӑ... халӗ вӑл ӑна ҫакӑнта, милицире, курать!.. Мӗн тума килмелле пулнӑ-ха унӑн кунта? Илюка ӑс пама-и, ятлама-и? Е ӑна хӑй ҫав тери хӗрхеннине калама килнӗ? Халь тин ку ним тума та кирлӗ мар ӗнтӗ, унтан пурӗпӗр усси ҫук. Мӗн пулса иртнине Илюк хӑй те лайӑх ӑнланать... Анчах та, тен, Нина Васильевна хӑй тӗллӗн килме те шутламан, ӑна Илюк амӑшӗ хӑйпе пӗрле юри илсе килнӗ?

— Здравствуй, Илюша...— аллине ун еннелле тӑсрӗ учительница,— килсем ӗнтӗ пирӗн паталла! — Вӑл ҫемҫен кӑна кулса илчӗ, анчах ҫав вӑхӑтрах унӑн пысӑк хура куҫӗсем хӑй питӗ хурланнине палӑртрӗҫ.

— Мӗнле пурӑнкалатӑн-ха, ачам? — ыйтрӗ амӑшӗ

хуллен. Унӑн куҫӗсенчен тӳрех куҫҫуль шӑпӑртатса анчӗ.

— Пурӑнатӑп... чиперех,— терӗ Илюк тӑрук ҫӗтсе ларнӑ саспа.

— Сучӗ... сучӗ хӑҫан пуласси паллӑ мар-и-ха? Каламаҫҫӗ-и?

— Каламаҫҫӗ.

— Лар-ха, лар ак ҫакӑнта, пирӗн хушша,— ачана аллинчен тытса хуллен хӑй патнелле туртрӗ Нина Васильевна.— Сывлӑху мӗнлерех хуть, чирлеместӗн-и? Начарланнӑ эсӗ.

— Аптрамастӑп-ха... Сывах.

— Эп сан валли ҫимеллисем илсе килтӗм, ҫи-ха, халех ҫи,— урайне лартнӑ кушиле салтса уҫма тӑчӗ амӑшӗ. Нина Васильевна та сарӑ сӑран сумкине ярса тытрӗ.

— Манӑн та кӑштах пур-ха сан валли... Аннӳ ӗнер хӑй кунта килесси ҫинчен пырса каларӗ те, сан ятпах вӗтӗ кукӑльсем пӗҫертӗм.

— Выҫӑ мар эпӗ, ҫиес килмест манӑн,— пуҫне пӑркаларӗ Илюк.

Калаҫу тӑруках ӑнмарӗ. Хӗрарӑмсем иккӗшӗ те Илюк ҫинчен куҫ илмерӗҫ, анчах темшӗн калаҫма сӑмах тупӑнмарӗ. Илюк хӑйне вӑйпах тыттарнӑ кукӑле ерипен чӑмласа ҫӗрелле пӑхса ларчӗ...

— Илюша,— терӗ унтан Нина Васильевна, аллине ача хулпуҫҫийӗ ҫине хурса,— эпӗ ятарласа санпа калаҫма килтӗм... Сан пирки эпӗ адвокатпа канашласа пӑхас тетӗп.

— Мӗн тума? — тӗлӗннӗ пек пулчӗ Илюк.

— Суд тунӑ чух сана хӳтӗлеме, ара...

— Мана мӗн хӳтӗлемелли пур? Мӗн каламаллине эпӗ хамах каласа паратӑп, ним те тунмастӑп...

— Ҫук, ачам, вӑл ҫителӗксӗр. Ху эсӗ, пӑлханни-мӗнӗпе, ҫухалса кайма та пултаратӑн. Тата йӗрки те ҫавӑн пек, тет: сан пек ҫамрӑк ачасене суд тунӑ чухне вӗсене епле пулсан та адвокат тухса хӳтӗлемелле. Ҫавӑнпа та эсӗ хирӗҫ ан пул, вӑл сан патна ыйтса пӗлме килсен пӗтӗмпех, ним манса хӑвармасӑр, пытармасӑр йӗркипе каласа пар. Ку вӑл саншӑн хӑвӑншӑнах усӑллӑ пулӗ. Эсӗ ӑслӑ ача, хӑвах ӑнланма тивӗҫ...

Илюк учительница ҫине пӑхрӗ те унӑн куҫӗсем шывланнине курчӗ. Ҫакӑ вара ӑна калама та ҫук пӑлхатса ячӗ. Пӗр енчен, хӑй ҫакӑнта лекнӗшӗн учительница умӗнче намӑс пулчӗ ӑна, тепӗр енчен, вӑл уншӑн тӑрӑшни чӗренех пырса тиврӗ. Текех Илюк ун ҫине куҫӗсене ҫӗклесе те пӑхаймарӗ вара.

— Ну, килĕшетĕн-и манпа? Адвокатпа чиперех калаçатăн пуль? — ыйтрĕ Нина Васильевна.— Юрать-и?

— Юрать...— пăшăлтатса илчĕ Илюк.

Коридорта тăракан дежурнăй вĕсен тĕл пулса калаçмалли вăхăчĕ иртсе кайни çинчен пĕлтерчĕ. Уйрăлнă чух Илюк амăшĕ ĕсĕклесех макăрма тытăнчĕ, анчах Нина Васильевна кăмăлне хытарчĕ пулас, хăй пăлханнине те палăртмарĕ.

— Çирĕпрех пул, Илюша, ытлашши кулянса вăйхална ан пĕтер. Хăрамалли нимех те çук, иртсе каять. Санăн пĕтĕм пурнăçу малта-ха, халăхшăн усăллă çын та пулăн, ыррине те сахал мар курăн, ӳлĕмрен йăнăшас пулмасть кăна,— терĕ вăл, Илюка кĕçĕн классенче вĕреннĕ чухнехи пек çурăмĕнчен лăпка-лăпка.— Чипер юл, пуçна ан ус!

Кайран, камерăна таврăнсан, Илюк тахçанччenех лăпланаймасăр шухăшласа ларчĕ...

Тĕлĕнсех каймалла вĕт-ха! Нина Васильевна, вĕсен ялĕнче нумай çул хушши вĕрентсе пурăннă учительница. шкулта кăна мар, ял хушшинче те пурте хисеплекен çын, уншăн, Илюкшăн, пăшăрханса, уншăн тăрăшса çӳрет. Пулаççĕ те çавăн пек ылтăн чĕреллĕ çынсем! Нина Васильевнăшăн пулсан, Илюк никам та мар, ун пек ачасем шкулта темĕн чухлех, анчах та вăл, авă, уншăн ятарласа Шупашкара килнĕ, кирлĕ çынсемпе тĕл пулса калаçасшăн, хурлăха лекнĕ Илюкăн шăпине епле те пулсан çăмăллатасшăн... Илюк амăшне те сахал мар йăпатса лăплантарнă ĕнтĕ вăл. Тавах ăна уншăн, тем тери пысăк тав! Ĕмĕрне те манас çук...

Тата икĕ кунтан Илюк патне адвокат пычĕ — хулăнрах сасăллă, сарăрах сăнлă хĕрарăм. Илюкпа вăл виçĕ сехет ытларах калаçса ларчĕ, анчах следователь пек çине-çинех ыйтусем парса мар, питĕ ăшă кăмăлпа, тăван ачипе калаçнă пек. Илюк каланисене вăл пĕтĕмпех хулăн тетрадь çине çырса пычĕ те вăхăчĕ-вăхăчĕпе шухăша кайнă пек пулчĕ, ун пек чух вара халь çеç каласа пани çинчен тата тепĕр хут тĕплĕрех ыйтса пĕлчĕ.

Вĕсем калаçса пĕтерсен, Илюкăн çав хĕрарăм-адвокатран: «Миçе çуллăха хупаççĕ-ши ĕнтĕ мана?» — тесе ыйтасси килсе кайрĕ, анчах ун пек ыйтма хăюлăх çитереймерĕ вăл. Нина Васильевна пекех, адвокат ун çине ăшшăн пăхса лăплантарса хăварчĕ:

— Ан пăлхан, тен, ытлашши нимех те пулмĕ-ха...

## 31

...Ун чухне хула урамӗсен ик енӗпе те салтаксем пек йӗркеллӗн тӑрса тухнӑ пӗр евӗр хитре ҫӑкасен ҫулҫисем те пӑч-пач саралма тытӑннӑччӗ — ку ӗнтӗ ылтӑн кӗркунне пуҫламӑшӗ пулчӗ — ҫав тери юратмалла, илемлӗ, чуна савӑнтаракан вӑхӑт!

Илюка хула варринчи хӗрлӗ ҫуртӑн иккӗмӗш хутӗнчи пысӑк пӳлӗме — суд тӑвакан зала — илсе кӗнӗ чух унта халӑх лӑках тулнӑччӗ. Милиционер Илюка пӳлӗм варринчи уҫӑ вырӑнпа уттарчӗ, хӑй ун хыҫҫӑн пычӗ. Пӗтӗм халӑх: арҫынсем, хӗрарӑмсем, ваттисем, ҫамрӑкраххисем — пурте карах ун ҫине ҫаврӑнса пӑхрӗҫ, хӑйсем хушшинче тем пӑшӑлтатрӗҫ, анчах Илюк никама та курмарӗ, милиционер хушнипе аллисене каялла тытса, ниҫталла пӑрӑнкаламасӑр, ҫӗрелле пӑхса утса пычӗ.

Пукан речӗсенчен иртсен, ӑна сылтӑмалла пӑрӑнма хушрӗҫ, унтан вӑл пӗтӗм пӳлӗмрен карлӑкпа картланӑ ҫӳллӗрех вырӑна хӑпарчӗ. Кунта, стена ҫумнерех пухӑнса, хайхи «капӑр каччӑсем» — Жора, Макс тата Сержик лараҫҫӗ иккен. Малтан вӗсене хӑйсене уйрӑм суд тунӑ пулин те, халӗ, вӗсем паян судпа айӑпланакан преступниксемпе ҫыхӑнни паллӑ пулнӑ май,— ун ҫинчен Илюк та следователе каласа панӑччӗ-ха,— вӗсене ҫӗнӗрен суд тума илсе пынӑ-мӗн. «Капӑр каччӑсем» пурте Илюк ҫине сивӗ куҫӗсемпе пӑха-пӑха илчӗҫ, анчах нихӑшӗ те нимӗн те чӗнмерӗ.

Илюк вӗсенчен аяккарах ларчӗ те тинех залри ҫынсем ҫинелле пӑхрӗ. Мӗн тума пухӑннӑ кун чухлӗ халӑх? Нивушлӗ курма килнӗ? Анчах суд тунӑ ҫӗрте мӗн интересӗ пур-ха? Спектакль мар вӑл, кино та мар...

Илюк куҫӗсем пӳлӗмри ретсем тӑрӑх шума пуҫларӗҫ. Вӑл хӑйӗн амӑшне шырарӗ. Килнӗ-ши, килмен-ши?.. Суд хыҫҫӑн хӑйне таҫта инҫете илсе кайиччен тепре курса юласчӗ хуть ӑна! Ҫак юлашки эрнесенче, решетке хыҫӗнче ларнӑ вӑхӑтра, амӑшӗ уншӑн нихҫанхинчен те хаклӑрах пулса кайрӗ ҫав, Илюк пуринчен ытларах хӑй ҫинчен мар, амӑшӗ ҫинчен шухӑшларӗ, ӑна хӗрхенсе пурӑнчӗ.

Амӑшӗ курӑнмарӗ. Килмен-ши вара вӑл? Тен, паян суд тӑвасси ҫинчен пӗлтермен ӑна? Тен, сасартӑк чирлесе ӳкнӗ?..

Тепӗр енчи стена ҫумӗнче те, Илюк ларакан вырӑн пекех, урайӗнчен чылай ҫӳллӗ вырӑн пур иккен, ӑна та карлӑкпа картланӑ. Анчах унта кӑштах кукшаланма

пуçланă, сухалне яп-яка хырнă, туллирех питлĕ, пысăк хура куçлăхлă çын пĕччен ларать. Ун умĕнчи сĕтел çинче кĕнекесем, хутсем выртаççĕ, вĕсене вăл тек уçа-уçа пăхкалать. Суд пуçлансан тин пĕлчĕ Илюк çак çын кам иккенне: вăл прокурор пулнă-мĕн, преступниксене патшалăх ячĕпе пуринчен те хытăрах айăплаканни.

Мĕн калĕ-ши вăл Илюк пирки?..

Çав прокурор умĕнчех, аялта, ыттисем пек пӳлĕме урлă мар, пӳлĕме тăрăх лартнă пукансен речĕ тăрать. Вĕсем çине те çынсем шăкăриех вырнаçса ларнă. Çавсем хушшинче вара Илюк хăйĕн амăшне асăрхарĕ. Вăл та Илюк çине куç илмесĕр пăхать. Халĕ вĕсен куçĕсем тĕл пулчĕç те, амăшĕ темиçе хутчен пуçĕпе сулса илчĕ, унтан çавăнтах сарă тутрин вĕçĕпе куçĕсене шăлма тытăнчĕ,— каллех хурланса кайрĕ пулмалла ĕнтĕ, каллех куççульне чараймасть, мăнтарăн...

Анчах амăшĕ хальхинче те пĕччен килмен иккен — унпа юнашар Нина Васильевна. Вăл та Илюк çинчен куç илмерĕ, ăна аллипе никам сисмелле мар сулчĕ.

Çакăнта, хăйне кĕç-вĕç суд тума тытăнмалли мăн пӳлĕмре, амăшĕпе Нина Васильевна пурри Илюка тăрукках вăй кĕртсе янă пек пулчĕ. Темĕн чухлĕ ют çын, ним палламан, пĕлмен, ăна вăрă-хурах вырăнне çеç шутлакан çынсем хушшинче пĕр-пĕччен мар вăл! Чăнах та ĕнтĕ, амăшĕ те, Нина Васильевна та ăна хӳтĕлесе нимĕн тума та пултарас çук, çапах та уншăн темле шанчăк пур пек туйăнать.

Залри халăх сасартăк хускатнă хурт вĕлли пек кĕрлесе кайрĕ, чылайăшĕ вырăнсенчен сике-сике тăчĕç. Илюк алăк еннелле пăхрĕ те икĕ милиционер хушшинче (пĕри малта, тепри кайра) Артист утса пынине курчĕ. Ах, хăйне мăннăн тытать-çке вăл, пуçне каçăртнă, никам çине те пăхмасть, хăй кăштах кулнă пек те тăвать пулмалла! Ахальтен мар унăн хушамачĕ Баринов иккен, халăх хушшипе çакăнти пур çынсем те йĕрĕнсе, кураймасăр пăхакан вăрă-хурах мар, пĕр-пĕр улпут утса пырать тейĕн!.. Вăл картлашкасем тăрăх çăмăллăн чупса хăпарчĕ те, карлăк хыçне кĕрсен, çывăхри пукана пĕррех урипе шутарчĕ, ларнă-ларман пирус кăларса çăварне хыпрĕ. Унтан пĕр милиционер еннелле çаврăнчĕ те пуçĕпе сцена çинче вылянă пек пулса илчĕ:

— Пардон, гражданин начальник! Тиверттер-ха, эпĕ хамăн зажигалкăна килте, рояль çинче, манса хăварнă,— терĕ.

Милиционер ăна спичка çутса парсан, Артист пĕр

урине тепĕр ури çине хурса, çăварĕнчи çăра тĕтĕме юриех халăх еннелле ункăн-ункăн кăларса яма тытăнчĕ. Вăл çакăн пек хăтланнă пирки суд итлеме пынă çынсем çилĕпе пăшăлтатма тытăнчĕç:

— Пăх-ха ăна, епле герой ларать... Пуринчен те аслă пек! Йытă ĕнтĕ, чăн-чăн йытă, намăссăр!

Унтан зала пĕр харăсах виçĕ хĕрарăма илсе кĕчĕç те, халăх шавласа кайрĕ. Илюк вĕсене тӳрех палласа илчĕ — милиционерсем хушшинче Малани, ун патне пĕрмай çӳрекен пуклак Катюк тата утрав çине япаласем пытарса килнĕ каç кĕрсе выртнă Рыбацкая слободари хваттер хуçи.

«Пурне те пухнă...» — шухăшларĕ Илюк.

Карлăк хыçне пырса ларсан, Малани йăпăрт кăна Артиста ал пачĕ, унтан Илюка куçĕсемпе çунтарса илчĕ те Артистпа пĕрле пирус мăкăрлантарма тытăнчĕ.

Илюк каллех амăшĕпе Нина Васильевна еннелле пăхрĕ. Вĕсем ларакан ретре Илюк паллакан çынсем татах пур иккен... Илюк амăшĕнчен икĕ çын урлă вĕсем Матроспа иккĕшĕ кĕрсе çаратса тухнă хваттерти сар çӳçлĕ хĕрача, кайран милицине пырсан Илюка палласа илни, ларать-мĕн. Следователь ун чухне ăна темиçе хутчен те «Рита» терĕ. Унпа юнашар пĕтĕмпех хура тум тăхăннă кăн-кăвак çӳçлĕ карчăк ларать. Ку çав хĕрачан кукамăшĕ пулмалла. Вĕсене кунта, судра, хăйсене мĕнле çаратни çинчен калама илсе килнĕ ĕнтĕ!

Çапла çав, прокурор умĕнчи ретре пĕтĕмпех свидетельсем. Илюк вуçех палламаннисем те пур вĕсем хушшинче — вăрăсем хула хĕрринчи урамри магазина çаратма тытăннине никамран малтан сиссе милицие пĕлтернĕ комсомолец-бригадмилец Калаков та, Кувшинкăри вата пулăç Михей мучи те, ыттисем те.

Урайĕнчен чылай çӳллĕ сцена çинче симĕс пуставпа витнĕ сĕтел, ун çинче хулăн кĕнекесем выртаççĕ, анчах сĕтелĕ хушшинче халлĕхе никамах та курăнмарĕ-ха, унăн пĕр пуçĕнче кăна кăтра çӳçлĕ хитре хĕрарăм хутсем пăхкаласа ларчĕ.

— Ма пуçламаççĕ-ха тата? Пурне те илсе килчĕç пулас ĕнтĕ...

— Темме-çке! — Илюкран инçе те мар калаçса илчĕç икĕ арçын. Вĕсем çинелле çаврăнса пăхсан, Илюк хăй патне темиçе хут та пырса калаçса кайнă хĕрарăм-адвоката палласа илчĕ. Вăл куçĕсемпе аллинчи тетрачĕ çине тăрăннă та тимлесех вулать...

Чăнах та, судпа айăпланмаллисене ытла пурне те

илсе пыман-мĕн. Тепĕр вунă минутран милиционерсем зала çӳллĕ, тĕреклĕ, лаша пек пит-куçлă, шăрт пек хĕрлĕ сухаллă арçынна илсе кĕртрĕç.

— Ку кам тата? — тĕлĕнчĕ Илюк, ун çине пăхса. Анчах ăна çывăхрах илсе пырсан палласа илчĕ: ку вăл Илюксем хваттер çаратнă каçхине япаласене утрав çине леçсе паракан кимĕ хуçи, Măн Иван текенни иккен. Милицисем ăна та çавăрса илнĕ!

Сасартăк шăнкăрав сасси янăраса кайрĕ. Пурте сцена çинелле пăхрĕç, шавлама та чарăнчĕç.

— Суд идет! Прошу встать! — терĕ сĕтел хушшинчи кăтра майра, вара пурте: залра лараканнисем те, карлăк хыçĕнчисем те — пĕр сăмахсăрах кĕшĕлл... ура çине тăчĕç. Çав вăхăтрах сцена хыçĕнчи алăкран виççĕн — икĕ вăйпитти арçынпа пĕр хĕрĕх çулсенчи тулли питлĕ хĕрарăм — тухса сĕтел патнелле пычĕç. Хĕрарăмĕ варрине ларчĕ, арçынĕсем — унăн ик енне. Вĕсем вырнаçсан вара залри çынсем те, айăпланаканнисем те каллех ларчĕç. Пĕр-икĕ минут шăпах пулчĕ, сĕтел хушшинчисем пĕр-пĕринпе тем калаçса илчĕç, унтан варринче ларакан хĕрарăм ура çине тăчĕ.

— Судебное заседание считаю открытым. Слушается уголовное дело по обвинению...

Çапла суд пуçланчĕ.

Ку таранччен Илюк судра нихçан та пулса курман, суд йĕркисене те пĕлмен, çавăнпа та ăна халь пĕр енчен интереслĕ пек те туйăнчĕ. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе вăл хăй çак судра айăпланаканнисенчен пĕри пулнине те мансах кайрĕ. Тĕлĕнмеллисем те нумай пулчĕç, анчах суд малалла пынă май ытларах та ытларах кӳренме тиврĕ...

Следователь патĕнче пĕр-пĕринпе тĕл пултарнă чух Малани, плахая персе, Илюка вуçех палламан пек пулчĕ, анчах кайран, участокри милиционер Илюка Малани патĕнче курнине каласа парсан, тата больницăри вата сестра та Илюк чирлĕ чух Малани ун патне «амăшĕ» тесе çӳренине ĕнентерсе каласан, Маланин текех тунса тăма май килмен. Халĕ вара вăл Илюка çав тери вараlама, пĕтĕм айăпа ун çине тиесе, ăна путарса лартма тăрăшрĕ. Илюк хăйсем çинчен следствире пĕтĕмпех тӳррипе, ним пытармасăр каласа панăшăн, вĕсене «сутнăшăн» тавăрчĕ ĕнтĕ вăл... Малани каланă тăрăх, Илюка вăрлама никам та вĕрентмен, ирĕксĕрлемен, вăл Маланипе тĕл пуличченех «чисти шăпана» пулнă иккен, Атăл хĕрринче, пристань çинче, çын кĕсйисене ухтарса çӳренĕ, вăрланă пиншаксем сутнă, Малани ăна хăй патне

чăнах та ытлашши пăсăлма парас мар, тĕрĕс çул çине тăратса çын тăвас шутпа илсе пынă, анчах Илюк вăрлама пăрахман, пĕррехинче темле ӳсĕр çын костюмне сӳсе илсе пынă, анчах Малани çав костюма каялла кайса пама хушнă имĕш...

Çаксене итлесе, Илюкăн пĕтĕм çӳç-пуçĕ тăрса кайрĕ. Мĕн тери суйма, мĕн тери хăрушла элеклесе калама пултарать иккен намăсне пуçĕпех çухатнă çын!..

Нумай пăтратрĕç, темĕн те пĕр шухăшласа кăларчĕç вăрăсем хăйсене епле те пулсан тӳрре кăларма тăрăшса, пулманнине пулнă пек турĕç, пулнисене пытарма пикенчĕç е пачах урăхла, тӳнтерле çавăрса хучĕç. Анчах темле тăрăшсан та усси пулмарĕ! Судьяпа заседательсем унтан тата прокурор çине-çинех хĕреслĕ-пирлĕ ыйтусем парса, преступниксен ирсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларакан фактсем, документсем кăларса хурса, вĕсен суйисене пĕр вĕçĕм палăртса, хĕснĕçемĕн хĕссе пычĕç. Паллах ĕнтĕ, вĕсене свидетельсем те нумай пулăшрĕç. Юлашки вăхăтра тунă преступленисене уçса панă чух вара пуринчен ытларах Илюк каласа кăтартнисем усăллă пулчĕç. Илюк пурин çинчен те питĕ тĕплĕ каларĕ çав, вăл каланă чух итлекенсем тĕлĕнсе кăна ларчĕç, хĕрарăмсенчен нумайăшĕ ăна хĕрхенсе хурланса та илчĕç...

Суд ултă куна пычĕ, ултă кун хушши пысăк залра ларма-тăма вырăн пулмарĕ, шала кĕрейменнисем коридорта кĕпĕрленсе, пĕр-пĕрин урлă карăнса тăчĕç,— вăрăсене калама çук тарăхнă халăх вĕсен тискер ĕçĕсем çинчен тĕплĕрех пĕлесшĕн пулнă мар-и!

Малтанхи кунсенче Илюк судра çынсем мĕн-мĕн калаçнисене йĕркеллех итлесе, пĕтĕмпех астуса пычĕ, унтан ывăнса çитрĕ те унăн пуçĕнче пĕтĕмпех пăтрашса кайрĕ. Залри çынсен сăнĕсем те вăхăчĕ-вăхăчĕпе темле пĕрлешсе, пĕр çын сăнĕ пек куранакан пулчĕç, преступниксемпе свидетельсен сăмахĕсем те хутăшса кайрĕç, судăн уйрăм-уйрăм сыпăкĕсем çеç уçăмлăн аса кĕрсе юлчĕç.

Сăмахран акă, судăн виççĕмĕш кунĕнче кивĕрех сăран пиншак тăхăннă, пуçĕ пĕтĕмпех çаралса юлнă, пысăк кăвак уссиллĕ çынна астурĕ вăл. Çав старик Илюксем вăрланă япаласене утрав çине илсе пырса пытарнине курнă та хăйĕн мăнукĕ урлă часрах милицине пĕлтернĕ иккен. Çавăн çинчен каласа панă хыççăн вăл калама та çук хĕрсе кайрĕ те вăрăсене чи хаяр сăмахсемпе çунтарса намăслантарма тытăнчĕ...

— Мĕн çитмест вĕсене? Мĕншĕн вăрлаççĕ, халăх пурлăхне мĕншĕн çаратаççĕ? Выçă лараççĕ-и вĕсем, ĕç çук-и вĕсем валли, ĕçлесе тăранма пултараймаççĕ-и? Çук, пĕртте уншăн мар! Вĕсем иртĕнсе кайнипе, мăнтăрпа, ĕçлес килменнипе, çĕр çинчи аçа хуртла, сăвăсла, харам пырла кăна пурăнасшăн пулнипе çавăн пек хăтланаççĕ! Эпир, ваттисем, хальхи çамрăксене чăн-чăн телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса патăмăр. Çав пурнăçшăн эпир кĕрешнĕ, патша тĕрмисенче ларнă, каторгăна кайнă, мăшкăлне те тӳснĕ, юн та сахал мар тăкнă, выççине те, сиввине те курнă, анчах парăнман, çĕнтернĕ, хамăрăн телее шăлпа кăшласа илнĕ!.. Шуррисем ман аттене персе пăрахни çинчен пĕлсен, эпĕ, вунултă çулхи ача, аннерен вăрттăн килтен тухса кайрăм — анчах вăрласа-çаратса çӳреме мар, фронта, хамăра пусмăрласа пурăнакансене хирĕç çапăçма! Эпĕ çирĕм çула çитиччен мана ултă хут амантрĕç, эпĕ вутра та çуннă, шыва та путнă, анчах çăлăнса тухнă та каллех çапăçава кĕнĕ. Вăл çапăçусенче манăн çĕршер те пиншер туссем пуçĕсене хучĕç,— ĕмĕр-ĕмĕр çăмăл пултăр вĕсен тăпри,— вĕсем халĕ те манăн куçăм умĕнче... Анчах çаксем çине пăхăр-ха эсир, вĕсем мĕн хăтланаççĕ? — Старик аллине вăшт! тăсса, Илюксем ларна еннелле кăтартрĕ.— Курăр, епле ăйăрсем лараççĕ пирĕн умра! Питçăмартисенчен пӳрнепе пуссан юн пĕрхĕнсе тухать вĕт! Мĕн чухлĕ вăй вĕсенче! Кашнине уйрăм плуга кӳлсен те ним мар çерем çĕтме пултараççĕ. Анчах ăçта хураççĕ вĕсем хăйсен вăйне? Хамăрăн совет çыннисене, хамăрăн тăвансене, вĕсен ĕçлесе тупнă пурлăхне çаратма, пусмăрласа туртса илме! Ват карчăксемпе пĕчĕк хĕрачасене çыхса пăрахма, хĕрсен аллисене пăрса сехетсем туртса илме! Çынсене çĕçĕпе яшлаттарма! Шухăшласан, тĕлĕнсе хытса каймалла, юлташсем!.. Ăçта вĕсен намăс, ăçта чыс, совеç? Çавăн пек хăтланса çӳренĕ хыççăн çынсем çине мĕнле куçпа пăхма пултараççĕ вĕсем?..

— Çук вĕсен нимĕн те — намăс та, чыс та!

— Этем сăнне çухатнă вĕсем! — кăшкăрма тытăнчĕç старик сăмахне итлесе пăлханса кайнă çынсем унтан та кунтан.

— Нимле каçару та, нимле хĕрхенӳ те пулма пултараймасть вĕсемшĕн! — терĕ старик тата хытăрах.— Эпĕ вĕсене çав тери хытă айăпласа чи пысăк наказани пама ыйтатăп!

— Тĕрĕс!

— Хăшне-пĕрне персе пăрахас пулать! — каллех кăшкăрма тытăнчĕç залра ларакансем хушшинчен.

Судья вĕсене аран лăплантарчĕ...

Унтан тата çакă нихçан та манмалла мар асра юлчĕ: свидетельсем хушшинче хайхи «капăр каччăсенчен» пĕрин, Жора тенин, амăшĕ те пулнă. Шап-шур çӳçлĕ лутрарах пӳллĕ хĕрарăм-профессор, судья унран хăйĕн ывăлĕ пирки ыйтма пуçласан, нумай та калаçса тăраймарĕ, сулахай аллипе чĕри тĕлĕнчен ярса тытрĕ те пукан çине лап! ларчĕ, унтан сулăнса кайса урайне ӳкрĕ. Ăна çавăнтах виççĕн-тăваттăн тытса, залран çĕклесе тухса кайрĕç.

Илюк амăшĕ те, малтанах пĕрмай куççульне шăлашăла ларнăскер, суд умне тухса тăрсанах макăрма тытăнса, нимех те йĕркеллĕн калаймарĕ.

— Хамах айăплă пултăм пуль çав... Усаллине вĕрентменччĕ те, пăхсах çитерейменрĕм. Киле ют çынна илсе пырса йăнăш турăм, пĕтĕмпех çавăн пирки пулса тухрĕ...

Анчах Нина Васильевна, хăй тĕллĕн çине тăрсах свидетеле çырăннăскер, çав тери лайăх каларĕ. Илюк шкулта мĕн тери сăпайлă ача пулни çинчен те, вăл яланах тăрăшса вĕренни, ыттисемшĕн пример пулни çинчен, юлташĕсене пулăшни, обществăлла ĕçре яланах малта пулни çинчен те нумай каласа кăтартрĕ ватă учительница.

— Эпĕ ĕнтĕ ватă педагог, хама ачасен психологине пĕлекен çын тесе шутлатăп,— терĕ вăл.— Ивуков — нимĕн чухлĕ те пăсăлнă ача мар, унăн чунĕ таса-ха, унăн ăшчикки вараланман, унран малашне питĕ лайăх, халăхшăн усăллă çын пулма пултарать. Эпĕ çакна çирĕп ĕненсе, шанса тăратăп, судьясене ман шухăшсене шута илме ыйтатăп.

Хĕрарăм-адвокат та çавăн майлах каларĕ. Илюк туна преступленисемшĕн вăл пĕтĕмпех Маланипе Артиста айăпларĕ, вĕсене хытăрах ответ тыттарса, Илюка каçарма ыйтрĕ. Унăн çыпăçуллă та ĕнентерӳллĕ сăмахне итленĕ хыççăн Илюк чĕринче пĕчĕк кăна шанчăк та çуралчĕ: тен, чăнах та нимех те тумĕç ăна, тен, каçарĕç?.. Ах, вара...

Судьяпа заседательсем хыçалти пӳлĕме кĕрсе приговор çырса тухиччченех, пĕр виçĕ сехет хушши, çапла шухăшларĕ Илюк. Анчах приговор вуласа парсан вара шанчăк сӳнчĕ...

## 32

«Ивуков, Илья Ильича... виçĕ çуллăха ачасене ĕçпе воспитани паракан колоние ямалла тăвас...».

Çак кĕске самахсем Илюк халхине чан сасси пек янраса пырса кĕчĕç. Вĕсем мĕне пĕлтернине тавçарса илсенех, унан пуçĕ çавранса кайрĕ, куçĕсем темле хуралса килчĕç, чĕри хыттан-хыттан тапса илчĕ. Çапах та ку нумая пымарĕ, часах иртсе кайрĕ.

Виçĕ çул...

Приговорта ку чи кĕске срок пулна, ыттисене суд ытларах пачĕ: Артиста — вунпилĕк çул, Малание — саккар, Катюкпа Варварие — пилĕкшер. «Капар каччасене» малтан хайсене уйрам суд туна чухне икшер-виçшер çул çеç лартмалла туна-мĕн, анчах халĕ, вĕсен преступленийĕсем тата ытларах паларнипе, пурне те сроксем хушса пачĕç.

Судья приговорпа килĕшменнисем асла суда çырса пама пултарни çинчен пĕлтерчĕ, анчах ун самахĕсем Илюк халхине лайаххан кĕрсе те юлаймарĕç.

«Виçĕ çул... Халь тин ним тума та çук ĕнтĕ, чатас, тўссе ирттерес пулать епле те пулсан!..»

Карлак патне Илюк адвокачĕпе амашĕ, вĕсемпе пĕрле Нина Васильевна та пырса тачĕç.

— Эпир паянах асла суда çырса паратпар, тен, срокне чакарттарма пулĕ,— терĕ адвокат.

— Кирлĕ мар, ан та çырар,— пуçне паркаласа ал сулчĕ Илюк.

— Мĕншĕн кирлĕ мар, ывалам? — ыйтрĕ амашĕ, ун çине калама çук хурлаххан пахса.

— Укçуна пустуй ан таккала, хавна пуранма кирлĕ пулĕ.

— Эп уншан пĕр пус та илместĕп,— ĕнентерчĕ адвокат. Çавантах Нина Васильевна та хутшанчĕ:

— Кирлех пулсан, расхучĕсене хам тўлетĕп...

Илюк чĕнмерĕ. Калаçма та самах пулмарĕ ĕнтĕ унан. Залри халах майĕпен тухса пĕтме пуçларĕ, суд та хай выранĕнчен тарса кайрĕ, унччен лак-тулли пулна пысак пўлĕм пушанса юлчĕ. Çаван хыççан конвоирсем тин çеç суд тунисене икшерĕн-икшерĕн таратса, умлан-хыçлан уттарса урама илсе тухрĕç. Судра пулна халах саланман иккен. Суд тунисен ик енĕпе урам пек таракан çынсем хушшипе утса тухмалла пулчĕ. Чан кайра пыракан Илюк ниçталла та паранса пахмарĕ, пĕр çын санне те курмарĕ. Уншан халь пурпĕр пулчĕ.

«Виçĕ çул... виçĕ çул...» тени янраса тачĕ çеç унан пуçĕнче.

Хупа машина çине хыçалти тимĕр пусма тарах хапарна чух кана вал тахаш самантра каялла çавранса

пăхрĕ те кĕпĕрленекен халăх хушшинче хăйĕн амăшне курчĕ. Унăн сарăрах тутăрĕ ĕнси çинелле анса кайнă, çӳçĕ-пуçĕ сапаланнă, чарăлса кайнă куçĕсенчен шăпăртатса куççулĕ юхать... Самантрах алăк шалтлатса хупăнчĕ те, машина, моторĕпе кĕрлесе илсе, вырăнтан хускалса кайрĕ...

Приговор закона кĕрсен, Илюка колоние ăсатрĕç. Çавăнтанпа вăл хăйĕн амăшне те, паллана çынсене те, хăй çуралса ӳснĕ çĕршыва та, Атăла та, Шупашкара та курман вара.

...Акă халĕ, шăп икĕ çултан, приговорти срок çитиччен пĕр çулталăк малтан, вăл киле таврăнать.

Киле, тăван ялне, юратнă амăшĕ патне! Мĕн чухлĕ кĕтнĕ вăл çак телейлĕ саманта, мĕн чухлĕ шухăшланă, ĕмĕтленнĕ ун çинчен! Тинех ĕнтĕ ĕмĕтленсе пурăнни çитрĕ, вăл — ирĕкре, ирĕклĕ çын, хăйшĕн хăй хуçа!.. Тепрер кунтан вăл килте пулать, уншăн нумай хуйхăсуйхă курнă амăшне ыталаса илет, унтан вĕçĕмсĕр ĕçлеме, пурнăç тума тытăнать. Мĕн пур ĕнтĕ çĕр çинче çакăнтан лайăхраххи, çакăнтан ырри?

Пĕлекен çынсем çапла калаççĕ: этем пĕр çĕртен тепĕр çĕре кайма тухсан, çур çула çитиччен хăй тухса килнĕ вырăн çинчен шухăшлать теççĕ. Çакă вăл тĕрĕсех пулмалла.

Колонирен тухнă хыççăн икĕ талăка яхăн, поезд çинчен анса Атăл патне, сарлака та хăватлă, тĕкĕр пек çутă, пĕрре пăхса илсенех кăмăла çĕклентерекен тăван Атăл хĕррине çитиччченех, Илюк колонири пурнăç çинчен аса илсе пычĕ. Юри аса илме тăрăшнипе мар, çук, унти пурнăç сыпăкĕсем, уйрăм-уйрăм самантсем, икĕ çул хушшинче пулса иртнĕ ĕçсем хăйсем тĕллĕнех таçтан аякран, темле çăра тĕтре ăшĕнчен шуса тухнă пек, куç умне туха-туха тăчĕç. Паллах ĕнтĕ, икĕ çул хушшинче пулса иртнисенчен нумайăшĕ яланлăхах манăç пулнă, анчах вĕсенчен хăшпĕрисене нихçан та, виличчен те манас çук çав!

Малтанах Илюк питĕ хăранăччĕ... Мĕнлерех-ши вăл колони тени? Тĕрме пекех-ши? Вăрăм коридор, çӳлте, мачча çумĕнче, тĕксĕмрех электричество лампочки çунать, коридорăн ик енĕпе — тимĕрленĕ йывăр алăксем, кашни алăкĕнчех шалалла уçса пăхмалли шăтăк пур, ăна «куç» — «глазок» теççĕ. Камерăсенче — сарлака нарсем, вĕсем çинче улттăн-çиччĕн пĕрле выртаççĕ... Ни-

вушлĕ виçĕ çул хушши çавăн пек çĕрте пурăнмалла пулать-ши?

Анчах колонире пĕртте ун пек мар иккен. Илюка та, унпа пĕрле илсе килнĕ ытти ачасене те, машина çинчен антарса, çӳллĕ хапха хыçĕнчи пысăках мар çурта илсе кĕртрĕç, унтан пурне те тӳрех мунчана илсе кайса çӳçĕсене шап-шакла касса ячĕç, вĕри шывпа, супăньпе, мунчалапа лайăх кăна çăвăнтарчĕç те тап-таса кĕпе-йĕмсем пачĕç, кайран столовăйĕнче «какăриччен» апат çитерчĕç.

Вĕсене пур çĕрте те вăтăрсенчен иртнĕ хĕрлĕ уссиллĕ сержант ертсе çӳрерĕ. Юлашкинчен вăл ачасене хĕрлĕ пысăк йывăç çуртăн иккĕмĕш хутне илсе хăпартрĕ те икĕ сарлака чӳречеллĕ çутă пӳлĕме кĕртрĕ. Ку пӳлĕмре хитре кăна утиялсемпе витнĕ тăвата койка тăнă.

— Кĕçĕрлĕхе çакăнта çывăратăр,— терĕ сержант.— Ыран сире зонăна куçаратпăр.

«Зона» сăмаха Илюк ăнланмарĕ, анчах ыйтса пĕлме те хăюлăх çитереймерĕ. Кайран тин пĕлчĕ: «зона» тени вăл колони вырнаçтарнă тĕп вырăн, унăн темĕн пысăкăш килкартийĕ пулнă-мĕн.

Сержант тухса кайрĕ, анчах алăкне тул енчен питĕрмесĕрех хăварчĕ пулас. Пĕр-икĕ самантран вăл каялла таврăнса пычĕ те, алăк умĕнчех чарăнса тăрса, сулахай еннелле сулса кăтартрĕ:

— Тула-мĕн каяс пулсан, уборнăй коридор вĕçĕнче. Анчах хăвăр хыççăн шывне антарса яма ан манăр. Тирпейлĕ пулас пулать... Ну, халĕ çывăрма та пултаратăр ĕнтĕ. Çутине сӳнтерĕр!

«Ха, питĕрмеççĕ те иккен!..» — тĕлĕнерех шухăшларĕ Илюк. Унтан вырăн çинчи утияла хĕрринчен туртса сирчĕ те, ун айĕнче таса юр пек шап-шурă простынь курăнса кайрĕ. Пĕрре кăна та мар тата, иккĕ тан! Аялта — çемçе матрас, çитарĕ те çавăн пекех çемçе, ватка тултарнă курăнать.

«Малтанлăха пире больницăна хучĕç пулмалла... сывлăхсене тĕрĕслеме»,— терĕ Илюк хăй ăшĕнче, хăюсăртараххăн хывăннă хыççăн утиял айне кĕрсе выртса. Анчах вĕсем пĕртте больница таврашĕнче мар, малтанхи карантин пӳлĕмĕнче кăна пулнă.

Ытти ачасем те выртрĕç. Нихăшĕн те ыйхи килмерĕ пулас. Калаçма та сăмах тупăнмарĕ. Кашниех хăй тĕллĕн, хăй çинчен шухăшласа выртрĕ ĕнтĕ. Чылайран тин, мăшлаткаласа, ассăн сывлакаласа, енчен енне çаврăнкаласа выртнă хыççăн, Илюкăн кӳрши — унран чылай

çӳллĕ, хытканрах, темле малалла тухса тăракан çамкаллă вунултă çулсенчи ача, пуçласа сăмах хушрĕ.

— Лайăх кĕтсе илеççĕ вĕт, каламалли те çук, э? Курорт!.. Сире мĕнле пек туйăнать?

— Аптрамасть,— сас пачĕ Илюк, ун сăмахĕсене тӳррĕн ăнланса.

— Ухмахсем теççĕ ĕнтĕ вĕсем пире...

— Мĕншĕн?

— Ара, курмастăр-им, пире çак таса простыньсемпе, тутлă апатпа сутăн илесшĕн. Пĕлетĕп эп вĕсен ырлăхĕсене! Йăпăртлăх тутлă шăрш сарни çеç вăл. Кайран акă лаша пек ĕçлеттерме тытăнаççĕ — план, норма тултармалла, хĕрлĕ хăма çинелле чаваланмалла! Шкулта вĕрентме тапăнаççĕ тата — визикă, фими, истори те географхви кирлĕ вĕсене, пĕр пирус туртса ямалăх та вăхăт памаççĕ! Воспитателĕсем пĕр самантлăха та хăпмаççĕ, сан хыççăн çăхансем пекех çӳреççĕ...

— А эсĕ... Аçтан пĕлетĕн ăна?— хуллен ыйтрĕ Илюк, хăй сисмесĕрех тăрса ларса.

— Пулкаланă эп кун пек крайра, çавăнпа пĕлетĕп. Икĕ колонирен тухса тартăм, кунтан та пурпĕрех таратăп! А эсĕ мĕн, пирвайхи хут вĕçсе кĕтĕн-им кунта?

— Пирвайхи...

— Мĕншĕн?

— Мана вăрăсем ирĕксĕрлесе хăйсемпе пĕрле илсе çӳрерĕç...

— Çын вĕлернине курнă-и?

— Çук, ун пекки пулман...

— Ну, апла пулсан эсĕ симĕс-ха, пурнăç тутине ним чухлĕ те пĕлместĕн. Анчах эпĕ куркаланă, тусăм. Пысăк ĕçсенче пулнă. Васька-Корольпе пĕрле çӳренĕ. Васька-Король çинчен илтнĕ-и эсĕ?

— Çук, илтмен...

— Ăна тĕнчери кашни вăрă пĕлет. Çунатлă вăрă вăл, нихçан никам тытаймасть. Лексен те туххăм тарать. Часовойсем ним те тăваймаççĕ... Пĕлтĕр эпир унпа пĕр больница бухгалтерне тирпейлерĕмĕр. Ялти тухтăрсем валли шалу илнĕччĕ вăл — пĕр чăматан укçа, пурте çĕршер тенкĕлĕх. Эпир çавăн çинчен пĕлсе ăна уйра, ыраш хушшинче, сыхласа лартăмăр. Малтан эпĕ сиксе тухса лашине йĕвенĕнчен çавăрса тытрăм. Унтан Король чупса тухрĕ те пĕррех пуçĕнчен свинчаткăпа тăхăнтарчĕ. Старик тăрантас çинчен палт! анчах тухса ӳкрĕ. Хăйне ыраш хушшине сĕтĕрсе кĕртсе пăрахрăмăр та лашипе кĕрлеттертĕмĕр кăна... Чăматанĕнче аллă пин пулнă.

— Аçта чикрӗр вара ун чухлӗ укçана? — хӑрарах ыйтрӗ Илюк.

— Ха! — терӗ кӳрши.— Лайӑх вӑрӑшӑн вӑл укçа нумай-им? Пӗлетӗн-и, Королӗн мӗн чухлӗ тус-юлташ? Тупӑшлӑ ӗç хыççӑн вӗсене пурне те хӑна тӑвас пулатьçке. Пӗр каçра вунӑ пин пӗтет!

— Леш старикӗ вилнӗ-ши вара?

— А кам пӗлет ӑна. Эпир кайран унӑн сывлӑхӗ çинчен пӗлсе çӳремен! Хуть вилтӗр, хуть чӗрӗлтӗр — хӑйӗн ӗçӗ вӑл, пире мӗн? Эпир Хусана çитсе самолет çине ларнӑ та Çӗпӗрелле ярӑнтарнӑ... Тепринче тата эпир пӗр районти перекет кассине питӗ ловкӑ тасатса тухрӑмӑр... Кӑнтӑр кунӗнчех! Темиçе минут хушшинче — вӑтӑр икӗ пин!

Юнашар кравать çинчи арçын ача каçса кайсах истори хыççӑн истори каласа пама тытӑнчӗ, ӑна пула ытти ачасем те тӑрса ларчӗç, анчах Илюк пӑлханса кайрӗ те унӑн хӑлхине йӗркеллӗн нимӗн те пырса кӗмерӗ. Вӑл халь кӑна илтнӗ историсем пирки мар, вӗсене каласа панӑ ача çинчен шухӑшлама тытӑнчӗ. Мӗнле çав териех пӑсӑлса кайма пултарнӑ-ха ку ача!.. Тен, вӑл суять те пулӗ, тен, вӑл хӑй чӑнахах та хутшӑннӑ «ӗçсем» çинчен мар, ыттисем умӗнче «чапланас» тесе, такамсенчен илтнисене каласа парать, анчах мӗнле тулли кӑмӑлпа калать вӗт, çавӑнтан тӗлӗнмелле! Кашни çаратӑва, çынсене тапӑнса вӗсен укçи-тенкисене, хаклӑ япалисене вӑйпа, вӗлерессипе хӑратса туртса илнисене вӑл калама çук паттӑр ӗç тунӑ пек шутлать!..

...Çак ача, Мишка Лобан — Мӑн Çамка тенӗскер — Илюка малтанхи каçах килӗшмерӗ те, ӑна вӑл кайран та яланах сиввӗн пӑхса пурӑнчӗ. Ун çине ӑшӑ кӑмӑлпа пӑхма та, унпа килӗштерме те май килмен çав. Пӗчӗклех, ашшӗпе амӑшӗ темшӗн уйрӑлнӑ хыççӑн, ӑна ватӑ кукамӑшӗ патне леçнӗ те, вӑл ун патӗнче ытлашши «ирӗклӗ» ӳснӗ, çав тери чарусӑр ашкӑннӑ пирки ӑна шкултан кӑларса янӑ, унтан вӑл пӑсӑлнӑçемӗн пӑсӑлса пынӑ, вӑрӑсемпе çыхланнӑ, колоние лексен пӗрре тарнӑ, иккӗ тарнӑ, халь акӑ каллех лекнӗ. Кайран воспитательсем те хӑшкӑлса çитрӗç унпа — колонири йӗркесене пӗрмай пӑсатчӗ, никама та пӑхӑнасшӑн мар, итлесшӗн мар. Ырӑпа та калаçрӗç вӗсем çак Мӑн Çамкапа, штрафной изолятора та пӗрре кӑна мар лартрӗç, усси питех пулмарӗ. Юлашкинчен вара ӑна çирӗпрех режимлӑ колоние куçарчӗç. Анчах тухса кайиччен вӑл Илюка хирӗç тӳсме çук кӳренмелле ӗç туса хӑварчӗ...

...Ирхине вӗсем патне каллех ӗнерхи хӗрлӗ уссиллӗ сержант пычӗ те столовайне илсе кайса килчӗ, унтан вӗсем тухтӑр патӗнче пулчӗҫ, юлашкинчен канцелярине пырса кӗчӗҫ. Ҫакӑнта вара питӗ тӗлӗнмелле, пачах та кӗтмен япала пулчӗ.

Пӳлӗме вӗсене коридортан пӗрерӗн-пӗрерӗн чӗнсе кӗртрӗҫ. Чӑн малтан Илюка каҫхине хурахла «ӗҫӗсемпе» мухтанса йӗрӗнтернӗ Мишка Лобана чӗнчӗҫ. Вӑрахчен пулчӗ вӑл шалта, пӗр сехете яхӑнах иртрӗ пулмалла. Тем пирки пӳлӗмре вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе хытӑ шавларӗҫ, унтан шӑпах пулчӗ, кӑшт тӑрсан татах хӗрсе кайса калаҫни илтӗнчӗ... Юлашкинчен алӑк вӑр! уҫӑлчӗ те, Мӑн Ҫамка футбол мечӗкӗ евӗр ыткӑнса тухрӗ. Хӑй мунчара умлӑн-хыҫлӑн темиҫе хут ҫапӑннӑ пекех хӗп-хӗрлӗ пулса кайнӑ, йӗп-йӗпе тара ӳкнӗ. Вӑл никам ҫине пӑхмасӑрах тӳрех тулалла тухса кайма пикенчӗ, анчах алӑк патӗнче тӑракан сержант унӑн ҫулне картларӗ те, вӑл ирӗксӗрех пукан ҫине ларчӗ.

— Мӗн пулчӗ? Хӗнемерӗҫ пуль те? — ним ӑнланмасӑр ыйтрӗ Илюк.

— Хӗнеттерӗп эп вӗсене! Ҫапса пӑхчӑр-ха! — кӑшкӑрчӗ Ман Ҫамка.— Ун пек саккун ҫук халӗ, патша вӑхӑчӗ мар! Пӗрре алӑ сӗрсенех, хӑйсене пурне те Колымана яратӑп!..

— Мӗн тата? Ма пит пӑлханатӑн?

— Агитаци тӑваҫҫӗ! Пуҫа минретеҫҫӗ, вӗрен, ӗҫле вӗсем валли! Тупнӑ ухмах!

Вӑл урайне лач! сурчӗ.

— Вӗренни хӑвнах кирлӗ пулать вӗт-ха, айван ача,— терӗ алӑк патӗнчи сержант.— Вӗсем санран ҫын тӑвасшӑн, эсӗ пур, ҫавна ӑнланмасӑр, пусма тытӑннӑ сысна ҫури пек ҫухӑратӑн...

— Ан ҫыпӑҫ, эсӗ ытла та пӗчӗк начальник-ха кунта! — кӑшкӑрса пӑрахрӗ ӑна Мишка.— Эп хама мӗн кирлине вӗреннӗ ӗнтӗ, ҫитет, Васька-Король мана прохвессорсенчен те лайӑхрах вӗрентнӗ! Халӗ хам пурнӑҫа мӗнле пурӑнас тенӗ — ҫапла пурӑнса ирттеретӗп, никамӑн та ӗҫ ҫук манпа! Тупӑннӑ маншӑн атте-анне! — чарӑнма пӗлмесӗр ҫӗтӗлчӗ вӑл, тарлӑ ҫамкине ҫаннипе шӑла-шӑла.

Вӑл мӗншӗн ҫав терпех урса кайнине Илюк ӑнланса ҫитеймерӗ, кӗҫех алӑк уҫӑлчӗ те, ӑна хӑйне хушаматпа чӗнчӗҫ:

— Ивуков, кӗр!

Шалти пӳлӗмре, кӑвак пуставпа витнӗ сӗтел хушшинче, симӗс китель тӑхӑннӑ типшӗмрех, кӑшт курпун-

тарах сăмсаллă, хурарах сăнлă майор ларать (погонĕ çинче икĕ йĕр, варринче пысăк çăлтăр — Илюк нимрен малтан çавна асăрхарĕ), сĕтелĕн пĕр пуçĕнче — ахаль тум тăхăннă самăртарах, кукшаланма пуçланă арçын, тепĕр пуçĕнче — сап-сарă çӳçлĕ, питĕ илемлĕ, сенкер куçлă майра. Анчах кусем çине Илюк йăпăрт çеç пăхса илчĕ, мĕншĕн тесен майор тӳрех сăмах пуçларĕ те, пĕрмаях вăл ыйтнисене хирĕç каласа пымалла пулчĕ.

— Ивуков Илья Ильич? 1941 çулта çуралнă? — ыйтрĕ майор, хăй умĕнче выртакан «Дело» çине пăха-пăха.— Çапла-и?

— Çапла.

— Чăваш? Сана Шупашкарта суд тунă?

— Шупашкарта...

— Пĕрремĕш хут? Унччен суд умне тăман?

— Çук, унччен пĕрре те пулман...

— Аван...— Майор «Дело» папкине аякалла илсе хучĕ.— Миçе класс пĕтернĕ-ха эсĕ?

— Кăçал çиччĕмĕш пĕтермеллеччĕ. Çак ĕç пулса тухрĕ те, вĕренме май килмерĕ.

— Анчах та хăвăн вĕренес кăмăлу пур-и? Лайăх кăна специальность илес килет-и?

— Вĕренĕттĕм те, тĕрмере вĕт эп халĕ, ăçта вĕренес? — Хăй сисмесĕрех, Илюк тутине чалăштарса кулам пекки туса илчĕ.— Хăçан та пулин киле таврăнсан мĕн пулĕ ĕнтĕ...

— Тĕрĕс мар калаçатăн, Ивуков! — Майор хура куçĕсемпе ун çине тӳррĕн, чăрлаттарса пăхма тытăнчĕ.— Пирĕн кунта тĕрме мар, пирĕн кунта колони. Эпир пурнăçра сан пек йăнăш тунă çамрăксене малашне йĕркеллĕ, тӳрĕ пурнăçпа пурăнакан граждансем, чăн-чăн совет çыннисем пулма вĕрентетпĕр. Шкул та пур пирĕн, тĕрлĕ ĕçсене вĕренмелли мастерскойсем аван. Пирĕн патран вăтам шкул пĕтерсе аттестат илме те кунпа пĕрлех тата лайăх квалификациллĕ рабочи пулса тухма та пулать — слесарь, токарь е столяр. Паллах, хăвăн кăмăлу пулсан, ху тăрăшсан... Ăнланатăн-и?

— Ăнланатăп,— терĕ Илюк, çĕрелле пăхса. Темшĕн, майор каланисене унăн ĕненесех килмерĕ.

— Вĕренетпĕр эппин?

— Майĕ пулсан... тем пекчĕ...

Майор сĕтел пуçĕнче ларакан сар çӳçлĕ майра еннелле çаврăнчĕ.

— Ирина Никитична, çиччĕмĕш класс пĕтерменскер,

пирĕн патра саккăрмĕшне ларма пултарĕ-ши вăл? Мĕнле шутлатăр эсир?

— Манăн вĕренмелли пĕр уйăх çеç юлнăччĕ,— терĕ Илюк.

Майра ун çине пăхрĕ те, пуканĕпе пĕрлех малалла шуса ларса, вăрăммăн сывласа ячĕ.

— Чимĕр-ха, Илья Кузьмич...— терĕ вăл майора, хăй палăрмаллах пăлханса.— Манăн ку ачапа хамăн калаçса пăхас пулать. Эпир пĕр-пĕрне кăштах паллана пек туйăнать...

— Паллана пек? Мĕнле майпа-ши? Пирĕн колоние вăл пирвайхи хут килнĕ-çке? — тĕлĕнчĕ майор.

— Çук, колонипе çыхăнман-ха пирĕн паллашу, урăхларах пулнăччĕ вăл. Кăçал çуркунне, эпĕ хамăн отпуск вăхăтĕнче аннесем патне Шупашкара кайсан...

Майра çакăн пек калаçма тытăнни Илюка тĕлĕнтерсех пăрахрĕ. Ăçтан, хăш енчен паллама пултартăр вăл ăна?.. Е юри калать ку хĕрарăм, е çав тери йăнăшать, такампа пăтраштарать... Çав вăхăтрах хăй ун çине пит тинкерсе, шăтарасла пăхрĕ те, ку хĕрарăма хăйне те таçта курнă пек туйăнса кайрĕ. Анчах ăçта курнине ниепле те аса илме пултараймарĕ.

— Итле-ха Ивуков,— терĕ хитре майра, ун куçĕнчен пăхса,— эсĕ кăçал çуркунне, май уйăхĕн вĕçĕнче, Шупашкар пристанĕнче пулнă вĕт?

— Пулнă,— пуçĕпе сулса илчĕ Илюк.

— Астăватăн-и, пĕр ирхине унта пăрахут пырса тăрсан, сан пекех çамрăк арçын ача пĕр хĕрарăмăн чăматанне йăтса тарма тăчĕ, анчах эсĕ çавна асăрхарăн та, ун хыççăн ыткăнтăн... Эс хăваласа çитме пуçласан, леш ачи чăматана пăрахса тарчĕ, эсĕ вара ăна çĕклесе хуçине каялла таварса пырса патăн, унтан хваттерне çитиччененех ăсатса ятăн... Çапла-и?

— Çапла.

— Çав хĕрарăм кам пулнă тетĕн эсĕ?

Çак юлашки сăмахсене вăл каламасан та пултарнă. Илюк халĕ çавсене аса илчĕ кăна мар, çавăн чух Атăл хĕрринче пулса иртнĕ пĕтĕм ĕç ун куçĕ умне тĕкĕр çинчи пек уççăн курăнмалла тухса тăчĕ. Чăматанне вăрлакан-ни утă купи хыçĕнчен еплерех йăпшăнса тухни те, унтан анаталла тапса сикни те, шыв хĕрринче кĕпе чӳхекен хĕрарăмсем çухăрма тытăнсан, лешĕ чăматана вăрăнтарса вутă куписем хыçне чăмни те... Кайран, хваттере çитсен, çак хĕрарăм ăна тутлă кукăльпе чей ĕçтерсе яни

те... Ун чухне Илюк ыра ёç тунăччĕ, çак хĕрарăм та ăна мухтаса тав турĕ, анчах халĕ ака...

Илюк тути хĕррине çыртса лартрĕ.

— Эппин, Ирина Никитична, ун чухне ку ача сирĕн япаласене вăрăран çăлса хăварчĕ? — ыйтрĕ вĕсен калаçăвне тинкеререх итлесе ларнă майор.

— Çапла, çапла!.. Вăл пулман пулсан, пĕр нимĕнсĕр тăрса юлаттăм...

— Анчах кайран вăл хăй çынсене çаратма тытăннă, магазина кĕрсе кайнă... Мĕнле ун пек пулса тухрĕ-ха санăн, Ивуков? Темле пĕртте çыхăнмасть ку, ăнланмалла мар.

Илюк нимĕн те калаймарĕ, малтанхи пекех, çĕрелле пăхса ларчĕ, унăн çамки çине тар тапса тухрĕ. Палланă хĕрарăм умĕнче ăна çав тери намăс пулчĕ çав! Çакна майор та тавçăрса илчĕ пулас, ачана ытлашши пăлхатас мар тесе урăх нимĕн те ыйтмарĕ, вĕренесси пирки çеç калаçрĕ.

— Ну, кам пулас килет-ха санăн: токарь-и, слесарь-и, столяр-и? Хăшĕ ытларах кăмăла каять? Тимĕрпе ĕçлесси-и, йывăçпа-и?

— Тимĕрпе,— пăшăлтатса илчĕ Илюк.

Ăна вара слесарь ĕçне вĕрентмелле турĕç.

Тепĕр виçĕ кунтан, «зонăра» пурăнма тытăнсан, касалапа, Илюка шкул канцелярине чĕнсе кайрĕç. Кунта ăна хайхи сар çӳçлĕ хĕрарăм, Ирина Никитична, кĕтсе ларнă. Вăл колонири вăтам шкулăн вĕренӳ пайĕн заведующийĕ иккен. Каярахпа Илюк тата тепĕр япала пĕлчĕ: Ирина Никитична упăшки — колони начальникĕ, воспитанниксем ăна пурте «хуçа» теççĕ.

Пӳлĕме пырса кĕрсенех, Ирина Никитична Илюка илсе пынă сержанта кайма хушрĕ, унтан Илюка диван çине лартрĕ те хăй ун çумне пырса ларчĕ.

— Ну, ачам, каласа пар-ха мана тĕпĕ-йĕрĕпе, ним пытармасăр, тăван аннӳне калана пек... Мĕнле майпа çавăн пек пулса тухма пултарчĕ сан пурнăçу?

Вĕсем икĕ сехете яхăн ларчĕç. Илюка çак вăхăта чăнах та пурнăçри чи çывăх çынпа, тăван амăшĕпе пĕрле ирттернĕ пекех туйăнчĕ. Тĕлĕнмелле ыррăн калаçрĕç вĕсем, Илюк пĕтĕм чунне уçса пачĕ, çав вăхăтрах унăн чĕри темле кăмăла çĕклентерекен, пурăнас, вĕренес, ĕçлес килтерекен ăшă сывлăшпа тулчĕ. Çав сывлăш вара колонирен тухса киличчен те сирĕлмерĕ, ăна ăшăтсах тăчĕ.

— Çын пулас пулать, Илюша, ăслă, йĕркеллĕ, ăнла-

нуллă, çав вăхăтрах çирĕп кăмăллă, нимĕнле йывăрлăхсенчен те хăраман, çĕршывшăн, халăхшăн усăллă çын пулас пулать! Аçуна аса ил эсĕ: камшăн, мĕншĕн пуçне хунă вăл çапăçу хирĕнче паттăррăн çапăçса? Сан пурнăçна хӳтĕленĕ вăл, сана телейлĕ тăвасшăн вут ăшне кĕнĕ! Халĕ ĕнтĕ санăн телейӳ — хăвăн аллунта, пĕтĕмпех хăвăнтан килет, ху пĕтĕмпех ăнланса илсе малашне тĕрĕс çулпа пынинчен!

Ирина Никитична сăмахĕсем Илюк чĕрине питĕ çирĕп кĕрсе вырнаçрĕç. Вĕсене Илюк нихçан та манмарĕ.

## 33

...Уйăх хыççăн уйăх иртрĕ, унтан çулталăк та çитрĕ, иккĕмĕш пуçланчĕ, Илюк колонири чи йĕркеллĕ воспитанниксенчен пĕри пулчĕ. Ирхине шкулта вĕренет, каçхине мастерскойĕнче ĕçлет, пушă вăхăт пулсан, клуба çӳрет, библиотекăран илнĕ кĕнекесене вулать.

Ирина Никитична унăн яланхи шефĕ пекех пулчĕ, ăна сăнасах пурăнчĕ, кашни тĕл пулмассеренех ыйтса пĕлчĕ:

— Ну, Илюша, пурнăç кустăрми мĕнлерех çаврăнать? Чиперех-и? Сывлăху епле?

— Тавтапуç, Ирина Никитична, пур енчен те лайăх-ха,— терĕ ăна хирĕç Илюк тулли кăмăлпа.

Паллах ĕнтĕ, колонири пурнăç пур чух та пĕр пек тикĕс пымарĕ, тепĕр чух «ЧП» — «чрезвычайнăй происшествисем» те пулчĕç, вара колони пĕр-икĕ кун хушши лăпланаймарĕ, хускатса янă пыл хурт вĕлли пек сĕрлерĕ.

Воспитательсем питĕ тимлĕ асăрхаса тăчĕç пулин те, хăшпĕр ачасем, унта та кунта пытанса, картла вылярĕç, апатпа пĕрле паракан тутлă япаласене — компотсене, кĕселсене, кукăль таткисене, хăшĕсем тата килтен ярса панă посылкăсене те выля-выля ячĕç, хушăран урари çĕнĕ пушмаксем те хута кайрĕç. Çакна сиссен, воспитательсем картсене утă капанĕнче йĕп шыранă пек шырарĕç, анчах тупма питĕ хĕн пулчĕ. Пĕр колодине тупса пурин умĕнчех çунтарса ярсан та, темиçе кунтан каллех выляни сисĕнчĕ. Таçтан хут тупаççĕ те пĕр наччасра çĕнĕ колода тăваççĕ!

Пĕррехинче Илюкăн шкулта чертежсем тумалли хулăн хутлă тетрачĕ çухалчĕ. Питĕ шел пулчĕ ăна — тетрадьри пĕр-ик листи çине çеç ӳкернĕччĕ, ыттисем тап-таситпехчĕ.

«Карт тума вӑрланӑ ӗнтӗ, урӑх ним тума та кирлӗ пулас ҫук вӑл,— шухӑшларӗ Илюк. Малтанах, питӗ хытӑ тарӑхса, вӑл кун ҫинчен воспитателе каласа парасшӑн пулчӗ, анчах шарламарӗ. «Хамах йӗрлесе тупатӑп... Тытатӑпах ку ирсӗре! — терӗ вӑл.— Никам та мар, ҫав Мӑн Ҫамка хӑтланнӑ пулӗ-ха...»

Пӗр ик-виҫӗ кун хушши ним тӗлли-палли те пулмарӗ. Унтан ӑна дежурнӑй пулма черет ҫитрӗ те, вӑл общежитире пӗчченех юлчӗ. Пурте мастерскойне тухса кайнӑ хыҫҫӑн урайне кипке таткисенчен тунӑ йӗпе милӗкпе шӑлма тытӑнсан, вӑл стена ҫумӗнчи пӗр койка айӗнче, урай хӑми вӗҫӗнчен, темле хут татки курӑнса тӑнине асӑрхарӗ. Туртса кӑларчӗ те — карт иккен! Шӑпах унӑн черчени тетрадӗнчен тунӑскер!.. Урай хӑми вӗҫӗ кӑштах ҫӗкленет иккен те, колодӑна ҫавӑн айне пытарса хунӑ.

Илюк картсене пӗрерӗн-пӗрерӗн тенӗ пек кӑларса илсе кӗсйине чикрӗ те койка ҫине пӑхрӗ.

— Чим-ха, кам ҫывӑрать-ха кунта пирӗн?..

Койки Хаким Мустафаров ятлӑ тутар ачин иккен. Пӗррехинче колонире «Путевка в жизнь» кино кӑтартнӑ хыҫҫӑн ӑна пурте «Мустафа» тесе чӗнме пуҫларӗҫ. Нивушлӗ ҫав пӗчӗк шӗпӗн ҫакӑн пек хӑтланма пултарать? Илюк шухӑша кайнӑ пек пулчӗ те — аса илчӗ: Мустафа юлашки вӑхӑтра общежитире пурӑнмасть, вӑл тем пирки икӗ эрне санчастьре выртать ӗнтӗ, ҫавӑнпа та ун пирки шутлани усӑсӑр. Юнашар койки камӑн тата? Мишка Лобанӑн! Эппин — вӑл, тем тесен те вӑлах тунӑ! Хӑйӗн тетрачӗ ҫухалсанах ун ҫине шутланӑччӗ ҫав Илюк...

Кун чиперех иртрӗ, Илюк никама та нимӗн те шарламарӗ, анчах каҫхине, ҫывӑрма выртас умӗн, воспитатель тӗрӗслеме пырса пурне те строя тӑратсан, дежурствӑран тухнӑ май вӑл ҫапла рапорт пачӗ:

— Иртнӗ талӑк хушшинче нимӗнле происшестви те пулман. Анчах паян кӑнтӑрла, урай шӑлнӑ чух, эпӗ ак ҫакна тупрӑм...

Ҫав самантрах вӑл шӑлавар кӗсйисенчен вылямалли карт колоди кӑларчӗ те ӑна пӗтӗм строй умӗнче воспитателе тыттарчӗ.

Стройри ачасем пурте юпасем пек хытса тӑчӗҫ. Хӑшӗсем хаш та хаш сывласа илчӗҫ... Колонири никам ҫырман «саккунсем» тӑрӑх шутласан, Илюк халӗ калама ҫук пысӑк преступлени турӗ — вӑл чи вӑрттӑн япалана «хуҫасене» тупса пачӗ! Ҫакӑ вӑл пурне те хирӗҫ пыни, пурне те сутни пулать, куншӑн ӑна чи пысӑк наказани пама тивӗҫ!..

Воспитатель тухса кайсанах, Илюк çине пиллĕкĕнултăн пĕр харăс сиксе ӳкрĕç:

— Сутăнчăк, йĕксĕк! Йытă пыйти!

— Начальниксен ура тупанне çулама тытăнтăн пулать? Актив пулма тăрăшатăн?

— Юлташсене сутса срок чакарттарас тетĕн-и? Асту, ĕмĕрлĕхех кунта выртса юлмалла ан пултăр!

Шавлакансем патне Мишка Мăн Çамка ерипен утса пырса тăчĕ. Вăл ыттисене пĕррех ик еннелле сирчĕ те койка çинче ларакан Илюка сасартăк мĕнпур вăйпа çупса ячĕ. Ку çав тери кĕтмен çĕртен пулнипе тата питĕ хытă ыратса кайнипе Илюк питçăмартине ярса тытрĕ, анчах çав вăхăтра Мишка ăна тепĕр енчен чанлаттарчĕ.

— Анчăк! Калта! Вĕрентем эп сана!..

Вăл, пит-куçне хăрушла пăркаласа, шăлĕсене йĕрсе, татах çапма аллине çĕклерĕ, анчах ĕлкĕреймерĕ, Илюк вăшт кăна сиксе тăрса пĕшкĕнчĕ те, Мăн Çамкана хырăмĕнчен пуçĕпе тĕртрĕ, çав хушăрах ик аллипе ун пĕççисенчен ярса тытса çӳлелле çĕклерĕ те хăйĕн пуçĕ урлă ывăтса ячĕ. Ăнсăртран пырса тапăнакана çавăн пек тумаллине Илюксене хăйсен шкулĕнчи военрук вĕрентнĕччĕ. Тинех кирлĕ пулчĕ вăл вĕрентни!

Мишка вара Илюк койки урлă вĕçсе кайса хăйĕн мăн çамкипе урайне тăрăнчĕ. Йынăшса ячĕ, сиксе тăма хăтланчĕ, анчах Илюк, ун çине хăпарса выртса, аллисене каялла пăрса лартрĕ те тăма памарĕ.

— Яр, йытă! — хăрăлтатса илчĕ Мăн Çамка.

— Тек çапăçмастăн-и? Кала, çулăхмастăн-и? — ыйтрĕ Илюк.

— Тивместĕп...

— Эс тивнинчен хăрамастăп-ха эпĕ, анчах санпа, усалпа, çыхланас килмест манăн!

Мишка çамкинчен юн тухнă иккен, çавна курсан, тем ытлашши ан пултăр тесе, Илюк ăна тек тытса выртмарĕ. Анчах лешĕ, çамкине шăлса илнĕ хыççăн ал тупанĕ çинче юн асăрхасан, хӳрине алăк хушшине хĕстерсе лартнă качака сассипе кăшкăрса ячĕ:

— А-а!.. Эс мана вĕлересшĕн пултăн-и?..

Çав самантрах, чышкине çĕклесе, Илюк çине ыткăнчĕ. Илюк каллех пăрăнма ĕлкĕрчĕ, аяккалла сиксе илчĕ. Мăн Çамка койка пуçĕнче тăракан хыççăр пукана çавăрса тытрĕ.

— Вĕлере-еп!..

— Ивуков, тухса тар! — хăраса кăшкăрса ячĕ тахăшĕ.

Анчах Илюк тарма шутламарӗ те. Халӗ, Мишкăран кая мар тарăхса кайнăскер, вăл шăмшакӗнчи мӗнпур шăнăрӗсене хытарса ăна хирӗç сикрӗ те, иккӗ куç хупса иличченех хăйӗн тăшманне темле майпа çӗре персе антарчӗ, лешӗн аллинчи пукан кӗтеселле вăркăнчӗ. Хальхинче Мишка çурăмӗ çине ӳкрӗ, Илюк ун аллисене урай çумне пăталанă пек тытса лартрӗ.

— Ну, тата кирлӗ-и? Ирсӗр! Тата çыхланатăн-и? — шăлӗсене шатăртаттарса ыйтрӗ Илюк. Вăл çак тăсланкă та хаяр Мăн Çамкана урайне çавăрса çапма пултарнинчен халӗ пурте тӗлӗнчӗç.

— Тăхта... тăхта эп сана! Кун пеккине мар кăтартăп-ха! — Куçӗсене тискеррӗн çавăркаласа пăхрӗ ун çине Мăн Çамка.— Куççулӗ вырăнне юнпа макăрăн-ха!..

— Ну, апла пулсан, эп сана ирччен урайӗнчен тăратмастăп, выртах шăлна йӗрсе! — терӗ Илюк.

Çав вăхăтра вӗсем кӗрешнине пăхса тăракан ытти воспитанниксем сасартăк, такам чулпа пенинчен хăрана çерçисем вӗçсе тарнă пек, тӗрлӗ çӗрелле тапса сикрӗç.

— Ку мӗнле камит тата?! — илтӗнчӗ алăк патӗнче воспитатель сасси. Тахăшӗ ун патне чупса кайса систерме ӗлкӗрнӗ пулмалла ӗнтӗ.

Мăн Çамка çине утланса ларнă Илюк хайне çилпе вӗрсе хăпартнă пекех сиксе тăчӗ, часрах кӗпи-йӗмне тирпейлеме тытăнчӗ, ун хыççăн лешӗ те йăраланса, пӗтӗм шăмшакӗ ыратнă пек хуçкаланса ура çине тăчӗ.

— Эсир, мӗн, ухмаха ернӗ-и? — вӗсем патнелле пычӗ воспитатель.

— Вăл мана çапса пăрахма тытăнчӗ,— терӗ Мăн Çамка, Илюк еннелле ал сулса.— Пăхăр-ха, ака, çамкана çапса шăтарчӗ...

— Мӗнпе çапрӗ вара ун пекех?

— Ав табуреткăпа...

— Тӗрӗс-и, Ивуков?

— Суять! Вăл хай хӗнеме тапратрӗ мана...

— Мӗншӗн?

— Пӗлместӗп. Эп сире карт тупса панăшăн пулмалла.

— Эп мар, эс малтан çапрăн!— кăшкăрчӗ Мăн Çамка.

— Мӗнле намăс мар сана, эп ӗмӗрне те санпа çыхланма шутламан!..— сассине хăпартрӗ Илюк та.

— Чарăнăр! — урипе тапса илчӗ воспитатель.— Эсир иксӗр те ытлашши вӗриленсе кайнă курăнать-ха, сирӗн температурăна кăштах чакармалла пулать. Халех тумланăр та — атьăр ман хыççăн! Тӳрех изолятора! Штрафнойне! Унта сывлăш самаях уçă, сирӗншӗн усăллă пулӗ.

Çапла вара, Илюк пĕрререн пĕрре изоляторта пулса курчĕ, анчах ку та хăйĕн айăпĕпе мар. Тепĕр кунне вĕсене иккĕшне те колони начальникĕ патне илсе кайрĕç, ыйтрĕç, тĕпчерĕç. Илюксен отделенийĕнчи ытти ачасемпе те калаçрĕç те Илюка нимĕн те тумарĕç, çакăн пек çапăçăва хутшăнса кайма юраманни çинчен çеç асăрхаттарчĕç, анчах Мăн Çамкан штрафной изоляторта пилĕк талăк ларса тухмалла пулчĕ.

...Вăхăт шурĕ, каллех хĕл ларчĕ, Илюксен çиччĕмĕш отделенийĕнчи çапăçу тахçанах манăç пулчĕ, ун çинчен никам та аса илмерĕ ĕнтĕ. Анчах хăшпĕрисем ăна манман иккен, вĕсем ун çинчен астуса, «активри» Илюка май килсессĕнех питĕ хытă тавăрма ĕмĕтленнĕ.

Илюк слесарь ĕçне чăннипех юратса пăрахрĕ. Пĕрре тытăннăскер, ăна тĕплĕрех пĕлекен пулас тесе, вăл ялан хăйсене вĕрентекен ватă мастер Куприян Иванч çывăхнерех пулма тăрăшрĕ, пĕр-пĕр япала тунă чух мĕн те пулин ăнмасан, тӳрех ун патне пыра-пыра ыйтса пĕлчĕ, кашни япаланах епле пулсан та лайăхрах, хитререх тăвасшăн пулчĕ. Çакăншăн мастер ăна юрататчĕ, ыттисем хăйсене тума панисене пăсса пăрахсан е ĕç хатĕрĕсене юрăхсăра кăларсан, çавăнтах Илюк çине тĕллесе кăтартатчĕ:

— Эсир Ивуковран пример илĕр! Пăхăр-ха, епле хитре ĕçлет вăл, унăн нихçан та пĕр нимĕн те пăсăлмасть. Курăр акă, колониренех вăл сахалтан та виççĕмĕш разрядри слесарь пулса тухса каять! Ĕмĕрлĕх специальность пулать унăн! А эсир мĕн? Ирĕке тухсан каллех нимле ĕç пĕлмен çынсем пулас тетĕр-и?..

Илюка хăйне те час-часах калатчĕ вăл:

— Тăрăш, ывăлăм, лайăхрах тăрăш! Аçу вăрçăра вилнĕ тетĕн, санăн никама та шанмалли çук, эппин, çавăнпа та ĕçе тĕплĕнрех вĕренес пулать. Асту эсĕ, лайăх ĕçлени укçа парать çеç мар, вăл этемĕн чунне тасатать, кăмăлне çĕклет, çынсем умĕнче те хисеплĕ тăвать.

Хай тăлăххăн ӳснипе мĕн пĕчĕкренех ĕçре пиçĕхнĕ, тĕрлĕ хуçасем патĕнче тарçă выранĕнче пулса хăшкăлнă, темĕн тĕрлĕ нуша курнă, икĕ вăрçă витĕр тухнăскер, Куприян Иванч колоние лекнĕ ачасене пурне те чунтанах ĕçе вĕрентсе çын тума тăрăшать. Чи чăрсăррисем те итлеççĕ вара ăна, ачасемшĕн вăл тăван аслашшĕ пекех туйăнать, вĕсем ăна чĕнессе те ятпа мар, «асатте» тесе чĕнеççĕ. Пуринпе те кăмăллă калаçать вăл, тумалли ĕç çинчен пĕтĕмпех ăнлантарса çитериччен нихçан та уйрăлса каймасть, кирлех пулсассăн, хаярланса хă-

тăрса та илет, анчах вăл ятланăшăн никам та кӳренмест.

Çак Куприян Иванчăн пĕр питĕ хаклă япала — хулăн та вăрăм вăчăраллă кĕмĕл сехет пур. Ăна Куприян Иванча граждан вăрçи вăхăтĕнче Польша фронтĕнче паттăррăн çапăçнăшăн полк командирĕ парнеленĕ иккен. Сехетне вăл кăкри умĕнче, жилетка кĕсйинче, чиксе çӳрет, вăчăри вара яланах курăнать. Куприян Иванч ăна хăй вĕрентекен ачасене часа-часах уçса кăтартать, сехет хуппин шал енне: «Лихому разведчику Красной Армии К. И. Лаптеву» тесе çырнă. Ачасем ыйтнипе, хăйне çав сехете мĕншĕн пани çинчен çирĕм-вăтăр хут та каласа кăтартнă пуль. Унăн калавне Илюк та пĕрре кăна мар илтнĕ. Ытти пур ачасем пекех, вăрçă çинчен каласа панисене итлеме вăл та питĕ юратать...

Анчах пĕррехинче сасартăк питĕ тĕлĕнмелле хыпар сарăлчĕ:

— Куприян Иванча çаратнă!

— Вата мастерăн сехетне вăрланă!..

Чип-чиперех уяр çанталăкра аслатисĕр-мĕнсĕр аçа çапнă пекех пулчĕ ку хыпар. Пĕринчен теприне, пӳлĕмрен пӳлĕме, çуртран çурта çиçĕм пек сарăлчĕ вăл. Нумайăшĕн ĕненес те килмерĕ: кам кун пекех кӳрентерме пултарнă-ха старике?.. Куприян Иванч хăй каланă тăрăх, кăнтăрлаччен ун сехечĕ хăй çумĕнчех пулнă, апат çиме те вăл сехет çине пăхса тухса кайнă, анчах кайран...

Çук, хăй ниçта та çухатма пултарайман ăна, зонăран тухман, анчах ĕçрен килнĕ чух проходнăй будкăра унти пысăк сехете курсан, хăйĕнне тĕрĕслесе пăхма шут тытнă та жилет кĕсйи пуш-пушах пулнине асăрханă... Пурне те лайăх астунă старик, анчах кăнтăрлахи апатран таврăнсан, питĕ ăшă пулнипе, пĕр хушă жилетне хывса çакса ĕçленине пачах манса кайнă.

Вата маçтăрăн чаплă сехечĕ çухални пысăк «ЧП» пулнă, вăл хыпар çур сехетренех колони начальникĕ патне çитнĕ, лешĕ тӳрех: «Зонăри пĕтĕм çĕре кĕреçесемпе чавса тухмалла пулсан та, старик сехетне тупатпăрах!» — тесе каланă пулать.

Чăнах та питĕ хытă шырарĕç вара, пĕтĕм колоние ура çине тăратрĕç çав кĕмĕл сехетшĕн. Тĕпчемен çын та, шыраман вырăн та хăвармарĕç. Юлашкинчен сехете тупрĕç-тупрĕçех, анчах вăл питĕ тискерле пулса тухрĕ...

Сехет çухалнă кун, шăпах иккĕмĕш сменăра, мастерскойĕнче Илюксен отделенийĕ ĕçленĕччĕ, çавăнпа та воспитательсемпе командирсем чăн малтан вĕсенчен ыйтса

тĕпчерĕç. Анчах ответсем пурин те пĕр майлă пулчĕç: нимĕн те курман, асăрхаман, пĕлместĕп... Мишка Мăн Çамкаран ыйтма тытăнсан, вăл кăшкăрмах тапратрĕ:

— Мĕн шуйттанĕ тума кирлĕ мана сехет? Ăна эпĕ колонире кама та пулин сутас пур-и? Ан та çулăхăр пирĕн çума, старик ăна хăех ăçта та пулин тăкса хăварнă ĕнтĕ! Кам пĕлет, тен, вăл уборная кайсан кăларса ӳкернĕ!..

Тĕпченинчен ним усси те пулмарĕ. Ачасем çывăракан пӳлĕмсене ухтарсан та нимĕн те тупăнмарĕ. Тепĕр ирхине Куприян Иванч ĕçе те тухмарĕ — старик хăйĕн çав тери юратнă хаклă япали çухалнăшăн хуйхăрса чирлесех ӳкнĕ пулмалла ĕнтĕ.

Пĕр кун иртрĕ, иккĕ...

— Шырăр, тупăр! — хистерĕç воспитательсем.

— Шутласа пăхăр-ха, кама кӳрентернĕ эсир?! Ватă салтакăн боевой наградине вăрларăр вĕт, уншăн сире пурсăра та ĕмĕрлĕхех намăс пулать! Епле пулсан та тупса старике тавăрса памалла вăл япалана!

Сехет çав-çавах тупăнмарĕ. Куприян Иванч чирлесе выртрĕ.

— Вунçичĕ çул ĕçлерĕм çак колонире, темиçе çĕр ачана та слесаре вĕрентсе кăлартăм, мана пурте яланах тав тунă уншăн. Ку тарана çитсе манăнне никам пĕр пирус вăрламанччĕ, анчах юлашкинчен авă мĕн туса хучĕç...— ӳпкелешрĕ, тет, вăл, начальник ун патне больницăна пырсан. Кун çинчен ачасене воспитатель каласа пачĕ.

Çак пур кунсенче те Илюк калама та çук салху, кĕрхи пĕлĕт тĕслĕ пулса çӳрерĕ. Куприян Иванчăн çакнашкал инкек пулни ăна питĕ шутсăр кӳрентерчĕ. Шкулта уроксенче ларнă чух та, мастерскойра ĕçленĕ вăхăтра та, каçхине çывăрма выртсан та ватă мастер унăн пуçĕнчен тухма пĕлмерĕ...

«Кам-ши, мĕнле йытă хăтланчĕ-ши куна? Хăшĕн ирсĕр алли çĕкленчĕ-ши çавăн пек хисеплĕ япалана вăрлама? Эх, пĕлесчĕ те... тытса çунтарасчĕ пĕрре, ĕмĕр асăнса пурăнмалла пултăр!..»

Сехет çухалнă хыççăн виççĕмĕш кунĕнче, ушкăнĕпех кинона кайса килнĕ хыççăн, каçхи тĕрĕслӳ вăхăтĕнче Илюксем пурăнакан пӳлĕме виçĕ воспитатель пырса кĕчĕç те, ачасене строя тăратса, вĕсем умĕнчех тепĕр хут ухтарма тытăнчĕç — тумбочкăсене уçса пăхрĕç, çитарсене, матрассене ӳппĕн-питтĕн çавăрса хыпашларĕç, урай

хамисене унтан та кунтан тыта-тыта пăхрĕç — хăйпăнса тăмаççĕ-и? Хушăк-çурăксем çук-и?

Вăл кун дежурнăй пулнă Мишка Мăн Çамка çав воспитательсем таврашĕнчех явăнса çӳрерĕ, хăй те вĕсене пулăшанçи пулчĕ. Çав хушăрах хăй пĕрмай кăмăлсăр пулнă пек мăкăртатрĕ:

— Кăлăхах шыратăр! Нимĕн те çук пирĕн патра... Пулма та пултараймасть. Вăрланă япалана кам ухмахĕ хăй килĕнче тытса усратăр? Ун пек тăмсай вăрăсем тĕнчере çук.

Воспитательсем пĕр койка патĕнчен тепĕр койка патне куçса пычĕç. Санчастьрен таврăннă хыççăн вăй илсех çитеймен Мустафа кинона та кайман, койка çинчех выртать-мĕн те, ăна тăратса, ун вырăнне те тĕрĕслерĕç. Унтан Мишка Лобан койки патне пычĕç.

— Лайăхрах шырăр, тавăрса силлĕр, тен, сирĕн телее, сасартăк ылтăн купи сиксе тухĕ! — тутине чалăштарса йĕрĕнчĕклĕн кулса илчĕ Мишка.

— Шăлна йĕрсе ан тăр, сансăрах пĕлеççĕ мĕн тумаллине! — хыттăн каласа хучĕ ăна воспитательсенчен пĕри.

Юлашкинчен вĕсем Илюк койки патне çитрĕç. Хăйĕн вырăнĕ çинчен утиялпа простыньсене сӳсе илнине, çитарĕпе матрасне хыпашланине Илюк питĕ лăпкăн пăхса тăчĕ, ăна ку нимĕн чухлĕ те пăшăрхантармарĕ. Пурин вырăнĕсене те тĕрĕслеççĕ пулсан, унăнне те тĕрĕслемеллех ĕнтĕ. Анчах унран ним усси те çук вĕт-ха! Илюк Куприян Иванчăн сехетне тытман, тытас та çук. Кам вăрланине пĕлес пулсан, ăна вăл хăй тем туса тăкнă пулĕччĕ.

Пĕлмен çав Илюк нимĕн те!..

Воспитательсенчен пĕри унăн матрасне пкĕ аллипе пĕр харăс пуса-пуса, çитар патĕнчен пуçласа вĕçнеллех хыпашласа çитрĕ те сасартăк пат! чарăнса, ыттисем çине пăхрĕ.

— Камăн çĕçĕ пур?

— Мĕн те пулин сисĕнет-им?..— Пĕри çавăнтах кăранташ шĕвĕртмелли пĕчĕкçеç хуçмалли çĕçĕ кăларса пачĕ. Ку вара Илюк матрасĕн вĕçне çĕвĕ тăрăх чăрт-чăрт тутарчĕ те пĕр аллине шалалла чиксе ячĕ.

Стройри ачасем куçĕсене пĕр мăчлаттармасăр пăхса тăчĕç. Нивушлĕ вара сехет тупăнчĕ?! Ахальтен касмаççĕ пуль çав... Ку таранччен никам матрасне те сӳтсе пăхмарĕç вĕт-ха, эппин, темскер пурах унта!

Кĕçех воспитатель матрас ăшĕнчен кпке таткипе

чĕркенĕ пĕчĕк чăмăркка туртса кăларчĕ те ăна вырăн çине хурса салтма тытăнчĕ. Ачасем хăйсем стройра тăни çинчен манса кайсах кĕрр! утрĕç ун патнелле, тепĕр воспитателĕн вĕсене аллисемпе тĕрте-тĕртех каялла чакарса тăратма тиврĕ.

— Сирĕн ĕç çук кунта!..

Кипке таткине салтсан, малтан кăвак хут курăнчĕ, хут ăшĕнчен пĕтĕм колони паллакă çап-çутă, хулăн та вăрăм вăчăраллă сехет тухрĕ — вата мастер Куприян Иванч сехечĕ.

— Ну, пулчĕ те пирĕн ĕç, хамăр мĕн шыранине тупрăмăр,— терĕ сехете туртса кăларнă воспитатель, хăй çывăхĕнчех тăракан Мăн Çамка çине пăхса.— А эсĕ пирĕн патра нимĕн те çук, пулма та пултараймасть тесе ĕнентерме тăрăшатăн пире...

— Винават,— салтак пек йăрст! тăсăлса тăчĕ Мишка.— Пирĕн хушăра халĕ те çавнашкал намăса çухатнă вăрăсем пулнине пĕлмен эпĕ!

— Камăн койки пулчĕ-ха ĕнтĕ ку? — ачасем çине пăхса ыйтрĕ воспитатель.

— Манăн! — терĕ те çав самантрах Илюк стройран икĕ утăм малалла тухса тăчĕ.— Койки манăн, анчах эпĕ ку сехете вăрламан, вăл ман матрас ăшне епле майпа лекнине те пĕлместĕп. Хуть те çакăнтах персе пăрахăр мана! — Вăл çав тери хытă пăлханчĕ, анчах хăй пĕртте хăранă пек туйăнмарĕ.

— Кам вăрланă-ха эппин? — ун патнелле пат, пат утса пырса тăрук кăшкăрчĕ Мăн Çамка.— Тен, эп пырса чикнĕ вăл сехете сан патна? Э? Ан тун луччă, эпир питĕ лайăх пĕлетпĕр сана — эсĕ кунта та магазинран пĕр михĕ ылтăн сехет çĕклесе тухма тăнăшăн лекнĕ! Часовщик!— хăрăлтатса кăшкăрма тытăнса кайрĕ вăл.— Хăвна хăв «актив» пек кăтартма хăтланса пурăнатăн — ударник, отличник, яту хĕрлĕ хăма çинче пулнипе сăмсуна каçăртса çӳретĕн, çынсене тиркетĕн, анчах та ху чăн-чăн сволочь, халь акă пĕтĕм отделение намăс курмалла туса хутăн!

— Эп нимĕн те туман,—терĕ Илюк, шăлĕсене çыртса.

— Епле туман? Акă, ара, сехетне хăвăн тетрадь хуплашкипех чĕркенĕ-иç? — Вăл койка çинче выртакан кăвак хута ярса тытрĕ.— Санăн мар-им çак? Акă, кур, кунта «тетрадь по черчению И. Ивукова» тесе çырнă!

— Вăл тетрадь манăн тахçанах çухалнă, эсир ăна вăрласа карт тунă, картне хам тупса пурин умĕнчех воспитателе патăм.

— А-ав епле иккен! Эс яланах таса, ыттисем кăна айăплă! Ну, ничево,— чышкипе юнаса илчĕ Мăн Çамка,— тепĕр виçĕ çул ĕçлесе тупрăн хăвна валли, питĕ лайăх!

— Чарăн, Лобан, ку вăл санăн ĕç мар! — хыттăн пӳлчĕ ăна воспитатель.— Кама айăпламаллине сансăрах пĕлĕç! — Унтан вăл пурне те команда пачĕ: — Отбой! Халех пурте çывăрма выртăр! Виç минутран пĕр сасă та ан илтĕннĕ пултăр. Астăвăр, килсе тĕрĕслетĕп...

Паллах, çав каçхине Илюк çĕрĕпех çывăраймарĕ. Питĕ хытă пăлханчĕ, ниçта кайса кĕреймерĕ вăл. Ытла та тарăхмалла, тӳсме çук кӳренмелле вĕт-ха!.. Пĕтĕм чунтан йĕркеллĕ пулма, воспитательсене итлесе, чипер вĕренсе, ĕçлесе пурăнма тăрăшнă çĕртех çакăн пек ирсĕр япала сиксе тухрĕ! Кăштах та пулин, пĕр чĕптĕм те пулин айăплă пулсан татахчĕ хуть, атту вĕт нихăш енчен те, нимĕн чухлĕ те айăплă мар-çке вăл! Тытăнаççĕ ĕнтĕ халь сĕтĕрме. Каллех допрос, каллех следстви... Чунĕ кӳтсе çитнипе Илюк утиялпа пуçĕ çинченех хупланчĕ те çав тери хурланса макăрма тапратрĕ.

«Мĕншĕн эпĕ çакăн пек телейсĕр-ха? — шухăшларĕ хăй.— Мĕншĕн пĕтĕм хурлăх ман çине тиенет? Малашне те кун пекех пулсан, эп нихçан та çын пулса çитес çук, ĕмĕрне те ыттисем пек телейлĕ пурнăçпа пурăнса кураймăп...»

Çав вăхăтра тахăшĕ тула тухса кĕчĕ. Çывăхрах çын утнине туйса, Илюк тутине çыртса макăрма чарăнчĕ, анчах лешĕ ун тĕлĕнчен малалла иртсе каймарĕ, чĕрне вĕççĕн пусса, Илюк койки патне пычĕ те, йăпăр-япăр ун утиял хĕррине çĕклесе, юнашар кĕрсе выртрĕ.

— Эпĕ-ха ку, Мустафа...

— Мĕн кирлĕ сана? — тĕлĕнчĕ Илюк.

— Хуллен! Пуç çинчен лайăхрах витĕн,— пăшăлтатрĕ тутар ачи.— Эп сана пĕр сăмах калама килтĕм...

— Мĕнле сăмах тата?

— Эс нимĕн те ан хăра, Ильяс. Сана нимĕн те тумаççĕ...

— Ăçтан пĕлетĕн?

— Эп пĕтĕмпех каласа паратăп...

— Мĕн каласа паратăн, кама? — ăнланмарĕ Илюк.

— Сехете паян сан матрас ăшне Лобан чиксе хучĕ,— хăварт-хăварт пăшăлтатрĕ Мустафа.— Мана вăл ним пĕлми çывăрать тесе шутларĕ пулмалла, малтан ман тĕлпе темиçе хут та каллĕ-маллĕ иртсе çӳрерĕ, анчах эпĕ пĕтĕмпех курса выртрăм. Вăл сан матрас вĕçне

çăтăр-çатăр çурнине те, кĕсйинчен темскер кăларса шалалла чиксе хунине те, çĕлесе лартнине те... Унтан вăл сĕтел хушшине ларса темскер çырчĕ те пĕр вăхăт таçта тухса çӳрерĕ. Çав хушăра эп сан койку патне чупса килсе хыпашласа пăхрăм та пĕтĕмпех ăнлантăм. Унтан каллех хам вырăн çине выртса çывăрнă пек турăм... Лобан ăна нимĕн те пĕлмест. Манăн ыран санчаçе каймалла, çавăн чух хамăрăн воспитателе тĕл пулатăп та пĕтĕмпех каласа паратăп... Анчах эп каланине никама та ан шарла эсĕ. Мăн Çамка пĕлсен, мана тем туса хума пултарать, хăратăп эпĕ унран, ытла та усал вăл. Ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм. Тавтапуç сана, Мустафа...

— Ну, халь, эппин, чипер лăпланса çывăр. Атту эс макăраттăнччĕ вĕт-ха, эп çавна сиссе килтĕм сан патна.

Тутар ачи епле кушакла шăппăн пынă, çавăн пекех ним сассăр тăрса кайрĕ. Ку таранччен Илюк ун çине питех те çаврăнса пăхманччĕ, хутшăнсах та кайманччĕ унпа. Пĕвĕпе пĕчĕккĕ, имшерккерех пирки пысăкраххисем ăна час-часах кӳрентеретчĕç, пĕррехинче Мăн Çамка ăна вăйпах хăй вырăнне урай çутарчĕ, теприиче унăн килтен ярса панă посылкинчен пур тутлăрах çимĕçсене те кăларса илсе, ахăра-ахăрах пурне те валеçсе пачĕ, Мустафа ăна хирĕç пĕр сăмах та калама пултараймарĕ... Анчах ачи питĕ лайăхскер иккен. Малашне унпа туслă пулать ĕнтĕ Илюк, ăна кӳрентерме те памасть!

Мустафа пырса кайнă хыççăн Илюк кăмăлĕ тӳрех улшăнчĕ, пăлханни иртрĕ, ăшчикки вăркама чарăнчĕ, анчах вăл пурпĕрех çывăрса каяймарĕ. Ăна Мăн Çамкан ирсĕрлĕхĕ, вăл çав тери намăссăр пулни калама та çук тарăхтарчĕ.

«Ăçтан пулма пĕлеççĕ çавăн пек путсĕрсем? — шухăшларĕ вăл.— Кăшкăрать вĕт-ха тата, манах вараласа путарса лартасшăн. Анчах мĕн тунă-ха эп ăна? Нивушлĕ çав ирсĕр карт колодине тупса воспитателе панăшăнах çак таранччен кураймасăр пурăнать вăл мана?..»

Çавăнтах вăл судра Маланипе Артист хăйне епле усаллăн тапăннине, темĕн тĕрлĕ суйса лапра ăшне таптаса лартма тăрăшнине аса илчĕ.

— Вăрăсен йĕрки çапла иккен, кам хăйсенчен уйрălса тӳрĕ çул çине тухма пикенет, ăна вĕсем пур майсемпе те пĕтерсе хума тăрăшаççĕ. Анчах халь тин мана никам та тĕрĕс çул çинчен пăрса яраймĕ! Нихçан та пулаймĕ ун пекки!..

## 34

Вată мастер сехечĕшĕн Илюка айăпласси пулмарĕ. Сехете ун патĕнчен тупни çинчен колони тăрăх хыпар сарăлсан, ăна чăнах та Илюк вăрлама пултарнине никамăн та ĕненес килмерĕ. Куприян Иванч хăй те тӳрех каларĕ:

— Суя! Ивукова эпĕ хамăн ачана пĕлнĕ пекех питĕ лайăх пĕлсе çитрĕм ĕнтĕ — сăпайлă, ăслă ача, ĕçе вĕренсе çын пуласси çинчен çеç шухăшласа пурăнать. Ман япалана вăл ĕмĕрне те тĕкĕнес çук! Вăл вăрланине ĕненместĕп, çук!..

Шкулти вĕренӳ пайĕн заведующийĕ Ирина Никитична Илюка уроксем хыççăн хăйĕн пӳлĕмне чĕнсе кĕртсен, çав тери хурлăхлă сасăпа ыйтрĕ:

— Чăнах-и вара ку, Илюша? Нивушлĕ эсех çавăн пек ирсĕр ĕç тума пултартăн-ши? Каласа пар мана ним пытармасăр...

— Хуть те çакăнтах выртса вилем, анчах манра ним айăп та çук, сире чунтан хисеплесе, атте ячĕпе тупа туса калатăп,— терĕ Илюк, ун куçĕнчен тӳррĕн пăхса.— Тăхтăр акă, хăвăрах пĕлетĕр...

— Эп ĕненетĕп сана,— пуçĕпе сулса илчĕ Ирина Никитична.

Мустафа хăйсен воспитательне никам çук çĕрте тĕл пулса Мăн Çамка дежурнăй пулнă кун мĕн хăтланни çинчен каласа парсан вара Илюкран кун пирки ыйтса та тăмарĕç. Пĕтĕм айăп Мишка çине тиенчĕ. Малтан вăл шат та пат тунма хăтланчĕ, çухăрчĕ, макăранçи турĕ, хăйне «ним сăлтавсăр, курайманнипе айăпланăшăн» çакăнса вилессипе хăратрĕ, анчах кайран ирĕксĕрех тĕрĕссине каласа памалла пулчĕ унăн,— ăна Мустафа та курнă, тата сехете Илюк матрасĕ ăшне чикнĕ хыççăн вăл хăех хут татки çине: «Çиччĕмĕш отделение тепре пырса ухтарăр», тесе çырнă та почта ещĕкне кайса пăрахнă иккен. Ку хута вăл çырнине воспитательсем почерк тăрăх пĕлнĕ. Пĕр эрне пек иртсен, ăна урăх колоние ямалла турĕç. Вăл тухса кайнă чух отделенири ачасенчен нихăшĕ те ăна ырă сунакан пулмарĕ. Ытла та пурне те тарăхтарса, йăлăхтарса çитернĕ çав вăл...

Çакăн хыççăн вара Илюк пурнăçĕ йĕркеллех шуса пычĕ. Вăл ĕнтĕ халь тăххăрмĕш класра вĕреннĕ, ачасем ăна хăйсен стена хаçачĕн редакторĕ турĕç, мастерскойĕнче Куприян Иванч ăна колоние çĕнĕрен пыракан

ачасене ĕçе вĕренттерме тытăнчĕ — Илюк унăн помощникĕ, хăйне майлă инструктор пулса тăчĕ.

Колоние килнĕренпе икĕ хĕл иртрĕ, каллех çуркунне пулчĕ, пĕтĕм тавралăх çемçе ешĕл тум тăхăнса капăрланчĕ, унтан шăрăх кунсем пуçланчĕç, зонăри нумай клумбăсем çинче хĕрлĕ, сарă, кĕрен, кăвак чечексем çуралчĕç — ытармалла мар хитре...

Илюк халь час-часах кил çинчен, амăшĕ çинчен шухăшларĕ, хушăран ăна темшĕн кӳршĕ хĕрачи, шкулта вĕреннĕ чух унăн çывăх тусĕ пулнă Натали аса килчĕ. Амăшĕ патне вăл кашни уйăхрах пĕрер-икшер çыру ярса тăчĕ, хăйĕн пурнăçĕ ăнса пыни çинчен пĕлтерчĕ, лăплантарчĕ. Хăй вăл çак икĕ çул хушшинче чылай ӳсрĕ, унăн хулпуççийĕсем те сарăлчĕç, хулĕсем те тĕрекленчĕç, сăмси айĕнче хура мамăк пек усси палăрса тăракан пулчĕ, сасси те улшăнса хулăнланчĕ — ачана арçын сăнĕ кĕрсе пычĕ.

Пĕрмай киле часрах таврăнас ĕмĕтпе вăл пĕчĕк табель-календарь тăрăх кунта пурăнса ирттермелли уйăхсене, кунсене шутласа пыма тытăнчĕ. Часах акă каллех кĕркунне çитет, кайран хĕл иртет те çулла пулать, унтан вара... Шутласан, нумай та мар ĕнтĕ.

Юлашки вăхăтра вăл ирĕклĕ çын пекех пурăнчĕ, Куприян Иванч Илюкпа унăн халЬхи чи çывăх тусне, Мустафана, хăйпе пĕрле темиçе хутчен те хулана илсе кайрĕ,— унта вĕсем мастерской валли кирлĕ хатĕр-хĕтĕрсем илчĕç. Пĕррехинче, Май уявĕ умĕн, стена хаçачĕ валли тĕрлĕ сăрсем туянма пĕчченех ячĕç, укçа та шанса пачĕç. Çакă вара Илюка питĕ савăнтарчĕ — эппин, ăна текех вăрă тесе шутламаççĕ, йĕркеллĕ çын выраннех хураççĕ!..

Çав Май уявĕ умĕнхи кунсенчех унăн тата тепĕр пысăк савăнăç пулчĕ. Вăл килтен, амăшĕнчен, çыру илчĕ. Ку нимех те мар пек-ха,— амăшĕ ун патне тăтăшах çырнă, хăйĕн пурнăçĕ çинчен те, ялти çĕнĕ хыпарсем çинчен те пĕлтерсе тăнă. Анчах хальхинче амăшĕн çырăвĕ ăшĕнчен тата тепĕр çыру тухрĕ — пĕчĕк кăна илемлĕ сенкер конверт. Ун çине питĕ хитре чечек — шурă лантăш ӳкерсе хунă, айне «инçетри тусăма» тесе çырнă...

Çак конверта алла илсен, Илюкăн пичĕ-куçĕ вут пек пĕçерсе кайрĕ. Мĕне пĕлтерет ку? Камран пулма пултарать кун пек çыру? Çакна тавçăрса илес тесе, Илюк вăрахчен конверта уçмасăр, унăн-кунăн çавăркаласа пăхса тăчĕ. Чăнах та, кам яма пултарнă-ха ăна? Кам манман Илюка, кам ăна хăйĕн «инçетри тусĕ» тесе

шутлама пултарать?.. Арçын çырас пулсан — чечексем ӳкерсе аппаланас çук, куна, тем тесен те, пĕр-пĕр хĕрача тăрăшсах ӳкерсе ларнă. Анчах мĕнле хĕрача? Кам алли ку, камăн почеркĕ? Питĕ паллану, нумай хутчен курнă пек туйăнать!

— Натали...— пăшăлтатса илчĕ те Илюк, чылай тăрсан, хитре конверта ерипен, тирпейлĕ уçма тытăнчĕ.

Вăл йăнăшман. Ун патне ку çырăва Натали, унăн шкулта вĕреннĕ чухнехи çывăх тусĕ пулнă ырă хĕрача янă иккен. Анчах хăй нимĕн те çырман, сăвă çеç чиксе янă. Ак мĕнле сăвă:

Ваштăр-ваштăр лантăш хумханать,
Нӳрĕ лăм ӳкнишĕн савăнать.
Хĕвелпе сарать вăл çеçкине,
Сывлăмпа çăвать шур чечекне,—
Тасалса çутал эс, шурă лантăшăм!

Ирĕн-каçăн чунăм савăнать,
Инçетри туса эп асăнап.
. . . . . . эпĕ илтĕм ыр хыпар,
Çавăнпа чĕре ман салху мар.
Чун пекех кĕтетĕп, . . . . . . тантăшăм!

Илюк малтанах сăвăри хăшпĕр сăмахсем вырăнне пăнчăсем лартса тухнине те асăрхамарĕ. Сиктерсе хăварнă сăмахсемсĕр те ку сăвă питĕ ăнланмалла-çке-ха: «Ирĕн-каçăн чунăм савăнать, инçетри туса эп асăнап...», «Чун пекех кĕтетĕп, тантăшăм...» Епле ырă, хаклă, чĕре патне пыракан ытарайми сăмахсем!.. Эппин, Илюк пурнăçĕнче темтепĕр пулса иртнĕ пулин те, вăл тĕрмере ларать пулсан та, Натали унран йĕрĕнмест, тиркесе тămасть. Ăна асăнать. Ахальтен чиксе яман ĕнтĕ вăл çак сăвва Илюк амăшĕн çырăвĕпе пĕрле. Эх, Натали, ырă чунлă, çут чĕреллĕ Натали!..

Питĕ хаваслантарса ячĕ Илюка çак кĕтмен çĕртен çитсе ӳкнĕ çыру. Ан тив, Натали хăйĕнчен нимĕн те çырман пултăр, анчах та çак сăвва вăл хăй суйласа илнĕ-çке, хăй шухăшне вăл ятарласа поэт сăмахĕсемпе каласа панă!

Çакăн хыççăн Илюкăн чун-чĕри тата ытларах тасалнă пек туйăнчĕ. Никам курман чух çырăва вăл вуншар хут кăлара-кăлара вуларĕ, вара Натали çырса янă сăвва сисмесĕрех вĕренсе çитрĕ те ăна хăй ăшĕнче каласа çӳрерĕ:

— Ирĕн-каçăн чунăм савăнать,
Инçетри туса эп асăнап...

Тепӗр икӗ кунтанах, черетлӗ дежурствӑра пулнӑ чух, Илюк ҫӗрӗпе ҫывӑрмасӑр Натали патне питӗ вӑрӑм ҫыру ҫырчӗ. Малтан хӑйне манманшӑн, ҫырӑвӗпе савӑнтарнӑшӑн тав турӗ, унтан хӑйӗн малашнехи ҫутӑ ӗмӗчӗсем ҫинчен каласа пачӗ.

— Ҫын пулатӑпах эпӗ, тусӑм Натали, ӗнен мана!

Ик эрнерен Наталирен ответ килчӗ. Питӗ ӑшӑ, кӑмӑллӑ ҫыру...

Ҫапла кунсем, эрнесем шуса иртрӗҫ...

Пӗррехинче, вырсарникун каҫалапа, вуласа тухнӑ кӗнекесене улӑштарма клубалла пынӑ чух, Илюка Ирина Никитична тӗл пулса чарса тӑратрӗ.

— Мӗнле пурӑнатӑн, Илюша? — яланхи пекех йӑвашшӑн ыйтрӗ вӑл.— Кӑмӑлсем мӗнле? Сывлӑху? Килтен ҫырусем илкелетӗн-и?

— Тавтапуҫ, Ирина Никитична, аванах пурӑнатӑп, кӑмӑлӑм пирки те ӳпкелешместӗп, анне тӑтӑшах ҫырать, чиперех пурӑнатӑп тет...

— Санӑн ӑна курас килекен пулса ҫитрӗ пулӗ-ха?

— Ой, ан та калӑр, Ирина Никитична. Аннепе пӗрре курса калаҫнӑшӑн тем панӑ пулӑттӑм!..

— Ну, кӑмӑлна ан хуҫ ӗнтӗ халь тин, санӑн киле каясси нумай юлмарӗ, аннӳне часах куратӑн, иксӗр те телейлӗ пулатӑр! — Темшӗн-ҫке, учительница ун ҫине пӑхса йӑл та йӑл кулса илчӗ.

— Э-э,— ним пытармасӑрах ал сулчӗ Илюк,— кӗтмелӗх пур-ха, тата вуникӗ уйӑх ҫурӑ пурӑнмалла унччен!

— Хӑш чух вӑхӑт питӗ хӑвӑрт иртет, Илюша... Сиссе те юлаймастӑн вӑл мӗнле иртсе кайнине. Ҫулталӑк та пӗр уйӑх ҫеҫ пек туйӑнать.

— Анчах тепӗр чухне пӗр эрне те ҫулталӑкран вӑрӑм пулать, Ирина Никитична...

— Тӗрӗс, ун пек те пулать. Пурӑнма пӗлмесен... Калӑпӑр, ҫыннӑн ирӗке тухасси тепӗр эрне ҫеҫ юлнӑ, анчах та вӑл ҫав вӑхӑтра тата мӗн те пулин туса хурать те...

— Сӑмахран, мастерӑнне сехет вӑрлать-и? — кулса илчӗ Илюк.

— Сехет-и, мӗн-и унта — пурӗпӗр. Анчах пурӑнма пӗлсен вара — хӑш чух ҫулталӑк та эрнерен кӗскерех пулать. Ҫапла-и?

— Вӑл тӗрӗс, ӑна пӗлетпӗр эпир, Ирина Никитична...

...Ҫак калаҫӑвӑн пӗлтерӗшӗ пысӑк пулнӑ, анчах Илюк ҫавна нимӗн чухлӗ те сисмерӗ, ку вӑл уншӑн ахаль калаҫу пек ҫеҫ пулчӗ. Мӗнех вара? Ирина Никитична хӑйӗн

вĕренекенĕсем еплерех пуранниппе яланах интересленет, вĕсене пур чухне те хавхалантарать, кăмăлĕсене çĕклет. Халĕ те вăл тĕрĕс каларĕ — Илюкăн срокĕ чăнах та ытлашши нумаях юлман ĕнтĕ, виçĕ пайран иккĕшне пурăнса ирттернĕ, часах вĕçĕ курăнма пуçлать, унтан вăл амăшĕ патне таврăнать те, вĕсем иккĕшĕ калама çук телейлĕ пулаççĕ, яланлăхах, ĕмĕрлĕхех!

Анчах Ирина Никитична урăххи çинчен систернĕмĕн...

Ик-виç кунтанах колонире питĕ вăрттăн хыпар сарăлчĕ: «Часах пирĕн пата облаçри суд коллегийĕ килсе, хăшпĕрисене срокчен ирĕке кăлармалла, тет...»

Çакна илтсен, Илюк тӳрех хăй вырсарникун каçхине Ирина Никитичнăпа калаçнине аса илчĕ. Ара, çавăн пирки вăлтса каларĕ пулĕ-çке вăл! «Часах аннӳне куратăн...» Кунта килекен суд камăн-камăн ĕçĕсене пăхса тухассине пĕлетех ĕнтĕ вăл, мĕншĕн тесен унăн упăшки — колони начальникĕ, хăй — шкулти завуч... Вĕсем хăйсем суйласа палăртаççĕ вĕт-ха колонирен срокчен кăлармалли ачасене, хăйсем ыйтаççĕ вĕсене кăларма! Кам пĕлет, тен, вĕсем унăн ĕçне те пăхса тухмалла тунă?.. Илюк колоние килнĕренпех тăрăшса вĕренет, иртĕнмест, мастерскойĕнче те аван ĕçлесе пырать... Мĕншĕн пăхса тухма пултараймаççĕ-ха унăн ĕçне? Пур енчен илсен те пултараççĕ!

Çак шухăш Илюк пуçне пăта пек кĕрсе ларчĕ те пĕр канăç та памарĕ вара, апат та анми пулчĕ, çывăрма выртсан та ыйхи килмерĕ. Кăшт тĕлĕрсе кайсанах, ăна тăван килĕ, амăшĕ, кӳршĕ хĕрĕ Натали курăнчĕ, унпа вĕсем е шкулта пĕр парта хушшинче лараççĕ пек, е колхоз садĕнче хăйсем лартнă çырла йывăççисене пăхса çӳреççĕ, е каçхине урамра пулаççĕ... Çакăн пек телейлĕ тĕлĕксем курнă вăхăтра тăрук вăранса, хăй пĕртте килте мар, колонирех пулнине тавçăрса илсен, тахçанчченех кӳренсе выртрĕ вăл.

Ăна пĕртен-пĕр ыйту асаплантарчĕ: унăн ĕçне çĕнĕрен пăхса тухма параççĕ-ши, çук-ши? Темиçе хутчен те вăл, ним çине пăхмасăрах, кун пирки Ирина Никитичнăран ыйтса пĕлме шутларĕ. Пырас та тӳрех ыйтас:

— Эсир пĕтĕмпех пĕлетĕр! Тархасшăн, ан асаплантарăр, каласа парăр тĕрĕссипе, текех тӳссе пурăнма вăйăм юлмарĕ манăн...

Темшĕн-çке çакăн пек тума хăюлăхĕ çитеймерĕ унăн. Ирина Никитична хăй вара ун çинчен урăх пĕрре те

сăмах хускатмарĕ, çаванпа та Илюк иккĕленме те пуç-ларĕ:

«Ахаль, шӳтле калаçу кăна пулчĕ пуль ку... Никам та килмест, нимĕнле ĕçсене те пăхса тухма шутламасть. Тӳсес пулать ĕнтĕ приговорти срок çитиччен!»

Анчах та вăл йăнăшнă. Эрне те иртмерĕ — облаçри судран пычĕç те, колонири пуçлăхсем хатĕрлесе хунă ĕçсене пăхса тухса, ултă воспитаннике срокĕсем çитиччен килĕсене яма йышăнчĕç. Питĕ хăвăрт тата пĕртте малтанхи пек пулмарĕ ку суд. Ачасене халь айăпламарĕç, вĕсем тунă преступленисем çинчен сăмах майĕн каланă пек çеç асăнса илчĕç, унтан ырлама, мухтама тытăнчĕç, малашне вĕсем тĕрĕс пурнăçпа пурăнасса, тӳрĕ кăмăллă, таса чунлă совет гражданĕсем пуласса шанма май пурри çинчен каларĕç. Колони начальникĕ каланă хыççăн воспитательсене сăмах пачĕç, юлашкинчен завуч Ирина Никитична ку ачасем шкулта мĕнле тăрăшса вĕренни çинчен пĕлтерчĕ.

Ыттисен ĕçĕсене пăхса тухнă чух та Илюк питĕ хытă пăлханчĕ, сăмах хăй çинчен пуçлансан вара ун айĕнчи пукан çине кăвар хунă пекех ларчĕ. Урăхла пулма та пултараймасть çав! Облаçри судран килнисем халь унăн шăпине татса панă вĕт-ха: паянтан пуçласа Илюкăн ирĕклĕ çын пулса киле таврăнмалла-и е тата тепĕр çулталăк — вуникĕ уйăх, виççĕр утмăл пилĕк кун! — çакăнтах тунсăхласа пурăнмалла?!

— Икĕ çул хушшинче колонири йĕркесене пĕртте пăсманнине, шкулта лайăх вĕреннине, хăй тăрăшнипе квалификациллĕ рабочи пулса тăнине шута илсе, колонирен пĕр çулталăк малтан кăлармалла тăвас...

Хăй пирки çапла çырнине вуласа парсан, Илюкăн тӳрех куççулĕ тухса кайрĕ. Анчах та ку унăн хурланнипе мар, ниçта кайса кĕрейми савăннипе пулчĕ.

Ирĕке кăлармалла тунисене çав кунах пĕтĕм колонири воспитанниксен стройĕ умĕнче саламларĕç, малашне йĕркеллĕ пурăнма, телейлĕ çынсем пулма сунчĕç, вĕсем хăйсем те хаваслăн туха-туха каларĕç, ирĕке кăларнăшăн тав туса, ӳлĕмрен чи примерлă çынсем пулма сăмах пачĕç, унтан вĕсене кирлĕ хутсем, укçа пачĕç те, каçалапа çывăхри станцие машинăпах леçсе, поезд çине лартсах ячĕç. Илюксăр пуçне, çав телейлĕ ачасем хушшинче Мустафа та пурччĕ, вăл та килне, ватă кукамăшĕ патне, таврăннă...

Çапла вĕçленчĕ Илюкăн колонири пурнăçĕ.

Поезд тапранса кайсан, вăл, вагон чӳречи умĕнче

тăрса, чылайччен колони еннелле пăхса пычĕ. Ăна унти тирпейлĕ çурт-йĕрсем, шавлă пурнăç, хăйне нумай ырă тунă Ирина Никитична, Куприян Иванч аса килчĕç. Вĕсене вăл тек нихçан та курас çук ĕнтĕ, анчах манма та пултарас çук...

Ирхине Илюкпа пĕрле пыракан ачасем пĕрин хыççăн тепри ана-ана юлчĕç — вĕсем ку енчисем пулнă. Чăн юлашкинчен пĕр пысăках мар станцинче Мустафа анчĕ. Илюкпа вĕсем питĕ ăшшăн, тăвансем пекех сывпуллашрĕç, ӳлĕмрен çырусем çырса тăма пĕр-пĕрне килти адресĕсене пачĕç.

— Ан ман, Мустафа! Çы-ыр!..— кăшкăрчĕ Илюк, поезд тапраннă хыççăн чӳрече витĕр аллипе сулса.

— Сывă пу-ул! Телейлĕ çи-ит! — ыр сунчĕ ăна тутар ачи.

Унпа сывпуллашнипе вара Илюк колонирен пĕтĕмпех уйрăлса çитрĕ. Шел те пулчĕ пăртак...

...Çав станцире Илюксен вагонĕ пушансах юлчĕ, пассажирсем пурте тенĕ пекех тухса пĕтрĕç. Анчах ларасса иккĕн çеç ларчĕç — вăтăр-вăтăр пиллĕксене çитнĕ икĕ арçын: пĕри хура та лутрарах, шатра питлĕ, хĕсĕкрех куçлăскер, тепри вăрăм та сарă, çамкин сылтăм енче пысăк çĕвĕ пур. Иккĕшĕ те кивĕрех тумсемпе, кутамккасемпе.

Вагон коридорĕ тăрăх унталла-кунталла пăхса утса пынă май вĕсем Илюк ларакан купе пушах пулнине курчĕç те тӳрех унталла пăрăнса кĕчĕç.

— Никам та çук-и кунта? — ыйтрĕ çӳлли.

— Эп анчах,— терĕ Илюк.

— Шикарно! — Шатра питли кутамккине çӳлти сентре çинелле ывăтрĕ те сак çине ӳкнĕ пекех ларчĕ.

— Кун пек экспреспа эпĕ тĕнче хĕррине çитиех кайма хатĕр,— терĕ çĕвĕк çамкалли. Унтан тăрук Илюк еннелле çаврăнса ыйтрĕ: — Инçе каятăн-и капла, пацан?

Илюк хăйĕн мĕнле станцине çитмеллине каларĕ.

— О, пирĕн пекех, эппин! Попутчик! Ху ăçтисем вара эс?

Илюк каллех тĕрĕссине каласа пачĕ.

— Ха, земляк иккен, хамăр ял! Питĕ аван, кайма веççолăрах пулать пире. Анчах ăçтан килетĕн-ха эсĕ кун пек? Эпир хамăр, сăмахран каласан, курортран таврăнатпăр...

Илюк кăна хирĕç тăруках ним калама аптрарĕ. Сыннисем ăна пĕрре пăхсанах кăмăла каймарĕç, хăй çав

тери курайман Артистпа Матроса аса илтерчĕç. Хăйсене ытла та ирĕклĕ тыткалаççĕ, калаçнисем те килĕшӳсĕр, темле йĕрĕнмелле. Вырнаçса ларнă-ларманах вĕсем çур литр ĕçрĕç те, вара тата ытларах паллă пулчĕ — иккĕшĕ те ырă çынсем мар. Каярахпа шатра питли хăех каласа пачĕ:

— Колонирен таврăнатпăр эпир, шăллăм. Халь ĕнтĕ хамăра валли телейлĕ пурнăç шырас тетпĕр. Моряксен юрринчи пек: паян кунта, ыран лере. Ирĕкри кайăк нихçан та пĕр вырăнта лармасть, яланах вĕçет вăл...

Çак икĕ вăйпитти арçын мĕнлерех этемсем пулнине чухласа илсен, Илюкăн вĕсемпе калаçас та, хутшăнас та килмерĕ. «Урăх çĕре куçса ларас пулать, кусемпе пĕрле татах тем курма пулĕ...» — шикленерех шухăшларĕ вăл. Çавăн пиркиех Илюк хăй ăçтан килни çинчен те каламарĕ, Свердловскран, пичче патĕнчен таврăнатăп тесе суйрĕ, анчах, тепĕр станцие çитсен, вагона халăх пит нумай кĕрсе тулчĕ те, унăн çак куперех юлма тиврĕ. «Калаçмастăп вĕсемпе, ĕçĕ те пĕтрĕ!» — терĕ вара хăйне хăй.

Çапах та Илюк хăй ăçтан килнине пытарса çитерейменрĕ. Вагон тăрăх çимелли сутса çӳрекен лоточницăран илнĕ икĕ пĕчĕк кукăльшăн укçа тӳлеме тăрсан, Илюкăн хăй тунă блокночĕ хушшине хĕстернĕ пĕр хут урайне тухса ӳкрĕ. Илюкран малтан çав хута шатра питли пĕшкĕнсе илме ĕлкĕрчĕ те çавăнтах уçса пăхрĕ. Ку шăпах Илюка колонирен срокчен кăларни çинчен калакан хут пулнă...

— Ши-и! — шăхăрса илчĕ шатра питли.— А-ав мĕн иккен! Ав еплерех пиччӳ патĕнчен таврăнатăн эсĕ!..

Илюк çав хута часрах туртса илме аллине тăсрĕ, анчах лешĕ памарĕ, çĕвĕк çамкаллă тусне тыттарчĕ:

— Кур-ха эсĕ, еплерех кайăк вăл! Улталаса пыратьха тата! Ах, тусăм, савнă тус... Камран пытанатăн? Хамăр çынсем вĕт эпир! — Вăл Илюка хулпуççинчен çапса илчĕ.

— Саккунлă! — терĕ çĕвĕкки, вуласа тухнă хута Илюка тавăрса парса.— Кăштах пурнăç академинче пулса куртăн эппин? Аван, питĕ аван ку... Чăнах та, малтанхи хут йывăртарах пек туйăнать унта, анчах кайран хăнăхатăн. Хуть тĕрме, хуть тăван кил,— пĕр пекех туйăнать.

— Эп унта тек нихçан та пулмастăп! — терĕ Илюк çирĕппĕн, хăй вырăнне ларса.

— Ну, мĕнле калас вĕт! Халь эс çамрăк-ха, унта

кая-кая канмалӑх вӑхӑт пур санӑн. Пӗр вунӑ хут та кайса килме пултаратӑн! — Ҫӗвӗклӗ ҫын, саралнӑ шултра шӑлӗсене йӗрсе, тӑкӑскӑ сасӑпа кулса ячӗ.

— Пӗрре те каймастӑп! — куҫӗсене ҫутӑлтарса тата ҫирӗпреххӗн татса хучӗ Илюк.

— Ан шӑрчӑклан, шӑллӑм!..

Илюк ҫакӑн хыҫҫӑн чӳрече еннелле ҫавӑрӑнса ларчӗ те вӗсемпе нумайччен сӑмах хушмасӑр пычӗ. Ҫав тери ҫилӗ килсе кайрӗ унӑн. Ҫав путсӗрсем ӑна чӑнах та преступник, пӗтнӗ ҫын тесе шутлаҫҫӗ иккен, татах тӗрмене лекессипе йӗкӗлтеҫҫӗ. «Ӑҫтан мурӗнчен сиксе тухаҫҫӗ ман тӗле ҫакнашкал ҫӗлен-калтасем? Куҫӑм ан куртӑрччӗ, хӑлхам ан илттӗрччӗ!» — ҫав тери тарӑхса пычӗ вӑл.

Анчах ҫапах та хӑпма пулмарӗ вӗсенчен. Пӗр ҫӗрелле каймалла пулнипе, вӗсем поезд ҫинчен те Илюкпа пӗрлех анчӗҫ, чугун ҫул станцинчен Атӑл хӗррине ҫитиччен те пӗр ҫич-сакӑр километр пӗрлех пычӗҫ. Ҫуран утнӑ чух, никам ҫук ҫӗрте, вӑрӑсем (кун пирки Илюк ним чухлӗ те иккӗленмерӗ) ун умӗнче ним пытармасӑр, намӑса пӗлмесӗр темӗн те пӗр лӑпӑртатса пынипе тӳсме ҫук йӗрӗнтерсе, кӑмӑла пӑтратса, хӑлхана йӳҫӗхтерсе ҫитерчӗҫ. Ҫавӑн чухнех Илюк вӗсенчен пӗрине «Шатри», теприне «Чалӑшши», тесе чӗннине пӗлчӗ. Пӑрахут ҫине ларсан та вара вӗсем тӳрех ӗҫсе супса асар та писер шавлама, ҫынсемпе тавлашма тытӑнчӗҫ, капитан помощникӗ пырса хыттӑн асӑрхаттарсан тин кӑштах лӑпланнӑ пек пулчӗҫ те йывӑр ыйхӑпа ҫывӑрса кайрӗҫ. Вӗсене пӗртте курас килмен, вӗсемпе пӗрле пулас килменнипех Илюк палуба ҫине тухса тӑчӗ...

## 35

...Нумай тӑчӗ вӑл. Каҫхи нӳрӗрех сывлӑш, ту енчен вӗрекенваркӑш ҫил унӑн пӗтӗм чунне уҫса ячӗ, лӑплантарчӗ, ӑна халь сывлама та ҫӑмӑл пулчӗ, малтан ывӑннӑ пек туйӑнни те, ҫывӑрас килни те иртсе кайрӗ. Йӑмхура тӗслӗн курӑнакан шыва хӑватлӑ кӑкрипе ҫурса, ӑна ик еннелле сирпӗнтерсе, пӑрахут пӗр майлӑн малалла шурӗ, час-часах анаталла васкакан вӑйлӑ буксирсемпе вӑрӑм самоходкӑсем ӑна саламланӑ пек кӑшкӑртса иртрӗҫ, унта та кунта бакен ҫутисем куҫ хӗснӗ пек мӗлтлетрӗҫ... Ҫӗрле те илемлӗ ҫав пирӗн аслӑ Атӑл, тӗттӗмре те унӑн хӑватне пӗтӗм чун-чӗрепе туятӑн! Ахальтен мар ӑна пирӗн халӑх ҫӗршер юрӑ-сӑвӑра мухтанӑ.

Илюка халь ĕнтĕ киле çитнĕ пекех туйăнчĕ. Кашни минутрах, пăрахут винттисем кашни çаврăнмассеренех кил çывхарса пырать вĕт-ха. Кил, никамран та хаклă амăшĕ, тăван ялĕ, çуралса ӳснĕ çĕршыв...

Ой, мĕн тери пысăк, нимĕнле ытама та кĕмен савăнăç ку, мĕнешкел телей! Унăн пĕтĕм пурнăçĕ çĕнĕрен пуçланнă пек пулать. Ку таранччен мĕн пулни пĕтĕмпех иртсе кайнă, ăна манмалла кăна, пур ирсĕр ĕçсемпе хурлăха аса илни чĕрене ыраттарать кăна вăл! Илюк чунĕ таса, хăй пурнăçĕнче текех вăл йăнăш тăвас çук ĕнтĕ.

— Пĕтĕмпех хăвăртан, сирĕн ăсăртан, лайăхпа усала уйăрса илме пĕлнинчен килет,— терĕ колони начальникĕ Илюксем юлашки хут строй умĕнче тăнă чух.

— Яланах асра тытăр: телейлĕ пурăнас текен çын нихçан та киревсĕр ĕçсем тумасть, хăй ĕçлемесĕр, урăххисен шучĕпе пурăнмасть, хăйĕн телейне вăл пĕтĕм халăхпа пĕр кăмăллă пулса, чун-чĕререн тăрăшса ĕçленипе тупать. Пирĕн пурнăçра çакăнтан тĕрĕс çул урăх çук, çавăнпа та эсир яланах çав çулпа пырăр...— Питĕ ĕнентерӳллĕ каларĕ начальник, ун сăмахĕсем халĕ те Илюк хăлхинче янраса тăраççĕ, вĕсене вăл ĕмĕрне те манмĕ... Нихçан та!

Пăрахут малаллах, малаллах шăвать, Илюк пĕрмай Атăл тăрăх тăвалла, хăйĕн килĕ еннелле, пăхать. Акă ĕнтĕ Сĕнтĕрвăрри. Кунтан Шупашкара çитме те инçе мар. Илюк ку хулара пулман, анчах икĕ çул каялла, хăйсене колоние илсе кайнă чух, ăна аванах курса юлнăччĕ. Хитре хула. Анчах та... шăп çак хулара ĕнтĕ леш çăмăлттай «капăр каччăсем» — суд вăхăтĕнче вилсе кайнă хĕрарăм-профессор ывăлĕ Жора, унăн вĕçкĕн тусĕсем Макспа Сержик хулиганла ĕçсем тунăшăн виçшер талăк ларса тухнă. Ăçта-ши халь вĕсем? Лараççĕ-ши е Илюк пекех срокчен тухма пултарнă? Çук пуль, вĕсем çынсем пек тăрăшса ĕçлемелли, тӳрленме тăрăшмалласкерсем мар. Тепĕр тесен, Илюка вĕсем мĕн тума кирлĕ?..

Сĕнтĕрвăрринче нумай пассажирсем пăрахут çинчен анса юлчĕç, ларакансем те сахал мар пулчĕç. Вĕсем хушшинче Илюк пĕр вунă-вунпилĕк ача самолет моделĕсем çĕклесе кĕнине асăрхарĕ. Хăшĕсем хĕрлĕ, хăшĕсем сенкер, шурă, кăвак...

«Шупашкара каяççĕ пуль-ха кусем»,— шухăшларĕ те Илюк ялти шкулта вĕреннĕ чух хăй те çакнашкал модель туса районти ăмăртура пулнине аса илчĕ. Вара унăн халĕ те çак ачасемпе пĕрле пулас килчĕ...

Пăрахут каллех тапранса кайсан, хырăмĕ выçнине туйса, Илюк палуба çинчен шала кĕчĕ. «Туссенчен» пĕри, «Чалăшши» тени, вăраннă иккен те, пирус мăкăрлантарса ларать. Илюка курсан, вăл тӳрех:

— Аçта çухалса çӳретĕн? — тесе ыйтрĕ хăйăлтатакан сасăпа.

— Кунта питĕ пăчă та, тулта уçăлса тăтăм,— терĕ Илюк.

— Асту, пацан, пĕли-пĕлми таçта кĕрсе ан кай тата кунта,— сассине пусарарах асăрхаттарчĕ лешĕ,— паçăр пирĕн документсене тĕрĕсленĕ хыççăн пире «çеклĕсем» сăнаса пыма пултараççĕ. Ытлашши васкасан, рас анчах лекме пулать, киле те çитсе кураймăн...

Илюк чĕри яштах турĕ. Çак этем ăна чăнахах та вăрă тесе шутлать иккен! Пăрахут çинче вăрлама кирлĕ марри çинчен асăрхаттарать!.. Илюк хăйĕн уçма тăнă чăматанне каллех сак пуçне лартрĕ те пыр патне тăрук капланса пынă чăмаккана аран çăтса ячĕ, унăн çурăмĕ те çӳçенсе илчĕ.

— Йăнăшатăн эсĕ, пичче! — терĕ вăл унтан.— Мана ун пек ăс пани — пачах та усăсăр, мĕншĕн тесен эпĕ вăрă мар, никама та çаратма шутламастăп!

— Ну, ку юрра эсĕ кама та пулин урăххине юрласа пар, ачам, мана улталаймăн,— ал сулчĕ Чалăшши,— сана хăш статьяпа суд тунине вуларăм эпĕ.

— Вăл ниме те пĕлтермест-ха!

— Ан лăпăртат! Пирĕн пĕтĕм пурнăç Уголовнăй кодекс статйинчен килет, çав пĕтерет те пирĕн пек ăмăрткайăксене! Эсĕ вăрă пулнă, анчах лерен епле те пулсан хăвăртрах чаваланса тухас тесе хытă тăрăшнă курăнать. Пур ун пеккисем, хам та пĕррехинче «актив» пулсах тухнăччĕ, çапах та кайран...

— Мĕн — кайран?

— Суртăм.

— Анчах эпĕ сурма шутламастăп.

— Мĕн «тĕвĕлесе лартас» тетĕн-им?

— Манăн «тĕвĕлемелли» те нимĕн те çук. Эп таса çын. Халĕ эпĕ хуть те мĕнле вăрра та тытса пама пултаратăп, мĕншĕн тесен кураймастăп вĕсене, тӳсме пултараймастăп.

Чалăшши тăрук куçне хĕсрĕ те Илюк çине кăнн! пăхрĕ.

— О-о, питĕ меллĕ çавăрса янă-çке вĕсем сан пуçна! Калаçма та питĕ хитре вĕрентнĕ. Анчах пĕлетĕн-и, шăрчăк чĕппи, кун пек сăмахсемшĕн «перо» çине пырса

тăрăнма та пулать, э? Çавăнтан шикленме шут çук-и санăн? Кала-ха?

— Çук, хăрамастăп. Колоние те эпĕ пĕрисенчен хăраса пурăннипех лекрĕм. Анчах урăх пулмасть ун пекки.

— Маттур, маттур...— пуçне пăркаласа илчĕ Чалăшши.

— Маттур пулас тетĕп çав малашне!

— Э, пит лайăх юрлатăн та, пацан, ăçта пырса ларăн-ши эсĕ?

— Ку вара сирĕн хуйхă мар. Хамăнне хам пĕлетĕп.— Илюк чăматанне тепре тытса уçрĕ те çиме пуçларĕ. Чăлăшши тек нимĕн те каламарĕ, вырăнтан тăрса буфет еннелле утрĕ.

Шăп хĕвел тухнă вăхăтра «Комсомолец» Шупашкара çитрĕ. Çĕрĕпе чăлкăм куç хупман Илюк çӳллĕ сăрт çинче тăван хулан пысăк çурчĕсем, заводсен тĕтĕмĕпе сывлакан мăн трубисем курăнма пуçласанах чăматанне çĕклерĕ те малалла, пăрахут çинчен тухмалли уçă вырăн патнелле, иртрĕ. Унта вара хăма карлăк çумне ларчĕ те çыран çинчен пĕрре куç илмесĕр пăхса пычĕ. Шупашкар патне çитеспе пăрахут çыран çуммипе пырать, çавăнпа та Илюка çыранра мĕн пурри пĕтĕмпех питĕ уççăн курăнчĕ. Пăхса пынă май ăна çак вырăнсенче икĕ çул каялла мĕн-мĕн пулса иртнисем аса килсе çĕнĕрен куç умне тухса тăчĕç.

Акă Рыбацкая слобода — сăрт çумне кăмпа пек çыпăçса ларнă çуртсем, унта Илюксем артистка хваттерне çаратнă касхине утрав çинчен таврăнсан икĕ талăк пытанса пурăннăччĕ; акă лапам вырăнта тутăхнă тимĕр тĕслĕ çинçешке чиркӳ курăнать — пĕр ача Ирина Никитична чăматанне вăрласа тарма тăнă ирхине Илюк çав ырă хĕрарăма çак чиркӳпе тĕлме-тĕл çурта ăсатнăччĕ. Акă, пристань патĕнче темле тавар куписем палăраççĕ, Илюк унта сывăрнăччĕ, çавăнтах леш путсĕр Маланипе паллашнă. Çакăнтан пуçланчĕ те ĕнтĕ пĕтĕм инкек-синкек...

Илюка темле аван мар пулса кайрĕ, унăн пырĕ типе пуçларĕ, чĕри йĕркесĕр тапма тытăнчĕ. Асаилӳсем ăна тăрук пăлхатса ячĕç.

«Хулара нимĕн чухлĕ те тытăнса тăрас мар, тӳрех пĕр-пĕр машина тупас та — часрах килелле, анне патне, вĕçтерес...»

Пăрахут вăрăммăн кăшкăртса ячĕ, ирхи таса та уçă сывлăшра унăн вăйлă сасси таçта çитиех хутлăн-хутлăн

янраса кайрĕ. Чупса пынă матрос уçă вырăна пуханнă çынсене каялла чактарчĕ, хăй пристань çине канат вĕçне ывăтса пама хатĕрленсе тăчĕ. Илюка пур енчен те хĕстерсе лартрĕç, ăна питĕ кансĕр пулчĕ, анчах вăл çаплах пристань çинелле пăхрĕ. Кĕçех унăн куçĕсем умне пысăк кăвак саспаллисемпе «Шупашкар — Чебоксары» тесе çырни тухса тăчĕ. Илюк мĕн пĕчĕкренпех юратнă çав сăмаха сасăпах вуларĕ:

— Шу-паш-кар...

Вăл ĕнтĕ кĕçех çырана тухма ĕмĕтленсе, чăматан хăлăпне çирĕппрех тытрĕ, тепĕр аллипе кĕсъери билетне хыпашласа тупрĕ. Çав вăхăтра ăна хыçалти çынсенчен тахăшĕ хулпуççинчен çатăрр! тытса пăчăртарĕ. Илюк кăшт кăна çаврăнса пăхрĕ те леш «туссене», Шатрипе Чалăшшине, курах кайрĕ. Иккĕшĕ те ун çине мухмăрпа шыççа тухнă куçĕсемпе çисе ярас пек пăхса тăраççĕ.

— Эсĕ мĕн вара, юлташсене систермесĕрех тухса таратăн? — ыйтрĕ Шатри.

— Никамран та тармастăп эпĕ, çитес çĕре çитрĕм те — анатăп,— терĕ Илюк.

— Уйрăлнă ятпа санăн пире пĕрер лампадка та пулин ĕçтерсе хăвармаллаччĕ хуть,— хăйăлтатса илчĕ Чалăшши.

— Манăн урăх укçа çук, автобуспа кайма та çитмест пулĕ-ха,— терĕ ăна хирĕç Илюк, пристань çинелле тухма пуçланă çынсем хыççăн пĕчĕккĕн утма тытăнса. Анчах Шатрипе Чалăшши те унран юлмарĕç. Вĕсем билетсене Ильинкăна çити илнине пĕлсе, Илюк утнă çĕртех каялла çаврăнса, кăмăлсăр пулнă пек ыйтрĕ:

— Эсир те кунтах анатăр-и-мĕн?

— Çук, саншăн çеç тухатпăр,— терĕ Шатри.— Çывăх тусăмăра епле ăсатса ямастăн-ха? Пирĕн пекех хурлăх курнă çын, килессе те пĕрлех килтĕмĕр...

«Ĕçесшĕн кусем манран. Тем тусан та, пĕр пус та кăлармастăп! Тупăнна «туссем»!» — çилĕпе шухăшларĕ Илюк.

Анчах лешсен çав шухăш кăна пулман. Çырана тухсан, вĕсем Илюка чарса тăратрĕç те малтан чăнах та хăйсене «асăнмалăх хăна туса хăварма» ыйтрĕç. Ыйтрĕç кăна та мар, хушрĕç темелле. Илюк хăйĕн укçа çукки çине ярсан, Шатри ал сулчĕ, ĕçес тесен, пирĕн хамăрăн та пур терĕ те, сасартăк кĕсйинчен хут таткипе кăранташ кăларса, унăн килти адресне ыйтрĕ.

— Мĕн тума кирлĕ вăл сире? — тĕлĕнчĕ Илюк.

— Так, ахалех,— куç харши айĕн пăхрĕ Шатри.—

Пĕлме çук, кирлĕ те пулма пултарать. Вырăссем калашле, çĕр тенкĕ ан пултăр та — çĕр тус пултăр. Тепĕр чух, çула май, кĕрсе выртмалла пулĕ, тен...

— Праçниксенче пĕр-пĕрин патне саламлă çырусем яни те питĕ аван йăла,— куларах хушса хучĕ Чалăшши.

Кун пек çынсене адрес пани мĕне пĕлтернине Илюк питĕ лайăх чухланă ĕнтĕ. Вĕсем ăна епле пулсан та «хăйсен çынни», кирлĕ чух хăйсене пулăшакан «тус» тăвасшăн, урăхла каласан — хăйсен танатине лектересшĕн, ирсĕрсем! Тĕрмерен хăтăлнă-хăтăлманах авă мĕн ĕмĕтленеççĕ. Паллах, ырри çинчен мар...

— Манăн нимĕнле адрес та çук сире валли! Килте те пулмастăп эпĕ, ан та шанăр мана! Ан та çыпăçăр! — терĕ Илюк хыттăн çав тери çилĕ тулса килнипе.— Манран усси пулмасть сире!

Çавăнтах варт! çаврăнчĕ те тăвалла, хуланалла, утрĕ. Анчах темиçе утăмранах ăна Шатри хуса çитрĕ те, чарса тăратса, шăл витĕр чашкăрса илчĕ:

— Ну, асту, анчăк çури! Асăнăн-ха хăçан та пулин паянхи «юратуллă» калаçăва, тĕл пулăпăр-ха эпир санпа!..— Вăл фуфайки аркине усрĕ те çĕçĕ вĕçне кăларса кăтартрĕ.— Сан юнупа çăватăпах çакна... хăçан та пулин!

Илюк, тарăхса кайса, йывăррăн сывларĕ, унăн сăмса çунаттисем сиккелеме тытăнчĕç.

— Пăрăн ман çул çинчен, бандюга! Ав, милиционер анать, халех çавăттарса яратăп!..

Шатри нимĕн те калаймарĕ, Илюка юлашки хут кучĕсемпе çунтарса илчĕ те пристань еннелле утрĕ. Илюк ун çине çаврăнса та пăхмарĕ...

## 36

Етĕрне еннелле ирхи пĕрремĕш автобус тухса кайма та ĕлкĕрнĕ иккен, иккĕмĕшĕ вунпĕр сехетре тин пулать терĕç. Илюкăн унччен ларас килмерĕ, çавăнпа та вăл, автостанцире пĕр хĕрарăм каланине итлесе, пасар хыçне кайрĕ те Свердлов урамĕ вĕçĕнче çула май каякан пĕр-пĕр машина пуласса кĕтме тытăнчĕ. Илюк пеккисем кунта татах та пур-мĕн.

— Каятпăр пуль-ха, машинисем пулаканччĕ, вĕсем халь темĕн чухлех чупаççĕ,— çынсем пĕр-пĕрин хушшинче калаçнине илтрĕ Илюк. Кĕтесри çурт çумĕнчи сак çине ларса, хăй çав вăхăтрах пĕрмай унăн-кунăн пăхкаларĕ. Тĕрĕссипе каласан, вăл халĕ паллакан çын-

сем тĕл пуласран шикленчĕ, унăн никампа та курнăçас килмерĕ. Кам та пулин палласа илес пулсан, тӳрех тĕпчеме тытăнать ĕнтĕ: ăçтан, хăçан, мĕнле... Вăрă пулнăçке-ха вăл, çынсен тăшманĕ, анчах халь акă килне таврăнать!

Унăн телейне, паллакансем пулмарĕç. Хĕвел çӳлтен çӳле хăпарса хытах пĕçертме пуçласан, вăл çуртăн тепĕр енне, сулхăна, куçса ларчĕ те хăйĕнчен инçетре те мар самаях пысăк çутă тимĕр татăкĕ выртнине асăрхарĕ. Колонире чух тимĕр-тăмăрпа ĕçлеме хăнăхнăскер, вăл çакна тытса пăхмасăр тӳсеймерĕ. Ку питĕ лайăх дюралюмини татăкĕ иккен.

«Кил таврашĕнче кирлĕ пулма пултарать-ха»,— шухăшларĕ те Илюк ăна чăматанне чиксе хучĕ.

Çав вăхăтра ун тĕлĕнче йывăç ещĕксем тиенĕ пысăк грузовик чарăнса тăчĕ. Моторне ĕçлеме чармасăрах, кăтра пуçлă çамрăк шофер кабина алăкне уçрĕ те:

— Нискасси еннелле каякан пур-и? — тесе ыйтрĕ.

— Пур, пур! — терĕç темиçен пĕр харăс.

Ыттисемпе пĕрле Илюк та йăпăр-япăр ещĕксем çине хăпарса ларчĕ. Темиçе минутран вăйлă машина, хуларан тухса, çатма пек тикĕс çул тăрăх хĕвеланăçнелле ыткăнчĕ. Çанталăкĕ питĕ лăпкă пулин те, çӳлте ларакансем хăйсен карттусĕсем, тутрисем çилпе вĕçсе юласран вĕсене тытсах пычĕç. Машина çав тери хытă кайнипе çул хĕрринчи телефон юписем вĕлт те вĕлт кăна туса юлчĕç...

Малтанах Илюк хĕрĕхмĕш километр юпи тĕлĕнчи яла çитме шутланăччĕ,— вĕсен ял çыннисем Шупашкартан таврăннă чух кирек хăçан та çавăнта анаççĕ, кунтан тӳррĕн кайсан, киле çитме çывăх, пĕр тăвата километр çеç. Анчах çулĕ вăрăм мар пулсан та, виçĕ пĕчĕк ял витĕр тухмалла. Çав ялсенче Илюка паллакансем тупăнаççех ĕнтĕ, мĕншĕн тесен унти нумай ачасем унпа пĕрле шкулта вĕреннĕ. Илюкăн тăруках никам куç умне те курăнас кăмăл пулмарĕ, хăй таврăнни çинчен чăн малтан пĕр амăшĕ çеç пĕлмелле тăвас килчĕ. Çавăнпа та вăл вăтăр пиллĕкмĕш километрта, машина вĕтĕрех вăрман хĕрне çитсен, кабина тăрринчен шаккарĕ те çĕре сиксе анчĕ.

— Çитрĕн те-им? — ыйтрĕ унтан кăтра шофер, пуçне кабинăран кăларса.

— Çитрĕм! Ак çак ансăр çулпа вăрман витĕр тухмалла çеç манăн, вара инçе мар... Спаççипă сана! — Илюк ăна пилĕк тенкĕлĕх укçа тăсса пачĕ, анчах çав

самантрах калама та çук тĕлĕнсе куçĕсене чарса пăрахрĕ: кабинăра, шоферпа юнашар, хайхи пăрахут çинчи «туссем» — Шатрипе Чалăшши лараççĕ. Вĕсем, пăрахутпа Ильинкăна çити каймаллискерсем, унпа пĕрлех, пĕр машина çинчех килнĕ иккен!..

Илюк укçине илсенех, шофер кабина алăкне шаплаттарса хупрĕ те тӳрех газ пачĕ, темиçе минутран грузовик хыççăн тусан çеç мăкăрланса юлчĕ, унтан тусанĕ те сирĕлчĕ, тек ĕнтĕ нимĕн те курăнмарĕ, анчах ним ăнланман Илюк çаплах-ха çул çинче пĕччен юпа пек тăчĕ. Мĕне пĕлтерет ку? Çак икĕ вăрă-хурах пăрахут çинчен мĕншĕн анса юлнă? Тем тесен те ахаль мар ку. Мĕн шут тытнă вĕсем? Ăçта каяççĕ, мĕн тума?..

Етĕрне енчен пысăк хĕрлĕ автобус килни курăнчĕ. Паллах, ун çинче çын нумай. Кам пĕлет, тен хăйсен ялĕсем те пур? Илюк чăматанне йăтрĕ те лаша çулĕпе вăрманалла кĕрсе кайрĕ. Кунти шăплăх, нимĕн хускалман ăшă сывлăш, куçа курăнман кайăксем чĕвĕлтетни, ытарма çук илем ăна часах лăплантарчĕç, вара Илюк, халь çеç вăрăсемпе тепĕр хут тĕл пулнине манса, каллех амăшĕ çинчен, килĕ çинчен шухăшлама тытăнчĕ.

Мĕнле кĕтсе илĕ-ши ăна амăшĕ? Хăй мĕнлерех-ши вăл халь? Икĕ çул курман... Татах ватăлнă пуль ĕнтĕ. Сахал хуйхăрнă-им вăл çак хушăра? Çырусенче хăй яланах: «Маншăн ан пăшăрхан, эпĕ чиперех пурăнатăп, халĕ те чăх-чĕп ферминчех ĕçлетĕп, çăкăр-тăвар çителĕклĕ»,— тесе çыратчĕ, анчах чăннипе темле-çке, Илюка пăлхатас мар тесе, вăл хăйĕн нуши-хуйхисем çинчен юри пĕлтермесен те пултарнă...

Пĕр-икĕ километр пек кайсан, вăл вăрман хушшипе юхса выртакан пысăках мар шыв хĕррине пырса тухрĕ. Ăна пĕвеленĕ иккен. Шывĕ тăп-тăрă, пĕве тĕпĕ те йăлтах курăнать. Пулă та пур пулмалла — унта та кунта шăмпăлт! тăваççĕ. Илюк тӳсеймерĕ, чарăнса тăчĕ те, унăн çав тери шыва кĕрес килсе кайрĕ... Икĕ çул шыва кĕмен вĕт-ха вăл! Хăрамалли çук, ишме пĕлет, ялти пĕверех вĕреннĕ.

Нумай шутласа тăмасăрах, вăл çултан кăшт аяккарах кайрĕ те, пĕве хĕрринчи пĕр лапсăркка çӳçе тĕми айĕнче хывăнса, тӳрех чăмрĕ. Самаях сивĕ шыв ун кĕлеткине малтан çунтарсах илчĕ, анчах кăшт тăхтасан ӳт-тир хăнăхрĕ те, Илюк киленсех, нумайранпа шыв курман кăвакал пекех шăмпăртатрĕ. Тухсан вара унăн шăмшакĕ çăмăллансах кайрĕ, кăмăлĕ тата ытларах лайăхланчĕ.

Тепрер сехетрен ансăр çул Илюка вăрман хĕррине илсе тухрĕ, вăл вара тӳрех хăйĕн тăван ялне курчĕ. Инçе те мар, пĕр-икĕ километр кăна... Лапама анса улăх тăрăх каймалла та кайран сăрта хăпармалла çеç. Ял пуçĕнче виçĕ çил арманĕ çил çуккипе тунсăхласа лараççĕ, вĕсенчен кăшт сулахаярах фермăн вăрăм çурчĕсем курăнаççĕ. Пĕрин тăрри çап-çутă, хĕвел çинче куçа йăмăхтармалла йăлтăртатать — çĕнĕрен туса лартнăскер пулмалла. Ку мĕн тата? Ял варринче — темĕн çӳллĕш икĕ шучă пĕлĕтелле тăраннă. Радио мачтисем! Илюк килтен тухса кайнă чух вĕсем çукчĕ... Мăнкас енчен, çул хĕрринчи телефон юписенчен чылай аякран, уй урлă, тата темле çӳллĕ юпасем ларса тухнă. Вĕсем мĕне пĕлтереççĕ-ши?

Нивушлĕ яла электричество илсе пыма та ĕлкĕрнĕ?..

Паллах ĕнтĕ, Илюкăн халĕ çак самантрах, тӳрех килнелле ыткăнас, амăшĕ патне пĕр сывлăш çавăрмасăр чупса çитес килчĕ, анчах çапах та ун пек тумарĕ вăл.

«Тĕттĕм пуличчен кĕтес... Халь кайсан, яла шурă курак вĕçсе пынă пекех пулать — палласа илсенех, пурте мана курма чупса тухаççĕ, пӳрнисемпе тĕллесе кăтартма тытăнаççĕ...»

Çакăн пек шухăшсемпе вăл каллех чăматанне йăтрĕ те вăрман хĕррипе тăвалларах кайса, пĕр вар пуçĕнче вăрмантан уйрăм ӳсекен кукăр-макăр ватă хурăнсем айне, çемçе курăк çине, пиншакне сарса тăсăлса выртрĕ. Ку тĕлтен хăйсен ялĕ тата лайăхрах курăнать иккен. Вăрахчен пăхса выртрĕ вара вăл. Анчах çĕр каçа çывăрманнипе, пăрахут çинчен аннă хыççăн та самаях ывăннипе, ăна çав тери ыйхă пусма пуçларĕ те, вăл хăй сисмесĕрех ним пĕлми çывăрса кайрĕ.

...Илемлĕ те янравлă музыка илтĕннипе вăранса куçĕсене уçсанах, Илюк хăй питĕ нумай çывăрнине ăнланса илчĕ. Тĕттĕм те пулнă иккен, çанталăкĕ те сулхăнланнă, пĕлĕтре пин-пин çăлтăр йăлтăртатать. Вăл, хăвăрт кăна сиксе тăрса, пиншакĕпе карттусне тăхăнчĕ, чăматанне ярса тытрĕ, йĕри-тавралла пăхса илчĕ. Паçăр шухăшлани тĕрĕсех пулнă-мĕн: Илюксен ялĕнче те, юнашар ытти ялсенче те электричество лампочкисем ялкăшаççĕ, хăш-хăш тĕлте вĕсем вутлă шерепе пекех курăнаççĕ. Ытла та лайăх-çке ку! Эппин, вĕсен ялĕнче хулари пекех! Ахаль ларман çынсем çак икĕ çул хушши, çине тăрсах ĕçленĕ. Ав тата кашни ялтах урама кăларса çакнă вăйлă репродукторсенчен чуна йăпатакан юрă шăранса тухать:

— Если б знали вы, как мне дороги
Подмосковные вечера...

Илюк сăртран чупса анчĕ, çырма тĕпĕпе хуллен шăнкăртатса юхакан пĕчĕкçеç шыв урлă пĕррех сиксе каçрĕ те ял еннелле ыткăнчĕ. Урисем çĕре перĕннине те туймарĕ вăл. Акă ĕнтĕ тĕттĕмре темĕн пысăкăш хура капан пек курăнакан йывăççем çывхарсах, çывхарсах килеççĕ. Акă вăл пахчасем хыçне пырса тухрĕ, вĕсем çуммипе тăвалла утрĕ. Радио сасси халь паçăрхи пек те мар хытă янăрать:

Над Волгой широкой...

Акă урамран уялла тухмалли пралук. Ун çумĕнче Наталисен пахчи, вĕсемпе юнашарри — Илюксен. Акă, ашшĕ килте чухнех тытса хăварнă çатан карта. Тайăлма та пуçланă ĕнтĕ. Илюк ун урлă сиксе мар, вĕçсе каçрĕ пулас, унтан, карта çуммипе ӳссе ларнă чие йывăççисем тĕлĕпе хăвăрт утса пырса, пахча алăкне уçса ячĕ.

Кил!.. Вăл тăван килĕнче! Анран тухса каймах пулать кун пек телейшĕн!..

Илюк тăпах чарăнса тăчĕ те пĕтĕм кăкрипе сывласа ячĕ. Кил хушши енчи чӳрече çап-çутă. Вĕсен пӳртĕнче те электричество çунать эппин. Чӳречине кăштах уçнă, унтан кăмăллă музыка илтĕнет.

Амăшĕ килтех-ши? Мĕн тăвать-ши вăл халь?..

Илюк кил хушши урлă чупса каçрĕ те крыльца çине сиксе хăпарчĕ, алăка шăлт-шалт уçса, тĕттĕм çенĕке кĕчĕ, унтан пӳрт алăкне ярр... уçса ячĕ.

— Анне!.. Эп таврăнтăм!...

Сĕтел хушшинче апат çисе ларакан хĕрарăм аллинчи кашăк шăкăртах тухса ӳкрĕ, вăл тӳрех яшт! сиксе тăчĕ.

— А-уй! Илюк! Ывăлăм!

Вĕсем пĕр-пĕрне хирĕç чупса пырса ыталанчĕç.

— Эсех-и ку, ывăлăм? Пуçĕпех ячĕç-и?..— Амăшĕ хăйĕнчен чылай çӳллĕ, чăн-чăн арçын пекех пулса кайнă ывăлĕ çумне хытăран хытă пăчăртанса, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе ĕсĕклеме тытăнчĕ.

— Пуçĕпех, анне, мана срокчен кăларса ячĕç! — Илюк амăшне пĕр аллипе пуçĕнчен ыталаса, тепринпе çурăмĕнчен ачашларĕ.— Лăплан ĕнтĕ, ан макăр, хуйхăрмалли пĕтрĕ халь санăн...

— Хуйхăрнипе мар эпĕ... Ывăлăм, чунăм!..

— Юрĕ, анне, çитĕ... Лăплан.

Çав вăхăтра тĕпел кукринче сасартăк пĕчĕк ача кăш-

кăрса макăрса ячĕ. Илюк амăшне ыталама пăрахрĕ те сасă еннелле çаврăнса пăхрĕ. Сĕтел хыçĕнчен шап-шур çӳçлĕ ача курăнса кайрĕ, пӳрте кĕрсенех Илюк ăна асăрхаман та.

— Кам ачи ку? — тĕлĕнерех ыйтрĕ вăл, анчах çав хушăрах хăйĕн пуçĕнче урăхларах шухăш вĕçсе илчĕ.

Амăшĕ тăрук хĕрелсе, нимĕнле мар пулса кайрĕ.

— Вăл... мĕн... Раис-ха...

— Кам Раисĕ?

— Мĕн... хамăрăннах, ара...

— Манăн йăмăк-и? — пуçĕпех тавçăрса илчĕ те Илюк ача çине кăмăллăн çуталакан куçĕсемпе пăхрĕ.

— Çапла пулать çав,— терĕ амăшĕ.— Часах икĕ çул тултарать ĕнтĕ. Мĕн тăвас тетĕн, çуралчĕ те — усрасах пулать. Аван мар та сан умăнта...

— Мĕн аван марри пултăр? Ара, питĕ лайăх ку! — терĕ Илюк, ача патнелле пырса.— Малашне эп пĕччен пулмастăп эппин! Ну-кă, Райкка, кил-ха кунта, паллашар санпа... Пиччӳ вĕт эпĕ!

Тĕлĕнмеллех пулса тухрĕ вара: Илюк ачана алла тытсанах, лешĕ макăрма чарăнчĕ те ун çине пысăк кăвак куçĕсемпе чăрлаттарса пăхма тытăнчĕ. Унтан, ним хăрамасăр-тумасăрах, Илюка сăмсинчен кап! тытрĕ. Илюкпа амăшĕ те кулса ячĕç.

— Ай-ай, хăюллă-çке эсĕ! — терĕ Илюк, пуçне пăркаласа.— Маттур хĕрача! Яланах çавăн пек хăюллă пул эппин, пурнăçра хăюллисем çеç телейлĕ пулаççĕ!

Ывăлĕ унăн пĕчĕк хĕрачипе çакăн пек калаçни амăшне çав тери кăмăла кайрĕ.

...Малтанхи пăлхану иртсе кайнă хыççăн пĕрле ларса апат çисен, амăшĕ Илюка кутнĕк çине тӳшек сарса пачĕ, хăй тăрăхла сак çумне тепĕр тенкел лартса пĕчĕк Раисĕпе пĕрле вырнаçрĕ те, вĕсем тахçанччене калаçса выртрĕç. Илюк хăй колонире мĕнлерех пурăнни, унта шкулта вĕренсе тăххăрмĕш класс пĕтерни, слесаре те вĕренсе разряд илни çинчен каласа пачĕ; амăшĕ, паллах, куншăн питĕ хĕпĕртерĕ («çапах та вăхăта сая яман...»), унтан амăшĕ ялти хыпарсене пĕлтерчĕ. Илюк килтен тухса кайнăранпа ялта питĕ нумай улшăнусем пулнă иккен. Вĕсен колхозĕ татах пысăкланнă, тракторсем, комбайнсем, ытти тĕрлĕ машинăсем туяннă, çавна май колхоз çĕнĕ тимĕрçĕ лаççи лартнă, унта виççĕн ĕçлеççĕ имĕш. «Мăн сăрт» çинче, Илюксемпе тĕлме-тĕл çырма урлă, кăçал икĕ хутлă клуб туса лартнă — аялти кирпĕч, çӳл-

ти йывăç, пухусем ирттермелли, кино кăтартмалли зала тăватçĕр çын таран кĕрет, унсăр пуçне урăх пӳлĕмсем те нумай, библиотеки те, радиоузелĕ те çавăнтах.

— Хулари пекех халь пирĕн,— терĕ тулли кăмăлпа,— çамрăксене кичем мар, каçсерен клубран тухма та пĕлмеççĕ...

Ку çеç те мар-ха, колхоз тата хăех медпункт туса лартнă, çитес çул шкула пăсса ун вырăнне çĕнĕрен тума йышăннă иккен, вăл та икĕ хутлă пулать теççĕ...

— Хăвăн фермунта ĕçсем мĕнлерех пыраççĕ? — ыйтрĕ Илюк.

— Лайăхах-ха, анчах эпĕ халь унта асли мар ĕнтĕ,— терĕ амăшĕ.

— Мĕншĕн? Кăларчĕç-им? — тӳрех пуçне çĕклерĕ Илюк.— Ман пирки мар пулĕ те?

— Çук-çук, уншăн мар,— лăплантарчĕ амăшĕ,— пирĕн чăххи-чĕппи, хурĕ-кăвакалĕ виçĕ пинрен те иртсе кайрĕ те, колхоза ятарласа çав ĕçе вĕреннĕ çын ярса пачĕç. Кайăк-кĕшĕк усрама вĕрентекен техникум пĕтернĕскер, тет, анатри чăваш хĕрĕ. Пит кăмăлласкер, ĕçре çунать анчах...

Илюк лăпланчĕ, унтан, пĕр хушă калаçмасăр выртнă хыççăн, хуллен кăна ыйтрĕ:

— Наталисем мĕнле пурăнаççĕ тата?

— Мĕнле пурăнччăр, ĕлĕкхи пекех,— терĕ амăшĕ лăпкăн.— Наталийĕ тăхăр класс пĕтерчĕ, пĕвĕпе хĕр пулса кайрĕ ĕнтĕ. Салтака кайиччен кино кăтартса çӳренĕ Ухваниç Микули нумай пулмасть киле таврăнчĕ те вĕсем патĕнчен тухма та пĕлмест, качча илесшĕн тем...

— Ашшĕ-амăшĕ мĕнле?

— Ашшĕ, ĕлĕкхи пекех, сад хуралĕнче, амăшĕ вара яланхи майлах, пуш кăшкар пек шалтăртатать, хуть те кампа та пулчĕ-пулмарĕ хирĕçсе каять. Чĕлхи чараксăр та-ха унăн...

Илюк тек чĕнмерĕ. Анчах хăй, шухăша кайса, тата нумайччен çывăрса каяймасăр выртрĕ. Темшĕн амăшĕ Натали патне Ухваниç Микули пырса çӳрени çинчен каласа пани ун чĕринех пырса тиврĕ.

«Çамрăк-çке-ха вăл, манпа тантăш кăна... Нивушлĕ халех качча каять».

Унăн чĕринче вăрттăн кĕвĕçӳ пекки хускалчĕ пулмалла.

Тепĕр кунне вара вăл нумай çывăрчĕ. Амăшĕ ир-ирех лаççа тухса çăмарта ăшаларĕ, хурлăхан çулçипе чей вĕретрĕ, анчах хăйне вăратмарĕ. Çимелли-ĕçмеллисене

сётел ҫине кёртсе лартрӗ те ӗҫе тухса каяс умӗн лăпкăн ҫывăракан ывăлӗ ҫине тем таранччен пăхса тăчӗ.

— Таврăнчӗ, мăнтарăн...— Хӗйӗн куҫӗсем каллех шывланчӗҫ.— Тин ӗнтӗ лăйăхах пурăнатпăр пулӗ-ха. Кăмăлӗ пулсан, шкултан вӗренсе тухӗ, вӗренес темесен, ӗҫлеме те пултарӗ. Слесаре вӗрентӗм тет те...

Нимрен те ытларах ăна Илюк нумай ӳссе ашшӗ сăнлă пулса кайни хытă савăнтарчӗ.

— Ашшӗне хывсан аптрамӗ-ха, ашшӗ ҫав тери ăслăччӗ...

Фермăна ҫитсе ӗҫе тытăнсан, Илюк амăшӗ паян темле улшăннине, унăн сăн-пичӗ ҫуталнине, ытти чухнехи пек мар хаваслине, темшӗн час-часах кула-кула илнине ытти хӗрарăмсем ҫийӗнчех асăрхарӗҫ. Вăл кун пек пулнине унăн ӗҫри юлташӗсем нумайранпа курманччӗ-ха, ытти чух ҫынсемпе питех хутшăнмастчӗ, каннă вăхăтра та аяккарах кайса ларатчӗ, ыттисем пек кулас-тăвас йăла вуҫех те ҫукчӗ унăн.

— Мӗн пулчӗ сана, Анюк? Эс паян венчете каяс хӗр пекех ҫӳретӗн-ҫке? Кунта килнӗ чух ҫул ҫинче укҫа тупмарăн пулӗ те? — шӳтлекелесе илчӗҫ хăшӗсем.

— Тупрăм ҫав, тупрăм, анчах та укҫа мар — ылтăн муклашки тӗлне пултăм! — терӗ Илюк амăшӗ вӗсене хирӗҫ.

— Телейлӗ-ҫке апла эсӗ!

— Телейлӗ ҫав, шутсăр телейлӗ!

— Тен, ҫуррине пире парăн?

— Ҫук, хам тӗле килнӗ телее никампа та пайламастăп, мӗншӗн тесен эпӗ ăна ытла та нумай кӗтнӗ...

Анюк юлташӗсем пурте унăн ывăлӗ колониren тепӗр ҫулталанкран тин килмеллине пӗлнӗ, ун ҫинчен вăл хăй те час-часах асăннă, ҫавăнпа та вăл халь Илюк таврăннăшăн савăнать тесе никам та шутлама пултарайман. Вăл хăй те пӗр сăмах та шарламарӗ — кун пирки касхине вӗсем Илюкпа иккӗшӗ ятарласах калаҫса татăлчӗҫ.

— Никама та шарлас мар,— терӗ Илюк,— атту ҫынсем килме, ыйтса пӗлме тытăнаҫҫӗ. Анчах иртни ҫинчен манăн пӗртте асăнас килмест. Пурăнам-ха кăштах, хăнăхам, кайран халăх умне хамах тухатăп...

Амăшӗ унпа тӳрех килӗшрӗ. Уншăн халӗ нимрен хаклли — Илюк хăй чипер сывăн таврăнни. Ҫынсем кун ҫинчен паян-ыранах пӗлни мӗне кирлӗ вăл? Тата ачине пӗр хушă кантарса усрас пулать, ытла та тем те тӳсме тивнӗ-ҫке унăн...

Илюк, чăнах та, пĕр виçĕ-тăватă кун хўшши ниçта та тухса çӳремерĕ, килтех ларчĕ. Ял пурнăçне вăл чӳрече витĕр те пахча хӳми урлă çеç курчĕ пулин те, çав пурнăç иртен пуçласа каçченех вĕресе тăнине питĕ лайăх туйрĕ.

...Унăн амăшĕ пекех, çынсем ир-ирех ĕçе тухса каяççĕ — хăшĕ уя, юлашки çур тыррисене тирпейлесе кĕртме, хăшĕ бригада йĕтемĕ çине — унта кунĕпех хăватлă молотилка кĕрлет, теприсем фермăсене, улăхри пахчаçимĕçсем патне, улма-çырла садне, таçта... Кашниннех хăйĕн ĕç вырăнĕ, тĕлĕ пур, кашниех çавăнта васкать. Çанталăкĕ тĕлĕнмелле хитре тăрать те, кун пек чух ĕçрен пăрăнса килте ларма камăн хал çиттĕр?

Илюк та ĕç çинчен шухăшлама пуçларĕ ĕнтĕ, анчах ăçта ĕçлесси пирки вĕсем амăшĕпе иккĕш лайăххăн калаçса татăлаймарĕç-ха. Тата амăшĕ ăна васкатасшăн та пулмарĕ.

— Ĕçĕ тармĕ-ха сăл, пĕрер эрне те пулин кан-ха, вăй ил лайăххрах,— терĕ.

— Вăйĕ ахаль те çителĕклĕ манăн,— терĕ ăна хирĕç Илюк,— лере выçă усраман вĕт пире, апат-çимĕç мăй таранах пулнă, ывăнтарма — кӳлсе чупман....

Çырмари тимĕрç лаççинче кунĕпех вĕркĕч йывăррăн хашкани, мăлатуксем тӳнклетни, тимĕр пайсене электричествăпа пĕçерсе сыпнă чух типпĕн çатăртатнă сасă илтĕнчĕ.

«Çав лаçра малашне ман валли те ĕç тупăнма пултарать-и, тен,— шухăшларĕ Илюк.— Машинăсем юсанă çĕрте слесарь кирлех ĕнтĕ...»

Ку шухăша амăшĕ те ырларĕ.

Анчах хăй халлĕхе килтех ларчĕ-ха. Арçын пек пулса, кил таврашĕнчи вак-тĕвек ĕçсене тукаларĕ — унта хӳмери шăтăка питĕрчĕ, кунта ик-виç пăта çапса çирĕплетрĕ, пахча калинккин петлине тӳрлетрĕ, çенĕк алăкне шалтан питĕрмеллине юсарĕ. Унтан килти пĕртен-пĕр çĕçĕ те çурри таран хуçăлса ӳкнине аса илчĕ те, кĕлетрен кивĕ çава тупса тухса, пĕр çур кун хушшинчех икĕ лайăх çĕçĕ туса хучĕ: пĕри çăкăр касмалли, тепри — хăйне валли, хуçлатса кĕсъере чиксе çӳремелли пулчĕ. Иккĕшинне те аврисене хайхи хула ураменче машина кĕтсе ларнă чух тупнă çап-çутă дюралюминирен майлаштарчĕ. Хуçмалла çĕççин аври çине, пăшатан вĕçĕпе тиретире, хăйĕн ячĕн, ашшĕн ячĕн тата хушамачĕн малтанхи саспаллисене çырса хучĕ: «И. И. И.» Çавăнтах кукăрмакăр эрешсем те турĕ. Çаксене курсан, амăшĕ чунтанах

савăнчĕ: эппин, унăн ывăлĕ улталамасть, вăл чăнах та ĕçе вĕренсе килнĕ!

Тăваттăмĕш кунĕнче, амăшĕ фермăран пырса кăнтăрлахи апат çисе кайсан, Илюк пахчана тухрĕ те чие йывăççисем тăрринче унта та кунта тытăнкаласа юлнă çырласене таткаласа çиме тытăнчĕ. Аялти туратсем çинче нимех те çуккипе вăл çатан карта тăррине хăпарса тăчĕ. Кăмăлĕ лайăх пулнипе, çырласем тата-тата çăвара хыпнă май, вăл хуллен кăна сăмахсăр кĕвĕ ĕнĕрлеме тытăнчĕ. Сасартăк ун хыçĕнче темле хĕрарăм сасси илтĕнчĕ:

— Ай-уй, кам, ара, ку? Эй, çын çырлине ма вăрлатăн?..

Илюк картах сиксе каялла çаврăнса пăхрĕ те хăйĕнчен инçе те мар кӳршĕ хĕрарăмĕ, Наталисен амăшĕ, тăнине курах кайрĕ.

— Тур çырлахтăрах! Ара, Илюк тем ку?! — ăна паллаласа илсе куçне чарсах пăрахрĕ хĕрарăм.

— Эпĕ-ха, Праски инке... Кайăк юлашкисене пуçтаратăп,— тăруках хĕрелсе кайрĕ Илюк ку ытла та кĕтмен çĕртен пулнипе.

— Хăçан килсе тухрăн эсĕ?

— Виçĕ кун пурăнатăп ĕнтĕ...

— Вăхăчĕ çитрĕ те-и вара санăн? Аннӳ килес çул кĕркунне тин килмелле тетчĕ мар-и?

— Вăхăчĕ çитсех çитмен те, çапах таврăнтăм-ха,— терĕ те Илюк карта çинчен хăйсен пахчинелле сиксе анчĕ.

— Ак тамаша! Хамăр юнашарах пурăнатпăр, çапах та нимĕн те пĕлмен. Аннӳне кашни кун куратăп, анчах вăл та шарламасть...

— Ытла чаплă çĕртенех килмен те, ма янраса çӳрес? — терĕ Илюк.

—Çапах та кӳршĕсенчен пытарма кирлĕ мар ĕнтĕ, пирĕн килпе сирĕн кил ĕмĕр-ĕмĕр килĕштерсе пурăннă.

— Акă халь хăвах пĕлтĕн ĕнтĕ,— кулам пекки турĕ Илюк. Анчах Натали амăшĕ хăй çине темле хăранă пек, шанман пек, ун пирки усал шухăшланă пек пăхни ăна питĕ килĕшмерĕ, çавăнпа та вăл унран часрах уйрăлса кайма тăрăшрĕ.

«Янратать ĕнтĕ халь, кашни тĕл пулнă çыннах лапăртатса парать ман çинчен!» — шухăшларĕ те Илюк, унăн кăмăлĕ хуçăлчĕ.

Лешĕ, сăмах вĕçтерме çав тери юратаканскер, чăнах та çапла тунă. Ăна пула каçчен пĕтĕм ял пĕлчĕ: хула-

ра магазин çаратнăшăн тĕрмере ларнă Ивук ачи таврăннă, пĕр эрне ытла килĕнче никама курăнмасăр пурăнать!

Илюк халăх умне тухман пирки хăшĕсем тӳрех тĕрлĕ майлă шак хурса калаçма тытăнчĕç:

— Колонирен тарса килмен-ши-ха вăл?..

— А мĕн? Ним те мар тарма пултарнă, сахал-им ун пекки?

— Вăрă пулнăскер, тем те туса хурĕ...

— Чăнах ара! Правленисен ăна халех тĕрĕслемелле те милицие систермелле!

Çак сăмахсем каçчен кайăк-кĕшĕк фермине те çитме ĕлкĕрнĕ иккен — Илюк амăшĕ киле çав тери пăлханса, пăшăрханса таврăнчĕ те тӳрех макăрса ячĕ:

— Ах, ывăлăм, сан пирки ял хушшинче тӳсме çук лайăх мар калаçаççĕ-çке!..

— Мĕн пулнă тет тата? — хыпăнса ӳкрĕ Илюк та.

— Эс ахаль таврăнман, тарса килнĕ, çавăнпа пытанса пурăнать теççĕ... Ак халь анчах леш Хура Хветле тĕл пулчĕ те çынсем умĕнчех тем те каласа хăртса пĕтерчĕ мана...

— Мĕн калама пултартăр-ха вăл путсĕр?

— «Вăрă-хурах ратти, ристан амăшĕ, тарса килнĕ бандитна ăçта пытарса усратăн? Халех иксĕре те тыттарса яратпăр!» — тет. Сура-сура вăрçать!.. Тем курса ларас пулать ĕнтĕ капла...

Илюк кăвакарса кайрĕ, анчах çавăнтах кăмăлне хытарчĕ те сĕтел çине çапса илчĕ:

— Калаçчăр, чĕлхисем кĕçтеççĕ пулсан — хыçчăр! Ан итле эс вĕсене! Манăн эп саккунлă, тĕп-тĕрĕссипе килни çинчен калакан хутсем йĕркеллĕ. Ыран ирех ял Советне кайса кăтартатăп та — ĕçĕ те пĕтрĕ, тек вара никам та çăвар уçаймасть!..

— Кай, ачам, кайса кăтарт мĕн пуррине, сăмахпа та ăнлантарса пар. Халь тин ял мăшкăлĕ пулас марччĕ ĕнтĕ, эс пĕтĕмпех каçарттарнă вĕт-ха, халь таса çын эсĕ, çапла мар-им?

— Юрĕ, анне, ыран ирех каятăп...

Анчах унăн ниçта та каймалла пулмарĕ, ирхине ирех вĕсем патне ял пуçлăхĕсем хăйсем — иккĕн тан пырса кĕчĕç: пĕри — ял Совет председателĕ Иван Кумков, тепри — Максăм Яраткин, колхоз председателĕ. Вĕсем пынă чух Илюк пуçĕ çинчен пĕркенсех çывăратчĕ-ха.

— Пирĕн килес! Ырă кун пултăр! — терĕç вĕсем, алăк патĕнчех чарăнса тăрса.

— Килĕрех, килĕр, малалла иртĕр,— аллипе тĕпе-

лелле кăтартрĕ Илюк амăшĕ, кĕтмен хăнасене хирĕç чăлантан тухса.

— Ларсах тăмастпăр пулĕ-ха,— терĕ Кумковĕ, кутнĕк çине чалăшшăн пăхса илсе.— Санăн ывăлу таврăннă тенине илтрĕмĕр те, кĕрсе курас килчĕ.

— Илтрĕр пуль çав, усал сăмах пит час сарăлать те-ха...

— Ма усал сăмах пултăр ку? Киле килни — лайăх хыпар пуль вăл? Унтан лайăххи мĕн пултăр?

— Ара, хăшĕсем ăна лерен тарса килнĕ теççĕ-çке... Ĕнер ун пирки хам та темтепĕр илтсе пĕтрĕм.

— Ну, эпир ăнах ĕненес çук-ха,— ал сулчĕ Яраткин,— вăл таранах ухмах мар. Вăрат-ха эппин ачуна, калаçса курар хăть эпир унпа.

Пӳртре ют çын сассисем илтĕнсен, Илюк хăех вăранчĕ, вĕсем мĕн калаçасса кĕтсе кăна юри çывăрнă пек туса выртрĕ. Анчах халь, колхоз председателĕ ăна вăратма ыйтсан, утиялне пуçĕ çинчен сирсе, вăшт кăна тăрса ларчĕ те:

— Здрасте...— терĕ.

— Салам, Илюк! О-о, эсĕ саççим каччă пулса кайнă-çке!..

— Аякра курсан паллас та çук, пăх-ха эс ăна... епле маттур!

Председательсем ăна умлăн-хыçлăн ал пырса пачĕç, унтан Илюк вырăн çинчен сиксе анса вăр-вар тумланчĕ те сĕтел ещĕкĕнчен хăйĕн хучĕсене кăларса пĕрине Кумкова, теприне Яраткина тыттарчĕ.

— Чăн малтан эсир çаксене вуласа пăхăр-ха...

Унăн хучĕсем чăнах та питĕ лайăххскерсем-мĕн. Вĕсене вуласа тухсанах, председательсем пĕр-пĕрин çине тăй-тай пăхса илчĕç те çавăнтах Илюка мухтама тытăнчĕç.

— Маттур, маттур ача! Кур-халĕ — лере те вĕреннĕ, разрядлă слесарь пулнă! Кун пек хутсемпе хуть те кам умне тухса çӳреме те намăс мар. Никам та нимĕн те калама пултараймасть!

— Çыннисем çавах элек сарма тытăннă-çке-ха,— ассăн сывласа илчĕ амăшĕ.

— Ну, унщăнах ан пăшăрханăр, ытлашши палкакансен çăварĕсене хуплама пĕлĕпĕр эпир,— терĕ Кумков.— Куртăмăр вĕт-ха, пĕтĕмпех саккунлă.

Вĕсем хушшинче кăмăллă калаçу пуçланса кайрĕ. Председательсем Илюка епле пулсан та кăçал вуннăмĕш класран вĕренсе тухма сĕнчĕç.

— Алăра аттестат пулсан, пур еннелле те çул уçă-лать. Хуть колхозра ĕçле, хуть малалла вĕренме кай, вăл хăвăнтан килет. Тен, колхозранах пĕр-пĕр курса ярăпăр. Механизатора вĕренсен те — мĕнрен япăх? Сле-сарь ĕçне пĕлетĕн ав эсĕ. Сывлăху лайăх пултăр та кă-мăлу çивĕч пултăр!

Çав кунтан пуçласа вара Илюк халăх хушшине тух-са çӳреме тытăнчĕ. Тимĕрç лаççинче мĕнле ĕçленине кайса курчĕ, авăн çапнă çĕрте те пулчĕ, каçхине клубра кино пăхрĕ. Унтан ĕçе те хутшăнма пуçларĕ — малтан-лăха ăна çур тырри кĕлтисене бригада анкартине турт-тарнă çĕре ячĕç. Çапла унăн килти пурнăçĕ майĕпе йĕр-кене кĕрсех пычĕ, шухăш-кăмăлĕ те яланах пĕр пек ти-кĕс те лăпкă пулчĕ.

## 38

Киле таврăннăранпа вăл Наталипе темиçе хут та тĕл пулчĕ, анчах вĕсем пĕрре те лайăххăн калаçаймарĕç. Пĕрне-пĕри ăнсăртран курса пăт-пат сăмах хушкаласа илеççĕ те — часах уйăрăлса каяççĕ. Илюк ытларах та калаçнă пулĕччĕ, анчах Натали яланах васкать.

«Леш Ухваниç Микулипе хытах туслашса кайнă ку-рăнать ку, çавăнпа ютшăнать, манпа тăнине курсан на-мăс пуласран та хăрать пулмалла,—шухăшларĕ Илюк.— Хăйĕн ирĕк ĕнтĕ, мĕн тăвассу пур...»

Анчах чăн сăлтавĕ унта урăх пулнă.

Пĕррехинче, Шупашкартан пынă артистсем лартнă спектакле курнă хыççăн, вĕсем клубран пĕрле тухрĕç. Çанталăкĕ вăл каçхине питĕ ырăччĕ,— ăшă, лăпкă,— пĕртте кĕре кĕрес умĕнхи пек мар. Вĕсем урам хĕррипе, лаштра йăмрасем айĕпе хуллен кăна утса кайрĕç. Мал-тан сăмах спектакль çинчен пулчĕ — ĕмĕртен пыракан йăла ĕнтĕ ку, спектакль курса тухнă хыççăн ун пирки калаçасси,— унтан майĕпен, сисмесĕрех калаçу урăххи-сем çине куçрĕ.

— Акă ĕнтĕ каникул та иртсе кайрĕ, тепрер эрнерен каллех парта хушшине ларас пулать...— терĕ Натали кичеммĕн.

— Мĕн, питех вĕренес килмест-им? — кулнă пекрех ыйтрĕ Илюк.

— Санăн хăвăн мĕнле?

— Эп вĕренес тетĕп-ха.

— Эсĕ... лере тăххăрмĕш класс пĕтерсе килнĕ теççĕ. Чăнах-и вăл?

— Ҫăнах-ҫке.

— Пит аван апла пулсан... Мухтамалла. Анчах мĕнле-ха унта... килти пекех вĕрентеҫҫĕ-и?

— Ма ун пек ыйтатăн? Шкул тени — пур ҫĕрте те шкулах ĕнтĕ, программи те пĕр пекех.

— Ҫапах та...— Натали пĕр хушă тытăнса тăчĕ, унтан Илюка куҫран пăхрĕ: — Тĕрме те-ха вăл...

Илюк ассăн сывласа илчĕ.

— Тĕрĕс мар эс калани. Тĕрме мар вăл, ачасене воспитани паракан, вĕрентсе ӳстерекен колони. Макаренкăн «Педагогическая поэма» кĕнекине пĕлетĕн пуль?

— Кĕнекине те вуланă, киноне те курнă.

— Хальхи колонисем те ҫавăн майлах, анчах та ун чухнехинчен нумай лайăхрах. Эсĕ ĕнтĕ унти шкулти учительсем вырăнне ĕлĕкхи жандармсем, тĕрлĕ надзирательсем вĕрентеҫҫĕ, класс алăкĕ умĕнче винтовкăллă хурал тăрать тесе шутлатăн пуль...

— Аҫтан пĕлем-ха эпĕ? Ҫавăнпа ыйтатăп. Унта пĕтĕмпех урăхла пулассăн туйăнать мана...

Илюк вара ăна колонири пурнăҫ ҫинчен каласа пама тытăнчĕ. Вĕсем, ҫырма урлă каҫса, хăйсен тĕлнелле хăпарчĕҫ, Наталисен хапхи умне ҫитсе тăчĕҫ, анчах Илюк калавĕ хĕрачана ҫав тери интереслентерсе ячĕ те, вăл киле кĕме васкамарĕ.

— Атя, ҫав пĕренесем ҫинче ларар пăртак...

Вăхăт чылая кайрĕ, Мускав юлашки хыпарсем пĕлтерме пуҫларĕ, кĕҫех акă Кремль сехечĕ вуниккĕ ҫапать те клуб умĕнчи мăн репродуктор шарлами пулать. Ҫапах та Наталипе Илюк пĕр хускалмасăр ларчĕҫ-ха. Натали халĕ Илюка хăй тĕрмене мĕнле майпа лекни ҫинчен калаттарчĕ.

— Эпĕ ун ҫинчен санран тахҫанах ыйтса пĕлесшĕн пурăнатăп... Эс манран ан вăтанса тăр, тĕп-тĕрĕссипе, ним пытармасăр кала, юрать-и?

— Йывăр мана ун ҫинчен аса илме,— терĕ Илюк.

— Апла пулсан та, маншăн каласа пар ĕнтĕ! — Натали ăна аллинчен тытса ик-виҫĕ хут пăчăртаса илчĕ.— Эпир санпа туссем вĕт-ха, мĕн пĕчĕкренех пĕрле... Ахаллĕн пулсан, эп сан пата ҫырусем те ҫырассăм ҫукчĕ. Эс ман ҫырусене пурне те илнĕ пуль?

— Илнĕ. Тавтапуҫ сана уншăн. Мана вĕсем питĕ пулăшрĕҫ...

— Хăш енчен? Ăнланмастăп,— терĕ Натали.

— Кăмăла ҫĕклерĕҫ. Вăй хушса пачĕҫ. Чуна тасатрĕҫ. Халь ăнлантăн-и?

Натали чӗнмерӗ. Паллах, вӑл пӗтӗмпех ӑнланчӗ, анчах ун ҫинчен каласси килмерӗ унӑн.

Кӑшт ларсан, сӑмаха Илюк пуҫларӗ.

— Анчах чӑн малтан ярса панӑ сӑвви кӑштах тӗлӗнтерчӗ: хӑшпӗр сӑмахсем вырӑнне пӑнчӑсем лартса тухнӑ. Мӗнле сӑмахсем пулнӑ унта? Кала-ха?

— Хӑҫан та пулин хӑвах пӗлӗн.

— Ҫапах та эп кӑштах тавҫӑрса илтӗм... «Савни» сӑмаха чӗрсе пӑрахнӑ эсӗ...

— Тавҫӑрса илтӗн пулсан — ан та ыйт эппин. Эс луччӑ хӑв ҫинчен каласа пар.

Ҫакӑн хыҫҫӑн Илюкӑн ирӗксӗрех парӑнма тиврӗ. Анчах вӑл пӗр вунӑ-вунпилӗк минут пек каласанах, Наталисен урам енчи чӳречи уҫӑлчӗ те амӑшӗ кӑшкӑрни илтӗнчӗ:

— Натали! Натали-и!

— Мӗскер, анне? — хирӗҫ сас пачӗ Натали.

— Кӗр киле, мӗн ухмаха супса ларатӑн ҫак таранччен?

— Юрӗ, юрӗ, анне. Халех кӗретӗп...— илӗртрӗ Натали. Хӑй вырӑнтан та хускалмарӗ, сивӗрех пулнипе Илюк ҫумнерех куҫса ларчӗ ҫеҫ.— Кала малалла, Илюк... Унтан мӗн пулчӗ?

Кӗҫех амӑшӗ Наталие тепӗр хут чӗнчӗ:

— Халех кӗнӗ пултӑр! Асту эп сана!.. Эс те килнелле танкка, Микула, неччу хӗре шӑнтса лартма!

— Вӑл сана Ухваниҫ Микулипе ларать тесе шутлать пулмалла,— терӗ Илюк кӑштах кӳреннӗ пек сасӑпа.

— Теме кирлӗ пуль мана ҫав кӑтра така,— ал сулчӗ Натали.— Тупӑннӑ каччӑ... Чӑн-чӑн хулиган вӑл, хӑйне ним чухлӗ те тытма пӗлмест, урӑх калаҫмастӑп та эп унпа. Вӗҫкӗн, тӑрпалтай вӑл!

Вӗсем, пӗрене ҫинчен тӑрса, хапха патнелле пычӗҫ, анчах кунта та чылайччен чарӑнса тӑчӗҫ-ха. Темшӗнҫке, вӗсен пӗр-пӗринчен питех уйрӑласах килмерӗ курӑнать.

— Ыран каҫ тата тӗл пулӑпӑр-ха, юлашкине каласа парӑн вара,— терӗ Натали, Илюка хулӗнчен пӑчӑртаса илсе.— Халь кайса ҫывӑр ӗнтӗ...

— Эсӗ те лайӑх тӗлӗксем кур,— пӑшӑлтатрӗ Илюк.

Натали хапха шашулкки ҫине пусрӗ, анчах ҫав вӑхӑтра пӗчӗк хапхи хӑех ярр! уҫӑлса кайрӗ те, урама тӑпӑрт! унӑн амӑшӗ тухса тӑчӗ. Ҫара пуҫӑн, ҫара уран, кӗпине йӳле янӑскер, пахчари чие тӑррисем хушшипе ӳкекен тӗтреллӗрех уйӑх ҫутинче вӑл хӑрушла юмах-

сенчи усал тухатмăш пек илемсĕр, сăнсăр курăнса кайрĕ.

— Эсĕ мĕншĕн каланине итлеместĕн, эсремет хĕрĕ? Кампа йĕпĕлтетсе тăратăн çĕр каçипе? — тӳрех кăшкăрса ячĕ вăл.

— Ара, халь те кĕретĕп-çке,— терĕ Натали.

— Ку таранччен ма кĕмерĕн? Миçе хут чĕнмелле сана?

— Арçури пек ан çухăр ĕнтĕ, çынсем илтеççĕ,— сассине хытарчĕ Натали.

— Э, эс тата хирĕç калатăн-и-ха? Ак эп сана, чупкăна!..

Амăшĕ хĕрĕ çинелле сикрĕ те ăна пĕррех чант! çупса ячĕ.

— Эсĕ мĕн, тĕлĕкре шуйттан курса тухрăн-и? — çав тери çилленсе кайрĕ Натали.— Е каллех, шăматкунхи пек, ханша персе лартрăн?

— Эсрел куртăм, вуник мăйракаллине! Хирĕç калаттарăп эп сана! Çамрăк-ха эс мана вĕрентме!..— Вăл каллех хĕрне унтан та кунтан çапма тытăнчĕ.— Кĕр киле, чупкăн!

Амăшĕ чăнах та ӳсĕр пулнă иккен. Вăл паян та сăмакун юхтарнă-мĕн те, ăна пĕчĕкшерĕн тутана-тутанах виçерен тухса кайнă...

— Кун пек хăтланатăн пулсан, эпĕ вуçех киле кĕместĕп! Кӳршĕсем патне каятăп та атте таврăниччен выртатăп! — кăшкăрчĕ Натали.

— Мĕн-мĕн-мĕн? Ăçта каятăп тетĕн? — тата хытăрах çухăрма тытăнчĕ амăшĕ.

— Ак, Илюксем патнех кайма пултаратăп! — Натали пĕррех аллипе сулса пӳрт умĕнчи решетке çумĕнче, тĕттĕм çĕрте, тăракан Илюк çине кăтартрĕ. Амăшĕ ăна ку таранччен асăрхаманччĕ, анчах халĕ тăрук курса палласа илчĕ те пушшех урса кайрĕ.

— Ай тур-тур-тур!.. Ку мĕне пĕлтерет тата?! Эс, эппин, кĕçĕр çак вăрăран, çак шăпанаран уйрăлаймасăр лартăн пулать? Аçа çаптăрах, çын мĕн калĕ, намăса ăçта чикес? Ăсу пур-и санăн кăшт та пулин, ача-ам? Урамра вăрă-хурахпа ыталанса ларатăн пулать!..

— Чар чĕлхӳне, анне! — тӳсеймесĕр кăшкăрчĕ Натали те, тарăхнипе ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр.— Ан кӳрентер çынна!

— Мĕнле çынна? — куçĕсене чарса пăрахрĕ амăшĕ.— Хăш енчен ăна çын теме май пур? Вăрă вĕт вăл, шăпана, урăх ним те калаймастăн ăна! Ун çывăхне те пыма хăрамалла, эс пур — çĕрĕпе унпа...

— Чарӑн теҫҫӗ, анне!..— макӑрса ярас пек кӑшкӑрчӗ Натали.

Анчах амӑшӗ ун сӑмахне хӑлхана та чикмерӗ, халь вӑл Илюк ҫине сиксе ӳкрӗ.

— Эсӗ! Эс мӗн питпе ман хӗр ҫумне ҫыпӑҫатӑн, эсрелӗ? Мӗн кирлӗ сана? Кулатник вӗт эсӗ, ристан, каттӑршни, пӗҫелянни! Тепри сан вырӑнта пулсан ҫын куҫӗ умне курӑнма та вӑтанмалла, тӗпсакайӗнче пытанса пурӑнмалла, эсӗ пур, кӗҫҫе пит, хӗрсем хыҫҫӑн ҫӳресшӗн-ха, йытӑ!.. Тьху сана, тьху, тьху!..

Ку таранччен чунне хытарса, ниҫта кайса кӗреймесӗр тӑнӑ Илюк текех тӳсеймерӗ, пӗр утӑм малалла ярса пусрӗ те:

— Праски инке, ахалех ҫӗтӗлетӗн, эп нимӗн чухлӗ те айӑплӑ мар сан умӑнта! — терӗ, хаш та хаш сывласа илсе.

— Ан каланӑ пултӑр мана ун пе-ек!..— татах ҫухӑрса ячӗ Натали амӑшӗ.— Вӑрманти кашкӑр ами инке пултӑр саншӑн! Шӑпана, вӑрӑ! Ма килтӗн, ма таврӑнтӑн пуль эсӗ, тӗрмерех пӗтмеллеччӗ санӑн, шуйттан шӑтӑкне кутӑн чӑммаллаччӗ! Ҫухал ман куҫ умӗнчен, сӑттана!.. Ак эп сана...— Вӑл Илюка ҫапмалли тупма пӗшкӗнсе ҫӗре хыпашлама тытӑнчӗ, анчах ҫав вӑхӑтра Натали чупса пырса ун аллисене каялла пӑрса лартрӗ.

— Эс ухмаха ернӗ пуль, анне! Асту, ҫыхса пӑрахап!

— А-а!.. Хура-ах! Вӗлереҫҫӗ-ӗ!..— хӑйне чӑнах та такам ҫапса пӑрахма тӑнӑ пек кӑшкӑрса ячӗ вӑл.

Натали амӑшӗ кӑшкӑрнине илтсе таврари кӳршӗсем чылайӑшӗ вӑранчӗҫ, анчах та вӗсен килӗнче час-часах ун пекки пулнине хӑнӑхнӑ пирки никам та хускалмарӗ, хурах кӑшкӑрма пуҫласан тин вара урама харӑссӑн темиҫен сиксе тухрӗҫ. Илюк амӑшӗ те чупса пычӗ.

— Мӗн пулнӑ? Кама пусаҫҫӗ?

— Ӑҫта хурахӗсем?..

— Акӑ! Ак ҫак вӑрӑ ман хӗре ҫулӑхнӑ! — кӑшкӑрчӗ Натали амӑшӗ, Илюк ҫине кӑтартса.— Кам пӗлет ӑна, тем шухӑш тытнӑ вӑл, те унпа пӗрле пирӗн пата кӗрсе ҫаратма ӗмӗтленнӗ! Эп чарма чупса тухрӑм та, мана хӗнеме тапратрӗ!

— Суя! Суять вӑл, ан ӗненӗр ӑна! — амӑшне каялла тӗртсе кӑшкӑрчӗ Натали.— Илюк пире ним те туман, эпир унпа калаҫса лараттӑмӑр ҫеҫ, анне хӑй ӑна нимсӗрех темтепӗр каласа пӗтерчӗ, хӑй айӑплӑ!

— Санран ыйтмаҫҫӗ, ҫӑварна хуп эсӗ! — хӗрӗ ҫине каллех хӑмсарса ячӗ амӑшӗ.— Халех аҫӳ-аннӳне итлеми

пулас терĕн-и? Ристансемпе явăçса çӳреме çуратса ӳстермен эп сана! Комсомол тата хăй!..

— Эх, анне, чĕлхӳ мĕнле çаврăнать пуль санăн, çынсем умĕнче кăшт та пулин намăса пĕлесчĕ хуть! — Натали тăрук макăрса ярса питне саппун аркипе хупларĕ те кил хушшинелле чупса кĕрсе кайрĕ.

Амăшĕ çаплах çĕтĕлчĕ, темтепĕр лапăртатрĕ. Унпа çыхлансан вĕçне-пуçне тупас çуккине пĕлсе, кӳршĕсенчен нихăшĕ те пĕр сăмах та чĕнмерĕ, вĕсем пĕрерĕн-пĕрерĕн килĕсене саланма пуçларĕç. Илюк амăшĕ те ывăлне çаннинчен тытса туртрĕ:

— Атя киле, ывăлăм... Асран тайăлнă çынна итлесе пĕтерейместĕн, каларăм-çке, чĕлхи чараксăр унăн...

## 39

Ку таранччен те Илюкăн кӳренмеллисем нумай пулнă ĕнтĕ, усал çынсем ун чĕрине сахал мар ыраттарнă, тепĕр чух, тӳсме çуккипе, вĕри куççулĕпех макăрма та тӳр килнĕ, анчах кĕçĕрхи каç урамра пулса иртнĕ шăвшав ăна нихçанхинчен те хытăрах пырса тиврĕ. Мĕн кăна каласа намăслантармарĕ, епле кăна хăртмарĕ ăна Натали амăшĕ! Ытла та ним вырăнне хумасăр, çĕр çинчи ирсĕр чĕрчунсемпе танлаштарса вăрçрĕ вĕт-ха...

Мĕншĕн?

Нимĕншĕн те мар, ним айăпсăрах.

«Вăрă, бандит, ристан... Ма таврăнтăн пуль эсĕ, лерех пĕтмеллеччĕ санăн...»

Ой, йывăр-çке пĕр сăлтавсăр сăмах илтме, çав тери йывăр! Вĕсем çынна сывлайми туса лартаççĕ, пĕтĕм ăшчике вут-çулăмпа çунтараççĕ, кăмăла çапса хуçаççĕ вĕт!..

Çĕрĕпех, ирчченех асапланчĕ Илюк, ниепле те çывăрса каяймарĕ. Аптранă енне, çенĕкре темиçе çул хушши çакăнса тăнă табак çулçине лутăркаса, чикарккă чĕркесе чĕртрĕ. Колонири мастерскойĕнче ĕçленĕ чух вăл Куприян Иванчпа кăштах турткаланăччĕ, анчах киле таврăннăранпа çăвара чĕлĕм таврашĕ пĕрре те хыпман. Халĕ ак, ăшĕ çуннипе, ирĕксĕрех туртса ячĕ. Хаяр тĕтĕм тӳрех пуçа пырса çапрĕ, ӳсĕртнĕ пек турĕ. Илюк кăмăлĕ пушшех пăтранса кайрĕ те, вара пачах çывăрасси пулмарĕ.

«Вăрă, бандит, ристан...»

Натали амăшĕ пĕтĕм урам илтмелле кăшкăрнă çак сăмахсем Илюк хăлхинчен тухма пĕлмерĕç.

Ывăлĕ мĕн тери асапланнине амăшĕ пĕтĕмпех сиссе выртрĕ, ăна лăплантарма тăрăшрĕ, çав йĕксĕк сăмахне хăлхана чикме те кирлĕ мар терĕ, анчах ывăлне ним айăпсăр кӳрентернĕшĕн хурланса, ăна хĕрхенсе, хăй те татăлсах макăрчĕ.

Ирхине, çăлтан ăсса кĕнĕ шывпа пит çунă хыççăн, Илюк сасартăк амăшне хăй хулана кайма шут тытни çинчен каларĕ.

— Мĕн тума? — тĕлĕнчĕ амăшĕ.

— Тен, ăçта та пулин ĕçе вырнаçма пулĕ,— терĕ Илюк.— Çакăн пек намăслантарса пĕтернĕ хыççăн ялта пурăнаймастăп эпĕ...

— Ах, ан калаç-ха ун пек! — хăрасах кайрĕ амăшĕ.— Ахаль те икĕ çул уйрăм пурăнтăмăр, киле килни виç эрне те çук. Ямастăп эп сана ниçта та...

— Ан чар, анне.— Илюк сĕтел пуçне ларчĕ те лăпкăн калаçма пуçларĕ.— Е пĕр-пĕр завода, е стройкăна ĕçлеме кĕретĕп те каçхине шкулта вĕренетĕп. Çын пулас пулать манăн!

— Каллех... мĕн те пулин пулса тухмĕ-ши? Çавăнтан хăратăп тата эпĕ, ывăлăм...— çав тери хурлăхлăн пăхрĕ ун çине амăшĕ.

— Кун пирки ан та шухăшла, халь тин эпĕ пĕчĕк ача мар, мĕнрен мĕн пулнине чухлатăп, текех ĕмĕрне те йăнăшассăм çук,— лăплантарчĕ Илюк.

Чылай калаçса ларчĕç вĕсем. Илюк хăй мĕн-мĕн шухăшлани çинчен мăн сын пекех ĕнентермелле калаçрĕ те, амăшĕ нумаях хирĕçлесе тăмарĕ, килĕшрĕ:

— Кайса пăх эппин, анчах, тархасшăн, нумай ан çӳре, атту эп каллех пăшăрханма пултаратăп...

Илюк вара çав кунах Шупашкара кайрĕ. Хытă кӳреннĕскер, çынсен куçĕ умне курăнас килменнипе, вăл урампа мар, ял хыçĕпе кайма шут турĕ, анчах хăйсен хапхинчен тухнă-тухман, пачах та кĕтмен çĕртен, Наталие тĕл пулчĕ,— вăл çырма енчен пăру хăваласа килет-мĕн. Пĕрне-пĕри курсан, вĕсем иккĕшĕ те хĕп-хĕрлĕ пулса кайрĕç.

— Ăçта кайма тухрăн капла? — хуллен кăна ыйтрĕ Натали, Илюк умĕнче чарăнса.

— Тупăнчĕ-ха каймалли,— терĕ Илюк.

Вĕсем хире-хирĕç пăхса тăчĕç, анчах калаçма сăмах тупăнмарĕ. Каçхине мĕн пулса иртни вĕсене иккĕшне те иментерчĕ пулмалла çав.

— Эс мана тем пекех çилленетĕн пуль ĕнтĕ... Каçар,— терĕ унтан Натали.

— Сана мĕншĕн çилленес? Эс айăплă мар вĕт, сан аннӳ темшĕн çав териех урса кайрĕ...

— Эп ăна уншăн паян питĕ хытă вăрçрăм.

— Вăрçнинчен мĕн усси? Акă, халь эсĕ манпа тăнине курсан та каллех сиксе ӳкет сан çине.

— Хăрамастăп эп унран. Атте ман майлă. Вăл та паян аннене ятларĕ.

Илюк чĕнмерĕ, Натали çинчен куç илмесĕр пăхса тăчĕ. Чăнах та хĕр пулсах кайнă иккен Натали. Ытарма çук чипер... Çавăнпа амăшĕ унăн кашни утăмнех сыхласа çӳрет пулмалла.

— Нумайлăха каятăн-и? — ыйтрĕ Натали.

— Çук, пĕр-ик куна çеç.

— Эс мана хăв çинчен пĕтĕмпех каласа памарăн вĕт-ха, асту, çавна ан ман. Пурпĕрех калаттаратăп...

Натали хăйĕн пиçнĕ хăмла çырли тĕслĕ тутисемпе йăл кулса илчĕ те, пăрушне хăваласа, пралукалла кĕрсе кайрĕ. Илюк ун çине тата пĕр-икĕ хутчен те çаврăнса пăхса аналла утрĕ. Çырма урлă каçса ял вĕçне тухсан, вăл ялпо лавккин алăкĕ уççине курчĕ те ун еннелле пăрăнчĕ.

— Çул çине пĕр-пĕр йӳнĕрех пирус илсе чикес-ха...

Лавккара унăн заведующийĕ Прокопий Васильч Зайкинсăр пуçне урăх никам та çук, прилавок хыçĕнче пĕчченех тăрса, вăл хăй умĕнчи хутсем çине пăха-пăха шут шăрçисене шутарать — темле отчет хатĕрлет пулмалла. Алăкран кĕрсенех, Илюк ăна сывлăх сунчĕ, Зайкин, ун çине куçлăх урлă пăхса: «Килех»,— терĕ те каллех хăйĕн ĕçне тума тытăнчĕ. Пĕлтĕр çеç туса лартнă пысăк лавккара тавар нумай иккен, вĕсене пурне те йĕркеллĕ, тирпейлĕн вырнаçтарса тухнă — пĕтĕмпех куç умĕнче, кама мĕн кăмăла каять — çавна туян. Ялти лавккара лайăх япаласем çакăн пек нумай пулнине Илюк пĕрре те курманччĕ-ха, çавăнпа та вăл хăй сисмесĕрех, прилавок çуммипе хуллен утса, кантăк хупăллă ещĕксенче выртаканнисене те, сентресем çинчисене те йĕркипех пăхса пычĕ. Чăнах та тем те пур — йĕпрен пуçласа ылтăн сехет, сăмса тутринчен пуçласа хаклă пальтосем, ачасем вылямалли теттесенчен пуçласа моторлă велосипед таранах илме пулать иккен тăван Юманлăхра! Илюка кирлĕ япаласем те нумай, анчах вĕсене илме халлĕхе унăн укçи çук-ха çав, малтан укçине ĕçлесе тупас пулать...

Илюк çапла тавар курса çӳренĕ хушăра Прокопий Зайкин ун çине темиçе хут та пăха-пăха илчĕ. Илюк

камне, вăл нумай та пулмасть ăçтан таврăнса килнине вăл лайăх пĕлнĕ, çавăнпа та ăна питех шанман,— кам пĕлет, тен, вăл хуçи сисиччен мĕн те пулин хĕстерсе чикме шутлать? Анчах хăй нимĕн те шарламарĕ. Юлашкинчен Илюк ун патнелле çаврăнса пырса тăчĕ те:

— Лайăх лавкка туса лартнă эсир,— терĕ.— Хулари пекех...

— Аптрамасть,— ун çине каллех куçлăхĕ урлă пăхса илчĕ Зайкин.

— Таварĕсем те нумай...

— Кӳренместпĕр.

— Мана пĕр виççĕр грамм премĕк пар-ха. Тата пĕр пачка «Прибой».

— Туртма вĕрентĕн те-им?

— Ытахальтен çеç. Хулана кайма тухрăм та, çул çинче кичем пуласран мăкăрлантарма кирлĕ пулать терĕм.

Зайкин ăна малтан «Прибой» пирус илсе пачĕ, унтан премĕк виçме тытăнчĕ. Çав вăхăтра лавккана Илюк палламан икĕ арçын пырса кĕчĕç. Иккĕшĕ те кивĕрех костюм тăхăннă, пĕри улăм шлепкепе, хура куçлăхпа, тепри пуçне шап-шакла хыртарнă та лĕпки тĕлне кăвак тюбетей лартса янă, аллинче сулăмлă тимĕр туя.

— Ыр кун пултăр ыр çынсене! — терĕ çав шакла пуçли лавккана кĕнĕ-кĕмен.

— Килĕрех,— пуçĕпе сулса илчĕ Зайкин.

— Хăна тумăн-ши пире, хуçи? Иртенпех утатпăр та, урасем ыратакан пулчĕç, пыршăсем те самаях пĕрĕнчĕç курăнать...

— Тархасшăн, суйлăр мĕн кирлине,— аллипе сентресем еннелле сулчĕ Зайкин.

— Пĕр чĕрĕкне пар-ха эс пире. Ну, çыртмалли те кирлĕ мĕн те пулин.

— Акă, лайăх консервăсем пур. Шпрот, кильки.

— Тавай килькине. Çăкăр таврашĕ çук ĕнтĕ санăн?

— Сутмалăх çук, анчах хам валли килтен илсе килнинчен пĕр татăк юлнă акă, тиркеместĕр пулсан...

Тухса каймаллискерех, Илюк çак çынсене курнипе тытăнса тăчĕ. Темле ырă шухăшпа çӳрекен шанчăклă çынсем пек туйăнмарĕç ăна вĕсем. Вăл, прилавок çумне тайăнчĕ те, ĕçлĕ пулас тесе, кĕсйинчен пĕр премĕкне кăларса ерипен чăмлама тытăнчĕ. Тюбетейлă çынни эрех кĕленчине уçса чӳрече умне лартрĕ, унтан консервă коробкине тытрĕ.

— Уçмалли тупăнать-и санăн? Çĕçĕ-и, мĕн-и...

— Ун пек струмент çук вара, тытмастпăр,— терĕ Зайкин.

— Эккей, мĕнпе уçас-ха, эппин? — Тюбетей çавăнтах Илюк çинелле пăхрĕ.— Тен, санăн пур, çамрăк юлташ?

Илюк пĕр сăмахсăрах хăй киле таврăнсан тунă çутă аврăлă çĕççине кăларса пачĕ.

— Э-э, питĕ капăр япала-çке ку санăн! — çĕççе аллинче çавăркаласа пăхрĕ леш çынни.— Мĕнле маçтăр туса пачĕ кун пекех?

— Хам турăм,— терĕ Илюк.

Тюбетейли консервă банкине лăтăр-латăр касса уçрĕ те, çĕççе йĕм çумне шăлса илсе Илюка каялла пама тăчĕ, анчах çав вăхăтра прилавок хыçĕнчен Зайкин аллине тăсрĕ:

— Кӳр-ха, эп те курам...

Çĕçĕ ăна та килĕшрĕ.

— Хитре струмент! Чăнах та хăвах турăн-и? —шанмасăртарах ыйтрĕ вăл Илюкран.

— Эпĕ слесаре вĕреннĕ вĕт,— терĕ Илюк.

— Мĕн... лере-и?

— Иййа. Разряд та пур манăн.

— Эппин, эс пĕр-пĕр мастерскойĕнче ним мар ĕçлеме пултаратăн? Çапла-и?

— Хулана çавăн пирки каятăп-ха...

— Пит аван ку. Тĕрĕс шут тытнă. Кашни çыннăн хăйĕн ĕçлесе тăранас пулать, ыттисем туни çине шанса сăр хуртла пурăнма юрамасть. «Кам ĕçлемест — вăл çимест» тетпĕр-ха вĕт яланах...

Ку ĕнтĕ Илюка шак хурса калани пулчĕ, анчах ăна Илюк сисмен пек турĕ. Леш çыннисем ĕçме-çиме тытăнчĕç, Илюк хăйĕн çĕççине хуçлатса чикрĕ те лавккаран тухса утрĕ.

«Нумайччен çавăн пек куçран тĕкĕç-ха мана...— ассăн сывласа илчĕ вăл.— Анчах та эпĕ хама тӳрре кăларатăпах. Пăрахтаратăп хам çинчен çавăн пек калаçма...»

Тепĕр сехетрен Илюк шоссе патне çитрĕ те пĕр тĕмеске çине ларчĕ. Çак вырăна вăл икĕ çул каялла килтен тухса тарнă сĕм-тĕттĕм каçхине килнĕччĕ. Ун чухне, хăйне кĕç-вĕç хуса çитсе тытаççĕ пуль тесе, питĕ хăраначчĕ. Анчах халь акă нимрен хăрамалли те çук. Унăн чĕри таса, кăмăлĕ лăпкă, вăл никамран та тармасть, пытанмасть, хулара хăйне валли майлă ĕç тупса, ĕçленĕ хушăрах шкулта та вĕренес ĕмĕтпе каять...

Шупашкар еннелле машинăсем пĕрин хыççăн тепри ыткăнса иртрĕç, анчах çак ял тĕлĕнче пĕри те чарăнса

тăмарĕ — пурте туллипе каяççĕ. Илюк ларнă çĕре теми-çе хĕрарăм пырса тăчĕç — хăшĕ панулми, хăшĕ çу-çă-марта йăтнă, хула пасарне сутма каяççĕ курăнать.

— Грузовиксем халь çынсене питех лартасшăн мар çав,— терĕ пĕри, иртсе каякан машинăсем çине пăхса.— Кĕçех акă Советскипе Етĕрне автобусĕсем пулаççĕ пуль-ха.

Анчах автобуса чылай кĕтме тиврĕ. Ахаль ларма кичеммипе Илюк çĕрте выртакан пĕр чĕрĕ патака тытрĕ те, çĕççине кăларса, ăна тикĕслеме, шуратма, якатса туя тума тытăнчĕ. Хĕрарăмсем типĕ курăк çине выртса тĕлĕрсе кайрĕç, вăл вара пĕчченех, хутран-ситрен шоссе çине пăха-пăха, вăрахчен аппаланса ларчĕ.

— Вăй патăр! — сасартăк такамăн хулăн сасси ил-тĕнсе кайрĕ ун пуçĕ çийĕнче.

Илюк картах сиксе çӳлелле пăхрĕ те çав тери тĕлĕн-чĕ: ун умĕнче паçăр хăйсен ялĕнчи лавккара курнă икĕ çын тăраççĕ. Вĕсем ăна тӳрех палласа илчĕç пулмалла.

— Мĕн ĕçлетĕн? — ыйтрĕ тюбетейли, ун патне кук-ленсе.

— Автобус кĕтетĕп,— терĕ Илюк.

— Сут-ха çĕççӳне, вăл мана ытла та кăмăла каять!— аллине тăсрĕ лешĕ.

— Хама кирлĕ, сутмастăп,— пуçне пăркаларĕ Илюк.

— Эсĕ хăвна валли татах тума пултаратăн! Ахаль илместĕп вĕт санран, укçалла. Мĕн чухлĕ парас?

— Ним чухлĕ те кирлĕ мар. Сутмастăп.

— Ан кутăнлан ĕнтĕ, ачам, ме сана халех çирĕм пилĕк тенкĕ! — Тюбетейли çавăнтах вăрăм кăвак хут туртса кăларчĕ.

— Ытла нумай паратăн, пасарта ун пек çĕçĕ пилĕк тенкĕ те тăмасть,— кăмăлсăр пулнă пек асăрхаттарчĕ шлепкелли.

— Пултăрах, мана япали килĕшет пулсан, эпĕ ха-кĕшĕн нихçан та тăмастăп. Ну? Килĕшрĕмĕр-и? Асту, кайран ӳкĕнетĕн акă, кун пек хак сана мансăр пуçне пĕр ухмах та памасть!

— Тĕрĕс сăмах,— терĕ шлепкелли,— сут часрах, май килнĕ чух.

Илюк кăштах шухăша кайнă пек пулчĕ те — ки-лĕшрĕ: укçине лайăх параççĕ, киле таврăнсан, вăл кун пек çĕçĕ иккĕ-виççĕ те тума пултарать, шеллесе тăрас мар!

Часах вĕсем кĕтсе ларнă тĕле таçтан таврăнакан гру-зотакси çитсе чарăнчĕ, ытти çынсемпе пĕрле ун çине

Илюкӑн ҫӗнӗ «тусӗсем» те ларчӗҫ, анчах Хыркассине ҫитсенех иккӗшӗ те анчӗҫ.

— Чипер кай, ачам, ҫӗҫҫӳшӗн тавтапуҫ! — аллипе сулса хӑварчӗ тюбетейли.

Шофер ҫул хӗрринчи чайнӑя апат ҫиме кӗнӗ пирки пассажирсен Хыркассинче пӗр хушӑ кӗтмелле пулчӗ, пурте тенӗ пекех машинӑран тухрӗҫ те пӗрисем каллӗ-маллӗ уткаласа ҫӳрерӗҫ, теприсем чайнӑйне те кӗрсе тухрӗҫ. Шыв ӗҫес килнипе Илюк та йӑпӑрт чупса кӗчӗ, буфетран васкасах пӗр бутылка лимонад илсе стена ҫумӗнчи сӗтел патне пырса тӑчӗ. Унтан, тутлӑ шыва стакан ҫине ярса ӗҫнӗ чух, ӑнсӑртран пӳлӗм кӗтессинелле пӑхрӗ те, унти сӗтел хушшинче хӑй халь кӑна пӗрле килнӗ шлепкеллӗ тата тюбетейллӗ ҫынсемпе юнашар леш «Шатрипе» «Чалӑшши» ларнине курах кайрӗ.

Ҫӑтма тӑнӑ шыв та чутах пыра ларатчӗ пулас. Илюк чыхӑнса кайрӗ, лимонадри газ сӑмсана пырса ҫапрӗ. Ак япала, каллех тӗл пулма тӳр килчӗ вӗт ҫав шуйттансемпе!.. Мӗн туса ҫӳреҫҫӗ-ши вӗсем кунта? Ҫитменнине, Шатрипе Чалӑшши леш улӑм шлепкеллипе тюбетейлине лайӑх палласҫӗ пулмалла — питӗ туслӑн каласса лараҫҫӗ вӗсемпе. Акӑ, тем калаҫнӑ май, тюбетейли йӗм кӗсйинчен Илюк ҫӗҫҫине кӑларса Шатрипе Чалӑшшине кӑтартрӗ, ҫав самантрах Шатри ӑна хӑй аллине илсе пӑхма тытӑнчӗ...

Тӑрук ҫилӗ килнипе Илюк тарласах кайрӗ. Вӑл ҫав тери тӑрӑшса тунӑ хитре япала хӑй ҫак самантра никамран та ытларах курайман ирсӗр ҫын аллине лекрӗ! Куна пӗлнӗ пулсан, Илюк хӑйӗн ҫӗҫҫине ҫӗр тенкӗпе те сутас ҫукчӗ ҫав.

«Ма ухмахлантӑм пуль!..» — хӑйне хӑй вӑрҫса илчӗ вӑл.

— Кам манпа пырать — тухӑр! — кӑшкӑрчӗ ҫав вӑхӑтрах апат ҫисе тӑраннӑ шофер.

Илюк кӗтесре ларакансем ҫине тата тепӗр хут шӑтарас пек ҫилӗпе пӑхса илчӗ те урамалла тухрӗ. Машина тапранса кайсан та, ҫавсен сӑнӗсем куҫ умӗнчен кайма пӗлмерӗҫ. Мӗн Шупашкара ҫитиччен шухӑшласа пычӗ вӑл ҫавсем ҫинчен.

— Пурте пӗр йышшискерсем, тахҫанхи туссем пулмалла... Шатрипе Чалӑшши — вӑрӑсем эппин, кусем те таса ҫынсемех мар. Кам пӗлет, тен, вӗсем халӗ пӗр-пӗр ҫӗрте ҫаратасси ҫинчен калаҫса татӑлма тӗл пулчӗҫ?..

Вӑл каллех хӑйӗн ҫӗҫҫине ҫав тюбетейллӗ ҫынна сутса янӑшӑн ӳкӗнсе илчӗ.

Киле Илюк виçĕ кунтан таврăнче.

Кăнтăрла пулин те, амăшĕ темшĕн фермăра мар, килтех. Илюк ун çине пĕрре пăхсанах вăл тем пирки хытă пăшăрханнине сисрĕ. Макăрса та илнĕ пулмалла — куç хупаххисем хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе тăртаннă.

— Мĕн эсĕ ытла пит салху сăнлă, чирлемерĕн пулĕ-çке? — ыйтмасăр тӳсеймерĕ Илюк.— Е мĕн те пулин пулнă-и?

— Пулнă çав, шутсăр хăрушă ĕç пулнă! — ассăн, хурлăхлăн сывласа илчĕ амăшĕ.

— Мĕскер тата апла?

— Ĕнер каç темле вăрă-хурахсем пирĕн ялти лавккана çаратса тухнă, ним те хăварман, таварсене машинăпах тиесе кайнă, теççĕ. Халăх кунĕпе шавларĕ. Милицисем килсе тулнă, шышчăк-йытă та илсе килнĕ терĕç...

— Хурал пулман-им вара лавкки патĕнче? — тĕлĕнерех ыйтрĕ Илюк.

— Хуралĕ пулнă, Улатимĕрĕ алăк умĕнчех ларнă, анчах вăррисем ăна пуçран çапса тăнсăр тунă та Вăкăр варĕнчи кĕпер айне кайса пăрахнă, тет.

Илюка çав самантра хăйсем Шупашкарти магазина шăтарса кĕрес умĕн Матрос унти хĕрарăм-хуралçăна çапса ӳкерни аса килсе кайрĕ. Мĕн тери тискер вăл, çавăн пек ним айăпсăр, ним пĕлмен-сисмен çынна тăрук хыçалтан пырса çапса тăнсăр туса ӳкересси! Урнă кашкăр йышши çын кăна тума пултарать çав ун пек!..

Амăшĕ çав вăхăтра ун çинчен куç илмесĕр, ăшĕнче калама çук пăлханса пăхса ларчĕ.

— Илюк,— терĕ вăл унтан хуллен.— Эп сан пирки питĕ хăратăп-çке, ачам...

— Ман пирки? — картах сикрĕ Илюк.— Мĕн хăрамалли пултăр ман пирки?

— Ара... Темшĕн-çке, ял Совет секретарĕ Микки иквиç хут та килсе кайрĕ: халь те таврăнман-и Илюк, питĕ кирлĕччĕ тет.

— Мĕн-ха вара уншăн?

— Ара, сан пирки тем усал шутламаççĕ-ши тетĕп-çке. Анчахрах тĕрмерен таврăннă, лавккине çаратнă каç шăпах килте пулман...

— Ну, ку пустуй сăмах вара, ахалех пăшăрханатăн, анне! — Хăй те пăлханнă пулсан та амăшне лăплантарма пикенчĕ Илюк.— Эп вăл каç ăçта пулни паллă, Шупашкарти Хресчен çуртĕнче çывăрнă. Манăн çĕр выртнишĕн тӳленĕ квитанци пур.

— Ăна та шута илмĕç вĕсем. Тытĕç те — айăплĕç!

— Ун пекки пулма пултараймасть вăл, анне!

Шăп çав самантра урам хапхин пĕчĕк алăкĕ уçăлса хупăнни илтĕнчĕ. Илюкпа амăшĕ пĕр харăсах чÿрече витĕр пăхрĕç те хăйсен кил хушшине ял Советĕнчи ватă сторож Илтемен мучипе пĕр милиционер крыльца еннелле утнине курчĕç.

— Ак!.. Каларăм вĕт сана...— пăшăлтатса илчĕ те Илюк амăшĕ кăвакарса пыракан тутисемпе тăрук касса кайнă чĕрине аллипе тытса сак çине ларчĕ.

## 40

— Тумлан, манпа пĕрле пыратăн,— терĕ çеç милиционер.

Амăшĕ çавăнтах Илюк хутне кĕме пикенчĕ:

— Аçта илсе каятăр капла ман ывăла, мĕншĕн? Ним те туман вĕт вăл, лавкка çаратнă çĕрте пулнă тетĕр пулсан, вăл каçхине ачи Шупашкарта Хресчен çуртĕнче выртрăм тет...

Вăл ÿлесе макăрса ячĕ, анчах милиционерăн отвечĕ пит кĕске пулчĕ:

— Пĕлместĕп. Мана хушнă — эп çавна тăватăп çеç.

Илтемен мучи ку таранччен ахаль те нумай хурлăх курса пĕтнĕ хĕрарăма чунтанах хĕрхенчĕ пулмалла.

— Эсĕ ăшна ытлашши ан çунтар-ха, Анюк, ачин чăнах та айăпĕ çук пулсан тытсах тăмĕç, калаçса пăхĕç те — кăларса ярĕç,— терĕ вăл.

— Айăп çук унăн, çук, çук! Хуть те эсир мана çакăнтах персе пăрахăр, анчах эпĕ çав-çавах калатăп: хальхинче айăплă мар ман ывăл, айăплă мар, çаратман вăл никама та!..— чĕрене ыраттармалла кăшкăрчĕ те Илюк амăшĕ пуçне сĕтел çине хурсах макăрса ячĕ.

Ана кура чăлан алăкĕ патĕнче тăракан шап-шур çÿçлĕ пĕчĕк Раис та кăшкăрсах макăрма тытăнчĕ. Анчах Илюк хăй ним те чĕнмерĕ, васкаса çĕнĕ тумне хывса киввине, колонирен килнине, тăхăнчĕ. Кам пĕлет-ха, тем пулать малашне, тен, каллех... хупса хураççĕ? Çак шухăш унăн чĕрине çатăрах пăчăртаса лартрĕ, пĕр вăхăтлăха куçĕсем те хуралса килчĕç.

— Çăкăр пур-и пирĕн? — хуллен ыйтрĕ вăл, тумланса çитерсен, халĕ те-ха пуçне сĕтел çинчен çĕклеймен амăшĕ патне пырса.— Лăплан ĕнтĕ, эс макăрнинчен усси пулас пур-и?

Амăшĕ ура çине аран тăчĕ те, чăлана кĕрсе, икĕ пăрçа пашалăвне тутăрпа чĕркесе тухса пачĕ.

— Ах, ача-ам!.. Мĕншĕн çав териех телейсĕр-ши эпир санпа иксĕмĕр?!

Илюк амăшне хĕрхенсе ун çине çав тери хурлăхлăн пăхса илчĕ, анчах нимĕн те каламарĕ, хăй те унпа пĕрле макăрса ярасран тутине çыртса лартрĕ те алăк патнелле утрĕ.

Ял Совечĕ тĕлĕнче милици машини кĕтсе тăнă. Те Илюка тытса каяссп çинчен сăмах сарăлнипе, те урăх сăлтавпа, унта çынсем чылай пухăннă иккен... Илюк никам çине те пăхмарĕ, милиционер машина алăкне уçсанах, шала кĕрсе чĕрĕп пек хутланса ларчĕ. Шофер мотора ĕçлеттерме тытăннă вăхăтра вара сасартăк машина чӳречи витĕр Хура Хветле сăнĕ курăнса кайрĕ....

— Аха-а, каллех лекрĕн-и, сучка çури?! — шăлĕсене йĕрсе, хаяррăн кăшкăрчĕ те вăл чышкипе юнаса илчĕ.— У-у, бандит! Тĕрмерех çĕртмелле сире аннӳпе иксĕре те!..

Илюк часрах пуçне тепĕр еннелле пăрчĕ.

Çула тăршшипех вăл нимĕн те курмарĕ, ун пуçĕнче пĕр-пĕринпе çыхăнакан йĕркеллĕ шухăш та пулмарĕ,— пĕтĕмпех тĕтрери пек, пĕтĕмпех пăтравлă. Анчах та тĕлĕнмелле: вăл нимĕн чухлĕ те пăлханмарĕ, унăн ăшĕ те хыпмарĕ — уншăн халь пурĕпĕр пулчĕ пулмалла. Тепĕр тесен — мĕнех вара? Ну, арестлерĕç, ну, илсе каяççĕ. Ну, допрос тăваççĕ ĕнтĕ. Çапах та айăпсăр çынна мĕнле айăпа кĕртетĕн?.. Айăпсăр çынна суд тума, хупса лартма пултараймаççĕ вĕт-ха!

...Районти милицп уйрăмĕнче ăна малтан коридор вĕçĕнчи пĕчĕкçеç пӳлĕме кĕртсе ячĕç. Тĕрме майех пур пӳлĕмĕ: чӳречисем решеткеллĕ, алăк варринче — пăхмалли шăтăк. Анчах стенисем те, урайĕ те таса, ниçта пĕр çӳпĕ çук — нумайранпа пĕр çын та кĕрсе курман пулмалла кунта.

Илюк пӳлĕмри пĕртен-пĕр сак çине ларчĕ те урайнелле ним тĕлсĕр пăхма тытăнчĕ.

— Ах, пурăнăç, пурăнăç...— ассăн сывласа илчĕ вăл, хăй сисмесĕрех. Унтан, кĕсйинче туртмалли пуррине астуса, васкасах пирус чĕртсе ячĕ. Анчах хăйĕн чĕринче, пaçăр çул çинче килнĕ чухнехи пекех, нимĕнле ытлашши пăлхану та, пăшăрхану та пулмарĕ.

Пăлханмалли тепĕр çур сехетрен пуçланчĕ. Çур сехетрен ăна урăх пӳлĕме илсе кайрĕç те, сăнран пăхма илемлĕ, тулли питлĕ, пысăк хăнчăр куçлă, çӳçне тирпейлĕн каялла тураса хунă хурарах лейтенант допрос тума

тытăнчĕ. Илюк пӳлĕме кĕнĕ-кĕменех вăл ун ҫине витĕр шăтарасла, пĕрре пăхнипех ҫын ăшĕнче мĕн пуррине пĕтĕмпех пĕлесле пáхса илчĕ, унтан, Илюкăн ятне-хушаматне, хăш ҫулта, ăҫта ҫуралнине ыйткаласа ҫырсан, тӳрех ал лаппипе сĕтел ҫине шап! тутарчĕ те:

— Акă мĕн, Ивуков, тавай, тӳрех ҫапла калаҫса татăлăпăр: пытанмалла вылямалла мар! — терĕ.— Кун пек ҫĕрте эс ĕнтĕ пĕрремĕш хут мар, йĕркисене пĕлетĕн. Ҫапла-и?

Илюк чĕнмерĕ.

— Пирĕншĕн пĕтĕмпех паллă,— терĕ лейтенант малалла, Илюка ҫаплах-ха куҫĕсемпе пăраласа,— эпир веҫех пĕлетпĕр, ҫавăнпа та туннинчен, унталла-кунталла пăркаланнинчен усси нимĕн чухлĕ те пулмасть. Саншăн ҫăлăнăҫ ҫук. Ҫак пĕтĕм ĕҫ мĕнле пулни, эс камсемпе пĕрле «ĕҫлени» ҫинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа парса хăвăн айăпна пĕтĕмпех йышăнни ҫеҫ санăн шăпуна кăштах ҫăмăллатма пултарать. Ăнлантăн-и?

Лейтенант хăйĕн сăмахĕсене кăшкăрарах, сăвă калана евĕрлĕрех калани Илюка килĕшмерĕ. Темле, вăл кăштах курнăҫланнă, хăйне вĕҫкĕнтерех тытнăн туйăнчĕ ăна. Тӳрех колонири майор — начальникĕн воспитани енĕпе ĕҫлекен заместителĕ — аса килчĕ: мĕнле лăпкăн калаҫрĕ вăл Илюка колоние илсе пынă кун, мĕн тери ырă, ăшă сăмахсем каласа ăсатрĕ вăл срокчен ирĕке кăларнă ачасене! Халь те куҫ умĕнчех унăн сăнĕ, сăмахĕсем те чĕрере...

— Ăнлантăн-и тетĕп? — тепĕр хут ыйтрĕ лейтенант.

— Ăнланмарăм,— пат татса каласа хучĕ Илюк, ун ҫине куҫ харшисем айĕн пăхса.

— Ах, ăнланмарăн-ха эппин?! — лейтенант пукан ҫинче йăшаланкаласа илчĕ те пирус чĕртсе ячĕ.— Ну, паллах ĕнтĕ! Малтан эсир пурте ҫакăн пек плахая перетĕр, тин ҫеҫ ҫуралнă ача пек пĕлмĕш пулатăр. Анчах та ку вăл пирĕншĕн нимех те мар. Ку йăлана хăнăхнă эпир. Кăшт тăхтасан ăнланатăн акă, пĕтĕмпех каласа паратăн, мĕншĕн тесен санăн тунса тăма май ҫук, пирĕн эс ҫак «ĕҫе» хутшăннине кăтартса паракан фактсем питĕ нумай... Пăрах чăхăмлама, Ивуков, каласа пар халех йĕркипе!

— Мĕн ҫинчен каламалла ман сире? Эсир манран мĕн ыйтнине те пĕлместĕп-ха эпĕ! — сасартăк хăюланчĕ Илюк.

— Ах, а-ав епле! Пĕлме-естĕн иккен? Нимĕн те пĕлместĕн? — ҫилĕпе куҫĕсене тăрук хĕссе пăхрĕ лейтенант.

— Пĕлместĕп,— терĕ Илюк çирĕппĕн.
— Сана кунта мĕншĕн илсе килнине те чухламастăн пуль эппин?
— Ăна та пĕлместĕп. Сирĕн милиционер мана нимĕн те каламарĕ.
— Ан лăпăртат! Эс веçех чухлатăн. Хăвна кунта мĕншĕн илсе килнине те, эпĕ санран мĕн çинчен ыйтнине те.
— Çук, пĕлместĕп. Ăнланмастăп!
— Ну, питех ун пек пĕлмене перетĕн пулсан каласа парам сана, итле.
— Итлетĕп, калăр, тархасшăн.— Илюк хăюланнă çемĕн хăюланса пычĕ, анчах çав хăюлăх темле хăранипе, тарăхнипе хутăш пулчĕ.
— Иртнĕ каçхине мар, леш каçхине сирĕн Юманлăхра ялпо лавккине çаратнă. Чи хаклă япаласене илсе тухса кайнă. Темиçе пинлĕх. Çавăн çинчен илтнĕ-и эсĕ?
— Паян анне каласа пачĕ...
— Унччен пĕлмен апла?
— Пĕлмен. Эпĕ икĕ кун Шупашкарта пулнă.
— Ну, эс куна кама та пулин урăххине суй!
— Ним чухлĕ те суймастăп... Ак халех тĕрĕслеме пултаратăр...
— Юрĕ! — сассине хăпартса Илюка пӳлчĕ лейтенант.— Çав хăвăр ялти лавккана çаратнă çĕре эсĕ те хутшăннă. Çапла-и?
— Тĕрĕс мар ку! — сиксе тăчĕ Илюк.
— Тĕп-тĕрĕс! — Илюка ларма хушса аллипе сулчĕ лейтенант.— Эсĕ кунта чи активлисенчен пĕри пулнă, ан тун. Вăрăсене лавккана пыма эс тĕллеттерсе янă!
— Суя! Тĕрĕс мар! — Илюк çав тери пăлханса, аллинчи карттусне лутăркама тытăнчĕ.— Калатăп вĕт сире, эп вăл каçхине Шупашкарта пулнă, Атăл хĕрринчи Хресчен çуртĕнче çывăрнă, акă манăн квитанци те пур!..— Вăлваскасах кĕсйисене ухтарма тытăнчĕ, анчах унта нимле хут татки те тупăнмарĕ.— Тепĕр пиншакĕнче юлнă... Анчах ун пек квитанци манăн тупата пур!— терĕ Илюк, лейтенант куçĕсенчен тӳррĕн пăхса.
— А вăл çавах та ниме те пĕлтермест! — татса хучĕ лешĕ.— Эс унта лавкка çаратиччен те, кайран та кайса çырăнма пултарнă. Вăрă хăйĕн йĕрне çухатма тем те шухăшласа кăларать. Тавай луччă эсĕ йĕркипе каласа пама тытăн! Камсемпе пĕрле çаратрăр лавккана, япалисене ăçта кайса чикрĕр, санăн вăрă-тусусем ăçта халь?

Ним пытармасăр, тӳррипе кала! — Лейтенант каллех пĕтĕм ал лаппипе сĕтел çине çапса илчĕ.

— Лейтенант юлташ...— куçĕсене мăчлаттара-мăчлаттара калама пикенчĕ Илюк, анчах лешĕ ăна çавăнтах пӳлчĕ:

— Юлташ мар эп саншăн! Гражданин.

— Каçарăр... Гражданин лейтенант, каларăм вèт-ха сире, пĕлместĕп эп нимĕн те...

— Мĕн, курман та, илтмен те тесшĕн-и эсĕ?

— Тĕрĕс, курман та, илтмен те! Нимĕнле лавкка çаратнă çĕрте те пулман, эп вăл кун Шупашкара ăçта та пулин ĕçе вырнаçас тесе кайнă та унта икĕ каç выртнă. Ĕненместĕр пулсан, хам хăш вăхăтра ăçта пулнине йĕркипех каласа пама пултаратăп! Ма-ха эсир ним айăпсăр çынна тасаранах айăплă тăвасшăн?!

Илюк куçĕсем тăрук шывланчĕç, аллинчи карттусне вăл тата хытăрах лутăркама тапратрĕ.

— Айăпсăр...— йĕрĕнчĕклĕн пăхса илчĕ ун çине лейтенант.— Çапла çав, пирĕн алла лексен, эсир пурте айăпсăр!

— Чăн та айăпсăр! — кăшкăрса ячĕ Илюк.

— Молчать!..

Лейтенант Квасов (ку шăпах çавă, Юманлăхри çаратнă лавккана милици çыннисенчен пуринчен малтан пырса тĕрĕсленĕ Василий Квасов пулнă) каллех сĕтеле чант! çапрĕ те унтан пĕр хушă Илюк çине ним чĕнмесĕр, витĕр шăтарасла пăхса ларчĕ. Илюка вăл чăнласах преступник, лавккана çаратнă çĕрте пулнă вăрă тесе шутланă. Шутланă çеç те мар, ку чăнах та çаплине чунчĕререн ĕненнĕ. Епле пултăр-ха тата? Пур енчен илсе пăхсан та çавăн пек пулса тухать вĕт-ха! Колонире ларса килнĕскерĕн, унăн, паллах, преступниксем, рецидивистсем хушшинче «туссем» пур. Вĕсен унсăр пулмасть. Çавсем хушнипе вăл хăйсен ялĕнчи лавккана малтанах сăнаса пурăннă. Сăмахран каласан, çаратас кун вăл унта ятарласа пырса, нумайччен пăхса çӳренĕ,— куна лавкка хуçи хăй те калать... Унтан лешсене кайса пĕлтернĕ те, çĕрле вĕсем Юманлăха машинăпах килнĕ. Машинине ăçтан тупнă? Вăл паллă мар-ха, унăн йĕрĕ çеç юлнă, çав йĕр тăрăх машинин пĕр шини мăкăллĕ пулни курăнать. Лавкка хуралçине кĕпер айне ыватнă хыççăн вăрăсем ăçта кайни те, çаратса тухнă таварсене ăçта ăсатни те паллă мар. Ун çинчен çак çамрăкки мĕн чухлĕ те пулин пĕлме кирлĕ. Лайăххах тĕпчес, калаçакан тăвас, тĕрĕссипе калаттарас пулать ăна! Çине тăрсах, хĕс-

сех, хупăрласах! Пĕр вăл кăна çак преступлени çăмхине ăнăçлăн сӳтсе пыма пулăшма пултарать.

Çапла шухăшланă та Квасов ăнсăртран айăпа кĕнĕ пек пулнă Илюка лăш памасăр тĕпчеме тытăннă. Милици уйрăмĕн начальникне, Светлов майора, вăл кун прех Шупашкара министерствăна чĕннĕ, каяс умĕн вăл Квасова: «Леш Ивуков тенине тупса килсен халлĕхе хăвах допрос тума тытăн»,— тесе хăварнă, Квасовăн начальник таврăниччен çав ĕçĕн хăшпĕр енĕсене те пулин «уçас» килнĕ — ан тив, куртăр вăл хăйĕн помощникĕ, оперуполномоченнăй Квасов лейтенант мĕнлерех ĕçлеме пултарнине!

...Анчах çамрăк йĕкĕте («шайккăрисенчен пĕри» терĕ ăна Квасов) тем пек тĕпчесен те усси пулмарĕ-ха. Вăл çав-çавах пĕлмене перет. Тата çине тăрсах хăйне хӳтĕленме май паракан алиби* кăларса тăрататъ. Квасовпа айăпланакан çамрăк ача хушшинчи калаçу чылая пычĕ, анчах ĕçĕ чĕрне хури тăршшĕ те малалла шумарĕ. Паллах, следователĕн яланах лăпкă пулмалла, вăл пăлханма, çилленме, хăй тĕпчекен çын çине кăшкăрма пуçласан, ĕç пушшех ăнмасть, айăпланаканни пушшех кутăнланса, ытларах пăтратма пултарать. Çакна лайăх пĕлнĕ пулин те, Квасов хăй сисмесĕрех тарăхма, сассине хăпартса калаçма тытăнчĕ. Вăл ытла та хупăрланă пирки Илюк хытăран хытă пăлханчĕ, çавăн пирки хăй çак кунсенче ăçта-ăçта пулса мĕн туни çинчен те йĕркеллĕ каласа параймарĕ.

Юлашкинчен Квасов «йывăр артиллерие» хута яма шут тытрĕ. Вăл сĕтел ещĕкне уçрĕ те Илюк умне пат! унăн çĕççине кăларса хучĕ.

— Ак çакă — мĕн вăл? — Илюк çине çилĕпе пăхрĕ лейтенант.

— Çĕçĕ...— çав тери тĕлĕнсе, куçĕсене мăчлаттарса илчĕ Илюк.

— Кам çĕççи?

— Манăн... манăн пулнăччĕ, анчах эпĕ ăна сутнă...

— Кама сутрăн? Хăçан? Ăçта?

— Килтен тухса кайнă кун... мăн çул çинче темлескерсем çыпăçрĕç те... Çирĕм пилĕк тенкĕ пачĕç...

— Ан суй! Никама та сутман эс ку çĕççе, эс ăна лавкка çаратнă вăхăтра кăларса ӳкерсе хăварнă!

---

* Алиби — преступлени тунă вăхăтра айăпланакан çын пачах урăх çĕрте пулнине, вăл преступление хутшăнманнине кăтартса пани.

— Вара... вара ӑна лавккара тупнӑ-и? Епле-ха...— Илюк сасартӑк калаҫайми пулса ларчӗ, унӑн пуҫӗ ҫавӑнса кайрӗ, ҫав вӑхӑтрах куҫ умне хӑйӗнчен ҫак ҫӗҫҫе ирӗксӗрлесе тенӗ пекех илнӗ хура куҫлӑхлӑ тата тюбетейлӗ ҫынсен сӑнӗсем тухса тӑчӗҫ... Ҫавсем эппин, ҫавсем! Урӑх никам та мар, ҫавсем килсе ҫаратнӑ! Малтан вӗсене Илюк лавккара тӗл пулнӑччӗ... Унтан вӗсем Хыркассинчи чайнӑйра Шатрипе тата Чалӑшшипе пӗр сӗтел хушшинче ларса ӗҫрӗҫ... Тюбетейли вӗсене Илюк ҫӗҫҫине кӑларса кӑтартрӗ...

— Ну? Халӗ ӗнтӗ тӗрӗссине каласа паратӑн-и? Техех тунса тӑмалли пӗтрӗ санӑн! — чан сасси пек янраса кайрӗҫ лейтенант сӑмаххисем ӑнран тухса каяс патне ҫитнӗ Илюк хӑлхинче.

— Калатӑп, пӗтӗмпех каласа паратӑп...— мӑкӑртатрӗ Илюк, тӑрук ыйхӑран вӑраннӑ пек.— Акӑ мӗнле пулчӗ вӑл...

Квасов йӑпӑр-япӑр авторучкине тытса ҫырма хатӗрленчӗ, хӑй ҫав хушӑрах тепре асӑрхаттарчӗ:

— Асту, нимӗн те ан суй, ним те пытарса ан хӑвар, йӗркипе каласа пыр!

— Йӗркипех калатӑп...

Квасов ӗнтӗ Илюкран Юманлӑхри лавккана вӑл камсемпе пӗрле тата мӗнле ҫаратни, япалисене ӑҫта илсе кайни ҫинчен пӗлессе шаннӑччӗ, анчах ҫамрӑк ача ӑна хӑйӗн ҫӗҫҫи пирки ҫеҫ каласа пачӗ.

— Урӑх вара эпӗ нимӗн те пӗлместӗп,— терӗ вӑл юлашкинчен.

Квасова ку татах тарӑхтарса ячӗ.

— Епле пӗлместӗн?! Кайран ӑҫта тӗл пултӑн вӗсемпе?! Лавккине епле килсе ҫаратрӑр, ҫавна кала!

— Ҫаратни ҫинчен ним калама та пултараймастӑп...

— Суятӑн!..

— Ҫук, суймастӑп, гражданин лейтенант.

— Суятӑн! Эс пӗтӗмпех пӗлетӗн!

Ҫак самантра сасартӑк алӑк ярр уҫӑлчӗ те, пӳлӗме районти милици уйрӑмӗн начальникӗ — ҫӳллӗ, патвар кӗлеткеллӗ, тӑрӑхларах питлӗ те кӑн-кӑвак куҫлӑ Светлов майор пырса кӗчӗ. Ӑна курсанах, Квасов сӗтел хушшинче йӑрст тӑсӑлса «смирно» тӑчӗ.

— Мӗн ӗҫлетӗр? — ыйтрӗ Светлов, малалла иртсе.

— Допрос тӑватӑп, майор юлташ.

— Ҫакӑ-и-ха вӑл Ивуков? — Майор сӗтел пуҫӗнчи ҫемҫе пукан ҫине пырса ларчӗ.— Ну, мӗнлерех калаҫатӑр? Кӑмӑллӑнах-и?

— Пĕтĕмпех тунать. Хайне валли алиби тăвасшăн вăл...— терĕ лейтенант.

Майор пӳрнисемпе сĕтел çине тăкăртаттарса илчĕ, унтан Илюка пусĕпе сулса алăк еннелле кăтартрĕ те:

— Эс йăпăрт çавăнта, коридора, тухса лар-ха, кайран чĕнĕпĕр сана,— терĕ.

Ача пӳлĕмрен тухсассăнах, майор Квасова куçĕнчен пăхрĕ:

— Эс ăна питĕ хăратса пĕтернĕ пулас?

— Ç-çук, ытлашши ним те пулман... Анчах та вăл качака таки пекех кутăнланать,— терĕ лейтенант.

— Мĕнле алиби çинчен каларăн эсĕ?

— Лавккана çаратнă каç вăл килте пулман, Шупашкарти Хресчен çуртĕнче çĕр выртнă, тепĕр каçхине те унтах çывăрнă тет...

— Мĕн тума кайнă вăл унта?

— Ĕç шырама, тет. Ак куна...— Квасов сĕтел çинче выртакан çĕççе кăтартрĕ,— хăй палламан çынсене сутрăм тет. Пĕр енчен ĕненмелле те пек...

Майор шухăша кайса пирус тивретрĕ.

— Ман шутпа, ку ача хальхинче чăнах та айăплă мар,— терĕ вăл унтан.— Пĕлетĕн-и, пирĕн Шупашкарти юлташсем чăн-чăн вăрăсен йĕрĕ çине ӳкнĕ ĕнтĕ. Лавккана камсем çаратни — паллă...

— Чăнах-и?! Мĕнле майпа? — пĕтĕм кĕлеткипе начальник патнелле туртăнчĕ Квасов.— Ку питĕ интереслĕ.

— Ак мĕнле. Ĕнер ирхине ирех Атăл тăрăхĕнчи пĕр лесник хăй хураллакан кварталсенчен пĕринче, проççек çинче, йывăç çумне çапăнса ваннă грузовик тĕл пулнă. Вăл васкасах хăйсен районне, районтисем Шупашкара пĕлтернĕ. Çавăн хыççăн унта опергруппа тухса кайнă. Машини шăпах вăрăсем Юманлăха пынăскер пулнă — кайри сулахай шини çинче мăкăль, нумай пулмасть вулканизаци тунăскер. Ăна çав Юманлăхра çаратнă каç Шупашкарти пĕр министерство гаражĕнчен «çавăтса тухнă» иккен. Ку пĕрре. Унтан: машинăн малти сылтăм кантăкĕ çинче пӳрне йĕрĕсем палăрса юлнă. Машина çĕмĕрĕлнĕ пирки таварсене çĕклесе кăларма тытăнсан, вăрăсем тата машина тавра ура йĕрĕсем туса хăварнă, вĕсене ӳкерсе илме те май килнĕ. Кабина урайĕнче туртса пĕтерейммен «Прибой» мунштукĕсем иккĕ тан тупăннă, пĕрин çинче шăл йĕрĕсем те пур, апла пулсан — сурчăк та юлнă. НОТра* тĕрĕсленĕ хыççăн пӳрне йĕрĕ-

* Научно-технический отдел.

семпе ура йӗрӗсем, суд медицинин лабораторинче тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн пируссем ҫинчи сурчӑк та Юманлӑхра тупӑннисемпе пӗр пекех, пӗр ҫынсеннех пулни палӑрнӑ. Ну, хӑвах пӗлетӗн, ун хыҫҫӑн картотека тӑрӑх ҫав йӗрсен «хуҫисене» тупма та йывӑрах пулман. Вӗсем — нумаях пулмасть колонирен таврӑннӑскерсем.

— Хӑйсене тытман-и? — ыйтрӗ Квасов.

— Ҫук-ха. Шыраҫҫӗ. Тупаҫҫех ӗнтӗ!

Ҫакӑн хыҫҫӑн Светлов майор Илюка чӗнсе кӗртме хушрӗ те унпа хӑй калаҫма тытӑнчӗ. Квасовваскасах таҫта тухса кайрӗ. Ҫав калаҫу вӑрахчен тӑсӑлчӗ, анчах пӗртте допрос пек мар, пиччӗшӗпе шӑллӗ тӑванла калаҫнӑ пек ҫеҫ пулчӗ. Илюк милици уйрӑмӗн начальникне хӑй ялти лавккара ӑнсӑртран тюбетейлӑ тата хура куҫлӑхлӑ ҫынсене тӗл пулни, унтан вӗсем мӑн ҫул ҫинче ун ҫӗҫҫине илесшӗн тапӑнни, кайран вӗсем Хыркассинчи чайнӑйра Шатрипе тата Чалӑшшипе ларса юлни, Илюк хӑй лешсене епле майпа паллани ҫинчен тӗпӗ-йӗрӗпе каласа кӑтартрӗ. Хӑй Шупашкара мӗншӗн кайни, унта ӑҫта-ӑҫта пулни ҫинчен те каларӗ...

Майор ӑна пӗрре пӳлмесӗр, лӑпкӑн, шухӑша кайнӑ пек итлесе ларчӗ.

— Ӗненӗр мана, эп нихӑш енчен те, нимӗн чухлӗ те айӑплӑ мар!..— терӗ Илюк юлашкинчен.

— Эпир сана айӑплӑ тесе шутламастпӑр та,— ун ҫине кӑмӑллӑн та хӗрхенерех пӑхса илчӗ майор.— Анчах та санӑн халӗ манпа пӗрле Шупашкара кайса килмелле пулать.

— Мӗн тума?

— Сана унта эпӗ пӗр япала кӑтартасшӑн.

— Мӗнле япала?

Илюк каллех пӑлханма пуҫларӗ. Ҫавна сиссе, майор ӑна хулпуҫҫинчен лӑпкаса илчӗ:

— Ан пӑшӑрхан, хӑрамалли нимӗн те ҫук. Санӑн пире кӑшт кӑна пулӑшас пулать...

Ҫак самантра пӳлӗме Квасов лейтенант кӗчӗ.

— Пӗтӗмпех йӗркеллӗ, тӗрӗс,— терӗ вӑл.— Ҫӗр процентлӑ алиби.

Илюк, паллах, вӑл мӗн ҫинчен каланине ӑнланмарӗ, анчах майор тӳрех ӑнланчӗ курӑнать те — пуҫӗпе сулса илчӗ. Квасова вӑл Шупашкара, Хресчен ҫуртне, шӑнкӑравласа пӗлме хушнӑ-мӗн: Илья Ивуков ҫак кунсенче унта ҫӗр выртнӑ-и, ҫук-и? Ун пек ҫын пирӗн патра чӑнах та икӗ каҫ выртнӑ тесе пӗлтернӗ лерен...

Шупашкара милици «Победи» пĕр хĕрĕх минут кайрĕ. Начальник малта, шоферпа юнашар, ларса пычĕ, Илюк хыçалта, пĕчченех. Ун пек чух кирек кам та хăй сисмесĕрех шухăшлать, ун пуçне тем те пырса кĕрет.

Илюк та шухăшларĕ...

Чăнах та, мĕн тума илсе каять-ха ăна милици начальникĕ Шупашкара? «Санăн пире кăшт пулăшмалла...» — терĕ вăл. Мĕнпе, мĕн енчен пулăшма пултарать-ши Илюк милици çыннисене? Хăй мĕн пĕлнине, мĕн курнине вăл пĕтĕмпех каланă ĕнтĕ. Вăрăсем пирки вăл урăх нимĕн те пĕлмест. Тĕлĕнмелле... Анчах начальникĕ питĕ лайăх çын иккен. Питĕ кăмăллăскер, Илюкпа калаçнă чух сассине хăпартма мар, ăна çурăмĕнчен лăпкаса та илчĕ. Лейтенанчĕ, ав, Илюка хăратма хăтланчĕ, кăшкăра-кăшкăра тĕпчерĕ, ак ку вара пачах урăхла пуплерĕ унпа. Шутласан, милицире ун пек кăмăллă çынсем пулма та пултарас çук, мĕншĕн тесессĕн вĕсен яланах путсĕр çынсемпе — тĕрлĕ преступниксемпе, вăрăсемпе, ултавçăсемпе, хулигансемпе кĕрешме тивет-çке-ха, вĕсенчен пĕри те тĕрĕссине каламасть, пурте тем тĕрлĕ суйса, улталаса хăтăлса тухасшăн. Вĕсене чăннине калаттарма тăрăшса такам та урса кайĕ!

Начальникĕ — Светлов майор — чăнах та ырламалли çын пулнă çав. Вăтăр çул ĕлĕкрех милицире ĕçлеме вăл комсомол хушнипе кайнă, малтан, паллах, ахаль милиционер кăна пулнă, анчах хăй службине питĕ йĕркеллĕ, чунтан тăрăшса туса пынăшăн ăна пĕрмай ӳстернĕ. Çав вăтăр çул хушшинче Светлов преступниксене сахал мар тытнă, оперативлă заданисене пурнăçа кĕртнĕ чух вăрă-хурахсем ăна виçĕ хутчен пăшалпа персе амантнă, çавăн хыççăн хăшĕсем — çав шутрах арăмĕ те — милицире ĕçлеме пăрахма сĕннĕ, анчах Светлов вĕсене хирĕç ал сулнă çеç:

— Эп пăрахсан, тепри пăрахсан — мĕн пулса тухать-ха ун пек? Преступниксемпе, пур ирсĕр-путсĕрсемпе кам кĕрешет? Вара вĕсем пирĕн пуç çинех хăпарса ларасçĕ-иç? Çук, хаклă тусăмсем, ал-урара вăй пур чух милицирен ниçта та каймастăп эпĕ, ан та калаçăр манпа ун пирки! — тенĕ вăл.

Светлова юратнă. Хайĕнчен аслăрах начальниксем те, хайне пăхăнса ĕçлекенсем те, халăх та. Мĕншĕн тесен вăл хайĕн ĕçĕсене пур чух та тĕп-тĕрĕс туса пынă. Айăплисене нимĕн чухлĕ те каçарман, вĕсене епле пулсан та тытса ответ тыттарнă, кӳрентернĕ çынсене пулăшнă, айăпсăррисене тӳрре кăларнă. Çын айăплипе айăплă

маррине вăл темле шалти туйăмпа сисме пĕлнĕ. Ку енпе вăл пĕрре те йăнăшман. Ĕçри опычĕ пысăк пулнă çав унăн, çынсене пăхса витĕрех курма пĕлекен пулса çитнĕ...

Ак халĕ те вăл Юманлăхри лавккана çаратнăшăн Илюк пĕртте айăплă маррине тӳрех туйса илчĕ. Унăн малтанхи «ĕçĕпе», колониρен ярса панă хучĕсемпе паллашсан (вăл хутсем Илюк хăй колониρен таврăннă хыççăнах çитсе выртнă), Светлов хăй тĕрĕс шутланине тата ытларах ĕненчĕ. Çавăнпа кăмăллăн калаçрĕ те вăл унпа. Квасов лейтенант допроса тĕрĕс мар меслетсемпе тунăшăн ăна асăрхаттарса та илчĕ:

— Юрамасть çамрăксене ытлашши турткалама, ун пек тусан, вĕсем пире шанми, милици таврашне курайми пулаççĕ те тата ытларах пăсăлма пултараççĕ. Эсĕ Феликс Эдмундович Дзержинский çула çитмен правонарушительсемпе мĕнле ĕçленине аса ил! Мĕн чухлĕ çамрăк чуна пăсăлса каясран çăлса хăварнă вăл!..

— Малашне шута илĕп,— терĕ ăна хирĕç Квасов. Светлов майора вăл та хисепленĕ, ун сăмахĕсене яланах итленĕ, ĕçре унран вĕренсе пыма тăрăшнă...

...Шупашкара çитсенех, майор Илюка министерствăна илсе кĕртрĕ. Анчах кунта вĕсем нумай тытăнса тăмарĕç, пĕр пӳлĕмре Илюка темиçе сăнӳкерчĕк кăтартрĕç те: «Хăшне паллатăн?» — тесе ыйтрĕç. Илюк вĕсене нумай та пăхса тăмарĕ, пăрахут çинче пĕрле килнĕ Шатрипе Чалăшшине тата хăйсен ялĕнчи лавккара тĕл пулнă тюбетейлипе хура куçлăхлине часах палласа илчĕ.

— Çаксем, шăп та шай çаксем! — терĕ вăл çирĕппĕн.— Кусем манпа пĕрле колониρен килнисем, кусем— манран çĕçĕ илекеннисем... Нимĕн чухлĕ те йăнăшмастăп!

— Тавтапуç сана, Ивуков,— терĕ майор,— халь ĕнтĕ кайма та юрать. Анчах малтан эпир санпа иксĕмĕр пĕр-пĕр столовăя кĕрсе апат çисе тухăпăр. Иртенпех çимен эпĕ, санăн та хырăму выçрĕ пулĕ?

— Юрать ара, çийĕпĕр,— терĕ Илюк.— Киле час таврăнаймастăп пулĕ тесе, укçа чикнĕччĕ-ха эпĕ...

— Халь ан пăшăрхан ĕнтĕ, кĕçĕрех килте пулатăн,— терĕ майор, кабина алăкне уçса.— Кайрăмăр!

...Çур çĕр çитеспе, вăйлă фарисемпе çутатса, Юманлăха «Победа» вăркăнса кĕчĕ. Мăн урампа анса, вăл çырма урлă каçрĕ те Илюксен тĕлĕнче чарăнса икĕ хутчен кăшкăртрĕ.

Çак сасса илтсен, тин çеç тĕлĕрсе кайнă Анюк инке,

Илюк амăшĕ, вартах вăранса вырăн çинчен сиксе тăчĕ те урамалла тухакан чӳрече патне чупса пычĕ. Тăрук хăраса, пăлханса кайнипе унăн чĕри ниçта кайса кĕрейми тапма тытăнчĕ.

«Тур çырлахтăрах, ку тата мĕне пĕлтерет? Мана хама та тытса кайма килмерĕç пуль те?..» — пĕтĕм ăс-тăна пăтратса ямалла шухăш вĕçсе илчĕ унăн пуçĕнче.

Анчах пĕр-ик самантранах пӳрте Илюк чупса кĕчĕ те ялт! электричество çутса ячĕ.

— Акă эп персе те çитрĕм, анне! — терĕ вăл хавассăн.

— Ячĕç-и? Пуçĕпех-и?.. — ун патнелле ыткăнчĕ амăшĕ.

— Айăпсăр çынна мĕн тума тытса усраччăр вĕсем? Ана-кăна ыйткаласа пĕлчĕç те машинăпах ăсатса ячĕç, генерал пек килтĕм!

Хуйхăрса пĕтнĕ амăшĕ кăмăлне хăпартасшăн пулса, Илюк юри шӳтлерех калаçма тăрăшрĕ.

— Выçса вилетĕн пуль паян, кӳр-ха, чăкăтпа çăмарта та пулин ăшаласа парам сана! — чăланалла васкарĕ амăшĕ.

— Кирлĕ мар, анне, — ал сулчĕ Илюк, — эп тутă, хулара мана милици начальникĕ хăна турĕ, виçĕ тĕслĕ апат çитерчĕ.

— Ан тĕлĕнтер!

— Чăнах ара, ма суяс ман?

Вĕсем лăпкăн кăна çывăрма выртрĕç.

Ирхине Илюк ятарласах ял Советне хăйне милицире нихăш енчен те айăпламанни çинчен «евит тума» кайрĕ. Ана курсан, ял Совет председателĕ Кумков самаях тĕлĕнчĕ (епле пит час кăларса янă куна? терĕ пулмалла), анчах Илюкпа кăшт калаçсанах лăпланчĕ.

— Мана хама та эсĕ тепĕр хут айăплă пулас пек туйăнмарĕ çав, — терĕ вăл. — Ну, халь ĕнтĕ пурнăç çинчен шухăшлас пулать, шăллăм. Ĕçлеме тытăнатăн-и, вĕренес тетĕн-и...

— Вĕренетĕп малтан, — терĕ Илюк.

## 41

...Тепĕр темиçе кунтан вара акă мĕн пулса иртрĕ.

Кĕтмен-туман çĕртенех, сасартăк, Илюкăн пĕчĕк йăмăкĕ Раис чирлесе ӳкрĕ. Йывăрланнăçемĕн йывăрланса пычĕ. Ялти медсестра ачан ӳпки ик енчен те шыçнă, часрах больницăна илсе кайăр тесе хут çырса пачĕ. Вара Илюк бригадиртан ыйтса лаша кӳлсе килчĕ те, амăшĕпе

йăмăкне лартса, районалла чуптарчĕ. Улт-çич километр кайса çӳллĕ сăрт çинчи пĕр яла пырса кĕнĕ чух хĕрринчи виççĕмĕш пӳртрен купăс сасси, çынсем тĕпĕртетсе ташлани, юрлани илтĕнсе кайрĕ. Тем пирки ĕçкĕ тăваççĕ пулмалла.

Тăвалла хăпармалла пулнă пирки Илюк урапа çинчен анса юнашар утса пычĕ. Юрă-ташă илтĕнекен пӳртĕн сарлака чӳречисене яриех уçса янă иккен — шалта çынсем те тем чухлех курăнаççĕ. Пĕрисем чӳречесем умĕнче лараççĕ, теприсем ташлаççĕ. Ун пек чух иртенçӳрен те пăхмасăр иртмест ĕнтĕ. Илюк та пăхрĕ. Пăхрĕ те — самантранах унăн пĕтĕм çан-çурăмĕ сӳ! туса кайрĕ.

Чӳрече витĕр вăл хайхи тюбетейллĕ вăрра курчĕ... Темле хĕрарăма çупăрласа тытнă та ташша тĕвет кăна. Хăй кăркка пек хĕрелсе кайнă, шакла пуçĕ те хĕп-хĕрлех. Нимĕн иккĕленмелли те çук, çавах! Мĕнле килсе лекнĕ-ши вăл кунта? Анчах та, тен... вăл мар? Тепĕр чух пĕр пек сăнлă çынсем те пулаççĕ вĕт-ха... Çук, çук, ăна патĕнчерехрен пăхса, лайăхрах, ним улталанмалла мар палласа илес пулать!

Илюк лашана çав пӳртрен маларах уттарса иртterчĕ те васкасах тилхепене амăшне тыттарчĕ.

— Йăпăрт тăхта-ха, эп пĕр самантлăха çакăнта кĕрсе тухам...

— Мĕн тума? — тĕлĕнсе ыйтрĕ амăшĕ.

Анчах Илюк ăна хирĕç нимĕн те каламарĕ, калинкkене шăлт-шалт уçса хупса, кил хушшине кĕчĕ. Хăнасем кил хушшинче те, çенĕкре те нумай иккен, пурте тенĕ пекех ӳсĕр, çавăнпа та Илюк çине никам та çаврăнса пăхмарĕ. Вăл пӳрт алăкĕ умĕнче чарăнса тăчĕ, çынсен пуçĕсем урлă кармашса шалалла пăхма тытăнчĕ. Шакла пуçлă вăрă çаплах сикет-ха, ураран ӳкиччен ташлама тара кĕрĕшнĕ тейĕн.

— Çав... шакла пуçли кам вăл? Ăçтисем? — тытăнчăклă сасăпа ыйтрĕ вăл хăйĕн умĕнче тăракан хĕрарăмран.

— Атăлкассисем тет пулас. Çак кил хуçисен инçетри хурăнташĕ, тет-и...

Илюкăн иккĕленесси пĕтрĕ. Çавах ку, урăх никам та мар! Халех, епле те пулсан хăвăртрах милицине çитсе пĕлтерес пулать кун çинчен! Пĕрне çаклатсан, ыттисем тупăнаççех!..

Вăл урама каялла чупса тухрĕ те, урапа ӳречи çине сиксе ларнă-ларман тилхепене амăшĕн аллинчен илсе, лашана пĕррех çурăмĕ тăрăх пушăпа кастарса илчĕ.

Вăйлă лаша вырăнтанах сиккипе тапранса кайрĕ. Вара тăвата километр хушши, мĕн района çитиччченех, Илюк ăна вĕçĕмсĕр, пĕр чарăнмасăр хăваларĕ.

— Лашине ма ун пекех чуптаратăн? Лăш парсам, ара, кăштах, пӳлĕнсе ӳкĕ тата! — терĕ амăшĕ темиçе хут та.

— Васкамалла-ха, анне, шутсăр васкамалла ĕç сиксе тухрĕ! — кăшкăрчĕ ăна Илюк.

— Мĕн пулчĕ тата ун пек тăруках?

— Кайран калăп, анне, кайран! Халь часрах района çитес пулать!

Амăшĕ ним шухăшлама, ним калама аптăрарĕ...

Больница тĕлне çитсе тăрсан, Илюк амăшне: эсĕ тухтăр патне кĕме çырăн, эп халех килетĕп терĕ те хăй çавăнтах милици уйрăмĕ еннелле чупрĕ. Амăшĕ ун хыççăн çав тери тĕлĕнсе, ним ăнланмасăр пăхса юлчĕ...

Çакăн хыççăн пилĕк минут та иртмерĕ пулĕ — милици уйрăмĕн кил хушшинчен «сăпкаллă» мотоцикл шатăртатса тухрĕ. Рульне Квасов лейтенант тытнă, ун хыçĕнче Светлов майор ларать. «Сăпкана» Илюк вырнаçнă.

— Хăвала хытăрах,— кăшкăрчĕ майор.

Анчах Квасова кун çинчен калама кирлĕ те мар ĕнтĕ. Мĕн тумаллине вăл хăех пĕлет. Халь кăна вĕсене Илья Ивуков Улхашри пĕр ĕçкĕре хăрушă преступнике ăнсăртран курни çинчен пĕлтерчĕ. Йăнăшмастăп, пит лайăх палларăм тет. Çавăнпа та халь вĕсем, ытти пур ĕçсене те пăрахса, çавна тытма каяççĕ. Паллах — васкас пулать, питĕ васкамалла!

Урам варринчи чул сарнă шоссе çине тухсанах, Квасов газ хушрĕ. Мотоцикл, кăн-кăвак çăра тĕтĕм кăларса, хыттăн персе янă чул пек малалла ыткăнчĕ. Спидометр стрелки унталла-кунталла чĕтренсе илчĕ те майĕпе çӳлелле хăпарма тапратрĕ.

Мăн шоссепе улт-çич минут кайсанах, вĕсем сылтăмалла, ансăр урапа çулĕ çине, пăрăнчĕç. Мотоцикл хыçĕнчен çумăр пĕлĕчĕ пек хура тусан йăсăрланчĕ. Ак ĕнтĕ Улхаш уй хапхи патне çитсе те тăчĕç вĕсем. Хапхине уçма майор хăй сиксе анчĕ.

— Килĕ хăш енче? — хăвăрт ыйтрĕ вăл Илюкран.

— Сулахайра... Лавккаран виç-тăват кил урлă.

— Патнерех çитеспе эс мана хулран туртса систер.

— Юрать! — пуçĕпе сулчĕ Илюк.

Мотоцикл каллех мĕкĕрсе ячĕ. Пӳртсем кинори пек кăна курăнса иртрĕç. Урамри тусан ăшĕнче чавалана-

кан чăхсем, вилесле хăраса, унталла та кунталла сирпĕнчĕç. Авă хĕрлĕ кирпĕчрен тунă лавкка та курăнса кайрĕ. Ун умĕнче темле грузовик тăрать, крыльца çинче темиçе çын чĕлĕм туртаççĕ.

Вăр-р!..— иртсе кайрĕ мотоцикл лавкка тĕлĕпе аналла. Çынсем тĕлĕнсе кăна пăхса юлчĕç. «Аçта мурне васкаççĕ кусем çав тери?..»

Илюк майора çаннинчен туртрĕ.

— Чарăн! — Квасов хăлхинчен кăшкăрчĕ майор.

Мотоцикл тăрук чарăнса чăх! чăх! турĕ те шăпланчĕ.

— Чупрăмăр!—терĕ майор, нихăшĕнчен малтан сиксе анса.— Машини кунтах тăтăр. Ертсе кай, Ивуков! Хăш килте?

— Ав, тимĕр витнинче...

Вĕсем хўмесем çумĕпе анаталла чупрĕç. Кĕçех ĕçкĕ шавĕ илтĕнсе кайрĕ — тахăшĕ юрлать, тахăшĕ кăшкăрать, антăхса каясла купăс çухăрать, пўртре тĕпĕр-тĕпĕр, кĕрс! кĕрс! сикеççĕ. Калама йывăр, тен, Илюк хальхи пек нихçан та пăлханман пулĕ. Сиксе тапакан чĕри пырĕ патнелле çĕкленсе пынăн туйăнчĕ. Халех акă вĕсем çав киле çитеççĕ те, вара... Мĕн пулать-ши вара? Илюк леш шакла пуç çине кăтартать, майорпа лейтенант, пистолечĕсене кăларса, ун çине тĕллеççĕ:

— Руки вверх!

Лешĕн ирĕксĕрех аллисене çĕклесе парăнмалла пулать — хăв çине тĕлленĕ икĕ пистолетран хăтăлаймăн!

Чупнă çĕртех çапла шухăшласа пычĕ Илюк. Хăй мĕн шухăшланисене куç умĕнчи пекех курчĕ. Анчах ĕçсем пĕртте вăл шухăшланă пек пулмарĕç. Вĕсем виççĕшĕ — майор малта, Квасовпа Илюк ун хыççăн çынсем юрлакан-ташлакан пўрте хăвăрт кăна чупса кĕчĕç те алăк патĕнчех чарăнса тăчĕç. Милицисене курсан, пўртрисем пурте тăруках шăп пулчĕç. Хăшĕсем хытă хăрарĕç пулмалла, мĕншĕн тесен сĕтел çинче, сăра витрисемпе юнашар, ячĕшĕн кăшт çеç çырла шывĕпе пĕветнĕ сăмакун четвĕрчĕсем иккĕ тан каçăрăлса тăраççĕ.

— Тытма килчĕç...

— Пĕтрĕмĕр хайхи, апăрша! — пăшăлтатса илчĕç тахăшĕсем.

Темиçе самант никам та чĕнмерĕ. Унтан майор икĕ утăм малалла ярса пусрĕ те, аллине çĕклесе, пурне те илтĕнмелле хушса каларĕ:

— Халех саксем çине ларма ыйтатăп. Пурне те!

Çынсем — кăшт урăраххисем те, ўсĕррисем те — ним ăнланмасăр ун-кун пăхкаласа илсе, пĕрин хыççăн тепри,

тĕрткелешсе, хăйсем валли вырăнсем тупса ларчĕç. Каллех шăп пулчĕ.

— Лайăххрах пăх, хăшĕ? — Илюк хăлхи патне пĕшкĕнсе шăппăн хушрĕ майор. Илюк васкасах çынсене йĕркипе пăхса кайрĕ. Пĕри, тепри, виççĕмĕш, тăваттăмĕш... хĕрарăмĕ, арçынĕ... Анчах леш çын — шакла пуçли — ĕçкĕ халăхĕ хушшинче курăнмарĕ.

— Çук вăл...— майор пекех шăппăн пĕлтерчĕ Илюк.

— Тепĕр хут пăхса тух... Тимлĕрех!

— Чăнах та çук, ара...

Çав самантра сĕтел пуçĕнчи хыççăр пукан çинче чейник тытса ларакан кил хуçи, шĕвĕр сухаллă кукша çын, милицисем çине питĕ шиклĕн пăхса сăмах хушрĕ:

— Начальник юлташ, эсир кунта такама шырамастăр пуль те? Анчах та ман патра пĕр ытлашши çын та çук... Веçех тантăш-пĕлĕшсемпе хурăнташсем. Таварна халăхĕ...

— Тĕрĕс, пире санăн хăнусенчен пĕри кирлĕччĕ,— терĕ ăна хирĕç майор.— Кажиков ятлă çын... Кажиков Прохор. Хăй самăртарах вăл, шакла пуçлă, тюбетейпе çӳрет. Пулнă-и вăл паян сирĕн патра?

— Прохор кум-и? Пулмасăр, ара, пулнă!

— Ăçта вăл халь? Кунта çук-çке?

— Вăл пурччĕ-ха, анчахрах кунтаччĕ...— çынсем хушшине унталла та кунталла пăхса илчĕ шĕвĕр сухал.— Ак эсир киличчен кăна ташларĕ...

— Тăруках ăçта çухалчĕ эппин вăл?

Çынсем пĕр-пĕрин çине пăхса хускалкалама, йăшаланма тытăнчĕç.

— Э-э, астурăм, вăл лавккана каятăп, кум валли хамран пĕр литр очищĕнни илсе килетĕп терĕ!— сас пачĕ кĕрекере ларакан сар сухаллă пĕчĕкçеç старик.

— Ăна эп те илтрĕм, лавкка çинчен пуплерĕ,— хушса хучĕ тепĕр хăни.

— Хăçан кайрĕ? Паçăрах-и?

— Халь кăна-ха, пилĕк минут та иртмерĕ пуль...

Майор хăйпе юнашар тăракан Квасов лейтенанта, хулĕнчен тĕртсе, пуçĕпе алăк еннелле сулчĕ:

— Кайрăмăр!

Вĕсем виççĕш те, кил хушшинчен тухса, урам еннелле чупрĕç. Унтан майор калинккене уçрĕ кăна — вĕсен тĕлĕпе, урам тăрăх анаталла, паçăр ялпо лавкки умĕнче тăракан грузовик ним майсăр кĕмсĕртетсе, шăтăк-путăксем тĕлĕнче хăлтти-халтти сиккелесе иртсе кайрĕ. Урампа тусан мăкăрланса юлчĕ çеç. Унччен те пулмарĕ—

туран тахăшĕ калама çук хытă кăшкăрни илтĕнчĕ:

— Сто-ой! Стой-ой!.. Вĕлере-еп!..

Майорпа Квасов та, Илюк та пĕр харăсах çав сасă илтĕннĕ çĕрелле пăхрĕç те урампа кăвак комбинезон тăхăннă çамрăкрах çын чупса аннине курчĕç.

— Сто-ой! — çаплах кăшкăрчĕ вăл, курăнми пулнă машина еннелле чышкипе юнаса.

Майор ун патнелле ыткăнчĕ.

— Мĕн пулчĕ, юлташ? — хăвăрт ыйтрĕ вăл.— Кам эсĕ, мĕн кăшкăратăн?

— Шофер эпĕ,— терĕ лешĕ, аран сывласа.— Пĕр шуйттанĕ хам куç умĕнчех ман машинăна вăрларĕ! Куртăр та пулĕ — халь кăна анаталла вăркăнчĕ!

— Епле пулчĕ-ха вăл?

— Эп йăпăртлăха лавккана чупса кĕтĕм, моторне те выключать тумарăм... Куртăм, лавккара пĕр жулĕк майлăрах этем, шакла пуçлăскер, хĕрлĕ эрех пехлесе тăратчĕ... Черет пулнипе кăштах кĕтме тиврĕ. Унтан сасартăк машина кĕрлесе кайни илтĕнчĕ. Эп çаврăнса та пăхмарăм, тата кам та пулин машинăпа пырса тăчĕ пуль терĕм. Унтан пĕри мана айăкран кăт! тĕкрĕ. «Сан лашуна çавăтса кайрĕç!» — тет. Эп çавăнтах тула сиксе тухрăм, анчах машинăн хӳрине çеç курса юлтăм. Тытасчĕ ăна мĕнле те пулсан, майор юлташ! Çакăнта тепĕр машина пулнă пулсанах хуса çитеттĕм-ха та эп ăна...— ниçта кайса кĕме пĕлмерĕ шофер.

— Тытатпăр,— терĕ майор,— ан пăшăрхан!—Çавăнтах Квасова хушрĕ: — Хуса кил часрах машинна!

— Слушаюсь! — Лейтенант тăвалла, хăйсен мотоциклне тăратса хăварнă çĕрелле, чупрĕ те тепĕр минутранах каялла кĕрлеттерсе çитрĕ. Майорпа Илюк хăйсен малтанхи вырăнĕсене йышăнчĕç.

— Манăн та пырасчĕ сирĕнпе пĕрле! Машинине манăнне вăрларĕç вĕт-ха! — йăлăнчĕ шофер.— Ачине кунта хăварăр, ун вырăнне эп пырам!

— Ачине хăвармастпăр, а эсĕ пире кунта кĕтсе тăр,— терĕ майор çав тери ăшталаннă шофера.— Питех кĕтес килмест пулсан, колхозран машина ыйт...

Çак калаçу питĕ, питĕ хăвăрт пулса иртрĕ. Темиçе самантранах милици мотоциклĕ малалла вăркăнчĕ, спидометр йĕппи каллех çӳлелле хăпарса кайрĕ. Малтан мотоцикл çырманалла чăмрĕ, унтан шултăркаса кайнă кĕпер хăмисене кĕмсĕртеттерсе илчĕ те сăрталла ухă йĕппи пек ывтăнса тухрĕ. Умра халĕ тӳрем те анлă хир сарăлса выртать, ун урлă урапа çулĕ кукăр-макăр-

рӑн тӑсӑлса каять. Ялтан вӑрласа тарнӑ грузовик курӑнмарӗ, вӑл ҫак ҫулпа кайнине инҫетре йӑсӑрланакан тусан пӗлӗчӗ ҫеҫ палӑртса тӑчӗ. Паллах, руле хӑй аллине ярса илнӗ вӑрӑ, тарса хӑтӑлас тесе, машинӑна хӗрхенсе тӑмасть ӗнтӗ!

— Хӑвала, лейтенант, вӑл вӑрмана кӗрсе кайиччен ӗлкӗрес пулать! — Квасов хӑлхинчен кӑшкӑрчӗ майор.— Вӑрманта ҫул ансӑр, иртсе каяймастпӑр!

Мотоцикл чи пысӑк хӑвӑртлӑхпа пычӗ, спидометр йӗппи пӗрмай 120—130 ҫинче чӗтренчӗ. Лакӑм — лакӑм мар, тӗмеске — тӗмеске мар, хӑш чухне Илюк «сӑпкаран» тухса вӑркӑнас пекех сике-сике илчӗ.

...Акӑ грузовик патне ҫитесси пӗр ҫур километртан ытла та мар юлчӗ. Унтан виҫҫӗр метр. Икҫӗр... Грузовикӑн кайри йӗкӗр кустӑрмисем урнӑ пек ҫаврӑнни, вӗсен айӗнчен тусан палкаса тухни ҫывӑхрах курӑнать ӗнтӗ. Малти тӗксӗмрех симӗс вӑрман та мотоцикла хирӗҫ питӗ хӑвӑрт ҫывхарса килет.

Грузовика хуса ҫитсе пынӑ май мотоцикл рульне пӳрнисем шуралса кайичченех пӑчӑртаса тытнӑ лейтенант урӑххи ҫинчен шухӑшларӗ: «Енчен те ку бандит тӑрук тормоз парса машинӑна чарса лартсан, эпир ун ҫине ҫав тери хытӑ пырса ҫапӑнатпӑр та, мотоциклӗмӗнӗпех пӗтетпӗр. Ун пек пулсан, вӑрӑ та тарса хӑтӑлать...»

Светлов майор та ҫавӑн ҫинченех шухӑшланӑ-мӗн.

— Сылтӑмалла тыт!— кӑшкӑрчӗ вӑл Квасова.— Сылтӑм енӗпе пӑрӑнса, кабинӑпа пӗр тан пыр! Иртсе те ан кай, кая та ан юл!

Майор ҫапла майпа мӗн тӑвасшӑн пулнине Илюк малтанах ӑнланмарӗ, анчах та тепӗр темиҫе самантранах ӑна хӑй куҫӗпе хӑй курчӗ... Мотоцикл, ҫулӑн сылтӑм енӗперех пырса, грузовика хуса ҫитрӗ, унӑн кузовӗнчен иртсе кайса, кабинипе танлашрӗ.

— Чарӑн! Халех машинӑна чар! — кӑшкӑрчӗ майор кабинӑн сылтӑм енчи уҫӑ чӳречинчен.

Руль ҫумне кӑкӑрӗпе ҫыпӑҫса ларнӑ пекех пыракан вӑрӑ-шофер вӑл кӑшкӑрнине те илтмерӗ, те юри ҫаврӑнса та пӑхмарӗ. Чарас вырӑнне вӑл машинӑна тата хытӑрах ячӗ пулмалла — пӗр вӑхӑтлӑха мотоцикл унран вунӑ-вунпилӗк метр кая тайӑлса юлчӗ. Унтан грузовик кабинипе каллех танлашсан, майор малтанхинчен те хытӑрах, хаяррӑн кӑшкӑрчӗ:

— Юлашки хут калатӑп — чарӑн! Унсӑрӑн эпӗ халех кустӑрмасене персе шӑтаратӑп! Е хӑвна перетӗп!

Вӑрӑ ҫапла хӑйне асӑрхаттарнине те хӑлхана чикмерӗ. Вӑл епле пулсан та вӑрмана ҫитсе ӳкесшӗн пулчӗ пулмалла — грузовика малалла ыткӑнтарчӗ. Анчах мотоцикл та юлмарӗ унран — юнашарах пычӗ.

Паллах, вӗҫӗмсӗр ун пек пулса пыма пултараймасть ӗнтӗ. Вӑрман та ҫывхарсах килет. Унта тата кансӗртерех пулать — грузовикпа юнашар пыма та май ҫук, тӳрех канавалла тӗшӗрӗлсе анатӑн. Вӑрри, тӑрук тухса ӳксе, чӑтлӑхалла та тапса сикме пултарать. Ҫакна асра тытса пулас ҫав, Светлов майор мотоцикла грузовик ҫумне тата ҫывӑхарах, сӗртӗнмеллех илсе пыма хушрӗ те, ларкӑч ҫинчен ҫӗкленсе, малтан пӗр аллипе, унтан теприпе те борт хӗрринчен ярса тытса, машина ҫунатти ҫине сикрӗ.

Вӑрӑ-шофер майор еннелле капкӑна лекнӗ кашкӑр пек ҫаврӑнса пӑхрӗ. Унӑн куҫӗсем юнпа тулнӑ — хӗп-хӗрлӗ, ҫамки ҫине шултра тар тапса тухнӑ, хӑй хаш та хаш сывлать. Пӑхма хӑрушӑ! Майор кабина алӑкне хӑвӑрт кӑна уҫса ячӗ те, часрах пистолетне кӑларса, вӑрра тӳрех пуҫӗнчен тӗллерӗ:

— Перетӗп, халех чарӑн! Ну?..

Вӑрӑ чӗнмерӗ, вӑл майор ҫине тата тепӗр хут ҫисе ярасла пӑхса илчӗ, унтан тӑрук сылтӑм аллине руль-тен уйӑрса аялалла усрӗ те, атӑ кунчинчен ҫап-ҫутӑ вӑрӑм ҫӗҫӗ туртса кӑларса, майора чикме сулса ячӗ. Анчах майор ҫав самантрах аяккалла пӑрӑнчӗ, ҫӗҫҫӗн бритва пек ҫивӗч вӗҫӗ унӑн кителӗн ҫаннине ҫӗҫ ҫурса тухрӗ. Вӑрӑ тепӗр хут сулса ярсан, майор ӑна пӗррех ал тунинчен тытса пӑчӑртаса лартрӗ те тарласа кайнӑ шакла пуҫӗнчен пистолетпа питӗ хытӑ ҫапрӗ. Вӑрӑ аллисем лӗнчӗрех кайрӗҫ, ҫӗҫҫи тухса ӳкрӗ, руле тытманнипе машина тӑрук сулахаялла пӑрӑнса чутах ҫул хӗррийчи канава сикетчӗ, анчах майор хӑрах аллипе питӗ хӑвӑрт тытма, пӗр урипе вӑрӑ урине аяккалла сирсе тормоз педалӗ ҫине пусса лартма ӗлкӗрчӗ. Малти кустӑрмисемпе кӗҫ-вӗҫ канава шуса анмалли машина тинех тӑп! чарӑнчӗ...

Грузовик моторӗ шӑпланса ларсанах, мотоцикл та чарӑнчӗ. Квасов лейтенант, часрах ҫӗре сиксе анса, грузовикӑн сулахай енчи алӑкӗ патне ыткӑнчӗ те ӑна пӗрре туртсах уҫса ячӗ. Пуҫран ҫапнипе анкӑ-минкӗ пулнӑ вӑрӑ-шофер ҫак алӑк ҫине тайӑнса выртнӑ-мӗн те, Квасов алӑка уҫса ярсанах ун ҫинелле ӳкрӗ.

— Пуҫне ҫыхас пулать,— терӗ майор, Квасов вӑрӑ кӗлеткине кабинӑран туртса кӑларнӑ хыҫҫӑн ҫӗре анса.

Вăррăн тăнлавĕ тĕлĕнчен юн сăрхăнать. Ăна майорпа Квасов пĕри хул айĕнчен, тепри урисенчен тытса канав урлă каçарса хурсанах, Квасов, сăмса тутрине çурса, ун пуçне туртса çыхрĕ. Вăрри çаплах тăна кĕреймерĕ-ха,— куçĕсене хупса йывăррăн сывласа выртрĕ.

— Сив шыв кирлĕччĕ, шывпа уçăлать вăл,— терĕ майор. Вăл унăн-кунăн пăхкаласа илчĕ. Унтан хăйпе юнашарах вăрă çине çиллессĕн пăхса тăракан Илюка: «Ивуков, ав çавăнта, вăрмана кĕрсессĕнех, сылтăм енче, валак пур пек астăватăп. Чуп-ха, кузовран витре илсе шыв ăсса кил!» — терĕ.

Çав вăхăтра хыçалта, çул çинче, тусан мăкăрланни курăнса кайрĕ — темле машина кунталла питĕ хăвăрт ыткăнса килет иккен. Шăп Илюк валакран шыв ăсса таврăннă самантра çав машина милицисем тĕлне çитсе тăчĕ. Кабинăран хайхи лавкка умĕнче хăй машинине вăрлаттарса янă шоферпа тепĕр çын сиксе тухрĕç...

— А-а, лекрĕн-и, ирсĕр! — хаяррăн кăшкăрса ячĕ шар курнă шофер, çĕрте выртакан ал туйи пек сулăмлă патака çĕклесе.— Вĕрентĕп эп сана ют машинăсене епле вăрламаллине! Вĕлеретĕп çакăнтах! — Тен, çапатчех пулĕ те, анчах майор ăна хулĕнчен çавăрса тытрĕ.

— Ан хăтлан, юрамасть ун пек тума! — терĕ вăл.— Выртакан çынна çапмаççĕ — ку пĕрре, иккĕмĕшĕнчен — самосуд тума пире никам та право паман.

— Анчах ăна çын машинине вăрласа тарма право кам панă? Вăл мана хама тĕрмене хупмалла туса хуратчĕ вĕт, йытă! — кăшкăрчĕ шофер.

— Ăна уншăн судпа айăплаççĕ. Сан машинуна вăрланăшăн кăна мар, ăна айăпламалли сăлтавсем татах та нумай-ха, пуç тӳпи таранах. Хăйне мĕн тивĕçлĕ пулнине пĕтĕмĕшпех параççĕ халь ăна, кулянма кирлĕ мар уншăн,— терĕ майор. Илюк аллинчен витрене илсе вăрă пуçĕ çине, унтан пĕтĕм кĕлетки тăрăхах сапрĕ.

Лешĕ вара темиçе самантранах куçне уçрĕ.

Тăхтаса тăмасăрах ăна машина кузовĕ çине хăпартса, çурăмĕпе кабина çумне тайăнтарса лартрĕç. Руле халь ĕнтĕ çăлса хăварнă машинăн чăн-чăн хуçи тытса пычĕ. Квасов лейтенант каллех милици мотоциклĕпе вĕçтерчĕ, майорпа Илюк хăйсем тытнă вăрăпа пĕрле, кузовра. Малтанах нихăшĕ те чĕнмерĕ, унтан майор сăмах хушрĕ:

— Ну, мĕнле, Кажиков? Каллех тĕл пултăмăр-и? — терĕ те вăрра ун çывăхнерех куçса ларчĕ.— Пĕр-пĕрне эпир миçе çул курманччĕ-ха çав?

— Сакӑр ҫул...— хӑрӑлтатса илчӗ лешӗ.

— Палларӑн-и мана?

— Ӑҫтан манатӑн-ха сан пеккисене? Эсир хӑвӑр ҫинчен аса илтерсех тӑратӑр вӗт! Сирӗн йӑх нихҫан та пӗтес ҫук...

— Тӗрӗс калатӑн, Кажиков. Пирӗн йӑх нихҫан та пӗтес ҫук, анчах сирӗн йӑх пӗтсех пырать. Акӑ эсӗ те каллех лекрӗн ӗнтӗ, хӑҫан ирӗке тухса киле таврӑнасси те паллӑ мар. Ҫапла, пӗчченшерӗн-пӗчченшерӗнех пурнӑҫран тухса ӳксе пыратӑр! Тытса пӗтеретпӗрех сире, халӑх ӗнси ҫинче усал сӑвӑссем пек ларса пурӑнма, халӑха кӳрентерме памастпӑр.

— Ытлашши ан мухтан, начальник! Сирӗн аллӑрсем кӗскерех-ха пире пуҫӗпех пӗтерме,— сайра шӑлӗсем витӗр сӑмахӗсене сӑрхӑнтарса кӑларчӗ Кажиков.

— Эпир мар, халӑх тӗп тӑвать сире. Халӑхӑн унӑн пин-пин аллӑ, Кажиков! Ҫӗр айне пытансан та туртса кӑларать, халӑхран ҫӑлӑнаймастӑн. Халӑх хӑйӗнчен мӑшкӑллама та памасть... Ак сана та паян эпир мар, ҫак ача тытрӗ.— Майор пуҫӗпе Илюк еннелле сулса кӑтартрӗ.— Сӑмах май каласан, эсӗ ку ачана паллама тивӗҫ. Юманлӑхри лавккана ҫаратнӑ каҫхине эсӗ унран илнӗ хуҫмалли ҫӗҫҫе ҫухатса хӑварнӑ, ытлашширех васканӑ курӑнать... Ватӑлатӑн, Кажиков! Сакӑр ҫул каялла эсӗ конвойран вӗҫерӗнсе тарма та пултарнӑччӗ, астӑватӑн-и? Чӑн та, эпир сана тарнӑ хыҫҫӑн часах шыраса тупрӑмӑр, анчах ҫапах та малтан тарнӑччӗ эсӗ... Паян акӑ машинӑпа та тарса ӳкеймерӗн, мӑнтарӑн... Шеллетӗп сана, Кажиков! Тепре ирӗке тухсассӑн, профессие улӑштарма тивет пуль санӑн, вӑрра ҫӳресе тӑранса пурӑнаймастӑн эсӗ малашне...— тӑрӑхларах каласса пычӗ майор.

Унтан вӑл кӗсйинчен пирус кӑларса чӗртрӗ те ҫав хушӑрах Кажиковран ыйтрӗ:

— Туртассу килет-и?

— Тем пекчӗ,— терӗ лешӗ, майор ҫине ҫаплах куҫ харшисем айӗн шӑтарасла пӑхса.

Арестленӗ ҫынна та пирус чӗрттерсен, майор каллех сӑмах пуҫларӗ. Хальхинче вӑл вӑрӑ ҫине пӑхмасӑрах, хӑй тӗллӗн сӑмахланӑ пек кӑна калаҫрӗ.

— Йӗри-тавралла лайӑхрах пӑх-ха эсӗ, еплерех вӗрентсе тӑрать пирӗн пурнӑҫ, епле лайӑхланса, илемленсе пырать вӑл. Ҫынсем ҫине пӑхсан та чун савӑнать... Пурте ӗҫлеҫҫӗ, ыран паянхинчен лайӑхрах пурӑнасшӑн тӑрӑшаҫҫӗ. Пурин те чӗрисенче ҫутӑ ӗмӗт... Анчах санӑн мӗн пур? Эх, Кажиков, Кажиков! Шутла-ха: кам эсӗ,

мӗн эсӗ? Никама кирлӗ мар тӗпренчӗк. Кивӗ тӗнче тӗпренчӗкӗ! Чӗрӳ те шӑтӑк чӗрес пекех пуш-пушӑ санӑн, пуҫунта та пӗр шухӑш та ҫук. Кашкӑр ҫеҫ пулнӑ эс ку таранччен. Ҫынсене кӳрентернӗ те хӑвӑн карланкуна тултарнӑ, унтан ӑҫта та пулин пытанса выртнӑ... Этем пурнӑҫӗпе пурӑнса курман вӗт эсӗ, пурнӑҫ сан тӗлпе йӳҫӗ тӗтӗм пек шуса иртсе кайнӑ. Ҫынсем пурнӑҫ тунӑ вӑхӑтра эс вӗсене чӑрмантарса тарӑхтарнӑ кӑна, ҫынсен тӑшманӗ пулса тӑнӑ, пурте чӗререн курайман тӑшман. Анчах пирӗн халӑх тӑшманӗсене хӑйӗн ҫулӗ ҫинчен ним хӗрхенмесӗр шӑлса ыватать. Ҫӳппе шӑлса тӑкнӑ пек. Эсӗ те ҫав ҫӳпӗ шутӗнче... Анчах этем ретлӗ пулса халӑхпа пӗр кӑмӑллӑн пурӑнма шутлакансене эпир пӗтерсе хумастпӑр, вӗсене хамӑрах ҫын пулма пулӑшатпӑр. Ана пӗлетӗн эсӗ, чухлатӑн. Ҫавӑн ҫинчен хӑҫан та пулин шухӑшласа пӑхнӑ-и эсӗ хӑвӑн пуҫупа? Питӗ, питӗ шухӑшламалла пулнӑ санӑн! Халь те кая мар-ха... Пӗтӗмпех хӑвӑнтан килет!

Вӑрӑ нимӗн те чӗнмерӗ. Тӑпра тӗслӗ пулса кайнӑскер, шӑлӗсене ҫыртса, вӑл пӗрмай ҫӗрелле пӑхса пычӗ. Кам пӗлет, тен, чӑнах та кун пек пурӑнма юраманни ҫинчен шухӑшларӗ-ши?..

Малтанхи допросрах Кажиков хӑйсем Юманлӑхри лавккана мӗнле ҫаратни ҫинчен йӑлт каласа панӑ. Вӑрланӑ япаласене ӑҫта чикнине, хӑйӗн ҫав «ӗҫре» пӗрле пулнӑ тусӗсем ҫав вӑхӑтра ӑҫта пулма пултарнине те каланӑ. Вӑраха ямасӑрах, Светлов майорпа Квасов лейтенант ӑна Шупашкара, министерствӑна, илсе кайнӑ. Кунта ҫӗнӗрен допрос тунӑ чухне вара Кажиков ҫапла каланӑ пулать:

— Маншӑн халӗ пурӗпӗр. Лекнӗ-тӗк — лекнӗ. Ҫавӑнпа та йӑлт тӗрӗссине калатӑп. Анчах малашне «тӗвӗлесе лартатӑп», хуть ватлӑхра та пулин ҫынсем пек пурӑнса курас...

Ҫав кунах, каҫхине, Илюкпа кӳршӗ хӗрачи Натали урамри пӗренесем ҫинче питӗ кӑмӑллӑн шӑкӑлтатса калаҫса ларчӗҫ. Вӗсене никам та кансӗрлемерӗ. Мӗн ҫинчен калаҫрӗҫ-ши вӗсем?

Паллах, пурнӑҫ ҫинчен пулӗ. Иртни ҫинчен те, малашнехи ҫинчен те. Вӗсем халь пӗчӗк ачасем мар ӗнтӗ. Иккӗшӗн те чӗрисенче пысӑк ӗмӗтсем...

1959—1964

*шкул библиотеки*

*Для старшего и среднего школьного возраста*

**Леонид Яковлевич Агаков**

**ЮМАНЛĂХРА ÇАПЛА ПУЛНĂ**

**МАЛЬЧИК ИЗ ДУБОВКИ**

**Повесть**

На чувашском языке

Редактор В. П. Тимаков
Художник Н. С. Ананьев
Художественный редактор Г. А. Игнатьев
Технический редактор Н. В. Васильева
Корректор Н. П. Печникова
ИБ 2636

Сдано в набор 4.03.91. Подписано к печати 17.11.92. Формат 84×108¹/₃₂. Бумага типографская № 1. Гарнитура школьная. Печать высокая. Усл. печ. л. 15,12. Усл. кр.-отт. 15,43. Учетно-изд. л. 16,54. Тираж 13000. Заказ 600. Изд. № 34. Цена «С» 6.
Чувашское книжное издательство.
428000, Чебоксары. пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета Чувашской Республики по информации и печати.
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

**Агаков Л. Я.**

А 23 Юманлăхра çапла пулнă: Повесть.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1993.— 285 с.

**«Юманлăхра çапла пулнă»** повеçре писатель вăрă-преступниксен **сăнарĕсене кăтартать,** ачасене, çамрăксене воспитани панă чухне çитĕннисен питĕ тимлĕ пулмаллине палăртать.

**ББК 84 Чув 7—4**

А $\frac{4803710201 — 06}{М\ 136(03) — 93}$ 34 — 93

## ХАКЛĂ АЧАСЕМ!

«Шкул библиотеки» серипе юлашки çулсенче çак кĕнекесем тухнă:

**Трубина Мархви.** Хĕллехи каçсем. 1988 ç.
**Мария Ухсай.** Кăра çилсем. 1988 ç.
**Исаев Мĕтри.** Хĕрлĕ хум. 1989 ç.
**Леонид Агаков.** Салтак ачисем. 1990 ç.
**Леонид Агаков.** Ылтăн вăчăра. 1991 ç.
**Аркадий Гайдар.** Тимурпа унăн команди. 1991 ç.
**Алексей Талвир.** Пăва çулĕ çинче. 1991 ç.
**Федот Орлов.** Юрататăп Тăван çĕршыва. 1991 ç.
**Тихăн Петĕркки.** Кушкă ачи. 1992 ç.
**Семен Элкер.** Хĕн-хур айĕнче. 1993 ç.
**Леонид Агаков.** Юманлăхра çапла пулнă. 1993 ç.

Çак кĕнекесене эсир шкул библиотекисенчен, хăшĕ-пĕрисене кĕнеке магазинĕсенчен илсе вулама пултаратăр.

[illegible]

[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]

80

Леонид Агаков — ачасен юратнă писателĕ. Вĕсем валли унăн «Вĕтлĕхри отряд» (1931), «Юлашки сăмах» (1931), «Пĕрре, çуркунне...» (1940), «Манăн туссем» (1941), «Фронтри ачасем» (1943), «Пĕчĕк партизансем» (1944), «Вăрçă ачисем» (1947), «Партизан Мурат» (1947), «Ылтăн вăчăра» (1948), «Салтак ачисем» (1961), «Юманлăхра çапла пулнă» (1964) тата ытти кĕнекесем пичетленсе тухнă.

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ